К 82.39(=Чув)
Р60
Ч-39339

В. Г. Родионов
В. А. Ендеров

# ЧӐВАШ ХАЛӐХ СӐМАХЛӐХӖ

Национальная библиотека ЧР
4-039339

ВОЗВРАТИТЕ КНИГУ НЕ ПОЗЖЕ
обозначенного здесь срока

к
Обязат. экз.

РАҪҪЕЙ ФЕДЕРАЦИЙӖН ВӖРЕНТӲ ТАТА НАУКА МИНИСТЕРСТВИ
И.Н.Ульянов ячӗллӗ Чӑваш патшалӑх университечӗ

К82.39(=чув)
Р 60

В.Г.РОДИОНОВ, В.А.ЕНДЕРОВ

# ЧӐВАШ ХАЛӐХ СӐМАХЛӐХӖ

## Лекцисен курсӗ

к-р

Шупашкар 2004

**ББК** Ш 23(2) (=635.1) я 73
**Р 60**
К82.39(=Чув)я73

Рецензенты:

д-р филол. наук, профессор **П.Н.Метин**;

канд. филол. наук, ведущий научный сотрудник Чувашского государственного института гуманитарных наук **Г.А. Дегтярев**

**Родионов В.Г., Ендеров В.А.**

**Р 60** Чувашское устное народное творчество: Курс лекций. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2004. 294 с.

**ISBN 5-7677 0778-2**

Национальная библиотека Чувашской Республики
4-39339

Рассматриваются вопросы чувашского устного народного творчества с учетом разработки чувашской фольклористики последних лет. Особое внимание уделено текстологическим и жанрово-классификационным проблемам устно-поэтического творчества чувашей.

Для студентов I-II курсов дневного и заочного отделений факультета чувашской филологии и культуры, лиц, интересующихся чувашским устным народным творчеством.

Утверждено Редакционно-издательским советом университета

Отв. редактор: д-р филол. наук, профессор Г.И.Федоров

**ISBN 5-7677 0778-2**

**ББК** Ш 23(2) (=635.1) я 73
© Родионов В.Г., Ендеров В.А., 2004

ПРОВЕРЕНО
20 21 МАР 2017

## *Авторсенчен*

Халăх сăмахлăхĕ е фольклор тесе эпир халăх хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен анлă сарăлнă произведенисене калатпăр. Вĕсен шутне мифсемпе легендăсем, преданисемпе тĕрлĕ ĕненӳсем, юмах-халапсем, юрăсемпе такмаксем, ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем, сăнанисем, курни-илтнисем, тĕлĕксем тата тĕрлĕрен вак хайлавсем кĕреççĕ.

Сăмахлăх вăл – халăх кун-çулĕ, пурнăçĕ, пултарулăхĕ. Вĕсенче чăваш çыннин ĕмĕртенхи историйĕ тĕкĕр çинчи пекех упранса юлнă. Мĕнре палăрать-ши çак çыхăну?

Этемлĕхĕн чи авалласхне çитер-ха. Малтанласа çĕр çинче тĕрлĕ йышши чĕр чунсем çеç хуçаланнă, каярахпа, майĕпен-майĕпен ĕçе тата хусканăва пула, çын евĕрлĕ чĕр чунсенчен хальхи вăхăтри этемĕн мăн аслашшĕсем пулса каяççĕ. Паллах, çак çитĕнӳ темиçе пин-пин ĕмĕр хушшинче çеç вăй илет. Ĕç çыннăн чи кирлĕ те пурăнмалли хатĕрĕ пулса тăрать. Ушкăнпа ĕçленĕ чухне епле пĕр-пĕринпе хутшăнмасăр тăрăн! Çапла этем калаçма вĕренет, шухăшлама тытăнать.

Çынсем пĕр-пĕринпе хутшăнма тытăнаççĕ, çут çанталăк пулăмĕсене, чĕр чунсене сăнама вĕренеççĕ. Анчах вĕсем çут çанталăкра пулса иртекен пулăмсене тĕрĕс ăнлантарма пултарайман-ха. Нумай ыйту канăçсăрлантарнă вĕсене: мĕншĕн çумăрпа пăр е юр çăвать, хĕвел пăхать, каç ирпе ылмашăнать? Мĕншĕн çĕр çинче тĕрлĕрен ӳсен-тăран ӳсет? Чĕр чунсем ăçтан пулса кайнă т. ыт. те.

Çапла вара этем, çут çанталăк саккунĕсене ăнлантарайманнине пула, вĕсене хăй шухăшланă пек, хăйне май ăнлантарма тытăннă. Халăх шухăшлавĕ, тĕнче курăмĕ вăхăт иртнĕçемĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен произведенисенче çирĕпленсе юлать, ламран лама, йăхран йăха куçса пыма пикенет, паянхи кунччен тĕрлĕ хайлавсенче ӳкерĕнсе юлать. Çав сăмахлăхăн тĕрлĕ еткерлĕхĕпе паллашса эпир хамăрăн мăн асаттесен мĕн авалхи кунçулне, пултарулăхне, йăли-йĕркипе ăс-хакăл пурлăхне

тĕпчеме пултаратпăр, историн тĕрлĕ тапхăрĕсене сăнласа кăтартатпăр. Асăннă вĕренӳ пособийĕнче палăртнă ыйтусене сăмахлăх тĕсĕсемпе танлаштарнă, халăхра анлă сарăлнă тĕрлĕ жанрсене пурне те тишкерме тăрăшнă.

Чăваш халăх сăмахлăхне 4 пысăк ушкăна уйăрса кăтартнă: эпикăлла поэзи, халăх прози, йăла-йĕрке поэзийĕ тата халăх лирики. Унсăр пуçне, чăвашсен йăли-йĕркисемпе çыхăннă сăмахлăх жанрĕсенче халăх драмин элеменчĕсем пуррине те палăртса хăварнă.

«Чăваш халăх сăмахлăхĕ» вĕренӳ курсне 9 темăна пайланă, тĕрлĕ литературăпа тата ыйтусемпе, ĕçсемпе пуянлатнă.

Çакна та каласа хăвармалла: лекцисен курсĕн «Чăваш халăх юрри» тата «Халăх сăмахлăхĕнче Совет саманин тĕрлĕ тапхăрĕсем сăнарланни» сыпăкĕсенче паллă фольклористăн Иван Ильич Одюков профессорăн асăннă ыйтусемпе пичетленнĕ тĕпчевĕсемпе анлă усă курнă.

Кĕнеке авторĕсем асăннă пособи пирки вулакансен шухăшĕсене факультета пĕлтерме ыйтаççĕ. Паха сĕнӳсем е асăрхаттарусем пулсан, тав тунă пулĕччĕç, сирĕн шухăшăрсене тата сĕнӳсене малашне шута илме тăрăшĕç.

1 сыпăк

# ФОЛЬКЛОР – ХАЛĂХ ӐНЕРĔ, КУН-ÇУЛĔ, ПУРНĂÇ ТĔКĔРĔ

## 1.1. Халăх сăмахлăхĕ. Унăн паллисемпе этем аталанăвĕнчи вырăнĕ. Фольклорпа литература çыхăнăвĕсем.

Сăмахлăх – халăх пултарулăхĕн пĕр пайĕ. Вăл – сăмах искусстви. Апла пулин те вăл ытти ӳнер тĕсĕсемпе, йăла уявĕсемпе, халăх пултарулăхĕн ытти тĕсĕсемпе тачă çыхăнса тăрать.

Сăмахлăх – халăхăн кулленхи тата общество пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Вăл – пурнăç пĕлĕвĕ те, опычĕ те, историйĕ те, философийĕ те, этики те. Мĕн авалах, этем историйĕпе пĕрлех аталанма пуçланăскер, хут çине çырăнман поэзи халăхăн ламран лама куçса пынă ăс-хакăл пуянлăхне, пĕлĕвĕпе ăнланăвне, тĕнче курăмне пĕтĕçтерсе тăрать.

Сăмахлăх – аваллăх çырăвĕ, халăх хăйне хăй асăмра чăн чĕрĕ хăварни.

Мĕнле ăнлантараççĕ-ха тĕпчевçĕсем çак сăмахăн пĕлтерĕшне?

Ăсчахсен шухăшĕпе, «сăмахлăх» (словесность) термин «ăслăлăхра виçĕ пĕлтерĕшпе çӳрет:

1) устное творчество – фольклор;
2) устная словесность;
3) устный словарь, лексикон.

Халăх сăмахлăхĕ тесе сăмах вĕççĕн çӳрекен пĕтĕм халăх идеалне тĕпе хурса йĕркеленĕ хайлавсене калаççĕ ..., вĕсен авторĕ паллă мар»[1]. Паянхи наукăра сăмахлăх тесе пĕтĕм халăх хутшăннипе сĕм авалах йĕркеленнĕ, йăхран йăха, ламран лама сăмах вĕççĕн куçса пыракан, çырусăрах пурăнакан юмах-халапа, юрă-сăвва, тĕрлĕрен сăнарлă сăмахсене калаççĕ. Сăмахлăх – илемлĕ сăмах,

---

[1]Литература пĕлĕвĕн кӳртĕмĕ: Методика кăтартăвĕсем /В.Г.Родионов, Л.Ю.Трофимов хатĕрленĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 2002. 13 с.

илемлĕ чĕлхе искусстви. Вăл халăх йăли-йĕркипе те, музыкипе те тачă çыхăнса пурăнать, халăх театрĕн пайĕ пулса тăрать. Унăн авторĕ те паллă мар: пĕр-пĕр халапçă-юрăçă шухăшласа кăларнă, каласа-юрласа панă сăмах-халап е юрă халăхра çирĕпленсе юлнă, авторлăхне çухатса пынă, ăна упрас, якатса хитрелетес ĕçе пĕтĕм халăх, ылмашăнса пыракан йăхсем хутшăннă.

Халăх сăмахлăхĕ этем обществи йĕркеленме тытăннă тапхăрсенчех пуçланнă, общество ĕçĕ-хĕлĕпе, пурнăçĕпе, чĕлхипе, ăс-тăнĕпе тачă çыхăнса аталанса пынă, паянхи куна çитнĕ.

Сăмахлăх урлă чăваш çынни хăйне те, çамрăксене те, пулас ăрусене те этем обществин ĕçри тата кĕрешӳри опычĕпе паллаштарса пынă, халăха, тавралăха, тăванлăха, çĕр-шыва юратма, халăх ырлăхĕшĕн тăрăшакан-кĕрешекен паттăр пулма вĕрентнĕ, усала хирĕç, ырлăхпа телейшĕн кĕрешме хавхалантарнă.

«Фольклор» – акăлчан сăмахĕ, икĕ пайран тăрать: *folk* 'халăх' тата *lore* 'пĕлӳ, ăслăлăх, пултарулăх'. Çак терминпа паянхи наукăра халăхсен пĕтĕмĕшле ăс-хакăлне калаççĕ. Чăваш тĕпчевçисем унпа ытларах халăх хушшинче сăмах вĕççĕн çӳрекен анлă сарăлнă произведенисене палăртаççĕ. Вĕсен шутне мифсемпе легендăсем, халапсемпе тĕрлĕ ĕненӳсем, юмах-халапсем, юрăсемпе такмаксем, ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем, сăнанисем, курни-илтнисем, тĕлĕксем тата ытти тĕрлĕрен жанрсем кĕреççĕ.

*Фольклор* ăнлав ансăр тата анлă пĕлтерĕшпе çӳрет. Пĕрремĕш пĕлтерĕшне палăртнă чухне малти вырăна сăмахлăха тĕпе хуратпăр: кирек мĕнле фольклор тĕсне илсен те чи малтанах сăмах пуррине асăрхатпăр. Фольклорăн анлă пĕлтерĕшĕ вăл – халăх хушшинче çуралнă тата йĕркеленнĕ, ĕмĕртен ĕмĕре, ламран лама куçса пыракан, паянхи куна çитнĕ унăн пĕтĕмĕшле пултарулăхĕ; вăл халăх пурнăçне, пĕлĕвĕпе ăнланăвне, идеалне сăнлать; тĕпчевçĕсем ку ушкăна халăх сăмахлăхне те (юмах-халап, сăвă-такмак, эпос тĕсĕсем), юрри-кĕввине те (юрă-кĕвĕсем, ташă çеммисем), халăх театрне те, ташши-вăййине те, çурт-йĕр лартас ăсталăхне те,

сăнарлă тата ал ăстисем хатĕрленĕ ӳнер тĕслĕхĕсене те кĕртеççĕ.

Халăх сăмахлăхне, йăла-йĕрке поэзине тĕпченĕ май çапла пĕтĕмлетӳ тума пулать: фольклор шутне ăс-хакăл культурисĕр пуçне ăс-пурлăх культурине те кĕртетпĕр. Фольклор вăл – обществăпа пĕрлĕхлĕ ĕçре тупраннă чăваш халăхĕн мĕн авалтан килекен тата сăмах вĕççĕн çӳрекен сăмахлăхĕ те, курăмлă пĕлтерĕшлĕ пултарулăх тĕсĕсем те. Эпир вĕсене мĕн çуралсан ăнкарма тытăнатпăр та мĕн виличчен унпа тачă çыхăнса тăратпăр.

Халăх еткерлĕхĕ çав тери пуян. Ахальтен мар фольклора пурнăç хаваслăхĕ, шăнăрĕ, иксĕлми çăлкуçĕ, теççĕ.

Халăх сăмахлăхĕ унерсем хушшинче уйрăмах сумлă вырăн йышăнни тахçанах паллă. Унсăр эпир чăвашсен мăн аслашшĕсен авалхи пурнăçĕпе йăли-йĕркине тата илемлĕх тĕслĕхĕсене пĕлеймен те пулăттăмăр.

Тăван сăмахлăх – халăхăн ĕмĕрхи ăсне, ĕç тăрăмне, ас тăвăмне, савăкне-хурлăхне ӳкерсе юлнă пуянлăх; унра пирĕн кун-çул, аслă чунпа хăватлă тăн, кулленхи кăмăл-туйăм, шухăш-ĕмĕт упранса тăрать. Вăл – халăхăн тĕнче курăмĕпе илемĕ, пултарулăхĕн ĕмĕртенхи лаççи, халăхлăхăн тата этем ушкăнĕн сăмах ӳнерĕ тăвас ăсталăх; вăл сăмах вĕççĕн, тĕрлĕ çирĕпленнĕ йăласене пăхăнса йăхран йăха куçса пырать.

Кирек кам та сăмахлăхра хăйне кирлине тупать. Сăмахлăхра унерĕн тĕрлĕ тĕсĕ пĕрлешсе кайнă: сăмах, кĕвĕ-çемĕ, ташă-юрă, халăх театрĕ. Сăлтавĕ вăл халăх пурнăçĕпе тата йăли-йĕркипе тачă çыхăнса тăни, унта тĕрлĕ тапхăрти йăласем, пурнăç тапписем йĕрленсе юлни. Çавăнпа фольклорпа тĕрлĕ наука çыннисем интересленеççĕ, ăна тĕпчеççĕ: чĕлхеçĕсем те, литературоведсем те, ӳнерçĕсем те, этнологсем те, историксем те, т. ыт. те.

Фольклор хайлавĕсене хăлхапа илтме çеç мар, куçпа курма, сăнама пулать, урăхла каласан, вĕсем театр ӳнерĕн элеменчĕсем те пулма пултараççĕ. Çапах эпир сăмахлăха чи малтанах *сăмах ӳнерĕ* тесе хаклатпăр.

Халăх сăмахлăхĕ чĕрĕ калаçу чĕлхине пулать, пусăмĕ те ырăнти калаçури пек. Халăх ÿнерĕнче тĕрлĕрен символсемпе усă курни час-часах тĕл пулать: параллелизмсем, эпитетсем, синонимсем, ытти илемлĕх мелĕсем. Вĕсенче илемлетсе калани, сăмаха якатса е çемçетсе калани ырăнлă.

Халăх сăмахлăхĕ паянпа ĕнер пулса кайнă япала мар, вăл темиçе пин çул каялла хыăннă иксĕлми пуянлăх. Ăна пĕтĕм халăх пĕрле пуçласа янă. Вăл е ку сăмахлăх тĕсĕсене кам çырнине никам та пĕлмест. Вĕсем ăруран ăрăва сăмах вĕççĕн куçса пынă, паянхи кунччен сыхланнă. Паллах, вĕсене упраканĕ те, паянччен сыхласа çитерекенĕ те – халăх. Çавна кура сăмахлăха эпир халăхăн, халăх пултарулăхĕн тĕсĕ тетпĕр.

Чăваш халăхĕ хăйĕн мĕн авалхи йăли-йĕркисене, сăмахлăхне, юрри-ташшине, ытти ăс-хакăл тĕсĕсене упрама тăрăшать, пулас ăрусене кăтартса та паллаштарса хамăрăн халăх ÿнерне аталантарма пулăшать.

Халăх сăмахлăхĕ ытти ÿнерсем пекех хăйне евĕрлĕ. Унăн уйрăмлăхĕсем сахал мар. Çакна та каламалла: асăнакан уйрăмлăхсем тĕрлĕ халăхăн нумай енчен пĕр пек палăраççĕ. Тĕп уйрăмлăхсен шутне фольклористсем çаксене кĕртеççĕ:

1) традицилĕх; 2) синкретизм; 3) вариантлăх; 4) авторсăрлăх; 5) сăмах вĕççĕн çÿрени; 6) ушкăнлăх; 7) импровизацилĕх.

*Традицилĕх* (традиционность). Ку ăнлав халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсем те çирĕпленнĕ мелсене упраса тăнине пĕлтерет. Сăмахлăх – халăх ÿнерĕ. Вăл - халăхăн пурнăç пĕлĕвĕ те, опычĕ те, историйĕ те, философийĕ те, этики те, педагогики те; тăван халăхăмăрăн темиçе ĕмĕрсем хушшинче йĕркеленсе пуçтарăннă пултаруллă ĕçĕ. Çакна та палăртмалла: пурнăçăн кашни тапхăрĕнче сăмахлăх функцийĕсем урăхларах тата тĕрлĕ пулма пултарнă: малтанхи тапхăрта вĕсем чăваш çыннишĕн çут çанталăкпа обществăри пулăмсемпе ĕçсене хăйне май ăнлантаракан, йăхран йăха куçарса пыракан ăрăмлă пĕлтерĕшлĕ сăмах пуххисем шутланнă; вăтам ĕмĕрсенче, чăваш этносĕ чăмăртанма пуçласан, сăмах-

лăхпа пирĕн мăн асаттесем чăвашлăха йĕркелеме анлă усă курнă-тăр, вăл хăйне кура чăваш этносĕн пурлăхпа ăс-тăнĕн идеологилле никĕсĕ (тĕрекĕ) шутланать; каярахпа çирĕпленсе çитнĕ йăласемпе уявсем пайланма пуçлаççĕ, сăмахлăхăн тĕрлĕ жанрĕсем йĕркеленеççĕ, çавна пула фольклор та вакланса пырать, хăйĕн пĕлтерĕш-асамлăхĕсене пĕтерсе пырса наци культурипе (вăл шутра, çыруллă сăмахлăхпа) хутшăнса каять, кайран профессилле ăсталăхпа пĕтĕçет. Хальхи тапхăрта, тĕпрен илсен, çыруллă сăмахлăха илемлетекен формăсенчен чи кирли шутланса тăрать.

*Синкретизм* халăх сăмахлăхĕ пĕрлĕхлĕ тенине пĕлтерет. Тахçан-авал, фольклор уйрăм жанрсене пайланиччен, сăмах тĕп вырăнта пулнă. Сăмахлăха, йăла-йĕркесене, ĕненӳсемпе ытти ăс-хакăл тĕсĕсене никам та уйăрман, вĕсем пурте пĕрле аталаннă, халăхăн пĕрлĕхлĕ пĕлĕвĕ, пултарулăхĕ шутланса тăнă. Çакна çирĕплетмешкĕн чăвашсен ĕлĕкхи вăййине илсе пăхар-ха. Кунта халăх пултарулăхĕн пур енĕ те палăрать: сăмахлăхĕ (эпика 'калану'), юрă (лирика 'çуйлану'), ташă-вăйă (драма 'выляну'), кĕвĕ-çемĕ, тĕрлĕ хусканусем, ача-пăча поэзийĕ тата ыт. те. Çак асăннă тĕссем пурте пĕрле пулсан çеç вăййа пĕтĕмĕшле кăтартса пама пултаратпăр. Паллах, тĕпчевçĕсем вăйă поэзийĕн кашни элементне уйрăммăн та сăнлама, тĕпчеме пултараççĕ, ку вăл хăйсен ирĕкĕ. Çапах та халăх ӳнерĕн вырăнне, унăн пĕтĕмĕшле философипе ăс-хакăлне пĕлес тесен сăмахлăха ялан пур енлĕн тĕпчес пулать.

*Вариантлăх* та сăмахлăхăн тĕп палли шутланать. Сăмахлăхăн еткерлĕхĕ çынсен ăсталăхĕпе пуянланса пырать. Унпа этем хăйĕн кулленхи пурнăçĕнче усă курать. Пурнăç шунăçемĕн, иртнĕçемĕн сăмахлăх та улшăнать: тĕп сюжетсемпе сăнарсем çĕнелеççĕ, урăх сĕм, пĕлтерĕш туянаççĕ. Саманине кура халăхăн шухăшлавĕ те çĕнелет тата халапçăсемпе юрăçсен ăсталăх çӳпçийĕ те хăйне евĕрлĕ паллăсемпе уйрăлса тăма пултарать: пĕр çыннах ку е урăх юмаха е сăвва-юрра каламассеренюрламассерен текста кашнинчех улăштарма пултарать. Сăмахран, паян туй, салтак е вăйă йĕрки çеç мар,

юрри-сăввин тексчĕ те улшăнни куçкĕретех, вĕсен содержанийĕ те халĕ урăхларах, е чăвашсен тĕрлĕ районĕсенче асăннă йăласене манăçнă вырăнсем те тĕл пулаççĕ.

*Авторсăрлăх* ăнлава эпир маларах кăшт асăнса хăварнăччĕ. Сăмахлăх вăл – ушкăнпа, йышпа, пĕтĕм халăхпа йĕркеленĕ пур хайлавсен ушкăнĕ е пĕрлĕхĕ. Кунта вĕсен авторĕ кам пулни паллă мар. Сăмахран, çырнă произведенисенче (литературăра) кашни текст хыçĕнчех унăн авторĕ е темиçе автор тăрать пулсан, халăх сăмахлăхĕнче пайăр çын е конкретлă ушкăн ăнĕ пачах çук, унта палăракан ăнсем пурте ушкăнлă та стереотиплă. Пĕр çынсемех тĕрлĕ йăла-йĕркере тĕрлĕ рольсене «вылянă». Паян хĕр панисемех ыран ывăл авлантарма, тепĕр кунне чӳк халăхĕ пулма пултарнă. Çавна май вĕсен функцийĕсем те социаллă иерархине пăхăнса, улшăнса пынă. Çырулла текстсенче вара конкретлă çынсем, урăхла каласан, вĕсен авторĕсем пур. Çак уйрăмлăх пирки вырăссен паллă публицисчĕ, философĕ тата литература критикĕ В.Г.Белинский XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринчех калани пур. Фольклорта, ун шухăшĕпе, «паллă ятсем çук, мĕншĕн тесен сăмахлăха хываканĕ – халăх. Никам та пĕлмест çамрăк халăхăн е йыш-ушкăнăн тулашри тата шалти пурнăçне яруççăн сăнарлакан çăмăл та айван юрăсене кам хывнине. ... Юрă йăхран йăха, ламран лама куçать; вăхăт иртнĕçемĕн улшăнать вара вăл: кĕскетеççĕ те ăна, вăрăмлатаççĕ те, улăштараççĕ те, урăх юрăсемпе те хутăштараççĕ, е кивви çумне çĕнĕ юрă хушма та пултараççĕ, - çапла вара юрăсенчен поэмăсем çуралаççĕ, вĕсен авторне халăх хăйне çеç палăртма пултарать»[2].

*Сăмах вĕççĕн çӳрени* – сăмахлăх паллисенчен чи витĕмли те курăмли. Ăна пула вĕсем паянхи кунччен сыхланса юлнă, халĕ те вĕсене итлесе-курса, юрласа-сăмахласа савăнатпăр, тепĕр чух – хурланатпăр.

*Ушкăнлăх* тени ушкăнпа пĕрле йĕркеленине пĕлтерет. Урăхла каласан, пĕр-пĕр хайлава уйрăм çын шухăшласа кăларсан та (хайласан), çав произведени

---

[2] Белинский В.Г. Полн. собр. соч.: В 13 томах. Т.5. М.: Изд-во АН СССР, 1954. С. 625.

халăх хушшинче сарăлнă май улшăнса, якалса пырать, тĕрлĕ çĕрте юрланма е сăвăланма пикенет, халăх драми евĕр сарăлма пултарать. Çакă вăл, паллах, каласа, юрласа е кăтартса параканăн ăсталăхĕнчен нумай килет.

Фольклорпа пĕтĕм халăх усă курать. Унта вăл хăйĕн идеалĕсене пĕтĕмлетет, кулленхи пурнăçне сăнарласа хăварать, хăй ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине, шутланă ĕмĕчĕсем пурнăçланасса шанать. Çавăнпах пуль сăмахлăх этемĕн ăс-хакăлне пуянлатать, илемлĕх туйăмне çивĕчлетме пулăшать.

*Импровизацилĕх* – ятарласа хатĕрленмесĕр, самантрах шухăшласа кăларма пултарни. Ку паллăпа нумай чухне юрăçсем, юмахçăсем, халапçăсем тата ытти сăмахлăх тĕсĕсене халăх хушшинче саракан ăстасем усă кураççĕ. Юрă-сăвă сăмахĕсене улăштарасси тĕрлĕ сăлтавсенчен килет: ăста пултарулăхĕнчен; хăш вăхăтра каланинчен; мĕнле аудиторире е вырăнта каласа кăтартнинчен; самана тапхăрĕнчен т. ыт. те.

Чылай чухне юрă-сăвă е юмах-халап ăстисемпе пĕрле вĕсен еткерĕ тĕппипе çухалма пултарать. Çакăн сăлтавĕсем те нумай. Чăн та, халăхра питĕ пултаруллă ăстасем сахал мар. Сăмахран, Гаврил Федоров, Кашкăр Микули, Ираида Вдовина çитес ăрусем валли çĕршер те çĕршер юрă-сăвă, юмах-халап хăварнă. Паллах, ĕлĕк те пулнă ун йышшисем, анчах вĕсен еткерлĕхне çырса илмен, çавăнпа халăх асĕнче ун пек ăстасен ячĕсем çирĕпленсех юлман. Хăш-хăш чух çеç «çавăн юрри», «вăл каласа панисем» тенине илтме пулать. Ку вăл сăмахлăх пурăннине, аталаннине кăтартать те ĕнтĕ.

Этемлĕх хăй историйĕн тăршшĕнче нумай паха ӳнер тĕсĕсене аталантарнă. Вĕсенчен чи паллăраххисем – илемлĕ сăмах хайлавĕсем (литература), юрă-кĕвĕ (музыка), касса е йăваласа тунă кĕлеткесем (скульптура), тĕслĕ сăрăпа ӳкернĕ картинăсем (живопись), юрă-кĕвĕ хатĕрĕсем (инструменты), тĕрĕ-эреш ăсталăхĕ (вышивка, ткачество) т. ыт. те. Асăннă ӳнерсен шутĕнче сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавсен тӳпи çав тери пысăк. Мĕншĕн тесен этемĕн ĕçне-хĕлне, шухăш-ĕмĕтне, кăмăл-сипетне пур ӳнерсенчен те пултаруллăрах сăнласа паракан̆ĕ –

сăмахлăх. Сăмахăн хăвачĕ пысăк. Унпа пурнăçăн пур енĕсене те уçса пама пулать.

Чи авалхи, çырулăх пулман тапхăрта чăвашсен мăн аслашшĕсем мĕн курни-илтнисене, асăрхани-сăнанисене палăртмасăр, хак памасăр хăварман. Çавна вĕсем пуринчен ытларах сăмах халлĕн пухса пынă. Сăмахпа усă курса çынсем хăйсене кирлĕ илемлĕ хайлавсем хывнă, вĕсене йăхран йăха каласа-вĕрентсе хăварнă.

Чăваш халăхĕн историри тĕрлĕ тапхăрĕсем, пурнăç шăпийĕпе кун-çулĕ фольклорăн тĕрлĕ жанрĕнче сăнарланнине курма пулать. Сăмахран, историлле тата топонимикăлла халапсенче «чăваш халăхĕ ирĕклĕхшĕн çунни, хăйĕн тăшманĕсемпе пусмăрçисене курайманни сисĕнет. Чылай хайлавсенче, уйрăмах, юрăсенче, халăх хăйĕн хурлă шăпине ӳпкелет, шелсĕр те тискер чунлă тăшмана ылханать. Кун пек произведенисем ытларах Хусан ханлăхĕн тапхăрĕпе çыхăннă. Унашкал текстсен шутне «Шурă Атăл çинче пурăннă чух», «Шурă Атăл хĕрри – шурă хурăн», «Илсе каять тутар хĕре Хусан хулине» тата ытти юрăсемпе «Турхана вĕлерни», «Тутар тыткăнĕ», «Çар пуç арăмĕ» йышши халапсем кĕреççĕ»[3].

Чăваш çынни çĕр ĕçĕпе пурăнни, сунар-ухутана е пулла çӳрени, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетни, хурт-хăмăр усрани халăхра паянччен сыхланса юлнă улăп халапĕсенче, мифсемпе вак жанрсенче, тĕрлĕрен ĕненӳсемпе сăнавсенче аван палăрать.

Халăх пурнăçĕнчи паллăрах пулăмсем, событисем историлле юрăсенче тата пейĕтсенче уйрăмах курăмлă. Унашкаллисен шутне чăвашсем С.Разинпа Е.Пугачев пăлхавĕсене хутшăнса хăйсен ирĕклĕхĕшĕн кĕрешнине халалланă хайлавсене, 1812 çулхи вăрçăра хывнă юрăсене те кĕртме пулать. Çаксем чăваш халăхĕ çĕр-шыв пурнăçне хастаррăн хутшăннине, хăйĕн кун-çулне лайăхлатма тăрăшнине, пурнăçри тĕрлĕ пулăмсене вăл хăйне майлă хак панине пĕлтереççĕ.

---

[3] Революцичченхи чăваш литератури. Текстсем. 1 том (XX ĕмĕрччен). Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1984. 10 с.

Совет тапхăрĕнчи сăмахлăх та хăйне май. Асăннă вăхăтри фольклора хăйне тĕрлĕ тапхăрсене пайласа тĕпчемелĕх май пур.

Халăх сăмахĕ вăл – чĕрепе, ăспа ăнланнă туйăм, шухăш-кăмăл. Халăх мĕн туять, туйăма мĕнле ăнланать, пурне те сăмахлăхра палăртать. Çавăнпăнах пуль сăмахлăха эпир халăх туйăмĕ, ăс-хакăлĕ, философилле шухăшлавĕпе психологийĕ, педагогикипе илемлĕхе туйтаракан, вĕрентекен тата кăтартакан ăслăлăх тетпĕр.

Тăван халăхăн илемлĕ литературине аталантарас ĕçре тăван халăх сăмахлăхĕ пысăк вырăн йышăнни пурне те паллă. Революциччен те, совет тапхăрĕнче те, паянхи кун та нумай поэт-писатель литература ĕçне вырăс литературинчен вĕреннипе пĕрле тăван халăх сăмахлăхне пухса сăнани, илемлетни урлă кĕнĕ.

Илсе пăхар-ха, тĕслĕхрен, М.Ф.Федоров, К.В.Иванов, Н.И.Полоруссов (Шелепи) тата чăваш халăхĕн ытти сăмах ăстисене. Вĕсен хайлавĕсем паянхи кун та халăх асĕнче, чăн-чăн халăх произведенийĕсем пулса тăчĕç. Сăлтавне шырама та кирлĕ мар: вĕсем фольклорпа пĕлсе усă курни, халăх поэзийĕн формисемпе сюжечĕсене çĕнетсе историлле тапхăра тĕп-тĕрĕссĕн уçса пани, чăваш çыннин шухăш-кăмăлне вулакан патне илсе çитерни – çаксем пурте çыравçăсен ăсталăхне, пултарулăхне тата ÿсĕмлĕхне палăртаççĕ те ĕнтĕ.

Фольклора илемлĕ литература çăлкуçĕ тетпĕр. Халăхла шухăш-кăмăллă литература ялан халăх пултарулăхĕпе тачă çыхăннă. Илемлĕ литература хăйĕн историлле аталанăвĕпе кулленхи процесĕнче фольклортан нумай япала илсе пуянланать: халăх идейисене, ăстăнĕпе ĕмĕчĕсене, пурнăç çине пăхас шухăшлавпа тĕнче курăма, сăмах витĕмĕпе илемлĕхе, наци эстетикине. Илемлĕ сăмах искусствинчи çав туртăма ытларах чухне «литературăри фольклор традицийĕсем» ăнлавпа палăртаççĕ. Ку ĕнтĕ, халăха юравлă искусствăн фольклорта йĕркеленнĕ паха енĕсем литературăна аталанма пулăшни çинчен калани пулать.

Литература çинчен калаçнă чух «фольклор традицийĕсем» ăнлав вырăнлă пулин те, литература хăй

йёркипе аталанса пынине, унӑн хӑйӗн традицийӗсем, шалти туртӑмӗсем пуррине астума тивет. Ӑнсӑртран мар писатель пултарулӑхӗпе халӑх сӑмахлӑхӗ хушшинчи ҫыхӑнусем ҫинчен ҫырнӑ тӗпчев кӗнекисенче «литературӑпа фольклор» ӑнлавпа анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Ку сӑмах ҫаврӑмӗ халӑх сӑмахлӑхӗпе ҫыруллӑ сӑмах искусствин пӗрпеклӗхӗпе ҫыхӑнӑвӗсене тишкересси патне туртать.

Чӑваш литературине фольклорла ӑсталӑх е фольклора литература витӗмӗ сасартӑк килсе кӗмен. Вӑл ерипен вӑйланса пынӑ. К.В.Иванов, сӑмахран, халӑх юмахӗсене сӑвӑласа якатнӑ, ача-пӑча сӑввисене, вӗрӳ-суру чӗлхисене хӑйӗн вилӗмсӗр «Нарспи» поэминче усӑ курнӑ. Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗн тӗпчевҫи Е.С.Сидорова доцент хӑйӗн «Н.И.Шелепи юмах-халапӗсем: поэт пултарулӑхӗнчи халӑх сӑмахлӑхӗ» статйинче халӑх сӑвӑҫи чӑн пурнӑҫа юмах мелӗсемпе ытарлатса, халӑхра ҫирӗпленнӗ символсемпе, сӑвӑ-юрӑпа, хутламсемпе, тытӑмпа, сюжетпа усӑ курса тарӑн кӑтартма пӗлнине уҫса панӑ.

Фольклорпа литература, иккӗшӗ те илемлӗ сӑмах искусствин тӗсӗ пулса, чылай тӗлӗшрен пӗри теприне питӗ ҫывӑх, час-часах уйрӑлми тачӑ тӑраҫҫӗ. Апла пулин те эстетика тӗлӗшӗнчен вӗсем пачах урӑхла. Сӑмахлӑхра халӑх тӗнче курӑмӗ, илемлӗх идеалӗ палӑрать пулсан, ҫыруллӑ поэзире вара автор ӑнӗ, унӑн шухӑшлавӗ, сӑмах искусствин саккунӗсемпе ятарлӑ системине пӑхӑнса тӑни курӑнать.

## ЫЙТУСЕМПЕ ӖҪСЕМ

1. Мӗн вӑл халӑх сӑмахлӑхӗ?
2. «Фольклор» терминӑн пӗлтерӗшӗсем (дефиницийӗсем).
3. Сӑмахлӑх – халӑх ӳнерӗн пӗр енӗ.
4. Сӑмахлӑхӑн уйрӑм паллисем.
5. Халӑх сӑмахлӑхӗн этем аталанӑвӗнчи вырӑнӗ тата пӗлтерӗшӗ.
6. Сӑмахлӑх тата литература.

# УСĂ КУРМАЛЛИ ТĔП ЛИТЕРАТУРА[4]

## Библиографи кăтартмăшĕсем

1. *Археология* и этнография Чувашской АССР: Библиограф. указатель /Сост. Б.В.Каховский, Е.П.Михайлов, П.П.Фокин; ЧНИИ. Чебоксары, 1986. 287 с. (разд. «Духовная культура»).

2. *История* Чувашской Республики: Библиограф. указатель (1775-1990) /ЧГИГН. Чебоксары, 1996. 401 с. (разд. «Фольклор»).

3. *Çулталăк* кĕнеки. Календарь года /Национальная библиотека ЧР. Чебоксары, 1997–2003.

4. *Чувашская* книга до 1917 года: Ретросп. библиограф. указатель. 2-е изд., испр. и доп. Чебоксары, 2001. 201 с.

5. *Чувашский* фольклор: Библиограф. указатель /Сост. П.Н. Метин; ЧНИИ. Чебоксары, 1986. 166 с.

6. *Чувашское* литературоведение и критика: Библиограф. указатель /Сост. А.Н.Тимуков; ЧГИГН. Чебоксары, 1993. 464 с.

## Тĕпчев ĕçĕсемпе вĕренӳ пособийĕсем

1. *Аникин В.П., Круглов Ю.Г.* Русское народное поэтическое творчество: Пособие для студ. нац. отд-ний пед. ин-тов. 2-е изд., дораб. Л.: Просвещение, 1987. 479 с.

2. *Ашмарин Н.И.* Чувашская народная словесность: Исследования. Автобиография, воспоминания. Письма /Сост. и примеч. В.Г.Родионова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. 430 с.

3. *Далгат У.Б.* Литература и фольклор. Теоретические аспекты. М.: Наука, 1981. 301 с.

4. *Зуева Т.В., Кирдан Б.П.* Русский фольклор: Учебн. для студ. высш. учеб. заведений. 4-е изд. М.: Флинта, Наука, 2002. 400 с.

---

[4] Тĕп литературăна пур темăра та усă курнине шута илсе, вĕсене чи малтан çеç асăнса хăварнă.

5. *Исследования* по чувашскому фольклору /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. 167 с.

6. *Канюков В.Я.* От фольклора к письменности (Ранняя чувашская литература и народное творчество). Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1971. 126 с.

7. *Канюков В.Я., Одюков И.И.* Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1-мĕш пайĕ: Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1973. 96 с.

8. *Комиссаров Г.И.* О чувашах: Исследования. Воспоминания. Дневники, письма /Сост. и примеч. В.Г.Родионова; Предисл. Л.П.Куракова. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2003. 528 с.

9. *Комиссаров Г.И.* Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Тĕпчевсемпе текстсем /ЧНТИ. Шупашкар, 1989. 6-45 с.

10. *Сироткин М.Я.* Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1965. 195 с.

11. *Чăваш* фольклорĕ /И.С.Тукташ пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1949. 328 с.

12. *Чувашский* фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. 188 с.

13. *Чувашское* народное творчество: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. 98 с.

## Текстсен пуххисем

1. *Ваттисен* сăмахĕсем. Каларăшсем. Сутмалли юмахсем /Н.Р.Романов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1960. 360 с.; *Ваттисен* сăмахĕсем, каларăшсем, сутмалли юмахсем. Чувашские пословицы, поговорки и загадки / Н.Р.Романов пухса хатĕрленĕ. 2-мĕш кăларăм. Шупашкар, 2004. 351 с.

2. *Канюков В.Я.* Ача-пăча сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1964. 234с.

3. *Одюков И.И.* Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ: Студентсене вĕренмелли кĕнеке /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1975. 139 с.

4. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. I т. Юмахсем. Шупашкар, 1973. 439 с.
5. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. II т. Юмахсем. Шупашкар, 1976. 408 с.
6. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. III т. Юрăсем. Шупашкар, 1978. 512 с.
7. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. IV т. Юрăсем. Шупашкар, 1979. 480 с.
8. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. V т. Вак жанрсем. Шупашкар, 1984. 352 с.
9. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. VI т. 1 пайĕ. Ача-пăча сăмахлăхĕ. Шупашкар, 1985. 304 с.
10. *Чăваш* халăх сăмахлăхĕ. VI т. 2 пайĕ. Мифсемпе халапсем. Шупашкар, 1987. 448 с.
11. *Тимофеев Г.Т.* Тăхăръял (Сĕве тăршшĕнчи чăвашсем). Этнографи очеркĕсемпе халăх сăмахлăхĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1972. 491 с.; *Вăлах.* Тăхăр ял: Этнографи тĕрленчĕкĕсем. Халăх сăмахлăхĕ. Çырса пынисем. Çырусемпе аса илӳсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2002. 431 с.
12. *Чувашские* разговоры и сказки, составленные Спиридоном Михайловым, переводчиком чувашского языка. Казань: Ун-тская типогр., 1853. 107 с.
13. *Халăх* сăмахлăхĕ. Хрестомати /Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. 415 с.
14. *Чăваш* халăх пултарулăхĕ. Мифсем, легендăсем, халапсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. 567 с.
15. *Чăваш* халăх пултарулăхĕ. Халăх эпосĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. 382 с.

**1.2. Чăваш фольклористики аталанни. Сăмахлăха тĕпчекен наука ум историйĕ, çăлкуçĕсем. Каярахри тапхăрсенче чăваш фольклорне пухса тĕпчени. Венгр, финн тĕпчевçисем чăваш халăх сăмахлăхне пухни, тишкерни.**

Фольклора тĕпчекен ăслăлăха фольклористика, теççĕ. Пĕрремĕш темăна ăнлантарнă чухне «фольклор» термин икĕ пĕлтерĕшпе çӳренине палăртнăччĕ. Наукăра

Национальная библиотека Чувашской Республики



Ч-39339

вăл ытларах халăх пултарулăхĕн сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсене пĕлтерет пулсан, фольклористика пĕтĕмĕшле халăх сăмахлăхне тĕпчекен ăслăх шутланать.

Тăван халăхăмăрăн фольклористики аваллăхпа çыхăнни паллă. Чăвашсен мăн аслашшĕ-тăхăмĕсен сăмахлăх тĕслĕхĕсен шутне пирĕн эрăн V-VI ĕмĕрĕсенче çырса хăварнă хунн-пăлхар йăхĕсем пăлан е вăкăр чĕр чун-тотемсенчен пулса кайнă тесе çирĕплетекен этногенетикăлла халапсене кĕртме пулать. Х ĕмĕрте вырăс летопиçĕсем пăлхарсен тупа (клятва) сăмахĕсене çырса хăварнисем сыхланса юлнă. Араб миссионерĕ Ибн Фадлан хăйĕн ĕçĕнче Атăлçи пăлхарсен çут çанталăк çинчен калакан мифĕсене илсе кăтартать. Тепĕр икĕ ĕмĕртен Испани çул çӳревçи ал–Гарнати те хунн-пăлхарсенчен çавнашкал халапсене нумай çырса илет, унсăр пуçне Улăп йышши пысăк çынсем çинчен калакан текстсене илсе кăтартать.

Чăваш фольклористикин çулне-йĕрне эпир каярахпа пăхса тухăпăр. Халĕ сирĕнпе кăштах сăмахлăха тишкермелли, тĕпчемелли мелсемпе меслетсем пирки калаçăпăр.

Мĕн вăл мел тата меслет? Мел тесе эпир тĕллеве пурнăçламалли ăслайсене, урăхла каласан, ĕçĕн тĕрлĕрен пулăмĕсене, унăн тапхăрĕсене тата тĕпчев хатĕрĕсене калатпăр. Меслет вăл – ăслăлăха тĕпчемелли çирĕпленсе тата тĕвĕленсе çитнĕ майсем.

Сăмахлăха вĕренмелли майсем пур чухне те пĕр пек пулман. Халĕ те ăна хаклакансем (тĕпчекенсем) час-часах ун çине тĕрлĕ куçпа пăхса вĕрентеççĕ, çавăнпа сăмахлăха пахаласси пĕр пек килмест.

Фольклора тĕпчемелли майсем çаксем:

1. Генетика меслечĕ – пĕр-пĕр жанр пуçламăшĕнчен ытти сăмахлăх тĕсĕсем те аталанма пултарнине кăтартса пани.

2. Историлле типологи меслечĕ – тĕрлĕ жанрсем вăхăт иртнĕ май улшăнса пынине шута илсе тĕпчени.

3. Танлаштару меслечĕ – пĕр-пĕр жанра е вĕсен ушкăнне тепĕр жанрпа е ушкăнĕпе çывхартса, ăнлантарса пани.

4. Структурăллă типологи меслечĕ – халăх сăмахлăхĕн тĕрлĕ тĕсĕсене пайăн-пайăн тишкерсе пĕрпеклĕхсем тупса палăртни.

5. Танлаштаруллă историлле-структура меслечĕ – çўлерех асăннă иккĕмĕшпе виççĕмĕш тата тăваттăмĕш меслетсем.

6. Функцилле социологи меслечĕ – сăмахлăхăн кирек мĕнле тĕсĕсене те обществăн шалти тата тулашри саккунĕсене шута илсе тĕпчени.

7. Контакт меслечĕ – фольклорăн пĕр-пĕр жанрне тишкернĕ чух сăмах ăстин уйрăмлăх паллисене (тĕл пулса) шута илтерекен хушма меслет (май).

8. Комплекслă меслет тени асăннă майсене пурне те шута илсе пĕрле тĕпчени, сăнласа кăтартни.

Çакна та каласа хăварни вырăнлă: сăмах вĕççĕн çўрекен сăмахлăхăн кун-çулне тĕпченин тапхăрĕсем илемлĕ литература аталанăвĕн тапхăрĕсемпе тўр килмесен те пултараççĕ. Сăмахран, тĕпчевçĕсем чăвашсен вăтам ĕмĕрсенчи культурине хак панă чух авалхи тĕрĕк литературине, Атăлçи пăлхарсен культурине (IX-XIV ĕм.) тата вăтам ĕмĕрсен вĕçĕнчи чăваш культурине (XV-XVII ĕм.) ятарласа уйăраççĕ пулсан, чăваш фольклорне кăшт урăхларах сийсене пайлатпăр: сĕм авалхи тапхăр – XIV ĕм. пĕрремĕш çурри; Хусан ханлăх тапхăрĕнчи сăмахлăх; Вырăс патшалăх тапхăрĕнчи сăмахлăх т. ыт. те. Тĕп сăлтавĕ – çав тапхăрсене анлăн сăнласа тата çутатса паракан халăх поэзийĕн тĕрлĕ тĕсĕсемпе жанрĕсем нумай енлĕн сыхланса юлни.

Сахал мар тĕпчевçĕ хăй вăхăтĕнче чăваш халăх сăмахлăхĕн кун-çулне, аталанăвне йĕрлеме тăрăшнă, паха та калăплă ĕçсем çырса хăварнă. Акă мĕн çырать 1926-1927 çç. халăх сăмахлăхĕн историйĕ пирки чăвашсен фольклористикине пуçараканĕ Г.И.Комиссаров хăйĕн «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ» ятлă лекцийĕнче. «Вырăс халăхĕн халаплăхне ятарласа вĕренме XIX ĕмĕрĕн варринче тин пуçланă пулсан, – тет вăл, – чăваш халăхĕн халаплăхне тата каярах вĕренме пуçланă пулмалла. Чăнах та, чăваш халаплăхне вĕренес ĕç халиччен те пулса çитмен. Вĕренсе тĕпчеме мар –

эпир халăх халаплăхне пухас ĕçе те туса пĕтерейместпĕр, çителĕклĕ таран туса пыраймастпăр.

Çапах та чăваш халаплăхне вĕренес ĕçĕн историйĕ пур. Пирĕн çав историпе паллашмалла.

Чăваш халаплăхне вĕреннĕ çĕрте тĕрлĕ хумсем, юхăмсем, шкулсем пулма пултарайман. Анчах çав ĕçе тăвакансем хушшинче хăшсем çул кăтартса параканнисем, хăшсем вĕсем кăтартнă ĕçе вырăна кĕртекеннисем пулнă. Ĕçлекеннисем пурри-çуккине курса тата ĕçлеме май пулни-пулманнине курса чăваш халаплăхне пухас-вĕренес ĕç хăш вăхăтра хăватланарах пырса, хăш вăхăтра начарланарах пырса хальхи вăхăта çитнĕ. Вăл ĕçе хронологи майĕпе пăхса тухсан лайăх курăнать»[5].

Çак ыйтăва хуравличчен тăван халăхăмăрăн историне кĕскен йĕрлесе тухни вырăнлă.

Чăвашсем тĕрĕк чĕлхиллĕ халăх ушкăнне кĕреççĕ. Тĕрлĕ ученăйсем вĕсен мăн аслашшĕсен – пăлхар-сăварсен – мĕн авалах çĕр ĕç культури, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетесси, архитектурипе гидротехники, суту-илĕвĕ, литературипе тĕрлĕ ӳнерĕсем çав тери çӳллĕ шайра тăнине асăнаççĕ; хăйсен çырулăхĕпе – малтан руна, каярахпа араб çырăвĕпе усă курнине, тĕрлĕрен кĕнекесем çырса хăварнине палăртаççĕ. Шел пулин те, халăх кунçулĕнчи инкек-синкексем (тутар-монгол пусмăрĕ, вăйпах православи тĕнне йышăнтарни, ăна пула чăвашсем тĕрлĕ ушкăнсем çине пайланни, т. ыт. те) пăлхар-чăвашсен авалхи çыру культурине сӳнме пулăшать, кайран пуçĕпех манăçа кăларттарать.

Çапах та паян чăвашсем хăйсен илемлĕ культурине сăмах вĕççĕн упранса юлнă хайлавĕсемпе йăли-йĕркине, çи-пуçпа эреш-тĕррине, ытти ăс-хакăлпа пурлăх еткерне тишкерне май асăрхаççĕ. Хамăрăн пуян та иксĕлми çăлкуçпе – çĕр пин юрăпа, çĕр пин сăмахпа, çĕр пин тĕрĕпе мухтанатпăр та, мăнаçланатпăр та.

[5] Комиссаров Г.И. Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Тĕпчевсемпе текстсем /ЧНТИ. Шупашкар, 1989. 11 с.

Тĕпчевçĕсем чăвашсен вăтам ĕмĕрсенчи культурине тишкернĕ май авалхи тĕрĕк çыруллă сăмахлăхне асăнмасăр иртме çук, теççĕ: ăна сăнани пире вăтам ĕмĕрсенчи культурăн чи авалхи сийĕсене, унăн уйрăмлăхĕсемпе пĕрпеклĕхĕсене асăрхама пулăшать, тен, çавăнпах, тĕрĕк литературиӗ пĕтĕм тĕрĕк халăхĕсен пуянлăхĕ шутланать[6].

Асăннă сăмахлăх палăкĕсен шутне Орхон шывĕ çумĕнче тата Енисей шывĕн айлăмĕнче тупнă руна çырăвĕн тексчĕсем кĕреççĕ. Пĕрремĕшĕсен шутне – Кӳл текĕн çар пуçĕ ячĕпе лартнă Пĕчĕк тата Пысăк чул юпа çырăвĕсене, Пĕлке каган ячĕпе лартнă чул юпа тексчĕсене, Тоньюкук ячĕпе лартнă юпа тексчĕсене тата Онгин çырăвне, иккĕмĕшне – Уюк Туран чул юпа текстне т. ыт. те кĕртмелле.

Çак палăксем Тĕп, Вăта Ази тата Кăнтăр Çĕпĕр тăрăхĕсенче VI ĕм. вăй илнĕ Тĕрĕк каганатĕнчи паллă çынсен вил тăприйĕсем çине çырса хăварнă текстсем. Вĕсене жанр тĕлĕшĕнчен эпосла поэма теме те пулать. Кунта малти вырăнта тĕрĕк каганлăхĕнчи паллă çынсен пурнăçĕ пулни çеç мар, çав тапхăрти истори сĕмлĕхĕ те, хайлавсен геройĕсене идеал туса кăтартни те, вĕсен шăпипе тĕрĕк халăхĕн кун-çулĕпе танлаштарни те ку шухăшах çирĕплетеççĕ. Текстсен çемĕ йĕркеленĕвĕ чăвашсен калуллă поэзийĕн сăмахĕсене аса илтерет; кунта аллитераци сисĕмĕ вăйлă; геройсен çапăçури шăпийĕ нумай чухне ăна пулăшса пыракан утран килет т. ыт. те.

Палăртнă тапхăра VIII-IX ĕм. çырнă «Шăпа кĕнекине» (Книга гаданий) те кĕртме пулать. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çак кĕнеке китай тексчĕсене çывăх имĕш. Вĕсене пурĕ 4 пысăк ушкăна пĕрлештерме май пур:

1) çын тата чĕр чун пурнăçне реализмла ӳкерсе кăтартни;

---

[6] Революцичченхи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен). Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1989. 5 с.

2) миф тата юмах сюжечěсем;

3) çут çанталăк ӳкерчěкěсем;

4) вěрентсе каланисем.

Иккěмěш ушкăнра тотем-чěр чунсем çинчен калани пысăк пěлтерěшлě: унти героя кайăк хур (акăш, хур кайăк) пулăшать. Аса илěр: чăваш фольклорěнче те ку сăнар-тотем нумай жанрсенче тěл пулать, вăл ялан ырă пěлтерěшлě.

IX-X ěмěрсенчи Атăлçи пăлхарсем çинчен асăннă ăсчахсем хушшинче арабсен историк-географěсене Ибн Даста тата Масуди ячěсене аса илни вырăнлă. Пěрремěшě – Иран çынни, унăн тулли ячě ***Абу-аль-Ахмед ибн Омар*** (Ибн Даста). Паянхи кун вăл çырнă «Книга драгоценных ожерелий» ěçěн 7-мěш томě çеç сыхланса юлнă. Çак кěнекере историк пăлхарсене «çěр ěçченěсем» тесе палăртать.

Тепěр авторě – ***аль-Масуди Абу-аль-Хасан***, Али ибн аль-Хусейн (IX ěм. вěçě – 956 е 957) – араб историкě тата çул çӳревçи. 915-945 çç. тěрлě çěршывсенче пулса курнăскер, унти халăхсен йăли-йěркисене çырса хăварнă. Вăл шутра пăлхарсем çинчен калани те пур. Унăн 20 ытла ěçě сыхланса юлнă.

X ěм. тěрěк чěлхиллě халăхсен тӳре-шарисем ислам тěнне йышăнма пикенеççě, çавна пула Атăлçи пăлхарěсем патне тăтăшах араб миссионерěсем килсе çӳрени паллă. Вěсенчен пěри – ***Ибн Фадлан*** (***Ахмед ибн Фадлан***) – 921-922 çç. Багдад халифě Муктадир Атăлçи Пăлхар çěр-шывне янă элчěлěх çыравçи. Вăл чăваш несěлěсен – пăлхар-сăварсен йăли-йěркине, ěçнехěлне, пурнăçěн тěрлě енěсене çырса хăварни паянхи кун та паха летопиç шутланать. Сăмахлăх енчен илсен, кунта пăлхарсен мифологилле курăмě-ăнланăвěсем, юмахěсемпе халапěсем çинчен çырни пур.

IX ěм. иккěмěш çурринче çырăннă тепěр паллă ěç – Кашгар çыннин ***Юсуф Баласагунин*** (1021 ç. тěлě-?) «Хăтлă пěлӳ» (Кутадгу билиг) дидактикăлла поэми. Ăна сăвă формипе çырнă, калаçу евěр хатěрленě. Поэма илемлěх мелěсемпе палăрса тăрать: танлаштарусемпе

эпитетсем, аллегорисемпе метафорăсем, ăса вĕрентекен сăмахсемпе кĕске каларăшсем.

Чăваш фольклористикин ум историне тĕпченĕ май халăхăмăрăн тутар-монгол пусмăрĕнче пурăннă самантсене аса илни те вырăнлă. Халăх ăсĕнче ытларах мĕн асра юлать-ши? Паллах, чи йывăр та тертлĕ, хĕн-хурлă вăхăтăн самана палли, унпа çыхăннă пуласлăх шăпийĕ, малашлăхĕ... Тен, çавăнпах пулĕ тутар-монгол тапхăрĕпе çыхăннă сăмахлăх чăваш ăс-тăн культуринче çав тери нумай. Ун çинчен В.Д.Димитриевпа И.И.Одюков кĕнекисенче вуласа пĕлме пулать. XI-XII ĕм. пăлхар культури тата çӳллĕрех шая хăпарать: вĕсен хăйсен истори шкулĕ йĕркеленет, перссемпе араб культурин витĕмĕпе пăлхарсен науки, культури, ӳнерĕсем тата анлăрах çул çине тухаççĕ.

XIII ĕм. пĕрремĕш çурринче тутар-монголсем пăлхарсем çине тапăнаççĕ. Пăлхар патшалăхне çĕнсе илни пăлхар-чăвашсене тăшман пусмăрне кĕртсе ӳкерет. Çак пусмăр XV ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурриченех – Хусан ханлăхне туса хуричченех, тăсăлать.

Асăннă событисем исторılle сăмахлăх жанрĕсенче нумай сăнарланнă: «Шурă Атăл хĕрне çитиччен» юрă, «Пăлхар халăхне тутарсем çĕнтерни», «Уксак Тимĕр Пӳлере çунтарни» халапсем т. ыт. те.

Малалла Хусан ханлăхĕн тапхăрĕнчи сăмахлăха тĕпчемелли çăлкуçсем çинче чарăнăпăр.

Тĕпчевçĕсем çакна палăртаççĕ: XV-XVII ĕм. чăваш культуринче йăла-йĕркесемпе унта каланă сăмахтакмаксем, юрăсем, халăхăн мифологийĕ, вĕрӳ-суру чĕлхисем т. ыт. те аталанаççĕ[7]. Апла пулсан, асăннă тапхăрсенче чăваш халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсем те йĕркеленсе çитнĕ теме сăлтавĕ пур.

Хусан ханлăхĕн тапхăрĕнчи сăмахлăха икĕ пысăк çăлкуç витĕм парать:

1) асăннă вăхăтра çуралса тата çирĕпленсе, паянхи куна çитнĕ чăваш халăх пултарулăхĕн тĕсĕсем;

---

[7] Çавăнтах. 39-48 с.

2) çак тапхăрта хайланнă çыруллă сăмахлăх çăлкуçĕсем.

Пĕрремĕш ушкăн çинчен калаçнă чух эсир лекци пуçламăшĕнче кăтартнă литературăна вуласа паллашăр.

Иккĕмĕш ушкăна çак çынсем çырнă ĕçсене кĕртетпĕр:

***Герберштейн Зигмунд*** (Сигизмунд фон Херберштейн, 1486-1566) – нимĕç баронĕ, дипломачĕ; Мускавра 1517, 1526 çулсенче пулнă, вăл вăхăтри вырăссен патшипе – III Василипе тĕл пулса калаçнă, политикăри тĕрлĕ ыйтусене сӳтсе явнă çĕре хутшăннă. Унсăр пуçне З.Герберштейн Раççей патшалăхĕпе халăхĕсем çинчен, вĕсен йăли-йĕркийĕ, тĕнĕ, историйĕ пирки «Заметки о Московитских делах» кĕнеке çырса хăварать. Унта Хусан ханлăхĕ тата чăвашсем çинчен каланă сыпăксем интереслĕ. Пĕрремĕш хут 1549 ç. Венăра пичетленнĕ, вырăсла – 1748 ç., кĕскетнĕ варианчĕ 2001 ç. «Хрестоматия по культуре Чувашско-го края: дореволюционный период» кĕнекере çапăнса тухнă.

Тепĕр паха çăлкуç – XVI ĕм. пурăннă вырăс патшалăхĕн вăрçăпа политика деятелĕ, публицист-çыравçи ***Курбский Андрей Михайлович*** (1528-1583) кнеç. Вăл IV Иван патшана çав тери çывăх тăнă, çар пуçĕ пулнă май, Хусанпа çапăçнă вăрçăсене пĕрре çеç мар хутшăннă (1545-1552, 1553-1557), каярахпа хăйĕн аса илĕвĕсенче, уйрăмах 1573 ç. хайланă «История о великом князе Московском» памфлетĕнче вĕсем çинчен тĕплĕн çырса кăтартать. Чăвашсем çинчен темиçе вырăнта та асăннă. Автор вĕсене «язычниксем», тет, чĕлхийĕ «хăйне майлă», тесе палăртать. Пĕрремĕш хут 1843 ç. пичетленнĕ.

Истори çăлкуçĕсенчен çакă паллă: XVI ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче – чăвашсем Хусан ханлăхĕнче пурăннă вăхăт – пирĕн мăн асаттесен пурнăçĕ çăмăл пулман. Ĕлĕк Ылтăн Уртана пăхăннă чăвашсем, каярахпа Хусан ханĕсемпе вĕсен тăрăнĕсене, нӳкерĕсене хырçă-марçă тӳлесе тăраççĕ.

Çак пусмăртан хăтăлас туртăм чăвашсем хушшинче те мал ĕмĕтлĕ çынсене тупса палăртать, юнашарах пу-

рăнакан вăйлă çарлă та тĕреклĕ патшалăхлă вырăссен ĕмпĕвĕсемпе килĕшӳ тума хистет. Çапла майпа 1551 ç. чăвашсем Мускава элчĕ яраççĕ, хăйсен ирĕкĕпе вырăссемпе пĕрлешме килĕшнине пĕлтереççĕ. Ку тапхăрта вырăс патшалăхĕ хăйĕн çумне нумай çĕрсене пĕрлештернĕ. 1552 ç. Хусан ханлăхĕ IV Иван (Хаяр Иван) çĕнтернипе пĕтсе ларать. Атăл тăрăхĕнчи халăхсен çак вăхăтран çĕнĕ социаллă-историллĕ аталанăвĕ пуçланать. Тĕпчевçĕсем калашле, «XVI-XVII ĕмĕрсенче чăваш обществин пуласлăхĕ, унăн прогресс çулĕпе утас шанчăкĕ пурри курăнса каять. Хусан ханлăхĕн пусмăрĕнчен хăтăлни чăваш обществине Раççей экономикин юхăмне кĕрсе кайма, çавна май аталаннă феодализм саккунĕсене пăхăнма хистет. Чăваш хресченĕсем социаллă кĕрешĕве стихийăллă формăпа хутшăнма пуçлани те çав сăлтавсенченех килнĕ»[8].

Чăваш халăх культурин тата тепĕр пысăк енне палăртса хăварни аван: XV ĕм. иккĕмĕш çурринчен пуçласа XVIII ĕм. пуçламăшĕчченхи тапхăра тĕпчевçĕсем чăваш этносĕн чăмăртану вăхăчĕ, теççĕ. Урăхла каласан, çак çулсенче чăваш çынни хăйĕн харкам ăнне аталантарса (самосознание) этнос (çынсен ушкăнĕ) картне лартма пултарнă. Ку вăл пысăк çитĕнӳ тунине пĕлтерет.

XVI-XVII ĕм. чăвашсем çинчен çырса хăварнă çыруллă сăмахлăх тексчĕсен шутне Олеарий Э.А., Витсен Н.-К., Лызлов А.И. хайлавĕсене кĕртмелле.

***Олеарий Эльшлегер Адам*** (1603-1671) – нимĕç çул çӳревçи, математикĕ; 1633-1639 çç. тĕпчев çул çӳревĕнче пулнă: Раççей патшалăхĕ, унти халăхсем пирки «Подробное описание путешествия голштинского посольства в Московию и Персию в 1633, 1636 и 1639 годах» кĕнеке çырать. Ăна 1647 ç. нимĕçле пичетлег, вырăсла чи анлă куçарăвĕ 1870 ç. тухнă.

***Витсен Н.-К.*** (1641-1717) – Амстердам хулин бургомистрĕ; 1664 ç. Голланди çĕр-шывĕн элчĕлĕхĕпе Мускава çитнĕ, унта çулталăк пурăнса Атăл тăрăхĕнчи та-

[8] Çавăнтах. 49 с.

та Çĕпĕрти халăхсем çинчен, вĕсен чĕлхе уйрăмлăхĕсене 1692 ç. пичетленнĕ «Северная и Восточная Татария» аса илĕвĕнче çырса кăтартать.

***Лызлов Андрей Иванович*** (паллă мар-1696 хыççăн) – вырăс историкĕ, куçаруçи. Хăй вăхăтĕнче Крым (1687, 1689) тата Азов (1695-1696) вăрçисене хутшăннă; 1692 ç. «Скифская история» историлле ĕçне çырса пĕтерет, пичетлет. Кĕнекери тĕп шухăш çапларах: вырăссем ытти халăхсемпе пĕрле тутар-монгол тата турккăсен пусмăрне çĕнтерни – пысăк пĕлтерĕшлĕ, курăмлă. Автор çавăн пекех кĕрешĕве хутшăннă халăхсен пурнăçне, ĕçне-хĕлне, йăлисене асăнать, чăвашсем Хусана илме пулăшнине палăртса хăварать.

Чăваш халăхĕн ăс-хакăл культурине тĕпчесси XVIII ĕм. пуçланать, тесен те йăнăш пулмĕ. Кунта ытларах ют çĕр-шыв тата вырăс историк-этнографсен ячĕсене асăнмалла, мĕншĕн тесен чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене вĕсем чи малтан çырса илни паллă. Çакна асăрхаттармалла: вĕренӳ пособинче ку таранччен пăхса тухнă авторсем сăмахлăха ытларах этнографи витĕмĕпе тĕпчеççĕ, вĕсен илемлĕх мелĕсене палăртмаççĕ-ха.

XVII ĕм. вĕçĕпе XVIII ĕм. пуçламăшĕнче вырăс патшалăхĕ православи чиркĕвне те, пĕчĕк йышши халăхсене те хăйне пăхăнтарса çитерет, пур влаçа та пĕр алла илет. Паллах, ку пĕр енчен прогрессивлă юхăм шутланнă: вак халăхсене ĕлĕкхи тĕн йăли-йĕркисене пăрахăçлаттарса официаллă православи тĕнне йышăнтарни майĕпен-майĕпен вĕсен хушшинче чиркӳсем уçтарассине, чиркӳсенче хăйсен чĕлхипе кĕлĕсене калаттарассине хăвăртлатнă. Çакă вырăс мар халăхсен хушшинче вуламаçырма пĕлекен, тарăн шухăшлавлă тата тавра курăмлă çынсене хатĕрлеме хистенĕ. Ятарласа шкулсем уçмалли, вĕсенче çак халăхсен тăван чĕлхине вĕрентмелли курăнса каять. Тĕне çирĕплетес пулсан ирĕксĕрех кĕнекесем куçарма, хутла вĕрентес ĕçе патша тӳре-шарисен те явăçма, хастаррăн хутшăнма тивнĕ.

Тепĕр енчен, çак православи тĕнне ирĕксĕрлетсе йышăнтарни чăвашсене хăйсен ĕмĕртенхи йăли-йĕркине, тĕнне пăрахăçлама, манма хистет. Çапла майпа халăхăн

ăс-хакăл пурлăхĕ тĕпрен илсен сăмах вĕççĕн çӳрекен сăмахлăхĕнче упранса юлать.

XVIII ĕм. 40-мĕш çулĕсенче чăваш этносĕн харкам ăнĕ лайăх еннелле улшăнать. Ăна пула чăваш çĕнĕ вăхăт тапхăрне кĕме, унта пурăнма хатĕрленсе çитет. Çак тапхăрта чăвашсем ытларах кĕнеке-шкул енне туртăнни сисĕнет. XVIII ĕм. чăвашсем çинчен çырнă ĕçсем нумай. Тĕпчевсенче халăх сăмахлăхĕн тĕрлĕ тĕсĕсем, пĕчĕкрех тексчĕсем пичетленеççĕ т. ыт. те. Камсем-ха вĕсем чăваш фольклористикин никĕсне хываканĕсем?

Малтан ***Страленберг Филипп Йохан Табберт*** (1676-1747) – швед капитанне аса илмелле; Полтава патĕнчи çапăçура тыткăна лекнĕскер, 1711-1726 çç. Тобольск хулинче ссылкăра пулнă. Вунă çул ытла Ф.Страленберг Çĕпĕрти тата урăх вырăнсенчи халăхсен чĕлхипе историне, этнографине тĕпчет. Тăван çĕр-шывне таврăнсан, вăл 1730 ç. нимĕçле «Северная и Восточная части Европы и Азии...» ятлă кĕнеке пичетлет, вырăсла ăна 1738 ç. куçарнă. Çак тĕпчеве пурĕ 28 чăваш сăмахне кĕртнĕ. Унсăр пуçне чăвашсен тĕнĕ, киремечĕсем çинчен асăнни пур; вĕсем тӳпери хĕвеле, уйăха, çăлтăрсене пуç çапнине палăртса хăварнă.

1733-1743 çç. Раççей академийĕ Çĕпĕр тăрăхне пысăк экспедици кăларса ярать. Унта хутшăннă ученăйсем – И.Г.Гмелинпа Г.Ф.Миллер чăвашсене тĕпчени паллă.

***Гмелин Иоганн Георг*** (1709-1755) – нимĕç ученăйнатуралисчĕ; 1727-1747 çç. Раççейре пурăннă, Германине каялла пурăнма куçсан, 1751-1752 çç. «Путешествие по Сибири» 4 томлă пысăк кĕнеке нимĕçле пичетлет. Асăннă тĕпчевре чăвашсен тĕнне, чӳк йăли-йĕркисене çырса кăтартнă, халăх мĕнле пурăннине, унăн пурлăхпа ăс-тăн культурине те кĕскен палăртнă автор.

***Миллер Герард Фридрих*** (Федор Иванович, 1705-1783) – вырăс историкĕ, Раççее 1725 ç. куçса килнĕскер, ятарласа вырăс чĕлхине вĕренет, Питĕрти Наука академийĕнче профессор пулса ĕçлет. Çĕпĕр экспедицийĕн ертӳçи пулнă май, çав тăрăхри 20 ытла хула архивĕнче вĕсен историйĕпе, унта пурăнакан халăхсен йăлийĕркипе, чĕлхипе, тĕнĕ-ĕненĕвĕсемпе çыхăннă нумай до-

кумент пуҫтарать. Сӑмахран, Г.Ф.Миллер хатӗрленӗ «Описание живущих в Казанской губернии языческих народов, яко-то: черемис, чуваш и вотяков, с показанием их жительства, политического учреждения, телесных и душевных дарований, какое платье носят, от чего и чем питаются, о их торгах и промыслах, каким языком говорят, о художествах и науках, о естественном и вымышленном их языческом законе, також о всех употребительных у них обрядах, нравах и обычаях; с приложением многочисленных слов на семи разных языках, как-то: на казанско-татарском, черемисском, чувашском, вотяцком, мордовском, пермском и зырянском, и приобщенным переводом Господней молитвы «Отче наш» на черемисском и чувашском языках, сочиненные Герардом Фридрихом Миллером, Императорской Академии Наук профессором, по возвращении его в 1743 г. из Камчатской экспедиции» кӗнеки чи малтан кӗскен 1753 ҫ., тулли варианчӗ – ҫак ятпа – 1791 ҫ. пичетленнӗ. Кун-та автор чӑвашсен авалхи тӗнӗ-ӗненӗвӗсем, мифологийӗ пирки сӑмах хускатнӑ. Ун шухӑшӗпе, вӗсен Турӑ, Шуйттан тата уйрӑм вырӑнсене сыхлакан пӗчӗк ыр-усалӗсем (божки) пур. Ҫак кӗнекере «Словарь на татарском, черемисском, чувашском, вотяцком, мордовском, пермском и зырянском языках, с российским переводом» сӑмахсар пурри паха.

XVIII ӗм. пӗрремӗш ҫурринче пичетленнӗ ӗҫсенчен тата икӗ ҫӑлкуҫа палӑртмалла. Вӗсем – чӑвашсем ҫинчен ҫырса кӑтартнӑ 2 документӑн тата 2 словарӗн куҫарӑвӗсем. Пӗрремӗшне – «Выпись из заполненной Симбирской провинциальной канцелярией в 1737-1738 годах анкеты В.Н.Татищева» тата «Извлечение из дневника Товия Кӗнигсфельда, участника путешествия астронома академика Н.И.Делиля в Березов в 1740 году», теприне «Русско-татаро-чувашско-мордовский словарь», «Русско-чувашско-марийско-мордовский словарь» ӗҫсем кӗреҫҫӗ. Асӑннӑ хайлавсенче 197 ыйту-хурав: чӑвашсен ҫӗр культне, кӗллисемпе чӳкӗсене, киремете пуҫҫапнине ҫырса кӑтартнӑ, халӑх мифологийӗнчи ыр-усалӗсемпе хӑвачӗсене – Туррине, ҫуратас туррине, ан-

гелне, шуйттанне, вӗри ҫӗленне – хак панӑ. *Т.Кӗнигсфельд* хӑйӗн ал ҫырӑвӗнче чӑвашсен киремечӗпе тӗплӗн паллаштарать, вӗсем хӑйсен мӗн авалхи турри-сене пуҫ ҫапса пурӑннине палӑртать.

Ҫӳлерех илсе кӑтартнӑ словарьсенче *Турӑ, пирӗшти, шуйтан, эсрел, аслӑ турӑ, пӳлӗхҫӗ, ҫуратан турӑ, мӑн турӑ, ҫутӑ ҫанталӑк, тамӑк* ячӗсене асӑннӑ. Ҫапла вара, чӑвашсен мифологийӗнчи ыр-усалсен хӑйсен тытӑмӗпе йӗркеленӗвӗ пуррине асӑннӑ тапхӑртах асӑрханине ку-ратпӑр.

Чӑвашсен социаллӑ пурнӑҫӗпе этнографийӗн хӑй евӗрлӗхне, обществӑри хутшӑнӑвӗсене сӑнласси XVIII ӗм. иккӗмӗш ҫурринче тата вӑйланать. Сӑлтавӗсем пирки эпир маларах калаҫнӑччӗ.

Ҫак пархатарлӑ ӗҫре Питӗрти Наука академийӗн тӳпийӗ пысӑк. Вӑл пуҫарнипе 1768-1773 ҫҫ. Раҫҫей патшалӑхӗн Европӑри пайне тӗпчемешкӗн ученӑйсен пы-сӑк ушкӑнне явӑҫтараҫҫӗ. Атӑл тӑрӑхӗнче И.Г.Георги, И.И.Лепехин, П.И.Рычков, Н.П.Рычков, П.С.Паллас та-та ыттисем пулса чӑваш халӑхӗ пирки паха материал-сем пухнӑ, ҫырса хӑварнӑ.

Кӗскен ҫӳлерехри авторсен паллӑрах ӗҫӗсемпе пал-лашар.

***Георги Иван Иванович*** (Иоганн Готлиб, 1729-1802) – вырӑс ҫул ҫӳревҫи, этнографӗ, натуралисчӗ; Раҫҫейӑн Кӑнтӑр-Хӗвелтухӑҫӗнче, Уралпа Атӑл, Байкал тӑ-рӑхӗсенче мӗн курни-илтнисене «Описание всех оби-тающих в Российском государстве народов, их житей-ских обрядов, обыкновений, одежд, жилищ, упражне-ний, забав, вероисповеданий и других достопримеча-тельностей» кӗнекинче ҫырса кӑтартать; нимӗҫле 1776-1780 ҫҫ., вырӑсла куҫарӑвӗ 1776-1777 ҫҫ. пичетленнӗ. Чи паллӑ уй-рӑмлӑхӗ: ученӑй пӗрремӗш хут хӑйӗн ӗҫӗнче чӑвашсен туррисене ырӑ тата усал сӑнарсем ҫине пайлать; пӗрремӗшсен шутне вӑл 8 хӑвата кӗртет, усаллисем патне Шуйттанпа Упӑтене те хушать.

***Лепехин Иван Иванович*** (1740-1802) – вырӑс ҫул ҫӳревҫи, ботаникӗ, медицина тухтӑрӗ; Раҫҫейри тӗрлӗ халӑхсен йӑли-йӗркине тӗпченӗ: Атӑлпа Урал тата

Çурçĕр районĕсенче пĕрре çеç мар пулнă, хăйĕн «Дневные записки путешествия доктора и Академии наук адъюнкта Ивана Лепехина по разным провинциям Российского Государства...» ĕçĕнче ирçесене, чăвашсене тата тутарсене ятарлă пайра тĕпченĕ. Ку 4 пайлă тĕпчев 1771-1805 çç. кун çути курнă, 2-мĕш пайĕнче чăвашсен ача çуралнипе ят хунине, туй тата çын вилнипе çыхăннă йăли-йĕркисемпе сăмахлăхне, тĕн ĕненĕвĕсемпе чӳкĕсене, киреметне асăннă.

***Рычков Петр Иванович*** (1712-1777) – вырăс историкĕ, географĕ, экономисчĕ, натуралисчĕ; Оренбург хулинче нумай çул ĕçленĕскер, вăл хăй пурăннă вырăна çеç мар, Хусанпа Аçтăрхан кĕпĕрнисен историне те аван пĕлнĕ. Çакă ăсчах хатĕрленĕ «Топография оренбургская, то есть обстоятельное описание Оренбургской губернии» кĕнекинче уйрăмах паллă; чăваш уявĕсем çеç мар, ялпа хула хуçалăхĕсене епле аталантарас ыйтусем те интереслентереççĕ тĕпчевçĕне.

***Рычков Николай Петрович*** (1748-1784) – вырăс çар çынни, историкĕ, натуралисчĕ. Рычков П.И. ывăлĕ; ашшĕпе пĕрле пухнă материалсене 1770-1772 çç. «Журнал, или Дневные записки путешествия капитана Рычкова по разным провинциям Российского государства, 1769-1770 году» ятпа пичетлесе кăларать, вырăс этнографийĕпе истори ăслăлăхĕсене тата çӳлерех çĕклет. Унăн ĕç пахалăхĕ: чăвашсене пăлхарсен историйĕпе çыхăнтарни. Кĕнекере çак ыйтусене хускатнă: Атăл, Урал, Хусан, Оренбург кĕпĕрнисен кĕске историйĕ, вĕсен вырнаçăвĕпе архитектури, халăх йышĕ, промышленноçĕ, ал ĕçĕ, ял хуçалăхĕ, шыв-шурĕ, тăвĕсем, çĕр айĕнчи пуянлăхĕ, вĕсене кăларса усă курасси, ăсхакăлĕпе кăмăл-туйăмĕ, йăли-йĕрки, тĕнĕ, искусстви.

***Паллас Петр Симон*** (1741-1811) – нимĕç географĕ, çул çӳревçи, Питĕрти Наука академийĕн членĕ; 1768-1774 çç. Раççейăн Кăнтăр-Хĕвелтухăç районĕсене, Уралпа Çĕпĕр тăрăхĕсене тĕпчекен экспедицин пуçлăхĕ. Каярахпа (1793-1794 çç.) тепĕр хут Атăлçи тăрăхĕнче, Çурçĕр Кавказра тата Приазовьере пулать, çĕр пичне (географи), тĕрлĕ ӳсен-тăрана (ботаника), çĕр витĕмĕн

тытăмĕпе унти пуянлăха (геологи), чулланнă йĕрсем тăрăх авалхи чĕр чунсемпе ӳсен-тăрансене (палеонтологи) тата халăхăн материаллă культурипе ăс-хакăл культурине тĕпчеме пулăшакан нумай сведенисем пухать, вĕсемпе 1771-1776 çç. хатĕрленĕ 3 пайлă «Путешествие по разным провинциям Российской империи» кĕнекере усă курать. Вырăсла çак тĕпчев 1773-1788 çç. çапăнса тухнă; автор Самар тăрăхĕнчи Çарăмсан шывĕ çумĕнче пурăнакан чăвашсен йăли-йĕркипе сăмахлăхне илсе кăтартнă.

Асăннă тапхăра уçса панă чух тепĕр çăлкуçа палăртмасăр иртме çук. Ку вăл - XVIII ĕм. вĕçĕнче ***Милькович Капитон Сергеевич*** (çурални-вилни паллă мар) çырнă «Быт и верования чуваш Синбирской губернии (Из записок уездного землемера Мильковича 1783 г.)» очеркĕ. Пирвайхи хут 1827 ç. «Северный архив» журналта, каярахпа В.К.Магницкий (1888), Н.В.Никольский (1906) хушса кăларнă. Юлашки хут Чăваш Республикин Наци библиотеки 1997 ç. «Çулталăк календарĕнче» пичетлерĕ.

Асăннă очеркра малтанхи хут фольклор тексчĕсем пичетленеççĕ, автор пуçласа халăх сăмахлăхĕн хăшпĕр жанрĕсене палăртса тухать, чăваш мифĕсене икĕ ушкăна уйăрать – ыррисем тата усаллисем. Автор ăнĕпе, ыррисем сахалрах, вĕсен шучĕ 30-тан иртет пулсан, усаллисен хисепĕ те çук; хăйсен хушшинче аслисене, вăтаммисене тата кĕçĕннисене уйăраççĕ.

XVIII ĕм. иккĕмĕш çуррийĕ чăваш сăмахлăхĕн тĕнчинче тата тепĕр пысăк ӳсĕмпе паллă. Ку вăл – тăван халăхранах мал ĕмĕтлĕ, вĕреннĕ çынсем тата малтанхи ӳкĕтлевçисем (проповедники) тухни. Вĕсем чăваш çыннишĕн хăйсен пурнăçне шеллеменни, пĕтĕм вăйхалне, ăс-тăнне халăха çутлăх еннелле туртăнтарассишĕн ырми-канми тăрăшни харама кайман. XVIII ĕм. вĕçнелле чăвашсен, кириллицăна тĕпе хунă пулин те, хăйсен çырулăхĕ йĕркеленет, чĕлхемĕрĕн пĕрремĕш грамматики (1769) пичетленет, илемлĕ литературин нумай жанрĕсем никĕсленеççĕ, тăван чĕлхепе хайлавсем çеç мар, кĕнекесем те пичетленкелеççĕ.

Асӑннӑ ҫырулӑх палӑкӗсенче чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗн тӗслӗхӗсем те сахал мар кун ҫути курнӑ.

Паллах, ҫав мал ӗмӗтлӗ чӑвашсем хушшинче ***Рожанский Ермей Иванович*** (1741-паллӑ мар), ***Бичурин (Иакинф) Никита Яковлевич*** (1777-1853) тата ытти ӑсчах-тӗпчевҫӗсен ячӗсене шута хуни вырӑнлӑ.

Ҫапла вара, чӑваш фольклористики XIX ӗмӗре пӗчӗк утӑмсемпе пулин те, анчах курӑмлӑ ӗҫсемпе пырса кӗрет. XIX-XX ӗм. пуҫламӑшӗ, ученӑйсем палӑртнӑ тӑрӑх, чӑваш халӑхӗн историне, унӑн ӑс-тӑнпа пурлӑх культурине тӗпченӗ вӑхӑтсенчен чи техӗмли. Сӑмахран, «Чӑвашсен кӗске энциклопедийӗнче» асӑннӑ тапхӑрсенче чӑвашсене халалланӑ 300 ытла публикаци пичетленни ҫинчен сӑмах пырать. Ҫакна шута илсе ку тапхӑра икӗ пая уйӑратпӑр.

XIX ӗм. пӗрремӗш ҫуррине чӑвашсем ҫинчен ҫырнӑ кӗнекесем, статьясемпе тӗпчевсем тӗрлӗрен журналсенче, кӗпӗрнесен ведомоҫӗсенче, уйрӑмах Хусан университечӗ (1804 ҫ. йӗркеленнӗ) кӑларса тӑракан «Казанские губернские ведомости» хаҫатра пичетленеҫҫӗ.

Ҫак тапхӑрта фольклор пухакансемпе тӗпчекенсем хушшинче миссионерлӑ, мифологилле тата романтикӑллӑ поэтикӑлла юхӑмсем палӑраҫҫӗ. Пӗрремӗшсен шутне чиркӳ ҫыннисене, пуп-миссионерсене кӗртетпӗр, иккӗмӗшӗсем – чӑваш халӑхне ҫутта кӑларас, вӗсене вӗрентес туртӑмлӑ ӗҫченсем. Кунта чӑвашсемпе пӗрле вырӑс тата ытти халӑхсен ӑсчахӗсене палӑртмалла.

Кашни юхӑмӑн хӑйне май тӗллевӗ, курӑмлӑхӗ, тӗпчев мелӗсем. Унсӑр пуҫне, XIX ӗм. пуҫламӑшӗнчи тӑван халӑхӑмӑрӑн общество пурнӑҫӗпе культуринче пулса иртекен улшӑнусене шута илни те вырӑнлӑ пулӗ. Пӗр енчен, халӑхра социаллӑ хирӗҫӳсем вӑйланаҫҫӗ. Ӑна пула тата мал шухӑшлӑ вырӑс ҫыннисен витӗмӗпе чӑвашсен ҫӗнӗлле обществӑлла ӑс-тӑнӗ йӗркеленет. Тепӗр енчен, ҫырулӑх йӗркеленнине кура чӑвашӑн та литература чӗлхин нормисем ҫирӗпленеҫҫӗ, куҫару шкулӗ вӑй илет, кӗнеке кӑларас, халӑх сӑмахлӑхне тӗпчес ӗҫ йӗркеленет. Паллах, ку пулӑмсемпе обществӑн тӗрлӗ

социалла сийĕ хăйне май, хăйне кирлĕ пек усă курма тăрăшать.

Миссионерлă мифологилле юхăмĕн элчисем – В.П.Вишневский, В.И.Лебедев, А.С.Протопопов, Д.Н.Орлов, Н.Каменский тата ыттисем чăваш халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене пухаççĕ пулин те, вĕсене официаллă тĕн кăсăкĕсене (интересы) шута илсе тĕпчеме тăрăшаççĕ. Вĕсем ытларах чухне халăхăн тĕнĕпе ĕненĕвĕсене, мифологине, аваллăх халапĕсемпе юмахĕсене тĕн вĕрентĕвĕ майлă хатĕрлеççĕ. Çав вăхăтрах асăннă ĕçсенче чăваш халăх еткерлĕхне тӳреммĕн те хыттăн сивлени палăрмасть-ха. Сăлтавĕ – чиркӳ хăйĕн ĕçне çĕнĕлле йĕркелеме тăрăшнинче, кĕнекесем кăларассине тӳремменех миссионерла тĕллевсемпе çыхăнтарнинче. Тата, обществăра капитализм йĕрки аталаннă май, традициллĕ фольклор жанрĕсем çĕнĕ сĕм илсе пыраççĕ пулсан та, вĕсем кĕнекесенче пичетленеймеççĕ-ха, халăхра сăмах вĕççĕн çеç çӳреме пултараççĕ.

***Вишневский Виктор Петрович*** (1804-1885) – Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Сăкăтра (халĕ – Вăрнар р-нĕ) священник çемйинче çуралнă; Хусанти тĕн семинаринче, Мускаври академире вĕренет, 1828 ç. Хусана таврăнса магистр степенне хӳтĕлет, тĕн семинарийĕнче философи курсне вулама пуçлать, çав хушăрах священникре, кайран тĕн академийĕнче чăвашсемпе çармăссен чĕлхине, этнографине вĕрентсе пурăнать.

В.П.Вишневский пултарулăхĕ – нумай енлĕ. Вăл 30-40-мĕш çулсенчи чăваш культурин паллă ĕçченĕ: вырăсларан чăвашла куçараканĕ тата очеркпа ӳкĕт жанрĕсене малалла тăсаканĕ, чăваш чĕлхин словарьне тата грамматикине çыраканĕ т. ыт. те.

Паллă ученăй халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене нумай пухнă, хăйĕн тĕпчевĕсенче усă курнă. Чи паллăраххи – «О религиозных поверьях чуваш» очеркĕ. Малтан 1844-1846 çç. «Казанские губернские ведомости» хаçатра, кайран уйрăм кĕнекен пичетленнĕ.

Очеркра автор чăвашсен тĕрлĕ мифĕсене тата халапĕсене тишкерет, вилепе çыхăннă йăлисене (пытарни, асăнни) тĕплĕн çырса парать. Сăмахран, мифла сăнар-

сен шутне вăл 31 ыр-усала кĕртнĕ, кашнинех хак панă, çак вăйсем икĕ ушкăна – ыррисем тата усаллисем – уйрăлнине палăртать. Чӳксене çырса кăтартнă чух автор вĕсене те икĕ пая уйăрнă: ушкăнпа тата уйрăм irttерекен чӳксем; чӳк кĕллисене илсе парать. Малтанласа чăваш мифологийĕ ытти халăхсен мифла ăнĕпе е шухăшлавĕпе çывăххине асăрхаттарать.

*Протопопов Александр* (çурални-вилни паллă мар) – Кăрмăш соборĕнче протоиерей пулса ĕçленĕскер, 1828 ç. «Краткое описание суеверий чуваш, сочиненное в 1828 году Курмышского Собора Протоиереем Александром Протопоповым» ал çырăвне çырса хатĕрлет, ăна Мускавра 1845 ç. пĕчĕк кĕнекен пичетлесе кăларать. Çак хайлавра чăвашсем ăçтан тухнине, тĕнĕпе юмăçĕсем çинчен çырса кăтартнă. Автор шухăшĕпе, чăвашсем икĕ пысăк хăвата ĕненеççĕ: Турă (ырри) тата Шуйттан (усалли). Киреметсене чӳк тăваççĕ, тĕрлĕрен выльăхсене пусса вĕсене çырлахтараççĕ. Каçхи вупкăн Эсрелне Йĕрĕх те – усал сывлăшсем: чăвашăн вĕсене е парне парса, е выльăх пусса чӳклемелле, имĕш.

А.Протопопов вилнисене асăннине, тупа тунине, авăн пăтти чӳкне епле irttернине тĕплĕн çырса кăтартнă.

*Лебедев Василий Иванович* (1813-паллă мар) – Чĕмпĕр кĕпĕрнин Кăрмăш уесĕнчи Штанашра (халĕ – Хĕрлĕ Чутай р-нĕ) священник çемйинче çуралнă; Хусанти тĕн семинаринче, Питĕрти Медицинăпа хирурги академийĕнче вĕренет. В.И.Лебедев Шалти ĕçсен министерствин системинче ĕçленĕ пулас, мĕншĕн тесен ун нумай тĕпчевĕсем çак ведомствăра тата çар вĕренӳ заведенийĕсенче вĕренекенсене вуламалли журналсенче пичетленеççĕ.

Çакна та каласа хăвармалла: чăвашран тухнă, анчах «вырăсланнă» çыравçă тĕрлĕ çĕрте пурăнакан чăвашсем, вĕсен чĕлхипе халапĕсем çинчен сăмахлать, мĕншĕн пĕрисем (Кăрмăш чăвашĕсем) теприсенчен (Хусан тăрăхĕнчи чăвашсенчен) чухăнтарах та япăхрах пурăннин сăлтавĕсене кăтартма тăрăшать, çав вăхăтрах, «Пирĕн телей» ятлă оригиналлă сăвă хайланăскер, хăй

чăвашран тухнине пытарать. Тен, вăхăчĕ çавнашкал пулнă-тăр.

Унăн «Предания чуваш» (1848) тата «Симбирские чуваши» (1850) паллă статйисем «Северное обозрение» тата ШЁМ журналĕнче кун çути курнă.

В.И.Лебедев асăннă хайлавĕсенче чăваш халапĕсемпе, сăмахлăхăн ытти тĕсĕсемпе анлă усă курнă, очеркĕсенче вара фольклора пĕтĕмлетсе калакан калуçă (повествователь) евĕр курăнать. Е тата, «Пирĕн телей» сăввăн тĕп шăнăрĕ мĕнре-ха? Паллах, халăх пурнăçĕпе йĕркине çырса кăтартнинче, сăвва автор халăх поэзийĕн поэтикине, мифла ăнне, шухăшлавне тĕпе хурса хайланинче.

*Орлов Дмитрий Николаевич* (1824-1887) – тĕн темипе çыракан писатель, протоиерей; тĕн семинарийĕсенче вĕрентнĕ. Вăл Самар, Чĕмпĕр кĕпĕрнисенчи чăвашсен нумай йăлисене, уявĕсене çырса хăварнă. Вĕсенчен паллăраххисем «Симбирские губернские ведомости» хаçатра 1855-1857 çç. пичетленнĕ: «Чувашский праздник, бывший в с. Тайдакове (Сызранский уезд Симбирской губернии), 1825 г., 30-го июня», «Обычаи чуваш», «Суеверия, одежда чуваш села Тарханова» т. ыт. те.

Иккĕмĕш юхăмăн элчисем – Д.П.Ознобишин, Чăваш Хвети, А.А.Фукс, А.И.Артемьев, В.А.Сбоев – хăйсен ĕçĕсенче çырусăр сăмахлăхăн тĕрлĕ жанрĕсене çырса кăтартнисĕр пуçне халăх поэзийĕн иксĕлми пуянлăхне, унăн илемлĕхĕпе поэтикине малти вырăна хурса хаклаççĕ, сăмахлăхăн традицилле культурăри тата нацин историри вырăнне палăртаççĕ. Ку хăй вăхăтĕнче çав тери прогрессивлă пулăм шутланнă, çыруллă сăмахлăхра реализмăн пирвайхи утăмĕ пулса тăнă.

*Ознобишин Дмитрий Петрович* (1804-1877) – Чĕмпĕр тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ вырăс поэчĕ, куçаруçи, этнографĕ, фольклорисчĕ, чăваш халăх поэзийĕн пуянлăхне пысăка хурса хаклаканĕ. 1832-1833 çç. Шупашкарта пурăннă, чăваш ялĕсене тухса çӳренĕ май халăх юрри-сăввине пуçтарнă. Çапла вара, чăваш халăх юррисене пухас ĕç Д.Ознобишинран пуçланнă теме те

пултаратпăр. Вăл çырса илнĕ 8 юрă чи малтан 1833 ç. «Заволжский муравей» журналта пичетленнĕ, текстсене чăвашларан вырăсла куçарса панă.

*Чăваш Хвети* (1810-мĕш çулсем-паллă мар) – XIX ĕм. пĕрремĕш çурринче Шупашкар тăрăхĕнче çуралса ӳснĕ чăваш юрăçи, такмакçи. Ун çинчен пĕрремĕш хут Д.Ознобишин хăйĕн ĕçĕнче асăнать, «Федяран» çырса илнĕ юрă-такмака чăвашла-вырăсла пичетлесе кăларать. Асăннă юрăсем илемлĕх енчен фольклора çав тери çывăх: сăвăсенчи танлаштару (çут çанталăк ӳкерчĕкĕсене çамрăк çынсен шăпийĕпе çывăхлатса кăтартни); тăван халăхăмăрăн йăли-йĕркийĕ, тĕнче курăмĕпе ăнланăвĕ автор ăнĕнче палăрни; халăх поэзийĕн тĕрлĕ жанр тексчĕсене усă курни (туй юрри, ваттисен сăмахĕсемлĕ çаврăмсем, яш-çамрăксен такмакĕсем); пейзаж лирики т. ыт. те. Çав вăхăтрах Хвети юрри-сăвви – чăвашсен автор ăнĕллĕ, çыруллă сăмахлăхăн малтанхи палăкĕсенчен пĕри. Нумай чăваш тĕпчевçисемпе çыравçисем вĕсене вуласа паллашнă, çĕнĕ хайлавсем шăрçаланă.

*Фукс (Апехтина) Александра Андреевна* (1805-1853) – Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Вырăс Салире (Куславкка р-не кĕнĕ, халĕ урăх ялпа пĕрлешнĕ) чăвашран тухнă улпут çемйинче çуралнă; чăвашсен кун-çулне, йăли-йĕркине, пултарулăхне сăмахпа çеç мар, курса-илтсе ӳснĕ. Каярахпа, Хусана пурăнма куçсан та, çитĕннĕ тăрăхра темиçе хутчен те пулать, чăвашсен фольклорĕпе этнографине тĕпчесе курăмлă ĕçсем калăплать. Пирвайхи çул тĕрленчĕкĕсем 1833 ç. «Заволжский муравей» журналта «Письма из Москвы в Казань» ятпа, кайран 1840 ç. «Записки А.Фукс о чувашах и черемисах Казанской губернии» кĕнекере пичетленнĕ.

А.Фукс очеркĕсенче çитменлĕхсем пур пулин те пирĕншĕн ку хайлав паянхи кун та хăйĕн пĕлтерĕшне çухатман, мĕншĕн тесен унта Чăваш Хветин малтан пичетленмен ытти сăвви-такмакĕсем çапăнса тухнă, тата авторăн чăваш халăхĕн пурнăçне тĕрĕсреххĕн ӳкерсе парас туртăмĕ яр-уççăн палăрнă.

Очеркра çак ыйтусене çутатнă: 1) вилесене асăнни; 2) çинçе, чӳксем, кĕлĕсем; 3) чăваш мифологийĕ; 4) çи-

мĕк; 5) чăвашăн пуянлăхĕ; 6) харкашăвĕсемпе хирĕçĕвĕсем; 7) чăваш тĕшмĕшĕсем; 8) çи-пуçĕ; 9) чăваш туйĕ; 10) çĕнĕ тырра халалланă кĕлĕсем; 11) киремет çинчен; 12) вилесене сума суни, асăнни; 13) чăваш юррисем; 14) чăваш турри, ытти хăватсем; 15) чăваш тĕнĕ, юмăçĕсем.

***Артемьев Александр Иванович*** (1820-1874) – вырăс статисчĕ, археологĕ, этнографĕ, географĕ; чăваш фольклористикине аталантарас ĕçре паллă йĕр хăварнă. Хусан университечĕн профессорĕнче тата ШĔМĕн статистика пайĕнче ĕçленĕ хушăрах Хусан кĕпĕрнинчи халăхсен пурнăçĕпе интересленнĕ, чăвашсемпе çармăссен йăлисене, уявĕсене, ăс-тăнпа пурлăх культурине тĕпченĕ. Хăйĕн «Кереметь (у чувашей)» тата «Некоторые обряды и обыкновения Чебоксарского уезда» тишкерӳллĕ статйисене 1846 ç. «Казанские губернские ведомости» хаçатра пичетлет. Пĕрремĕш статйинче автор чăвашсен киремет культне мифсемпе тата халапсемпе усă курса тишкерет. Ун шучĕпе, киремет тесе чăвашсем пĕччен ларакан юман йĕри-тавра ятарласа карта тытнă е чӳклемелли вырăна калаççĕ. Çавăн йышши картасем кашни ялтах пур: йывăç çине тем те пĕр çакнă е, йĕри-тавра тĕрлĕрен шăмăсем, çăмсем, тĕксем выртаççĕ пулсан, вăл – киремет пулать-мĕн. Иккĕмĕшĕнче автор Шупашкар уесĕнчи чăвашсен хушшинче сарăлнă йăласемпе уявсене çырса панă. А.Артемьевăн чăвашсем çинчен çырнă ĕçĕсенче истори чăнлăхĕ палăрса тăрать. Асăннă хайлавсем ăслăлăх никĕсĕ çинче тĕвĕленме пуçлаççĕ; чăвашсен хăйсен этнологийĕпе филологийĕ аталанас çулĕ-йĕрĕ палăрать. Çаксем пĕтĕмĕшле халăх сăмахлăхне сăнанин пĕлтерĕшне кăтартаççĕ.

А.Артемьев пултарулăхĕн тепĕр енĕ – вăл чăвашсен пĕрремĕш писательне С.М.Михайлова хайлавсем çырма, вĕсене пичетлеме пулăшни, хистени тата хавхалантарни.

***Сбоев Василий Афанасьевич*** (1810-1856) – вырăс писателĕ, этнографĕ; унăн ачалăхĕ Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Урхас Кушкăра (халĕ – Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) чăвашсем хушшинче иртнĕ. Вĕсен йăли-йĕркине,

пултарулӑхне курса-илтсе ӳснӗскер, вӑл халӑх поэзине чун-чӗрипе туйса тӑнӑ.

В.А.Сбоев пултарулӑхӗ нумай енлӗ: Питӗрти тӗн академине пӗтерсенех Хусан университетӗнче ӗҫлеме пикенет, ҫине-ҫинех кӗпӗрнере тухса тӑракан тӗрлӗ журналсемпе хаҫатсенче чӑвашсемпе ҫармӑссем ҫинчен тӗпчевсем пичетлет. Чи курӑмлисем ҫаксем: «Заметки о чувашах» (1848-1850), «Исследования об инородцах Казанской губернии: Заметки о чувашах» (1856), «Чуваши в бытовом, историческом и религиозном отношениях: Их происхождение, язык, обряды, поверья, предания и пр.» (1865) т. ыт. те.

Юлашки кӗнеки – маларах асӑннӑ ӗҫсен хушса, ҫӗнетсе кӑларнӑ варианчӗ. Ӑна очерк тесе хаклама та пулать. Хӑйӗн очеркӗнче автор чӑвашсен туй мешехине, авалхипе хальхи тӗнне, уявӗсене, вилепе ҫыхӑннӑ йӑли-йӗркине, сӑмахлӑхӗпе чӗлхине анлӑн тишкерет. Ҫавӑнпа ӑна чӑвашсен пӗрремӗш ӑслӑлӑх монографийӗ тесен те йӑнӑш пулмӗ.

Халӑхӑн лирики ҫинчен ҫырнӑ чух автор чӑвашсен традициллӗ юрӑ-сӑвви пуррине палӑртать, вӗсене содержанине кура 4 ушкӑна пайлать: эротика, хурланчӑк (элеги), йӑла тата сатира юррисем. В.А.Сбоев шухӑшӗпе, юрӑсем илемлӗх мелӗсемпе (евӗрлев сӑмахӗсем, танлаштарусем, сӑмах вылявӗсем, параллеллӗхсем) пуян. Вӑл тӗпчевҫӗсенчен чи малтан чӑваш сӑввин хӑй евӗрлӗхне, сӑвӑ ҫаврӑмӗнчи йӗркесене тӗпчесе вӗсем сыпӑксемпе пусӑмсем ҫине пайланнине, сӑвӑ йӗркелес мелсене кӑтартса хӑварать.

***Михайлов Спиридон Михайлович (Янтуш)*** (1821-1861) – чӑвашсен малтанхи писателӗ, историкӗ, этнографӗ, фольклорисчӗ; Хусан кӗпӗрнин Чикме уесӗнчи Юнкӑпуҫра (халӗ – Муркаш р-нӗ) хресчен кил-йышӗнче ҫуралнӑ. Хӑй тӗллӗн вулама-ҫырма вӗреннӗ, 1833 ҫ. пуҫласа тӗрлӗ вырӑнта ӗҫлет, 1842 ҫ. пуҫласа мӗн виличчен Чикмери земство сучӗн куҫаруҫинче вӑй хурать. Сахал пурӑнсан та, 50 ытла статьяпа тӗпчев ӗҫӗ ҫырса хӑварнӑ, нумайӑшне «Казанские губернские ведомости», «Русский дневник», «Северная пчела», «Москвитянин»

хаçатсемпе журналсенче пичетленĕ. Паха ĕçсемшĕн 1854 ç. ăна Вырăс географи обществин членне суйлаççĕ, 1859 ç. çак общество писателе кĕмĕл медаль парса чыс тăвать.

Историпе этнографи очеркĕсемсĕр пуçне С.М.Михайловăн халăх пултарулăхне халалланă ĕçсем те сахал мар: «Предания чуваш», «О музыке чуваш», «Чувашские свадьбы» (1852), «Краткое этнографическое описание чуваш», «Чувашские разговоры и сказки» (1853) т. ыт. те. Ун ĕçĕсен ятарлă пуххи 2004 ç. «Собрание сочинений» ятпа çапăнса тухрĕ.

С.М.Михайловăн XIX ĕм. 50-мĕш çулсенче пичетленнĕ ĕçĕсенче, тĕпрен илсен, тăван халăхăмăрăн историйĕпе этнографийĕ сăнланнă. Унсăр пуçне С.Янтуш халăх йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăх тексчĕсене те нумай пичетлет (туй юрри-такмакĕсем, юмах-халап). Сăмахран, «Чăваш туйĕсем» очеркĕнче автор чăваш халăх юррисен илемне, вĕсенчи шухăш тарăн та нумай пĕлтерĕшлĕ пулнине асăнать, тăрлавсăр шухăшлă этнографсем чăваш халăхĕн чĕлхипе сăмахлăхне хисепе хуманнине питлет. Ун шухăшĕпе, халăх сăмахлăхĕ ытарлă сăнарсемпе хальхи пурнăç çине халăх мĕнле пăхнине, вăл ăна мĕнле хакланине кăтартса парать.

С.М.Михайлов ваттисен сăмахĕсене, каларăшĕсемпе сăнавĕсене, юмахĕсемпе халапĕсене те нумай пухнă. Вĕсем 1853 ç. тухнă «Чăваш калаçăвĕсемпе юмахĕсем» кĕнекере кун çути курнине пĕлетпĕр эпир. Çакна та палăртмалла: халăх сăмахлăхĕн тĕрлĕ тĕсĕсене çырса илнĕ чухне автор тăтăшах чăваш сăмахĕсемпе сăмах çаврăнăшĕсене çаплипех хăварать, халăхра текст епле çӳрет, ним улăштармасăрах усă курать («Сарри-паттăр» халап, «Çĕр çăтни» юмах). Асăннă кĕнекене писатель халăхра чи анлă сарăлнă чăваш халăх юмахĕсемпе халапĕсен, юррисемпе сăввисен, ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахĕсен, сăнавĕсен паллăрах та илемлĕрех тĕслĕхĕсене кĕртнĕ. Çавăнпа ăна ун чухнехи *чăваш сăмахлăхĕн антологийĕ* тетпĕр.

Автор текстсенче вырăнти калаçу уйрăмлăхĕсене кĕнекере çаплипех хăварма тăрăшнă, ăнланма йывăр сăмахсене те пĕр улăштармасăрах кĕртнĕ. Çакă

çыравçăн хăй евĕрлĕхне, унăн хайлавĕсем тăван халăхăн XIX ĕм. варринчи пурнăçне пĕлмелли паха çăлкуç пулса тăнине кăтартса параççĕ.

Чăваш обществин XIX ĕмĕр варринчи пурнăçне çапла хаклама пулать:

1. XIX ĕм. 50-мĕш çулĕсенче Раççейри вырăс мар халăхсене çутта кăлармалли педагогика системи чăмăртанма пуçлать, иккĕмĕш çурринче вăл вăй илсе тĕрекленет. Çак система хăйех илемлĕ сăмахлăх чĕлхине аталантарма, тĕрлĕ жанрлă хайлавсем çырма хистет.

2. XIX ĕм. пĕрремĕш çуррисенчех чăваш литературин тĕрлĕ типĕсем аталаннине палăртмалла. Ку тапхăрта çыруллă сăмахлăх жанрĕсем пурте тенĕ пекех халăх еткерлĕхĕ çинче йĕркеленеççĕ, унăн илемлĕхĕпе, философийĕпе, йăли-йĕркипе, шухăш-туйăмĕпе пуянла-наççĕ.

3. Чăваш халăхĕ хушшинче чиркӳ, тĕн тĕллевĕсем сарас ыйтусем чиркӳ ведомстви картинчен тухса наци ирĕклĕхĕшĕн, унăн чĕлхипе сăмахлăхне, культурине сыхласа хăварассишĕн пыракан кĕрешӳ патне илсе çитереççĕ. Ку тăван халăх хушшинчи пултаруллă çынсене пĕр çĕре пуçтарăнма, чăваш интеллигенцине чăмăртанма меллĕ çулсем туса парать.

4. Çӳлерех асăннă сăлтавсене пула XIX ĕм. пĕрремĕш çурринче чăвашсен общество ăнĕ тата çӳлерех хăпарать, çав ăнпа тĕрлĕ гуманитарлă ăслăлăхсем – историпе этнографи, чĕлхепе фольклор пĕлĕвĕсем – аталанма тытăнаççĕ.

XIX ĕм. иккĕмĕш çурринче Раççей тата чăвашсен историйĕнче тĕрлĕ улшăнусем пулса иртнĕ: крепостла йĕрке пăрахăçланать; çине-çинех тĕрлĕ пăлхавсем çĕкленеççĕ; вак халăхсем валли вĕрентӳ шкулĕсем, училищисем уçăлаççĕ, вĕсенче тăван чĕлхепе вĕрентме ирĕк параççĕ; Чĕмпĕрте чăваш шкулĕ уçăлать; чăваш алфавичĕ çуралса çĕнĕ çырулăха аталантарать т. ыт. те.

Асăннă улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем чăваш чĕлхине, халăх йăли-йĕркипе пултарулăхне, ăс-хакăлпа пурлăх культурине тĕпчес туртăма татах вăйлатаççĕ. Вырăс ăсчахĕсемпе пĕрле чăваш интеллигенцийĕн нумай элчисем наукăпа интересленнине палăртмалла. Кĕнекере хăшĕ-

пĕрин ячĕсемпе паллăрах ĕçĕсене çиелтен çеç асăнса тухăпăр, сумлăрах ятсем çинче тĕплĕнрех чарăнăпăр.

Çак тапхăра тишкернĕ чух чи малтан вырăссен педагогне, тĕпчевçине, тĕрĕкçĕ-чĕлхеçине ***Ильминский Николай Иванович*** (1822-1891) профессора асăнмалла.

Тĕнчипе паллă арапçă, тĕрĕкçĕ, чăвашсен çĕнĕ çырулăхне чĕртсе ярас, вырăс мар халăхсем хушшинче Христос тĕнне сарас, вĕсене вырăслантарса çутта кăларас ĕçе ĕмĕр тăршшĕпех туса пынă. Унăн хăйĕн вĕрентӳ системи пулнă. Унăн никĕсне вак халăхсене вĕрентме тĕрлĕ çĕрте учительсем хатĕрлекен шкулсемпе училищисем уçнинче, унта тăван чĕлхепе вĕренме ирĕк панинче курмалла. Н.И.Ильминский И.Я.Яковлева çĕнĕ алфавит тума, чăвашла кĕнекесемпе букварь кăларма нумай пулăшнă, çав ĕçе хăй те хастар хутшăннă. 1872-1891 çç. вăл Хусанти вырăс мар халăхсем валли учительсем хатĕрлекен семинарие ертсе пынă. Кунта нумай çĕнĕлĕх кĕртнĕ, тĕпчевсем çырнă. Вĕсен шутне «О фонетических отношениях между чувашским и тюркскими языками» (1865), «Буинский уезд: (чувашские поминки)» (1894) т. ыт. те кĕреççĕ.

***Аристов Николай Яковлевич*** (1834-1882) – вырăс историкĕ, Хусан университечĕн профессорĕ; 30 ытла монографи авторĕ. Чăвашсен историлле халапĕсене пухса «Чуваши и Пугачев» (1880) ятлă тĕпчев пичетлесе кăларть.

***Арнольдов М.В.*** – чăваш халăх костюмĕсене, сăнавĕсемпе ĕненĕвĕсене пухса тĕпчекенĕ. Унăн паллăрах ĕçĕсем 1865-1868 çç. «Симбирские губернские ведомости» хаçатра пичетленнĕ: «Женские костюмы в с.Порецком», «Чувашские поверья в Курмышском уезде Симбирской губернии», «Этнографические заметки по Симбирской губернии» т. ыт. те.

***Филиппов Григорий Филиппович*** (184?-1914) – Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уссĕнчи Тăхăртакара (халĕ – Красноармейски р-нĕ, Дубовка ятпа çӳрет) хресчен çемйинче çуралнă; тĕрлĕ вырăнта учительте, священникре, пĕр вăхăт Вăрмар районĕнчи Шăхаль чиркĕвĕнче пупра ĕçленĕ. 1870-1990 çç. этнографи материалĕсене,

чăваш халăх юррисене, юмах-халапĕсене пухать, вĕсене вырăсла куçарса пичетлет. Паллăрах хайлавĕсем: «Чуваши Бичуринского прихода» очерк, «Чухăн çын пурăнăçĕ – хирти мулкач пурăнăçĕ» поэма.

***Васильев Петр Васильевич*** (1858-192?) – Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Кутемерте (халĕ – Куславкка р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Шĕнерпуçĕнчи икĕ сыпăклă шкулта, Хусанти учительсен семинарийĕнче вĕренет. 1888 ç. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлет, куçару ĕçне туса пырать. Çав çулсенче ачасене халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене, йăли-йĕрки çинчен каланисене пухтарать. 1909 ç. Хусанта «Чăваш юррисем, халапсем...» кĕнеке пичетлет. Ку сборнике пурĕ 20 юрă, 26 тупмалли юмах тата 31 сăнав кĕртнĕ.

***Арзамасов Максим Петрович*** (1853-1919) – Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Кивĕ Тĕрлемесре (халĕ – Куславкка р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Ялти шкулта, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинари курсĕнче вĕренет, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче (1878-1881), кайран тĕрлĕ вырăнта учительте ĕçлет.

М.Арзамасов чăваш халăх юррисене, юмахĕсемпе халапĕсене нумай пухни паллă. Шел пулин те, вĕсем хальлĕхе архивсенче тусан çăтса çеç выртаççĕ. Пултаруллă вĕрентекен пуçтарнă историлле халапсен ярăмĕ (вăл шутра, «Турхан», «Хусан хулине никĕслени», «Уйпуç киремечĕ», «Урасмет») 1882 ç. Хусан университечĕ кăларса тăракан «Известия и ученые записки Императорского Казанского университета» кĕнекере кун çути курнă.

Халăх поэзийĕн тĕслĕхĕсене çырнă чух М.Арзамасов историпе, чухăнлăхпа тăванлăх, телейсĕр шăпапа çыхăннă юрă тĕслĕхĕсене çырса илме тăрăшни сисĕнет. Ун шухăшĕпе, вĕсенче ытларах халăх шухăшлавĕ, гавра курăмĕ, философийĕ сăнланнă.

***Ефимов Никита Ефимович*** (1856-1918) – Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Пагăрьелте (халĕ – Çĕрпӳ р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Ялти шкулта пĕлӳ илнĕ. 1879-1889 çç. Хусанти миссионерсем хатĕрлекен приютра

пурӑнать, ҫавӑнтах учитель ятне илсе тӗрлӗ ҫӗрте учительте вӑй хурать.

Н.Ефимов ытларах чӗлхе ӑслӑлӑхӗпе интересленнӗ, халӑх сӑмахлӑхӗпе этнографи материалӗсене те пухма тӑрӑшнӑ. Паллӑ ӗҫӗ – «Чӑваш халӑх юррисем» (1888) паянхи кун та ал ҫырун пичетленмесӗр выртать. Кунта чӑваш халӑх юррисемпе кӗввисене илсе кӑтартнӑ, тӗрлӗ ушкӑнсене пайланӑ.

***Смоленский Александр Васильевич*** (1865-1910) – вырӑс тӗпчевҫи, чӑвашсен ҫут ҫанталӑк ҫинчен калакан сӑнавӗсене пухса кӑлараканӗ, хаклаканӗ. Хусан университетӗнче вӗреннӗ, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче, Хусанти учительсем хатӗрлекен семинарире вӗрентнӗ. Чӑваш ялӗсенче нумай ҫӳренӗ, вӗренекенӗсемпе пӗрле хӑй те сӑнавсем пуҫтарнӑ. Паллӑрах ӗҫӗсем: «Чувашские приметы о погоде и ее влиянии на сельское хозяйство» (1883), «Программа для собирания чувашских примет о погоде» (1895), «Народные сельскохозяйственные приметы по растениям» (1904) тата «Сборник народных примет о погоде». Пӗрремӗш тӗпчевӗнче чӑвашсен 439 сӑнавне пичетленӗ, вӗсене вырӑсла куҫарнӑ. Ытти ӗҫӗсенче те вӑл чӑвашсен сӑнавӗсемпе анлӑ усӑ курнӑ.

***Мошков Валентин Александрович*** (1852-1920) – вырӑс тӗпчевҫи, ҫар ҫынни, Раҫҫейре пурӑнакан тӗрлӗ халӑхсен чӗлхине, этнографине, фольклорне тӗпчекенӗ. Вӑл – чӑваш халӑхӗн юрри-кӗввине тишкерсе пӗрремӗш монографи-тӗпчев хатӗрлекенӗ. Ӑна 1893 ҫ. «Материалы для характеристики музыкального творчества инородцев Волжско-Камского края. 1. Мелодии чувашских песен» ятпа Хусанта пичетлет. Тӗпчевҫӗсен шухӑшӗпе, асӑннӑ ӗҫ «... чӑваш фольклорӗн хӑй евӗрлӗхӗпе хӑйне майлӑхне ҫеҫ мар, унӑн ӗмӗртенхи кӗвӗ-ҫемӗ сюжечӗсен, диалекчӗсен, жанрӗсен, пуплевӗсен, сӑвӑ йӗркисенчи сыпӑксемпе пусӑмӗсен ылмашӑвӗн танлӑхне хаклама май парать»[9]. В.Мошков чӑвашсенчен ҫырса илнӗ 75 юрӑ сӑ-

---

[9] Кондратьев М.Г. В.А.Мошков - исследователь чувашского музыкального фольклора //Е.С.Сидорова: к 70-летию со дня рождения (Биобиблиографический справочник) /ЧГИГН. Чебоксары, 2000. С. 68.

махĕсене тата 2 кĕввине нотăласа парать, çавăнтах юрă ушкăнĕсене палăртатать.

*Пазухин Петр Васильевич* (1889-1917) – Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Мăн Чакăра (халĕ – Патăрьел р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă; Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, тĕрлĕ вырăнта учительте ĕçленĕ, халăх юррисене пуçтарнă. Хăйĕн чи паллă «Образцы мотивов чувашских народных песен и тексты к ним. Часть 2» тĕпчевне 1912 ç. Чĕмпĕрте пичетлесе кăларать. Çак сборнике 98 чăваш халăх юрри кĕнĕ.

*Прокопьев Константин Прокопьевич* (1872-1938) – чăвашсен паллă педагогĕ, этнографĕ; Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Çĕнĕ Йĕлмĕллĕре (халĕ – Тутарстанăн Çĕпрел р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă; Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче, тĕн семинарийĕнче, Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ. Тĕрлĕ вырăнсенче учительте тата священникре ĕçлет.

К.П.Прокопьев чăваш халăхĕн йăли-йĕркипе çыхăннă поэзие тĕпчет, текстсене пичетлесе кăларать. Сăмахран, «Брак у чуваш» (1903) статйинче туй юррисăввине тишкернĕ, вĕсене 3 ушкăна пайласа пăхнă: такмаксем, хĕр йĕрри, хĕр çуммисен юрри. Çак çулах «Обряд прохождения в земляные ворота: Из быта чуваш», «Похороны и поминки у чуваш» тĕпчевĕсем пичетленсе тухаççĕ. Унсăр пуçне К.Прокопьев «Чăваш календарьне» йĕркелет, вĕсенче халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене те кун çути кăтартать.

*Добролюбов Александр Иванович* (1856-1910) – Хусан кĕпĕрнин Теччĕ уесĕнчи Чернышевское салинче (халĕ – Тутарстанăн Теччĕ р-нĕ) священник килйышĕнче çуралнă; Хусанти тĕн семинарийĕнче вĕреннĕ, тĕрлĕ вырăнти чиркӳсенче ĕçленĕ. Вĕренӳ çулĕсенчех чăваш чĕлхипе интересленнĕскер, 1879 ç. Хусанта «Ознакомление с фонетикой и формами чувашского языка посредством разбора и перевода оригинальных чувашских статей» ятлă кĕнеке кăларать. Унта автор пичетленнĕ текстсене чĕлхе тĕлĕшĕнчен пахалать, кĕнекене кĕртнĕ тĕрлĕ йăла-йĕрке сăмахĕсене, халăх юррисемпе такмакĕсене кĕскен тишкерсе тухса хак парать.

***Филимонов Даниил Филимонович*** (1855-1938) – чăвашсен педагогĕ, куçаруçи, публицисчĕ; Хусан кĕпĕрнин Çĕрпÿ уесĕнчи Чиркÿллĕ Ямашра (халĕ – Çĕрпÿ р-нĕ) хресчен çемйинче çуралнă. Малтан земство шкулĕнче, Хапăсри икĕ класлă шкулта, Хусанти учительсем хатĕрлекен семинарире вĕренет, 1875-1882 çç. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ĕçлет, кайран, мĕн виличченех, чиркÿре священникре вăй хурать.

Д.Филимонов кирек ăçта ĕçлесен те хăйĕн чи пархатарлă шухăш-кăмăлне – чăвашсене çутта кăларас тĕллеве – нихăçан та пăрахман: статья хыççăн статья çырать, кĕнеке хыççăн кĕнеке пичетлет. Вăл чăваш çыннин шăпине халăх историйĕпе тÿрремĕнех çыхăнтарма пултарнă, çыруллă сăмахлăха çĕнĕ жанрсем кĕртсе ăна пуянлатнă. Унăн çак куçару ĕçĕсемпе хайлавĕсене асăнмалла: «Чăн тĕн кĕнеки» (1875), А.В.Петрушевскин «Вырăс историйĕн калавĕсем» (1882), «Голод в Казанской губернии» (1891), «Н.И.Ильминский çинчен» (1893), «Об инородческих монастырях и общинах Волжско-Камского края» (1910) т. ыт. те.

XIX ĕм. иккĕмĕш çурринче чăваш фольклористикине аталантарас ĕçе хастар хутшăннисен шутне Н.И.Золотницкие, В.К.Магницкие, И.Я.Яковлева, А.В.Рекеева, И.И.Иванова, Н.М.Охотникова, Н.И.Ашмарина, М.Ф.Федорова, И.Н.Юркина, Г.Т.Тимофеева, Н.В.Никольские, Г.И.Комиссарова т. ыт. çыравçă-тĕпчевçĕсене те кĕртмелле.

***Золотницкий Николай Иванович*** (1829-1880) – чăваш чĕлхипе этнографине тĕпчекенĕ, ăста куçаруçă, паллă педагог. Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Урхас Кушкăра (халĕ – Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) вырăс çемйинче çуралнă. Шупашкарти тĕн училищинче, Хусанти тĕн семинарийĕнче тата университетăн филологи факультетĕнче вĕренет, тĕрлĕ вырăнта вăй хурать.

Н.И.Золотницкий – нумай енлĕ тĕпчевçĕ: вĕренÿпе шкул, чăваш этнографийĕпе фольклор ыйтăвĕсемпе тĕрлĕрен статьясем, кĕнекесем кăларать. Унăн паллăрах ĕçĕсем – «Сöлдалык кнеги» (1866, 1873), «Чуваш кнеге» (1867), «Корневой чувашско-русский словарь, сравнен-

ный с языками и наречиями разных народов тюркского, финского и других племен» (1875) т. ыт. те. Словарь вĕçĕнче ятарласа хушса пани пур. Çак пайра Н.И.Золотницкий чăвашсен мифĕсене (142-161 с.), кĕллисемпе чĕлхисене (172-180 с.), юмçипе, чÿклемепе çыхăннă йăлисене (162-172, 213-223 с.), хăш-пĕр хисеппе, чĕр чунсемпе çыхăннă ĕненÿсене (181-204 с.), ытти уявсене тишкерсе тухнă, хак панă. Ахальтен мар, Питĕрти Вырăс географи обществи ку кĕнекене пысăка хурса хакланă, авторне ылтăн медальпе наградăланă.

Чăваш фольклористикинче Н.И.Золотницкий малтанхи хут сăмахлăха танлаштару меслечĕпе тĕпчеме пуçăнать. Ун шухăшĕпе, çакă фольклорăн аваллăхне курма май парать.

***Магницкий Василий Константинович*** (1839-1901) – историк, этнограф, çут ĕç деятелĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Етĕрнере (халĕ – Етĕрне р-нĕ) вырăс пуп кил-йышĕнче çуралнă; Хусанти тĕн семинарийĕнче, университетра вĕреннĕ, мĕн виличченех наукăра тата шкул ĕçĕнче вăй хунă: этнографи, фольклор материалĕсем питĕ нумай пуçтарнă, хăйĕн ĕçĕсенче пĕлсе усă курнă. Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, ученăй пурĕ 230 ытла тĕпчев ĕçĕ çырнă, вĕсенчен нумайăшне пичетлесе кăларма пултарнă. Сăмахлăх тексчĕсене пухнисĕр пуçне В.К.Магницкий вĕсене хак пама тăрăшать, тĕпчевçĕ куçĕпе тишкерет. Тĕслĕхрен, 1881 ç. Хусанта пичетленсе тухнă «Материалы к объяснению старой чувашской веры» монографийĕнче хăй пухнă материалсене автор 7 пысăк ушкăна пайланă:

1. Киремет. 2. Çĕр ĕçĕпе çыхăннă йăла-йĕрке, халапсем. 3. Хур чÿкĕ. 4. Ача çуратни. 5. Авлану. 6. Чăвашсен христианла çветтуйĕсем. 7. Хĕллехи ĕçкĕ.

Кĕнеке вĕçĕнче В.Я.Смелов священникăн «Чăвашсен тĕнĕ çинчен» очеркĕ, Н.И.Золотницкий словарьне кĕмен чăваш сăмахĕсене хушса пани пур.

***Яковлев Иван Яковлевич*** (1848-1930) – чăвашсен паллă педагогĕ, просветителĕ, çыравçи, куçаруçи, хальхи чăваш çырулăхне йĕркелекенĕ; Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкинче (халĕ – Тутарстанăн Теччĕ

р-нĕ) удел хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Пăрăнтăкри удел училищинче, Чĕмпĕрти çĕр виçекенсен шкулĕнче тата семинарире, Хусан университетĕнче вĕреннĕ.

Вăл 1868 ç. Чĕмпĕрте чăваш шкулĕ уçать, Хусан вĕренӳ округĕнчи чăваш шкулĕсен инспекторĕнче вăй хурать. Вăл тăрăшнипе пурĕ 100 ытла чăвашла кĕнеке пичетленсе тухнă. Хăй те тĕрлĕрен статьясем, илемлĕ хайлавсем çырать.

Чăваш çырулăхне йĕркелес, литература чĕлхин никĕсне хывас тĕллевпе И.Я.Яковлев халăхăн сăмах вĕççĕн çӳрекен тексчĕсене (юрри-сăмахне, каларăшĕсемпе халапĕсене) пухать, вĕсемпе усă курма тăрăшать. «Утрăм, утрăм, улма тупрăм», «Тĕлит-тĕлит Микулай», «Кăсăя», «Сармантей» хайлавĕсене аса илер-ха. Вĕсем пурте халăх пурнăçĕпе, унăн сăмахлăхĕпе çыхăннă. Произведенисене халăх чĕлхипе çырнă, вĕсене фольклорти евĕр майлаштарнă, халăх кăмăл-туйăмне, ĕмĕтшухăшне палăртса хăварма тăрăшнă. Тепĕр тĕслĕх: Яковлев хăйĕн букварьне 23 пĕчĕк калав, 45 тупмалли юмах, 400-е яхăн ваттисен сăмахĕпе каларăш кĕртнĕ. Çакă паллă: халăхăн пурнăç çине пăхас шухăш-ĕмĕчĕ, философийĕ, педагогики И.Я.Яковлев пурнăçĕн тĕллевĕпе тӳр килнĕ, пĕр ĕмĕтлĕ пулнă – тăван халăха епле пулсан та хăвăртрах вĕрентесчĕ, пĕлӳллĕ тăвасчĕ, çутта кăларасчĕ. Асăннă ĕçе патриархăмăр чунпа парănса, вăйне-халне хĕрхенмесĕр çур ĕмĕр ытла туса пырать. Унăн пуçарăвне паянхи кун та чăвашăн маттур ачисем малалла тăсаççĕ.

***Рекеев Алексей Васильевич*** (1848-1932) – чăвашсен паллă педагогĕ, куçаруçи, этнографĕ, обществăлла деятелĕ; Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкинче (халĕ – Тутарстанăн Теччĕ р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Пăрăнтăкри удел училищинче, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тата уес училищинче вĕреннĕ. Тĕрлĕ вырăнсенче учительте, каярах (1881-1916 çç.) священникре ĕçлет. Юлашки çулĕсенче вăл Теччĕри учительсем хатĕрлекен семинарире тăрăшни паллă.

А.В.Рекеев – Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн малтанхи вĕренекенĕ, И.Я.Яковлевăн çывăх юлташĕ, ăна пулăша-

канĕ. Халăх поэзийĕн çĕр пин тĕслĕхне пухма пултарнă, çак ĕçе ыттисене те явăçтарнă. Унăн чи курăмлă очеркĕсем: «Из чувашских преданий и верований» (1896-1897), «Разные чувашские моления» (1898) т. ыт. те. Пĕрремĕш ĕçĕнче, сăмахран, тĕнче пулса кайни, туррисемпе йĕрĕхĕсем, мифологийĕ, чӳкĕсемпе кĕллисем, тухатмăшĕсемпе пуççавăраканĕсем (эмелçĕсем) çинчен калакан халапĕсене кĕртнĕ, иккĕмĕшĕнче чăвашсем хушшинче анлă сарăлнă кĕлĕсене тишкерсе хак панă.

***Иванов Игнатий Иванович*** (1845-1883) – чăваш çыравçи, куçаруçи; Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Кăнна Кушкинче (халĕ – Тутарстанăн Теччĕ р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Пăрăнтăкри удел училищинче, Чĕмпĕрти çĕр виçекенсен курсĕнче вĕреннĕ, хăй тĕллĕн хатĕрленсе ялти учитель ятне илнĕ, тĕрлĕ вырăнсенче учительте ĕçленĕ.

Вăл – И.Я.Яковлевпа А.В.Рекеевăн тантăшĕ, пĕрле ӳссе çитĕннĕ, анчах çемьери йывăрлăхсене пула ĕмĕрне тăван ялĕнчех пурăнса ирттерет, халăх хушшинче анлă сарăлнă юмах-халапа, сăвă-юрра, тĕрлĕ сăмахсене пухать, хăй те калав-очерк çырать. Чĕмпĕр шкулĕнче ĕçлесе пурăннă вăхăтра вăл вырăсла-тутарларан чăвашла куçарать, чăваш букварĕсене кăларас ĕçе хутшăнать.

Чăваш фольклористикине аталантарас ĕçре унăн тӳпи пысăк. Ку енĕпе 1876 ç. çырăннă «Чăвашсем епле пурăнни» 15 пайлă хайлавне кăтартмалла. 1881 ç. çырса хатĕрленĕ «Чăвашсем» ятлă этнографилле очеркăн авторĕ те вăлах. Унта И.И.Иванов хăйĕн умне чăваш çыннин пĕтĕмĕшле пурнăçне сăнласа пама тĕллев лартнă. Очерка çак сыпăксене кĕртнĕ: 1. Ача çурални. 2. Юмăçсем. 3. Юмăçсем тутаракан эмелсем. 4. Кил хĕртсурчĕ. 5. Куйкăрăш. 6. Кăвак хуппи. 7. Пĕлĕт тупни. 8. Тухатмăшсем епле çӳрени. 9. Вутăш. 10. Выхăтă. 11. Чăвашсенĕн çын вилсен тăвакан йăла. 12. Пумилкке туни. 13. Çулталăкра вилесене епле, мĕн вăхăтра хывнисем. 14. Халăх хушшинче тăвакан эмелсем. 15. Чӳксем. 16. Чӳк кĕллисем.

Автор халăх йăли-йĕркине уйрăм ушкăнсем çине пайласа тĕпченĕ.

***Охотников Никифор Михайлович*** (1860-1892) – чăвашран тухнă паллă педагог, этнограф, пирвайхи математик; Хусан кĕпĕрнин Чистай уесĕнчи Чăваш Шупашкарĕнче (халĕ – Тутарстанăн Чистай р-нĕ) хресчен килйышĕнче çуралнă; ялти пуçламăш, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕсенче, Хусан университетĕнче вĕренет, анчах вĕренсе пĕтереймест – чире пула юлашки курсра сарăмсăр вилет.

Н.М.Охотников автобиографилле, этнографиллепедагогикăлла очерксем ăсталанă, фольклор материалĕсем пуçтарнă, вĕсене хăйĕн «Записки чувашина о своем воспитании» (1889), «Грамота среди чуваш» (1890), «Приволжские чуваши: Этнографический очерк» (1893), «Записки чувашина: Воспоминание из детской моей жизни» (1895) очеркĕсене кĕртнĕ. Вĕсенче вăл хăйĕнпе пулса иртнĕ ĕçсем урлă çав вăхăтри чăвашсен пурнăçне, йăли-йĕркисемпе ĕненĕвĕсене, уявĕсемпе килçурт хăтлăхне яр-уççăн кăтартса парать.

***Ашмарин Николай Иванович*** (1870-1933) – тĕнчипе паллă вырăс ученăйĕ, тĕрĕкпе чăваш чĕлхисене тĕпчекенĕ, хальхи чăваш чĕлхин пĕлĕвне пуçарса яраканĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Етĕрнере (халĕ – Етĕрне р-нĕ) купса çемйинче çуралнă; Кăрмăшри хула училищинче, Чулхулари классикăлла гимназире, Мускаври Хĕвелтухăç чĕлхисен институтĕнче вĕреннĕ. Тĕрлĕ наукăпа тĕпчев, вĕрентӳ заведенийĕсенче ĕçлет, чăвашпа тутар чĕлхисене тĕпчет, вĕрентет.

Н.И.Ашмарин чăваш халăх сăмахлăхĕн жанрĕсене тишкернĕ тĕрлĕ статьясемпе кĕнекесем те кăларать. Вăл халăхăн пĕтĕмĕшле ăс-хакăлĕпе сăмахлăхне тĕпчес ĕçре (фольклористикăра) историлле-танлаштару меслечĕпе усă курма сĕнет. Малашлăхри наукăра çак меслет хăйне майлă шкул пулса тăрать те ĕнтĕ.

Н.И.Ашмарин ытларах чăвашсен мифĕсене, юррисене тĕплĕн тишкерет, вĕсем халăхăн историйĕпе тӳрремĕнех çыхăннине палăртать. Çакна 17 томлă «Чăваш сăмахĕсен кĕнеки» (1928-1950) питĕ аван кăтартса парать. Тĕпчевçĕн «Очерк народной поэзии у чуваш» (1892), «Сборник чувашских песен, записанных в губер-

ниях Казанской, Симбирской и Уфимской» (1900, кунта пурĕ 198 юрă чăвашла-вырăсла пичетленнĕ), «Введение в курс чувашской народной словесности» (1923) ĕçĕсене палăртмалла. Вĕсенче ученăй халăх сăмахлăхне тишкерекенсене фольклорăн чи авалхи жанрĕсене – мифĕсемпе тĕрлĕ ĕненĕвĕсене, чĕлхисемпе кĕллисене – тĕпчеме хушать, паха сĕнӳсем парать.

***Федоров Михаил Федорович*** (1848-1904), ***Юркин Иван Николаевич*** (1863-1943) – чăвашсен паллă çыравçисем. Пĕрремĕшĕ – Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Хурапхара (халĕ – Сĕнтĕрвăрри р-нĕ), иккĕмĕшĕ – Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Пӳркелте (халĕ – Тутарстанăн Пăва р-нĕ) хресченсен килйышĕнче çуралнă.

М.Ф.Федоров чăвашсен илемлĕ поэзине çĕнĕ жанр кĕртет пулсан (1884 ç. вăл «Арçури» ятлă мифопоэтикăлла-реализмла поэма çырать), И.Н.Юркин вара прозăна тĕрлĕ калавсем («тĕнпе нравственноç ыйтăвĕсемлĕ калав», «фантастикăлла калав», «йăла калавĕ», «чăн пулни») кĕртет. Асăннă хайлавсем çав вăхăтри чăвашсен çыруллă сăмахлăхне жанр тĕлĕшĕнчен пуянлатаççĕ те, анлăлатаççĕ те.

М.Ф.Федоровпа И.Н.Юркин поэзипе прозăн малтанхи утăмĕсене халăх сăмахлăхне пухнинчен пуçлаççĕ. Сăмахран, М.Федоров 1876 ç. «Предания чуваш Бичуринского прихода, Чебоксарского уезда, и способы лечения у них болезней» очерк пичетлет. И.Юркин, чăваш йăли-йĕркисене, юрри-халапĕсене пухса вĕсен поэтикине тĕпчекенскер, асамлă юмахсемпе халапсен ăрăмлăхне тата асамлăхне, юрă-сăвă сăнарлăхĕпе кӳлепине ăша хураканскер, çине-çинех фольклорăн пуххисене пичетлет. Вăл шутра «К суеверию чуваш» (1893), «Заметка о некоторых чувашских обычаях и предрассудках» (1893), «Масленица у низовых чуваш» (1893), «Заметка о праздновании св. Пасхи местными чувашами» (1893), «Чувашские песни» (1895), «Чувашские национальные песни» (1897), «Чувашские национальные пляски» (1897), «Халапсем» (1907), «Шӳтсем» (1907), «Ваттисен сăмахĕсем» (1907), «Юмахсем» (1907), «Чă-

вашсем авал епле пурăнни çинчен» (1919), «Чăвашсем вилнĕ çынсене епле пытарни» (1921) т. ыт. те.

И.Н.Юркин сăмахлăх жанрĕсене йĕркелес ĕçре те палăрнă: вырăсларан чăвашла *халлап* (сказка), *юмах* (загадка), *ваттисен сăмахĕсем* (пословица), *хайла* (басня), *калаçусем* (рассказы), *юрă* (песня), *сăвă* (слова песни), *сăмахсем* (словарь), *ыйту-шыру* (объявления), *такмак* (стихи), *руман* (роман и повесть), *шӳт* (анекдот), *тăрăхлу* (юмористика) терминсене куçарнă.

***Тимофеев Григорий Тимофеевич*** (1878-1937) – чăвашсен паллă писателĕ, педагогĕ, фольклорисчĕ, этнографĕ; Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Тĕрлемесре (халĕ – Куславкка р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕсенче вĕреннĕ. Шăпа Г.Тимофеева таçта та илсе çитерет. Тĕрлĕ вырăнсенче сахал мар професси улăштарма тивнĕ унăн: учитель, чиркӳ çынни, тăлмачă, пуп.

Пурнăç урапи тӳрĕ кусманнине пăхмасăрах, паллă педагог-çыравçă хăйĕн çынлăхне çухатман, тĕллевне манман. Учительте ĕçлесе пурăннă çулсенче Г.Т.Тимофеев чăвашсен пурнăçне сăнлакан «Тăхăръял» ятлă этнографи тĕрленчĕкĕсене хайлать. Ку кĕнекере (вăл асăннă ятпа икĕ хут пичетленнĕ – 1972, 2002 çç.) Тутарстанăн Пăва районĕнчи Элшел тăрăхĕнчи тăхăр ялти чăвашсен йăли-йĕрки, халап-юмахĕ, сăвă-юрри, тупмалли юмахĕсемпе каларăшĕсем, ваттисен сăмахĕсемпе чĕлхисем, сăнавĕсемпе ача-пăча сăмахлăхĕ тата фольклорăн ытти тĕсĕсем кун çути курнă. Очерка эпир чăваш халăхĕн эпопейи теме те пултаратпăр. Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, «Тăхăръяла» автор 1898-1903 çç. çырать. Ал çырăвĕ темиçе пайран тăрать: пĕрремĕшĕнче Элшел таврашĕнчи чăвашсен кил-çурчĕ, апат-çимĕçĕ, тумĕ-çиййĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, тĕшмĕшĕпе кĕлĕ йăли-йĕрки, çулталăкри уявĕсем т. ыт. те; иккĕмĕшĕнче – халăх хушшинче сарăлнă сăмахлăх тĕсĕсем, çĕр çинчи ырă тата хаяр вăйсем, курни-илтнисем, çул çӳрев çырăвĕсем. Çакна та палăртмалла: асăннă кĕнекери очерксенче уйрăм çын сăнарĕ çук, вĕсене пурне те чăвашăн ĕçĕ-

хĕлĕпе, шухăш-кăмăлĕпе, хуйхи-савăнăçĕпе çыхăннă ыйтусем пĕрлештерсе, пĕтĕçтерсе тăраççĕ.

***Никольский Николай Васильевич*** (1878-1961) – чăвашран тухнă историк, этнограф, фольклорист, чĕлхеçĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Купăрляра (халĕ – Муркаш р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Шăматри земство училищинче, Шупашкарти тĕн семинарийĕнче, Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ, ун хыççăн тĕрлĕ вĕрентӳ заведенийĕсенче ĕçлесе пурăннă. Н.В.Никольский тăрăшнипе чăвашла «Çулталăк кĕнеки» календарь, «Хыпар» хаçат тухать. Унăн пурĕ 200 ытла ĕçĕ пичетленнĕ, çав тĕпчевсенче Н.В.Никольский халăх сăмахлăхĕн тĕрлĕ жанрĕсемпе усă курать, 1903 ç. чăвашсен сăмахлăхне пухмашкăн «Известия по Казанской епархии» хаçатра программа пичетлесе кăларать.

Н.В.Никольский ытларах этнографи ыйтăвĕсемпе интересленнĕ. Сăмахран, «Конспект по этнографии чуваш» (1908), «Краткий конспект по этнографии чуваш» (1911), «Христианство среди чуваш Среднего Поволжья в XV-XVII веках: Исторический очерк» (1912) ĕçĕсенче вăл чăвашăн авалхи тĕнĕпе ĕненĕвĕсем, мифологийĕпе çут çанталăк пулăмĕсем çинчен ăнлантаракан халапюмахĕсене кĕртнĕ, вĕсене хак панă. Ятарласа уйрăм жанрсене халалланă тĕпчевсем те пур унăн: чăваш халăх юррисене «Конспект по истории народной музыки у народностей Поволжья» (1920), халапĕсене «Сборник исторических материалов о народностях Поволжья» (1919) тата «Конспект по истории народностей Поволжья: (с древнейших времен до 1917 г.)» (1919), ĕненĕвĕсем пирки «Народная медицина у чуваш» (1929) статйисемпе кĕнекисенче тĕплĕн çырса кăтартать.

***Комиссаров Гурий Иванович (Вантер)*** (1883-1969) – чăвашсен паллă литераторĕ, писателĕ, историкĕ, педагогĕ тата фольклорисчĕ, чăваш фольклористикине пуçарса яраканĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Патăрьелте (халĕ – Çĕрпӳ р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти пуçламăш, Элĕкри икĕ класлă, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕсенче, Ĕпхӳри тĕн семинарийĕнче, Хусанти тĕн академийĕнче вĕреннĕ, тĕрлĕ вырăнта учительте,

шкул заведующинче ĕçленĕ, çав вăхăтрах çутăлăх ĕçне нихăçан та наукăран уйăрман.

Г.Комиссаров пурнăçĕ çав тери нумай енлĕ те курăмлă пулнине унăн «Чуваши Казанского Заволжья» (1911), «Религиозное состояние чуваш в XIX веке: Магистрская диссертация» (1913), «Чăваш халăхĕ малалла кайĕ-ши, каймĕ-ши?» (1918), «Чăваш халăхĕн историйĕ» (1921) тата ытти тĕпчевĕсем аван çирĕплетсе параççĕ. Вĕсем хăйсен пĕлтерĕшне паянхи кунччене çухатман. Юлашки çулсенче тĕпчевçĕн 1926-1930 çç. çырнă «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ» (1989) лекцийĕпе «Современное состояние чувашской литературы» (1992) теорилле статйи пичетленчĕç. Пĕрремĕш ĕçĕнче Г.Вантер чăваш халăх сăмахлăхĕн (ăна вăл «халаплăх» ăнлавпа усă курать) кун-çулне тĕпчет, ушкăнсем çине пайлать, формипе чĕлхине, вĕренмелли майĕсене (меточĕсене), халаплăх сыхланса усранин, сарăлнин тата улшăнăвĕн сăлтавĕсене тишкерет, вĕсене аталанма кансĕрлекен чăрмавсене асăрхать. Автор хăйĕн ĕçĕнче пирвайхи хут халăх халаплăхĕнче çак пайсене палăртать: ĕç поэзийĕ, утăм юррисем, вăйă поэзийĕ, ташă юррисемпе сăввисем, çут çанталăкри япаласене евĕрлесе каланă юрăсемпе сăвăсем, тĕнлĕ поэзи (обрядовая поэзия). Кашни ушкăнрах пĕчĕкреххисене кăтартать.

Чăваш халăхĕн историйĕпе пурнăçне, ĕçĕ-хĕлĕпе йăли-йĕркисене, уявĕсемпе сăмахлăх тĕслĕхĕсене тĕпчес ĕçре ют çĕр-шыв ученăйĕсен тӳпи çав тери пысăк. Чи малтанах вĕсен шутне венгр тата финн чĕлхеçи-тĕрĕкçисене кĕртмелле. Сăмахран, венгрсем – А.Ре́гули, Б.Му́нкачи, З.Ко́дай, Д.Ме́сарош, финнсем – Х.Па́асонен, Г.И.Ра́мстедт, А.М.Ря́сянен чăваш халăх историйĕпе чĕлхине тишкернипе пĕрле сăмахлăх пуянлăхне те пухнă, вĕсемпе хăйсен тĕпчевĕсенче анлăн усă курнă. Çак пархатарлă ĕçе паянхи ученăйсем – Ласло Ви́кар (1929), Табор Бе́рецки (1928), Андраш Ро́на-Таш (1931) т. ыт. те туса пыраççĕ.

***Ре́гули Антал*** (1819-1858) – венгр этнографĕ, чĕлхеçи, çул çӳревçи; 1841 ç. Питĕре килсе Раççей халăхĕсен чĕлхипе историне, этнографипе географине

тĕпченĕ; 1846 ç. Çĕпĕртен таврăннă май Шупашкар, Çĕрпӳ, Чикме тата Етĕрне уесĕсенче пурăнакан чăвашсемпе тĕл пулнă, вĕсенчен чăваш сăмахлăхĕн нумай тĕслĕхĕсене çырса илнĕ («Амаçури», «Вилме каякан пуйса килет, тет» ятлă юмахсене). Вăл В.Громовпа тĕл пулса калаçнă, венгр чĕлхине чăваш чĕлхипе танлаштарса тишкернĕ.

***Мӳнкачи Бернат*** (1860-1937) – венгрсен паллă финн-угровечĕ, этнографĕ; Будапешт университетĕнче ĕçленĕ. 1885 ç. Раççейре пулнă, Чĕмпĕр хулинче чăвашсемпе тĕл пулса калаçнă. Паллă ĕçĕсем çаксем: «Заметки, касающиеся изучения чувашского языка», «О волжских болгарах», вĕсенче чăваш фольклорĕ пирки калана шухăшсем пур.

***Кодай Золтан*** (1882-1967) – венгрсен паллă фольклорист-музыковечĕ, композиторĕ тата педагогĕ, чăваш халăх юррисене ятарласа тĕпчекенĕ. Унăн «Пентатоническая музыка» ятлă вĕренӳ пособийĕ 1947ç. венгрла, 1993 ç. вырăсла пичетленнĕ. Хăйĕн тĕпчевĕнче вăл 140 чăваш юррине тишкернĕ.

***Мéсарош Дюла*** (1883-1957) – тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекен венгр ученăйĕ, фольклорисчĕ, музей ĕçченĕ. 1906-1907 çç. чăвашсем патĕнче пурăнса фольклор материалĕсем пухнă, кайран Будапештра «Сборник чувашского фольклора» ятпа 2 пайлă пысăк кĕнеке кăларнă. Пĕрремĕш пайĕ – «Памятники старой чувашской веры» 1909 ç., иккĕмĕш пайĕ – «Пословицы, загадки, песни, сказки» 1912 ç. венгрла тухнă. Шел пулин те, асăннă ĕçсенчен пĕрремĕшне çеç 2000 ç. вырăсла куçарса пичетлеме пултарнă, тепĕр пайне халĕ те куçарман. Кĕнекене 472 ваттисен сăмахĕ, 205 тупмалли юмах, 645 юрă тата 50 юмах кĕнĕ.

***Пáасонен Хейкки*** (1865-1919) – финн чĕлхеçи, фольклорисчĕ, этнологĕ; Хельсинки университетĕнче профессор пулса ĕçленĕ. 1898-1902 çç. Самар тата Хусан кĕпĕрнисенче экспедицире пулнă, чăваш чĕлхипе, сăмахлăхĕпе интересленнĕ, çав тери нумай текст пуçтарнă. 1908 ç. Будапештра «Чувашский словарь» ятлă кĕнеке венгрла пичетленнĕ, вырăсла тата чăвашла

тухман-ха. Ку ĕçре чăвашсен космогонийĕпе, мифологийĕпе çыхăннă ăнлавсене тишкерни пур, текстсем те сахал мар.

***Ра́мстедт Густав Йохан*** (1873-1950) – финсен паллă чĕлхеçи, алтай чĕлхисене тĕпчес ăслăлăха пуçараканĕ; Хельсинки университетĕнче профессор пулса ĕçленĕ. 1898-1912 çç. темиçе хутчен те Раççейре пулнă, ятарлă экспедицире çӳресе финн-угор çемйине кĕрекен халăхсен чĕлхине тĕпченĕ, материалсем пухнă. Чăваш чĕлхи пирки 1922 ç., хăй пухнă материалсемпе усă курса, «К вопросу об особенностях чувашского языка» пысăк статья пичетлет.

***Ря́сянен Арво Мартти Октавиан*** (1893-1976) - финн чĕлхеçи, тĕрĕк чĕлхисене тĕпчекенĕ; Хельсинки университетĕнче профессор пулса ĕçленĕ. 1915-1917 çç. Хусан университетĕнче ятарласа тĕрĕк чĕлхисене вĕренет. Каярахпа 1920 ç. Хельсинкире «Чувашские заимствования в черемисском языке» кĕнекине финла пичетлесе кăларать. Çак тĕпчевĕн пахалăхĕ – чăваш фольклорĕнчи ăнлавсене ытти финн-угор чĕлхине кĕрекен халăхсен чĕлхисемпе танлаштарни, халăхра çӳрекен текстсене наукăра усă курни.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Фольклористика – сăмахлăха тĕпчекен наука. Унăн мелĕсемпе меслечĕсем.
2. Чăваш фольклористикин ум историйĕ.
3. Хусан ханлăхĕ тапхăрĕнчи сăмахлăха тĕпчемелли çăлкуçсем.
4. Вырăс патшалăхĕ тапхăрĕнчи сăмахлăха тĕпчемелли çăлкуçсем.
5. XVIII ĕм. чăваш фольклорне тĕпчени.
6. XIX ĕм. пĕрремĕш çурринче чăваш фольклорне тĕпчени.
7. XIX ĕм. иккĕмĕш çурри - XX ĕм. пуçламăшĕнче чăваш фольклорне тĕпчени.
8. Венгр, финн ученăйĕсем чăваш фольклорне пухни, тĕпчени.

## УСӐ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Ашмарин Н.И.* Болгары и чуваши. Казань, 1902. 132 с.; *Он же*: Болгары и чуваши /ЧГИГН. Чебоксары, 2000. 144 с.

2.*Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания: Очерки истории чувашского народа с древнейших времен до середины XIX века. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1993. 446 с.

3.*Дмитриева Ю., Адягаши К.* Hungaro-Tschuwschica: Аннотированный библиограф. указатель исследований венгерских ученых XIX-XX вв. /ЧГИГН. Чебоксары, 2001. 240 с.

4.*Исследователи* Чувашского края: Библиограф. указатель /Сост. Э.Г.Николаева, Н.Д.Никитина; Чуваш. ун-т. Чебоксары, 2002. 256 с.

5.*Каховский В.Ф.* Происхождение чувашского народа. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1965. 484 с.

6.*Кондратьев М.Г.* Исследование венгерскими учеными чувашской народной песни: Вопросы мастерства в современном чувашском искусстве //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1981. С. 153-166.

7.*Кондратьев М.Г.* О чувашской музыкальной фольклористике. Вып. 90: Актуальные вопросы истории и теории чувашского искусства //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1979. С. 139-148.

8.*Краткая* чувашская энциклопедия. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. 526 с.

9.*Одюков И.И.* Авалхи тата Атӑлҫи пӑлхарсем ҫинчен калакан истори халапӗсем (I-XV ӗм.): Вӗренӳ пособийӗ /Чӑваш ун-чӗ. Шупашкар, 1984. 80 с.

10.*Революцичченхи* чӑваш литератури. Текстсем. 1 том (XX ӗмӗрччен). Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1984. 464 с.

11.*Революцичченхи* чӑваш литератури (XX ӗмӗрччен). Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1989. 302 с.

12.*Родионов В.Г.* Чӑваш литератури (XVIII-XIX ӗмӗрӗн пӗрремӗш ҫурри): Вӗренӳ пособийӗ /Чӑваш ун-чӗ. Шупашкар, 1999. 172 с.

13.*Родионов В.Г.* Чăваш литератури (XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурри): Вĕренӳ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 2002. 248 с.

14.*Родионов В.Г.* Чăваш литератури: Вĕренӳ кĕнеки: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2003. 272 с.

15.*Сидорова Е.С.* Записи и публикации чувашских сказок в XIX – нач. XX вв. //Чувашский язык, литература и фольклор. Вып. 2. Чебоксары, 1973. С. 246-277.

16.*Хрестоматия* по культуре Чувашского края: дореволюционный период /Под ред. М.И.Скворцова. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. 255 с.

17.*Чăваш* литератури: Хрестомати: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли /В.Г.Родионов, Э.И.Родионова пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2002. 431 с.

18.*Чăваш* сăмахлăхĕ: X класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. 1 пай /Н.Г.Ивановăпа В.П.Никитин пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1993. 311 с.

19.*Юмарт Г.Ф.* Сбор и изучение чувашского фольклора //Сăмах. Слово: 1993. Тĕпчевсемпе текстсем. Исследования и тексты. Чебоксары, 1994. С. 20-39.

2 сыпăк

# ЧĂВАШ ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔН ЖАНР ПУЯНЛĂХĔ

## 2.1. Фольклор жанрĕсене ушкăнлас ыйтусем. Чăвашсен эпикăлла поэзийĕ. Пейĕтсем.

Чи малтанах *жанр* термин пирки. Тĕпчевçĕсем ку ăнлавпа искусствăн мĕнпур тĕсĕсен пурнăç тăршшĕпе йĕркеленсе çирĕпленнĕ шалти пайне тата илемлĕ хайлавăн типне кăтартаççĕ. Унпа, вăл çырулла сăмахлăхăн терминĕ пулнă май, кашни литература тапхăрĕнче хăйне килĕшӳллĕ жанрсене палăртнă. Жанра, тĕпрен илсен, вăл литературăн хăш ĕретне кĕнине тата эстетика тĕлĕшĕнчен унăн хăш енĕ вăйлăраххине кура уйăраççĕ[10]. Вырăсла-чăвашла словарьте ку сăмаха çак пĕлтерĕшсемпе куçарнă: искусство произведенийĕсен тĕсĕ; йăла сюжечĕллĕ живопись, картина тата мел, стиль[11]. Çапла вара, чăваш фольклорĕн жанрĕсем тесе халăхра сăмах вĕççĕн çӳрекен тĕрлĕ хайлавсен çын пурнăçĕпе кун-çулне, çут çанталăкпа ытти пулăмсене хăйне евĕрлĕ шухăш-туйăмсемпе тата илемлĕхпе сăнарлăх мелĕсене мĕнле усă курнине шута илсе çырса кăтартнă е калăпланă паллăлăхĕсене калатпăр. Жанр хăйне май ăсталăх мелĕсене, кулленхи усă курăмне, хайлавсене епле каласа, юрласа е кăтартса парас тытăмĕпе кĕвĕ çеммине çыхăнтарса тăрать.

Фольклор шухăшпа та, ăна палăртакан тĕрлĕ жанрсемпе те пуян. Çакă халăхра тĕл пулакан, кашни кун калакан тĕслĕхсенче аван курăнать.

Жанр ыйтăвĕ фольклористикăра – чи йывăрри. Этемлĕх аталаннăçемĕн сăмахлăх тĕсĕсем те аталанса, ылмашăнса пыраççĕ. Тата кашни тĕпчевçĕ сăмах хай-

---

[10] Метин П.Н., Мефодьев А.И. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: Шкул словарĕ /ЧР вĕренӳ институчĕ. Шупашкар, 1997. 14 с.
[11] Русско-чувашский словарь /Под ред. И.А.Андреева и Н.П.Петрова. М.: Сов. энцикл., 1971. С. 183.

лавёсен тёсёсемпе жанрёсене, унăн пайрăмёсене хăйне май ăнлантарать, классификацилет.

Чăваш фольклорёнче, ытти халăхсен сăмахлăхёнчи пекех, эпикăлла поэзине, прозăна, лирикăла йăла-йёрке поэзине уйăраççё. Пёрремёшсен шутне, тёпрен илсен, историпе çыхăнтарнă сюжетлă юрăсене, мăн кёрў такмакёсене, пейётсене кёртеççё. Халăх прози те тёрлёрен жанрсем çине пайланать. Чи пуян жанр вăл – халăх лирики. Ку ёретре – çынсен кăмăл-туйăмёпе, шухăш-ёмёчёпе çыхăннă юрă-сăвă, хўхлевёсемпе такмакёсем. Йăла-йёрке поэзине вара халăх йăлисем, уявёсем, мешехисем, вёсемпе çыхăннă сăмахлăх тёсёсем кёреççё. Çак ушкăна, тен, халăх драмин тёслёхёсене те (туйри диалогсем, диалог-юрăсем, пёчёк сценкăсем т. ыт. те) кёртме пулать. Паллах, вёсем вырăс халăхён пек вăйлă аталанман, çапах та ун элеменчёсене чăваш фольклорён нумай жанрёсенче асăрхатпăр. И.И.Одюков фольклорист шухăшёпе, чăваш фольклорёнче «... ытти халăхсен сăмахлăхёпе танлаштарсан, уйрăмлăхсем пур. Калăпăр, вырăссен - былинăсем, украина халăхсен – дума, тёрлёрен халăхсен паттăрлăх эпос тёсёсем («Алпамыш», «Олонхо», «Гэсэр», «Калевала» т. ыт. те) пур. Чăвашăн ун пек эпос тёсёсем çук. Уйрăм халăхсен мифла юрăсем пур». Тёпчевçё каланă тăрăх, «тёрлё жанрсем пёр вăхăтра йёркеленсе аталанман. Вёрў-суру сăмахёсем, мифла халапсем, ёç юррисем, чёр чунсем çинчен хывнă е асамлă юмахсем, легендарлă халапсем (улăп) авалах йёркеленнё, халё те тытăнса тăраççё. Юрăсем вара каярах хывăннă. Вёсенчен тёрме е революци юррисем чи кайран йёркеленнё юрăсем пулса тăраççё. Хăш-пёр жанрсенче ытти халăхсен сăмахлăх культури традицийё ытларах палăрать (истори, ирёклё хусахсен, бурлак, тёрме, революци юррисенче). Юмахсенче те, уйрăмах чёрчунсем çинчен хывнă е асамлă юмахсенче, интернационаллă сюжетсемпе сюжет кёввисем (мотивсем) пур. Чылай юмахсен сюжечёсем тёрёк халăхёсен юмах сюжечёсене питё çывăх тăраççё»[12].

---

[12] Чăваш халăх сăмахлăхё: Тёрёслев ёçёсен темисемпе методика кăтартăвёсем (Чăваш уйрăмёнче 1-мёш курсра вёренекен студентсем валли) /И.И.Одюков пухса хатёрленё /Чăваш ун-чё. Шупашкар, 1978. 13-14 с.

Чăнах та, нумай халăхăн сюжечĕсемпе илемлĕх мелĕсем пĕр-пĕринне çывăх. Ку вăл тĕрлĕ халăх куллен хутшăнса пурăннинчен килет-тĕр. Çавăнпа тĕнчере куçса çурекен сюжетсемпе сăнарсем нумай, вĕсем халăхăн пурнăçĕпе кăмăлне кура хăйне евĕр палăраççĕ.

Халăх сăмахлăхĕ чăваш культурин пĕр пайĕ шутланать тенĕччĕ эпир. Фольклор литература аталаннă вăхăтра га пĕтмест, çĕн йĕркелӳ тапхăрĕнче, сăмахран, чăваш халăхĕн юрлас-ташлас пултарулăхĕ уйрăмах çĕкленсе кайрĕ.

Фольклор хайлавĕсен поэтики хăйне евĕрлĕ. Вăл шутра композиципе (пуçламăшĕ, ĕç вăраха кайни, ĕç-пуç виçĕ хут пулни) стиль (параллельлĕх, гипербола, яланхи эпитетсем, тавтологи) мелĕсем уйрăмах палăруллă.

Фольклористика халăх хушшинче анлă сарăлнă тĕрлĕ текстсене тĕпчет. Паян çакă çеç çителĕксĕр. Халăх ăслăлăхне тишкерме тĕллев лартрăмăр пулсан, пирĕн ирĕксĕрех «сăмахлă текстсемсĕр пуçне (вербальные тексты) тата кĕвĕ-çемĕллĕ текстсем (музыкальные тексты), сăнарлă текстсем (изобразительные тексты, иконографические тексты), ĕç-хĕллĕ текстсем (акциональные тексты), ташăллă текстсем (хореографические тексты), япалаллă текстсем (предметные тексты, реалийные тексты) т. ыт. текст тĕсĕсем (виды текста) çинчен» калаçмалла[13]. Тин асăннă ăслăх объекчĕсене тата фольклористикăн хăйне уйрăм тĕпчев мелĕсемпе меслечĕсене тĕпе хурсан çеç халăхăн иксĕлми еткерне пĕтĕмĕшле тĕрĕс хак пама, системăласа ушкăнлама, вĕсен терминологине çирĕплетме пулать. Унсăр пуçне çакнашкал текстсем пĕр-пĕринпе хутшăнса кайма та, пĕр-пĕрне улăштарма е çĕнетме пултарнине те шута илни вырăнлă.

Хальлĕхе тăван халăх сăмахлăх терминĕсем çирĕпленсе çитменнине, чăваш фольклорĕ ытти халăхсен

[13] Егоров Н.И. Чăваш фольклорĕн проза жанрĕсене ушкăнласси тата терминологи ыйтăвĕсем //Халăх шкулĕ. 2002. 4 №. 64 с.

çырусăр пуянлăхĕне тачă çыхăнса тăнине тата тĕрлĕ автор хăйсене килĕшекен терминсемпе усă курнине асăрхама пулать.

Фольклор тĕсĕсене ушкăнлас ыйту тепĕр пысăк проблемăна хускатать: авалтан пыракан чăваш халăх сăмахлăхне тĕпченĕ чух чи малтанах халăх хăй сăмахлăх жанрĕсене мĕнле майпа ушкăнласа тухнине сăнамалла, пăхмалла, шута илмелле. Вăл нумай чухне наукăри классификаципе тӳр килмест, мĕншĕн тесен фольклор жанрĕссне чăваш çынни тĕрлĕ паллăсене кура ушкăнланă.

Чăваш фольклористикин кун-çулĕпе историне тишкернĕ май XIX-XX ĕм. хăш-пĕр ученăйсем çак ыйтупа кĕскен ĕçленине те палăртса хăварнăччĕ. Анчах чăвашсен çырусăр сăмахлăхне ятарласа тĕпчесси, ăслăлăх енчен хак парасси XX ĕм. вăй илет.

Паянхи кун чăваш фольклористикинче фольклор жанрĕсене калăплăн та тарăннăн çителĕксĕр тĕпченĕ-ха. Тен, çавăнпа кашни тĕпчевçĕ сăмахлăх тĕсĕсене хăйне майлă ушкăнлать. Халăх сăмахлăхне тĕпчекен ăслăлăх пирвайхи утăмсем тунă тапхăрта (эпир ăна Н.И.Золотницкипе çыхăнтартăмăр) фольклора ытларах танлаштару меслечĕпе тишкернĕ тенĕччĕ. Каярахпа Н.И.Ашмарин çĕнĕ мелпе – историлле-танлаштару меслечĕпе – усă курма пикенет, вырăс фольклорисчĕ А.Н.Веселовский тĕвĕленĕ историлле поэтикăна малалла аталанма пулăшать, унăн вĕренекенĕ шутланнăскер, çак меслете чăваш тĕпчевçисем хушшинче сарать.

Вăхăт иртнĕçем ку меслетпе усă куракансен шучĕ татах та нумайланать, юлашкинчен чăваш фольклористикинче хăйне май наука шкулĕ (е тĕпчев юхăмĕ) пулса тăрать: Н.И.Ашмарин ĕçĕсене тĕпе хурса Г.Т.Тимофеев, Н.В.Никольский, И.Н.Юркин, Г.И.Комиссаров т. ыт. те ырми-канми тăрăшаççĕ.

XX ĕм. 20-40-мĕш çç. чăваш фольклористикинче урăхла наука туртăмĕ палăрать – вульгарлă социологизм. Урăхла каласан, хăш-пĕр тĕпчевçĕсем сăмахлăхăн аталанăвне общество ӳсĕмĕн пĕтĕмĕшле законĕсене çăмăллатса тĕрĕс мар кăтартма пикенеççĕ. Çакă,

тĕслĕхрен, фольклор жанрĕсене асăннă вăхăтри патшалăх политикин идейисене шута илсе ушкăнлама тăрăшнинче курăнать. Ун йышши ĕçсенче, тĕпрен илсен, çырусăр сăмахлăх халăхра мĕнле ăнлавсемпе çӳрени те, тĕрлĕ халăхсен ăслăх ӳсĕмĕсем те шута илĕнмен. Çак меслет ăслăлăхра 50-70-мĕш çулсемччен хуçаланать-ха. Каярахпа чăваш фольклористикинче çĕнĕ ӳсĕмлĕ тата тĕрлĕ енлĕ тĕпчевсем, монографисем, кĕнекесем пичетленеççĕ. Унсăр пуçне, 80-мĕш çулсенче сăмахлăха тĕпчесси халăх шухăшлавĕпе, унăн еткерлĕхне тĕрлĕ ушкăнсем çине пайлас туртăмпа тӳр килет: ăсчахсем хăйсен тишкерĕвĕсенче фольклора ытти ăслăлăхсемпе танлаштараççĕ, тĕрлĕ жанрти сăнарсемпе сюжетсене, поэзи ăсталăхĕн мелĕсене халăх хайлавĕсен тытăмĕпе сăн-сăпатне, тулаш енĕпе формисене тарăннăн çутатма тăрăшаççĕ, халăхра анлă сарăлнă сăмахлăх текстсĕсене шута илсе тĕпчеççĕ.

Çӳлерех каланисене шута илсе, чăваш фольклорне жанрсем çине классификацилес ыйтупа çырнă пысăкрах ĕçсене тишкерсе тухăпăр. Вĕсен шутне Г.И.Комиссаров, И.С.Тукташ, М.Я.Сироткин, В.Я.Канюковпа И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт, В.Г.Родионов, Н.И.Егоров тĕпчевĕсене кĕртмелле.

Гурий Иванович Комиссаров – чăваш фольклористикине пуçараканĕ. Ку тĕрĕсех, мĕншĕн тесен унччен халăх сăмахлăхне анлăн тишкерсе тĕпчевлĕ пĕтĕмлетӳсем тăвакан та, фольклор жанрĕсене пĕтĕмĕшле ушкăнлакан та пулман. Паллă фольклорист хăйĕн «Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ» (1926-1930) статйинче сăмахлăха (вăл «халаплăх» терминпа усă курма сĕнет) çак жанрсене кĕртет:

1. Юрăсем. 2. Чĕлхе сăмахĕсем. 3. Кĕлĕсем. 4. Пил сăмахĕсем. 5. Ылхан сăмахĕсем. 6. Тупăшу сăмахĕсем. 7. Халапсем (юмахсем). 8. Авалхи халапсем (преданисем). 9. Легендăсем. 10. Историлле халапсем. 11. Кулăшла халапсем (анекдотсем). 12. Виртлемелли сăмахсем. 13. Тупмалли юмахсем. 14. Ваттисен сăмахĕсем. 15. Юптаруллă сăмахсем. 16. Тĕлĕк уççисем. 17. Тĕш-

мĕшле сăмахсем (приметы-суеверия). 18. Çанталăк сăнавĕсем. 19. Юптаруллă халапсем (притчи).

Автор кунсăр пуçне чăвашсен паттăр юррисем пулнине асăнать. Ун шучĕпе, çавăн йышши юрăсем пулнă пулин те, хальхи вăхăтра вĕсем çухалнă, музыкăпа каласа юрлама пăрахнăран ахаль е авалхи халапа куçнă.

Илья Семенович Тукташ классификацийĕ те маларахри автор-тĕпчевçĕрен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть. Вăл ушкăнлакан принципсем каллех çав тапхăрпа, унăн кулленхи пурнăçри идеологи сĕмлĕхĕпе çыхăннă. Хăйĕн 1941 ç. хатĕрлесе кăларнă (1949 ç. тепре пичетленнĕ) «Чăваш фольклорĕ» кĕнекинче тĕпчевçĕ сăмахлăх тĕсĕсене çак ушкăнсем çине пайлать:

I. Октябрьченхи фольклор.

1. Ĕç юррисем. 2. Вĕрӳ-суру чĕлхисем. 3. Йăлана кĕнĕ уяв юррисем. 4. Сутмалли юмахсем. 5. Преданисем. 6. Легендăсем. 7. Историри паллă çынсем çинчен çӳрекен хыпарсем. 8. Кĕреке юррисем. 9. Удел хресченсен юррисем. 10. Сăпка юррисемпе ача-пăча сăввисем. 11. Ваттисен сăмахĕсем. 12. Юмахсем.

II. Совет тапхăрĕнчи фольклор.

1. Граждан вăрçи такмакĕсем. 2. Заем такмакĕсем. 3. Ваттисен сăмаххисем. 4. Ленинпа Сталин çинчен хунă юрăсемпе такмаксем.

Михаил Яковлевич Сироткин профессор 1965 ç. «Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества» кĕнеке пичетлесе кăларать. Автор хăйĕн тĕпчевне социологи меслечĕ çине тайăнса хатĕрленĕ пулин те, унăн монографилле ĕçĕ чăваш фольклористикине малалла аталантарма нумай пулăшнă. Чăваш фольклорне, халăхăн календарлă йăли-йĕркине тишкернисĕр пуçне, М.Я.Сироткин традицилле юрăсен тытăмĕпе илемлĕх мелĕсене хак парать. Вăл сăмахлăх жанрĕсене çапларах ушкăнлать:

1. Календарлă йăла-йĕрке поэзийĕ. 2. Ĕç юррисем. 3. Çемьери йăла-йĕрке поэзийĕ. 4. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем. 5. Тупмалли (сутмалли) юмахсем. 6. Юмахсем (халапсем). 7. Историлле преданисемпе юрăсем. 8. Халăхăн

лирикăлла юррисем. 9. Çĕнĕ саманари юрăсем. 10. Такмаксем.

Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕсĕсене ушкăнлас ыйтупа тухăçлă ĕçленĕ тĕпчевçĕсенчен Владимир Яковлевич Канюкова, Иван Ильич Одюкова, Ефросиния Сергеевна Сидоровăпа  Геннадий Федорович Юмарта асăнмалла. Вĕсем пухса хатĕрленĕ 6 томлă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» 7 кĕнекере халăх юмахĕсемпе юррисене, вак жанрĕсемпе ача-пăча сăмахлăхне, мифĕсемпе халапĕсене тĕплĕн пăхса тухнă, ушкăнласа хак панă. Асăннă авторсем фольклорăн çак жанрĕсене уйăраççĕ:

1. Юмахсем. 2. Юрăсем. 3. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем. 4. Сăнавсемпе паллăсем. 5. Тупмалли юмахсем. 6. Ача-пăча сăмахлăхĕ. 7. Мифсем. 8. Халапсем.

Çакна та палăртар: кашни жанр хăй пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайланать.

Унсăр пуçне, Е.С.Сидорова доцент хăйĕн тĕпчевĕсенче чăваш сăмахлăх жанрĕсене проза тата поэзи ушкăнĕсене уйăрма сĕнет. Пĕрремĕшне, ун шухăшĕпе, мифологи (мифсем; ĕненӳсем; легендăсем; юмахсем (асамлă; чĕрчунсем çинчен; йăла), историлле проза (истори халапĕсем; топонимика халапĕсем) тата вак жанрсем (ваттисен сăмахĕсем; тупмалли юмахсем; сăнавсемпе паллăсем) кĕреççĕ. Иккĕмĕш ушкăнне магилле сăмахсемпе (чĕлхесем; кĕлĕсем; пил; ылхану) лирикăна (йăла-йĕркепе çыхăннă тата йăла-йĕркепе çыхăнман юрăсăвă) кĕртет.

Виталий Петрович Никитин (Станъял) халăх сăмахлăхне ушкăнлани те хăйне май. Унăн фольклора систематизацилес принципĕ литература ăслайĕн мелĕсемпе тӳр килет. Çапла майпа ученăй халăх сăмахлăхĕн 3 пысăк ушкăнне – калану (эпика), выляну (драма) тата çуйлану (лирика) речĕсене кăтартать. Эпикăна, ун шучĕпе, хайла (миф, легенда), халап (предание), уйланăш (сказка), кĕске каланăшсем (малые жанры); лирикăна – ăрăмлă сăмахлăх (магическая поэзия), кун тăрăм йăлисен сăмахлăхĕ (календарные обряды), этем ĕмĕрĕн сăмахлăхĕ (семейно-бытовые обряды), кулленхи

сăвă-юрă (песни) тата кулленхи такмак-шӳтсем (частушки-шутки) кĕреççĕ; вăйăри, туйри, уяври выляну сăмахлăхне автор драма ретĕнче тишкерет.

Асăннă ĕçсенче авторсем çӳлерех палăртнă пысăк ушкăнсенче сăмахлăхăн ытти тĕсĕсене те сăнласа панă.

Юлашки вăхăтра тĕпчевçĕсем чăваш фольклорне системăлас ыйтăва çĕнĕлле сăнама пикенчĕç, халăх еткерĕн тексчĕсене чăваш çынни мĕне кура уйăрнине шута илме тăрăшрĕç. Сăмахран, Н.И.Егоров профессор чăваш фольклорĕн проза жанрĕсене ушкăнлас тата терминологи ыйтăвĕсемпе статья пичетлерĕ[14]. Чăваш фольклорне жанрсем çине ушкăнлас ыйтупа пирĕн пысăк тĕпчевлĕ статья та пичетленнĕччĕ[15] т. ыт. те.

Чăваш халăх сăмахлăхĕн тĕсĕсем çинчен калаçнă чух, пирĕн шутпа, çаксене шута илмелле:

1) паянлăха фольклорăн терминĕсем наукăра çирĕпленсе çитейменнине;

2) сăмахлăх тĕсĕсене ăслăлăхра классификацилесси нумай чухне халăхра ушкăнланипе тӳр килменнипе;

3) çавна пула пĕр-пĕр терминпах фольклорăн тĕрлĕ жанрĕсене палăртнипе.

Чăваш фольклорĕн аталанăвĕпе кун-çулне тĕпчесе çапларах пĕтĕмлетӳ тума пулать: йăла-йĕрке поэзине ушкăнланă чух уявсене тематика енчен мар, жанрсене шута илсе пайламалла; чăваш халăх сăмахлăхне уйрăм тĕссене уйăрас ĕçре ытти тĕрĕк халăхĕсен, чăвашсем мĕн ĕмĕрген хурăнташланса-çыхăнланса пурăннă этноссен фольклорĕне танлаштарса тĕпчемелле.

Чăваш халăх еткерне 4 пысăк ушкăна – эпикăлла (лиро-эпикăлла) поэзи, халăх прози, йăла-йĕрке поэзийĕ тата халăх лирики – уйăрса тĕпчеме сĕнес килет. Кашни тĕс хăй пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайланать. Кунашкал ушкăнлани паянчченхи тĕпчевçĕсем фольклористикăра тунă ĕçсене те, хальхи вăхăтри фольк-

---

[14] Асăннă ĕç.

[15] Родионов В.Г. Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 54-105.

лорçăсен çĕнĕ тĕпчевĕсене те шута илтерет, хамăрăн аслă вĕрентекенĕмĕрсен ăслăлăхри тӳпине сума сутарать, хисеплеме хистет.

Малтанласа халăх сăмахлăхĕн эпикăлла поэзийĕ çинчен калаçăпăр. Тĕпчевçĕсем ăна лиро-эпикăлла поэзи ăнлавпа та палăртаççĕ. Çак жанрпа чăваш фольклористикинче халăхра мĕн авалах йĕркеленнĕ эпоспа лирикăн паллисене килĕшӳллĕн пĕрлештерсе тăракан сăмахлăх тĕсĕсене палăртаççĕ. Вĕсен шутне, чи малтанах, мăн кĕрӳ такмакĕсене кĕртмелле. Н.И.Егоров шухăшĕпе, чăвашсен саламаликĕ тĕрĕк-монгол халăхĕсен паттăрла эпосне çав тери çывăх, вăл – чăвашсен мифла пĕлтерĕшлĕ эпосĕн паянхи кунччен сыхланса юлнă чи авалхи тĕсĕ.

Эпос пирки сăмах тапратрăмăр пулсан, çакна та каласа хăварар: чăваш халăхĕн, ытти тĕрĕк халăхĕсемпе танлаштарсан, эпикăлла произведенийĕсем нумаях мар. Унсăр пуçне, чăвашсен юрласа е сăвăласа хайланă эпос тĕсĕсем юлманна пĕрех, ытларах вĕсем проза формипе – улăп халапĕсенче – ӳкерĕннĕ. Мифла тата героикăлла мотивсем хăш-пĕр историлле юрăсенче, калуллă текстсенче çеç тĕл пулаççĕ. Çакă чăвашсен хăйсен паттăрла эпосĕ пулман тенине пĕлтермест. Историри тĕрлĕ сăлтавсемпе улшăнусене пула çеç вĕсем фольклорăн тĕрлĕ жанрĕсене пайăн-пайăн куçса пынă, паянхи кунччен сыхланса юлнă. Урăхла каласан, историлле халапсем Ылтăн Уртапа Хусан ханлăхĕ (XIII-XVI) тапхăрĕсене çутатса параççĕ, историлле юрăсенчен ытларахăшĕ вара XVI-XVIII ĕм. пулăмсене сăнлассипе çыхăннă. Çапла XIX ĕм. чăвашсен эпикăлла поэзийĕ лирика еннелле сулăнни паллă. Малтанласа 1812 тата 1878 çç. вăрçăсене халалланă юрăсем çуралаççĕ. Каярахпа сăмахлă поэзи салтаксемпе вĕсен арăмĕсем т. ыт. çинчен каласси̇не куçать. Çав юрăсем пейĕт ятпа упранса юлнă. Историлле юрăсене тата çӳлерех асăннă йышши сăвă-хӳхлевсене нумай енлĕ тĕпчесе, çапларах палăртма пулать: тăван халăхăмăрăн эпикăлла (е лиро-эпикăлла) поэзийĕ, вĕсем историн тĕрлĕ тапхăрĕсенче пулса кайнă пулсан та, пĕр тĕпрен е кăкран аталаннă,

çавӑнпа та вӗсене пӗр ӑнлавпа – *пейӗт* сӑмахпа – уйӑрса палӑртатпӑр.

Чӑвашсен эпикӑлла поэзине тӗпчемен мар. Г.Ф.Юмарт фольклорист хӑйӗн 1990 ç. пичетленнӗ «Чувашская эпическая поэзия» статйинче çак жанрсен шутне мӑн кӗрӳ такмакӗсемпе пейӗтсене кӗртет[16]. Тӗпчевçӗ шухӑшӗпе, асӑннӑ ӑнлав чӑваш фольклористикинче XIX ӗм. иккӗмӗш çурринчех ӳке-рӗнсе юлнӑ. *Пейӗт* термина пирвайхи хут Н.М.Охотников çыравçӑ-этнограф 1890 ç. «Чувашские песни» ӗçӗнче асӑнать. Ун чухне пейӗтсем тесе пӗр-пӗр çамрӑкпа тӑлӑх салтак арӑмӗ çинчен тӑрӑхласа е шӳтлесе хывнӑ юрӑсене каланӑ-мӗн. Çак пӗлтерӗшпе Н.И.Ашмарин та хӑйӗн словарӗнче усӑ курать. Пейӗт, – тет вӑл, – пӗр-пӗр усал хӗр е каччӑ çинчен кӑларнӑ усал юрӑ. Ун пек юрӑсем тутарсен те пур, урӑхла вӗсене юрӑ тӗсӗсем, теççӗ. Чӑн та, тутарсемпе пушкӑртсем пейӗтсен шутне хӑйне майлӑ историпе çыхӑннӑ тата салтаксен иртнӗ вӑрçӑсем çинчен хывнӑ юррисене кӗртеççӗ. Паллах, тӑван халӑхӑмӑрӑн та кун йышши пейӗтсем нумай пулнӑ (çакна XIX ӗм. çырса хӑварнӑ тӗслӗхсем те аван кӑтартаççӗ). Тӗпчевçӗсем çирӗплетнӗ тӑрӑх, чӑвашсем хушшинче капитализм йӗркисем çирӗпленнӗçемӗн историлле юрӑсем хывас туртӑм майӗпен телейсӗр юрату-шӑпапа çыхӑннӑ юрӑсем çырас туртӑмпа ылмашӑнать. Çак тапхӑртан пуçласа ӑнлавӑн пӗлтерӗшӗ те улшӑнать, хӑйӗн ӗлӗкхи сӗмне çухатса, ансӑртарах курӑма куçать.

«Чӑвашсен кӗске энциклопедийӗнче» пейӗт пирки çапла çырса хунӑ: «пейӗт вӑл – иртнӗ пурнӑçри событисемпе çыхӑнтарса юрланӑ сюжетлӑ юрӑ-хайлав».

XX ӗм. 70-мӗш çулӗсенче çавӑн йышши юрӑсене фольклористикӑра баллада ӑнлавпа палӑртнӑ. И.И.Одюков профессор, сӑмахран, чӑвашсен балладисене пӗрремӗш хут тишкерет, çак терминпа сюжетлӑ юрӑсене палӑртса калать. Анчах пур сюжетлӑ юрӑсене баллада шутне кӗртмест вӑл: баллада яланах уйрӑм çыннӑн е кил йышӑн пурнӑçне трагедилле сӑнлать; вӗсенче пур-

---

[16] Юмарт Г.Ф. Чувашская эпическая поэзия //Чувашская народная поэзия /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 110-123.

нăç чылай чух вилĕмпе вĕçленет. Балладăсем кулленхи пурнăçпа та (телейсĕр юрату, юратупа кавар), социаллă пурнăç танмарлăхĕпе те çыхăнаççĕ. Тĕпрен илсен, телейсĕр юрату, вилĕм çинчен хывнă юрăсемпе историлле юрăсене, тăлăхсен сюжетлă юррисене баллада шутне кĕртет автор, çав жанр совет тапхăрĕнче те аталаннине палăртать. (Сăмахран, «Саврăш юрри» йышши балладăсем).

Сюжет мотивĕсемпе те, пĕлтерĕшĕсемпе те, тематикипе те балладăсем пейĕтсенчен уйрăлса тăмаççĕ. Тĕрлĕ çăлкуçсенче çак ăнлав нумай вариантпа тĕл пулнине асăрхатăн: Н.И.Ашмарин, сăмахран, *пеит*, *пейĕт*, наука архивĕсенче *пеит*, *баит*, М.Юхма писатель *пайăт* терминсемпе кăтартаççĕ. «Чăвашсен кĕске энциклопедийĕнче» пейĕтсене балладăсен пĕчĕкрех ушкăнĕ, тесе хаклани те тĕл пулать.

Çапла вара, пейĕтсем питĕ сăнарлă та чуна пырса тивекен хайлавсем. Кашни юрри-сăвви – халăх пурлăхĕ, унăн историйĕпе кун-çулĕ, шăпипе ĕмĕчĕ, вĕсенче чăваш çынни пуласлăхшăн ăнтăлни, ырри усала çĕнтерессе шанни сăнарланнă.

Пĕтĕмлетесе çапла калама пулать: пейĕтсем – пурнăçри пĕр-пĕр хурлăхлă пулăмпа çыхăннă сюжетлă юрăсем. Вĕсенче телейсĕр юрату, тăлăх ачан тертлĕ пурнăçĕ, пӳкле вилĕм, тӳре-шара тискерленни, хĕр-пикене вăйпа качча пани, салтак арăмĕ упăшкине кĕтни тата пурнăçăн ытти пулăмĕсем сăнарланнă.

Г.Ф.Юмарт пейĕтсене XIII-XV ĕм. çуралнă, тесе çирĕплетет; калăпăшĕпе вĕсем хальхи текстсенчен вăрăмрах та пуянрах аталаннă, анчах нумайăшĕ манăçа тухнă. Пурпĕрех вĕсен тематики пуян.

Хамăр тĕпчевре пейĕтсене 3 ушкăна уйăрса тишкерĕпĕр: *авалхи пейĕтсем* (исторические пеиты), *вăрçă пейĕчĕсем* (пеиты о войне), *юрату пейĕчĕсем* (пеиты о несчастных судьбах и любовных похождениях). Вĕсем пурте пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă.

Авалхи пейĕтсем сĕм авалах аталаннă жанр. Унăн чиккисем историлле юрăсемпе балладăсен ушкăнлавĕпе тӳр килеççĕ. Ку ушкăна чăвашсем Кама шывĕ

хĕрринчен çурçĕреллле куçни, Аçтăрхана суту-илӳ ĕçĕсемпе çӳрени, тутар феодалĕсене хирĕç кĕрешни, чăвашсен тыткăнри пурнăçĕ, унта хăйсен тăванĕсемпе тĕл пулса калаçни çинчен, Раççейпе Чăваш енри тĕрлĕ вăрçăсемпе пăлхавсене халалланă сюжетлă юрăсем кĕреççĕ.

Сăмахран, «Шурă Атăл хĕрне çитиччен...» пейĕтре XIII-XIV ĕм. событисем сăнарланнă. Сăмах кунта мифологири мерчен кайăк пулăшнипе чăвашсем Çурçĕр Кавказран халĕ пурăнакан вырăна куçса килни çинчен пырать; вĕсем ĕлĕкхи вырăнти тус-юлташĕсене асăнаççĕ, çĕрĕ-шывĕшĕн кулянаççĕ, хурланаççĕ. Чăвашсем тĕп килĕсене пăрахса урăх вырăна куçнин сăлтавĕ уçăмлах мар пулин те пейĕтре çакă паллă: çĕнĕ çĕре куçма вĕсен йӳтĕмĕ пулнах-тăр, ахальтен мар «çӳллĕ ту çине» хăпараççĕ, «çич хĕл каçнă юр» çийĕпе асапланса «Шурă Атăл хĕрне» çитеççĕ, хăйсен ашшĕ-амăшĕсене асра тытса, «икĕ хăмăша» вĕсемпе танлаштараççĕ. Тепĕр «Аçтăрхан хирне эп тухрăм» пейĕтре те мифла шухăшлав сĕмĕ палăрать: Аçтăрхан хулине «йĕс такан çутипеле» çитнĕ иккен чăвашсем.

Тутар пусмăрĕ е тыткăнĕ çинчен калакан пейĕтсен йышĕ те сахал мар. Кунта чăвашсем Мамук хана ылханаççĕ («Мамук ханăн пуçне вăрăнтăр!»), чăваш хĕрне тутар чурана илсе кайнишĕн («Илсе каять тутар хĕре Хусан хулине»), çичĕ хĕре пусмăрласа хур кăтартнишĕн («Çичĕ хăрхăм») кулянаççĕ, телейсĕр шăпишĕн ӳкĕнеççĕ.

XVI ĕм. авалхи пейĕтсен содержанийĕ улшăнать: вĕсенче сюжет йĕрĕ пĕтĕм халăх мар, уйрăм çын шăпи е историри паллă çын тавра тĕвĕленет. Сăмахран, «Иоанн Грозный патша Хусана тутарсенчен тытса илни çинчен», «Атя, куккук, каяр Хусан хулине» пейĕтсенче Хаяр Иван патша çинчен сăмах пырать.

Каярахри тапхăрсенче çуралнă пейĕтсем С.Разин, Е.Пугачев ячĕсемпе çыхăннă: чăвашсем çав пейĕтсенче халăхшăн кĕрешекен паттăр хусах-маттурсене ырлаççĕ («Çтенкă Раçăн çӳрет, тет», «Çапла йыхăрнă Пăкача»), вĕсене хура халăхăн чăн-чăн патши вырăнне шутлаççĕ («Раççин патша хăй килет», «Пăкачав патша пур,

теççĕ») т. ыт. те. XIX ĕм. пулса иртнĕ хурлăхлă событисем – 1812 тата 1877-1878 çç. халăх вăрçипе туркăсемпе çапăçнисем те анлăн ÿкерĕннĕ çав пейĕтсенче.

Тытăмĕпе авалхи пейĕтсене 2 ушкăна уйăрса тишкерет Г.Ф.Юмарт: тăсса юрламаллисем тата калаçнă майлă юрламаллисем. Вĕсен калăпăшĕ – 30-40 йĕркеллĕ; тĕрлĕрен диалогсемпе монологсене сыпăнтарса тăрать; эпитетсем, танлаштарусем, ÿстернĕ сăнлăхсем чылай.

Юрату пейĕчĕсем чăвашра анлă сарăлнă, ытларахăшĕ вырăссен йăли-йĕркипе çыхăннă балладисемпе пĕрешкелрех. Кун йышши сюжетлă юрăсене И.И.Одюков 2 пысăк ушкăна уйăрса хакланă: кулленхи тата социаллă пурнăçпа çыхăннисем. Пĕрремĕшĕсенче, ун шухăшĕпе, хирĕçÿ хĕрпе каччă, аппăшĕпе йăмăкĕ, ашшĕ-амăшĕпе ывăлĕ-хĕрĕ, арăмĕпе упăшки хушшинче пулать. Вĕсенче телейсĕр юрату, кĕвĕçÿ, юратупа ултав е кавар çинчен калаççĕ. Телейсĕр юрату юррисенче хĕр е каччă хăйне юратма пăрахнăшăн кулянать, вилме шутлать. Кĕвĕçÿллĕ юрату юррисем уйрăмах хурлăхлă: унта çамрăксем юратăва ĕненмесĕр кĕвĕçеççĕ, вилеççĕ («Яварпа Нина», «Лидăпа Коля»). Ултавлă юрату йывăрлăхне хĕр тÿссе ирттерет. Юратупа кавар юррисенче юратакан çамрăксем ашшĕ-амăшĕ пĕрлешме чарнăшăн вилеççĕ («Маруç», «Уйрăлу», «Икĕ виле»). Ку ушкăнах аппăшĕпе йăмăкĕ пĕр качча юратни, аппăшĕ хăйĕн йăмăкне вĕлерни çинчен калаканнисем те кĕреççĕ («Аппа тĕртсе ячĕ Атăл варрине»). Теприсенче хĕрсем, пурте пĕр каварлă пулса, ултавçă качча вĕлереççĕ («Вуникĕ хĕр»).

Кулленхи пурнăç пейĕчĕсенче тăванĕсем хăйсен ырлăхĕшĕн тăван хĕрĕсене, йăмăкĕ-шăллĕне, упăшкисене вĕлерни çинчен каланисем те пур. Халăх çав усал йăлана тарăхса питлет, айăпсăр вилнисене шеллет.

Социаллă пурнăçпа çыхăннă пейĕтсенче çамрăк çын ытти социаллă пусмăр юррисенчи пек обществăри танмарлăха пĕтересси, ĕç халăхне килĕшÿллĕ пурнăç йĕркисем тăвасси çинчен шухăшламасть. Вăл юратăва мул виçипе хакланине хирĕçлет, юратса пĕрлешме кирли çинчен калать. Пейĕтсенче пуянсем хăйсен ывăлĕ-

хĕрне чухăнсене юратма чараççĕ, çапла туса çамрăксен ĕмĕчĕсене татаççĕ. «Çумаркка ачи» юрăра, сăмахран, пуянсен мăшкăлне тӳсеймесĕр, çамрăк хĕр хăйне хăй вĕлерет; «Оля» пейĕтре пуян хĕрĕпе чухăн каччă пуян ашшĕ-амăшĕ пĕрлешме чарнăран шыва сикеççĕ.

Хăш-пĕр юрăсенче чăваш каччипе тутар хĕрĕн юратăвĕ тĕл пулать, анчах тĕне, тĕрлĕ халăх йăлине пула вĕсене пĕрлешме тӳр килмест, çавăнпа хĕр «усал тĕнчене» ылханса вилет («Сар кайăк юрлать аслă улăхра»).

Асăннă ушкăнри сюжетлă юрăсенче ашшĕ-амăш сăмахĕнчен тухса, ултав-суяна ăнланмасăр хур тӳснине, элеке пула кил-йыш саланнине кăтартнă. Палăртнă юрăсенчен ытларахăшĕ вырăсларан куçарнипе сарăлнă («Кăвак куçлă матроссем», «Ултавçă-кăрнатир» т. ыт. те).

Юрату пейĕчĕсенче те малти вырăна ырăпа усала, çут çанталăкри пулăмсемпе тачă çыхăнтарнă хирĕçлӳсене кăтартни тухса тăрать; пуплевре тĕрлĕрен диалогсемпе тата монологсемпе усă курни сисĕнет. Çаксем пурте пейĕтсен илемлĕхĕпе пахалăхне татах ӳстереççĕ. Кун йышши пейĕтсем калăпăшĕпе çав тери пĕчĕк: вĕсенче пурĕ те 20-30 йĕрке çеç пулма пултарать. Пейĕтсене халăх сăввин виçипе – силлабикăпа – хайланă. Ку та сюжета чĕрĕлетсе, хитрелетсе те тарăнлатса кăтартать, уçса парать.

Халăх хушшинче анлă сарăлнă пейĕтсем литература поэмăсемпе балладăсем калăплама нумай çыравçа хавхалантарнă (М.Ф.Федорова, Я.В.Турхана, К.В.Иванова т. ыт. те.).

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Чăваш халăх сăмахлăхĕн жанрĕсене ушкăнлас ыйтусемпе уйрăмлăхсем.
2. Чăваш халăх сăмахлăхĕн жанрĕсем.
3. Чăвашсен эпикăлла поэзийĕ аталанни. Пейĕтсем, вĕсен ушкăнĕсем.

# УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


1.*Егоров Н.И.* Чăваш фольклорĕн проза жанрĕсене ушкăнласси тата терминологи ыйтăвĕсем //Халăх шкулĕ. 2002. 4 №. 64-67 с.

2.*Егоров Н.И.* Чувашский саламалик //Чувашский фольклор. Специфика жанров: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 106-129.

3.*Ильина Г.Г.* Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Практикум /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1999. 76 с.

4.*Канюков В.Я., Одюков И.И.* Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1-мĕш пайĕ: Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1973. 96 с.

5.*Комиссаров Г.И.* Чăваш фольклорĕпе литература вĕрентĕвĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Тĕпчевсемпе текстсем /ЧНТИ. Шупашкар, 1989. С. 6-45.

6.*Одюков И.И.* Чувашские народные сюжетные песни-баллады //Чăваш филологийĕн ыйтăвĕсем. Вопросы чувашской филологии. Вып. 1 /Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1974. С. 143-182.

7.*Родионов В. Г.* Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 54-105.

8.*Сироткин М.Я.* Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1965. 195 с.

9.*Улăп.* Чăваш эпосĕ /Çуйăн Хĕветĕрĕ пухса сăвăланă. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1996. 576 с.

10.*Чăваш* фольклорĕ /И.С.Тукташ пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăвашгосиздат, 1949. 328 с.

11.*Юмарт Г.Ф.* Чувашская эпическая поэзия //Чувашская народная поэзия /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 110-123.

**2.2. Халăх прози. Чăвашсен мифĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Мифологи науки аталанни. Халăх демонологийĕ. Чăвашсен халапĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Чăвашсен юмахĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Юмахсенчи усал-тĕселсем. Юмахсен поэтики. Вак жанрсем, вĕсен ушкăнĕсем. Паремисен поэтики.**

Чăваш халăх сăмахлăхĕн проза ретне кĕрекен произведенисене ушкăнлас ыйтăва чăваш фольклористикинче паянхи кун та татса паман-ха. Тĕрлĕ ученăй çакна тĕрлĕрен тĕпчет. Сăмахран, маларахри тĕпчевсенче, жанрсен тĕсĕсене шута илсе, вĕсене 3 ĕрете ушкăнланăччĕ: мифла проза (мифсем е легендăсем); юмахла проза (юмахсем); эпикăлла проза (халапсем). Н.И.Егоров вара, хальлĕхе проза ретне кĕрекен сăмахлă, таса пуплевлĕ текстсене юмахсемпе юмах мар проза жанрĕсем (халапсем) çине уйăрма сĕнет. Вăлах вырăс фольклористикинче çирĕпленнĕ «анекдот», «прибаутка», «меморат» терминсене чăвашла куçарса *месек*, *мерекке*, *ăсмах* ăнлавсемпе ăслăлăхра усă курма сĕнӳсем парать.

Паллах, кирек-мĕнле наукăра та çĕнĕ ăнлавсем шухăшласа кăларни аван. Çапах вырăс фольклорисчĕсем хăйсен сăмахлăхне ушкăнланă принципсене хамăр халăхăн калуллă еткерне йĕркелес ĕçре калькăласа куçарни кирлех-ши? Тен, вĕсене халăхра çирĕпленнĕ терминсемпе çеç палăртмалла. Сăмахран, *юмах* ăнлавпа чăвашсем пурнăçра пулман тата пулма пултарайман хайлавсене палăртнă. Ăна хирĕçле произведенисем – *чăн пулнисем*. Вĕсем – халăх пурнăçĕнче пулса иртнĕ ĕçсене хакласа та каласа паракан тĕссем. Нумай чухне *халап* пĕлтерĕшпе çуреме пултараççĕ. Унсăр пуçне, чăваш çынни хăйĕн шухăш-кăмăлне, ăс-хакăлне палăртма ытти ăнлавсемпе те усă курать: *сăмах* тата *чĕлхе* терминсем яланах ритмлă текстсене, *юрă* – кĕвĕллĕ е çемĕллĕ сăмахсене палăртнă т. ыт. те.

Куратпăр: сăмахлăхăн проза ретне мифсемпе халапсем, юмахсемпе вак жанрсем кĕреççĕ. Юлашки ăнлавпа эпир ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене, тупмалли

(сутмалли) юмахĕсене, сăнавĕсемпе ĕненĕвĕсене, тĕлĕкĕсемпе чарăвĕсене (табу) палăртатпăр.

Фольклорта сăмах пултарулăхĕн палăкĕсем çеç мар, этнографи чăнлăхĕ те, вăл шутра, йăла-йĕрке институчĕсем, çемьери традицисем, ритуаллă йăласен ушкăнĕ, халăхăн мифологийĕ те аван сăнарланнă. Çаксене шута илсе ĕнтĕ тĕпчевçĕсем мифологилле пĕрлĕхре сăмахлăхăн нумай жанрĕсем вăй илнине, мифсенчен фольклорăн нумай тĕсĕсем аталанса кайнине палăртаççĕ.

Мифсем тесе тĕнче, турăсемпе ыр-усалсен, вăйхăватсен пулăмне е çынсене тата çут çанталăкпа унăн ĕç-япалисене епле пултарнине чăвашсем хăйне майлă асамлатса та чĕрĕлентерсе каланă сăмахлăх тĕсĕсене калаççĕ. Тепĕр чух вĕсене *легенда* терминпа та улăштарни тĕл пулать.

Миф — фольклорăн чи авалхи жанрĕ. Грек чĕлхинчен куçарсан, сăмах вĕççĕн каласа паракан текст тата тĕнче тытăмне сăнлакан система тенине пĕлтерет. Мифсене фольклорăн каярах пулса кайнă жанрĕсемпе танлаштарсан çакна асăрхатăн: этемлĕх чи малтанхи тапхăрсенче тĕнче çине туреммĕн ăнланакан куçпа пăхнинчен пуçлать те майĕпен абстрактлă пĕтĕмлетӳсем тăвас çул çине куçать, çапла хăйĕн пурнăçне çĕнетесси патне пырать.

Илер чăвашăн чи авалхи мифĕсене: вĕсенче пирĕн мăн асаттесем хăйĕн чи аслă туррине те уçăмлă сăнарлăн курайман-ха. Уншăн пĕтĕм çут тĕнче турă пулнă. Каярахри мифсенче турра чăвашсем е чĕр чун-тотем, е çын сăнарлă палăртаççĕ, вĕсен йышне хушса тата çынсен обществăри тытăмĕпе пĕрпеклетсе кăтартма пикенеççĕ. Асăннă пулăм чăваш çыннин мифла шухăшлавĕ пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн хавшаса пынине, урăхларах ăна (сознание) куçнине пĕлтерет.

Миф епле аталанса кайнине пĕлес пулсан, мифла ăна пĕлтерĕшлĕ хакламалла. унăн вырăнне палăртмалла, мĕншĕн тесен шăпах мифла ăн тĕнчене ăнланма пулăшакан форма пулса тăнă. Вăл тĕнчепе çут çанталăка та, обществăна этеме те чухлама пулăшать. Урăхла каласан, чăвашсем тĕнчене ăнланма, этеме çĕр

çине мĕн тума янине, çут çанталăк мĕнле пулса кайнине пĕлме. тĕнче тытăмне тĕпчеме, çын пурнăçне, малашлăха палăртас тĕллевпе ягарлă хайлавсем е мифсем шухăшласа кăларнă. Мифсем çуралса çирĕпленнĕ вăхăтра халăхăн мифла шухăшлавĕ те йĕркеленсе çитет. Каярахна çеç, çўлерех асăннă сăмахлăх палăкĕсем хут çине çырăнман «ягарлă вĕренӳ кĕнекисем» шутне куçсан, çăмăллăнах халăхра мифла ăн аталанса çитнĕ, теме пултаратпăр. Çавăнпа тĕрлĕ халăхăн нумай мифĕ пĕр евĕрлерех.

Сĕм авалхи этем миф урлă çут çанталăкри пулăмсене çеç мар, вĕсен объекчĕсене те ăнлантарма тăрăшнă: е чĕр чун-тотем сăнарĕсем витĕр, е усал вăй-хăват урлă, е ытти вăйсемпе кăтартнă. Апла пулсан, миф вăл – пурнăç чăнлăхне халăх ăс-тăнĕнче акăш-макăш ўстерсе те урăхлатса илемлĕ хакланин е ўкерсе кăтартнин чи малтанхи форми.

Чи авалхи чăвашăн мифла ăнланăвĕнче сăнарсен уçăмлăхĕ çук-ха терĕмĕр. Уншăн пĕтĕм тĕнче – пĕр сăнар, Мăн Турри те малтанласа тўпепе (небо) пĕрлĕхлĕ; вăл питĕ пысăк, унăн вĕçĕ-хĕрри те çук. Çынсем Турра курма пултараймаççĕ: пĕлĕт хăвăлĕ уçăлнă чухне çеç вăл çĕр çине йăпăрт пăхса илнине, куç хăрпăкĕсене уçса-хупнине (кăвак хуппине) асăрхама пулать.

Каярахри легендăсемпе юмах-халапра Турă кил-çурт таврашĕнчи çын сăнарлă: шурă тумтирлĕ, шурă сухаллă, килрен-киле кĕрсе тухать, этем сассипе калаçать. Ăна чăваш пысăк пуçлăх вырăнне хума пуçлать, ĕçĕсене унăн ытти тарçи-тĕрçи туса çўрет тесе ăнланма хăнăхать.

Вăхăт шăвать. Халăхăн мифла ăнĕ те аталанса пырать. Çавăнпа пĕрлех мифсем юмаха куçса пыма пуçлаççĕ. Вĕсенче çĕр çинчи ĕçсене гатса парас ыйту хускалать. Хайлаври паттăр шутне Турă мар, çын тухать – эпикăлла герой сăнарĕ йĕркеленме тытăнать.

Чăвашсем хăйсене улăпсен йăхĕнчен тухнă, тесе шутланă, ăна ăру-йăх пуçаракан аслашшĕ вырăнне хурса хисепленĕ, чўксенче асăннă.

Фольклортан мифологилле шухăшлав пачах тухса ўкет тесе калама хĕн. Çапах ĕç опычĕ этемĕн ăсне-тăнне аталантарсах пырать. Çакă унăн тотемла шухăшлавĕ улшăнса пынинче те аван курăнать. Упа юмаххинех илер. Тахçан-авал чăваш упана вăйлă, пырса çулăхма çук чĕр чун пек курнă. Ун çинчен вăл «упа-утаман» тесе калаçнă. Авалхи сюжетсенче упа этемрен ăслă. Анчах ăнланулăх улшăнать, упа этем хĕрне качча илет, ывăлĕ вĕсен паттăр ўсет.

Акă упа тырă-пулă пуссипе пырать, хуняшшĕпе тĕл пуласси çинчен ыррăн ĕмĕтленет, унăн анисене курса савăнать, хăй çитес çĕре çывхарса пынипе çĕкленсе юрлать. Этемми упан кашни утăмне çивĕч сăнаса тăрать. Упа епле савăнса çĕкленсе пынинчен вăл вăрттăн тăрăхласа кулать. Малтанласа упа-кĕрўшне ăшă сăмахпа, пылпа-сăрапа кĕтсе илеççĕ те вара ... вăрман хуçине вилĕм шăтăкне сиктереççĕ.

Çакă – фольклорти шухăшлав çĕнĕ тапхăр патне пуснă утăм. Тепĕр тапхăрĕнче чĕр чунсен сăнарĕсем тотемизм витĕмĕнчен хăтăлса çитеççĕ, обществăлла хутшăнусене палăртма пуçăнаççĕ: вĕсем çынсем хушшинчи социаллă типсен паллисене йышăнаççĕ.

Çапла вара, миф малтанласа тĕнче хулккипе обществăн классем çине пайланичченхи тапхăрне ăнлантарнă пулсан, каярахпа çак мифологи структури этемлĕхĕн пурнăç тытăмĕ çине куçать, унти йĕркелĕхе пăхăнса, хăй те çав структура майĕн аталанма пикенет.

Мифла ăнланупа тĕнче курăм, ăна палăртакан сăмахлăх тĕслĕхĕсем историлле тĕнче курăм çирĕпленсен те пĕтмест-ха. Халăхра çуралнăскерсем, вĕсем халăх философийĕ, халăх ăс-хакăлĕ, халăхăн шухăшлавĕпе тĕнче курăмĕ шутланаççĕ. Чăваш çынни хăйĕн мифĕсене çитес ăрусем валли паянхи кунччен упраса хăварма пултарнă.

Тĕпчевçĕсем каланă тăрăх, мифсем е мифла ăн тĕнчепе çут çанталăка, обществăпа çынна ăнланмалли тĕп мел пулса тăрать. Вĕсем йăла-йĕркепе, юрă-ташăпа, чăваш халăхĕн пурнăçĕпе тата ĕçĕ-хĕлĕпе те тачă çыхăнса тăраççĕ. Мифсене каласа параççĕ кăна мар,

вёсем тӗрлӗ йӑла-йӗрке тытӑмне витӗм кӳреҫҫӗ. Пӗтӗмӗшле илсен, миф – пӗр-пӗр япала е ҫут ҫанталӑкӑн пулӑвӗ, е пӗтӗм тӗнче пулса кайнине ӑнлантарса паракан хайлавсем. Чӑваш мифӗсемпе легендисене тӗпчевҫӗсем тӗрлӗ ушкӑнсене пайлаҫҫӗ. Сӑмахран, И.И.Одюков, вӗсем мӗн ҫинчен каланине шута илсе, 7 темӑна пӗрлештерет: тӗнче тытӑмӗ; йывӑҫ-курӑк; чӗр чунсемпе кайӑк-кӗшӗк; этемпе халӑх; культура паллисем; турӑсемпе ыр-хаярсем; асамҫӑсемпе юмӑҫсем. Н.И.Егоров чӗлхеҫӗ, ав, асӑннӑ жанра мифла шухӑшлавӑн аталанӑвне кура пайлама сӗнет. Чӑнах та, мифсене, вӗсенче пурнӑҫ паллисене мӗнлерех сӑнланине шута илсе ушкӑнлани, тӗрӗсрех те пулӗ. Кунашкал принциппа ытти халӑхсен тӗпчевҫисем те анлӑ усӑ кураҫҫӗ. Хамӑр тӗпчевре мифсене ҫакнашкал ушкӑнсем ҫине пайлӑпӑр: демонологи мифӗсем; космогони мифӗсем; космологи мифӗсем; теологи мифӗсем; эсхатологи мифӗсем; этиологи мифӗсем; этногони е этнологи мифӗсем.

*Демонологи е демонологилле* мифсем – ҫӗр ҫинче тата аялти (леш) тӗнчере пурӑнакан ыр-хаярсемпе усал-тӗселсем ҫинчен каласа паракан хайлавсем.

Кун йышши мифсем ҫав тери нумай, мӗншӗн тесен аялти е ҫӗр ҫинчи ыр-хӑватсем – чи йышлисем. Вӗсенчен ытларах Шуйттана, Киремете, Эсреле (Чунилли), Йӗрӗхе, Хӗртсурта, арҫурие, иене, вупӑра туллинрех сӑнланӑ. Ҫӗртисен е усал вӑйсен чи асли – Шуйттан.

Ҫӗр ҫинчи ыр-хаяра ырӑ пӗлтерӗшлӗ те (Хӗртсурт, Йӗрӗх), усал-хаяр та туса сӑнлаҫҫӗ, вӗсем пулса кайнине калаҫҫӗ. Хӑшӗ-пӗрисем (Шуйттан, Чунилли–Эсрел, Киремет) малтанах пулнӑ, Турӑпа пӗрле «ҫӳлти патшалӑхра» пурӑннӑ, вӗсене Турӑ ҫӗр ҫине хӑваласа янӑ, имӗш. Чылай ыр-хаяр мӗнле пулни паллӑ мар, хӑшӗ-пӗри (Киремет, арҫури, вупӑр, вӗреҫӗлен) этемрен пулнӑ, теҫҫӗ. Уйрӑм ыр-хаярсем ҫинчен халапсем те нумай хывнӑ, теприсене вара кӗлӗсенче ҫеҫ асӑнаҫҫӗ.

Усал вӑйсен пуҫлӑхӗ шутне Кереметпе Шуйттана кӗртнӗ. Киремете ҫынсем вӗлернӗ, ҫавӑнтан хаяр Киремет пулса юлнӑ. Вӗсем хушшинче аслисем, кӗҫӗннисем

пур, хаяр е йăваш та пулаççĕ. Шуйттана «усал» теççĕ. Вăл таçта та пурăнать: шывра, йывăç хăвăлĕнче, пушаннă кил-çуртра, мунчара, сакайĕнче, арманта. Яланах этеме сăтăр тăвать.

Асăннă мифсене хăйсене тата вак ушкăнсене уйăратпăр, кун çинчен юлашки ыйтăва çутатнă чух каласăпăр.

*Космогони е космогонилле* мифсем çут тĕнче мĕнле пулса кайни çинчен каласа кăтартаççĕ. Тĕнче пулса кайни пирки чăвашсем çапла каланă: «Чи малтан тĕнчере пĕлĕтпе шыв анчах пулнă: пĕлĕчĕ çӳлте, шывĕ аялта пулнă. Унтан пĕлĕт тӳпинчен хĕвел, уйăх, çăлтăрсем пулса тăнă. Шывсем айĕнче вут çуннă, унта тамăк хуранĕ пулнă. Пĕлĕт çинче Мăн турă хăйĕн йышĕпе тата пирĕшти текен тарçисемпе пурăннă»[17].

Çут тĕнче пуçланни, унăн ытти пулăмĕсемпе тытăмĕ çинчен пирĕн мăн асаттесем çапларах шухăшланă: çут тĕнчене никам та туман, вăл авалах пулнă, çапла йĕркеленнĕ, этем вилсен те юлать. Юрăра ăна талайран – тĕнчене шыв илнĕ тенĕ вăхăтран – юлнă тесе палăртаççĕ: талайран та юлнă çут тĕнче, пирĕнтен те юлĕ çав тĕнче. Ытти япаласем те (шыв, вут, хĕвел, уйăх, çĕр, пĕлĕт, çил) малтанах пулнă, анчах йĕркесĕр, пăтравлă вырнаçнă (малтанхи хаос), çав пăтравлăхран кайран хăйсемех хальхи пек йĕркеленнĕ иккен.

Çут тĕнчепе унăн пулăмĕсене Турă тунă тенĕ шухăш кайран ытти тĕн е мифологи урлă кĕнĕ, авалхи ĕненӳсемпе çыхăнса кайнă. Кунта Турăпа Шуйттан сăнарĕсем çут тĕнчепе унăн пулăмĕсене тăвакан-йĕркелекен вăйсем пулса сăнланнă. Вĕсем иккĕшĕ те – авалхи демиургсем. Çĕрпе çут тĕнче тытăмне кайăксем е улăпсем йĕркеленĕ тенĕ шухăш та пур. Вĕсенче кайăксемпе улăпсем культура демиургĕсем, урăхла каласан, халăх хăй пурнăçĕпе çыхăнтарса палăртни, пулса тăнă.

---

[17] Одюков И.И. Мифсемпе халапсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 2-мĕш пайĕ. Мифсемпе халапсем /И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987. 33-34 с.

*Космологи е космологилле* мифсем – çут тĕнче тытăмĕ çинчен ăнлантаракан хайлавсем. Вĕсем те чи авалхиссем. Кунта хĕвел тĕнчи (хĕвел, уйăх, çĕр, çăлтăрсем), çĕрпе пĕлĕт хушшинче пулса иртекен (пĕлĕт, çиçĕм, çил, çумăр. асамат кĕперĕ, çурçĕр шевли) е çĕр пичĕ çинче пулакан (шыв, вут) пулăмсем çинчен калакан мифсем кĕреççĕ.

Çут тĕнче тытăмне çапла ăнлантарнă. Вăл çичĕ хутлă: виçĕ хучĕ – пĕлĕтре, тăваттăмĕшĕ – çĕр пичĕ, тепĕр виçĕ хучĕ – çĕр тĕпĕнче. Çÿлти хутĕнче çăтмах пур, унта турăсем, пирĕштисем, ырă çынсен е çылăхсăр ача-пăчасен чунĕсем пурăнаççĕ. Çĕр пичĕ çинче чĕр чунсем, йывăç-курăк, этем хуçаланать. Çĕр тĕпĕнче вара усал-тĕселсемпе усал çынсен чунĕсем асапланаççĕ. Тамăкĕ – аялти хутра.

Халăхра *çут тĕнче* е *тĕнче* тенисене уйăрса ăнланнă. Çут тĕнче вăл – çĕртен çÿлелли: хĕвел, уйăх, çăлтăрсем, пĕлĕт, асамат кĕперĕ, хур кайăк çулĕ курăнакан тĕнче. Вăл пĕтесси çинчен каланисем çук. Çĕр çинчи тĕнче вара пĕтме те пултарать иккен.

Хĕвеле питĕ хисепленĕ, хĕвел ăшшипе çути пурнăç панине ĕлĕкех аван пĕлнĕ: ун ячĕпе тупа тунă, тĕрлĕ уяв туса ирттернĕ, вăйăсем вылянă, сăнавсем йĕркеленĕ, тупмалли юмахсем хывнă, ăна сарă хĕр е сарă каччă, турă туса сăнланă.

Уйăха турă пĕлтерĕшлĕ хакламаççĕ, анчах хисеплеççĕ, ытти пулăмсем пекех таса вăй тесе шутлаççĕ. Уйăх малтан хĕвелпе пĕрлех çÿренĕ. Вупăр чăрмаласан, вăл, намăсланнипе, çĕрле çеç çÿреме пуçланă. Хĕвел пекех ырă кăмăллă. Пĕлĕте аçа пĕлтерĕшпе ăнланнă: вăл амана (çĕре) шăварать. Кăвак пĕлĕте Турă пĕлтерĕшпе хакланă: ăна кĕлĕсенче, юрăсенче асăннă. Аслати – Тур мучи шыв пичкипе чуптарса сас кăларни, çиçĕм – унăн вăрăм пушши, унпа вăл усала хăвалать. Асамат кĕперĕ – Турă çĕр çинчен пĕлĕте шыв туртма антарнă кĕпер.

*Теологи е теологилле* мифсем тĕрлĕ турăсемпе вĕсен умĕнче гăраканнисем çинчен каласа параççĕ.

Чăвашсен туррисем çинчен нумай тĕпчевçĕ çырса хăварнă. Турăсемпе ыр-хаярсен йышне вĕсем уйăрмасăр пĕрле асăннă. Сăмахран, И.Георги – 8, П.Паллас – 10, К.Мильковичпа В.Сбоев – 36, В.Магницкий – 87, Н.Ашмарин – 600 ытла т. ыт. те.

Çӳлти турăсенчен (вĕсен йышĕ пысăках мар пулин те) Аслă (Мăн) Турра, Кепене, Пӳлĕхçе, Пихампара, Чун валеçене, Аслатие асăнаççĕ.

Кашни пысăк ушкăнта асли пур: çӳлтисен – Кепе. Аслă (Мăн) Турă пур ушкăнри турăсене те пăхăнтарса тăрать: вăл – турăсен патши. Кашни ушкăнрах вакраххисем, вĕсен пуçлăхĕсем пур. Çак çыхăну-пăхăну – общество пурнăçĕнчи ӳкерчĕк, халăх турăсен пурнăçне те хăй пурнăçĕн йĕрки-мелĕпех сăнланă.

Мифологире дуализм (икĕ асамлă пуçламăш вăя – Турра тата Шуйттана – ĕненни), икĕ е виçĕ тĕн вĕрентĕвĕсенчен йышăннă йĕркесене е турăсене ĕненни те курăнать. Çавна май чăваш мифологийĕнче Христос тĕнĕпе Магомет тĕнĕ урлă кĕнĕ турăсен ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каланисем те çирĕпленнĕ.

Мифсенче ытти турăсем мĕнле пурăннине те асăнаççĕ: Кепе чун валеçет; Пӳлĕхçĕ телей е хурлăх çырать; Пихампар выльăх-чĕрлĕхе тискер кайăксенчен хӳтĕлет; Хĕрлĕ çыр – çĕр тухăçлăхне ӳстерет; Хăрпан этеме хӳтĕлет, Турă хушнине пĕлтерсе çӳрет т. ыт. те.

*Эсхатологи е эсхатологилле* мифсем – тĕнче пĕтесси е пуласлăх çинчен калакан хайлавсем.

Кун йышши мифсем чăваш фольклорĕнче сахал мар. Чи малтанах вĕсем çыннăн ĕмĕрĕпе, обществăн пуласлăхĕпе, тĕнче пĕтессипе çыхăннă. Кунта сăмах талайпа çĕр çинче тахçан-авалах пурăннă Улăп йышши этемсем çинчен пырать. Вĕсен шăпи паян пурăнакан çынсене те лекме пултарать, имĕш. Ун пекки пĕрре çеç мар пулнă. Чăваш мифĕсем пĕлтернĕ тăрăх, ĕлĕк çынсем питĕ аван та тату пурăннă. Анчах этем иртĕхме, пăсăк, киревсĕр ĕçсем тума пикенет, çавăншăн Турă 40 кун хушши вăйлă çумăр çутарать, пĕтĕм тĕнчене шывпа путарать, пурнăçа пĕтерсе хурать. Чĕрĕ чунсенчен кашни пĕрер мăшăр çеç çăлăннă пулать Ту-

рă пӳрнипе, анчах хĕрарăм айĕпĕпе шуйттан та çăлăнса юлать-мĕн. Çавăнпа чăвашсен пуласлăхĕ питĕ кичем те телейсĕр шăпаллă. Пур çын та вăйлă çылăха кĕрсе пырать, çавăнпа юлашкинчен тĕнче вутпа пĕтмелле иккен. Тĕнче ан пĕттĕр тесен, чăвашăн яланах Турра тав туса чӳксем тумалла, унсăрăн ахăр самана çитме пултарать.

«Çут тĕнче вăл чĕрĕлме те, пĕтме те пултарать», – тенĕ авалхи çынсем. Çут тĕнчепе халăх шывпа е вутпа пĕтесси çинчен каланисенче уйрăмлăхсем çук мар. Попоп вăхăтĕнче çĕр пичĕ пĕтĕмпех шыв айне путман иккен. Ун чух Арарат тăвĕ юлнă, вара çав ту çинче çынсем пурăннă пулать, вĕсенчен каллех этемлĕх ĕрчесе кайнă. Тĕнчепе халăх пĕтнĕ чух пур вилнĕ çынсем чĕрĕлсе тăмалла, имĕш.

Халăх тĕнче пĕтесси çинчен калани çут çанталăк пулăмĕсем çинчен наука вĕрентнипе мар, авалхи ăнланупа çыхăннă. Çут тĕнчери пулăмсене курса, сăнаса пурăнакан этем çăлтăрсем ӳкнине, ӳсен-тăран, чĕр чун ӳснине, ватăлса вилнине, çĕрнине, пĕтнине курнă. Çавна май вăл пур япалан та, çаплах çут тĕнчен тытăмĕн те, пуçламăшĕпе вĕçленĕвĕ (вилĕмĕ) пур, тесе шухăшланă. Çапах та чăваш мифологийĕнче тĕнче пуçламăшĕпе вĕçĕ пур тесе ăнланни кайран, Христос тĕнĕ çирĕпленнĕ май пулнă тени тĕрĕсрех пек.

*Этиологи е этиологилле* мифсем çут çанталăкăн тĕрлĕ пулăмĕсем, уйрăм япаласемпе вĕсен паллисем пуçланнине е халăх культури аталаннине палăртаççĕ.

Ку ушкăнра мифсен темисене кура хорологи, фитогони, зоогони тата культурогони мифĕсене уйăратпăр.

1. *Хорологи* мифĕсем шыв тата çĕр çинчен калаканнисем. Вĕсем авалхи ĕненӳсемпе çыхăннă.

Мифсем пĕлтернĕ тăрăх, малтанах шыв пулнă, ун хыççăн тин тĕнчери япаласем пулса кайнă, вăл шутра, çĕр те. Çĕр çинчи тĕрлĕ ту-сăртсене ăсталаканĕ – Шуйттан. Тепĕр мотив вăл – малтан шывпа вут çеç пулнă тени. Кайран кайăксем шыв тĕпĕнчен тăпра çыртса тухаççĕ те ăна шыв çине хураççĕ; вара çĕр çитĕнсе кайнă, çав çĕре шыв çинче выртакан виçĕ пулă

тытса тăнă, имĕш. Асăннă сюжетсем – тĕп мифсен варианчĕсем.

Çĕр çинчи тĕрлĕ шыв-шура е çĕр-тусене пултарассине чăвашсем çак тĕп мифсемпех çыхăнтараççĕ: вĕсенче шыва е çĕре чунлă сăнлани, чĕрĕ чун пекех сывăрма, канма е хăрама пултарнине палăртаççĕ, шывпа çĕре хисеплеме хушаççĕ.

Авалхи чăваш шыва чун е этем парнелесе хăй майлă çавăрма пулать текен ăнпа çыхăнтарнине, шыври усал вăйсене хирĕç çапла майпа кĕрешме пулать тенипе ăнлантараççĕ. Акă, Йĕпреç районĕнчи Киря ятлă шыва урăхла «Хĕр шывĕ», теççĕ. Халăхра ун пирки çапла сăмах çÿрет: Киря çинче пуян тутар арман лартма шутлать, арманне шыв татса ан кайтăр тесе, вăл ун айне чĕрĕллех çамрăк хĕре алтса чикнĕ пулать, ун хыççăн çак юхан шыв халăхра «хĕр шывĕ» ятпа çирĕпленсе юлать.

Шыва хисеплесе этем нумай йăла йĕркеленĕ. Кунта хĕр, арăм пулсан, шыв çул пуçлама кайнине, пĕрремĕш хут ăсса килнĕ шывпа апат-çимĕç пĕçернине (çĕнĕ вутпа), çурхи шыв е вăйлă çумăр çĕре ан çĕмĕртĕр тесе «шыв çулне» уçнине, шывпа çĕре урăх вырăна пама чарнине тата ытти йăласене асăнма пулать. Çаксем пурте авалхи чăваш шыв вăйне ĕненнипе, ăна сума сунипе çыхăннă.

Çĕр çинчен калакан мифсем те çĕре хисепленинчен пулса кайнă йăла-йĕркесемпе çыхăнни паллă. Пирĕн несĕлсем çĕр мĕнле пулса кайни, çĕр пĕвĕ, тытăмĕ, çĕрпе ытти япаласем (шыв, вут, пĕлĕт) хушшинчи çыхăнусем, çĕр пĕлтерĕшĕ, çĕре упрасси, çĕр ĕçне ата-лантарасси тата ытти çинчен нумай пĕлме тăрăшнă. Сăмахран, çĕр мĕнле тытăнса кайнине вĕсем çапларах ăнлантарнă: малтан шыв пулнă, кайран çĕр, ун хыççăн çĕр çинчи япаласем; авалах çĕрĕн асамлă хăватне ĕненнĕ, ăна Турă вырăннех йышăннă; пур япаласене çуратакан ама тесе шутланă; нумай япалапа пулăма та çĕр хăвачĕпе çыхăнтарнă.

Акă, тĕрлĕ хайлавсенче «çĕр çăтни» мотив сыхланса юлнă. Тĕрлĕ вырăнсенче лупашка-лапамсем пулса

кайнине çĕре «таса» тенипе, çĕр халăх çирĕплетнĕ нормăсене пăсакансене «тавăрнипе» çыхăнтарнă. XIX ĕм. С.М.Михайлов ун йышши миф сюжетне «Çĕр çăтни» юмахра асăрхать: кунта амăшĕ хăйĕн хĕрĕсене вăйпах тăван пиччĕшĕсене качча панăшăн çĕр чăтаймасăр пурне те çăтать. Ун йышши мифсем анлă сарăлнине И.И.Одюков çырса кăтартнă.

2. *Фитогони мифĕсенче* ӳсен-тăранпа йывăç-курăк пулни çинчен халапласçĕ, ытларах вĕсен уйрăм паллисем епле пуçланнине тĕллесе каласçĕ. Йывăç-курăкăн этеме усăллă енĕсене Турă тунă имĕш: чăрăшпа хыра хĕллехи сивĕре вĕçен кайăка хӳтĕлесе хăварнăшăн яланах симĕс пулмалла, ыттисене çулçă тăкмалла тунă. Пилеш çинче Турăпа унăн амăшĕ вĕлересрен пытанса юлнă, çавăнпа пилеш асамлă иккен, унпа усалсене хăратма пулать т. ыт. те. Панулмипе çĕрулмие Турăпа шуйттан тавлашса тунă, тет.

3. *Зоогони мифĕсем* - чĕр чунсем çинчен калакаинисем. Вĕсенчен паянхи кун пыл хурчĕсемпе кайăккĕшĕк пулса кайни çинчен каланисем паллă. Вĕçен кайăксем вара Илле паттăр вĕлернĕ Соловей ятлă кайăкăн аш татăкĕсенчен пулса кайнă (ку XVIII-XIX ĕм. вырăс былинисенчен кĕнĕ пулас). Чĕр чунсем те этем пекех патшасемпе пурăнаççĕ: вĕсен патши - арăслан, кайăк-кĕшĕкĕн - кайăк патши. Ку вăл - общество пурнăçĕн йĕркисене çут çанталăкпа чĕр чунсен пурнăçĕ çине куçарни.

4. *Культурогони мифĕсем* - халăхăн ăслăх пурлăхĕпе е этеплĕхĕпе çыхăннă хайлавсем. Чăваш çынни вĕсене пурне те Турăпа çыхăнтарать. Халăх малтан лăпкă пурăннă, усал вăйсем вĕрентнипе ӳсĕртекен ĕçмеçимесем хатĕрлеме хăнăхнă, иртĕхме-усалланма тытăннă, вăрăм пусма тăратса, пĕлĕте хăпарса Турра та вĕлерме шутланă. Вара Турă халăха 77 чĕлхе панă, пĕр-пĕрне ăнланмалла мар тунă, салатса янă.

Леш тĕнче çинчен чăвашсем хăрушах калаçман. Унта лекнисем çĕр çинчи майлах пурăнаççĕ; «сарă кун çĕр-шывĕнче» ялсем те, хуласем те пур иккен.

Чăваш аслашшĕсем çĕр ĕçне Кавказра, унтан Атăлçи Пăлхарта пурăннă чухнех аван йĕркеленине, ака-суха ĕçне хăнăхса пынине лаша е чĕрĕп вĕрентнипе çыхăнтараççĕ.

Мифсенче чăвашсен тĕнĕпе çырулăхĕ вырăссемпе тутарсенчен кая юлнине Турă çилленĕвĕпе çыхăнтарнă. Турă кĕнеке (вариант тĕн) валеçнĕ чух чăваш çăпата сырса юлнă. Тарăхнă Турă вара унăн кĕнекине çĕре ывăтнă, лешне ĕне кавлесе янă, имĕш.

*Этногони (этногонилле)* е *этнологи (этнологилле)* мифĕсем тесе çынсем, халăхсем тата общество пулса кайнине сăнлакан хайлавсене калаççĕ.

Этем, халăх пулса кайнине ытларах Турă хăвачĕпе çыхăнтарнă. Ку шухăш малтанах пулнă-тăр, кайран ытти тĕнсем урлă та сарăлнă пулас. Мифсем каларнă тăрăх, Туррăн пĕлӳ-хăнăху та пулман: малтан улăп пек шултăра этемсене тунă, анчах кусем хунайман, ӳксен те вĕсене тăма йывăр пулнă. Турă вара чике тăршшĕ вĕтĕ этемсене пултарнă: кусем кăткă пек хунанă, анчах вĕсене ĕçлеме йывăр пулнă. Турă кусене те пĕтернĕ, пирĕн пек этемсене туса кăларнă.

Этем ĕмĕрĕ пирки калана шухăшсем хирĕçӳллĕ. Малтан этемĕн ĕмĕрĕ ытти чĕр чунсенчен те кĕске пулнă, çын уншăн тарăхнă, ĕмĕрне вăрăмлатма ыйтнă. Турри, тĕрлĕ чĕр чунсен ĕмĕрĕнчен çулсем катса, ăна вăхăт хушса панă.

Чăваш арçынпа хĕрарăм пĕр вăхăтрах пулса кайнă тесе шутланă. Мифсемпе легендăсенче уйрăм йăхсем чĕр чун-тотемсенчен пулса кайнă текен мотивсем нумай (упапа хĕрарăм, вутăш-хĕрпе каччă, шыв шуйттанĕпе хĕрарăм, кайăк хурпа арçын хутшăнăвĕсем т. ыт. те). Анчах çав йăхсенчен пĕтĕм халăх пулса кайнине каламаççĕ; чăваш халăхĕ пĕтĕмпех улăп йăхĕнчен хунанă, имĕш.

Мифсене тĕпчекен ăслăлăха мифологи, теççĕ. Вăл – грек сăмахĕ *mythologia* (<*mythos* 'сăмах; сказани, предани; шухăшласа кăларни' + *logos* 'сăмах; вĕрентни' тени пулать). Ăна икĕ пĕлтерĕшпе палăртаççĕ: 1) мифсен пуххи; 2) мифсемпе каланусене (сказанисене) тĕпчекен ăс-

лăлăх дисциплини[18]. Çак ăнлавпа чăваш фольклористикинче мăн асаттесем турăсемпе паттăрсем, тĕрлĕ чунсемпе демонсем, тĕнче, çут çанталăк, этемлĕх çинчен хăйсене майлă шухăшласа кăларнă хайлавсене палăртаççĕ.

Мифсем – ăру обществин культура палли, авалхи этем çут тĕнчене, общество пурнăçĕн пулăмĕсене асамлă-ăрăмлă, этемс пăхăнман вăй тесе шутланă тапхăрсенчех йĕркеленнĕ.

Чăваш мифологийĕ пуррине никам та хирĕçлемен, анчах ĕлĕкрех ăна чухăн та пăтравлă вăй тенипех çырлахнă. Чăннипе илсен вара вăл питĕ пуян.

Мифологине тĕпчени тăван халăхăмăрăн историне те, йăли-йĕркине те, тĕнпе ăс-тăн аталанăвне те, авалхи тĕшмĕшлĕ ăнланăвĕсене те хальхи вăхăтри этем пурнăçĕпе çыхăнтарса тĕпчеме, ăнланма май парать.

Чăваш мифологийĕпе, ытти жанр тĕслĕхĕсемпе интересленме XVIII ĕм. 30-40-мĕш çç. тытăннă. Ăна Раççейри халăхсен историйĕпе культурине тĕпчес ĕçе явăçнă вырăс е урăх çĕр-шыв историкĕсем пуçарнă. Вĕсен ĕçĕ сахал йышлă халăхсене вырăслантарас, православине феодалла йĕркесене пăхăнтарас политикăпах çыхăннă. XIX ĕм. çурринче чăваш халăхĕн пурнăçĕпе культурине, сăмахлăхне сăнас ĕçе вырăс-семпе пĕрле чăваш çыравçисем те, урăх çĕр-шыври этнографсем те явăçаççĕ.

Тăван халăх мифологийĕнче, чĕлхепе культурăн ытти енĕсенчи пекех, тĕрлĕ халăхсен ĕненĕвĕсем палăраççĕ. Зороастризм урлă ырă-хаяр вăйсене ĕненесси, православи урлă çут тĕнчери е çĕр çинчи пулăмсене, этеме те турă тунă тесе ăнланни, мăсăльман тĕнĕ урлă Аслă Туррăн тарçисем пур тесе ĕненни сарăлнă. Нумай тĕпчевçĕ палăртнă тăрăх, чăваш мифологийĕ чи малтан нумай турра ĕненнинчен пуçланса кайнă.

---

[18] Словарь иностранных слов. 10-е изд., стереотипное. М.: Рус. язык, 1983. С. 317.

Малалла XX ӗм. чӑваш мифологийӗ епле аталаннине, ҫак юхӑмра мӗнле ҫитӗнӳсем пулнине пӑхса тухӑпӑр.

Совет тапхӑрӗнче чӑваш мифологине аталантарас ӗҫ тӗрлӗ сӑлтавсене пула пӗр шайра пулса пымасть-ха. Сӑмахран, 20-30-мӗш ҫҫ. ку ыйтупа ӗҫлекенсен йышӗ сахал пулнӑ (Н.Маторин), ҫырнӑ ӗҫсене те пичетлемен (Г.И.Комиссаров, Н.Я.Золотов); 40-70-мӗш ҫҫ. е пӗтӗмӗшле тӗпчевсем пичетленсе тухаҫҫӗ (И.С.Тукташ, Н.Ф.Данилов, Н.Р.Романов, М.Я.Сироткин), е чӑваш мифӗсенче тӗн йӗркине (П.В.Денисов, А.И.Петрухин, И.И.Одюков, Г.Е.Кудряшов) тата истори пулӑмӗсене (В.Д.Димитриев, В.Ф.Каховский, А.П.Смирнов т. ыт. те) ӑнлантарнӑ май пӑхса тухаҫҫӗ; 80-90-мӗш ҫҫ. тата юлашки вӑхӑтри тӗпчевҫӗсем чӑваш мифӗсен содержанийӗсемпе пӗлтерӗшӗсене халӑхӑн авалхи историйӗпе, тӗнӗпе ҫыхӑнтарса тишкерчӗҫ ҫеҫ мар, вӗсем мифсене пур енлӗн – илемлӗхпе жанр уйрӑмлӑхӗсене те, ытти ӑслӑлӑхсемпе тата халӑх ӳнерӗсемпе ҫыхӑнса тӑнине те, мифла шухӑшлавӑн аталанӑвӗпе пайрӑмӗсене те шута илсе ҫӗнӗ тӗпчевсем ҫырса пичетлерӗҫ, жанрсене ҫӗнӗлле пӑхса классификацилерӗҫ, архиври чылай текста кун ҫути кӑтартма пултарчӗҫ. Ку енӗпе уйрӑмах тӑрӑшнӑ тӗпчевҫӗсенчен И.И.Одюковпа В.Я.Канюкова, А.А.Трофимова, В.Г.Родионова, А.П.Хусанкая, В.И.Сергеева, А.К.Салмина, В.П.Никитина, Н.И.Егорова, В.А.Ендерова т. ыт. те палӑртмалла. Асӑннӑ авторсем архиври текстсем ҫине таянса пысӑк тӗпчевсем хатӗрлерӗҫ, чӑваш мифологийӗнчи нумай сӑнарлӑха тӗпчерӗҫ: *туррисемпе ырӑ хӑвачӗсене* (А.Салмин, В.Родионов, В.Никитин, А.Хусанкай), *чӗр чун-тотемӗсене* (В.Родионов, Н.Егоров, В.Ендеров), *тӗнче тытӑмӗпе ҫыхӑннӑ мифологемӑсене* (И.Одюковпа В.Канюков, В.Родионов, Н.Егоров), *демонологиллс сӑнарӗсене* (И.Одюков, Н.Егоров, В.Родионов, А.Салмин, В.Ендеров, Г.Ильина), вӑл шутран, *вӗре ҫӗленне* (Г.Кудряшов, В.Ендеров), *арҫурине* (В.Родионов, В.Ендеров), *перине* (Г.Ильина), турӑ пӗлтерӗшлӗ ырхаярсенчен *киремете* (Н.Романов, А.Хусанкай, А.Салмин) тата *йӗрӗхе* (А.Салмин) ятарласа тишкерчӗҫ;

халăх мифологийĕн асамлă-ăрăмлă йĕрĕсене чăваш тĕррисемпе эрешĕсенче (А.Трофимов), юррисемпе-кĕввисенче (М.Кондратьев, А.Осипов), йăли-йĕркипе поэзийĕнче (И.Дмитриев, Н.Денисова), илемлĕ çырулла сăмахлăхра (Г.Юмарт, Г.Федоров, В.Родионов), чĕлхере (А.Хусанкай, В.Сергеев), çурт-йĕр ăсталас ӳнерте (Н.Наумов), тапă-çемĕре (В.Милютин) ӳкерĕнсе юлнине асăрхарĕç, палăртса хăварчĕç. Ку вăл – чăваш мифологийĕ çав тери пуяннине, йышлине тата лайăх сыхланса юлнине пĕлтерет. Чăвашсен мифĕсем пулнă, пур, вĕсене шыраса тупмалла, пухмалла, тĕпчемелле.

Демонологи – грек сăмахĕ (*daimōn* 'турă, ыр-хаяр' + *logos* 'сăмах; вĕрентни'), турăсем е ыр-хаярсем çинчен вĕрентекен ăслăлăх, генине пĕлтерет. В.Даль словарĕнче ку терминпа ыр-хаярсене е ӳтсĕр чун-сăнарсене (бесплотные существа) тĕпчении палăртнă.

Чăваш мифологийĕнче те демонологилле сăнарсем йышлă. Халăхра ыра тата хаяр персонажсене пĕтĕмлетсе «усал-тĕселсем» тенĕ. Н.И.Ашмарин та вĕсене таса мар вăйсем, сывлăшсем, тесе хаклать.

Таса мар вăйсем çынна яланах сăтăр тума тăрăшаççĕ, çавна шута илсе-тĕр халăх пурне те *усалсем* тет. Хăй вăхăтĕнче кашни сăнарăн ятарлă функцийĕ пулнă ĕнтĕ. Сăмахран, арçури – вăрман турри, вăл унти пуянлăха сыхланă; вутăш (шыври) – шывсен хуçийĕ; киремет – çырма-çатрасен, ращасен, ана-çарансен ырхаярĕ; йĕрĕх – кĕлетсен, чăлансемпе ытти хуралтăсен сыхчи, чир-чĕр яраканĕ т. ыт. те.

Чăвашсен мифологийĕнче халăх тĕнче курăмĕн нумай енĕсем палăрнă: анимизм, фетишизм, тотемизм, зооморфизм, зооантропоморфизм, антропоморфизм. Тĕслĕхрен, фетишизм каска пуканĕн, йĕрĕх пĕрнин, пилеш хуллин вăйне ĕненнинче курăнать; тотемизм – упа, кашкăр, ĕне, лаша е йывăç-курăк вăйĕсене ĕненнипе çыхăнса йĕркеленнĕ мифсенче палăрать т. ыт. те.

Çав енсем тĕрлĕ йышши мифсемпе легендăсене халăхра сарăлма пулăшнă. Асăннă жанрсенче авалхи чăвашсем çут çанталăк пулăмĕсемпе япаласем чĕрĕ чунлă е вĕсен чĕр чун сăнарлă хуçисем пулнине, вĕсем этем

пурнăçне тӳрремӗнех хутшăнма пултарассине сăнланă. Ун йышши ыр-хаяра чăваш çынни пуç çапса та чӳклесе пурăннă, яланах парнепе çырлахтарма тăрăшнă. Çапла тумасан ыр-хаярсем çемьене, йăха е ял-йыша тĕрлĕрен чирсем, асап-тертсем ярса вĕлерме е асаплантарма пултарнă, имĕш.

Чăвашсен ыр-хаярĕсем çинчен калаçнă чухне вĕсене ăслăлăхра мĕнле ушкăнланине пăхса тухмасăр май çук. Ку ыйтăва тĕпчевçĕсем тĕрлĕрен татса панине куратпăр. Сăмахран, венгр ученăйĕ Д.Ме́сарош 1909 ç. пичетлесе кăларнă «Памятники старой чувашской веры» кĕнекере мифла сăнарсене турăпа ырă вăйсем, усал вăйсем тата пĕчĕк пĕлтерĕшлĕ фантастикăлла чунсем, тесе уйăрнă; И.И.Одюков чăваш мифĕсенче çӳлти хăватсемпе çĕр çинчи ыр-хаярсем ытларах сăнарланнине асăрхать, вĕсене ырă тата усал сăнарсем çине пайлать; А.П.Хусанкай чĕлхеçĕ, чăвашсен киреметне халалланă статьяра, халăхăн асамлă-ăрăмлă сăмахĕсене тишкернĕ май, тĕнлĕх универсумĕнче демиург-турăсем, ырăсемпе хаярсем тата хăватсен ушкăнне палăртать. «Революциччен-хи чăваш литератури (XX ĕмĕрччен)» кĕнекере эпир мифла сăнарсене виçĕ ушкăнра пăхса тухнăччĕ: çӳлти тĕнчери сăнарсем, çĕр çинче пурăннă вăйсем тата çĕр айĕнче (аялти тĕнчере) пурăннă сăнарсем.

Çĕр çинче пурăнакан вăйсен йышĕ калама çук пысăк. Вĕсенчен пĕрисем çынна ырă гăваççĕ, теприсем чир-чĕр яма пултараççĕ. Сăмахран, кирек мĕнле килте те Хĕртсурт пур тенĕ. Вăл пулсассăн килти çынсем пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçса пурăнаççĕ иккен, çук пулсан — кулленех харкашаççĕ, йыш саланса каять. Хаяр вăйсен шутне Киремет кĕнĕ. Киремет вырăнне вăрманта карта тытсах хунă. Ăна чир-чĕртен тасалас тесе тĕрлĕ выльăх пусса чукленĕ. Çав вырăна хураллакан çынна Киремет мăчаварĕ тенĕ. Эсрелĕпе Шуйттан аялти тĕнчере пурăнаççĕ тесе ĕненнĕ.

Н.И.Егоров турăсемпе тĕрлĕ ыр-хаярсем çинчен калакан мифсене виçĕ пысăк ушкăна пайлама сĕнет: пантеон (Турă йышĕ), пананимон (ыр-хаярсем) тата пандемониум (усал-тĕселсем).

Тĕпчевçĕсем демонологилле сăнарсене тĕрлĕ терминсемпе палăртаççĕ пулсан та вĕсем ыр-хаярсемпе усалтĕселсем пурăнакан вырăнсен, функцийĕсемпе пĕлтерĕшĕсен пĕрпеклĕхне палăртаççĕ. Ку шăпах чăвашсен пандемониумне (гр. чĕлхинчен куçарсан, çавăн йышши сăнарсен йышлăхĕ, ушкăнĕ тени пулать) пĕр сăмахпа, «усал-тĕселсем» терминпа палăртма, вĕсене 2 ушкăна «ырăсем» тата «усалсем» - çине пайлама май парать. Малалла кун йышши мифсенчи тĕп сăнарсемпе вĕсен ĕçĕсене кура усаллисене хăйсене 5 пĕчĕк ушкăна уйăратпăр:

а) çĕр е вырăн хуçисем (хушу параканĕсем). Кунта, сăмахран, шуйттан, эсрел йышши сăнарсене кĕртетпĕр;

ă) усал ĕçсене пуçараканĕсем е пуçлаканĕсем. Ку ĕрете вупăр, усал, пери йышшисем кĕреççĕ;

б) пулăшу параканĕсем е пулăшаканĕсем. Кун йышшисем нумаях мар, сăмахран, вутăш, арçури чи авалах çынсене пулăшни çинчен каласçĕ;

в) хăратаканĕсем. Ку ушкăнрисем этеме яланах чирпе, асаппа хăратнă. Кунта ийе, мур тата ытти ырхаяра кĕртме пулать. Вĕсенчен çăлăнма чăваш çынни тĕрлĕ йăласем туса ирттернĕ.

г) хăйĕнпе арлă-арăмлă пурнăçпа пурăнтаракансем. Ытларах кунта вĕре-çĕлен йышши демонимсем çинчен сăмах пырать. Тепĕр чухне çак мелпе усалсем те, шуйттансем те «усă кураççĕ».

Тĕрлĕ сийри сăнарсемпе мифологемăсене пĕрлештерекенсене, çыхăну тытакансене (тухатмăшсем, тĕрлĕрен вĕрӳ-суруçăсем, ăрăмçăсем, асамçăсем) уйрăм ушкăна кĕртсе тишкермелле, мĕншĕн тесен халăхăн мифла шухăшлавĕнче вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ, тӳпийĕ чылаях пысăк.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Халăх прозине жанрсем çине ушкăнлани.
2. «Миф», «мифла ăн», «мифла шухăшлав» ăнлавсем, вĕсен пĕлтерĕшĕсем.
3. Чăвашсен мифĕсемпе вĕсен ушкăнĕсем.

4. Чăваш мифологийĕ аталанни: мифсене пухса тĕпчени, пичетлесе кăларни.
5. Халăх демонологийĕ – мифла шухăшлавăн тĕп пайĕ, усал-тĕселсене тĕпчекен ăслăлăх.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


1.*Ашмарин Н.И.* Введение в курс чувашской народной словесности //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 3-53.

2.*Ашмарин Н.И.* Введение в курс чувашской народной словесности (Окончание) //Исследования по чувашскому фольклору /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 3-48.

3.*Егоров Н.И.* Чăваш фольклорĕн проза жанрĕсене ушкăнлассипе тата терминологи ыйтăвĕсем //Халăх шкулĕ. 2002. 4 №. 64-67 с.

4.*Егоров Н.И.* Чувашская мифология //Культура чувашского края. Ч. 1: Учеб. пособие /В.П.Иванов, Г.Б.Матвеев, Н.И.Егоров и др. /Сост. М.И.Скворцов. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1994. С. 109-146.

5.*Ендеров В.А.* Проблемы классификации демонологических персонажей: Учеб. пособие. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2002. 96 с.

6.*Канюков В.Я., Одюков И.И.* Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1-мĕш пайĕ. Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1973. 96 с.

7.*Мéсарош Д.* Памятники старой чувашской веры. Пер. с венг. /ЧГИГН. Чебоксары, 2000. 360 с.

8.*Никитин В.П.* Табуированный пантеон чувашской религии //Проблемы национального в развитии чувашского народа: Сб. ст. /ЧГИГН. Чебоксары, 1999. С. 248-259.

9.*Одюков И.И.* Мифсемпе халапсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 2-мĕш пайĕ. Мифсемпе халапсем /И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987. 5-32 с.

10. *Салмин А.К.* Религиозно-обрядовая система чувашей /Отв. ред. Н.Л.Жуковская; Чув. нац. академия. Чебоксары, 1993. 211 с.

11. *Трофимов А.А.* Древний язык чувашского орнамента //Чувашское народное искусство: Сб. ст. Чебоксары, 1985. С. 3-18.

12. *Трофимов А.А.* Космогонические представления древних чувашей и отражение их в орнаменте вышивки. Вып. 70: Чувашское искусство //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1976. С. 3-52.

13. *Трофимов А.А., Станъял В.П.* Чăваш мифĕсем: тытăмĕ, кӳлепи, чĕлхи, сăнарлăхĕ //Чăваш халăх пултарулăхĕ. Мифсем, легендăсем, халапсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2004. 7-23 с.

14. *Якуркка Микихверĕ* (Н.Е.Наумов). Чăваш тĕнĕ. Тĕнче курăм. Ыр-хаярсем //«Хыпар» кĕнеки. 4 №. 1992. Юпан 3-мĕшĕ.

15. *Якуркка Микихверĕ* (Н.Е.Наумов). Чăвашăн тĕнче, пĕлĕтпе çĕр, пĕлĕт çинчи çăлтăрсем çинчен вĕрентсе калани //«Хыпар» кĕнеки. 13 №. 1995. Çĕртмен 20- мĕшĕ.

***Халапсем.*** Чăваш фольклористикинче халап терминпа ытларах чухне прозăри эпикăлла жанрсене палăртма усă кураççĕ. Вăл вырăссен «предание» ăнлавне çывăх. Тĕпчевçĕсем унпа историре пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каласа паракан е çав событисене пула хыврăннă калав йышши хайлавсене палăртаççĕ. Сăмахран, мифсемпе юмахсенче общество историйĕнче пулса иртнĕ пулăмсене çав тери пысăклатса та илемлетсе, ӳстерсе те анлăлатса калаççĕ пулсан, халапсем çак улшăнусене кăшт реализмларах сăнлассипе уйрăлса тăраççĕ. Вĕсем пирки И.И.Одюков тĕпчевçĕ çапларах çырнă: «Халапсем тесе, – палăртнă вăл, – ялсемпе вырăнсен ячĕсем пулса кайни е историре пулса иртнĕ ĕçсем çинчен каланисене (преданисене) палăртаççĕ. Çут çанталăк пулăмĕсем (хĕвел, уйăх, пĕлĕт т. ыт. те), çĕр çинчи пулăмсемпе япаласем, чĕр чунсем пулса кайнисем е вĕсен паллисем çинчен калакан халапсем мифсем шутланаççĕ. Халăх

пурнăçĕнчи пулăмсемпе ĕçсем çинчен историре пулнă майлах (реализмла) калакан халапсене истори халапĕсем теме пулать. Вĕсен шутне топонимикăлла халапсене те кĕртме пулать»[19].

Çапла вара, халапсен чи паллă уйрăмлăхĕ вăл – историре палăрнă çынсене, паллă историллĕ событисене тата вăл событисемпе çыхăннă вырăнсене е пулăмсене ӳкерсе кăтартасси.

Паянхи фольклористикăра халапсем пирки тĕрлĕрен ăнлантарни пур. Н.И.Егоров чĕлхеçĕ, сăмахран, мифсене халапсен шутне кĕртет, çак терминпа вăл мифологи (çут тĕнче) халапĕсене, эпика (улăп) халапĕсене, истори (аваллăх) халапĕсене палăртма сĕнет; кашни ушкăнĕнчех вакăрах сюжет йĕрĕсене сăнама чĕнсе калать.

Пирĕн шухăшпа, халапсене ушкăнлас ыйтăва вĕсен курăмлăхĕпе çыхăнтармалла, мифла халапсене, улăп халапĕсене, истори халапĕсене тата топонимика халапĕсене уйрăммăн пăхмалла. Çапла вара, халапсене ушкăнлассине тĕс тĕлĕшĕнчен (видовое деление) пайлас принципсене тĕпе хурса тĕвĕлемелле, мĕншĕн тесен çак мел халăх классификацийĕпе пĕр килет.

Паянхи кун чăвашсен тĕп мифĕсем сахал упранса юлнă, анчах миф элеменчĕсем, унăн паллисемпе йĕрĕсем мифла халапсенче анлăн тĕл пулаççĕ.

Чăваш мифĕсене ушкăнланă чухне усал-тĕселсем çинчен калакан хайлавсене ятарлă пая уйăрмалла. Унта тĕп мифсемпе пĕрле халăхра турăсем, ыр-хаярсем тата усал-тĕселсене палăртакан мифла халапсем кĕнине те палăртмалла.

Мĕнле уйăрма пулать-ши мифсене ытти мифла халапсенчен? Çак ыйтăвăн хуравне тупас тесен асăннă хайлавсен шалти тытăмĕпе кĕвĕлĕхне, пĕлтерĕшĕсене тĕпчемелле. Ăсчахсем палăртнă тăрăх, мифсем çут тĕнче мĕнле пулса кайнине, унăн тытăмне, тĕрлĕрен турăсем-

---

[19] Одюков И.И. Мифсемпе халапсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 2-мĕш пайĕ. Мифсемпе халапсем /И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987. 6 с.

пе ыр-хаярсем е усал-тĕселсем, этемпе ăна хупăрласа тăракан пулăмсемпе япаласен аталанăвне ӳкерсе кăтартаççĕ. Вĕсен геройĕ – çын е чĕр чун сăнарлă, тĕп идейи яланах унпа çыхăннă е сăнар тавра йĕркеленсе пырать. Тата миф вăл – эстетика функцисемсĕр пуçне кашни тапхăрăн идеологилле пĕрлĕхне çутатакан хайлав.

Мифла халапсенче (вĕсене Н.И.Егоров «тĕн-тĕшмĕш халапĕсем» тесе палăртасшăн) çавăн йышши туртăмсем çукпа пĕрех: вĕсенче халăх мифологийĕн паллăлăхĕсем е историри тĕрлĕрен фактсем сăмахлăхăн илемлĕх мелĕсене кура фантастика элеменчĕсемпе, пысăклатсаӳстерсе каланисемпе пуянланнă, çавна пула вĕсем ĕмĕрсем хушшинче аса çирĕп кĕрсе юлнă.

Кун пек халапсенче этем ыр-хаярсемпе тĕрлĕ вырăнта тĕл пулать: вăрманта, çĕр çинче, шывра. Вĕсемпе тавлашма, тупăшма е çапăçма та ним те мар уншăн. Каласа панисенче тĕп вырăнта яланах пулма пултараймаллăх тăрать, çавăнпа кун йышши халапсем ытларах чухне юмаха çывăх. Сăмахран, халаплакан (халап яракан) с вĕсене такам каласа панисене асра тытса тепĕр хут аса илтерекенсем турă умĕнче тăракансемпе, вĕсен тарçи-тĕрçисемпе е çĕр пичĕ çинче пурăнакан хăватсемпе тата çĕр айĕнче (леш тĕнчере) пурăнакан мĕн пур усалсемпе тĕл пулнине чăн пулнă пек каласа параççĕ. Çапах халапсенче шухăшласа кăларни, юмахлатаса ӳстерни куç кĕретех. Кун йышши хайлавсенчи мифла ăна е шухăшлава шыраса тупас тесен илемлĕ текста сийĕн-сийĕн уйăрса тата пайăн-пайăн вакласа реконструкцилемелле, аваллăх паллисене, тĕп мифăн элеменчĕсене пĕтĕмĕшле хаклама пĕлмелле.

Улăп халапĕсем пур çĕрте те сарăлнă, ытларах улăп тăпри çинчен калаканнисем тĕл пулаççĕ. Историксем тĕпченĕ тăрăх, улăп тĕмисенчен ытларахăшĕ – пирĕн эрăччenех, бронза ĕмĕрĕнче хывнă масарсем. Вĕсене Байкалпа Алтай, Атăлпа Урал, Донпа Днепр тăрăхĕнче, Çурçĕр Кавказра тупса палăртнă. Чăваш çĕрĕнче вĕсем 500-тен иртеççĕ.

Улăп сăнарĕ монголсемпе тĕрĕксен пирĕн эра пуçламăшĕнченех йĕркеленнĕ, сăмахлăхра çирĕпленнĕ. Малтан вăл паттăр сыхлавçă-çынна палăртнă, каярахпа çар ертӳçисен паттăрлăхне кăтартакан эпитет пулса тăнă. Тĕрĕк каганачĕн те 716-720 çулсенче Алп-Эльэтмиш ятлă çар пуçĕ пулнă. Çарсене патшасем те ертсе пынă, çавăнпах «алп» тени патша ячĕн эпитечĕ пулса çирĕпленнĕ.

Улăп халапĕсем – ăру-йăх паттăрне (аслашшĕне) мифсемпе истори халапĕсен (асамлăхпа чăнлăх) кĕввисене хутăштарса-пĕрлештерсе асамлă паттăр туса сăнлакан легендăсем, чăвашăн паттăрлăх эпосĕн тĕсĕсем. Тĕслĕхрен, авалах хывăннă халапсенче улăпа мифласа сăнланă, куçа курăнакан тĕнчене йĕркелекенĕ вырăнне хурса хакланă: улăпсене сунара çӳренĕ чух çĕр пичĕ çинчи пĕлĕт чăрмантарать, çавăнпа ăна вĕсем çуле çĕклеççĕ; е, сунарта çӳресе ывăнсан, пĕр улăпĕ пĕлĕт çине канма выртать, юлташĕсем ăна пĕлĕчĕ-мĕнĕпех тӳпенелле çĕклесе хăпартаççĕ, вăл вара çĕр çине анаймасть, Турă пулса юлать; вăл чупнă чух пуснă вырăнта аслати пулать, куççулĕнчен çумăр çăвать. Улăп кайăк пек вĕçме те пултарать иккен. Ăна ăру-йăх пуçаракан аслашшĕ вырăнне хурса хисеплени Улăп ячĕпе чӳксем туса ирттернинче аван палăрать.

Улăп – ырă, çемçе кăмăллă этем, вăл амăшĕн сăмахне итлет, пĕчĕк çынсене усал тумасть; çĕр питне (çереме) ахальтен çĕтмест, сухаçа та çĕр питне ватакан кайăк тесе тытса каять. Вăл тăшмансемпе паттăр çапăçма та пултарать, хăйне те, пурлăхне те сыхлать, чăвашсене пулăшать. Кун йышши халапсенче икĕ сий пур: пĕри – авалхи, тепри – кайранхи.

Авалах çирĕпленнĕ сюжетсенче Улăп çут çанталăкри тискер вăйсемпе (Сехметпе, Эсреметпе, Алтăркуçпа, Аçтахапа) кĕрешет, вĕсене çĕнтерет: е вĕлерет, е хăваласа ярать. Каярах йĕркеленнĕ сюжетсенче улăп социалла пурнăçри тăшмансемпе кĕрешет: улăппа улăп хирĕçеççĕ; Кавказран куçса килекен улăпсем туçи халăхĕсемпе кĕрешеççĕ; монголсем килсе тапăнсан, вăл «çеçенхир енчен» килнĕ Супетей çарĕпе çапăçать т. ыт. те.

Çапла пĕтĕмлетӳ тума пулать: улăп халапĕсем – чăваш халăхĕн авалхи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне, унăн кĕрешĕвне кăтартакан паттăрлăх эпосĕн тĕсĕсем. Вĕсенче халăхăмăрăн халĕ пурăнакан вырăнти вăрăм кун çулĕ сăнланнă. Шухăшĕпе вĕсем халăхăмăр выльăх-чĕрлĕх пăхакан, çĕр ĕçĕпе пĕр вырăнта пурăнакан пĕр пĕтĕмлĕ халăх пулнине (хăйĕн этнос паллине) ăнланса илнине, çав пĕрлĕхе тытса, çирĕплетсе пырассишĕн паттăр кĕрешнине кăтартаççĕ.

Истори халапĕсем истори документсем мар, анчах халăх пурнăçĕнче чăн пулнă, халăх ăна хăй куçĕпе курнă е тӳссе ирттернĕ пулăмсене сăнарласа, пĕтĕмлетсе калакан хайлавсем. Вĕсенче халăх е уйрăм çын пурнăçĕн хăш-пĕр енĕсене фантастикăлла мелсемпе сăнласси те пулма пултарать, анчах çакă яланах пурнăçра пулнă ĕç-хĕл, факт çинче никĕсленет. Çав вăхăтрах шухăшласа кăларни те (вымысел), историлле фактсене пăтраштарни те (анахронизм), асамлă туса сăнлани те, миф кĕввисене кĕртсе усă курни те сисĕнет.

Истори халапĕсем йĕркеленни халăхăн историллĕ тĕнче курăмĕ çуралса çирĕпленнипе çыхăннă, вĕсем çав тĕнче курăма палăртса аталаннă. Вĕсенче общество пурнăçĕн тĕрлĕ тапхăрĕсенче пулса иртнĕ социаллă ĕç-хĕл çинчен каланă, ăна халăх кăмăлĕпе çыхăнтарса хакланă. Çавăнпа истори халапĕсенче халăхăн общест-вăлла шухăшлавĕ, социаллă ăнлавĕ вăйлăрах палăрать.

Халăх кун-çулĕн тĕрлĕ тапхăрĕсене сăнлакан халап-сен йышĕ пĕр пек упранайман. Авалхи асаттесем Ал-тайра, Вăтам Азире, Кавказра пурăннисем çинчен ка-ланисем çукпа пĕрех. Ĕмĕрсем иртнĕ, кайранхи ăру-йăхсем умне çĕнĕ ыйтусем тухса тăнă, авалхисем ма-наçса пынă. Вĕсен йĕрĕсене чĕлхере, йăла-йĕркере, ми-фологире, топонимикăра шыраса тупма пулать. Каярах-ри тапхăрсемпе çыхăннă аваллăх халапĕсем вара нумай. Çакăн сăлтавĕ çав вăхăтсенче чăваш халăхĕ пĕр пĕтĕм халăха пĕтĕçсе çитнипе, çав пĕрлĕхшĕн кĕрешнипе çыхăннă.

Фольклористсем истори халапĕсене тĕрлĕрен ушкăн-лаççĕ. Сăмахран, И.И.Одюков I-XV ĕм. истори ха-

лапĕсене 4 ушкăнра тĕпчет: «чăваш» ят тата халăх пуçланни (халăх историйĕн пуçламăшĕ); авалхи пăлхарсем çинчен; Атăлçи пăлхарсем çинчен; Атăлçи пăлхарчăвашсем монгол-тутарсемпе кĕрешни çинчен. В.Д.Димитриев историк та «Чувашские исторические предания» кĕнекере аваллăх халапĕсене обществăн историри аталанăвĕн чиккисемпе палăртнă: чăвашсен авалхи пурнăçĕпе пăлхар тапхăрĕ çинчен; тутар-монгол пусмăрĕпе Хусан ханлăхĕн тапхăрĕ çинчен; чăвашсем Вырăс патшалăхне хăй ирĕкĕпе кĕни çинчен; чăваш халăхĕн XVI-XVIII ĕм. пурнăçĕ çинчен; С.Т.Разинпа унăн çыннисем çинчен; Е.И.Пугачевна унăн çыннисем çинчен; XVIII ĕм. вĕçĕнчи XIX ĕм. пĕрремĕш çурринчи событисем çинчен.

Чăваш йăхĕ Алтайран куçса килнине икĕ вырăнта асăнни паллă. Иккĕшĕнче те чăваша хальхи вырăна вырăс хăваласа килнĕ тесе каланă. Ку анахронизм ытти халăхсен халапĕсенче те нумай тĕл пулать.

Асаттесем Кавказран Атăл тăрăхне куçса килнине сăмахлăхăн чылай тĕслĕхĕсенче каланă. Чăвашсем хальхи вырăна кăнтăртан, Хура тинĕс хĕрринчен, çӳллĕ тусем хыçĕнчен килнĕ тесе ĕненеççĕ. Тĕслĕхрен, «Чăвашсем турккăран тарни» халапра чăваш халăхĕ турккă çĕрĕнчен вырăс çĕрне тарса тухнă пулать.

Пăлхар халăхĕ çинчен хывнă халапсем икĕ ушкăна уйрăлаççĕ: пăлхар халăхĕн малтанхи пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне (VIII ĕм.-1236 ç.) тата монгол феодалĕсен пусмăрне хирĕç кĕрешнине (1236-1437 çç.) сăнлаканнисем. Халапсем пĕлтернĕ тăрăх, пăлхар халăхĕ мирлĕ пурнăçпа пурăнать: хуласемпе ялсем йĕркелет, выльăх-чĕрлĕх пăхать, тыр-пул ӳстерет, суту-илӳ тăвать, йăласем ирттерет. Анчах тулăх пурнăç нумая пымасть иккен, пăлхарсен çĕрне тутар-монгол çарĕсем килсе тустарма пикенеççĕ, хулисемпе-ялĕсем вут-кăварпа çунса кĕлленеççĕ; нумай халăх пĕтет, чуралăха ăсанать. Халапсенче чăвашсен турханĕсем, пусмăртан хăтăлас шутпа çынсем урăх вырăнсене куçнисем çинчен тăтăш асăнаççĕ.

Истори халапĕсенче Раççейре XVI-XX ĕм. пуçламăшĕнче пулса иртнĕ пур паллă событисем те

сăнланнă: чăвашсем хăйсен ирĕкĕпе Вырăс патшалăхĕпе пĕрлешни; Иван Грозный çарне Хусана илме пулăшни; Раççейри патшалăх ĕçĕсене, тĕрлĕрен пăлхавсене хутшăнни т. ыт. те. Тĕслĕхрен, С.Разинпа Е.Пугачев çинчен хывнă халапсем йышлă: Разин вăрçи çинчен – 50-ран, Пăкачав вăрçи çинчен – 100-тен иртет.

Çапла вара истори халапĕсене халăхăн вăрăм кунçулне, унăн ирĕклĕхпе телейлĕх ĕмĕтне, çав ĕмĕте пурнăçласшăн паттăррăн кĕрешнине сăнланă хайлавсем темелле.

Чăвашсен топонимика халапĕсем хамăр тăрăхри сăрт-ту, шыв-шур, çăлкуç, ана-çаран, уй-хир, вăрманкага, ял-урам е хуласемпе вĕсен ячĕсем пулса кайнипе çыхăннă. Кун йышши хăш-пĕр халапсенче мифологилле ăнпа шухăшлав пурри сисĕнсен те вĕсем хайлавăн тĕп шăнăрĕ шутланмаççĕ, халăхра вĕсене халапăн сĕмне е курăмлăхне ўстерес тĕллевпе çеç калама пултарнă.

Тавралăх халапĕсене тишкернĕ чух Г.Г.Ильина çак ушкăнсене пайласа тухать:

1) ял-хуласем пуçланса кайни çинчен калакан халапсем;

2) вĕсен ячĕсем çинчен калакан халапсем;

3) вырăнти географи объекчĕсем пулса кайни çинчен калакан халапсем;

4) вĕсен ячĕсем çинчен калакан халапсем;

5) урам халапĕсем;

6) шыв-шур халапĕсем;

7) улăх-çаран халапĕсем;

8) ĕшне халапĕсем;

9) вăрман халапĕсем;

10) сăрт-ту ячĕсем çинчен калакан халапсем;

11) ытти микротопонимсен ячĕсем çинчен калакан халапсем[20].

Тавралăх халапĕсем мĕн авалах пулса кайнине тĕпчевçĕсем тахçанах асăрханă. Вĕсем истори ха-

---

[20] Ильина Г.Г. Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Практикум /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар. 1999. 33 с.

лапĕсемпе пĕр вăхăтрах çуралнă, пĕр-пĕрне самаях витĕм кÿнĕ. Сăмахран, Хаяр Иван патша тапхăрĕпе çыхăннă топонимика халапĕсем çав тери нумай сыхланса юлнине И.И.Одюковпа В.Д.Димитриев хăйсен ĕçĕсенче питĕ тĕплĕ çырса кăтартаççĕ.

Чăвашра ялсен, вырăнсен е шывсен ячĕсем пулса кайнине И.И.Одюков тĕпчевçĕ нумай çĕрте Иван Грозныйпа çыхăнтарнине палăртать. Сăмахран, ун çарĕпе пĕрле Хусан ханлăхне путарни, уйрăм халăх пулса упранса юлни, вырăс халăхĕпе пĕрлешсе пурăнни чăваша килĕшнĕ, савăнтарнă, çав савăнăç вăл вăхăтри ĕçсем çинчен калакан сăмахлăха та упрама пулăшнă. Çак тапхăрсенче чăвашсен çĕнĕ хулисемпе ялĕсем йĕркеленнĕ те ĕнтĕ. Сăмахран, Шупашкар хули 1469 ç. паллă теççĕ. Вăл пулса кайнине халăхра тĕрлĕрен ăнлантараççĕ: пĕрисем – «Шебашкар» чăвашран, теприсем – «Шобаксар» ятлă ялтан, виççĕмĕшсем – «Шубаш» тата «Кар» пулăç ячĕсенчен, теççĕ. Урăхла каланисем те пур: хăшĕсем – «Чебак» тата «Сара» упăшкипе арăмĕнчен пулнине палăртаççĕ, теприсем – «Чебак», «Сар» ятлă чăваш юмçисенчен, теççĕ.

Çĕрпÿ хулине 1589 ç. тунă, «çĕрпÿ» (сотник) тенине пĕлтернĕ. Малтан унта Çĕрпÿ ятлă ял пулнă, ялне урăх çĕре куçарнă имĕш, хулине ял ячĕпех хăварнă. Ку сăмахпа тата ун йышшисемпе (вунпÿ) пуçланакан ял ячĕсем Чăваш енре чылай. Хулапа ял ячĕсенчен нумайăшĕ сăмах пĕлтерĕшне кура пулса кайнă теççĕ халапсенче. Акă, Етĕрне хулин ячĕ «етĕр» (ядро, снаряд) тенинчен тухнине калаççĕ. Халап тăрăх, ку хулара Хаяр Иван патша вăхăтĕнче йĕтре шăратма тытăннă пулать, çавăнтан хула ячĕ те ку сăмахпа сыхланса юлать.

Топонимика халапĕсенче чăваш халăхĕн тĕрлĕ тапхăрти пурнăçĕ аван ÿкерĕннине В.Д.Димитриев çÿлерех асăннă кĕнекинче палăртать. Пысăк монографин 4-мĕш пайĕнче историк, халăхра анлă сарăлнă тавралăх халапĕсене усă курса, чăвашсем XVI-XIX ĕм. халь пурăнакан вырăнсенче вăрмансем кăкласа çĕнĕ çĕрсем уçнине, тырă-пулă акса-туса илмешкĕн хура пусăсем

(пашни) хатĕрленине, ялсемпе-хуласем йĕркелесе янине тĕплĕн тишкернĕ, хак панă. Вăл çырнă тăрăх, хальхи Чăваш енĕн кăнтăр-хĕвелтухăç тата кăнтăрти çĕрсене чăвашсем XVI ĕм. иккĕмĕш çурринчен пуçласа усă курма пуçлаççĕ. Ку тапхăрта питĕ нумай ял йĕркеленет. Çав вăхăтри ĕç-пулăмсем тавралăх халапĕсенче яр-уççăн сăнланса юлма пултарнă.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Чăваш халапĕсен жанр уйрăмлăхĕсем, тĕсĕсем.
2. Чăвашсен мифла халапĕсем.
3. Чăвашсен улăп халапĕсем.
4. Чăвашсен истори халапĕсем.
5. Чăвашсен тавралăх (топонимика) халапĕсем.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Ашмарин Н.И.* Болгары и чуваши: Репринт. изд. /ЧГИГН. Чебоксары, 2000. 144 с.

2.*Денисов П.В.* Религиозные верования чуваш. Чебоксары, 1959. 408 с.

3.*Димитриев В.Д.* Чувашские исторические предания: Очерки истории чувашского народа с древних времен до середины XIX века. 2-е изд., доп. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1993. 447 с.

4.*Канюков В.Я., Одюков И.И.* Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1-мĕш пайĕ: Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1973. 96 с.

5.*Михайлов С.М.* Труды по этнографии и истории русского, чувашского и марийского народов. Чебоксары, 1972. 424 с.

6.*Одюков И.И.* Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем (I-XV ĕм.): Вĕренӳ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1984. 80 с.

7.*Одюков И.И.* Мифсемпе халапсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 2 пайĕ. Мифсемпе халапсем /И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, Г.Ф.Юмарт пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1987. 5-32 с.

8.*Одюков И.И.* Чувашские сказания об улыпах-великанах //Вопросы русской и чувашской филологии. Вып. 3. Чебоксары, 1973. С. 83-110.

9.*Родионов В.Г.* К вопросу о ранних тюрко-финно-угорских фольклорных связях //Сӑмах. Слово: 1993. Тӗпчевсемпе текстсем. Исследования и тексты /ЧГИГН. Чебоксары, 1994. С. 70-74.

10.*Улӑп.* Чӑваш халӑх халапӗсем /И.И.Одюков пухса хатӗрленӗ. Шупашкар, 1975. 41 с.

11.*Юмарт Г.Ф.* Улӑп халапӗсене пухассипе тӗпчессин кун-ҫулӗ //Улӑп халапӗсем /Г.Ф.Юмарт пухса хатӗрленӗ. Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1993. 5-28 с.

***Юмахсем.*** Юмахсем тесе тӗпчевҫӗсем асамлӑ ӗҫсем ҫинчен каласа паракан, сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен илемлӗ хайлавсене калаҫҫӗ. Чӑваш юмахӗсене нумай ҫул хушши тишкернӗ Е.С.Сидорова фольклорист каланӑ тӑрӑх, юмах вӑл – «сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен, фантастикӑллӑ е авантюрӑллӑ калав йышши илемлӗ произведени»[21]. Ҫапла майпа эпир юмахсен тӗп паллисене – вӗсем сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳренине, вӗсен асамлӑхне, фантастикӑллӑхне е авантюрӑллӑхне, фольклорӑн проза жанрӗсен ушкӑнне кӗрекен калулӑхне – калавлӑхне палӑртатпӑр.

Юмахсем тӗрлӗрен пулаҫҫӗ. Е.С.Сидорова вӗсене, пурнӑҫа мӗнле майпа сӑнланине шута илсе, 3 ушкӑна уйӑрса пӑхать: 1) чӗр чунсем ҫинчен калакан юмахсем; 2) асамлӑ юмахсем; 3) йӑла юмахӗсем (новелла йышши юмахсемпе шӳтсем). Н.И.Егоров проза ретӗнчи юмах жанрӗсене тӗрлӗ сӑлтавсене кура ушкӑнланине палӑртать, вӑл шугра, тӗп сӑнар тӑрӑх (чӗр чунсем ҫинчен), юмахри ӗҫ-хӗле кура (асамлӑ юмах), пурнӑҫ чӑнлӑхне мӗнле кӑтартнине кура (йӑла-йӗрке юмахӗ), текст тытӑмне кура (сыпӑнчӑк юмах). Ҫакӑ, ун шучӗпе, ученӑйсене пӑтраштарать ҫеҫ, пӗр юмахах «виҫӗ-тӑватӑ ҫӗре пырса чикме» тивтерет. Тӗпчевҫӗ юмах жанрӗн тӗрлӗ тӗсӗсене тӗп сӑнар тӑрӑх кӑна ушкӑнлама сӗнет, ҫапла

---

[21] Сидорова Е.С. Чӑваш юмахӗсем //Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. 1 том. Юмахсем. Шупашкар, 1973. 6 с.

майпа янавар, паттăр, нараста тата шаймăк юмахĕсене уйăрать.

Асăннă ушкăнсем хăйсем тата пĕчĕкрех сюжетсем çине пайланма пултараççĕ.

Юмахсем хăш вăхăтра тата мĕнле майпа пулса кайнине Е.С.Сидорова фольклорист çапла ăнлантарать. «Юмахсем, – тет вăл, – халăх хăйĕн пурнăçĕнчи япаласене асамлă тесе шухăшланă май пулса кайнă, вăл этем асамлă вăйсем çинчен калакан мифсенчен аталаннă теме пулать. Чылай юмахра çынсен авалхи пурнăçĕ, вĕсен культурипе пурнăç йĕркисем сăнланса юлнă, сăмахран, çынна çын çини (лăпăр карчăк кинне, ачине, лашине çини), ăрури хутшăнусем (амăшĕ хăйĕн хĕрне тăван пиччĕшнех качча пани), тискеррĕн асаплантарса вĕлернисем (çĕленсем патша хĕрне çини) т. ыт. те. Чăваш юмахĕсенче те, ытти нумай халăхсен пекех, авалхи ĕçсем (сунара çӳрени, пулă тытни, кăк кăкласа çĕр ĕçлеме тытăнни), ĕç хатĕрĕсем (вутчуль, чулран тунă çĕçĕсем, çĕре сухалама усă курнă йывăç тураттисем) т. ыт. те тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр юмахсем çынсем çĕр пӳртсенче пурăнни çинчен калаççĕ»[22].

Юмахсем мĕн авалах пулса кайнă терĕмĕр. Вĕсем мифсенчен вăй илсе аталаннă тесен те йăнăш пулмĕ, мĕншĕн тесен вăхăт иртнĕçем мифологилле шухăшлав хăйĕн пĕлтерĕшне çухата-çухата пынă. Этемлĕх классем çине пайланса кайсан тĕнче тытăмне ăнлантаракан мифсем хăйсен малтанхи ăнланулăхне юмахсем çине куçараççĕ. Урăхла каласан, «леш тĕнчере пурăнакан» усал вăйсем çынсем хушшинче çӳреççĕ, этем сăнарлă пулса сăтăрла ĕçсем тума пуçлаççĕ. Çапах та юмахсенче чи малти вырăна ăрупа ăру, йăхпа йăх хушшинчи çыхăнусем тухса тăраççĕ. Юмахри калу тĕллевĕ – герой çитĕнсе вăл çемьеллĕ пулни, арăм тупни çинчен пĕлтересси. Анчах та ĕç-пуç çăмăллăн пулса иртмест: герой темиçе хут хăйĕн тăшманĕсемпе – çĕленсемпе (тепĕр йăха пĕлтереççĕ) – кĕрешет, нумай хĕн-асап курать, вилсе чĕрĕлет, çапах та каялла таврăнать.

---

[22] Çавăнтах.

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, тĕрлĕ халăхăн юмах сюжечĕсем пĕр пекрех те, пĕр-пĕрне çывăх та пулма пултараççĕ иккен. Çакăн сăлтавĕсем тĕрлĕ: сюжетсем пĕр халăхран теприн патне куçни те, халăхсем пĕр тымартан тухни те, общество йĕрки халăхсене пĕрпеклетсе яма пултарни те.

Янавар юмахĕсем (чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем). Ăна перс чĕлхинчи *джавар* 'чĕр чун' сăмахран куçарса чăваш фольклористикинче усă курма Н.И.Егоров чĕлхеçĕ сĕнет. Ун шухăшĕпе, «янавар» сăмах кĕрет пĕлтерĕшĕпе те, кĕскелĕхĕпе те наукăра «чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем» ăнлавран янăравлăрах тата ытти юмахсен ăнлавĕсемпе те çывăх гăрать. Çавна кура ку терминпа усă курма питĕ меллĕ.

Янавар юмахĕсене тĕпчевçĕсем тотемизмпа çыхăнтараççĕ. Кашни йăхăн-ăрăвăн хăйĕн тотемĕ пулнă тенĕ халăх. Кам та кам çав чĕр чуна вĕлерет, çав нумай пурăнаймасть тесе ĕнентернĕ, çавăнпа çак тотем-чĕр чунсене тĕкĕнме те юраман. Юмахĕсене те этем вĕсене хăй енне çавăрас тесе каланă. Каярахпа, общество классем çине пайланса кайсан, янавар юмахĕсем социаллă пĕлтерĕш туянаççĕ. Юмахра тилĕ – чее çынна, кашкăр – выçă, ĕмĕтсĕр, куштан çынна, упа вăйлă та лўппер, măран çынна пĕлтернĕ. Юмахсен тĕллевĕ те палăрмаллах улшăнать: вĕсенче тĕрлĕрен ăса вĕрентсе каланă, ĕçе юратма, ваттисене хисеплеме, пĕр-пĕрне йывăрлăхра пулăшма ыйтакан сăмахсем йышлă.

Е.С.Сидорова çырнă тăрăх, тĕрлĕ чĕр чунсем çинчен калакан юмахсем çынсем кĕтў кĕтсе, сунара çўресе пурăннă тапхăрта пулса кайма пултарнă. Çынсен тĕп ĕçĕ çав кăна пулнăран вĕсем тискер кайăксене, вĕсен пурнăçне аван пĕлнĕ. Классем пуçланса кайиччен-хи этем хăйĕн несĕлĕ-йăхĕ чăн та тĕрлĕ чĕр чунсенчен пулса кайнă тесе ĕненнĕ, юмах каласа вĕсене хăй енне çавăрасшăн пулнă. Пурăна киле, пурнăç улшăннă май, чылай ĕмĕрсем тăршшĕнче çав юмахсен пĕлтерĕшĕ самаях улшăннă.

Чăваш халăх юмахĕсемпе паллашсан çакă курăнать: юмахсенче çăткăн чĕр чунсемпе пĕрлех килти выльăх-

чĕрлĕхсен сăнарĕсем те ÿкерĕнсе юлнă. Паллах, юлашкийĕсем – каярахпа пулса кайнăскерсем.

Тискер е çăткăн чĕр чунсем юмахра çын пекех шухăшлама та, калаçма та пултараççĕ иккен: этем нумай чухне хăй пултарайман йывăр ĕçсене вĕсене тутарать; вĕсен хушшинче çынна пулăшакансем те, сăтăр тăвакансем те, ыррисем те, усаллисем те, тÿрĕ тата чее чунлисем те пур-мĕн. Кирек-мĕнле йывăрлăхран та тĕп герой çиеле тухать, мĕншĕн тесен кун йышши юмахсен тĕп идейи – этем чĕр чунсенчен вăйлăрах пулнине палăртасси.

Çапла вара, чĕр чунсем çинчен хывнă юмахсем авалах этем чĕр чунсене алла хăнăхтарнипе е вĕсемпе кĕрешнипе çыхăнса йĕркеленнĕ, каярахпа хăйсен малтанхи ăрăмлăхне çухатнă, шÿтлĕ халапсене куçнă. Янавар юмахĕсенче чĕр чунсен пурнăçĕ, этемпе чĕр чунсен хушшăнăвĕ, этем çут çанталăк хуçи пулса тăни курăнать. Юмахсен тематики те, шухăшĕ те анлă, сăнарĕсем те йышлă.

Чăвашсен янавар юмахĕсенче тискер чĕр чунсенчен ытларах упа, кашкăр, тилĕ, шапа, çĕлен, вĕçен кайăксенчен – акăш, ăмăрткайăк, тăрна, çăхан е курак, килти выльăх-чĕрлĕхрен – лаша, вăкăр, кушак, йытă, автан сăнарĕсем тĕл пулаççĕ. Этемĕн кулленхи пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ çак чĕр чунсемпе вĕçен кайăксен çыхăнăвĕнче курăнать, герой кăмăлĕ, чунĕ тата сăн-сăпачĕ вĕсене пулах йĕркеленет.

Юлашки çулсенче «паттăр юмахĕсем» терминпа ĕлĕкрех фольклористикăра каланă асамлă юмахсене палăрта пуçларĕç. Паттăр юмахĕсенче асамлăх тĕпре пулсан та, пĕтĕм хайлав сюжечĕ те, ĕçĕ-пулăмĕ те тĕп сăнарпа – паттăрпа – çыхăннă. Ун пирки чăваш юмахĕсен пуххине хатĕрленĕ Н.Ф.Данилов кĕнеке ум сăмахĕнче çапларах çырать: юмах яланах паттăр мĕнле кил-йышра çуралнинчен пуçланать; паттăр çула тухас умĕн килте юлакансене пĕр-пĕр ĕç тума чарса хăварать; килте юлаканĕсем ăна итлемеççĕ; тăшман хăй сăтăр тăвас текен паттăр çинчен пĕлме тăрăшать; тăшмана çав паттăр çинчен систереççĕ; тăшман ăна улталама

тăрăшать; паттăр, ултава парăнса, хăй тăшманне хăех пулăшать; тăшман сăтăр тăвать; ун çинчен паттăра пĕлтереççĕ; паттăр тăшмана хирĕç тухма килĕшет; паттăр йывăр çула тухать; асамлă япала е ăс паракан ватă çын паттăра сăнаса пăхать; паттăр хăй асамлă япалана илме тивĕçлĕ пулнине мĕнле майпа та пулсан пĕлтерет; асамлă япала ун аллине лекет; паттăр тăшмана тупса çĕнтерет; паттăр киле таврăнма тухать, тăшман ун хыççăн хăвалать; паттăр тарса хăтăлать; вăл хăй паттăр иккенне палăттармасть; суя паттăр тупăнса хăйне паттăра хывать; паттăра йывăр ĕç хушаççĕ; çав ĕçе вăл чиперех тăвать; паттăра палласа илеççĕ; суя паттăра тăрă шыв çине кăлараççĕ, паттăр авланса тĕрĕс патша пулса тăрать; суя паттăра айăплаççĕ. Асăннă сюжет йĕрĕ хăш-пĕр юмахсенче е тухса ӳкме, е вырăнĕпе улшăнма та пултарать.

А.К.Салмин, паттăр юмахĕсене тишкернĕ хыççăн, вĕсем чăваш халăхĕн паттăрла эпосĕн сыхланса юлнă тĕсĕсем пулнине çирĕплетрĕ, паттăр юмахĕсенчен ытти асамлă юмахсем пулса кайнине кăтартса пачĕ. Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, паттăр юмахĕсенче эпосăн пур кĕввисем те пур: паттăр тĕлĕнмелле майпа çурални; унăн улăпла (паттăрла) ачалăхĕ; лашаллă пулни (туянни, тупни); çĕленпе çапăçни (кĕрешни, вăй виçни); туй.

Паттăр юмахĕсенчи ĕçсем те этемĕн чи авалхи пурнăçĕпе çыхăннине асăннăччĕ эпир. Вĕсем кил-йăру ыйтăвĕпе çывăххине те палăртнăччĕ. Кун йышши юмахсенче икĕ хире-хирĕçле вăй пурри сисĕнет: пĕри – герой, унăн пулăшаканĕсемпе юлташĕсем, вĕсем майлă пĕтĕм халăх; тепри – герой тăшманĕсемпе унăн хӳрешкисем (тухатмăшсем, вĕре çĕленсем, чике старик хур сухал, вупăр карчăк т. ыт. те).

Тăшмансем тем пек вăйлă пулсан та, геройпа унăн юлташĕсем тан мар çапăçура вĕсене çĕнтереççĕ. Героя унăн лаши, йыснăшĕсем (чĕр чунсем) пулăшаççĕ. Кун пек хайлавсен шутне «77 чечекрен çĕлетнĕ кĕпе», «Иван паттăр», «Этиканпа Утикан» йышши юмахсене кĕртме пулать.

Чăнах та, паттăр юмахĕсем – чи авалхисем. Вĕсенче тĕрлĕ асамлă чунсем, асамлă япаласем, асамлă пулăшакансем тĕл пулаççĕ. Авалхи чăвашсен аталанăвĕн тĕрлĕ тапхăрĕсем сăнланнă. Сăмахран, матриархата кă-тартаканнисем хĕрарăма мала хунипе пуçланаççĕ («Пĕр карчăкпа пĕр старик пурăннă, тет»), паттăр та арăмĕ (патша хĕрĕ) патĕнче пурăнать, т. ыт. те. Патриархат йĕрĕсем паттăр ашшĕн пилне (сăмахне) пурнăçа кĕртес тĕллевпе тĕнче тăрăх тухса кайнинче, çемьери пĕрлешес йĕркесенче (эндогами – хĕрсене тăван пиччĕшĕсенех качча пани, экзогами – хĕр вăрлани) сисĕнеççĕ. Феодализм паллисем вара тĕрлĕ патшасем, вĕсен арăмĕсемпе хĕрĕсем, пуян е купса, ирсĕр пуппа чее тарçисем çинчен калакан юмахсенче упранса юлнă.

Юмахри паттăр – питĕ вăйлă, хăюллă, хастар, тӳрĕ чунлă та ырă кăмăллă, илемлĕ, çавăншăн ăна пурте юратаççĕ, пулăшса пыраççĕ.

Паттăр юмахĕсенчи сюжетсем тĕрлĕ тĕнчере – çӳлти патшалăхра, çĕр çинче тата леш тĕнчере – пулса иртеççĕ. Вĕсенче паттăр яланах мухтавлă ĕçсем тăвать; çут çанталăк вăйĕсемпе, тĕрлĕ чĕр чунсемпе, усал-тĕселпе çапăçать, вĕсене çĕнтерет; халăха е пусмăрти çынсене тăшмансенчен çăлать, ирĕке кăларать.

Çапла вара, паттăр юмахĕсем мифла ăнланусемпе пĕр вăхăтрах йĕркеленнĕ, нумайăшĕсем мифран та пулса кайнă, аталанăвĕпе халăх пурнăçĕпе кун-çулне, кĕрешĕвĕпе ĕçĕ-хĕлне, шухăш-ĕмĕтне анлăн палăртакан хăй тытăмлă тата меллĕ юмахсем пулса тăнă. Вĕсенче аваллăхпа каярахри пурнăç паллисем пĕрлешсе тăраççĕ. Тематики питĕ пуян, шухăшĕ тарăн, сăнарсен тытăмĕ анлă. Халăх эпосĕнче паттăр юмахĕсем, мифсемпе легендăсем пекех, питĕ «йывăр», кăткăс жанр шутланаççĕ.

Н.И.Егоров шухăшĕпе, «нараста юмахĕсем паттăр юмахĕсемпе пĕр ретре тăраççĕ, анчах та авалхи ăрулăх тапхăрĕнчи хĕр упраçсен инициаци йĕркисемпе çыхăнса аталаннă». Нараста юмахĕсем тесе тĕпчевçĕ ама çури хĕрĕ çинчен калакан юмахсене калаттарасшăн.

Чăнах, паянччен кун йышши произведенисене уйрăм жанра уйăрса тĕпчени пулманччĕ; вырăс фолькло-

ристикинче, ав, кунашкаллисене «сказки о безвинно гонимых» терминпа палăртнă.

Чăваш фольклорĕнче айăпсăр айăпланакансен тата айăплакансен сăнарĕсем йышлă, юмахĕсем те анлă сарăлнă. Сăмахран, Н.И.Ашмарин хăйĕн словарĕнче «нараста» сăмаха «таса, сапăр е лăпкă чун» тесе куçарать; «тăлăх ача», «алăри ача» пĕлтерĕшне çӳренине те палăртать.

Кăтартмăшра (указательте) нараста юмахĕсен йĕрĕсене 24 сюжетра тупма пулать. Кунта анлă сарăлнă сюжетсенчен çаксене палăртатпăр: çĕр çăтни; икĕ тăван вилĕмрен хăтăлни; вупăр карчăк кинĕпе мăнукне çини; тарса хăтăлни; пиччĕшĕпе йăмăкĕ çинчен; тухатмăшарăм çинчен т. ыт. те.

Чăвашсен нараста юмахĕсем пуррине XIX ĕм. пĕрремĕш çурринчи тĕпчевçĕсемех асăрханă. Тĕслĕхрен, 1843-1845 çç. чăвашсем хушшинче пулнă венгр ученăйĕ А.Ре́гули «Амаçури» тата «Вилме каян пуйса килнĕ, тет» юмахĕсене çырса илнĕ. (Ăна çав текстсене В.Громов панă пулас). С.М.Михайловпа В.Громовăн «Чувашские разговоры и сказки» ятлă кĕнекинче те çакнашкал сюжетăн «Çĕр çăтни» юмахне пичетленĕ.

Нараста юмахĕн сюжечĕсемпе усă курса К.В.Иванов поэт «Тимĕр тылă» баллада хайланă; фольклорти лăпăр карчăк хăйĕн кинне çини çинчен çӳрекен юмаха сăвăласа илемлетнĕ, хăйне май çĕнĕ кĕвĕсем хушса çав тапхăрти чăваш çыннин пурнăçне, çемьесенчи ăрупа тăванлăх ыйтăвĕсене анлăн кăтартса панă.

«Шаймăк юмахĕсем» ăнлавпа Н.И.Егоров профессор фольклористикăра халиччен палăртнă йăла юмахĕсене ылмаштарса усă курма сĕнет. Ун пирки вăл çапла çырать: «Чăваш чĕлхинче «йăла юмахĕ» терминăн уççихуппи çук, ăна «халăх йăли-йĕркисен сценарине каласа кăтартни» тенĕ пек те ăнланма пулать. Эпĕ сĕнекен «шаймăк юмахĕ» термин, хальхи чĕлхере «шаймак» сăмахăн пĕлтерĕшĕ тĕксĕмленнĕ пирки шухăша унталла-кунталла пăрса ямасть, хăй палăртакан жанр тĕсĕн паллисене те лайăхах уйăрать»[23].

---

[23] Асăннă ĕç. 67 с.

Н.И.Ашмарин «Чăваш сăмахĕсен кĕнекинче» *шаймăк* (*шаймак*) сăмах çак пĕлтерĕшсемпе çӳренине палăртнă: «юлхав», «мăшкăласа кулакан, сăтăр тăвакан, çынтан вылятса кулакан арçын ача», «ашкăнчăк е алхасакан».

Н.И.Егоров шухăшĕпе, шаймăк юмахĕсем самана улшăнса пынă май авалхи паттăр юмахĕсенчен аталанса кайнă. Ăрулăх тапхăрĕнче çуралнă «паттăр юмахĕн» тĕп сăнарĕ мăшăр шырама ют патшалăхсем тăрăх çӳренĕ пулсан, шаймăк юмахĕсен тĕп геройĕ хамăр таврарах шаярса çӳрет, пуян çынсене чике тăрăшшĕ лартса хăварать. Ăрулăх тытăмĕ арканса кайнă май мифла шухăшлав та хавшаса пырать, общество классем çине пайлансан, юмахри Кукша Иван пурнăç саккунĕсене пăхăнса пурăнмаллине туйса илет, çавна май юмахсенчи асамлăх сĕвĕрĕлсе пырать, ăна чăн пурнăçри ыйтусемпе проблемăсем хĕссе кăлараççĕ. Çапла вара йăла-йĕрке юмахĕсен идеи кулленхи пурнăçа палăртакан, çынна пурăнма вĕрентекен çырусăр ăс-хакăлĕ шутланать.

Йăла (шаймăк) юмахĕсем – чи кайран пуçланса кайнă хайлавсем. Пурнăç улшăннă май, юмахри асамлă вăйпа усă куракан сăнарсем те улшăнса пынă: паттăр юмахĕсенчи кĕвĕсем те, произведенири сăнарсем пурте çын обществипе, унти пурнăç ыйтăвĕсемпе çыхăннă тĕвĕсем тавра йĕркеленеççĕ; юмахри ĕç-пулăм таçти «çӳлти тĕнчере», «леш тĕнчере» мар, этем пурăнакан вырăнтах пулса иртет; персонажсем те курайман çыннисене е тăшманĕсене чеелĕхĕпе тата ăс-тăнĕпе çĕнтереççĕ.

Нумай чухне йăла юмахĕсенче этемĕн юлхавлăхне, хытăлăхне, йĕркесĕрлĕхне е ытти çитменлĕхĕсене питлеççĕ. Вĕсен пĕр-пĕр япăх енне е çитменлĕхне палăртма халăхра анлă сарăлнă тĕрлĕ кулăш тĕсĕсемпе усă кураççĕ: тӳрременĕх тарăхса, хаяррăн е тăрăхласа питлени; шухăшăн чăн пĕлтерĕшне тепĕр майлăн е тунтерлĕн калани; кăмăллă кулăшпа е шахвăртса та вĕрентсе каланисем т. ыт. те.

Йăла (шаймăк) юмахĕсене 2 ушкăна пайлама пулать:

1. Кулленхи пурнăçпа йăла çинчен калаканнисем. Кунта кил-йышри пăтăрмах (упăшкипе арăмĕ, ашшĕсемпе ывăлĕ-хĕрĕсем, пускилсем хушшинчи хирĕçӳсем) çинчен калаканнисем, ăса е ĕçе вĕрентеканнисем, çамрăк арăмăн ĕçри е кăмăлри çитменлĕхсене питлеканнисем кĕреççĕ.

2. Социаллă пурнăç киревсĕрлĕхĕсене питлеканнисем. Кунта пуянпа чухăн, улпутпа хресчен, пуппа тарçă, патшапа хресчен, пултаруллă салтак е нуша çинчен калакан юмахсене кĕртме пулать. Кунта герой ăспа, чеелĕхпе уйрăлса тăрать: çăткăн пуянсене, пупсене чике тăршшĕ тыттарать, яланах çĕнтерӳçĕ пулса тăрать; ăслă пуянăн, çăткăн пупăн пуянлăхĕпе мулне чеепе çĕнтерсе илет, юлашкинчен хăй те аван пурăнма пуçлать.

Йăла юмахĕсен сюжечĕ ытларах чухăнпа пуян, хресченпе улпут, тарçăпа пуп, пуян пиччĕшĕпе чухăн шăллĕ тавра йĕркеленет. Унта çемьери хутшăнусем те, çынсем хушшинчи çыхăнусем те тĕп вырăн йышăнма пултараççĕ. Тĕп шухăшĕ – пĕр-пĕрне хисеплеме пĕлни, ăнланма, пулăшма хатĕр пулни. Çавăнпах юмахсенчен нумайăшĕ ăса вĕрентсе калакан ваттисен сăмахĕсемпе пуçланать: «Укçапа мĕн тăвас, ăсу пултăр», «Иртенçӳрен хресчене ан кӳрентер», «Пуп куçĕ – нӳхреп куç», «Хăв тăвану – вут урлă», «Шанчăксăр çын йытăран начар» т. ыт. те.

Халăх юмахĕсенче яланах икĕ хире-хирĕçле сăнар: пĕрисем – ыррисем, теприсем – усаллисем, хăрушшисем. Юлашкисен шутне çĕлен, шуйттан, вупăр карчăк, арçури, чике старик хур сухал, вутăш т. ыт. кĕреççĕ.

Сăмахран, ***çĕлен*** – яланах хирĕçле сăнар, леш тĕнчепе çыхăннă. Мифсенчи çĕлен аялти (леш) тĕнче символĕ, унăн атрибучĕ пулсан, юмахсенче вара кӳршĕри йăхсене е ютта пĕлтерет. Урăхла каласан, паттăр çĕленсемпе çапăçни – вăл ютран хăйне валли мăшăр шырама кайнине, хĕру çапăçура ют йăхри хĕре çĕнтерсе илнине ытарласа кăтартни.

Çĕленсем пĕр-пĕринчен тĕрлĕ функцисемпе уйрăлса тăнине шута илсе, В.Я.Пропп вĕсене 4 ушкăна уйăрать: çĕлен-вăрă, çĕлен-кĕрешӳçĕ, çĕлен-сыхлавçă, çĕлен-çăтан. Н.В.Новиков асăннă сăнарсен çумне пиллĕкмĕшне хушать – çĕлен-астаруçă. Кун йышши çĕленсем чăваш юмахĕсенче те йышлă. Тĕслĕх вырăнне «Туй-Тупала» юмаха илер. Кунти çĕлен – хăй патшалăхне сыхлакан: çăлкуçри шыва ялти çынсене 40 çул ăстармасăр пурăнать. Çав вăхăтрах – çĕлен-кĕрешӳçĕ те, çĕлен-çăтан та: Туй-Тупалапа кĕрешет, çĕлене вĕлерсен, ун хырăмĕнчен нумай çын тухать.

Халĕ çĕленсен кашни типне уйрăмшарăн тишкерер.

Çĕлен-вăрă – чылай юмахсенче сарăлнă сăнар. Сюжечĕ çапларах: çĕлен çĕр айĕнчи патшалăхра пурăнать, патша хĕрне (е тĕп геройăн арăмне) вăрлать. Çакна Иван (тĕп сăнар, чухăн çын ывăлĕ) пĕлет те патша хĕрне шырама тухса каять, ăна тупать, çĕлене çĕнтерсе хĕрне (арăмне) килне илсе килет (е авланать).

Çĕлен-кĕрешӳçĕ чăваш халăх юмахĕсенче – кӳлĕ, юхан шыв, аялти тĕнчен чиккине сыхлаканĕ. Кун йышши хайлавсенче ытларах – шыв хуçи. Унăн патшалăхĕнчен никамăн та шыв ĕçме юраман. Паттăр çеç, хăйĕн вăйне шанса, йывăр та хăрушă кĕрешӳре çынсене чураран хăтарать, шыва каялла тавăрса парать. Асăннă çĕленсем çинчен калакан юмахсем тĕрлĕ вариантпа сарăлнă.

Çĕлен-сыхлавçă чăвашсен нумай юмахĕсенче çĕлен-кĕрешӳçе çывăх. Унсăр пуçне вăл чикке пăсакан та: кӳршĕсене тапăнать, çити-çитми пурнăçне татах та йывăрлататать. Çĕленпе кĕрешме паттăр çула тухать. Сăмахран, «Иван паттăр» юмахра икĕ тĕп сюжет: «Бой на калиновом мосту» (Андр., 300 В) тата «Шесть чудесных товарищей» (Андр., 513 А): Ивана асамлă тĕлĕк курăнать. Тĕлĕкĕн тупсăмĕ паттăра çула илсе тухать, вăл нумай пуçлă темиçе çĕленпе çапăçать, пурне те йывăр кĕрешӳре çĕнтерет; юлашкинчен 7 уралла урхамах çинче ларакан 12 пуçлă çĕленпе, вĕсен арăмĕсемпе тата амăшĕне кĕрешет. Тискер чĕр чуна тĕп тунă

хыççăн Иван-паттăр хăйне валли мăшăрлăх чипер хĕр тупса, çемье йĕркелет.

Çĕлен-çăтан сăнарĕпе пĕрле унăн арăмĕ е амăшĕ тĕл пулать: вĕсем паттăра вĕлерме каварлашаççĕ; герой вĕсен калаçăвне вăрттăн итлет, пулас вилĕмĕн сăлтавне малтанах пĕлнĕрен, çĕлен-çăтансенчен хăтăлма пултарать. Акă, «Уйăхпа хĕвеле тыткăнран хăтарни», «Иван паттăр» юмахсенче тĕп герой хăйĕн вăйĕпе тата челĕхĕпе çĕлен амăшне çĕнтерет, киле ырă сывах таврăнать.

Пиллĕкмĕш тип – çĕлен-астаруçă. Юмахсенче вăл – ырă мар, усал сывлăш, чăваш мифĕсенчи е халапĕсенчи вĕре çĕлене çывăх. Аскăнчăк çĕлен тăлăха юлнă хĕрарăмсем е хĕр патне унăн савнă тусĕ пек пулса вĕçсе килет, имĕш. Кун йышши çĕлен шуйттана та аса илтерет, çавăнпа çĕлен-астаруçа каярах пулса кайнă сăнар теме те пулать. Юмахри çĕлен функцийĕсем çемье нормисене ăнлантарнипе çыхăннă, тенĕччĕ маларах. Çĕлен-астаруçă çинчен калаканнисем вара çĕр çинчи пурнăçа тата этем çут çанталăкри усал вăй-хăватпа кĕрешнине юмахлатса сăнлаççĕ тесе каламалла. Вĕсенче паттăр (Иван е тĕп герой) усала яланах çĕнтерет, хăйĕн мăшăрне (е патша хĕрне) çĕлен тыткăнĕнчен хăтарать, килне илсе килет.

***Шуйттан*** çинчен калаçнă чух вăл мифсенче тата юмахра тĕрлĕрен сăнарланнине палăртмалла. Пĕрремĕшĕнче вăл – леш тĕнчере пурăнакан, турра хирĕçле сăнар, усал вăйсен пуçлăхĕ е тамăк хуçи. Юмахсенче вара – çĕр çинче пурăнакан, этеме усал тăвакан сывлăш е сăнар. Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, шуйттан – çĕленĕн каярахри тапхăрсенче аталаннă форми, тепĕр тĕсĕ. Мифсенчи çĕлен сăнарĕ вăхăт иртнĕçем хăйĕн тĕп функцийĕсене çухатать, халăх ăсĕнче «çĕлен-чĕр чун» тата «çĕлен-çын» пĕлтерĕшсене йышăнать те ерипен усал вăйсене çеç пĕлтерме пуçлать. Кун пек усалсем (шуйттансем) яланах этеме сăтăр тăваççĕ; этем пек те, чĕр чун пек те пулма, пур япала формине те йышăнма пултараççĕ. Çапла майпа юмахсенче тĕл пу-

лакан шуйттан ĕçĕ-хĕлĕпе те, сăнарĕпе те, хăтланкаларăшĕпе те çĕр çинче пурăнакансене аса илтерет.

Юмахсенчи шуйттан тĕрлĕ сăнарлă пулать. Чи анлă сарăлнисем çаксем:

1. Шуйттан – асамăç тата ылмашмăш, астармăш. Кунашкаллисем яланах çын евĕрлĕ: ватă старик пĕчĕк ачана вăрласа каять, ăна асамăç пулма вĕрентет. Юлашкинчен асама вĕреннĕ каччă шуйттана хăйне тĕп туса килне таврăнать. Ку сюжет Андреев кăтартмăшĕнче «Хитрая наука» (Андр., 325) ятлă; чăвашсен «Ух старик», «12 çула кĕрĕшнĕ тарçă» тата ытти юмахĕсенче тĕл пулать.

2. Ывăлне шуйттана сутни сюжет та (Андр., 1170-1199) чăваш юмахĕсенче питĕ анлă. Юмах çапларах аталанать: герой ашшĕ (сайра – амăшĕ) укçашăн çуралман ачине шуйттана сутать; лешĕ 8 çула çитсен усалсем ачана илме пыраççĕ; геройăн амăшĕ шуйттансене тĕрлĕ хушусем парать, лешсем пурнăçлаймаççĕ; ача килĕнчех юлать. Тепĕр вариант: тĕп харкамçа (героя) килти чĕр чунсем шуйттана çĕнтерме пулăшаççĕ.

3. Этем шуйттанпа тупăшни сюжет «Çын ачипе шуйттан чĕппи» йышши юмахсенче тĕл пулать. Тĕп харкамçă усала улталаса ĕçлеттерет, çакăншăн шуйттансем пухăнса ăна тавăрма шут тытаççĕ; Иван лешсене тупăшăва чĕнет: чул ватасси, хăвăрт чупасси, лаша йăтасси. Асăннă ĕçсем вырăнне Иван чăкăта чăмăртаса шыв кăларать, мулкача хăй вырăнне чуптарать («чи малтан ман шăллăмпа тавлаш-ха»), лаша çине утланать те урисемпе хĕстерсе «çĕклет», çĕнтерӳçĕ ята илет; хăраса ӳкнĕ шуйттансем çынна чи вăйли тесе хисеплеме пикенеççĕ.

4. Шуйттан тĕрлĕ чĕр чунсен, япаласен сăнарне йышăнать. Сăмахран, «77 чечекрен çĕлетнĕ кĕпе» юмахра шуйттан тĕп герой килне хура çĕлен пулса пырать, кайран яш каччă сăнарне илсе Иванăн арăмĕпе савăшса пурăнать; упăшкине вĕлерме хĕтĕртет. «Ванюххапа ачисем тата Алена Красавица» юмахри усал – така, «Качикруш паттăрта» – çавра çил сăнарĕпе хитре хĕрсене вăрлать т. ыт. те.

5. Этемпе шуйттан – тус, юлташ. Ку сюжет вырăс халăх юмахĕнчен куçнă. Кăтартмăшра «Человек, волк, медведь и пр. варят в озере пиво» (Андр., 176) вариантпа çыраннă. Пирĕн юмахри тĕп сăнарсем – кукша, упа, шуйттан ачи. Вĕсем вăрманта çурт лартаççĕ, вĕретнĕ сăрана черетпе хуралласçĕ; чике старик хур сухал каçсерен çак сăрана ĕçме пырать, кукша ăна вĕлерет; юлашкинчен вăрманти çуртпа пĕр кӳлĕ сăра хуçи пулса тăрать.

***Вупăр карчăк*** – матриархат тапхăрĕнченех юлнă сăнар. Юмахсенче вăл тĕрлĕ ятсемпе тĕл пулать: вăпăрлă карчăк, лăпăр карчăк е карчăк. Чăваш юмахĕсенчи вупăр карчăк вырăссен «баба Ягине» аса илтерет. Иккĕшĕн те функцийĕсем пĕрешкеллине кура, çак сăнара 6 ушкăна пайлатпăр:

1. Вупăр карчăк – çапăçуçă. Вăл çĕлене те, чике старик хур сухала та çывăх (Андр., 301 А, В): паттăрпа кĕрешет, хăй пурлăхне тата патшалăхне сыхлать; тем пек йывăр пулсан та, Иван вупăр карчăка çапăçура çĕнтерет, патша пулса тăрать.

2. Таврăруçă вупăр карчăк çинчен калакан юмахсем «Чудесный противник» (Андр., 300–399) сюжета тӳр килеççĕ, палан кĕпер çинчи çапăçăва аса илтереççĕ. Кунашкаллисенче вупăр карчăкпа çĕленĕн функцийĕсем те пĕрешкел: вĕлерес тĕллевпе паттăра кĕпер çинче сыхлаççĕ, анчах вĕлерейменçĕ. Каярахпа хайлавра «Звериное молоко» (Андр., 315 А) сюжет хушăнать: вупăр карчăк героя пĕтерме унăн йăмăкне хушать; паттăра çывăх тусĕсем – йытти, лаши, автанĕ – вилĕмрен çăлаççĕ.

3. Вупăр карчăк – асамлă япаласен хуçи. Тĕрлĕ сюжетсем пĕрлешнĕ: «Бой на калиновом мосту», «Муж ищет исчезнувшую или похищенную жену» (Андр., 400А), «Два брата» (Андр., 303) тата «Волшебное кольцо» (Андр., 560). Кунта «Ванькка», «Р-р-р, чукмар!» йышши юмахсене кĕртме пулать. Кунашкал вупăр карчăк пĕрремĕш ушкăнрине те çывăх: вăл хăйĕн хĕрĕсемпе утрав хĕрринче чăх уриллĕ хура пӳртре пурăнать, хăй çав тери хăрушă, çӳçĕ-пуçĕ тăрпаланчăк, куçĕсенчен вут-хĕм сирпĕнет.

4. Вупăр карчăк – усал асамăç, тухатмăш. Вăл темле чĕр чуна та, япалана та куçма, хăй те геройсене тухатма пултарать. Кун йышши юмахсем те сахал мар чăвашсен. Тĕслĕхрен, «Пĕр тăвансем», «Кĕмĕл çĕрĕ» юмахсенче вупăр карчăк тилĕ тата шăши пулать; тăвансенчен пĕрне çĕр шăтăкне улталаса сиктерет те кайран вĕлерет, паттăр çĕррине вăрлать. Харкамçа йыттипе кушакки пулăшаççĕ, çĕрре каялла тавăрса параççĕ; герой çĕнтерет.

5. Вупăр карчăк – пулăшу паракан е ыр сунакан. Ытти çынсенчен нимĕнпе те уйрăлмасть вăл: сăнĕпе те, ĕçĕпе те, кăмăлĕпе те; этем пурăнакан çĕрте те, леш тĕнчере те пур иккен вĕсем. Уйрăмлăх калаçура çеç: «Саламалик, асанне» тесе сывлăх сунмасан, пĕр çăтма, пĕр хыпма та хатĕр. Тепĕр чух çак вупăр карчăк хăй те çĕлен-юххаран тип шар курать-мĕн – шывсăр, апатсăр пурăнать; ăна герой çĕлен пусмăрĕнчен хăтарсан Туй-Тупалана çĕленсене çĕнтерме пулăшать.

6. Вупăр карчăк – çын çиен, ачасене вăрлакан. Хăй темиçе сюжета пĕрлештерет: «Сестра просела» (Андр., 722), вупăр карчăк виçĕ пĕр тăван вырăнне хăйĕн хĕрĕсене çиет (Андр., 327 А, В, С), лăпăр хăйĕн кинне, мăнукне çини (кăтартмăшра ку сюжет çук – авт.), «Бегство с помощью бросания волшебных предметов» (Андр., 313 1), «Жена-колдунья» (Андр., 449 В). Кунашкал сюжетсем этемлĕхĕн чи авалхи тапхăрĕнче – çынна çын çинĕ вăхăтрах – çуралма пултарнă, çав йăла-йĕркене сăнлассипе тӳрременĕх çыхăннă-тăр.

***Арçури*** – этемĕн тӳнтер енĕ; вăл çурма этем, çурма чĕр чун, халăх шухăшлавĕпе, сĕм-авалхи персонаж. Мифсемпе халапсенче арçури сăнарĕпе этемĕн мифологилле тата тĕнче çине уйрăм ăнпа пăхнине ăнлантарса памашкăн усă курнă пулсан, юмахсенчи арçури вара – упăтене аса илтерекен демононим. Арçурине пĕтĕмĕшле уйрăм статьяра тишкернине шута илсе, кунта чарăнса тăмăпăр[24].

---

[24] Вулăр: Ендеров В.А. Образ лешего (арçури) в чувашском фольклоре //Исследования по чувашскому фольклору. Чебоксары, 1984. С. 49-73.

Юмахсенче арçури икĕ сюжетпа тĕл пулать: 1) «Запроданный чорту» (Андр., 812 А, В) тата 2) «Состязание человека с чортом: человек обманывает чорта» (Андр., 1060-1114). Чăваш юмахĕсенче шуйттан вырăнне – арçури.

Пĕрремĕш ушкăнри юмахсенче арçури этемрен вăйлăрах. Тен, çавăнпа тĕп герой арçурипе тăванлашать: Мамалтăк вăрман туррин хĕрне качча илет, унпа пĕрлешсе вăрмантах пурăнать. Иккĕмĕш сюжсчĕ этем шуйттанпа тупăшнине çывăх. Тĕп герой, вăрмана йывăç касма кайсан, арçурисем пурăнакан юмана касма шут тытать, шăтăкран арçури сиксе тухать те кĕрешме ыйтать; этем ачи, ăсĕпе чеескер, арçурисене хăваласа яма пултарать, пуйса каять. «Иванпа арçури» юмахра та Иван ăслине куратпăр: вăл арçурисене чăвашсем пурăнакан вырăнтан хăваласа яма çеç мар, вĕсенчен пĕр михĕ укçа та илсе юлма ăс çитерет.

Юмахсенче тата ***чике старик хур сухал*** час-часах тĕл пулать. Вăл усал, пĕчĕк пулин те, çав тери вăйлă, вăрăм сухаллă. Ун çинчен калакан юмахсем темиçе пая уйрăлаççĕ. Ытларах 3 тĕп сюжета асăнма пулать:

1) чике старик - çĕр айĕнче пурăнакан;

2) чике старик – усал асамăç, тухатмăш;

3) чике старик – асамлă япала хуçи.

Пĕрремĕш сюжечĕ – чи анлă сарăлни: чике старик çĕр айĕнче пурăнать; унта унăн çемйи, вăрланă патша хĕрĕсем. Арăм шыраса чике старик хур сухал çĕр çине тухать, виçĕ паттăра тĕл пулать, виçĕ хут вĕсен яшкине çисе ярать; паттăрпа чике старик хур сухал çĕр айĕнче çапăçаççĕ; тĕп герой усала çĕнтерет, патша хĕрĕсене ирĕке кăларать; кайран кĕçĕннипе – чи хитрипе те ăслипе – пĕрлешет, çемье çавăрать, патшана ларать. Кун пек сюжет йĕрĕсене «Туй-Тупала», «Улăп», «Çăпата Куçмипе Ăста Энтри» тата ытти юмахсенче асăрхатпăр.

Чике старик хăш-хăш чухне ытти çынсенчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть: тăтăшах ватă старик пек пулса этеме пулăшма хатĕр, анчах куншăн вĕсен çуралман ывăлне ыйтать. Тĕслĕх шутне «Паттăрпа чике

старик хур сухал», «Иванпа виçĕ хĕр» йышши юмахсене кĕртетпĕр.

Чикс старик хур сухалăн тĕрлĕрен асамлă япаласем пур-мĕн. Сăмахран, унран çулăмпа вилĕ тата чĕрĕ шывсене суя юмах каласа парсан çеç илме пулать, иккен. Унсăрăн вилĕм санпа юнашарах-мĕн.

Асăннă персонажсемсĕр пуçне чăваш юмахĕсенче çавăн пекех çавра çил, вутăш тата ытти усал сăнарсем час-часах тĕл пулаççĕ. Юмахри паттăр, хăйĕн мăшăрне шыраса тупас е арăмлăх чипер хĕр суйласа илес тĕллевпе çула тухнăскер, тĕрлĕ усал-тĕселпе çапăçать, вĕсене çĕнтерет те ырă пурнăç тĕвĕлет. Юмах яланах ырăпа вĕçленет, юмах яраканĕ, вара, каланă сăмахне «юпа тăрне», хăйне «урхамах çине» лартса ярать, юмах тупсăмне çамрăксене шахвăртса та вăлтса асăрхаттарать.

Чăваш халăх юмахĕсем хăйсен илемлĕх мелĕсемпе те, хайлав тытăмĕпе те, композицийĕпе те ытти жанрсенчен хăйĕн пуянлăхĕпе палăрса тăраççĕ. Чи малтанах тĕрлĕ жанрти юмахсем урăх жанра куçнине палăртмалла. Вĕсенче кашнин сăнарлăхпа витĕмлĕх кӳмелли хатĕрĕсем, геройсене, персонажсене е ĕçĕсене çырса кăтартмалли мелсемпе формисем расна т. ыт. те. Унсăр пуçне çак жанрсем формипе çеç мар, пĕлтерĕшĕпе те улшăнаççĕ, историн кашни тапхăрĕнче уйрăм функцисене йĕркелесе пыраççĕ.

Чăваш юмахĕсем чылай чухне нумай хут каланипе çирĕпленнĕ сăмах çаврăнăшĕсемпе пуçланаççĕ («Тахçан ĕлĕк-авал çитмĕл те çичĕ тинĕс леш енче пĕр карчăкпа старик пурăннă, тет»). Юмах пуçламăшĕнче е вĕçĕнче текстпа çыхăнман хытса ларнă каларăшсемпе усă курни те хайлавсене хăйне май илем кĕртет. Тĕслĕхрен, «юмах юпа тăрринче, хам урхамах çийĕнче», «юмах ятăм, юптартăм, пĕр сăмах та суймарăм», «юмах юптартăм, йăнăш çулпа чуптартăм» т. ыт. те.

Асăннă произведенисен тепĕр паллă уйрăмлăхĕ — пуплевре «тет» сăмахпа усă курни. Çакă итлекене хайлаври сăнарсемпе пĕрле тĕрлĕ вăхăт ташшине илсе çитерет: юмахри ĕçсем юмаха каланă вăхăтра та,

тахçанах тата нумаях пулмасть пулса иртнĕ пек те туйăнаççĕ.

Юмахсенче çавăн пекех текста илемлĕ те витĕмлĕ тумалли тÿрĕ тата куçăмлă пĕлтерĕшлĕ сăнарлăх хатĕрĕсем – эпитетсем, мăнлатусем (гипербола), метафорăсем, метонимисем, танлаштарусем т. ыт. тĕл пулаççĕ. Сăмахран, тилле «тилĕ тус», кашкăра «кашаман», упана «упа-утаман» тени, тĕрлĕрен хисеппе усă курни (чăваш юмахĕсенче 2, 3, 4, ытларах 7 тĕл пулаççĕ) т. ыт. те. Нумай ывăл çинчен калакан юмахсенче 31 ывăл, 41 ывăл, 60 ывăл, 101 ывăл тенисем йышлă.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Чăваш юмахĕсен жанр уйрăмлăхĕсем, тĕсĕсем.
2. Янавар юмахĕсем.
3. Паттăр юмахĕсем.
4. Нараста юмахĕсем.
5. Йăла юмахĕсем.
6. Юмахсенчи усал-тĕселсем.
7. Чăваш халăх юмахĕсен поэтики.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Волков Г.Н.* Чувашские сказки как памятник народной педагогики //Учен. зап. ЧГПИ. Вып. 6 (Сер. филол.) Чебоксары, 1958. С. 117-128.

2.*Ендеров В.А.* Сходные мотивы и сюжеты в чувашских и марийских сказках //Актуальные проблемы чувашской литературы: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1983. С. 126-156.

3.*Метин П.Н.* Сатира и юмор в чувашских народных сказках. Вып. 103: Современные проблемы чувашской литературы //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1980. С. 25-62.

4.*Рона-Таш А.* Чувашские сказки //Чувашский фольклор. Специфика жанров: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 130-149.

5.*Салмин А.К.* Наследие: Чувашские сказки о паттырах: источники, списки //Сов. тюркология. 1988. № 2. С. 115-125.

6.*Салмин А.К.* Сказка, обряд, действительность: Историко-типологическое изучение чувашского текста. Чебоксары, 1989. 140 с.

7.*Салмин А.К.* Типология чувашских сказок о богатырях //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 74-90.

8.*Сидорова Е.С.* Из наблюдений над современными чувашскими бытовыми сказками //Чувашский язык, литература и фольклор: Сб. ст. Вып. 1 /ЧНИИ. Чебоксары, 1972. С. 418-424.

9.*Сидорова Е.С.* Сюжеты чувашских бытовых сказок //Чувашский язык, литература и фольклор: Сб. ст. Вып. 3 /ЧНИИ. Чебоксары, 1974. С. 171-202.

10.*Сидорова Е.С.* Чăваш юмахĕсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 1 т. Юмахсем. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1973. 6-20 с.

11.*Сироткин М.Я.* Чувашские народные сказки //Вопросы чувашского языкознания и литературоведения: Учен. зап. Вып. 26 /ЧНИИ. Чебоксары, 1963. С. 125-151.

***Вак жанрсем.*** Чăваш фольклорĕн проза ретне кĕрекен маларах тишкернĕ жанрсемпе пĕрлех кĕске те кĕвĕллĕ, çирĕп пуплевлĕ, хытса ларса çирĕпленнĕ, пĕтĕмлетӳллĕ те сăнарлă халăх сăмахĕн тексчĕсене кĕртмелле. Вĕсен йышĕнче тĕпчевçĕсем ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене, тупмалли (сутмалли) юмахĕсене, сăнавĕсемпе паллисене, ĕненĕвĕсене, тĕлĕкĕсене, чарăвĕсене уйăраççĕ. Кун пек тĕссене фольклористикăра урăхла *вак жанрсем* е *паремисем* ăнлавпа палăртаççĕ.

Чăваш халăх сăмахлăхĕн йышĕнче вак жанрсем пысăк вырăн йышăнни, вĕсем мĕн авалтанах пуçланса кайни иккĕленӳсĕр. Паремисемпе халăхра паян та анлăн усă кураççĕ. Тĕрлĕ социаллă институтсемпе, пурлăхпа ăс-хакăл тата шухăш-кăмăл культурисемпе, йăли-

йёркисемпе тачă çыхăнура тăрса, çак афоризмлă, сăмахпа калакан сăвăллă-кĕвĕллĕ хайлавсем «чăвашсен иртнĕ тата хальхи пурнăçĕн нумай енĕсене палăртаççĕ: социалла класлă, правăллă, çемьеллĕ, йăла-йĕркеллĕ хутшăнусене, обществăлла, педагогикăлла, философилле тата тĕн-тĕшмĕшле шухăшлавĕсене»[25].

Кирек хăш жанр та (фольклор тĕсĕ) халăх пурнăçĕпе тачă çыхăннă. Тахçан авал кашнинех тĕрлĕ функцисем пулнă-тăр: истори халапĕсемпе юрăсенче пулса иртнине чăн фактсемпе палăртнă; йăла тата календарлă поэзире тĕп вырăнта – ĕç, халăх пурнăçĕ; ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсенче – хисеплĕх, чыслăх, илемлĕх, педагогикăлăх тата ытти воспитанипе вĕрентсе калакан формăсем палăраççĕ; юрăсенче, уйрăмах лирикăпа юрату кĕввиллĕ сюжетсенче, уйрăм çыннăн кăмăлтуйăмне тата çынсен хушшинчи савăк хутшăнусене мухтаса юрланă; сăнавсемпе паллăсенче çынсен çут çанталăкри, обществăри сăнавлă ăсĕ палăрнă т. ыт. те. Анчах та çак жанрсем хушшинче, тен, çирĕп чикĕ лартма кирлĕ те мар пулĕ, мĕншĕн тесен кашниех чăваш халăхĕн иртнĕ пурнăçне хăйне май палăртать. Унсăр пуçне вĕсем пĕтĕмĕшле чăваш халăхĕн идейăллă-сăнарлă тата историллĕ-аталануллă шухăшлавĕн тытăмне йĕркелеççĕ. Çав вăхăтрах паремисен хăш-пĕр тĕсĕсем, сăмахран, ĕненӳсемпе табусем, пĕлӳ е вĕрентӳ шайĕнче те çӳреме пултараççĕ.

Афоризмлă жанрсен те, фольклорти ытти хайлавсенчи пекех, çак паллăсем тĕп вырăнта: вĕсем пурте шухăш тата чĕлхе тытăмлĕ илемлĕ сăнарлăх тексчĕсем; кирек мĕнле шухăшăн та вĕçĕ пурри; вĕсем ятарлă хыпар (информаци) пĕлтерни; пĕрлешӳллĕ авторлăх тата пурнăçри чăнлăхсене илемлĕн те сăнарлăн калани т. ыт. те.

Чăваш паремийĕсен тĕп пайне XIX ĕм. вĕçĕнче – XX ĕм. пуçламăшĕнче пухнă. Çак пуянлăх паян Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн ăслăлăх архивĕнче упранать.

---

[25] Сироткин М.Я. Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1965. С. 43.

Ваттисен сăмахĕсем, каларăшĕсемпе сăнавĕсем чи малтан С.Михайловпа В.Громовăн 1853 ç. тухнă «Чувашские разговоры и сказки» кĕнекинче пичетленнĕ. Кайран паремисен тĕслĕхĕсене Н.И.Золотницкий, И.Я.Яковлев, И.Н.Юркин, А.В.Смоленский, А.С.Ермолов т. ыт. те хăйсен ĕçĕсенче усă кураççĕ.

Совет тапхăрĕнче ку енĕпе хĕрӳ ĕçлекенсем Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский, И.А.Патмар, И.С.Тукташ, Н.Р.Романов, М.Я.Сироткин, И.И.Одюков, А.И.Петрухин, Г.Н.Волков, В.А.Долгов пулнă. Паянхи тĕпчевçĕсенчен вак жанрсене пуçтаракансемпе тишкерекенсем çаксем: Е.С.Сидорова, В.Г.Родионов, П.Н.Метин т. ыт. те.

Афоризмлă жанрсене пуçтарасси халĕ те чарăнман. ЧПГĂИ ĕçченĕсем фольклор экспедицийĕсене кайни, ку ĕçе университет студенчĕсем туса пыни – çаксем пурте чăваш фольклорĕн паремисене пухса тишкерес, системăласа ушкăнлас ыйтусене хăвăртрах та тĕрĕсрех татса пама май пуррине кăтартать.

Тĕпчевçĕсем чăваш паремийĕн жанрĕсенчен 2 пысăк ушкăна палăртаççĕ: *ваттисен сăмахĕсем* тата *тупмалли юмахсем*. Пĕрремĕш ăнлавне вырăссен «пословицы» тата «поговорки», иккĕмĕшне «загадки» терминсем тӳр килеççĕ. «Поговорка» термина тата чăвашла *каларăш* ăнлавпа палăртма пуçларĕç. Çакна та асăнса хăварар: *ваттисен сăмахĕсем* вĕсем – çирĕп, хупă сăмах çаврăнăшĕсем, каларăшсем вара – хупă мар, çирĕпех мар. Ун пирки М.Я.Сироткин çапла палăртнă: «Ваттисен сăмахĕсем, – тет вăл, – пĕтĕмĕшле сăнавлакан, халăх шухăшлакан, обществăлла вĕрентекен тата ӳкĕтлекен сăмах çаврăнăшĕсем; каларăшсем тĕрĕс палăртăва, танлаштарăва е пĕрпекленĕве ялан тăрăхламалла сăнлă, анчах анлă пĕтĕмлетӳсĕр е ăса вĕрентмесĕр каланă ытти сăнарлă сăмах çаврăнăшĕсем». Тĕслĕх: «Арăмĕпе упăшки – çӳпçипе хупăлчи» ваттисен сăмахĕнче иккĕмĕш пайне каларăш, тетпĕр, мĕншĕн тесен вăл сăмах çаврăнăшне урăхлатса «Вĕсем çӳпçипе хупăлчи», теме пулать.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене çапла ушкăнлатпăр: 1) ытарлă каларăш-танлаштарусем; 2) çирĕп мăшăр сăмахсем; 3) риторикăллă каларăш-ыйту е каларăш-чĕнӳ; 4) каларăш-çыхăнусем; 5) каларăш-текстсем; 6) каларăш-диалогсем; 7) каларăш-монологсем.

Тупмалли юмахсем çакăн пек пайланаççĕ: 1) юптарса каланисем; 2) каласа е сăнласа параканнисем; 3) диалог формăллисем; 4) ыйту формăллисем; 5) хисеп шучĕллисем; 6) чĕнсе калаканнисем; 7) юрă формăллисем; 8) евĕрлев сăмахлисем.

Чăваш фольклорĕнче тĕрлĕрен сăнавсемпе паллăсене, ĕненӳсене тата йăла-йĕркесене палăртакан текстсене уйрăм ушкăнра тĕпченĕ. Чи анлисем – сăнавсемпе ĕненӳсем. Сăнавсем, паллах, çут çанталăкпа, ял хуçалăх ĕçĕсемпе çыхăннă. Ĕненӳсем вара 3 пая уйрăлаççĕ – ĕненӳсем, тĕлĕксем, чарусем е табусем. Çак прозăлла формăпа çырнă паремисене йăлана кĕнĕ фольклорта уйрăмшарăн ушкăнламан. Вĕсене пирĕн мăн асаттесем *чăвашсем асăрхани*, *сăнавсемпе паллăсем*, *ĕненӳсем*, *сăнанисем* тесе каланă.

Çӳлерех асăннă уйрăмлăхсене шута илсе вĕсене кашнине уйрăммăн тишкерме сăлтавĕ пур. Çапла вара, паремисем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура тăнине, пĕлтерĕш тĕлĕшĕнчен пурнăç чăнлăхне, халăхăн тĕнче курăмне, ăнланăвне тата ăс-тăн шухăшлавне хăйне майлă палăртнине кăтартмалла.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем – фольклорта анлă сарăлнă тĕссенчен пĕри. Çак жанр, хăйĕн ăслă шухăшĕсемпе, канашĕсемпе ламран лама куçса пынă, этносра ăса вĕрентекен халăх шкулĕ шутланнă. Ваттисен сăмахĕсем тĕрлĕ япаласем хушшинчи çыхăнусене кăтартаççĕ: «Аслати авăтмасăр, асамат кĕпер хывмасть», «Хитре чечек çине пыл хурчĕ ларатех», «Вăйăран вăкăр тухать»; çын тургăмне, хутшăнăвĕсене уçса параççĕ: «Пуш алăпа пушар сӳнтерме каймаççĕ», «Арçын ĕçĕ – ана çинче, хĕр арăм ĕçĕ – сĕтел çинче» т. ыт. те. Тепĕр майлă каласан, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем – эгеме пурнăçри тĕрлĕ лару-тăрусене хатĕрлекен, пулма

пултаракан япаласем пирки шухăшлаттаракан е асăрхаттаракан ăслăлăх.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем халăхра *ваттисем калани, ват çынсен сăмахĕсем, ваттисем каланă сăмахсем, авалхи сăмахсем* ятпа çӳренĕ.

Чăваш паремиологинчи ваттисен сăмахĕсене, фольклорăн ытти жанрĕсемпе танлаштарсан, сахал мар тĕпченĕ. Кунта Н.В.Никольский, И.С.Тукташ, М.Я.Сироткин, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова ĕçĕсене палăртмалла. Тĕпчевçĕсем ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене текстра сăмах мĕн çинчен пынине шута илсе ушкăнланă. Сăмахран, Е.С.Сидорова çут çанталăкпа, хуçалăхпа, обществăри хутшăнусемпе, ăс-хакăлпа тата çĕнĕ саманапа çыхăннă ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене палăртать. Кашни ушкăнах вакăрах темăсене пайлать.

Пирĕн классификацири тĕп мел вăл – каларăшсенчи сăмахсем пĕр-пĕринпе мĕнле çыхăнура тăнине кура пайлани. Ку принципа тĕпе хурса юлашки вăхăтра ытти халăхсен нумай ученăйĕ ĕçленине палăртмалла.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем ытти халăхсенни пекех тахçанах пулса кайнă. Унта халăх историйĕпе философийĕ, тавра курăмĕ, илемлĕ пурнăç çыхăнăвĕ, йăли-йĕрки палăрнă.

Чи авалхи ваттисен сăмахĕсен шутне тĕнпе мифологилле шухăшлав ӳкерĕннĕ текстсене кĕртетпĕр. Вĕсем сахал: е мифла ĕненӳсем тĕппипех çухалнă, е çĕнĕ формăна куçнă. Тĕслĕхрен, «Уй куçлă, вăрман хăлхаллă», «Вутпа шыв – ик тĕрлĕ ырă, ик тĕрлĕ усал», «Вут-кăварпа алхасма хушман» йышши ваттисен сăмахĕсем чăваш çут çанталăк пулăмĕсене чĕрĕ чун е çын сăнарлă тесе шухăшланипе пулма пултарнă.

Пирĕн несĕлсем тотемла чĕр чунсене питĕ хисепленĕ. Акă, «Пĕччен путеке тукмак тытать», «Тукмака тăлăп кирлĕ мар» каларăшсенче кашкăра хушма ятпа – «тукмакпа» асăнаççĕ, мĕншĕн тесен чĕр чун-тотемсене хăйсен ячĕпе чĕнме-калама табу хунă.

Килти выльăхсенчен – лаша тĕп вырăнта. «Лаша çукки – пурнăç çукки», «Арçын ячĕ – ут» – кунта

лаша сӑнарӗ арҫынна пӗлтерет, вӑл – ӑру пуҫлӑхӗ, ҫар ҫынни, кирек ӑҫта та утпа пӗрле, юнашар, ҫавна пула иккӗшӗ – пӗр пӗлтерӗшлӗ.

Нумай ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсенче ӗлӗкхи чӑваш йӑли-йӗркийӗ, ыр-усалӗсем («Йӗрке ҫук ҫӗрте йӗрӗх хуҫа», «Пихампар та парне панине юратать», «Киреметӗн ҫилли хаяр»), чӳк йӗркисем, ӗненӗвӗсем («Ҫын сӑмахӗ – чӳк шӳрпи мар», «Ҫук ҫыннӑн мӑн кун та юн кун килет», «Чун юратан чуп тӑвать, чун ыратан чӳк тӑвать», «Ӗнӗҫмен ӗне эрнекун пӑрулать») сыхланса юлнӑ.

Ҫавӑн пекех ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсенче историн тӗрлӗ тапхӑрӗсем, пурнӑҫӗпе ӗҫӗ-хӗлӗ, халӑхсен ҫыхӑнӑвӗсемпе хутшӑнӑвӗсем сӑнарланнӑ: «Пӳрмен телее Пӳлерте те тупаймӑн», «Улатимӗр хапхи айӗнчен тухмасӑр апат ан тирке», «Улатимӗр хапхи айӗнчен тухнӑ ҫын пурнӑҫа лайӑх чухлать» т. ыт. те.

Ваттисен сӑмахӗсемне каларӑшсен тӗп теми халӑх пурнӑҫне, вӗсене тӗрлӗ енлӗ сӑнлассипе ҫыхӑннӑ: «Кил хушшинче кӗвенте хуҫӑкӗ те кирлӗ», «Кирлӗ мар пуртӑ аври ҫичӗ ҫултан кирлӗ пулать», «Ҫӑкӑртан аслӑ пулаймӑн» т. ыт. те.

Атте-аннене, тӑвансене, аслисене хисеплеме, юратма вӗрентеҫҫӗ ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсем: «Аттеаннерен хакли никам та ҫук тӗнчере», «Аҫу-аннӳне хисеп ту, ху та ырлӑх курӑн» тата ыттисем.

Ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсене ҫаплах ушкӑнсем ҫине уйӑраҫҫӗ:

1. *Каларӑш-танлаштарусем* – тишкерекен сӑмахлӑхӑн чи анлӑ тӗсӗ. Вӗсене урӑхла ытарлӑ ваттисен сӑмахӗсем е каларӑшсем, теҫҫӗ. Танлаштару элеменчӗ шутне этемлӗхпе ҫыхӑннӑ пур пулӑмсем те кӗреҫҫӗ: йывӑҫ-курӑк, выльӑх-чӗрлӗх, тискер чӗр чун, кайӑк-кӗшӗк, ҫынсен мифла шухӑшлавӗ т. ыт. те: «Атӑла курмасӑр аттуна ан хыв» (танлашт.: уйг. «Суни курмэй отук салма» – *Шывне курмасӑр аттине салтмаҫҫӗ),* «Тип кашӑк ҫӑвара ҫурать», «Ӗмӗр сакки сарлака», «Ҫамкана ҫырнинчен иртме ҫук» т. ыт. те.

2. *Çирĕп мăшăр сăмахсем* те йышлă. Кусем чи малтан сăмах майлашăвĕ пулма пултараççĕ: антонимсем е мăшăр, е хутлă сăмахсем. Сăмахран, *ăшă-сивĕ, çын-çын, амăшĕ-хĕрĕ* т. ыт. те. Тĕслĕхрен, «Ăшши – ĕне уйăхĕ, сивви – лаша уйăхĕ», «Вут куçне шыв», «Çынпа çын пурăнать», «Кашкăра кашкăр çимест», «Амăшне пăх та хĕрне ил», «Ашшĕ вилсен аслă ывăлĕ хуçа».

3. *Риторикăллă каларăш-ыйту* е *каларăш-чĕнӳ*. Çакăн йышшисем пулаççĕ:

а) каларăш-ыйту: «Улпут чирĕ лекмен-и сана?», «Çул хĕрринчи пăрçана кам татмĕ?»;

ă) каларăш-сĕнӳ: «Пыл та çу», «Çĕнĕ çимĕç, кив çăвар»;

б) каларăш-чĕнӳ: «Тăшман пуçне вутпуççи», «Куçпа курнине мĕн пĕлен, чунăма шан».

4. *Каларăш-çыхăнусем* – умлă-хыçлăн пыракан хытса ларнă сăмах çаврăнăшĕсем. Вĕсем сахал. Тĕслĕх вырăнне çакна илме пулать: «Тĕлит, тĕлит Микулайăн икĕ сум укçа пур-çке: пӳрт те илес, тет, унпала, кĕлет те илес, тет, унпала».

5. *Каларăш-текстсем* – пĕчĕк хайлав евĕрлисем. Тĕслĕхсем: «Ĕлĕк пĕр хĕр каланă, тет: «Атте кĕсре панă пулсан, кӳлĕттĕм те кайăттăм, кӳме çук», «Сунас калать: «Вăйлă çынтан çуррине хăварăп, вăйсăррине пĕтĕмпех илĕп, тет» т. ыт. те.

6. *Каларăш-диалогсенче* калаçу икĕ е темиçе çын хушшинче иртет: «Сĕлли калать, тет: «Пылчăка аксан та – вăхăтра актăрччĕ», тет. Ырашĕ калать, тет: «Тусан ăшне аксан та – вăхăтра актăрччĕ, вара кĕрекене ларапчĕ», – тет» т. ыт. те.

7. Каларăш-монологсем питĕ сахал. Тĕслĕхрен, «Эпир ӳксе вилсен, мĕн юлать? – Çакă калаçнă чĕлхе, çав юлать», «Анчăк: «Ам!», – тет, хуçи: «Хам», – тет» т. ыт. те.

Тупмалли юмах тесе таврари япаласемпе тĕрлĕрен пулăмсен тĕп паллисене урăх япаласемпе пулăмсен паллисем урлă сăнарласа панине калаççĕ. Халăхра ку терминпа çын гавçăрулăхне тĕрĕслесе пĕлес, таврa курăм-

лăхне анлăлатас тĕллевпе пĕр-пĕр япалана е пулăма ытарлă мелпе каланине палăртаççĕ.

Тупмалли юмахсем хăйсен структурипе ваттисен сăмахĕсене çывăх, уйрăмлăхĕ вара вĕсен функцийĕнче. Çак ăнлав вырăссен «загадка» терминне тӳр килет. Халăхра урăхла ятсемпе те çӳренĕ: *сутмалли юмах, кĕске юмах, юптармалли юмах.*

Тупмалли юмахсем авалах пулса кайнă, вĕсем халăх пурнăçĕпе, халапĕсемпе, йăли-йĕркипе, мифологийĕпе тачă çыхăннă. Кирек хăш тупмалли юмах та икĕ пайран тăрать: ыйту тата хурав. Хăш-пĕр чухне хуравсем ыйтурах пулма пултараççĕ, тĕслĕхрен, сăмах-омонимран пулнисемпе сăмах вăййи (каламбур) чухне.

Тупмалли юмахсен тупсăмне тупасси чăвашсен мĕн авалтанпах пырать. Çакă, вĕсен шухăшĕпе, кулленхи пурнăçра, хуçалăхра, сунарта асамлă вăйсем пулăшаççĕ текен ăнпа çыхăннă-тăр. Туппине вара кĕркуннепе çуркунне каç кӳлĕм шыранă. Кăнтăрла, ĕç вăхăтĕнче çак ĕçпе хăтланма юраман, мĕншĕн тесен, халăх ăнлавĕпе, выльăх-чĕрлĕхе сыхлакан турă – Пихампар (шурă кашкăр сăнарлă) – çиленме пултарать имĕш. Кун пирки çапла сăмах çӳрет: «Кăнтăрла халап ярсан, шур кашкăр çиет, тет».

Чăвашсен чылай тупмалли юмахĕ ку е урăх япалана, чĕр чуна, çут çанталăк пулăмĕсене калама юраманнипе (табу хунипе) йĕркеленнĕ. Тĕслĕхрен, чăвашсен «кĕске хӳре», «кайăк» сăмахсем мулкача, «тукмак», «кашаман», «тукмак хӳре» – кашкăра пĕлтернĕ. Майĕпен ун йышши тупмалли юмахсем демонологилле чунсем çине куçса пынă. Йĕрĕхе «Икĕрчĕк-кукăрчăк, Ехветер ватти кукăрчăк», арçурине «Вăкăр пек мĕкĕрет, качака пек çухăрать, çил-тăвăл пек çавăрать, çырмана та сиктерет» сăнарлăхпа танлаштарнă.

Табу йĕркипе кашкăр, сурăх, йытă тата этем çинчен калакан тупмалли юмахсем йĕркеленеççĕ: «Шуру-муру килнĕ те чикки-приккине вăрласа кайнă. Çавна чам ачисем илтнĕ те хуçисене каланă. Хуçисем шурумуруна хăваласа çитсе вĕлернĕ, чикки-приккине илсе таврăннă». Çакăн евĕрлĕ тупмалли юмахсем алтаецсен

(«Кĕрлекенĕн леш енче, çунакан айĕнче улаканни макăраканнинне çиет»), казахсен («Шавлаканăн леш енче, чăштăртатакан хыçĕнче макăраканнинне улаканĕ вĕлернĕ, хăйрамашкăн ал хăйри илсе килĕр»), калмăксен («Юханкăн леш енче, ўсекенĕн айĕнче улакан макăракана пĕтĕмпех çисе янă») те пур.

Тупмалли юмахсенче асамлă вăйсемпе турăсене тăтăшах асăнаççĕ. Тĕслĕхрен, «Вăр-вăр вăрханти, турат куçĕ Турханти», тупмалли юмахра Турханти мифла сăнар тĕп вырăнта. Ытти усал сывлăшсене те урăхла пĕлтерĕшпе ăнланма пулать: «Алпасăн арманĕ, шуйттанăн турри», «Уй варринче икĕ эсрелĕ ташлĕ», «Чике старик шыв урлă чикĕнсе выртать», «Йĕрĕх урапи хыçĕнчен йĕр юлмасть», «Ларать мулла пек, кăшкăрать шуйттан пек» т. ыт. те.

Тупмалли юмахсенче чăвашсен мăн аслашшĕсен ĕлĕк-авалхи тĕн йăли-йĕркипе çыхăннă пурнăç йĕрĕсене асăрхатпăр. Тĕслĕх вырăнне ыр-хăватсемпе турăсене çырлахтарас тесе ирттернĕ чўксене илер. Мĕнле те пулин выльăха вăрманта е ятарласа палăртса хунă лапамсенче чўкленĕ. Чўклекен выльăх юнне таса йывăç кутне тăкнă (ун пек йывăç юман шутланнă – авт.). Асăннă йăласем «Юман кутне юн тăкнă», «Юман кутне юн тăкăннă», «Юман çумне юн тăкăнать», «Юманлăхра юн тапать» тупмалли юмахсенче уççăн палăраççĕ.

Чăвашсен тупмалли юмахĕсен репертуарĕ пире халăх историйĕнчи тĕрлĕ саманчĕсемпе паллаштарать. Тĕслĕхрен, «Улатимĕр хапхине çичĕ сăрпа сăрланă», «Ашшĕ урине салтиччен, ывăлĕ Сарая çитет», «Пинпў майрин пин саплăк, çĕрпў майрин çĕр саплăк», «Çĕрпў хĕрĕн хура чаршав, пинпў хĕрĕн шурă чаршав», «Хун хĕрĕ хунт илет, тĕттĕм çĕрте тĕрĕ тăвать» тупмалли юмахсенче, паллах, пăлхар-чăвашсен XII-XVI ĕм. пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕсем сăнланнă.

Тупмалли юмахсене çак ушкăнсем çине пайлатпăр:

1. *Юптарса калани* тупмалли юмахсем – чи анлă сарăлнă тĕс. Вĕсем тупсăмăн – пĕр-пĕр япалан е пулăмăн – тулаш енне, паллисене, ĕçне юптарулă та ытарлă кăтартаççĕ: «Вăрман урлă вăрăм кĕпер хы-

ванчĕ», «Кăмака айĕнче тимĕр туя выртĕ», «Шурă ана, хура вăрлăх» т. ыт. те.

2. *Каласа е сăнласа паракан* тупмалли юмахсем пулăмăн мĕн-пур процесне е хăй япалин пĕлтерĕшне палăртаççĕ. Тĕслĕхрен, пир тĕртнине чăвашсем çапла сăнарланă:

«Утрăм, утрăм, улма тупрăм,
Улталарăм – кĕмĕл тупрăм.
Элчĕ килчĕ – парне пачĕ,
Хутаç кĕрӳ ташша ячĕ,
Енчĕк кĕрӳ çуппа пачĕ».

Сĕлле йĕтĕрпе танлаштарнă: «Йĕтĕр, йĕтĕр йĕтĕрпи, йĕтĕр тăрри шерепи, чăн варринче тункати».

3. *Диалог формăллă* тупмалли юмахсем сайра тĕл пулаççĕ. Акă, çын, лаша, çуна, утă капанĕ çинчен хывнă тĕслĕх:

«Ăçта каян, тватă ура?
–Ултă урана шырама.
Ăçта каян,ултă ура?
– Выртнă упана тăратма».

4. *Ыйту формăллă* тупмалли юмахсем ансат тата кăткăс пулаççĕ. Ансаттисем абстрактлă ăнлавсем пирки калаççĕ: «Пӳртре мĕн ытлашши? – Çӳп-çап». Хăш-пĕр чухне вĕсемпе пĕрле калаçаканăн тавçăрулăхне пĕлес тесе шахвăртса ыйтаççĕ: «Çут тĕнчере мĕн мăнтăр? – Çĕр». Кăткăссисем е омонимсем çинче никĕсленеççĕ, е вĕсен тупсăмне пĕлме питĕ йывăр: «Мĕн куçĕн шăрça çук? – Çăл куçĕн». Çак тупмалли юмахра куç «*глаз*» тата куç «*родник*» – омонимсем. «Çавал варринче мĕн пур?» тупмалли юмах пирки çакна калас пулать: кунта «Çавал» шыв пĕлтерĕшĕпе мар, сăмах çеç, апла пулсан, ун варринче «в» саспалли вырнаçнă.

5. *Хисеп шучĕллĕ* тупмалли юмахсем нумай чухне хисепсенчен çеç тăраççĕ: «Çичĕ тăванăн пĕр йăмăк. – Эрне», «12 ăмăрткайăк, 52 чана тата 365 шăнкăрч пĕр çăмарта туса йăтса кайнă. – Çулталăк, эрне, кун» т. ыт. те.

6. *Чĕнсе калакан* тупмалли юмахсем япалан уйрăм паллисене палăртса тупсăмне пĕлмелли ĕçе çăмăллатаççĕ: «Ай-уй! Ан тивех – ӳкетĕп! – Пас», «Утьăкки, шыва! – Курка» т. ыт. те.

7. *Юрă евĕрлĕ* тупмалли юмахсем юрăсенчен пулса кайнă теме пулать. Вĕсенчен нумайăшĕ çут çанталăк пулăмĕсене (çумăр, тумлам, шыв, ÿсен тăран) сăнлаççĕ. Тĕслĕхрен, çумăр çинчен:

«Яра пар, яра пар,
Ярапине хама пар.
Ялсем çине, хирсем çине
Янкăр пичче парне пар».

8. *Евĕрлев сăмахĕсемлĕ* тупмалли юмахсем евĕрлев сăмахĕсем çинче никĕсленнĕ. Ытларах чăваш мифĕсенче тĕл пулать. Вĕсенчен нумайăшĕ, ĕçпе çыхăннине кура, кил-хуçалăхра куллен усă куракан япаласене сăнлаççĕ: «Ир те чак-чак, каç та чак-чак, варри вак-вак! – Пăри туни», «Ир те вак-вак, каç та вак-вак, вали вак-вак! – Вутă çурни». Теприсем тупсăмăн – япалан – уйрăмлăх паллисене кăтартаççĕ: «Хып-хып, нăш-нăш, йăл-йăл, вĕл-вĕл, вăш-вăш. – Çын пуçĕ».

Сăнавсемпе паллăсем тесе çут çанталăкри пулăмсене, çанталăк улшăнăвĕсене сăнласа пырса пĕтĕмлетÿллĕ ăнлав йĕркеленине, вĕсемпе калаçура усă курнине калаççĕ.

Халăхра мĕн ĕлĕкрен сăнавсене е *çут çанталăк паллисем* е *тĕшмĕшле паллăсем* тесе палăртнă. Малашне вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмашкăн икĕ терминпа усă курăпăр. Çанталăк мĕнле пуласса чăвашсем сăнаса пынисене «сăнавсемпе паллăсем», тĕшмĕшле паллăсене – «ĕненÿсем» тейĕпĕр. Пĕрремĕш ушкăнра çанталăк пирки каланисене, иккĕмĕшĕнче – тĕшмĕшлĕхпе çыхăннă ĕненÿсене, тĕлĕксене тата чарусене (табу) тишкерĕпĕр. Çакнашкал уйрăммăн тĕпчени тата ушкăнлани асăннă хайлавсене тĕс тĕлĕшĕнчен (видовое деление) пайланипе, çак принципа тĕпе хунипе çыхăннă.

Сăнавсем – ĕç халăхĕ нумай ĕмĕрсем хушшинче çанталăк мĕнле пулассине сăнаса пĕтĕмлетÿ туни. Вĕсенче чăваш çыннин опычĕ, вĕрентĕвĕ, ăс паракан канашĕсем, халăх календарĕн йĕрки.

Пирĕн мăн асаттесем авалтанпах çут çанталăкăн улшăнăвĕсене сăнанă, çакна ялан пĕр вăхăтра туса пынă. Çанталăка уйăх, хĕвел, çăлтăрсем тăрăх, çил

вĕрнинчен, пĕлĕтсем мĕнле хăвăртлăхпа шунинчен, чĕр чунсемпе вĕçен кайăксем, хурт-кăпшанкă хăйне мĕнле тыткаланинчен, сывлăм ӳкнинчен, кăвак хуппи йăлтлатнинчен, аслати авăтнинчен, шевле вылянинчен тата ытти нумай-нумай пулăмран пĕлнĕ. Халăх вĕсене пиншер çул сăнанă, асра тытнă, ваттисем çамрăккисене ăруран ăрăва пĕлтерсе пынă.

Чăваш халăхĕн сăнавĕсем ĕç çыннисене ялхуçалăхĕнче тата метеорологире пулăшнă. Хăçан тата хăш вăхăтра çумăр, ăшă, сивĕ, тăм пулать – пурте çаксем халăх календарĕнче ӳкерĕннĕ.

Халăхăн сăнавĕсем чăн пулса тухни, чăн пурнăçпа тӳр килни çутă çанталăкăн йĕркисене тĕпе хурса ăнлантарнипе çыхăннă. Тĕслĕхрен, «Мăрьери тĕтĕм çӳлелле юпа пек хăпарсан – уяр пуласса, çĕрелле ансан – кун пăсăласса» сăнава чăвашсем çапла ăнлантарнă: нӳрĕк нумай чухне шыв пăсĕсем тĕтĕмĕн тусан пĕрчисене витĕм кӳреççĕ, çавăнпа тĕтĕм аяла ӳкет, лайăх çанталăк чухне – çăмăллăнах çӳле хăпарать. Е тата, çанталăк хăвăрт улшăннипе сывлăш пусăмĕ ӳкет, температура улшăнать, нӳрĕклĕх хăпарать, сывлăшра электричество пухăнать – кусем пурте çумăр пуласса систереççĕ. Кун пек чухне сасă илтĕнĕвĕ те лайăхланать («Уйра сасă янк кайсассăн, çумăра», «Хĕвел тухăç хĕрелсен, çумăра», «Енчен те пĕлĕт хĕвел ларнă чухне çеç хĕрелсен, тепĕр 1-2 кунтан çумăр пулать», «Хĕвел тавра ункăсем пур пулсан, çулла çумăра кĕт, хĕлле – тăмана»).

Çанталăк улшăнăвĕсене аван сисекенсем – чĕр чунсем. Сăмахран, çумăр умĕн кайăксем е килти выльăхсем хăйсене лăпкă тытмаççĕ, кăшкăраççĕ пулсан («Вĕршĕнсем аялтан тата кăшкăрса вĕçеççĕ пулсан, çумăра, теççĕ», «Каçа хирĕç автан авăтсан, çумăр пулать, теççĕ» е «Йытă курăк çисессĕн, йĕпе пулать, теççĕ»), е кăткăсем хыпаланса ĕштеленсен («Хăçан кăткăсем çунатланаççĕ е хăйсен тĕмисене хăпартаççĕ – çумăр е сивĕ хĕл пулать»), кĕтсех тăр, çанталăк улшăнатех: е çумăра каять, е сивĕсем пуçланаççĕ т. ыт. те.

Чăваш халăхĕн сăнавĕсене икĕ ушкăна пайлама пулать: çанталăк çинчен тата ял хуçалăх ĕçĕсем çинчен

калаканнисем. Çанталăк улшăнăвне вĕсем нумай вăхăтлăха та («Хĕлле юр картлашкасемпе нумай çуса ларсан, çулла çăкăр лайăх пулать», «Çуркунне пăр ир кайсан, çăкăр лайăх пулать»), кĕске вăхăтлăха та («Çăлтăр сиккелесессĕн – сивĕтессе», «Тĕтре çӳлелле кайсан, çумăр пулать») палăртаççĕ.

Тĕпчевçĕсенчен нумайăшĕ чăвашсем хушшинчи тĕрлĕ сăнавсене, ăслăлăхри вĕрентĕве кура, чăн пулаканнисене, иккĕленӳллисене тата суяканнисене уйăрса пăхнă.

Халăх ĕненĕвĕсем – паремисен чи авалхи тĕслĕхĕсем, вĕсене пирĕн несĕлсем тĕн, культ тата ытти тĕрлĕ тĕшмĕшле шухăшлавсем çине тайăнса никĕсленĕ. Кунта мăн асаттесем асамлă чĕр чун-тотемсем, ырхаярсемпе туррисем, çут çанталăк пулăмĕсене чĕрĕлетсе те çын сăнарлă туса кăтартнисем, мифла шухăшлавĕнчи «сылтăм-сулахай» ăнлавăн çыхăнăвĕсем, кунсен ячĕсемпе çыхăннă тĕшмĕшле йăли-йĕркисем т. ыт. авалхи ăнсем палăрнă. Кайран çак ăнланусенчен нумайăшĕ чăваш тĕнĕнчи чару-табусене куçнă. (Сăмахран, чăвашсен тотем-чĕр чунĕсем вăкăр, ĕне, така, хуракăш, кăвакарчăн, кашкăр т. ыт. те шутланнă.). Тĕслĕхсем: «Енчен те çулçӳревçе лаша, сысна е ĕне тĕл пулсан, пуçланнă ĕçре телей пулать», «Лашана шур патакпа çапсан, вăл хĕсĕр юлать», «Кăвакарчăн çитĕнсе ларакан йывăç çине ларсан, пушар пулать, тет», «Çул урлă кашкăр каçса кайни лайăха пĕлтерет» т. ыт. те. Çакăн йышши ĕненӳсем ытти тĕрĕк халăхĕсен те пур: *як.* – «Йытă уласан – усала», «Куккук çурт çумĕнче авăтсан – лайăх мар япала пулать»; *тут.* – «Куккук ялта авăтсан – пушар тухать».

Чăвашсен шухăшлавĕнчи анимизмла (чĕрĕлентернĕ) йĕрсене çак ĕненӳсенче курма пулать: «Вут çынна тытать, теççĕ», «Ăснă шыва çăла каялла ярсан, çăл типсе ларать, теççĕ», «Шыв талăкра çичĕ хут шыва кĕрет, çичĕ хут тасалать».

Çăлтăр ӳкнине авалхи чăваш этем пурнăçĕпе («Çăлтăр ӳксен – çын вилет, теççĕ»), асамат кĕперрине тĕнче пĕтессипе («Асамат кĕперĕ виç çул курăнмасан тĕнче пĕтет, тет») çыхăнтарнă, кайăк хур çулĕпе вилнĕ

çын чунĕ тӳпенелле хăпарать, тесе шухăшланă. Каярахпа анимизмла шухăшлав таврари тата çут çанталăк пулăмĕсен ийе-хуçисене, усал-тĕселĕсене çура-тать: пӳртпе, вăрманпа, уй-хирпе, шыв вăйĕпе т. ыт. те çыхăннă ĕненӳсем («Картишĕнче выльăхсене пăхса усракан пуç пур, теççĕ», «Пӳртре хĕртсурт, шывра шыври, вăрманта арçури пур, теççĕ») вăй илеççĕ.

Çапла майпа чăвашсен пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн Турăпа унăн пантеонĕ йĕркеленсе çитет. Малтанласа Турă пирвайхи чун тата демиург сăнарлă курăнсан («Мĕн пулассине Турă çамка çине çырать, тет»), каярахпа вăл, хăйĕн хăватне çухатса, çын сăнарĕ пек çеç тăрса юлать; урăхла каласан, çӳлти тĕнчен структури общест-вăлла тытăма куçать. Çакăнтан вара ырă тата усал турăсемпе хăватсем, вĕсемпе çыхăннă ĕненӳсем çуралаççĕ.

Тĕнче моделĕн мифла шухăшлавĕпе, унăн структурипе тата «сылтăм» е «сулахай» ăнлавсемпе çыхăннă ĕненӳсем интереслĕ. Чăвашсен мифологийĕ тăрăх, пĕрремĕш яланах ырă пулăма, çӳлти тĕнчен атрибутне, арçынна сăнарланă пулсан, иккĕмĕшĕ – аялти тĕнчене, хĕрарăм символикине палăртнă. Çакăн йышши ĕненӳсем, тĕпрен илсен, çынпа тата унăн организмĕпе çыхăннă: «Сылтăм алă кĕçĕтсен – савăнмалла, сулахайĕ кĕçĕтсен – кулянмалла», «Сылтăм хăлха янрасан, ырă хыпар пĕлессе, сулахайĕ янрасан – начаррине пĕлессе», «Сылтăм ура салтăнсан, çын мухтать, сулахайĕ салтăнсан – çын хурлать», «Сылтăм куç харши кĕçĕтсен, арçынтан вăтанан, сулахайĕ кĕçĕтсен – хĕрарăмран вăтанан» т. ыт. те.

Ĕненӳсем чăвашсен авалхи тĕн йăли-йĕркипе, кун ячĕсемпе те çыхăннă. Сăмахран, чăваш ĕненĕвĕ тăрăх, юн кун ĕçлеме юраман, мĕншĕн тесен çак кун чӳксем туса ирттернĕ, шăмат кун – праçник кунĕ шутланнă.

Нумай ĕненӳ чăваш халăх календарьне пăхăнса йĕркеленнĕ. Тĕпрен илсен, чăвашсем 12 çуллă выльăх-чĕрлĕх циклĕн календарĕпе усă курнă. Тĕслĕхрен, шăши çулĕ тырă çулĕ пулнă е тырă ăнса пуласса пĕлтернĕ, мулкач çулĕ вара питĕ хăрушă тата тискер çул шуг-

ланнă («Шăши нумай пулсан, тырă пулать», «Çула кайнă чух çул урлă мулкачă каçса кайсассăн, кирек мĕн усал та пулин пулать, теççĕ») т. ыт. те.

Нумай ĕненÿсенче тĕрлĕрен воспитани формисем палăраççĕ: çын хăйне хăй епле тыткаламаллипе çыхăннисем («Аллуна çанă ăшне ан чик, аннÿ вилет», «Çĕлĕке алăра çавăрсассăн, пуç çаврăнакан пулать, тет», «Пÿрнене кăшласан, телей вылянать»); халăхăн илемлĕх туртăмĕсене вĕрентекеннисем («Чĕкеç йăвине çĕмĕрсен, чĕкеç шатри тухать, тет», «Виртлекен çынна вилсен вĕри çатма çуллаттараççĕ, тет»); ĕçе вĕрентессипе çыхăннисем («Хĕрĕх эрешмен вĕлерсен, пĕр çылăх каçать, тет», «Урайне кана-кана шăлсан, юлташĕ кана-кана хĕнет, тет») т. ыт. те.

Ĕненÿсенче чăваш çынни аслисене, ашшĕ-амăшĕсене юратма, çăкăр-тăвара хисеплеме вĕрентнĕ: «Хăвăнтан аслине çапсан, алă чĕтрекен пулать, тет», «Çăкăр татăкне хăварсан, тăлăха юлать, тет», «Çунăк çăкăр çисен, çын упаран хăрамасть».

Ĕненÿсем хăйсен тытăмĕпе яланах икĕ сыпăклă, вĕсем пĕр-пĕринпе тачă çыхăнура тăраççĕ: пĕрремĕш пайĕ объекта, иккĕмĕшĕ – ĕç результатне пĕлтерет.

Ĕненÿсем тематикипе питĕ пуян. Вĕсене çакăн пек ушкăнсем çине пайлатпăр:

1. *Пурнăçпа йăла ĕненĕвĕсем.* Вĕсем обществăн пĕтĕмĕшле пурнăçĕпе тата халăх йăли-йĕркипе çыхăннă. Кунта обществăпа этемлĕх, çынпа çын, çемьепе ăру хутшăнăвĕсем тата моральпе йăла-йĕрке ыйтăвĕсене хускатнă: «Кушак питне çусан, хăна килет, теççĕ», «Хăраххăн кайăк курсан – ĕмĕр хăраххăн иртет», «Тенкеле сиккелентерме юрамасть, кил хуçи канлĕхсĕр пулать».

2. *Çанталăк* çинчен. Авалтанпах çĕр ĕçĕпе тăрмашакан чăвашăн çанталăкпа çыхăннă ĕненĕвĕсем чылай: «Хăлха шăтăкĕ кĕçĕтсен – тăман (йĕпе) пулать», «Çĕр шапине вĕлерсен, çумăр çăвать» т. ыт. те.

3. *Тырă-пулă* çинчен калакан ĕненÿсем те чăвашсен сахал мар: «Çĕнĕ çул каç киле пуян çын пырсан, тырă лайăх пулать», «Тырра юн кун пĕтерме юрамасть – кĕлте капанта чĕрĕлет, тет».

4. *Мифла ёненӳсем* чăвашсен мăн аслашшĕсем нумай турра пуççапнипе пулса кайнă ăнлавсенчен (анимизм, тотемизм, зооморфизм, антропоморфизм) çуралнă: «Çул варне сысакан амăш кăкри çине сысать», «Çинçере çĕр чавсассăн аçа çапать, тет» т. ыт. те. Пĕрремĕш тĕслĕхре авалхи чăвашсен мифла ăнĕнчи тĕнче йывăçĕ (мировое древо) çинчен сăмах пырать, вăл – «анне» пĕлтерĕшлĕ, çавăнпа ун çинче ирсĕр те киревсĕр ĕçсем тума юраман, иккĕмĕшĕнче – çинçере ĕçлеме юраманнине систерет ёненӳ, мĕншĕн тесен ку вăхăтра çĕр-анне йывăр, «пĕтĕ» иккен.

5. *Инкек-синкек* çинчен. Çак ушкăнри ёненӳсем ытларах социаллă-политикăллă, экономикăллă тата синкерлĕ ăнлавсене палăртаççĕ, вĕсем тĕрлĕрен хĕн-хур, асап-нуша, вăрçă е пушар пулассине асăрхаттараççĕ: «Ял урлă акăш каçса кайсан вут тухать, теççĕ», «Каç пулсан çынна япала е укçа памаççĕ, укçа тăмасть, тет» т. ыт. те.

6. *Чĕр чунсем* çинчен. Ку ушкăна çакăн евĕрлĕ ёненӳсем кĕреççĕ: «Лаша çилхине çĕрĕ тăхăннă алăпа сĕрсен лаша мăнтăр пулать, теççĕ», «Ёнене шăпăрпа çапсан ёне хĕсĕр юлать, теççĕ».

7. *Этем шăпи* çинчен (пурнăçĕ, вилĕмĕ, чир-чĕрĕ т. ыт. те): «Сăмса тăрри кĕçĕтсен çын вилет, теççĕ», «Вилнĕ çынна йăтса пынă чухне çул урлă каçма юрамасть – ху та вилме пултаран» т. ыт. те.

8. *Тĕрлĕ хыпарсем е пĕлтерӳсем* çинчен калаканнисем. Вĕсем ытларах этем организмĕпе, килте куллен усă куракан е хуçалăхри япаласемпе çыхăннă: «Хăлхасем кĕçĕтни – хыпара: сылтăм хăлха кĕçĕтсен – лайăх хыпар, сулахайĕ – начар хыпара» т. ыт. те.

9. *Дидактикăлла ёненӳсем* çамрăксене йĕркелĕхе, илемлĕхе тата ĕçлĕхе вĕрентеççĕ: «Урине юрласа сырсан, каçчен макăрать, тет», «Йĕтĕрпе çапсан, хăлхасăр пулать, тет».

Ёненӳсене ĕç результачĕсене кура çеç мар, паремисен объектне шута илсе те ушкăнлама пулать: лаша, акăш, кушак е ытти чĕр чунсемпе япаласем, «сылтăм-сулахай, çӳл-аял» ăнлавсемпе çыхăннисем т. ыт. те.

Тĕлĕксем те ĕненӳсемех. Вĕсем ĕненӳсенчен этем хăй курнă тĕлĕк хăçан та пулсан пурнăçланма пултарассине шанса тăнипе уйрăлса тăраççĕ. Майĕпен çак шанăç халăхра ятарлă система йĕркелет. Ăна тĕлĕксен уççи е тĕлĕксене ăнлантарса пани теме те юрать.

Халăхра тĕлĕке ăнлантарса паракан çынсем – тĕлĕкçĕсем – пулнă. Тĕлĕкре мĕнле те пулин япалана курсан, çын ун патне кайнă, лешĕ вара мĕне пĕлтернине каласа пама пултарнă.

Паянхи кунччен чăваш фольклористикинче тĕлĕксене ятарласа анлăн тĕпчемен, ушкăнсем çине пайламан. Ку вăл – малашлăхри ĕç. Тĕлĕксен йĕркеленĕвĕпе пĕлтерĕшĕ çын организмĕн тата ӳт-пӳ тытăмĕн уйрăмлăхĕсене кура çеç мар, авалхи этем тĕнчепе çут çанталăкри япаласемпе пулăмсем çине мифла ăнланулăхпа пăхнинчен те, çав уйрăмлăхсене хăйĕн чунĕ, ăнĕ витĕр кăларнипе те йĕркеленнине ас тумалла. Чи малтанах чăваш çĕре, вутпа шыва чĕрĕлентерсе те ăрăмлатса хакланине, тĕнче уçлăхĕнчи пулăмсене тата чĕр чунсене тотемласа пуççапнисене палăртмалла.

Акă, тĕлĕкре таса шыва курсан е çăвăнсан, телейлĕ пуласса пĕлтернĕ, мĕншĕн тесен авалхи мифла шухăшлавпа шыв тасатакан тата сиплĕ вăй шутланнă, уйăх вара салтакран хыпар килессе пĕлтернĕ.

Чĕр чунсемлĕ тĕлĕксем тотемизмпа çыхăннă терĕмĕр. Ун пеккисем питĕ йышлă. Тĕслĕхрен, кун йышшисенче пыл хурчĕ, лаша, йытă, ĕне (вăкăр) палăраççĕ («Тĕлĕкре пыл хурчĕ вĕçнине курсан, çумăр пулать, теççĕ», «Тĕлĕкре хĕрлĕ ĕне курсан – пушара»); усал-тĕселсемпе ыр-хаярсем сăнарланнă («Тĕлĕкре яла кĕтӳ кĕнине курсан, мур пулать», «Тĕлĕкре пукане курсан – тӳркĕлли пулать»). Юлашки икĕ тĕслĕхĕ авалхи чăвашсен чӳк йăлине тата хисеплĕ туррине – кĕлет хуçине Йĕрĕхе – сăнарлать.

Тĕнче тытăмĕпе çыхăннă тĕлĕксенче чăвашсен чи авалхи шухăшлавĕ палăрса юлнă. Асăннă тĕлĕксем, тĕпрен илсен, пирĕн несĕлсен космогони мифологийĕпе, вăл шутра Ама йывăçпа та (ахаль ӳсен-тăран, çурт-йĕр, йывăç-курăк – пурте ăна сăнлакансем), леш тĕнче

çинчен каланисемпе те (кунта вилнĕ мăн асаттесем пурăнаççĕ имĕш) çыхăннă.

Халăх ĕненĕвĕ тăрăх, тĕлĕк вăл – çыннăн чунĕ тепĕр тĕнчене кайнă тата унта хăйĕн мăн аслашшĕсемпе тĕл пулнă кĕске вăхăт хушши. Чăвашсен шучĕпе, çын вилмест. Вăл тепĕр тĕнчене, тĕпрен илсен, «сарă кун çĕр-шывне» лекет, çавăнпа та вилĕме этем вилнĕ несĕлсен тĕнчине лекнĕ пек ăнлантарать («Чирлĕ çын тĕлĕкре вилсен, сываласса»).

Пирĕн мăн несĕлсен шухăшĕпе, вилнĕ çынсем те, çĕр çинчисем пекех, кил-çуртра пурăнаççĕ. Паллах, мĕн пур вилнисен пурăнмалли вырăнĕ – тупăк. Ку тĕслĕхре тупăк тĕнче тытăмне сăнарлать. Çавăнпа тĕлĕкре йывăçран «çурт-йĕр» (тупăк) тунине курсан, чăвашсем ку ĕненĕве вилепе çыхăнтараççĕ: «Тĕлĕкре кил-çурт купаланине курсан, тăвансенчен хăшĕ те пулин вилет».

Пăлхар тата тĕрĕк-монгол халăхĕсен чĕр чун циклĕнчи календарьпе çыхăннă тĕлĕксем сахал мар тĕл пулаççĕ. Тĕслĕхрен, лаша – вăрçа, çĕлен – вăрă-хураха пĕлтернисем («Тĕлĕкре лаша курсан, кам та пулсан салтака каять», «Тĕлĕкре çĕлен курсан, тăшман тапăнасса пĕлтерет, теççĕ»).

Тĕлĕксенче, ытти паремисенчи пекех, историри пурнăç тапписем, паллисем сăнланнă. Сăмахран, «Тĕлĕкре тутар курăнсан, киремет курăнать, теççĕ» ĕненӳ XIII-XVI ĕм. аталанма пултарнă. Ун чухне пăлхар-чăвашсен хушшинче тутар шейхĕсемпе тутарланнă чăвашсем мăсăльман тĕнне сарас тĕллевпе нумай тăрăшнă. Вилнĕ хыççăн вĕсем халăхра çветтуй пĕлтерĕшне йышăннă, киремете тухнă (Валем хуçа-киремет йышши). Çулсем иртнĕçемĕн чăваш киреметсен шутне патшалăх çыннисене те (салтаксене, урядниксене, стражниксене, пупсене, тухатмăшсене, таркăнсене) кĕртет, пурне те усалсемпе сăнарлать («Тĕлĕкре урядник е стражник курсан, киремете пĕлтерет, теççĕ», «Тĕлĕкре салтак сана хăваласа çӳресен, киремет тытнă, теççĕ»).

Хăш-пĕр тĕлĕк-ĕненӳсем тӳрремĕнех халăх пурнăçĕпе çыхăннă: ĕлĕк ялсенче çынсене тĕрлĕ пухусемпе общи-

пăсене чиркÿ чанĕсемпе пуçтарнă («Тĕлĕкре чиркÿ чанне çапсан, хыпара, теççĕ»), çăпатасем çула («Тĕлĕкре çăпата курсан, çула тухасса»), ар çын е хĕрарăмăн ĕç хатĕрĕсем хуçисене («Тĕлĕкре шĕшлĕ курсан, хĕрарăм ывăл ача тăвасса», «Тĕлĕкре йĕп курсан, хĕрарăм хĕр ача тăвасса») пĕлтереççĕ.

Чарусем (табу) – ĕненÿсен пĕр тĕсĕ. Унпа чăваш халăхĕн тĕрлĕ турра ĕненнисем, çут çанталăк япалисемпе пулăмĕсене пăхăнса тăнисем, тĕрлĕ тĕн е тĕшмĕшле ĕненĕвĕсем çыхăннă. Çапла майпа табусен тĕп палли – тивме юраманни, сăваплăх.

Чăваш фольклористикинче чарусене ятарлăн никамах та тĕпчемен-ха. Тĕпчевçĕсем çак терминпа сĕм авалхи халăхсен пĕр-пĕр ĕç тума, сăмах калама е япала тытма чарас йăлисене палăртаççĕ.

Ку пулăм чи авалхи тапхăра пурăнса ирттернĕ кашни халăхăн пур. Чарусем анимизмлă тата тотемизмлă шухăшлавсене, уйрăм япаласемпе çут çанталăк пулăмĕсене турă вырăнне хурса е тĕрлĕ вăйсен асамлăхне ĕненнипе никĕсленнĕ. Урăхла каласан, чăвашсен чарăвĕсем авалхи тĕн мифĕсенчен пулса кайнă. Ăрулла (çемьеллĕ, йăхлă) мифсене калама чарнă: чăвашсен шухăшĕпе, кам та кам çав табуна пăсать, ăна ыр-хаяр асап ярать, иккен.

Сĕм авалхи чарусен шутне общество йăхсем çине пайланичченхи тапхăра сăнлаканнисем кĕреççĕ. Ку пирĕн мăн асаттесем пур япалана та чунлă тесе ĕненнипе çыхăннă. Çут çанталăк вăйĕсене, вăл шутра çулăма, шыва чунлантарни, хĕвеле, уйăха, аслатие турă вырăнне хурса чыслани – вĕсем çине табу хурасси патне илсе çитернĕ: ют çынна вут-çулăм пама хушман (телей каять тесе шутланă), çулăмпа выляма, ун çине сурма, вĕрме, вут умĕнче çăмăлланма юраман.

Вут-хĕмсĕр пуçне, чăвашсем ăру шывĕ çине те табу хунă. Витреренех шыв ĕçни пысăк çылăх тата ăна чыссăрлантарни шутланнă. Енчен те çын пусăранах шыв ĕçрĕ пулсан, унăн шыва мĕнле те пулин япала пăрахмалла. Апла тумасан, çак çынна ырă мар япала пулма пултарать.

Йăхри чарусен объекчĕ шутĕнче – хĕвел, уйăх, аслати т. ыт. те. Вĕсемпе çыхăннă ĕненӳсем: «Уйăха хирĕç тула тухсан, чĕрне чĕрре кĕрет, тет», «Хĕвелпе уйăха алăпа кăтартсассăн, алă хăрать, тет», «Папай авăтнă чух чӳречерен пăхсан, папай çапать, тет».

Уйрăмах чăвашсем çĕре хисепленĕ. Ăна иккĕмĕш анне, аслă анне тесе чĕннĕ. Халăх ĕненĕвĕ тăрăх, çĕр – этем сăнарлă: ăна çапма, тĕкĕнме юраман («Ир малтан юр кайса пĕтсессĕн, çĕре алăпа е патакпа çапсан, тура çилленет, тет»). Халăх шучĕпе, юр кайса пĕтсессĕнех, çĕр пĕтĕленсе юлать, урăхла каласан, çурхи ĕçсене хатĕр пулать.

Чарусен шутне чĕр чунсем те лекнĕ. Ку вара тотемизмпа çыхăннă. Çын чĕр чунсене хăйĕн тăванĕ вырăннех хурса хисепленĕ, таса чунсем тесе шутланă: «Шапана вĕлерсен, ĕне хĕсĕр пулать», «Юс ура урлă каçса кайсассăн, ура хăрать, тет», «Лаша ташлаттарнинчен кулсан, тутана çăпан тухать, тет», «Вĕçен кайăкăн йăхне çын çисен, çывăракан пулать, тет».

Йывăççене, ӳсен-тăрансене, тыр-пулсене те чысланă: «Йывăç кутне шăма юрамасть – хăрать», «Тыръ, çăнăх, çăкăр урлă ан каçăр» т. ыт. те.

Таврари пулăмсемпе япаласене чĕрĕлентерни вĕсен тĕрлĕ усал-тĕселсемпе ыр-хаярĕсем пур текен шухăша çуратнă. Чăвашсен ĕненĕвĕпе, йăран хушшинче хĕрлĕ усал пурăнать имĕш, çавăнпа унта çывăрма хушман, йĕрĕх пурăннă вырăнта çăмăлланма, ăна чӳклесе панă укçасене е нухратсене илме, хĕртсурта çилентерес мар тесен, çĕçĕпе каснă пашалусене çиме юраман.

Чăваш тĕнĕн чарăвĕсенчен нумайăшĕ вилнĕ тăвансене хисеп тунипе çыхăннă. Чи малтанах, вилнĕ çыннăн ӳтне йăтса пынă чух, урам урлă, масар умĕнчи канав урлă тăват уран каçма юраман, масар енне пӳрнепе тĕллеме хушман. Çын каç енне питне çăвать пулсан, виле чуп тăвать, тенĕ. Çакă, тен, урăх ĕненӳпе çыхăннă: çурçĕрччен вилесем çăва çинчен тухаççĕ, тет те, хăйсен тăван-хурăнташĕсене курса çӳреççĕ-мĕн. Ку ĕненӳ йĕкĕреш (шывра çын хăйĕн сăнне е хăраххине курни) тата шыв кульчĕсемпе çыхăнма та пултарнă.

Чăваш фольклорĕнче мифологилле йăла-йĕркесемпе, Христос тĕнĕпе çыхăнтарнă табусем йышлă: тĕслĕхрен, ытлари кун, лашапа чупмалли кун, чăвашсем ĕçлемен («Ытлари кун кĕпе çусан, кĕпе çине кĕл сапать», «Ытлари кун сăра юхмасть»); Спас кунĕччен панулми çиме («Кам Спас кунĕччен панулми çиет, çавăн ачисем леш тĕнчере панулмисĕр юлаççĕ»), Илен кунĕччен çĕнĕ улма пĕçерме юраман.

Асăннă чарусене халăх педагогикин тĕслĕхĕ вырăнне хурса та хаклама пулать. Хăйсен аталанăвĕнче табусем çамрăк ăрăва вĕрентес ĕçре сахал мар паллă йĕр хăварнă: «Çинĕ чух сĕтел хушшинче ура сулласа ларсан, амăшĕ вилет, тет», «Тенкеле сиккелентерме юрамасть, кил хуçи канлĕхсĕр пулать», «Пуртре шăхăрсан, шăл суракан пулать, тет» т. ыт. те.

Вак жанрсен поэтики пирки калаçнă май çакна палăртмалла: чăваш паремисен сăнарлăхпа илемлĕх уйрăмлăхĕсем ытти халăхсен паремисенчен ытлашши уйрăлсах тăмаççĕ. Çўлерех асăннă проза речĕн вак жанрĕсем пурте тенĕ пекех икĕ пайран тăраççĕ. Халăх сăмахлăхĕн ытти тĕсĕсенчен вĕсем хăйсен кĕскелĕхĕпе, тĕрĕслĕхĕпе, ăслăлăхĕпе, пысăк пĕлўлĕхĕпе, сăнарлăхĕпе тата хĕсĕнчĕклĕхĕпе уйрăлса тăраççĕ.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем те, тупмалли юмахсем те, сăнавсемпе паллăсем те, ĕненўсем те чăвашсем хушшинче анлă сарăлнă. Çак жанрсенче, мĕнле те пулин япалана е пулăма сăнланă чух, пĕр евĕрлĕ илемлĕх мелĕсем тĕл пулнине палăртмалла. Вĕсем пурте сăвăласа якатнă тата рифмăланă текстсене аса илтереççĕ, çакă паремисене янăравлăрах та илемлĕрех тăвать. Ытларах аллитераци (унăн йышне *ассонанс* ăнлава та кĕртетпĕр) тĕл пулать. Ку пĕтĕм тĕрĕк чĕлхисен паллă уйрăмлăхĕ:

*ваттисен сăмахĕ* – «***Хăр***авçă ***хăр***ак ***хăв***а***р***ан та ***хăр***ать»;

*тупмалли юмах* – «*Тул* *тул*ашка-*тул*<u>ашка</u>
*Тул*та выртать вал<u>ашка</u>.
Кăвак пĕлĕт айĕнче
Кулса выртать уп<u>ăшка</u>»;

*ĕненў* – «***Хăр***ак шăна тытсан та, ал ***хăр***ать, тет»;

*тĕлĕк* – «Тĕлĕкре *ыр*аш курсан – *ыр*лăха» т. ыт. те.

Хăш-пĕр текстсем рифмăланаççĕ. Састаш сăмах умĕн те, варринче те, вĕçĕнче те пулма пултарать. Тĕрĕссипе вĕсем çав аллитерацием:

«Çиппине *кура* йĕппи,
Каччине *кура* хĕрĕ»;
«Ут*не пăхан* –
Султа выртман.
Çын*не пăхан* –
Тулта выртман».

Юлашки тĕслĕхре антитезăпа сăмах хутлăвĕ (повтор) каларăшăн шалти туйăмлăхне вăйлатаççĕ çеç.

Вак жанрсенче пĕр сăмах текстра темиçе хут та каланать, поэтикăри хутлăва çаврăнать.

Текст пуçламăшĕнчи (анафора):

«*Ар* хурласан, *ял* хурлать,
*Ар* ырласан, *ял* ырлать».

Текст вĕçĕнчи (эпифора):

«Ют çын *тути* – юн *тути*,
Тăван *тути* – пыл *тути*».

Хăш чухне вăл та, ку та пĕрле пулма пултараççĕ:

«*Чу*н саван *чу*н туна,
*Чу*н ыратан *чŭ*к туна».

Вак жанрсем илемлĕх-палăртулăх меслечĕсемпе пуян: танлаштарусем, эпитетсем, тропсем, метафорăсем, гиперболăсем. «Пурнăç – кĕленче» каларăшра пурнăçа кĕленчепе танлаштарнă; «Атте арчине çĕклеймĕн» текстра çĕре аттен арчипе сăнарланă.

Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсене, тупмалли юмахсене хывнă чухне сăпатлантару, метоними, аллегори меслечĕсемпе пĕлсе усă курни пур. Нумайăшĕнче тĕл пулакан чăн-чăн ятсем, топонимсем, гидронимсем, ойконимсем сăнарлăха вăйлатаççĕ: «Икĕ Иван – пĕр тăван», «Телее пĕл те Мускава кай», «Пăлхар хирне пăрçа сапнă, пăрçи çинче хур çӳрет», «Çапла-çапла тенипе Çавал урлă каçаймăн».

Паремисенче тĕрлĕ хисепсем йышлă: 3, 4, 7, 12, 41, 77 т. ыт. те. Ытларах вĕсем тупмалли юмахсенче тĕл пулаççĕ.

Вак жанрсенчен чылайăшĕ сасăсене евĕрленипе тата междомети пулăшнипе пулса кайнă: «Ай-уй! Ан тĕкĕн – ӳкетĕп!», «Ши-ши! У-у! Илемлĕ тĕми – тĕлт! Шĕшкĕ кутне пашт!».

Çапла вара, çӳлерех палăртнă паремисем икĕ пайран тăраççĕ. Формисене илсен, вĕсен тĕп палли – япалапа пулăм хушшинчи палăртулăх хутшăнăвĕсене кăтартасси: ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсенче çынсен пурнăç опычĕ сăнланнă; тупмалли юмахсенче этем хăйне пурнăçăн кирек мĕнле саманчĕсенче те епле тытмаллисем, тĕрлĕ ӳкĕтсемпе вĕрентсе каланисем; сăнавсемпе паллăсенче халăх çут çанталăк пулăмĕсене сăнани, çаксене тĕпе хурса пĕтĕмлетӳ туни; ĕненӳсенче чăвашсен мăн аслашшĕсен сĕм авалхи мифла шухăшлавĕ, тĕнче курăмĕ тата илемлĕ сăнарлăхĕ ӳкерĕннĕ. Этем общеcтвин тĕрлĕ тапхăрĕнче пулса кайнăскерсем, çак вак жанрсем пĕчĕккĕн урăхланса та улшăнса, çĕнĕ пĕлтерĕш илсе пынă, халăх тăрăшнипе чылайăшĕ пирĕн вăхăта çитнĕ.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Чăваш халăх сăмахлăхĕн вак жанрĕсем, вĕсен уйрăмлăхĕсем.
2. Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем.
3. Тупмалли (сутмалли) юмахсем.
4. Сăнавсемпе паллăсем.
5. Ĕненӳсем.
6. Тĕлĕксем.
7. Чарусем (табусем).
8. Паремисен поэтики.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1. *Ваттисем* çапла калаççĕ (Ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахĕсем) /В.А.Долгов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1950. С. 3-8.

2. *Ваттисен* сăмахĕсем. Каларăшсем. Сутмалли юмахсем /Н.Р.Романов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1960. С. 6-8.

3.*Димитриев В.Д.* Чувашский календарь и метрология: Учеб. пособие. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1982. 36 с.

4.*Метин П.Н.* Чувашские пословицы и поговорки //Чувашский фольклор. Специфика жанров: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 171-187.

5.*Никольский Н.В.* О пословицах чувашского народа //Вопросы чувашского языка и литературы: Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 18. Чебоксары, 1958. С. 120-143.

6.*Романов Н.Р.* О чувашских загадках //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 21. Чебоксары, 1962. С. 142-154.

7.*Сидорова Е.С.* Ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсем, сăнавсемпе паллăсем, тупмалли юмахсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. V том. Шупашкар, 1984. 5-21 с.

8.*Сидорова Е.С.* Сăнавсемпе паллăсем, тĕшмĕшсем //Чăваш литературоведенийĕн ыйтăвĕсем: Тĕпчев ĕçĕсем. 82 кăл. Шупашкар, 1978. 115-124 с.

9.*Смоленский А.В.* Чувашские приметы о погоде и ее влиянии на сельское хозяйство /ИОАИЭ при Казанском университете. Казань, 1895. Т. 10. Вып. 3. С.147-221; Ялав. 1982. 7 №. 29-30 с.; Сов. Чувашия. 1990. 5, 9, 12, 13, 14 дек.

### 2.3. Йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăх. Ача-пăча поэзийĕ. Çамрăксен поэзийĕ. Ваттисен йăла-йĕрке поэзийĕ. Чĕлхесем. Сăмахсем, вĕсен поэтики.

Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, çырусăр сăмахлăх тĕсĕсем йăла-йĕркепе çума-çумăн аталанаççĕ. Вĕсем халăхăн социаллă-профессилле ушкăнĕсен шухăш-кăмăлне пахалакан чи кирлĕ формисем шутланаççĕ. Çакă традицилле фольклорăн жанрĕсене уйрăмах пысăк витĕм кӳнĕ, ăна пулах паянхи кунччен упранса юлма май туса панă. Чăвашсен традицилле сăмахлăх тĕсĕсем тĕпрен илсен ял çыннисем хушшинче йĕркеленнĕ. Йăла-йĕрке поэзине çынсен çулне кура ушкăнлამалла. Кунашкал пайлану жанрсен тĕп уйрăмлăхĕсене палăртма пулăшать. Çавăнпа та чăвашсен йăла-йĕрке сăмахлăхне халăхăмă-

рӑн мӗн ӗлӗкрен пыракан тата сӗм авалах ҫирӗпленсе ҫитнӗ уявӗсемсӗр тишкерме май ҫук: вӗсем пӗр-пӗринпе тачӑ ҫыхӑннӑ ҫеҫ мар, пӗр-пӗринсӗр аталанма та пултараймаҫҫӗ. Г.И.Комиссаров кун йышшисене «тӗнлӗ поэзи» ӑнлавпа палӑртнӑ. Вӑл каланӑ тӑрӑх, асӑннӑ произведенисен шӑнӑрӗнче «авалхи чӑвашсем тӗрлӗ йӑласем ирттерсе, сӑмахсем каласа, юрласа-ташласа, ҫут ҫанталӑка тата вилнисене хӑйсен енне ҫавӑрса, вӗсем урлӑ инкек-синкекрен хӑтӑлма, пурнӑҫа хӳтӗлеме тӑрӑшни палӑрать».

Чӑваш фольклорӗнче йӑласемпе ҫыхӑннӑ сӑмахлӑх тӗсӗсем – чи анлисем те пуяннисем. Кун пирки тӗрлӗ халӑхӑн ӑсчахӗсемпе тӗпчевҫисем сахал мар ӗҫ ҫырнӑ, чӑвашсен хӑйне майлӑ йӑли-йӗркиллӗ уявӗсем кӑткӑс системӑра пулнине палӑртса хӑварнӑ.

Паян фольклористсем, этнографсем, религиоведсемпе этнологсем тата ытти ученӑйсем чӑвашсен йӑли-йӗркине пӗр пек ушкӑнласа хак паман-ха. Сӑмахран, Г.И.Комиссаров йӑласене 2 ушкӑна уйӑрнӑ: ҫулталӑк улшӑнӑвӗсенчен килекеннисем тата сарӑмсӑр е ӑнсӑрт япаларан килекеннисем. Пӗрремӗшне фольклорист-краевед халӑхпа тата кил-йышпа тумалли йӑласене кӗртет. Кун пек ушкӑнланин сӑлтавне тӗпчевҫӗ чӑвашсен календарӗнчи чи паллӑ вӑхӑтсемпе ҫыхӑнтарнӑ: хӗвел каялла ҫаврӑнни; ҫуркунне кунпа ҫӗр танлашни; ҫулла хӗвел вӑйӗ тулса ҫитни; ҫуллахи чи вӑрӑм кун тӗлли; тыр-пулӑ пуҫтарса пӗтерни, т. ыт. те.

Ӑсчахсенчен нумайӑшӗ (И.И.Одюков, Н.П.Денисова, В.Г.Родионов) чӑвашсен обществӑлла тата ҫемьери йӑла-йӗркесем аталаннине асӑрхаҫҫӗ. Пӗрремӗш ушкӑнне тепӗр чух календарлӑ йӑла-йӗркесем терминпа та палӑртаҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем пурте халӑхӑн ӗҫӗ-хӗлӗпе ҫыхӑннӑ, чылайӑшӗ ҫӗр ӗҫне халалланӑ уявсем шутланаҫҫӗ. Чи малтанхи тапхӑрта, паллах, вӗсем ӑрупа йӑх интересӗсене хӳтӗленӗ, каярахпа тӗрлӗ общинӑн (социалла ушкӑнсен) кӑсӑкӗсем малти вырӑна тухаҫҫӗ, ыттисене хӗссе кӑлараҫҫӗ те ҫулталӑк тавлӑкӗнчи (тӑршшӗнчи) уявсем пулса тӑраҫҫӗ.

Çӳлерех асăннă тĕпчевçĕсем чăваш халăхĕн йăли-йĕркисене календарлă йăлалăхпа (обрядность) çыхăнтарса хĕллепе çуркуннехи, çуллапа кĕркуннехи уявĕсене уйрăмшарăн тишкерме сĕнеççĕ.

А.К.Салмин чăвашсен йăли-йĕркисен уйрăмлăхĕсене, тĕпрен илсен, вĕсен тĕнлĕ çыхăнăвĕсенче курать, халăхра анлă сарăлнă йăлалăха 3 пысăк комплекса кĕртет: ял-йышпа ирттерекен уявсем; çемьере е кил-йышпа ирттерекеннисем; ятарласа е ятарлă майпа ирттерекен йăласем. Хăйĕн ĕçĕнче автор чăвашсен йăли-йĕркисене унта кам хутшăннине, вĕсен социалла пĕлтерĕшне шута илсе пайламашкăн сĕнет. Çапла тусан çеç, ун шухăшĕпе, мăн асаттесем хăйсен йăли-йĕркисене мĕнле ирттернине тарăннăн та курăмлăн тĕпчеме пулать-мĕн. Асăннă йăласемпе çыхăннă сăмахлăха тĕрлĕ ушкăнсем çине пайласси те наука шайĕнче татса пама май килтерет. Çав паллăсен чи кирли – йăла-йĕркесене кам тытса пыни, кам валли йĕркелени тата хăш ушкăнра ирттерни[26].

Пирĕн шухăшпа, йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăха вĕсене ирттерекенсемпе çыхăнтармалла, ушкăнланă чух чи малтан йăласене хутшăннă çынсен çулне кура (ӳсĕмпе социаллă статус тачă çыхăннă) пайламалла. Çак уйăру этемлĕхĕн ăру-йăх тапхăрĕнчех пулнă, каярахпа календарлă йăла уявĕсем ăнлавпа хутшăнса, пĕтĕçсе кайнă. Асăннă уявсем яланах çулталăкра пĕр вăхăтра килнĕ; авалах асамлă пĕлтерĕшлĕ пулнă, халăх вĕсене çут çанталăк пулăмĕсене хăй майлă çавăрас, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес, çĕр ĕç тухăçлăхне ӳстерес, кулĭенхи пурнăçне çăмăллатас тата ăрăва малалла тăсас тĕллевпе ирттернĕ. Йăла-йĕрке сăмахлăха аталанма нумай пулăшнă.

Йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăха этем ĕмĕрĕн çак пурнăç сыпăкĕсем çине пайласа тишкермелле: ача-пăча поэзийĕ; çамрăксен е яш-кĕрĕмĕн поэзийĕ; аслă ăрăван е ваттисен поэзийĕ. Кĕнекере «поэзи» ăнлавпа çырусăр

---

[26] Салмин А.К. Религиозно-обрядовая система чувашей /Отв. ред. Н.Л.Жуковская; Чуваш. нац. академия. Чебоксары, 1993. С. 4-20.

сăмахлăхри (фольклорти) сăвăлла хайлавсене (вĕсем калуллă тата кĕвĕллĕ пулаççĕ) пĕрлештерсе калатпăр.

*Ача-пăча поэзийĕ* ăнлавпа халăхра е ачасем хушшинче сарăлнă сăмах вĕççĕн çӳрекен хăйне уйрăм хайлавсене, ача-пăчасен йăли-йĕркипе çыхăннă сăмах е вăйă-юрă тĕслĕхĕсене палăртатпăр. Чăваш ача-пăча поэзийĕ виçĕ майпа пуçланса кайнă: «пĕрисене çитĕннисем ача-пăча валли ятарласа хывнă; теприсем, çитĕннисен сăмахлăх йăли-йĕркинчен пăрахăçа тухса, ача-пăча хушшине куçнă; виççĕмĕшсене ачасем хăйсем хывнă»[27].

Çакна палăртар: фольклорăн ытти жанрĕсене пайланă пекех, ача-пăча сăмахлăхне те çулсене шута илсе ушкăнлама май пур, мĕншĕн тесен халăхра кирек-мĕнле пулăма та, ĕçе-хĕле те яланах этем ĕмĕрĕпе çыхăнтарма тăрăшнă. Хăш çулхи ача халăх поэзийĕн хăш тĕслĕхĕсемпе усă курнине шута илсен, ачасен 4 ӳсĕмне (возраст) палăртма май пур:

1. Сăпка çулĕнчисем валли хывнă сăмахлăх тĕсĕсем (çуралсан виç-тăватă çула çитиччен).

2. Кĕçĕн çулхисен сăмахлăхĕ (тăватă-пиллĕкрен пуçласа улттă-çичче çитиччен).

3. Вăтам çулхисен сăмахлăхĕ (çиччĕ-саккăртан пуçласа вуннă-вун иккĕччен).

4. Аслă çулхисен сăмахлăхĕ (вун пĕр-вун иккĕрен пуçласа вун тăватă çулччен).

Кунашкал пайланин тĕп сăлтавĕ – кашни ушкăнри ачасем ытти ушкăнрисенчен урăхла ăнлавпа, тавра курăмпа тата поэзин пултарулăхĕпе уйрăлса тăни. Сăмах май, вĕсенче фольклор тĕсĕсем хăйсен жанрĕсемпе те, содержанийĕпе те, илемлĕхĕпе те, хăçан е мĕнле пулса кайнипе те, пурнăçри вырăнĕпе те пĕр-пĕринчен расна пулни курăнать.

Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕн тĕсĕсем, сĕм авалах йĕркеленнĕскерсем тата паянччен упраннăскерсем, хисенĕпе çав тери йышлă. Ача-пăча поэзине тĕплĕн тиш-

[27] Канюков В.Я. Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1985. 5 с.

кернĕ В.Я.Канюков хăйĕн тĕпчевĕсенче асăннă ушкăнри фольклор тĕсĕсене çула кура çеç мар, вĕсене мĕнле, хăçан усă курни енчен те пăхма сĕнет: «Апла пулсан, – тет вăл, – произведенисем пĕччен, иккĕн-виççĕн е ушкăнпа, килте те урамра, çулла е хĕлле, уявра е куллен; вылямалли хатĕрсемпе е вĕсемсĕр тата тĕрлĕрен урăхла та каламалли ушкăнсем çине пайланма пултараççĕ». Паллă фольклорист, жанрсене тĕпе хурса, чăвашсен ача-пăча сăмахлăхне çаксене кĕртет: сăпка çулĕсенчи поэзи тĕслĕхĕсем – сăпка юррисем, пĕчĕк ачана йăпатмалли-илĕртмелли тĕрлĕрен сăвă-такмак, пўрнесемпе вылямалли ансат юрăсем; кĕçĕн, вăтам çулхисен çулталăкăн уйрăм тапхăрĕсемпе çыхăннă сăвви-юрри – йăла-уяв юррисем, çут çанталăкпа чĕр чунсен сăнарĕсемлĕ чĕнсе-хушса каламалли çуллахи сăвă-йыхрав юррисем; кĕçĕннисемпе вăтам çулхисен кулленхи – вăхăтпа та, вырăнпа та çыхăнман, илемлĕхпе кăткăс тытăмлă сăвă-юрăсем, вăйă юррисем (вĕсем тĕрлĕрен çулхисен тĕрлĕ вăхăтри вăййисемпе çыхăннă, илемĕпе те тĕрлĕрен тытăмлă); йĕкĕлтемелли-тăрăхламалли кулăш такмакĕсемпе шўтсем т. ыт. те.

Асăннă поэзи жанрĕн тĕслĕхĕсемсĕр пуçне, ача-пăча пурнăçĕнче прозăлла хайлавсем пысăк вырăн йышăнаççĕ: юмах-халап, ăса вĕрентекен пĕчĕк калавсемпе юптарусем, хăвăрт каламалли сăмах çаврăнăшĕсемпе вăрттăн чĕлхе тĕслĕхĕсем т. ыт. те.

Пурнăçра, урăхла каласан, ача-пăча йăлисенче пĕр жанр тĕслĕхĕсем тăтăшах теприсемпе пĕрлешсе е хутăшса кайнине, тепĕр чух тĕрлĕ çулхи ачасен репертуарĕн чиккине палăртма йывăрне шута илмелле. Хăш чухне вĕсене тĕрлĕ çулхисем те выляма е юрлама-калама пултараççĕ. Çавăнпа ача-пăча сăмахлăхне илемлĕ сăмах пултарулăхĕн хайлавĕ вырăнне хурса та ушкăнлама пулать. Çакнашкал классификаци – содержанипе форма тата вăл пурнăçпа мĕнле çыхăнура тăнине кăтартакан паллă. Тĕслĕхрен, йăпатмалли юрăсем е шўтсем, сутмалли юмахсем е хăвăрт сăмахсем хăйсем те вăйă форми пулаççĕ; юмахсем те çурри калав, çурри

сăвă-юрă евĕр каланаççĕ, çав вăхăтрах ваййа та тухса каяççĕ.

Ача-пăча поэзийĕн чи малтанхи картлашкинче сăпка çулĕсенчи ачасен сăмахлăхĕ тăрать. Ку ушкăна В.Я.Канюков сăпка юррисене тата йăпатмалли сăвă-такмаксене (йăпатмăшсене) кĕртет. Иккĕмĕш ушкăнĕ хăй те пĕчĕкрех пайсем çине вакланать: ыйхăран вăраннă ачана ачашламаллисем; йĕрекене йăпатмаллисем; çитернĕ чух илĕртмеллисем; утьăкка сиктермеллисем (утьăк-касем); уттармалли такмаксем; кăтăк такмакĕсем; мунча такмакĕсем; пўрне вăййи такмакĕсем; кун ячĕсем çинчен хывнă сăвăсем.

Сăпка юррисене хываканĕсемпе аталантарса пыра-канĕсем – ача амăшĕсемпе ача пăхакан-ўстерекен кар-чăк-кинемейсем. Сăпка юрри тесе пĕчĕк ачасене çывратнă чух (сăпка сиктернĕ чух) йăпатса юрламалли юрăсене каланă. Çитĕнсе пыракан ача-пăча та амăшĕнчен кун йышши юрăсене вĕренме пултарнă. Аппĕ-амăшĕ килте ерçмен чухне, пысăкраххисем пĕчĕк шăллĕсемпе йăмăкĕсене сăпка сиктерсе юрăсем юрланă. Çакă асăннă хайлавсене йăхран-йăха куçма, ĕмĕрсем хушши упрама нумай пулăшнă. Вĕсен тĕп тĕллевĕ – ачана ачашласа лăплантарасси. Çавăнпа юрă сăмахĕсем çепĕç, сăнарĕсем кăмăллă, кĕвви лăпкă, вăрах çемĕллĕ. Пуçланасса та яланах пĕрешкел сăмахсемпе – «Ачине-паппине...», «Ă-ăх, ă-ăх, ачине-паппине...», «Нянине-тунине...» т. ыт. пуçланаççĕ, пĕчĕк ачана (пепкене) сывлăхпа телей, вăрăм кун-çулпа ăраскаллă пурнăç су-наççĕ, канлĕ çывăрма, маттур та çăмăл ача пулма, «йăлт-ялт сикме», тăппи-таппи çўреме, çунатланса «вăш-тăн-вăштăн вĕçтерме» йыхăраççĕ.

Йăпатмăшсем тесе чи пĕчĕккисене йăпатас тĕллевпе юрланă хайлавсене калаççĕ. Ачан çул шучĕпе пăхсан, ку такмаксем «сăпкари пурнăçăн» иккĕмĕш тапхăрне кĕреççĕ. Вĕсен тĕслĕхĕсем: ыйхăран вăраннă ачана ачашламаллисем («Каçа-каçа, каçа-каçа, пысăк пул, мат-тур пул!»; йĕрекене йăпатмаллисем («Ан йĕр, ачам, ан йĕр, Санюк ўкмен, упа ўкнĕ»); çитернĕ чух илĕрт-меллисем («Пирĕн Санькка пысăккă: ыраш çăкăр çинĕ

те. Эсӗ те, пепкем, ҫи-халӗ, унран иртсе кайман-и?»); утьӑкка сиктермеллисем («Утьти, утьти, утьӑкка, пулах, пепкем, пысӑкка!»); уттармалли такмаксем («Ҫынсен ачи – ларанкка, пирӗн ачи – уганкка»); кӑтӑк такмакӗсем («– Кӑткӑ-и эс? – Кӑткӑ. – Кӑтӑклӑ-и эс? – Кӑтӑклӑ. – Кӑтӑку миҫе ҫӗрте? – Виҫӗ ҫӗрте»); мунча такмакӗсем («Ҫат-ҫат-ҫат! Ҫат-ҫат-ҫат! Хитри-ҫутти сан ҫинче. Чирӗ-чӗрӗ лапка айне. Милки тӑрри, чир тасат. Таса шывӗ, ӳт тасат»); пӳрне ваййи такмакӗсем («Пӗрентей – пӗрре. Икентей – иккӗ. Виҫентей – виҫҫӗ. Тӑвантай – тӑваттӑ. Пилентей – пиллӗк»); эрне хушшинчи кун ячӗсемпе ҫыхӑннисем:

«– Микуль епле пурӑнать?
– Микуль ҫапла пурӑнать:
Тунти кун тунсӑхлать,
Ытлари кун ыйхӑлать,
Юн кун юнӑхлать,
Кӗҫнерни кун кӗвӗҫет,
Эрне кун эрленет,
Шӑмат кун шӑмарать,
Вырсарни кун выртать»[28].

Сӑпка ҫулӗсенчен тухнӑ ача-пӑча поэзине пӗрле тишкерни вырӑнлӑ пулӗ, мӗншӗн тесен ку ушкӑнри тӗрлӗ хайлавсене кирек-мӗнле ҫулхисем те вӑйӑ-кулӑра усӑ курнӑ. Вӗсене эпир календарлӑ йӑла-йӗркепе ҫыхӑннӑ ача-пӑча вӑййисем тейӗпӗр.

Ача-пӑча вӑййисене, Г.И.Воронцов тӗпчевҫӗ шухӑшӗпе, «тӗрлӗ принципсене тӗпе хурса ушкӑнлама пулать. Хӑш ӳсӗмрисем вылянине кура чи пӗчӗккисен, вӑтаммисен, аслӑраххисен, ҫамрӑксен вӑййисене палӑртмалла, арҫын ачасемпе хӗрачасен вӑййисене те ҫӑмӑллӑнах уйӑратпӑр. Хӑҫан вылянине кура ҫурхи, ҫуллахи, кӗрхи, хӗллехи вӑйӑсене палӑртатпӑр. Вӑйӑсенче пӗр-пӗр япалапа усӑ курнӑ пулсан, вӗсене пӗр ушкӑна, япаласӑр вылямаллисене тепӗр ушкӑна кӗртме

[28] Тӗслӗхсене ҫак кӗнекерен илнӗ: Канюков В.Я. Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ. Сӑвӑ-юрӑ. Юмах-халап. Шупашкар, 1964.

май пур. Тĕпчевçĕсем хускануллă тата пĕр вырăнта вылямалли хусканусăр вăййăсене те палăртаççĕ»[29].

Кĕнекере ачасен вăййисене шухăш-тытăмне кура пайланине тĕпе хунă: хускануллă тата сăмахлă вăййăсем. Пĕрремĕш ушкăнрисенче сăмахсемпе пĕрле тата тĕрлĕ хусканусемпе кĕвĕ çеммисем те пулма пултараççĕ пулсан, иккĕмĕш ушкăнра вара тĕп вырăнта – тĕрлĕрен сăмахсем е сăмах çаврăнăшĕсем.

Ача-пăча вăййи – чăн-чăн илемлĕ хайлав. Илемлĕ произведенири пекех унăн хăйне уйрăм композицийĕ, сюжечĕ, сăнарĕсем пур. Композици тĕлĕшĕнчен пăхсан, хускануллă вăййăсем виçĕ сыпăкран тăраççĕ: вăййă умĕпе пуçламăшĕ, тĕп вăййă сюжечĕ тата вăййă вĕçленĕвĕ (вĕçĕ). Пĕрремĕш пайĕнче ачасем вăййа мĕнле йĕркепе иртересси пирки калаçса татăлаççĕ, шăпасем яраççĕ, рольсене валеçсе тухаççĕ, унсăр пуçне кам хыççăн кам вылямаллине черетлеççĕ. Кун пек чухне ачасем шăпа ямалли сăвă-такмак е сутмалли такмаксем калаççĕ. Текстсем яланах речитативлă. Тĕслĕх: «Иккĕ, тăваттă, улттă, саккăр ... çирĕм – сик тух!» т. ыт. те.

Хускануллă вăййăсенче ачасем тĕрлĕрен юрăсем юрланă. Урăхла вĕсене тĕп вăййă юррисем тенĕ. Форми енчен пăхсан, çакнашкаллисене уйăрма пулать: тĕрлĕ ушкăнсемпе тăрса юрламаллисем (е юрă-диалогсем, ытларах икĕ ушкăнĕ пĕрин хыççăн тепри юрланă); пĕр енĕ (е ушкăнĕ) юрлакан юрăсем; икĕ енĕ (е ушкăнĕ) пĕр харăсах юрлакан юрăсем. Ку форма яш-кĕрĕм уявĕсенче анлă сарăлнă, тен, вĕсенчен ача-пăчана куçма та пултарнă.

Сăмахлă вăййăсен репертуарĕ те жанр енчен пуян. Кунта çаксене палăртатпăр:

1) чĕну-йыхравсем;
2) хăвăрт сăмахсем;
3) сасă вылявлĕ сăмахсем;
4) вăрттăн чĕлхесем;
5) витлешӳсемпе шӳтсем;
6) кулленхи сăвă-юрă.

---

[29] Воронцов Г.И. Ача-пăча вăййисем: Вăййăсем. Шăпа сăввисем. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар, 1992. 5 с.

Юлашки ушкăнне ача-пăчан кулленхи пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнакан илемлĕ хайлавсем кĕреççĕ, вĕсем прозăлла тата сăвăлла формăпа анлă сарăлнă. Сăмахран, проза шутне пулмасла юмах-халап, ĕç-пулăмсене кутăнла туса кăтартакан текстсем кĕреççĕ. Унти сăнарсене юриех çапла хывнине ача-пăча аван чухлать, хăй те çавнашкал сăнарсем хывма пикенет (тĕслĕх: «Чăх сăваççĕ, тет» юмах). Сăвăласа хайланă текстсен шутĕнче çаксем пур: вĕççĕр такмаксем – пĕр пĕчĕк сăнартан пуçланать те ун çумне çыхăнуллă çĕнĕ сăнарсем вĕççĕр хушăнса пынипе аталанать, вăл кĕске ыйтусемпе хуравсенчен тăрать:

«– Шăши ăçта?
– Шăтăкра.
– Шăтăк ăçта?
– Шывра.
– Шыв ăçта?
– Хĕрлĕ вăкăрта». (Малалла та çавах);

пулмасла сăвă-такмак – пулмас сăнарсемлĕ сăвăсен ушкăнĕ, такмакла пуплешӳре юриех пулмасла шутласа кăларнă пĕр сăнар çумне тепри, унтан тата тепри сыпăна-сыпăна пырать:

«Шатра шапа купăс калать,
Шăши салтака каять.
Йĕкехӳри йăкăртатса
Хăнисене хăналать».

Пуплешӳллĕ сăвă-юрă – сыпăнуллă юрă мелĕпе хывнă диалогсемлĕ хайлавсем; унта ачасем хăйсен тусĕсемпе (тантăшĕсемпе, чĕр чунсемпе, вĕçен кайăксемпе, япаласемпе т. ыт. те) пуплешеççĕ:

«– Арăмсем ăçта?
– Вăрманта.
– Мĕн тăваççĕ?
– Хурăн хулли хуçаççĕ.
– Ăна ăçта тăратаççĕ?
– Шур пӳрт умне тăратаççĕ.
– Ăна ăçта яраççĕ?
– Хусан шывне яраççĕ»[30].

---

[30] Çак кĕнекрен илнĕ: Метин П.Н., Мефодьев А.И. Литературăпа халăх сăмахлăхĕн ăнлавĕсем: Шкул словарĕ /ЧР вĕрентӳ институчĕ. Шупашкар, 1997. 80 с.

Асăннă произведенисем кашни хăйне май илемлĕ, капăр сăнарлă, вĕсене пурне те пысăк пĕлтерĕшлĕ уйрăм жанр тесе хаклама пулать. Аслисен шухăшĕпе, ача-пăчана пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн пысăккисен пурнăçне хăнăхтарса пымалла пулнă. Ку ĕçре, паллах, сăмахлăхăн тӳпи пысăк пулнине вĕсем ăнланнă, унпа пĕлсе усă курнă.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăха ушкăнлас ыйтусем.
2. Ача-пăча поэзийĕ, унăн ушкăнĕсем.
3. Сăпка çулĕсенчи сăмахлăх.
4. Ача-пăча вăййисемпе çыхăннă сăмахлăх. Хускануллă вăйăсем.
5. Сăмахлă вăйăсем.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


1.*Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем: Вăйăсем. Шăпа сăввисем. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар, 1992. 128 с.

2.*Денисова Н.П.* Зимние и весенние календарные праздники чувашских крестьян (XIX – нач. XX в.) //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 142-166.

3.*Денисова Н.П.* Летне-осенние календарные праздники и обряды чувашей (XIX – нач. XX в.) //Чувашское народное творчество: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 67-86.

4.*Егоров Н.И.* Праздники и календарные обряды //Культура чувашского края. Ч. 1: Учеб. пособие /В.П.Иванов, Г.Б.Матвеев, Н.И.Егоров и др. /Сост. М.И.Скворцов. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1994. С. 175-225.

5.*Чувашские* праздники и обряды: Программа спецкурса /Сост. Б.Л.Алексеев, Н.И.Егоров. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1993. 12 с.

6.*Канюков В.Я.* Ача-пăча сăмахлăхĕ. Сăвă-юрă. Юмах-халап. Шупашкар, 1964. 234 с.

7.*Канюков В.Я.* Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1985. 5-66 с.

8.*Метин П.Н.* Комическое в чувашской народной поэзии //Традиции и новаторство в чувашской литературе: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 67-95.

9.*Родионов В. Г.* Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 81-83.

10.*Родионов В. Г.* О системе чувашских языческих обрядов //Чувашская народная поэзия: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 3-64.

11.*Салмин А.К.* Архаические основы мезобрядности чувашей //Вопросы традиционной духовной культуры чувашей: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1989. С. 11-41.

12.*Салмин А.К.* Духи требуют жертв: Система традиционных обрядов чувашей. Чебоксары, 1990. 167 с.

13.*Салмин А.К.* Религиозно-обрядовая система чувашей /Отв. ред. Н.Л.Жуковская; Чув. нац. академия. Чебоксары, 1993. 211 с.

14.*Салмин А.К.* Система верований чувашей /Науч. ред. С.А.Арутюнов; ЧГИГН. Чебоксары, 2004. 208 с.

*Çамрăксен е яш-кĕрĕм йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăх.* Çамрăксен е яш-кĕрĕм йăлипе çыхăннă сăмахлăх, ача-пăча поэзийĕпе танлаштарсан, нумай енчен уйрăлса тăнине асăрхама пулать. Ача-пăча фольклорĕн хăш-пĕр жанр тытăмлăхĕ çитĕннисенчен куçса аталаннă тетпĕр пулсан (кунта чылай сăвă-юрă сăмахĕсем улшăнса урăхланнине палăртатпăр), яш-кĕрĕмĕн еткер тĕсĕсем пĕр системăра е улшăнмасăр йĕркеленнĕ, е вуçех те сахал улшăннă. Çакă, паллах, çамрăксем хăйсен социаллă пĕлтерĕшĕпе ача-пăчаран нумай çӳлерех тăнине, вĕсен пурнăçри функцийĕсем урăхларах пулнине кăтартса парасçĕ. Яш-кĕрĕмĕн хăйсене валли çеç хайланă е иртгернĕ йăла уявĕсем ăру-йăх тапхăрĕнчех пулнă. Нумайăшĕ инициаци йĕркипе çыхăннă, çапла вара çамрăксен йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăх та вĕсене

çемье йĕркелесе ăрăва малалла тăстарас тĕллевпе ирттерни куç кĕретех. Çамрăксен хушшинче çеç аталанса пынипе жанрсен тытăмĕ нумай ĕмĕрсем хушшинче ытлашши улшăнман.

Çак сăлтавсене шута илсе, çамрăксен сăмахлăх тĕсĕсене йăласемпе уявсенчен уйăрмасăр, пĕр тĕвĕре е пĕрлĕхре тишкермелле. Çапла майпа яш-кĕрĕм поэзине 2 комплекса – çамрăксен вăййисене тата çамрăксен йăла-йĕркепе çыхăннă уявĕсене – пайлатпăр.

Çамрăксен вăййисене XIX ĕм. çырса илкеленĕ. Таптаса вăйăсене илес пулсан, вĕсенче çамрăклăхăн йăлапа çыхăннă асамлăхĕ те, пĕлтерĕшĕ те, функцийĕсем те урăхларах. Йăлаллă вăйăсенче чăвашсен мифла ĕненĕвĕпе авалхи тĕнĕ малти вырăнта тăнă пулсан, кун йышшисенче кивĕ ĕненӳ пĕтсе пынă е тĕппипех çухалнă, çавăнпа пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн уйрăлса ахаль вăйă тата йăпанчăк çеç пулса тăнă.

Акă, мĕн çырнă чăваш вăййисем çинчен Г.Комиссаров фольклорист: «Вăйă, – тет вăл, – пур чĕрĕ чунăн та пур; вăйă вăл этеме, выльăха, кайăка аталанма кирлĕ, тата вăл ăшри юнпа урăх шывсенче гăракан сĕткенсем чупнипе, вĕсенче ӳт-пĕве вылятакан вăй-хăватсем пухăннинчен тухать. Ача-пăчашăн вăйă ĕçпе пĕрех. Кайăкла халăхсемшĕн те вăйă ĕçпе пĕрех. Вĕсен вăййисем хăйсем тĕллĕн пулнă ӳт-пӳ вылявĕсене, хăйсен пысăк шухăшĕсене, сисĕмĕсене кăтартмалла тунă: выляса вĕсем мĕнле кайăк тытассине, вăрçса çĕнтерессине, пĕр сăмахпа каласан, ĕмĕтленнĕ ĕмĕт вырăна çитессине кăтартнă».

Апла пулсан, кунта сăмах вăйăсенчен хăшне-пĕрне йăла уявĕсенче выляни, теприсене куллен выляни çинчен пырать. Çак ушкăнра, ача-пăчасен пек, пĕччен вылякан вăйă тавраш пулман.

Кун йышши вăйăсен шутне хресчен ĕçĕ-хĕлĕпе килти пурнăç çинчен тĕрлĕ хусканусем туса юрламалли вăйăсене кĕртмелле. Вĕсене çитĕннĕ çамрăксем ĕлĕкавалах вылянă. Юрă сăввипе интимлă лирика туйăмĕсене çыхăнтарса, ытарлăн ăнланнă, хусканусене те хăйсене кирлĕ пек туса ирттернĕ. Каярах

çакнашкаллисем ачасемшĕн çеç тăрса юлнă, юрăпа хускану пĕрлĕхĕ унта тӳреммĕн, илемшĕн çыхăнса тăма тытăннă. Вăйă çапларах иртнĕ: темиçе ушкăн йĕркеленнĕ; кашниех черетпе юрăсем юрласа ĕç хусканăвĕсене калăплана; юрă пĕр ушкăн хыççăн теприне урăхла «ĕç» тума хушса пырать; сăвви малтан мала аталанса пырать; хусканусем те унпа тачă çыхăнса пыраççĕ; вĕсем, хресчен ĕçĕнче чăнах пулса иртекенскерсем, кунта юрăпа пĕтĕçсе, пĕрлĕхлĕ илем кӳреççĕ. Çав илеме вăййа хутшăнакансем хăлхапа та илтеççĕ, хусканусемпе те туяççĕ.

Пĕтĕмлетĕпĕр: çамрăксен вăййисем вăйă картинчен тухса урăх сĕм йышăнма пултараççĕ, унта хутшăнакансем хăйсен лирикăлла е обществăлла анлă шухăшĕ палăрнипе уйрăлса тăраççĕ, унсăр пуçне вăйă юррисем сăнлăх параллельлĕхĕсемпе, анлă танлаштарусемпе, хушса юрламаллисемпе тата ытти илемлĕх мелĕсемпе пуян.

Çамрăксем хушшинче сарăлнă вăйăсен тепĕр ушкăнĕ вăл – яш-кĕрĕмĕн йăла уявĕсенче иртгернĕ кăткăс та сюжетлă вăйăсем. Вĕсем тӳрремĕнех ӳссе çитĕннĕ хĕр-упраçпа яш-каччăн календарлă йăли-йĕркипе çыхăннă. Хĕллепе çуркунне пĕр вăйăсем, çуллапа кĕркунне тепĕр вăйăсем вылянă. Кашнин пĕлтерĕшĕ те урăх пулнă: «тупмалла» вăйă, сăмахран, ăс-тăна тĕрĕслеме, «çĕрĕлле» – асăрханулăха ӳстерме, «пиçиххилле» – тӳрĕлĕхе тĕрĕслеме т. ыт. те. Вăхăтне кура, хăшĕсене пӳрт-çуртра (хĕлле), теприсене урамра (çуллахи вăхăтсенче) иртгернĕ.

Кун пек вăйăсем вылянă чухне юрăсем юрланă, сăвăсем каланă, шӳтленĕ, сутмалли юмахсем юптарнă, пĕр-пĕрне мăшкăлласа мар, юлташла тăрăхласа кулнă. Хĕллехи вăйăсенче, тĕслĕхрен, юмăç янисем, вăй виçнисем, гăвайккинчен ярăннă чух тупăшнисем, чуччусемпе ярăннисем т. ыт. те тĕл пулаççĕ.

Çамрăксен вăййи, çапла майпа, яш-кĕрĕме социализацилемелли мелсенчен пĕри шутланать, халăх этикин пĕр пайĕ пулса тăрать.

Яш-кĕрĕмĕн çырусăр сăмахлăхĕн тĕсĕсем, паллах, вĕсем çулсерен иртгернĕ йăла-йĕрке репертуарĕнче чы-

лай сыхланса юлнă. Унта ватти те, яшши те, вĕтти те хутшăннă, вĕсенче кашни ўсĕмĕн, кашни çыннăн хăйĕн ятарлă вырăнĕ пулнă. Çак йĕрке ĕмĕрсерен сыхланса упраннă, ятарлă «пурнăç шкулĕ» пулса тăнă.

Çакна та палăртса хăварар: çамрăксен йăла уявĕсем тата вĕсемпе çыхăннă сăмахлăх тĕсĕсем – чи авалхисем; йĕркеленессе те вĕсем ăру-йăх тапхăрĕнчех, яш-кĕрĕмĕн пурнăçри социаллă вырăнне кура хайланнă. Асăннă ĕмĕрсенче, ăру-йăх саккунĕсем ытти тапхăрăн пулăмĕсемпе е хушăвĕсемпе хĕсĕнсе тухиччен, çав йăла-йĕрке пурте тенĕ пекех çамрăксен инициацийĕпе (тĕрĕслевĕпе) çыхăннă. Малтанласа яшсемпе хĕр-упраç хăйсен йăла уявĕсене ăрăмпа çыхăнтарса тата йĕркелесе тытса пынă пулсан, каярахпа вĕсем çав йăласене выляс е йăпанас тĕллевпе кăна йĕркеленĕ – магилĕх вăйă-кулăпа ылмашăннă.

*Хĕр аки.* Çак йăлапа çыхăннă сăмахлăх тексчĕсем туллин упранса юлман. Кунта çамрăк хĕр арăмсемпе хĕрсем хутшăннă. Сĕм авалхи хĕр акин тупсăмĕ – ар-лă-арăмлă пурнăçа вăхăтпа йĕркелеме тăрăшнинче. Тĕпчевçĕсем ăнлантарнă тăрăх, ăру-йăх тапхăрĕнче пурнăçри нумай япалана табуланă (чарнă) пулнă, вăл шутра каччăпа хĕре ваттисем палăртнă çула çитмесĕр çывăхланма та. Çитĕннисен те савăшу вăхăчĕ хăйсен пулнă, ытти вăхăтра вĕсене ирĕкленме юраман. Табу вăхăчĕ иртсе кайсан (вăл çуркунне çитнĕ), арлăх хутшăнăвĕ те ирĕкленнĕ. Çапла майпа хĕр акинче çўлерех асăннă самантсем ўкерĕнме пултарнă. Çак йăла чăвашсен çеç мар, пур халăхăн та упранса юлнă. Каярахпа хĕр акине урăхла пĕлтерĕшпе – çĕр тухăçлăхне ўстерес тĕллевпе ирттернĕ, юлашкинчен ял-йышпа тĕрлĕ эпидемисенчен хăтăлас, хăрушă чир-чĕртен сыхланас тĕллевпе – йĕркелеме пуçланă.

Хĕр акине ар çынсем е каччăсем хутшăнман, вĕсене тĕл пулсан, ушкăнĕпех нухайккасемпе питĕ хытă хĕнесе пĕтернĕ, çавăнпа арсем ку йăлана ирттернĕ чухне хĕрсен куçĕ умне курăнма тăрăшман.

*Улах.* Улаха хĕлле, кĕрхи ĕçсенчен пушансан, ирттернĕ. Вăхăчĕ – каçран пуçласа ирччен. Улаха

йёркелекенсем хёрсем пулнă, ытларах пёччен пурăнакан ватă карчăк килёнче е пушă тăракан пÿртре пухăннă. Улахра хёрсем тёрлёрен ёç тунă, юрă-такмак юрланă, сутмалли юмахсем юптарнă. Тёпчевçёсем асăннă йăлана çамрăксем хушшинче çÿренё ăрулăх чарăвёсемпе çыхăнтараççё. Чăнах та, улах хăй вăхăтёнче яшсемпе хёр-упраçа савăшмалли (ваттисем ирёк панипе) вырăн е вăхăт пулнă-тăр: ахальтен мар кунта тёрлёрен юрату-савăшуллă вăййăсем вылянă, пёр-пёрне килёштерекенсем çак килтех выртса-çывăрма та пултарнă, улахра пулас мăшăрсем шыранă т. ыт. те. Кунта çамрăксем пёр-пёринпе паллашса сăмах татнисёр пуçне, хёрсем туя хатёрленнё – тёрёсем тёрлесе пулас парнесем хатёрленё, хёр йёррисене вёреннё. Çавăн пекех каçсерен улахра тёрлё юрăсемпе пёрле такмаксем те каланă, тапăсем ташланă, вăййăсем ирттернё, каччисем те ал ёçёсемпе аппаланнă. Каярахри тапхăрсенче улахсене рекрутсем (салтак ачисем) хёрсемпе сыв пуллашма кёнине палăр-тмалла; çавна май улах юррисемпе пёрле рекрут ачи-сен юрри-сăввисем те анлă сарăлаççё; улахăн пёлтерёшё тата анлăланать.

*Хёр сăри* улахсемпе пёрлех пуçланнă теме пулать; урăхла ăна «хёрсем ларма çÿрени» ăнлавпа та палăрт-нă. Пёрпеклёхсем çаксем: иккёшне те хёрсем йёркелеççё; ятарласа суйланă кил-çуртра пулса иртет; тёрлё ушкăн-сем пёр-пёрин патне çÿреççё т. ыт. те. Уйрăмлăхёсем те пур: вёсене каçхи вăхăтра çеç мар, кăнтăр çутипе те ирттернё; хёр сăрин тёллевё урăхларах – кил хуçи хёр-упраçа лармана ятарласа ывăлё валли пулас арăм суйлас тёллевпе пуçтарать, ларма вăхăчё пёр куна çеç мар, тепёр чухне эрнене е уйăха та тăсăлма пултарнă, улахăн – шутлă вăхăтсем пулнă т. ыт. те.

Хёр сăринче çамрăксем ăна халалланă юрă-сăвă юрланă. Вёсене икё ушкăна уйăрма пулать – хёр сăри юррисем тата хёр сăри такмакёсем. Юлашкисене хёр упраç ташăсем ташланă чух е хăналаннă вăхăтра кала-нă, юррисене хёр сăри çуртне кёнё чух тата унтан тухсан юрланă. Тематикине илсен, асăннă юрăсенче ыт-ларах яшсемпе хёрсен юратуллă туйăмё, кăмăл-сипечё,

тунсăх-ыратăвĕ, пуласлăха шанни, телейлĕ пурнăç кĕввисем сăнарланнă.

*Уяв* – яш-кĕрĕмпе хĕр упраç ятарласа ирттернĕ çурхи йăла. Урăхла ăна çамрăксем вăйă-кулă выляма пухăнни теме те пулать, мĕншĕн тесен уява пĕр е темиçе урам (каярахпа ял) хĕрĕсемпе каччисем ятарласа юрă-сăвă юрлама, ташлама-савăнма, хавасланса калаçмашкăн пĕр вырăна (çĕре) пуçтараннă. Яланах пĕр вăхăтра пулса иртнĕ: çимĕкрен пуçласа питравччен; унăн ĕлĕкхи тĕп вырăнĕ – кивĕ масар çумĕнчи лапам е çаран. Çамрăксем савăнса юрланă-ташланă вăхăтра аслисем масар çинче ваттисене (вилнисене) асăннă, тĕрлĕ йăла туса ирттернĕ.

Чăвашсен çак йăли пур çĕрте те анлă сарăлнă, анчах та вăл тĕрлĕ ятсемпе çӳренĕ: анатри чăвашсем ăна *уяв*, турисем – *похă*, анат енчисем – *тапă* е *вăйă* тесе каланă.

Пĕр-пĕринчен хăш-пĕр детальсемпе уйрăлсан та (вăййа ирттернĕ вăхăт, хутшăнаканĕсем, йĕркийĕ, функцийĕсем т. ыт. те), пĕтĕмĕшле асăннă çамрăксен пухăвĕсен тĕллевĕ вăл – уявра е вăйăра хăйне валли мăшăрлăх каччă е хĕр шыраса тупасси, çамрăклăх вăхăчĕпе савăнасси, тус-юлташĕсемпе курса калаçасси.

Вăйăсен асамлăхĕпе ял халăхĕ çут çанталăка мĕнле те пулин пăхăнтарас е итлеттерес тесе тăрăшни курăнать: вăйă картисем, хĕвеле май карталанса тăрса çаврăнни, тĕрлĕ вăййи-ташши, юрри-сăвви; илемлĕ юрă тексчĕсенче яш-кĕрĕм Ама йывăçĕн сăнарлăхĕпе, çĕр çинчи пурнăç епле пуçланнине ӳкерсе кăтартаççĕ, тĕнчене Аçапа (текстра кайăкпа юпа) Ама (çĕр) пултарнине çулталăкăн ăрăмлă вăхăчĕпе – çулла хĕвел вăйĕ тулса çитнипе çыхăнтараççĕ. Ку хăйне май магилле йăла-йĕрке шутланнă.

Уяв-вăйă юррисем тĕрлĕрен пулаççĕ: юрăллисем, сăвăсăр тата халапсăр кĕвĕллисем. Вăйăсене пĕр юрăпа пуçланă, урăххисемпе вĕçленĕ: уявăн кашни тапхăрне валли хăйне майлă юрă-кĕвĕ пулнă. Г.Т.Тимофеев, сăмахран, Тутарстанăн Элшел тăрăхĕнче пулса иртекен уява çырса кăтартнă май, чăваш çамрăкĕсем 3 тĕрлĕ

юрă юрланине палăртатъ: авалхи вăйă юррисем, ытти ялсенче е вырăнсенче илтнĕ юрăсем тата тăрăхлавлă-шўтлĕ юрăсем.

Халиччен пăхса тухнă çамрăксен йăлисем – тап-таса яш-кĕрĕм уявĕсемпе йăли-йĕрки. Унсăр пуçне çамрăксем ялти ватăсемпе те, ачасемпе те, ял-йышпа тата кил-йышпа ирттерекен йăла-йĕркесене те хутшăннă, вĕсенчен нумайăшĕнче хăйсен ятарлă функцийĕсене çирĕп пăхăнса тытса пынă. Кун йышшисен шутне ха-лăхра ирттернĕ сурхури (нартукан, хĕр сăри), кăшарни, çăварни, сĕрен (вирĕм) т. ыт. те кĕреççĕ. Асăннă праçниксенче ял çамрăкĕ сурхури, нартукан, хĕр сăри, кăшарни, çăварни, сĕрен е вирĕм юррисене шăрантарнă, тĕрлĕрен вăйăсем вылянă, юмăç пăхнă, килĕрен-киле çўресе савăннă, пурнăçпа киленнĕ. Хĕлпе çурхи, çулпа кĕрхи уявсемпе çемьери йăла-йĕркесене (туй, рекрут ăсатни) хастар хутшăнса çамрăксем юрланă сăмахлăх тĕсĕсем паянхи кунччене нумай упранса юлнă. Тема-тики питĕ пуян. Вĕсенче хĕр упраçпа яш-кĕрĕм пур-нăçри пулăмсене, хăйсен тавра пулса иртекен ĕç-хĕле шалти кăмăл-туйăмĕпе, ăс-хакăлĕпе çыхăнтараççĕ.

Çамрăксен пĕр вăхăтра килекен уявпа е йăли-йĕркипе тата кулленхи йăлапа çыхăннă юррисене 2 ушкăна уйăрма пулать:

1. Ушкăнпа юрламаллисем. Кунта çўлерех асăннă уяв-вăйă юррисем, хĕр сăри юррисемпе такмакĕсем, сурхури юррисем, кĕшерни юррисем, çăварни юррисем, сĕрен юррисем, туй юррисем (хĕрсемпе каччăсем уй-рăммăн е хутшăнса юрланисем) кĕреççĕ.

2. Пĕччен юрламаллисем. Ку ушкăна кĕрекен йăла-йĕрке юррисем сахал. Тĕслĕхрен хĕр йĕррине асăнма пулать.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Çамрăксен йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăхăн палли-сем.
2. Çамрăксен вăййисем.
3. Çамрăксен уявĕсем, вĕсемпе çыхăннă сăмахлăх.

# УСӐ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Воронцов Г.И.* Ача-пӑча вӑййисем: Вӑйӑсем. Шӑпа сӑввисем. 1-мӗш пайӗ. Шупашкар, 1992. 128 с.

2.*Денисова Н.П.* Зимние и весенние календарные праздники чувашских крестьян (XIX – нач. XX в.) //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 142-166.

3.*Денисова Н.П.* Летне-осенние календарные праздники и обряды чувашей (XIX – нач. XX в.) //Чувашское народное творчество: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 67-86.

4.*Егоров Н.И.* Праздники и календарные обряды //Культура чувашского края. Ч. 1: Учеб. пособие /В.П.Иванов, Г.Б.Матвеев, Н.И.Егоров и др. /Сост. М.И.Скворцов. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1994. С. 175-225.

5.*Чувашские* праздники и обряды: Программа спецкурса /Сост. Б.Л.Алексеев, Н.И.Егоров. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1993. 12 с.

6.*Канюков В.Я.* Ача-пӑча сӑмахлӑхӗ. Сӑвӑ-юрӑ. Юмах-халап. Шупашкар, 1964. 234 с.

7.*Канюков В.Я.* Чӑваш ача-пӑча сӑмахлӑхӗ //Чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗ. VI т. 1-мӗш пайӗ. Шупашкар: Чӑваш кӗн. изд-ви, 1985. 5-66 с.

8.*Метин П.Н.* Комическое в чувашской народной поэзии //Традиции и новаторство в чувашской литературе: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 67-95.

9.*Родионов В. Г.* Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 81-83.

10.*Родионов В. Г.* О системе чувашских языческих обрядов //Чувашская народная поэзия: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 3-64.

11.*Салмин А.К.* Архаические основы мезобрядности чувашей //Вопросы традиционной духовной культуры чувашей: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1989. С. 11-41.

12.*Салмин А.К.* Духи требуют жертв: Система традиционных обрядов чувашей. Чебоксары, 1990. 167 с.

13.*Салмин А.К.* Религиозно-обрядовая система чувашей /Отв. ред. Н.Л.Жуковская; Чув. нац. академия. Чебоксары, 1993. 211 с.

14.*Салмин А.К.* Система верований чувашей /Науч. ред. С.А.Арутюнов; ЧГИГН. Чебоксары, 2004. 208 с.

*Аслă ăрăвăн е ваттисен йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăх.*

Чăваш йăла уявĕсен хушшинче ваттисен йăли-йĕркипе сăмахлăх жанрĕсем пĕлтерĕшĕпе те, калăпăшĕне те питĕ пысăк вырăн йышăнаççĕ. Календарлă тата кулленхи йăласем хăйсем халăхра ятарлă система евĕр аталаннă; вĕсемпе пĕрле йăла-уяв сăмахлăхĕ те йĕркеленет, вăй илсе çирĕпленет.

Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, халăхăн йăла поэзийĕ пирĕн тăхăмсем çут çанталăк вăйĕсене сăмахпа хăйсен енне çавăрма тата хăйсем ĕмĕтленнĕ ĕмĕт майлă тутарма тăрăшнипе, çавна пула сăмах хăватне, тĕрлĕ ӳтпӳ вылявĕн, ĕçĕн хăватне ĕнене пуçланипе йĕркеленнĕ. Майĕпен-майĕпен асăннă ĕненӳсем тĕрлĕ сăмахлăх тĕсĕсемпе йăласем пулса каяççĕ.

Авалхи этем шухăшĕпе, хăйсем шухăшласа кăларнă йăла-йĕрке ăрури çыннăн шăпине, ăраскалне кăтартать. Çак шухăшлав мифла ĕненӳсемлĕ йăласене, уявсене ĕмĕрсем хушши сыхласа упранă, паян вĕсем халăх унерĕн тĕсĕ пек çеç юлнă. Асăннă шухăша çирĕплетме А.К.Салмин чăвашсен тĕнлĕ йăлисене тишкернĕ май каланă сăмахсене илсе кăтартас килет: «Чăнах та, – тет вăл, – йăла, нумай ĕмĕрсем хушши халăхăн пĕтĕмĕшле пурнăçне сăнлакансker, чăннипех ăс-хакăлăн тĕкĕрĕ шутланать. Йăлапа çыхăннă пулăмсемпе кĕлĕсем этнос пĕрлĕхĕн, ăрупа йăх тата çемье ушкăнĕсемпе индивидсен историйĕнче социаллă пурнăçа йĕркелесе тăракан регулятор пулнă, пулаççĕ те. Йăла-йĕркерен асăннă комплексăн пĕр пайĕ тухса ӳкни этносăн пĕрлĕхне пĕтерсе лартма пултарать».

Хальхи чăвашсен мăн аслашшěсем – пăлхар-чăвашсем – ытларах çěр ěçěпе тата выльăх-чěрлěх ÿстерсе пурăннă. Çак уйрăмлăх чăвашсен календарьпе çыхăннă йăли-йěркине аталантарма хистенě. Ăру-йăх тапхăрěнче вăйлă аталаннă мифла шухăшлавпа ăнлану, ěненÿсемпе сăмахлăх тěслěхěсем кивě йăласемпе уявсене çěнěлле вăй-сěм параççě. Çапла майпа чăвашсен авалхи культ тата тěрлě мифсен йăлисене çут çанталăк çаврăнăшěпе çыхăннă календарлă йăлисем улăштараççě, кайран пěтěмпех хěссе кăлараççě. Сăлтавě кунта çěр ěçченěсем хăйсен пурнăçě, шăпипе пуласлăхě çут çанталăк вăйěсенчен е пулăмěсенчен килет, тесе шанни, ěненни.

Ваттисен йăли-йěркисем ытларах çěр ěçěпе çыхăннине палăртса хăварăпăр: вěсенче этем тырă-пулă тухăçлă ÿстěрччě, выльăх-чěрлěх ăнăçлă ěрчетěрччě, пурнăç сыпăнса пытăрччě, тесе шухăшлани палăрать.

Кашни ăрăмлă йěркен хăйне уйрăм юрă-сăвă, вăйă-ташă пулнă, хăшě-пěри вара урăх ÿсěм репертуарне куçнă. Сăмахран, хăш-пěр авалхи уявпа йăлана ваттисем е яш-кěрěм, хăйсем ěненме пăрахсан та, çапах ыттисемшěн йěркелесе, ятне туса пынă. Ун йышшисен шутне сурхури, çăварни, сěрен тата ытти йăласемпе çыхăннă сăмахлăх кěрет. Хăй вăхăтěнче, паллах, вěсем пурте çěр ěçлекенěн (аслисен) йăлисем пулнă. Апла пулин те, паян шур сухаллă мучисемпе кинемейсем, вăй питти ар çынсемпе хěр арăмсем çÿлерех асăннă вăйă-уявсене хаваслансах хутшăнаççě, йăла-йěрке илемлěхне тытса пыраççě.

Тěпчевçěсем ваттисен йăли-йěркисене 3 пысăк ушкăна уйăрса пайлаççě. Сăмахлăх тěсěсене çав пайсенче тишкерсе тухăпăр. Вěсем çаксем:

А. Ял-йышпа (халăхпа) ирттерекен йăласем.

Ă. Кил-йышпа ăру йăли-йěрки.

Б. Сăлтавлă йăласем.

Кашни ушкăн хăй те пайланать. Вěсене кура сăмахлăх тексчěсем те пěр-пěринчен тытăмěпе те, содержанийěпе те, формипе те раснарах.

*А. Ял-йышпа irrtерне йăласене* урăхла обществăлла уявсем тесе калани те тĕл пулать, мĕншĕн тесен вĕсене пĕтĕм халăх хутшăннă. Çак йăласем – яланхисем, çулталăкра ялан пĕр вăхăтра килекеннисем. Асăннă уявсене А.К.Салмин 2 ушкăна уйăрнă: ял хушшинче irrтерекеннисем тата пĕтĕм ял-йышпа irrтерекеннисем; кашни тата пĕчĕкрех йăласене пĕтĕçтерсе тăрать.

Кĕнекере чăвашсен обществăлла уявĕсене халăх календарĕпе çыхăнтарса, çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ йăларан пуçласа малалла тишкерсе тухăпăр.

Тĕпчевçĕсем çырнă тăрăх, чăвашсен мăн аслашшĕсем сĕм-авал çулталăка ăшăсем пуçланнипе (çу) тата сивĕтнипе е юр çунипе (хĕл) çыхăнтарнă иккен. Кашни уйăх çĕр ĕçченĕн уйрăм йăли-йĕркине кăтартса панă, уйрăм чĕр чун сăнарĕпе çӳренĕ. Çакă çулталăк вăхăтне икĕ ăстрăмран шутлама май панă: ăшăпа сиввĕн тата сивĕпе ăшшăн чиккисене кура. Сăмахран, çимĕк вăхăтĕнче çамрăксен вăйă-уявĕнче ритуалла йăласем туса irrтерни, ялти ватăсене хывни тата вилнисене асăнса ятарласа юпасем лартни – çаксем пурте çӳлерех каланă шухăшсене çирĕплетеççĕ. Кашни йăла-йĕркене е уява çак йĕркепе уйăрса хаклатпăр:

1. Уява хутшăнакансем е irrтерекенсем.
2. Уявăн е йăла-йĕркен апат-çимĕçĕ.
3. Календарлă йăласен ритуаллăхĕ, асамлăхĕпе ăрăмлăхĕ; вĕсемпе çыхăннă япаласем.
4. Уявра е йăла-йĕркере юрланă юрăсем, каланă сăмахсем, выляна вăйă-ташăсем.

*Сурхури* – хĕвел каялла çаврăннă вăхăтра е кун таврăннă ятпа irrтернĕ йăла. Кунта ваттисемпе пĕрле яш-кĕрĕм те, ача-пăча та хутшăннă. Çак ят ытларах турипе анат енчи чăвашсен хушшинче сарăлнă, анатри чăвашсем е *нартăван*, е *тери*, е *раштав* тенĕ. Сурхурин тĕп тĕллевĕ вăл – çут çанталăкран çĕр тухăçлăхне ӳстерме (е хăпартма), выльăх-чĕрлĕх шутне ӳстерме ыйтни, тилмĕрни. Çавăнпа уяв паллисем хăйне майлă: унта тĕрлĕ чĕр чунсемпе (сурăх, пуек) ӳсен-тăран сăнарлăхĕсене туйма пулать; сурхурире хĕрсемпе кач-чăсем юмăç яраççĕ; йăла апат-çимĕçĕ пуçтараççĕ т. ыт. те.

1. Сурхурине пур халăх та хутшăнать: ял халăхĕ, кил хуçисем, сурхури ачисем, сурхури пуçĕ. Вĕсен кашнинех хăйне май рольсем: сурхури ачисем юрăсем юрласа тĕрлĕ апат-çимĕç пуçтарнă, кашни киле кĕмессерен кил хуçисене сума суса тав сăмахĕсем каланă, кун таврăннине тата çĕнĕ çул çитнине палăртса, тырă-пулă, выльăх-чĕрлĕх, ачи-пăчи ăнччăр, тесе кăшкăрнă, çав самантрах çӳлелле пăрçа ывăтнă.

2. Сурхурине хутшăннă ачасемпе çамрăксенчен хăшĕ-пĕри такмак, теприсем пештĕр çакса тухнă. Çак савăтсене вĕсем кил-хуçисем панă апат-çимĕçе пухса пынă. Уяв кучченеçĕ шутĕнче виртен е тулăран пĕçернĕ йăвача, пашалу, кукăль, шӳтернĕ пăрçа, пыл, çу т. ыт. те кĕреççĕ. Пур килтен те пухнă çимене пĕр çĕре пухса сурхури пăтти пĕçернĕ, пăрçа ăшаланă, ятарласа сурхури сăри вĕретнĕ.

3. Сурхури тĕллевĕ – хресчене сурхурирен сурхуриччен тулăх пурнăç, карта тулли выльăх-чĕрлĕх, сак тулли ача-пăча, кĕлечĕ-кĕлечĕпе тырă сунасси. Вăл нумай пайсенчен тăрать: сурхурине хатĕрленни; сурхури пуçламăшĕ; сурхури хĕрсе çитнĕ вăхăт; юмăç пăхни (нартукан); сурхури каçĕсем; сурхури вĕçĕ – çветкесем. Сурхурин япалисем е паллисем: юмăç ямалли хатĕр-хĕтĕр (пăрçа, укçа, чăх, така-сурăх); сурхури ачисем; ятарласа юрланă-каланă юрă-сăмахсем; сăра, çупа икерчĕ т. ыт. те.

4. Сурхурире сăмахлăхăн тĕрлĕ тĕсĕ тĕл пулать. Чи пĕлтерĕшли – юрăсем. Юрласса сурхури ачисем ушкăнăн-ушкăнăн пухăнса урамсенче е килсене кĕнĕ чух юрланă. Ача-пăча, çамрăксем сурхурире тĕрлĕрен вăййăсем выляна, юмăç янă. Юмăç пăхасси – сурхурин тĕп компоненчĕ. Ăна Тутар енчи, Самар тăрăхĕнчи чăвашсем нартукан тесе калаççĕ. Юмăçласси тĕрлĕрен пулнă: сурăх урине тытса; урамри сас-чĕве итлесе; чӳречерен кăшкăрса ыйтса; çĕрĕ ярса т. ыт. те. Паллах, çаксем пурте халăхра анлă сарăлнă ĕненӳсемпе çыхăннă. Апла пулсан, ĕненӳсем сурхурире пысăк пĕлтерĕшлĕ пулни куç кĕретех.

Сурхурире усă курнă сăмахлăхăн тепĕр тĕсĕ – ватă çынсем çак уява хисеплесе каланă кĕлĕсемпе пил сăмахĕсем. Ку йăлана аслă ăрурисем хăйсен хушшинче, ятарлă пăтă пĕçерсе, пăрçапа тата сăрапа, çамрăксенчен уйрăм ирттернĕ. Тав сăмахĕсене ача-пăчапа яш-кĕрĕм кил хуçисене сурхури кучченеçĕсемшĕн каланă. Вĕсем сăвă формиллĕ, речитативлă пулнине палăртмалла.

*Çăварни* – хĕле ăсатса çăва кĕтсе илмелли уяв. Кĕçĕн çăварни тата аслă çăварни пулать. Ăна пур çĕрте те пĕр пек ирттермен, кашни ялăн хăйĕн уйрăмлăхĕ пулнă. Çапах та çăварнире çунашкасемпе ярăнасси, утсемпе чупса юрласси, вĕсене тĕрлĕ эрешсемпе илемлетесси, хăна-вĕрле пухасси, пĕлĕмсемпе икерчĕсем çиесси, тĕрлĕ япала çунтарасси анатри чăвашсен те, анат енчисемпе турисен те пур. Çакă асăннă уяв авалах пулса кайнине, çăварни тĕрлĕ магиллĕ пулăмсемпе тата ĕçсемпе çыхăннине кăтартать.

1. Çăварние хутшăнакансем – пĕтĕм ял халăхĕ: ватти те, вĕтти те, яшши те; пурин те савăнмалла, хĕпĕртемелле тата юрламалла-ташламалла пулнă. Хăшпĕр вырăнсенче çăварни старикĕпе карчăкĕ пуррине асăнаççĕ. Вĕсен пĕлтерĕшĕ – ялти усал-тĕселе, чир-чĕре хăваласа ярасси.

2. Çăварни – хаваслă уяв; тутлă çиме-ĕçмеллĕ йăла, çавăнпа ăна ача-пăча чăтăмсăррăн кĕтнĕ: çăварни кунĕсенче вăл тăраниччен çуллă икерчĕ (йăва), чăкăт, çăмарта çиме пултарнă; ваттисем ятарласа сăра вĕретнĕ. Вырăнăн-вырăнăн пулă е кукăль пĕçернĕ.

Çăварнин паллăрах агрибучĕсем çаксем: çунашка, тăвайкки, кӳлнĕ лаша, улăм кĕлетке, кантăр вăрри.

3. Çăварнин пĕлтерĕшĕ нумай енлĕ. Пĕрремĕш – уява çĕнĕ уйăх пуçлансан, кун çĕрпе танлашсан ирттернинче (уйăх тулăх пурнăçа сăнлать); иккĕмĕш – «çăварни карчăкĕн» кĕлеткине çунтарни хĕл пĕтсе çу пуçланнине палăртать; виççĕмĕш – çăварнире пĕр-пĕрне икерчĕпе хăналанине тĕпчевçĕсем хĕвел (уйăх) кульчĕпе çыхăнтараççĕ. Чăвашăн икерчи ваттисене памалли çимĕç пулнине шута илсен, çăварнире ваттисене те панă теме пулать.

4. Çăварнире ытларах юрăсем юрланă, такмаксем каланă. Хăна-вĕрле пуçтарăнсан тĕрлĕрен юрă-сăвă шăраннă. Сăмахран, çăварнине хирĕç тухса илмелли юрăсем («Çăварни! Çăварни çитрĕ – çу çитрĕ, Кашăк çатма икерчи, Пĕрре çисе пĕтмерĕ, Иккĕ çиме çитмерĕ»), ту çинче çăварни юррисем, ĕçкĕ-çикĕре хăна юррисем, такмаксем такмакласа юрланă. Сăвă-юрăсен тематики ытларах шӳтлĕ гата лирикăллă пулнине асăнмалла.

Тĕрлĕ вăйăсем вылянă, сăмахсем каланă (çăварнин пĕрремĕш кунĕнче чи ир тăнă ача кантăр вăрри сапни, сăмах калани: «Кантăрĕ тӳрĕ пултăр! Кантăрĕ вăрăм пултăр!»), çамрăксем хăйсен пуласлăхне палăртма тăрăшнă. Юрăсенче сăмах кагаччи çинчен, икерчĕ-йăвача çинчен, çу юхтарса тăракан картлă-картлă пашалу çинчен, тăван-пĕтенпе, ял-йышпа пĕрле пурăнмалли çинчен пырать.

*Ака туйĕ (акатуй)* – чăвашсен ака пĕтнине халалланă уявĕ. Вăл çурхи ĕçсем – çĕре сухаласан тата тырă-пулă акса пĕтерсен пулать. Тепĕр вырăнта ака пăтти тени те тĕл пулать. Ака туйĕн тĕп тĕллевĕ – çĕре (амана) тимĕр сухапа (аçапа) пĕрлештерни, çапла туса тыр-пула ӳсме майсем туса панине ĕненни. Ахальтен мар пирĕн несĕлсем ака туя тĕплĕн хатĕрленнĕ: ятарласа сăра вĕретнĕ, çăмарта сăрланă, пăтă, йăвача пĕçернĕ. Çимĕççене ана çинче кĕл тунă чух «ана йышĕсен» (туррисен) ячĕпе асăнса çинĕ; вĕсенчен пулăшу, вăрлăхсене хăвăртрах шăтарма нӳрĕк (çумăр) ыйтнă, тĕрлĕ сăмах каланă. Юлашкинчен çамрăксем ана çинелле хăйсемпе пĕрле илсе килнĕ çăмартасене тата патак татăкĕсене пенĕ, лешсем мĕнле выртнине курса мĕнле пуласлăх пулассине пĕлнĕ. Çакăн евĕрлĕ йăласем Атăл тăрăхĕнчи халăхсен пурин те пур. Çĕр ĕçĕпе çыхăннă йăла-йĕрке ытларах Атăлçи пăлхарсенчен юлнă пулас.

1. Ака туя пĕтĕм халăх хутшăннă. Çамрăксем чупса е лаша чуптарса ăмăртнă, вăй виçнĕ, ял ваттисем ака пăтти иртгернĕ çĕрте пулнă, кĕлĕсем итленĕ. Вĕсемсĕр пуçне çак уява юмăç тата вăл палăртнă телейлĕ çын хутшăннă. Шел пулин те, ака туйра юрланă

ăрăмлă юрă-сăмах тексчĕсем сыхланса юлман: е пачах çухалнă, е урăх жанра куçса пĕтнĕ.

2. Ака туйра ятарласа хăйĕн çимĕçĕ пулман, кашни кил хăй мĕн пĕçерме пултарнă, çавна ана пăттине ирттерме илсе пынă. Çапах та сăра, урпапа тулă пăт-ти, çăмарта, йăвасем – уявра пулмаллискерсем, тепĕр чух эрех те ĕçнĕ.

3. Ака туй акан туйне ирттернине пĕлтерет, ака-пуçпе çĕре «мăшăрлантарни» пулать. Çак йăла мифологилле шухăшлавпа çыхăннă. Çĕре пуççапса кĕл тăваççĕ, çĕртен тухăçлă тыр-пул пама пил ыйтаççĕ; мунчара тасалса, çăвăнса тухаççĕ, таса çи-пуç тăхăнаççĕ.

Хатĕр-хĕтĕр: ака (суха) пуç, сурпансем, тĕрленĕ пĕчĕк тутăрсем т. ыт. те.

4. Ака туйра ĕлĕк вăйăсемпе пĕрле йăла юррисем те юрланă, анчах вĕсем сыхланса юлман. Калуллă хайлавсенчен кĕлĕпе пил сăмахĕсем паллă; ĕненӳсем упраннă. Тĕслĕхрен, акана тухакан çынна япала памалла мар, теççĕ; ана çине ака туй вăхăтĕнче çаралла нимле япала та пăрахмалла мар иккен т. ыт. те. Ăмăртусем вăхăтĕнче ташă кĕввисем тата кĕвĕ-çемĕ каланă, такмакланă.

*Çинçе* – çĕр пĕтĕленнипе çыхăннă йăла. Хăш тĕлте ăна тырă аксан, тепĕр çĕрте çур тырри шăтсан ирттернĕ. Çинçерен пуçласа çĕр ĕçĕ тума юраман, çĕре хускатма, тăрмалама, тĕкĕнме хушман, мĕншĕн тесен «çĕр пĕтĕ», урăхла каласан, çире пур тесе шухăшланă. Халăхра ку йăлапа çыхăннă нумай чару пулнă. Çинçе вăхăтĕнче çамрăксем уява-вăййа пуçтарăннă.

Çинçе пуçланиччен пĕр кун маларах ялти чи ватă та сумлă шур сухал килĕрен-киле çӳресе мĕн тума юранине-юраманнине асăрхаттарса çӳрет. Акă, тĕслĕхрен, çинçеччен çум çумласассăн, пăр çапать, тет, çум çумлакан çыннине аçа çапать, тет. Е тата, çинçере тăла пусма, кĕпе çума, тирĕс тăкма юраман; кăвак гата хĕрлĕ кĕпе тăхăнман. Пурте шурă кĕпепе çеç çӳреме тăрăшнă.

Ял йышĕпе ирттерекен йăла-йĕркесен шутне Турра тыр-пулă ячĕпе чӳкленине (уй чӳкĕ): уяр çанталăкра

Турăран çумăр (нÿрлĕх) ыйтнине (çумăр чÿкĕ, çерçи чÿкĕ) т. ыт. те кĕреççĕ. Вĕсенче, тĕпрен илсен, кĕлĕ сăмахĕсем каланă.

*Ă. Кил-йыш тата ăру йăли-йĕркисем* чăваш халăхĕн йăлалăхĕнче – чи йышлисем. Çавна кура вĕсемпе çыхăннă сăмахлăх тĕсĕсем тĕрлĕрен, нумай. Кашни çемье вăл – хăйне май пĕр тĕнче, пĕр ăрулăх, ĕлĕкхи «чăн чăвашсен» йăли-уявĕсене тытса пыраканĕ, вĕсен ăрăмлăхĕпе асамлăхне упраканĕ.

Ку ушкăна кĕрекен йăласен шутне çын çулĕпе, авалхи несĕлсене хисепленипе, кулленхи ĕçпе çыхăннисене тата тĕрлĕ сăлтавсене пула йĕркеленнĕ йăласене кĕртмелле. А.К.Салмин та хăйĕн «Религиозно-обрядовая система чувашей» кĕнекинче эпир пăхса тухакан йăласене çемьери йăла-йĕркесен системинче тишкернĕ, сарăмсăр е ăнсăрт япаласемпе çыхăннисене «индивидуалла йăлалăх» терминпа хаклама сĕннĕ. Çапла майпа этнолог-фольклорист çемьери йăласене 127-е, индивидуаллисене – 68-а çитерет.

Кил-йышпа ăру йăли-йĕркисене темиçе ушкăна уйăрса пăхни вырăнлă.

1. *Этем ĕмĕрĕпе çыхăннă йăла-йĕркесем* çыннăн 3 тапхăрне сăнлаççĕ: çуралнни, çемье туни (туй), вилни. Вĕсене йĕркелекенсем – ялти ватăсем е ăру-йăх пуçĕсем. Ача çуралнă йăласен ушкăнĕнче эпи пехилленине, ачана чÿке кĕртнине, ача чăкăчĕпе ача яшкине тата ача парнине çыхăннă поэзине палăртмалла. Сăмахлăх жанрĕсенчен ытларах речитативлă пехилпе пил, кĕлĕсемпе такмаксем нумай. Юрăсене хăна-вĕрле пуçтарсан юрланă; вĕсем сăмахпа кĕвĕ пĕрлĕхĕ пулаççĕ.

Ку ушкăнри йăласенчен чи курăмли – хĕр е каччă мăшăрланса çемье туни, аслă ăрусен йышне кĕни. Туй йăли-йĕрки – пĕтĕмĕшле халăх театрĕ пек пулса пырать: кунта ритуаллă йăласем, нумай эпизодлă курăнусемпе действосем, туя йĕркелекенсемпе ирттерекенсем, хутшăнакансемпе куракансем тата ытти рольсемлĕ çынсем пур. Туй çав тери нумай сыпăкран тăрать; вĕсен пурин те хăйне майлă сăмахлăх жанрĕ, пĕлтерĕшĕ, вырăнĕ.

Чăваш туйĕ 3 пая пайланать: туйччenхи йăла-йĕрке; туй вăхăчĕ; туй хыççăнхи йăла-йĕрке.

Туй пуçланиччен хĕрпе каччăн ашшĕ-амăшĕ пулас туй пирки калаçса татăлаççĕ. Чи малтанах каччă енчисем хĕр çураçма евчĕ яраççĕ; туй кунне палăртаççĕ; хулăм укçи пирки сăмах татаççĕ; туй пуçлăхне, хăйматлăхне, мăн кĕрӳпе кĕçĕн кĕрӳне, пӳлĕхçине, ытти явaплă çынсене палăртаççĕ; тăван-пĕтенĕ хĕрсе кайсах туя хатĕрленет, апат-çимĕç тата парне-кучченеç пирки шухăшлать.

Туйăн пĕтĕм илемĕ, курăмлăхĕ, пĕлтерĕшĕ туй пуçлансан палăрнă. Туй сăмахлăхĕ – чăваш халăх поэзийĕн чи çӳллĕ шайĕ, сăмахлăх ӳнерĕн аталанса çитнĕ форми, чăваш çыннин шалти туйăмĕ те, чунĕ те, пуласлăхĕ те, ĕмĕчĕ те. Туйра халăхăн çырусăр еткерлĕхĕ пĕтĕмĕшлĕн палăрнă: мăн кĕрӳ сăмахĕ; хĕр çум юррисем; кĕрнӳкер юррисем; каччă енчи туй арăм юррисем; хĕр енчи туй арăм юррисем; хĕр йĕрри; кĕлĕсем, пилсемпе пехил сăмахĕсем; ĕлĕкренпех килекен йăласемпе çыхăннă йĕркелĕхе тытса пыни (ыр-хăватсене асăнса парнесем пани, туйра ăрăмлă е асамлă пĕлтерĕшлĕ япаласемпе усă курни, хĕр шӳрпи, кайран инке салми пĕçерттерни, пуç сырни т. ыт. те); туй вăхăтĕнчи тата хыççăнхи вăйăсемпе уяв йĕркисем; ташши-кĕвви; мешехипе шилĕкĕ т. ыт. те.

Виле пытарнипе çыхăннă йăла-йĕрке те чăвашсен пурнăçĕнче пысăк вырăн йышăнать. Чăваш «çын вилмест, унăн чунĕ сарă кун çĕр-шывне ĕмĕрлĕхе пурăнма куçать», тесе ĕненнĕ. Çĕр çине вăл вăхăтлăха çеç килнĕ-мĕн; малашнехи пурнăçĕ унăн хăйĕн несĕлĕсемпе, ваттисемпе пĕрле иртет иккен. Çапла ăнлану вилнĕ çынна урăх пурнăçа ăсатнă чухнехи пек ĕçсем туса ирттерме хистенĕ. Вилесене ăсатни авалтарах туй йĕркипе пĕр пекрех пулнă, теççĕ.

Вилепе çыхăннă сăмахлăх тĕсĕсем – сăмах тата юрă: вилнĕ çынна хисеплесе те сума суса пехилпе тав сăмахĕсем каланă, юпа юррисем юрланă. Вĕсем хăйсем икĕ тĕрлĕ пулнă: вилнĕ çын тăванĕсен юрлани тата вилнĕ çын юррисем. Юлашки юррисене тĕрлĕ асăну

вăхăчĕсенче юрлаççĕ; ытларах юпа лартнă чух. Çав ĕç чăвашсен çулталăкра иккĕ пулнă. Пĕри – юпа уйăхĕнче, тепри – çимĕкре. Ун чухне юрлană-ташлană, ĕçкĕ-çикĕ пуçтарса «леш тĕнчери» тăвана пĕрле савăнтаратпăр, ĕçтерсе çитеретпĕр тесе шухăшлană. Ку йăла чăваш тĕнĕпе пурăнакансен паян кунччен сыхланса юлнă.

2. Ăру-йăх йăлисен иккĕмĕш ушкăнне *авалхи несĕлсене хисепленипе (культ предков) çыхăннисем* кĕреççĕ. Кунта калăма (мункуна), çимĕке тата кĕрхи юпана кĕртмелле.

*Калăм кун* (*мункун*) – ваттисене çуркунне асăнни. Вăл çăварни иртсен 7 эрнерен пулать; вилнисене асăннă (калăм кунĕ, çурта кунĕ) тата усал-тĕселе хăвалană (вирĕм е сĕрен) йăласене пĕрлештерет. Калăм кунĕнче чăвашсем ваттисене асăнма калăм пăттипе калăм çăмарти пĕçернĕ, калăм сăри вĕретнĕ, сĕренре, асăннă апат-çимĕçсĕр пуçне, ытти çимелисем те пулнă. Сĕрен малтан вилнĕ несĕлсен чунĕсене хăйсем пурăннă вырăна каялла хăваланине, кайран тĕрлĕ чир-чĕре хăваланине ăнлантарнă. Çак йăласенче ытларах калуллă сăмахсем пулнă, юрăсем упранса юлайман. Сĕренре сăвă-такмак калана, вĕсене сĕрен ачисем малтан юрлана пулас. Калăм кун юмăç пăхнă, халăх хушшинче тĕрлĕ сăнавсем, ĕненӳсемпе чарусем анлă сарăлни паллă. Чăвашсем шухăшлана тăрăх, çавнашкал ĕненӳсене тĕрĕс-тĕкел уясан, ваттисене сума суса асăнсан, малалли пурнăçра вĕсем пулăшса пырасса шаннă. Сĕренре лашасемпе чупни, вăй виçни, кĕрешни пур енчен те ака туя аса илтереççĕ. Ака туйра сĕренпе ака пăтти йăлисем пĕрлешсе кайни курăнать.

*Çимĕк* – вилнисене çу пуçламăшĕнче асăнниие çыхăннă йăла-йĕрке. Ăна мăнкун хыççăн 50-мĕш кун умĕнхи кĕçнерникун ирттернĕ. Аслă çимĕк тата кĕçĕн çимĕк пулать. Çимĕкре туйсем тунă. Çамрăксем аслă çимĕк кас вăрмана кайса тĕрлĕрен эмел курăкĕсем пуçтарнă, вут хурса ун йĕри-тавра вăйăсем вылянă, юрлană-ташлană.

Çимĕк пĕр эрнене тăсăлнă. Çав кун çыннăн мунча хутса 77 курăкпа çăвăнса тасалмалла пулнă, мунча хыççăн çĕнĕ кĕпе-йĕм тăхăннă. «Мăнкун кĕпи гаса пултăр, çимĕк кĕпи çĕнĕ пултăр!», – тенĕ чăвашсем. Çимĕкре ял халăхĕ масар çинче вилнисене тĕрлĕ çиме парса асăннă. Вилнĕ çын пуранна чухне мĕнле çимĕç юратнă, çавсемпе сăйланнă. Юлнă апат-çимĕçе вил тăпри çинчех хурса хăварнă. Вилнисене асăннă чух юрăсем те юрланă, кĕвĕсем каласа ташланă та теççĕ.

Çимĕкпе çыхăннă сăмахлăхра 2 пысăк темăна палăртатпăр: çимĕк сăнавĕсемпе ĕненĕвĕсем тата несĕлсен чунĕсемпе тĕл пулни, вĕсене хăналанипе ăсатни çинчен калаканнисем. Иккĕмĕш ушкăнĕ хăй темиçе сюжета пĕтĕçтерет: тухатмăшсем çимĕк каç алхаснисем çинчен; ваттисен чунĕсем тăванĕсем патне хăнана килни çинчен; вĕсене чыслăн ăсатни çинчен калаканнисем.

Чăвашсен çимĕкпе çыхăннă чарусем питĕ йышлă пулнă. Нумайăшĕ çĕр ĕçĕпе, йăх-ăру пуçараканĕсене хисепленипе, йăла-йĕркепе çыхăннă.

*Юпа* – вилнисене кĕркунне асăннипе çыхăннă йăласем. Халăх календарĕпе хальхи октябрьпе (юпа уйăхĕ) тÿрре килет. Çак вăхăтра вил тăприсем çине йывăç юпасем лартнă: арçын вил тăприйĕ çине – юманран, хĕр арăмăнне – çăкаран. Кунта çак мотивсене асăрхама пулать: юпа касма кайни; юпа тунă йывăça киле илсе килни; пÿртре унпа сывпуллашни; кĕлĕсемпе пилсем, юрă-сăвă калани, ĕçни-çини; юпана масар çине леçни; çул çинчи йăла-йĕрке; юпана вил тăпри çине вырнаçтарни; сăмахсемпе юрăсем; йăла апачĕ; юпа лартса киле таврăнни; асăну йĕрки; сасă кăларни.

Юпа циклĕпе çакнашкал йăласем çыхăннă:

1) вилнисене кĕркунне асăнмаллисем – юпа чÿкĕ, кĕрхи çурта чÿкĕ, вĕсене урăхла автан сăри е юпа сăри, теççĕ;

2) турра çĕнĕ тыр-пулпа асăнса ирттернĕ чÿксем – сăра чÿкĕ, кĕр сăри т. ыт. те.

Асăннă йăласене ялти ватăсем (çемьеллĕ çынсем) кăна хутшăннă. Чи малти вырăнта кĕлĕсемпе Турра тав тунă пехил сăмахĕсем пулнă. Ĕçме-çимере çавăн

пекех юрăсем те юрланă, ташăсем те ташланă. Мунча кĕнĕ, тĕрлĕ апат-çимĕç хатĕрлесе сĕтел çине лартнă, малтанхи татăкĕсене яланах ваттисем валли хăварнă, ятарлă савăта пуçтарса кайран вил тăпри çине кайса хунă.

3. *Кулленхи ĕçпе çыхăннă йăла-йĕрке* – чăвашсен пурнăçĕнче куллен пулса иртекен ĕç-хĕле халалласа ирттернисем. Кунта çаксем кĕреççĕ: ака пăтти (вăрлăх кăларни), çурла хывни, çурла çыхни (ана вăйне çĕклени), авăн пăтти, чӳклеме, карта пăтти т. ыт. те. А.К.Салмин кун йышшисене «сĕм авалхи йăласем» ăнлавпа палăртса, пулăхлăх духĕсен (духи плодородия) ушкăнне кĕртет. Асăннă йăласем кашниех пĕр-пĕр ĕç тапхăрĕпе çыхăннă: ака пăтти çурхи акана тухнă ятпа; суха пăтти – сухана тухнипе; çурла хывнипе çурла çыхни – вырмана тухнă вăхăтпа, пĕрремĕш кĕлте тунипе; авăн пăтти – тырра-пулла кĕлтесене хурсан капана хывнă ятпа т. ыт. те. Вĕсен пурин те хăйĕн туррисем (ырăсем) пулнă. Малашнехи пурнăçра палăртнă ĕç-хĕл кал-кал пытăр тесе, чăваш çынни ыр-хаярсене пăтăпа, сăрапа тата ытти çимĕçпе сăйланă, кĕлĕсем каласа йăлине иртгернĕ. Ытларах кашни çемьере туса ирттернĕ.

Карта пăттине чăвашсем кил-картинче пурăнакан чĕр чунсен ячĕпе картарине сума суса ирттернĕ. Вăл – кил-çемье уявĕ. Тĕллевĕ – çемьере ача-пăчасемпе пĕрле выльăх-чĕрлĕх йышĕ те хутшăнса пытăр, сывă ӳсчĕр, тесе ĕнентерни. Пăтă пĕçернĕ, сăра юхтарнă. Ĕлĕк пăтă вырăнне пĕр-пĕр чĕр чун парса чӳкленĕ, тесе ăнлантараççĕ тĕпчевçĕсем. Апат-çимĕçе кĕлĕсем каласа ăшă витере тутанса пăхнă, картари выльăха активтернĕ. Ун хыççăн йăлине пӳртре вĕçленĕ.

Чăвашсен карта пăттипе çыхăннă сăнавсемпе ĕненӳсем чылай. Сăмахран, лаша çилхи кăтралансан е çивĕтленсен, ăна картари хăтланать, имĕш. Вара выльăх-чĕрлĕх ăнма пуçлать, ыррине çиллентерсен, лаши те, ĕнепе сурăхĕ те, чăххи-чĕппи те ăнмасть е чир килсе хуçать. Кĕлĕсем каланă чух чăваш çынни картарирен тĕрлĕ пиллĕх ыйтнă, хăй шухăшланипе ĕмĕтленни пурнăçланасса шанса тăнă.

*Б. Сăлтавлă йăласем.* Вĕсене тĕрлĕ тĕпчевçĕ тĕрлĕ ăнлавпа усă курса палăртать. Сăмахран, А.К.Салмин – «индивидуаллă йăлалăх», Г.И.Комиссаров – «ăнсăрт е сарăмсăр япаларан килекеннисем», эпир – «сăлтавлă йăласем» («окказиальные обряды, т.е. обряды по случаю»). Кунашкал йăласем çемьере е кил-йышра тĕрлĕ сăлтавсене пула çуралаççĕ (тен, çавăнпах вĕсене ăнсăртла йăласем тесе хаклас килет): е ача-пăчапа ватти чирлесен, е çĕнĕ çын хутшăнсан, е тĕшмĕшле ĕненӳсене пула. Нумайăшĕн элеменчĕсемпе сюжечĕсем ял-йыш тата кил-йыш йăли-йĕркисенче те тĕл пулаççĕ.

Чи малтанах ăнсăртла йăласен шутне кил-йыш чӳкĕсене, чĕлхе вĕртернисене, сасартăк е кĕтмен хушăра пулса иртекен пулăмсемпе е ĕç-тăвăмсемпе çыхăннă йăласене (кăвак хуппи, çула тухни), тĕрлĕрен ылхансемпе тухатусене тата ыттисене асăнмалла. Юлашкисене ятарласа тишкерме сăлтавĕ пур.

Малтанласа кил-йыш чӳкĕсем пирки калаçăпăр. Кил-йыш чӳкĕсем тесе чăваш çынни çемьере кам та пулин сасартăк чирлесен, хуçалăхра курман-пĕлмен е ют япала тупăнсан, тĕлĕкре тĕлленнĕ ăпăр-тапăрсене ăнлантарма тăрăшнипе çуралнă вăй-хăватсене пуç çапса çырлах-тарнисене калатпăр. Çемье пуçĕ, ачи е çывăх çынни сасартăк чир-чĕр пирки сăмах тапратрĕ-тĕк, сăлтавне пĕлме юмăçлакан патне тухса утать, лешĕ сĕнӳсем парсан, тин мĕнле ырра-хаяра чӳклемелline татса парать. Ыр-хаяр шутĕнче киремет, çĕр тав-рашĕсем, шыври, çавра çил, ар çурри, вупкăн, усал, шуйттан, вупăр, йĕрĕх, тӳркĕлли, ийе, вĕре çĕлен, хы-тăм, мур т. ыт. те пулма пултараççĕ.

Чăваш шухăшĕпе, асăннă ырăсемпе усалсенчен çăлăнмалли тĕп мел – тĕрлĕрен кĕлĕсемпе чĕлхе сă-махĕсем калани. Ку сăмахсене яланах йăла апачĕсемпе – ятарласа вĕсен ячĕпе пĕçернĕ пăтăпа, çăкăрпа, кукăльпе т. ыт. те – чӳкленипе пĕтереççĕ.

Кун йышши ыр-хаярсене çырлахтарас тесе чăваш-сем нумай ĕненӳ шухăшласа кăларнă, вăхăт иртнĕçем хăшĕ-пĕри чарусене (табу) куçнă, паянччен сыхланса юлнă.

Кирек хăш халăх та сăмахăн асамлă хăватне авалтанах ĕненсе пурăннă. Калăпăр, пĕр-пĕр çын чирлесе ӳксессĕн, çав чиртен сывалас тĕллевпе пĕлекен сынсене (пĕлӳçĕ, вĕрӳçĕ т. ыт. те) чĕлхе вĕртернĕ, суртарнă е, çӳлти вăйсенчен ырлăх-сывлăх ыйтса, кĕлĕ сăмахĕсем каланă. Тахçан авал чĕлхе тата кĕлĕ сăмахĕсем пĕр-пĕринчен нимĕнпе те уйрăлса тăман, вĕсем çут çанталăкри тĕрлĕ вăйсемпе хутшăннă самантсенче каланисенчен йĕркеленсе кайнă.

Чĕлхеçĕсем *кĕлĕ* тата *чĕлхе* сăмахсем те тахçан малтан пĕр тымартанах пулса кайнă тесе ăнлантараççĕ. Каярах вĕсенчен пĕрремĕшĕ çӳлти вăйсемпе хутшăннине, иккĕмĕшĕ çĕр çинчи тата аялти тĕнчери вăйсемпе хутшăннине пĕлтерме пуçланă.

Вĕрӳ-суру чĕлхисене чăваш тĕпчевçисем чылайччен тĕплĕн тишкермен. Вĕсене юлашки çулсенче çеç тарăннăн тĕпчеме пуçларĕç. Ку ĕçре В.Г.Родионовăн тӳпи пысăк: вăл тĕпчев хыççăн тĕпчев калăпларĕ, халиччен пичетленмен текстсене кун çути кăтартрĕ. Текстсене çырса илекенĕсенчен чи малтан Н.И. Золот-ницкие, Д.Мéсароша тата В.К.Магницкие асăнмалла. Чĕлхе сăмахĕсене Н.И.Ашмарин тата Н.В.Никольский нумай пуçтарнă. Çав текстсенчен чылайăшĕ халĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн архивĕнче упранать.

Вĕрӳ-суру чĕлхисем çинчен малтан М.Я.Сироткин тĕпчевçĕ сăмах хускатнă, вĕсене пĕтĕмĕшле хак панă. Юлашки çулсенче çак жанра пикенсех тĕпчеме пуçларĕç.

Чĕлхе сăмахĕсем тесе чăвашсем çынна çĕр çинчи тата аялти тĕнчери ыр-хăватсемпе усал-тĕселтен сыватас е чирлеттерес-хăртас, усал вăйсене хăваласа ярас, пуç çавăрас е сивĕтес тĕллевпе каланисене палăртаççĕ. Кунта çаксем кĕреççĕ: вут чĕлхи, шыв чĕлхи, куç чĕл-хи, тимĕр чĕлхи, шăл чĕлхи, тум хаяр чĕлхи, çĕлен чĕлхи, урнă йытă чĕлхи, усал чĕлхи, хăр чĕлхи, пăсташ чĕлхи, пуç çавăру чĕлхи, сивĕтӳ чĕлхи, шăпăр чĕлхи т. ыт. те.

Сăмах тени пирĕн чĕлхере анлă пĕлтерĕшлĕ. Унта калуллă поэзи жанрĕсем кĕреççĕ. Пĕрисем, авалхи чăваш шухăшĕпе, сыватма (чĕлхе) е чирлеттерме (ылхансемпе тухатнисем) пултараççĕ, теприсем чăваш çут çанталăк вăйĕсенчен пурнăç ырлăхĕ ыйтнипе е панипе (пилсем, кĕлĕсем) çыхăннă, виççĕмĕшсенче – чăваш хăй тĕрлĕ сăлтавсене пула ыр-хăватсен е усал-тĕселсен ячĕпе тупа тăвать (ытларах усал ĕç тума ыйтса, тепĕр чух кунашкал сăтăрсене тумашкăн çак вăйсене тархаслать, уншăн ун ячĕпе чӳк тума сăмах парать).

Асăннă жанрсем речитативлă (вĕрӳ-суру чĕлхисем, мăн кĕрӳ сăмахĕсем) тата калуллă (пилсем, кĕлĕсем т. ыт. те) пулаççĕ. Пĕрремĕшсенче сăвă çемми çав тери хăвăрт та хускануллă пулсан, иккĕмĕшсем лăпкăлăхĕпе тата васкаманлăхĕпе уйрăлса тăраççĕ. Чĕлхе, кĕлĕ, пил тата ылхан йĕркисем пĕр-пĕринпе тĕрлĕ çыхăнура тăраççĕ. Уйрăмлăхĕ çакăнта: чĕлхесемпе кĕлĕсем общеcтвăпа çут çанталăк хушшинчи çыхăнăва йĕркелеме пулăшаççĕ. Пил е ылхан йĕркисем вара çынпа çын хушшинчи хутшăнăва палăртаççĕ.

Авалхи чăваш кашни япалан, çут çанталăк вăйĕсен уйрăм чĕлхи пур тесе ĕненнĕ. Сăмахран, çĕçĕпе е урăх тимĕрпе суранлансан, тимĕр чĕлхи вĕрнĕ; çĕлен сăхсан, çĕлен чĕлхи каланă т. ыт. те. Çак шухăшлав, тĕпрен илсен, халăхăн тĕнче çине мифологилле куçпа пăхнипе, çын чирлесен е амансан тĕнче тĕрекĕ арканать тесе шутланипе çыхăннă иккен. Çавăнпа та тĕнчен тĕрекне вĕрсе е сурса (чĕлхере яланхи мифологилле атрибутсем: шыв (сурчăк), вут е çил (вĕрни), сакраллă хисепсем, хĕвел т. ыт. те) тепĕр хут тавăрма май килет тесе ĕненнĕ.

*Вĕрӳ-суру чĕлхисене* 3 ушкăна уйăрма пулать: ансат параллельлĕхлĕ чĕлхесем, эпикăлла чĕлхесем тата кĕлĕ йышши чĕлхесем. Ушкăнлавăн тĕп мелĕ – текстсенче психологи параллельлĕхĕ еплерех çыхăнса тăнине шута илни.

Ансат параллельлĕх чылай чухне икĕ кĕске пайран тăрать: пĕрремĕшĕ çут çанталăк пулăмне кăтартать, иккĕмĕшĕ вара çын ĕçне е кăмăлне уçса парать

(«Хĕвел варринче хĕрлĕ шупăрлă хĕр. Çав хĕрлĕ шупăрлă хĕр хăçан пирĕн çурт çумне çитсе çулăнĕ, çавăн чух тин çак вут пирĕн çурт çумне килсе перĕнтĕр!»).

Эпикăлла чĕлхесенче (урăхла: кăткăс параллельлĕхлĕ чĕлхесем) пĕрремĕш пайĕ вăйлăрах аталаннă, кунта чăвашăн мифла тата космогонилле ăнлавĕ уçăмлă – текстсенче тĕнче тытăмне палăртакан (Çĕр, Ама йывăç, Тӳпе) мифологемăсем урăх сăнарсемпе те улшăнма пултараççĕ, анчах вĕсем пурри чĕлхесенче яр-уççăн сисĕнет:

77 çут çанталăкра ылтăн йĕтем,
Ылтăн йĕтем çинче ылтăн тунката,
Ылтăн тунката çинче ылтăн куккук.
Çав ылтăн куккука хăçан та хăçан
Хура халăх пăхса куç ӳкерет,
Çавăн чухне тин Ваççана куç ӳктĕр!

Кĕлĕ йышши чĕлхесенче психологи параллельлĕхĕ вырăнне çемĕпе (ритмпа) синтаксис параллельлĕхĕ пуç пулса тăрать. Хăш чухне вĕсене кĕлĕсенчен уйăрса илме те йывăр. Çапах та уйрăмлăхĕ яланах пур. Чи малтан вăл чĕлхесем вĕрӳçĕ вĕрнĕ сăмах пулнинче курăнать. Сăмахĕсене калаканĕ вĕсемпе чӳклесе, кĕлĕлесе витĕнмест, вăл сăмах асамлăхне ĕненсе, чир-чĕре хăратма пикенет.

*Мăн кĕрӳ сăмахĕсене* (мăн кĕрӳ такмакĕ, сăмахĕ, саламалик) эпир эпикăлла поэзин пĕр тĕсĕ шутланнине, кил-йышри е çемьери йăласене тишкернĕ чухне вĕсем туйра пысăк вырăн йышăннине палăртса хăварнăччĕ. Мăн кĕрӳ туйра яш-кĕрĕмсен инициацине йĕркелесе пыраканĕ те, çав самантсенче тĕрлĕ усал-тĕселрен сыхлаканĕ те: çамрăк мăшăрпа туй халăхне куç ӳкесрен мăн кĕрӳ чĕлхесем калать; пăсташ тасатнă чух ятарласа пăсташ чĕлхине вулать, сăмахĕсене каланă вăхăтра хăйĕн саламачĕпе виçшер хут хапха юписене, çĕнĕ çын ларнă минтерне çапать т. ыт. те.

Çапла майпа мăн кĕрӳ сăмахне эпикăлла чĕлхепе танлаштарса пăхма сăлтав пур: вĕсем иккĕшĕ те пур çĕрте те анлă сарăлнă тата илемлĕх мелĕсемпе пĕрпĕрне çывăх; речитативпа каланаççĕ; сăвă тытăмĕсем те, формисем те пĕрешкел т. ыт. те.

Мăн кĕрӳ сăмахĕсенче, кăткăс параллельлĕхлĕ чĕлхери пекех, вĕçĕмсĕр тĕл пулакан мифла шухăшлав та («ылтăн» сăмахăн асамлăхĕ, ăрăмлăхĕ, сакраллă шут хисепĕсем, сюжет йĕрĕсем т. ыт. те), текст йĕркеленĕвĕ те (строфа уйрăмлăхĕ) çирĕп аталаннă. Унсăр пуçне тĕрлĕрен повторсем, сăмах çеммипе кĕвĕлĕхĕ те пусăмлă. Çак жанрсенче эпир мифологилле эпос йĕрĕсене куратпăр.

Чĕлхесене шалти пĕлтерĕшĕпе çывăх тăракан тепĕр жанр – *ылхан сăмахĕсемпе тухатусем.* Вĕсем иккĕшĕ те сыватас е чирлеттерес тĕллевлĕ.

*Ылхан сăмахĕсене* чи авал пулса кайнă жанрсен шутне кĕртетпĕр. Çак термин тĕрĕк халăхĕсен «*алга, алгас*» – «пиллени», «ырлани» глагол çумне хирĕçлев аффиксĕ («н») хушăннипе («*алга*-н») пулнă, каярахпа хирĕçле пĕлтерĕшпе çӳреме пуçланă, «алган» терминглагол япала ятне куçнă, чăвашсем хушшинче «ылхан» пĕлтерĕшлĕ тăрса юлнă. Ылхансене чăваш çынни çĕр çинче тата çĕр айĕнче пурăнакан вăйсемпе калаçса хăй курайман çынсем е япаласем çине ылхан яма ыйтнă е яртарнă. Вĕсенче те, чĕлхесенчи пекех, чи малти вырăнта сăмахпа хусканусем ăрăмлă тесе шухăшлани тăрать.

*Тухату* е *асамлу сăмахĕсем* те – авалхи этем сăмах вăйне ĕненсе хăй шухăшланине пурнăçланасса шанса тăни. Чăваш вĕсене тĕрлĕрен тухатмăшсем, асамçăсем туса ирттереççĕ тесе ĕненнĕ. Çавна пулах халăхра вĕсем нумай сăтăр тăваççĕ иккен. Тухатмăшсенчен хăтăлас шутпа магилле ĕç-пулăм тумалла: сăмахран, кĕлĕсем вуламалла, ăрăмлă хатĕрсемпе усă курмалла, сăхсăхмалла т. ыт. те.

Асамлу сăмахĕсен шутне пуç çавăру, ăшăту, сивĕтӳ сăмахĕсем кĕреççĕ.

Кĕлĕ сăмахĕсемпе пилсене чăвашсем ытларах килти хуçалăхпа, тăнăç пурнăçпа çыхăнтарнă. Çак уйрăмлăхсене чи малтан Н.И.Ашмарин асăрханă. Вăл çырнă тăрăх, хăш-пĕр кĕлĕсем е вĕсенчи сăмах çаврăнăшĕсем Атăлçи пăлхар çырулăхĕнчен кĕрсе юлма пултарнă.

Кĕлĕсенче Çӳлти Турă кульчĕ вăйлă палăрни тăрăх вĕсем X-XIII ĕм. çирĕпленнĕ теме пулать.

*Кĕлĕсем* чăваш пурнăçĕнче яланах хисепре пулнă. Йăла-йĕркесене ушкăнланă евĕр кĕлĕсене те çавнашкалах уйăратпăр: халăхпа е ял-йышпа ирттернĕ йăла кĕллисем; кил-йышпа ăру йăла-йĕркисен кĕллисем; пурнăçри тĕрлĕ сăлтавсене халалланă йăла-йĕркесен кĕллисем. Кирек мĕнле йăлара та кĕлĕ сăмахĕсем пур. Хăш-пĕр кĕлĕсен (çураçма) çаври пĕрер ансат параллельлĕхрен тăрать, çавăнпа та вăл ансат чĕлхесене питĕ çывăх.

*Пилсем* тесе ашшĕ-амăшĕ е аслă ăрурисем хăйсен ачисемпе тăван-пĕтенне пилленисене, тĕрлĕ сăмахсене тата вăл с ку ĕçе тума ирĕк панисене калаççĕ. Пилсене этемĕн пурнăç тапхăрĕпе çыхăннă йăласенче калама тăрăшнă: ача çуралсан, авлансан е качча тухсан, салтака кайнă чух, ытти ăсатусенче. Чăвашсен шухăшĕпе, кирек мĕнле çыннăн та пил илмелле, унсăрăн пурнăç ăнмасть, усал-тĕсел çыхланса чир-чĕре ярать, инкек-синкек кăтартать т. ыт. те. Пил сăмахĕсене тепĕр чух ашшĕ-амăшĕ вилес умĕн ачисене йĕркеллĕ пурăнма, пĕр-пĕрне пулăшма каласа хăварнă. Пилсем кăмăла пĕлтерекен шухăшлавран тăраççĕ: ĕлĕкрен ваттисем каланă пил сăмахĕсене ачи-пăчи ăшра тытнă, ламран лама çак йăлана куçарса пынă, пăхăнса тăнă. Чăваш «пиллесессĕн пин пулать, пиллемесен кĕл пулать» тенĕ, çав йĕркене (пил илессине) çирĕп уянă.

*Тупа сăмахĕсем* – ял халăхĕпе е этемпе этем хушшинче пĕр-пĕр ача, çамрăк çын е аслăраххи хăйĕн шухăш-ĕмĕтне, тĕллевне пурнăçлас е йăла-йĕркене тытса пырас тĕлĕшпе халăх, кил-йыш, тăванĕсем е юлташĕсем умĕнче сăмах пани. Çавăн йышши сăмахсенче тупаланакании çӳлти ырăсен, турăсен ячĕсене, çĕр çинчи е леш тĕнчери вăйсене асăнса тухать, хăй каланă сăмахсене пурнăçлама тупа тăвать, ваттисенчен пил ыйтма та пултарать.

Авал чăвашсем тупа тунă чухне тĕрлĕ япаласемпе усă курнă. Вĕсен хушшинче чи пĕлтерĕшлисем çаксем: вилнисен ячĕсене асăнни тата вилесемпе çыхăннă тупа-

сем; пуранакан ашшĕ-амăшне асăнни; тупа калакан тă-ван ачисене асăнса калани; Çӳлти Турăпа ытти ыр-хăватсене асăнни; тĕнчене пултарнă асамлă хăватсене (Вут, Çĕр, Шыв, Уйăх, Хĕвел, Çăлтăрсем, Пĕлĕт т. ыт. те) асăнни; çĕр çинчи ыр-хăватсене асăнни; выльăх-чĕрлĕхсемпе çыхăннă тупасем; ăрăмлă апат-çимĕçпе çыхăннă тупасем; леш тĕнчери усал-тĕселсене асăнни.

Çакна палăртмалла: асăннă тупа формисенче чăваш халăхĕн мифологилле шухăшлавĕпе тĕнче курăмĕ яр-уççăн ӳкерĕнсе юлнă. Ун шухăшĕпе, çак япаласем тупа тунине пурнăçлама пулăшнă иккен, панă сăмаха халăх е тăван-пĕтен умĕнче тӳрре кăларттарнă.

Пăхса тухнă жанрсене илемлĕх тытăмĕ тĕлĕшĕнчен хак пани те кирлĕ. Çакă вăл вĕсен аталану çул-йĕрне лайăхрах асăрхама пулăшĕ.

Вĕрӳ-суру чĕлхинче кашни психологи параллельлĕхĕ интонаципе синтаксис пĕрлĕхĕ тăвать. Апла пĕрлĕх вĕçĕнче яланах чарăну пур. Çапла вара, психологи параллельлĕхĕ чĕлхери çаврасемпе тӳрремĕнех çыхăннă. Çакă вăл текстсене танлаштарса пăхсассăн та курăнать. Çавра психологи параллельлĕхĕ пур текстсенче кăна çирĕппĕн йĕркеленсе пырать. Кĕлĕ йышши чĕлхесенче вара ытларах рефренлă клишесем, хушса хунă сăмахсем тĕл пулаççĕ.

Ансат чĕлхесем ялан тенĕ пекех виçĕ çавраллă пу-лаççĕ. Эпикăлла чĕлхесенче çаврасен шучĕ улшăнма пултарать. Çапах та вĕсенче виçĕ çавраллисем те сахал мар тĕл пулаççĕ. Кĕлĕ йышши чĕлхесем çеç çаврасен çирĕп хисепне пăхăнмаççĕ. Мĕншĕн çапла-ши?

Авалхи ансат чĕлхесене йĕркелеме психологи па-раллельлĕхĕ çеç мар, «виççĕ» хисепĕн асамлăхĕ те пу-лăшнă. Каярах, психологи параллельлĕхĕ аталансассăн, çав хисепĕн асамлăх функцийĕ вăйсăрланса пырать, кĕлĕ йышши чĕлхесенче вăл пĕтсех ларать.

«Виççĕ» хисепĕн асамлă пĕлтерĕшĕпе психологи па-раллельлĕхĕ пĕр-пĕрипе тачă çыхăннă. Тахçан авал вĕсен пĕрлĕхĕ чĕлхесенчи çаврана йĕркелеме пулăшнă. Ансат чĕлхесенчи çавра малтан утилитарлă функциллĕ пулнă. Каярах вăл илемлĕ шухăшлавăн пĕр хатĕрĕ пул-

са тăрать. Çапах та çав çаврасенче магилле функци пĕтĕмĕшпех çухалман. Çак уйрăмлăха (синкретикăлла функцийлĕ пулнине) жанр паллисенчен пĕри темелле. Çапла вара, чĕлхесенчи çавра халăхăн анимизмла ĕненĕвне тата хисеп асамлăхне пула йĕркеленнĕ теме пулать.

Вĕрӳ-суру чĕлхисенче тĕрлĕрен хутлавсем (повторсем) тĕл пулаççĕ: синтаксис хутлавĕ, сăмах хутлавĕ, сасă хутлавĕ.

Синтаксис хутлавĕ пĕр евĕрлĕ предложенисем çинеçинех тĕл пулнăран йĕркеленет. Вăл сăмах хутлавĕ евĕрлех, пĕр çаврана та, харăсах темиçе çаврана та çыхса тăма пултарать. Ансат параллельлĕхлĕ чĕлхесенче вăл темиçе çаврана пĕрлештерет, кĕлĕ йышши чĕлхесенче вара çавра ăшĕнче кăна пулать. Эпикăлла чĕлхесенче икĕ тĕрлĕ синтаксис хутлавĕ те пур.

Ансат чĕлхесем йĕркеленнĕ тапхăрта темиçе çаврари синтаксис хутлавĕ çеç пулать. Ăна çапла пулма психологи параллельлĕхĕ пулăшнă. Эпикăлла чĕлхесем вăй илсессĕн, синтаксис хутлавĕ çавра тулашĕнчен унăн ăшне кĕрет, çемĕне синтаксис параллельлĕхĕ туса хурать. Кĕлĕ йышши чĕлхесенче çавăн евĕрлĕ хутлав çавра тулашĕнчи синтаксис хутлавне пуçĕпех хĕссе кăларать. Çапла вара, чĕлхесем аталаннă майăн синтаксис хутлавĕ те улшăнса, çĕнелсе пынă. Сăмах хутлавĕн аталану çулĕ-йĕрĕ синтаксис хутлавĕн евĕрлех пулнă. Вăл çавра тулашĕнчен ерипен ун ăшнелле куçса пынă. Çакă вăл тĕрлĕ кӳлепеллĕ чĕлхесенче аван ӳкерĕнсе юлнă. Ансат чĕлхесенче сăмах хутлавĕ çаврасене çыхса тăрать, эпикăлла тата кĕлĕ йышши чĕлхесенче вара ытларах çаврари йĕркесене çыхма пулăшать. Сăмах хутлавĕ, тĕпрен илсен, йĕркесен пуçламăшĕнче тата вĕçĕнче тĕл пулать. Çавăн пекех пĕр йĕрке вĕçĕнчи сăмах ун хыççăнхи йĕрке пуçламăшĕнче те ларма пултарать.

Чĕлхесем сасă хутлавĕнчен питех те пуян. Çакна ăнланма та пулать. Вĕрӳçĕсем текстсене питĕ хăвăрт та шăппăн калană. Çавна пула итлекенĕ уйрăм сасăсене кăна тăнласа юлма пултарнă. Пĕр йышши сасă çинеçинех илтĕнни вара темĕнле асамлăха туйтарнă. Е

тата уйрăм сăмахсем тăтăшах тĕл пулни те чĕлхене асамлăх сĕмĕ кĕртнĕ, ăна синкретикăлла функци кӳме пулăшнă. Аллитераци ытларах кĕлĕ йышши чĕлхесенче тĕл пулать. Ансат чĕлхесемшĕн вăл характерлă мар. Çак уйрăмлăх çавăн йышши чĕлхесем уйрăм сăмах асамлăхне мар, анимизмла шухăшлава тĕпе хунăран çапла пулса кайнă. Эпикăлла чĕлхесенче вара, çемĕпе синтаксис параллельлĕхне пула, аллитерацие аталанма çул уçăлать. Чĕлхесенче аллитерацие аталанма пулăшаканĕ вăл – çаврари синтаксис хутлавĕ. Тĕрĕк халăхĕсен поэзийĕнчи сасă хутлавĕ хут çине XI ĕмĕртех ӳкерĕнсе юлнă. Эппин, çав тапхăр тĕлне аллитераци асамлă функцирен уйрăлса кайма ĕлкĕрнĕ, тап-таса илемлĕх функциллĕ пулнă теме май пур.

Çӳлерех вĕрӳ-суру чĕлхисем поэзи жанрне кĕреççĕ тенĕччĕ. Çавăнпа та вĕсенче, тĕрлĕрен хутлавсемпе çаврасемсĕр пуçне, çемĕ (ритм) те пур. Чĕлхесенчи çемĕ йĕркеленĕвĕ юрăсенчи пек мар, пачах урăхла. Чи паллă уйрăмлăхĕ вăл – чĕлхесене юрламасăр калани. Кунсăр пуçне чĕлхесен кашни çаврине пĕрре сывланипе каласа пĕтермелле пулнă. Паллă ĕнтĕ, апла хăвăртлăхпа каланă сăмахсем юрланма та, пусăмлăн илтĕнме те пултарайман. Чĕлхе сăмахĕсем речитатив евĕрлерех янăранă. Ку вăл ансат чĕлхесенче çапла пулнă. Эпикăлла чĕлхесенче, çаврасем пысăкланса кайнине пула, вĕсене пĕрре сывланипех каласа пĕтерме ниепле те май килмен. Çавăнпа та чĕлхесенче çавра вĕçĕнчи чарăну вырăнне синтагма чиккинчи чарăнусем тĕп вырăн йышăнаççĕ. Кĕлĕ йышши чĕлхесем вара логикăпа интонаци пусăмне мала хураççĕ, ерипентерех илтĕнеççĕ.

Ансат чĕлхесен çаври яланах икĕ пайран тăрать, «епле (хăçан) ...» тата «çапла (çавăн чух) ...» Çак икĕ пай пĕр-пĕринчен шухăшпа çеç мар, сасă хулăнăшĕпе те уйрăлса тăраççĕ. Малтанхи пайĕнче сасă пĕр тикĕс пырать, «ыраш хăмăль çинчи сывлăм епле час типет». Кĕске чарăну хыççăн иккĕмĕш пайĕ пуçланать. Вăл вара кăштах хулăнрах тонлă: «çавнашкал çав суран типтĕр». Тон интервалĕ иккĕ е иккĕ çурă тон чухлĕ хулăнланма пултарать. Çакă икĕ пай (синтагма) инто-

наципе шухăш енчен пĕрлĕх тăвать, çемĕ виçевĕ (единици) йĕркелет. Çаврасене виçĕ хут калани вара хăйне евĕр çемĕ тăвать. Ансат чĕлхесенче, хăвăртлăхпа синтагма пайланăвĕсĕр пуçне, çемĕ тăвакан тепĕр япала – çавра вĕçĕнчи чарăну пур. Çав чарăнусем вăхăтĕнче вĕрӳçĕ е сурнă, е вĕрнĕ, ытти тĕрлĕ хускану тунă. Çавра вĕçĕнчи чарăнусем çемĕ виçине туйса илме пулăшаççĕ.

Çапла вара, ансат чĕлхесенче çемме çак компонентсем йĕркелеççĕ: икĕ синтагмăран тăракан çемĕ виçевĕ, текст хăвăртлăхĕ тата çавра вĕçĕнчи чарăну.

Эпикăлла чĕлхесенче çемĕ йĕркеленĕвĕ, тĕпрен илсен, çав факторсенех тĕпе хурать. Вĕсен уйрăмлăхĕ те пур. Сăмахран, вĕсенче икĕ синтагма пĕр çавра мар, пĕр йĕрке çеç тăвать. Кунсăр пуçне, ун пек текстсенче логикăпа интонаци пусăмĕ аван палăрать. Çавна пула эпикăлла чĕлхесем речитативлă сăвăран ытларах кĕлĕ йышши интонациллĕ сăвăсем енне туртăнаççĕ. Кĕлĕсене çывăх чĕлхесен çемĕ йĕркеленĕвĕ вара кĕлĕсен çемминчен нимĕнпе те уйрăлса тăмасть.

Вĕрӳ-суру чĕлхисенче психологи параллельлĕхĕ çут çанталăк пахалăхне е паллине чĕрĕ чунсем (çын, выльăх-чĕрлĕх) çине куçарнăран пулнă пулсан, кĕлĕсенче вăл урăхларах. Вĕсенче этем хăтланăвĕ пĕтĕмпех çут çанталăк вăйĕсен кăмăлне çемçетесшĕн пулни курăнать. Авалхи çын: «Курăнман вăйсене тăтăшах çырлахтармалла, вара вĕсем эпир ыйтнине пĕр хĕрхенмесĕр парĕç», – тесе ĕненнĕ.

Кĕлĕсем чылай чухне икшер пайран тăраççĕ: чӳке мĕн-мĕн панине ăнлантарнинчен тата çавăншăн аслă вăйсенчен мĕн-мĕн ыйтнинчен.

Тĕрлĕ вăйсене витĕнекен кĕлĕсенче кашни çавра ансат параллельлĕхрен тăрать. Апла çаврасем кил-йыш ваттисене асăннипе çыхăннă кĕлĕсенче йышлă. Вĕсен çаври ансат чĕлхесенне аса илтерет. Ахальтен мар ĕнтĕ вĕсем чи авалхи кулепеллĕ кĕлĕсемпе чĕлхесем шутланаççĕ.

Кил-йыш хуçалăхĕпе çыхăннă кĕлĕсен çаврине ятарлă клише-рефренсем йĕркелеççĕ. Вĕсем ялан пĕр евĕрлĕ:

«Пĕсмĕлле, аминь, Турă» т. ыт. те. Çакăн пек хушма сăмахсем кашни çавра хыççăн тĕл пулаççĕ. Вĕсене калана вăхăтра чӳк тăвакансем виçшер хут çăкăннă (пуç çапнă). Çакăн йышши кĕлĕсен çаври ятарлă рефрена тата чарăнăва пула йĕркеленнĕ теме май пур. Халăхпа ирттернĕ чӳксен çаврисем çинчен те çавнах каламалла.

Çапла вара, кĕлĕсенчи çавра тытăмĕ ансат параллельлĕхрен пуçласа ятарлă клише-рефрен таран аталаннă тесе калама пулать. Кĕлĕсенчи параллельлĕхе политеизм вырăнне монотеизм вăй илни хĕссе кăларма пулăшнă. Сăмах май каласан, кĕлĕ йышши чĕлхесен çаврисем те ятарлă хушма сăмахсенчен йĕркеленнĕ. Ахăртнех, çавăн йышши чĕлхесене ытларах халăхпа тунă чӳксем тата кил-йыш хуçалăхĕпе çыхăннă кĕлĕсем витĕм панă.

Кĕлĕсенче сасă повторĕ сайра тĕл пулать. Çакă вăл Турă умĕнче сăмах вылявĕпе мухтанни килĕшӳллĕ пулманран килнĕ-тĕр. Çапах та аллитераци каярах пулса кайнă кĕлĕсенче (тĕслĕхрен, ташламара) курăнкалать.

Кĕлĕсенче çаврасене çыхса тăракан синтаксис тата сăмах повторĕсем сайра тĕл пулаççĕ. Çавăн йышши повтор психологи параллельлĕхлĕ кĕлĕсенче çеç тĕл пулни çав кӳлепен аваллăхне кăтартать.

Кĕлĕсенчи çемĕ чĕлхесен çемминчен уйрăмрах. Чи малтан çак уйрăмлăхсене палăртни кирлĕ: чĕлхесенче логика пусăмĕ, интонаци кĕлĕсенчи пек тĕп вырăнта мар, кĕлĕсен йĕркисем пĕр-пĕринпе сăмах сыпăкĕ тĕлĕшĕнчен танлашма тăрăшаççĕ. Çакă вăл кĕлĕ çемми силлабика енне туртăнни çинчен калать.

Чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем халăхăмăрăн илемлĕ культури, унăн поэзири ăсталăхĕ сĕм-авалтанах аталанса, пуянланса пынине ĕнентерсе параççĕ. Эпир вĕсене илемлĕ сăмах тĕслĕхĕсем вырăнне картма пултаратпăр.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Ваттисен йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăхăн паллисем.
2. Ял-йышпа ирттернĕ уявсен поэзийĕ.

3. Кил-йышпа ăру йăли-йĕркисен поэзийĕ.
4. Пурнăçри тĕрлĕ сăлтавсене халалласа ирттернĕ йăла-йĕрке поэзийĕ.
5. Чăвашсен йăла-йĕрке поэзийĕнчи чĕлхесемпе сăмахсен вырăнĕ.
6. Чĕлхесемпе тĕрлĕ сăмахсен поэтики.

## УСĂ КУРМАЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Воронцов Г.И.* Ача-пăча вăййисем: Вăйăсем. Шăпа сăввисем. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар, 1992. 128 с.

2.*Денисова Н.П.* Зимние и весенние календарные праздники чувашских крестьян (XIX – нач. XX в.) //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 142-166.

3.*Денисова Н.П.* Летне-осенние календарные праздники и обряды чувашей (XIX – нач. XX в.) //Чувашское народное творчество: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 67-86.

4.*Егоров Н.И.* Праздники и календарные обряды //Культура чувашского края. Ч. 1: Учеб. пособие /В.П.Иванов, Г.Б.Матвеев, Н.И.Егоров и др. /Сост. М.И.Скворцов. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1994. С. 175-225.

5.*Чувашские* праздники и обряды: Программа спецкурса /Сост. Б.Л.Алексеев, Н.И.Егоров. Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1993. 12 с.

6.*Канюков В.Я.* Ача-пăча сăмахлăхĕ. Сăвă-юрă. Юмах-халап. Шупашкар, 1964. 234 с.

7.*Канюков В.Я.* Чăваш ача-пăча сăмахлăхĕ //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. VI т. 1-мĕш пайĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1985. 5-66 с.

8.*Родионов В. Г.* Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора //Чувашский фольклор. Специфика жанров /ЧНИИ. Чебоксары, 1982. С. 81-83.

9.*Родионов В. Г.* Генезис и эволюция речевого стиха //Чувашская народная поэзия: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 65-109.

10.*Родионов В.Г.* О ритмике чувашского народного речитативного стиха //Тр. /ЧНИИ. Вып. 77. Чебоксары, 1977. С. 66-83.

11.*Родионов В.Г.* Чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем //Чăваш халăх сăмахлăхĕ: Статьясемпе текстсем. Шупашкар, 1989. 60-68 с.

12.*Родионов В.Г.* Чувашское и тюркское стихосложение: Учеб. пособие /Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1986. 80 с.

13.*Салмин А.К.* Система верований чувашей /Науч. ред. С.А.Арутюнов; ЧГИГН. Чебоксары, 2004. 208 с.

### 2.4. Чăваш халăх юрри. Юрăсене пухса пичетлени, вĕсен ушкăнĕсем. Такмаксем. Халăх сăввин хăй евĕрлĕхĕ. Сăвă-юрă поэтики.

Юрăпа чăваш çынни пур çĕрте те пĕрле, юнашар: ĕçре-и вăл, канура-и, хăнара-и, уявра-и. Кирек ăçта пулсан та чăваш çынни хăй шухăшне юрăласа-сăвăласа е такмакласа пĕлтерет. Хамăрăн ачалăха аса илер-ха. Кам пире ачашласа-лăпкаса, сăпка юррисене юрласа савăнтарнă? Е кăмăл хуçăлнă самантсенче хăй чĕрине юрă сăмахĕсемпе пусарнă? Паллах, пирĕн юратнă аннесемпе асаннесем. Ĕлĕкхи чăваш вăййисем юрăсăр иртнĕши вара? Çук.

«Юрă пурнăçа илем кӳрет, юрă – чун уççи», – тет халăх кун пирки. Юрă халăх чĕринче, халăх ăс-тăнĕнче ĕмĕр-ĕмĕрех вăйлă çăл куç евĕр тапса тăрать.

*Юрăсем* ăнлавпа халăх хушшинче анлă сарăлнă, этем кун-çулне, йăли-йĕркине, кăмăл-туйăмĕпе шухăшĕмĕтне, савăнăçĕпе тарăхăвне кăтартакан, сăвăласа е кĕвĕлесе каланă фольклор хайлавĕсене палăртаççĕ.

Юрă яланах ĕç çыннипе пĕрле. Пуçланасса та вĕсем мĕн сĕм-авалах пулса кайнă. Çынсем ĕçленĕ чухне, ĕç кал-кал кайтăр тесе, тĕрлĕрен сăмахсем каланă. Пурăна киле çав чĕнӳ-кăшкăрашу сăмахĕсенчен юрăсем пула-пула кайнă. Акă, пĕр тĕслĕх, канат туртакансен юрри:

Атьăр, тăрăр, канат тытăр,
Хăвăртрах, хăвăртрах!

Э-эй, хăвăртрах!
Хăвăртрах, хăвăртрах!

Каярахри юрăсенче этем хăйĕн кун-çулĕпе пурнăçне сăнарлать. Тĕкĕр евĕр çутатать юрă унăн шăпине.

Ĕлĕкхи çыннăн тертлĕ те хĕн-хурлă пурнăçĕпе паллашас тесен, алла халăх юррисене тытса вула. Унта вăл яр-уççăн курăнса тăрать:

Хура вăрман урлă каçнă чух
Вуник кашкăра тĕл пултăм.
Вуник кашкăра тĕл пуличчен
Выртаясчĕ каска айккинче.
Çак нушана пĕлнĕ пулсан,
Выртаясчĕ анне хĕвĕнче.
Аттен аслă ывăлĕ пуличчен
Аçа-кикен пулас-мĕн,
Çавапа çулăнса укес-мĕн.

Çавăн пек пулнă ĕлĕкхи çыннăн кун-çулĕ. Шăпа савăнтарман ăна. Ирĕксĕрех чăваш юрă еннелле туртăннă, юрăра хăйне май савăнăçпа йăпанăç тупнă. Хурлăхлă юррăн сăмахĕсем чĕрене пырса тивеççĕ, шухăша яраççĕ. Епле пуянлăх сыхласа хăварнă пирĕн валли мăн асаттемĕрсемпе асаннемĕрсем! Çав юрăсем йăхран-йăха, ламран-лама, ăруран-ăрăва куçса пырса, паянхи кунччен çитнĕ. Унран хаклă мул çук та пулĕ пирĕншĕн. Халăх калашле: «Атте-анне сăмахĕн пĕр сăмахĕ пин ылтăн». Вĕсенче тăван халăхăмăрăн ĕмĕртенпех пыракан йăли-йĕрки, кун-çулĕпе культури, историйĕпе пурнăç йĕркийĕ тĕкĕр çинчи пек курăнать.

Илсе пăхар-ха ĕлĕкхи салтак юррисене. Мĕн çинчен-ши вĕсем? Паллах, тăван халăхăмăрăн ĕмĕртенпех пыракан йăли-йĕрки, асаплă та хĕн-хурлă салтак шăпи çинчен юрлать рекрут. Пĕлмест вăл: таврăнать-ши тăван киле каялла е çук? Çавăнпах пулĕ тайăла-тайăла «çенĕкпе», «тăван килпе», «ял-йышпа», «тăван çĕрпе-шывпа» уйрăлать, вĕсенчен каялла таврăнма пехил ыйтать.

Вăштăр кăна вăштăр, ай, çил вĕрет,
Мăкăнь чечекĕсене çав тăкать.
Хуларан хулана шур хут çӳрет,
Пирĕн куççульсене çав тăкать, – юрланă, сăмахран, Елчĕк районĕнчи Ĕнел ял çамрăкĕсем.

Салтак юррисем XVII-XVIII ём. çар службине йĕркеленнипе çыхăннă. Йывăр шутланнă чăвашсемшĕн рекрут тапхăрĕ. Ят тухнă каччă ял-йышран илемлĕ тутăрсем пуçтарса, тăрантас çине ларса, ял тавра юрласа çаврăннă. Рекрута тăванĕсемпе çывăх çыннисем, юлашки хут та пулин тесе, хăйсем патне илсе кĕреççĕ, хăна тăваççĕ. Пулас салтак çапла юрлать:

Пилешĕн те çырли хĕрлĕ тесе,
Юратса çиекен никам çук.
Салтакăн та ячĕ савăк тесе,
Савăнса каякан пĕри çук.

Хăйĕн савнă тусĕнчен вăхăтсăр уйăрнишĕн вăл хурланса юрлать, ыр-сывах таврăнма ĕмĕтленет.

Юрă – вилĕмсĕр. Вăл халăх асĕнче, халăх чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр упранĕ. Хальхи саманара юрă çĕнĕ кăмăл-туйăмпа, шухăш-ĕмĕтпе çыхăннă. Халăх кивĕ сăвă-юрăран лайăххине суйлать, çĕнетсе улăштарать е вĕсене çывăх çĕнĕ юрă кĕвĕлет. Истори чăнлăхĕ улшăнса пынăçемĕн, юрă та тематика, шухăш, сăнарлăх енчен чылай улшăнчĕ. Паянхи чăвашăн тĕнче курăмĕ пуянланчĕ, психологийĕ улшăнчĕ. Çавăнпах пулĕ, кивĕ йăласем манăçа тухса пыраççĕ, вĕсен вырăнне çĕннисем кĕреççĕ, халăх хушшинче пысăк хăвăртлăхпа сарăлаççĕ. Юрăсем – паянхи кун та халăх хушшинче анлă сарăлакан жанр.

Юррăн пурнăçри пысăк пĕлтерĕшĕ çинчен халăх сăмахлăхра нумай каланă. «Юрă – вилĕмсĕр», «Юрă – чун уççи», «Юрă хуйхăма сирет», – тенĕ ваттисем. Ырă юрă – пурнăç илемĕ, кăмăл эрешĕ: ăна юрлама «сывлăх кирлĕ», «мĕн кĕçĕнтен пухнă ăс кирлĕ». Халăх хăйне тивĕçтерекен юрра юрлать, ăна çыннăн этемлĕхне, кăмăл е пурнăç туртăмне, ăс-тăн çивĕчлĕхне виçмелли-хакламалли виçе вырăнне хурать. Этем ырă юрра вĕренме, пĕлме хушать, унпа киленме сĕнет («Эпир кунта юрлани сирĕн асра юлмалла»).

Халăх юррăн общество пурнăçĕнчи пысăк вырăнĕ çинчен юмахсем те хывнă. Тĕслĕхрен, «Юрă» тата «Юрă тыткăнран хăтăлни» юмахсем. Вĕсенче сăмах Юрă-пике анлă Атăл хĕрринчи хурлăхлă халăха савăнтарса пурăнни çинчен пырать. Çавăншăн ăна усал аса-

мăç вушар хурама ăшне хупса асаплантарать. Халăх паттăрĕ Юрра шыраса тупать, ирĕке кăларать, халăха каялла тавăрса парать. Вара каллех чăвашра Юрă сасси çĕнĕ янăравлăхпа илтĕнме пуçлать.

Тăван халăх юрри-сăввине пухса сăнанин историйĕ вăрăм та интереслĕ.

Чăвашăн юрă пуррине XVIII ĕм. варринчех асăннă, анчах ку вăхăтра вĕсене пичетлени пулман-ха. Пĕрремĕш хут чăваш юррисене Шупашкара килнĕ Д.П.Ознобишин 1833 ç. Федя ятлă чăваш çамрăкĕнчен çырса илнĕ, пичетленĕ, якатса çитермен алмазпа танлаштарнă. Çапла 9 юрă (12 куплет) чи малтан пичетленнĕ юрăсем пулнă, чăвашăн юрă культурипе традицийĕ пуррине кăтартнă. Хусанти тата ытти хуласенчи сăмахлăха юратакан романтик-литераторсем тăрăшнипе чăваш юрри-такмакне пухса сăнас, пичетлес ĕç вăй илсех пырать. Малтан çак ĕçе чăваш халăх пурнăçĕпе интересленекен вырăс этнографĕсем хутшăннă. 1834-1840 çç. чăвашра çуралса ӳснĕ, тымарĕсем чăвашран тухнă çыравçă А.А.Фукс (Апехтина), ялсем тăрăх çӳресе, чăваш пурнăçĕпе йăли-йĕрки çинчен çырать, юррисене çырса илет, вĕсене Д.Ознобишин çырса илнисемпе пĕрле хăйĕн «Записки о чувашах и черемисах Казанской губернии» кĕнекинче (1840 ç.) пичетлет.

Чăвашăн юрă культури пысăккине чăвашра ӳснĕ мал шухăшлă этнограф В.А.Сбоев ĕнентерсе калать. Хăйĕн «Исследования об инородцах Казанской губернии» монографийĕнче чăвашăн традицилле юррисем пуррине çирĕплетсе вăл 8 юрă пичетлет, вĕсене, шухăшне кура, тăвата ушкăна уйăрать: юрату, тунсăх, йăла тата кулăш юррисем). Тĕпчевçĕ чăваш юррисен поэтикине, илемлĕх мелĕсене çапла ăнлантарнă: юрă сăввинче тоника виçи тĕп вырăн йышăнать; логика пусăмĕ, сăмах вылявĕпе аллитераци, шалти рифма – çаксем чăваш сăввине вырăс халăх юрă-сăввинчен уйăрса тăраççĕ; чăваш сăввинче сасă евĕрлевĕ, танлаштару, парономази час-часах тĕл пулать.

XIX ĕм. иккĕмĕш çурринче чăваш халăх пурнăçĕпе тата культурипе интересленекен вырăс историкĕсен, этнографĕсен, чĕлхеçисен, тĕрĕкçисен, музыковечĕсен тата

ытти ăсчахсен йышĕ ӳсет. Кунта А.Ф.Риттих, Н.И.Золотницкий, П.М.Мальхов, В.И.Михайлов, В.А.Мошков, В.К.Магницкий ячĕсене асăнмалла. Вĕсемпе пĕрле чăвашран тухнă учительсем, этнографсемпе фольклористсем те ку ĕçе хастар хутшăнаççĕ. Чи малтанах С.М.Михайлова палăртмалла. С.Михайлов чăваш, вырăс, мари юррисене чылай пухнă, вĕсене хăй вăхăтĕнчи наукăри туртăмпа (этнографипе) çыхăнтарнă, йăлайĕркене ăнлантарма усă курнă. Вăл чăваш музыкипе юрри çинчен çырнă ĕçсенчен çаксене асăнмалла: «Чувашские свадьбы», «О музыке чуваш», «Чувашские разговоры и сказки», «Статистические очерки Козьмодемьянского уезда» т. ыт. те. Хăйĕн ĕçĕсенче автор туй юррисене (хĕр çураçнă чух юрланисем, хĕр çумсен юррисем, туй халăх юррисем, хĕр йĕрри), мăн кĕрӳ такмакне, çамрăксен шӳт юррисене, кĕреке юррисене илсе кăтартать.

Асăннă тапхăрта чăваш сăмахлăхне пухас ĕç Чĕмпĕрти чăваш шкулĕпе тӳрремĕнех çыхăннă. Ăна И.Я.Яковлев йĕркелесе пырать. Халăх юрри-сăввине чĕрепе юратнă çын чăваш шкулĕнче те çамрăксене тăван юрра юратма, унпа халăха çутта кăларас, унăн культурине çĕклес ĕçре усă курма вĕрентнĕ, тĕслĕхĕсене пуçтарттарнă. И.Я.Яковлев пулăшнипех нумай çамрăк халăх сăмахлăхне пухма хăнăхнă, каярахпа хăйсем те çав ĕçе анлăн пурнăçланă: пухнă, сăнанă, пичетленĕ, пропагандăланă. Хастаррисен йышĕнче П.Васильев, М.Петров, И.Юркин, Н.Охотников, Г.Тимофеев, Р.Идобаев, Г.Комиссаров, К.Иванов, Н.Шупуççынни, М.Трубина, П.Пазухин, С.Максимов, Ф.Павлов, Т.Парамонов, Г.Лисков т. ыт. те пулнă. Сăмахран, И.Н.Юркин 1888 ç. «Чăваш юррисем» кĕнекен ал çырăвне хатĕрлет, чăваш юррисем çинчен тĕрлĕ статьясем çырса пичетлет; Г.Т.Тимофеев 1896-1903 çç. «Тăхăръял» ятлă кĕнеке ал çырăвне çырса пĕтерет т. ыт. те.

XIX ĕм. 90-мĕш çулĕсенче чăваш халăх пурнăçĕн паллисене анлăн сăнасси, культура пуянлăхне пухса тĕпчесси системăна кĕрет, наука тĕллевне пăхăнса çитет. Çак пархатарлă ĕçре Н.И.Ашмарин тĕпчевçĕн тӳпи çав

тери пысăк: вăл сăмахлăха ушкăнпа пухассине йĕркелесе çитерет; ятарласа «Программа» пичетлет, кунта 100 çынна ытла явăçтарать; сăмахлăх тĕслĕхĕсене чăвашсем пурăнакан пур вырăнсенчен те пухтарать. Унăн фольклор ыйтăвĕсемпе çырнă 30 ытла тĕпчевĕ паллă. Тĕслĕхрен, «Сборник чувашских песен...» кĕнекере хăй вăхăтĕнчи виçĕ кĕпĕрнене кĕрекен чăваш ялĕсенче пухнă 198 юрă пичетленнĕ, вĕсене вырăсла куçарнă, историпе наука тĕнчи умне кăларнă. Тепĕр тĕпчевĕ – «Очерк народной поэзии у чуваш» ятлă статйи – чăваш фольклористикинче чăваш юррисен шухăш, сăнарлăхпа илемлĕх, жанр пуянлăхне туллин ăнлантаракан пĕрремĕш пичетленнĕ ĕç. Н.И.Ашмарин чăваш юррисене «творчествăллă шухăшлав произведенийĕсем», «халăх психологине тĕлĕнмелле тĕрĕс сăнлакан хăй тĕллĕн йĕркеленнĕ поэзи», халăхăн «ăс-тăнлă, шухăшлавлă пурнăçĕн (духовной жизни) пур феноменĕсене палăрмалла сăнлакан», «этнографипе халăх психологине пĕлме кирлĕ паха материал» ăнлавсемпе хаклать, юрăра «оригиналлăх, симпатилĕх, илемлĕх пысăк» пулнине палăртать.

Ют çĕр-шыв этнографĕсемпе музыковечĕсем те чăваш юрри-сăввине нумай пухаççĕ. Çак ĕçре чи малтанах финн фольклорисчĕн Х.Паасонен, венгр музыковечĕн Д.Месарош тата ыттисен ячĕсене те каласа хăвармалла.

Чăваш халăх сăмахлăхĕ калама çук пуян. Çав пуянлăхра юрă пысăк вырăн йышăнать. Вăл – халăх кунçулĕн çырăнман кĕнекийĕ: сĕм авалах йĕркеленнĕ, пурнăç ўсĕмĕпе çыхăнса аталаннă.

Чăваш юрринче сăнарланнă мотивсем: этем çут çанталăкпа киленни; ака-суха туса, тыр-пул ўстерсе, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетсе, ача-пăча пăхса-усраса савăнни; тĕрлĕ йăла-йĕрке ирттерсе çут çанталăка пăхăнтарма, хăйне çĕклеме тăрăшни; хуçалăхне çĕклесе пурнăçне йĕркелес тени т. ыт. те.

Фольклористикăра чăваш юрри-сăввин жанр, тема, шухăш, илемлĕх енĕсене тĕпчемен мар, çапах та тĕпчемелли нумай-ха. XX ĕм. 70-80-мĕш çулĕсенче ку

енĕпе Н.И.Иванов, В.Я.Канюков, Ю.А.Илюхин, И.И.Одюков, Е.С.Сидорова, В.О.Максимов (Валем Ахун), П.К.Андреев, В.Г.Родионов т. ыт. те ăнăçлă ĕçлерĕç, халăх юррин жанр паллисене, çемĕ йĕркеленĕвне, сăвă виçисене, йăла-йĕркепе çыхăннă юрăсăввăн содержанийĕпе илемлĕх енĕсене, шухăш-кĕвĕ уйрăмлăхĕсене тĕпчерĕç.

Юрă хăй сăвăллă-кĕвĕллĕ сăмахлăх жанрĕсене пĕрлештерсе тăнине чăваш тĕпчевçисем тахçанах çырса кăтартнă. Сăмахран, И.И.Одюков ун йышне юрра, такмака, сăвва, сюжетлă юрăсене (балладăсене) кĕртет. Юлашки çулсенче тĕпчевçĕсем (М.Г.Кондратьев т. ыт. те) çавра юрăсене те хăйне майлă жанр пулнине каларĕç, тишкерсе хакларĕç.

Маларах сюжетлă юрăсене пейĕт терминпа палăртнăччĕ, юрăсене çиелтен хакланăччĕ, халĕ такмаксене тата чăваш сăввисене хăйсене уйрăммăн пăхса тухăпăр, хаклăпăр.

Çакна çеç палăртар: чăваш çырулла поэзийĕнче икĕ тĕрлĕ сăвă тĕп вырăн йышăнать:

1) тан сыпăклă сăвă (силлабика);

2) тан сыпăклă тата пусăмлă сăвă (силлабо-тоника).

Тан сыпăклă сăвăра тĕпре картсем (стопасем) мар, тан сыпăклă йĕркесем. Тĕрĕссипе çав йĕркесем çуркамсене пула икке е виççе пайланма пултараççĕ: 4 сыпăк + 3 сыпăк + 4 сыпăк; 4 сыпăк + 3 сыпăк.

Тан сыпăклă сăвăри сăмах пусăмĕсем çемĕ йĕркеленĕ çĕре хутшăнмаççĕ, мĕншĕн тесен чăваш чĕлхинче пĕр-пĕр сăмаха тем тĕрлĕ пусăмпа каласан та пĕлтерĕшĕ улшăнмасть, вырăссен вара улшăнать (тĕслĕх: *замо́к* - çăра тата *за́мок* - термен, кермен т. ыт. те).

Тан сыпăклă чăваш сăввинче йĕрке варринчи çуркамсем тĕпре терĕмĕр. Çав çуркамсен вĕçĕсем ытти сыпăксенчен уйрăларах тăраççĕ. Тĕрĕк сăввине тĕпчекенсем çуркам тата йĕрке вĕçĕнчи сыпăксем вăрăмраххăн илтĕннине палăртаççĕ. Сăвă хывăм улшăнасси (трансформациленесси) шалти тата тулашри факторсенчен килет. Шалти факторĕ – чĕлхе уйрăмлăхĕсем, тулашри – культурăпа эстетика традицийĕсем.

Çавра юрă тесе кĕске сюжетлă тата вĕçленнĕ шухăшлă юрăсене калаççĕ. Ун йышшисем ытларах йăла-йĕркепе çыхăннă. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, çавра юрăсем – пĕр е икĕ строфаллă, çав вăхăтрах тарăн шухăшлă та кĕске, витĕмлĕ юрă йĕркисем. Вĕсен тĕп палли – сăнлăх параллельлĕхĕ пурри: кунта çут çанталăк пулăмĕсене, чĕрĕ мар япаласене е туйăмсене чи малтан палăртса юрлаççĕ, кайран çеç асăннă сăнарлăх урлă этем ĕçĕ-хĕлĕпе пурнăçне танлаштарса кăтартаççĕ.

Çавра юрăсем тепĕр чух параллельлĕхсĕр те çÿреме пултараççĕ: кунашкаллисенче пурпĕрех юррăн шухăшĕ – пĕтĕмлетуллĕ, анчах форми – кĕске. Асăннă уйрăмлăха кура хăш-пĕр йăла-йĕркере çавра юрă кĕввĕн вĕçне çитиччен пыраймасть, ирĕксĕрех юрлаканăн вара урăх çаврăмсем шутласа тупмалла пулнă.

Тăватă йĕркеллĕ çавра юрă икĕ пайран тăрать: 7-8 е 5-6 сыпăклисенче яланах пĕр пек пайсем; анатри чăвашсенче тĕл пулакан нумай сыпăклă сăвăра вара пысăккисем (6-7 сыпăк) тата пĕчĕккисем (3-4 сыпăк) пуррине асăрхатпăр. Ку паллăлăх, тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, çавра юрăсем авалхи хĕвелтухăç халăхĕсен çырусăр поэзире анлă сарăлнă кĕске сюжетлă юрăсенчен пулса кайнă тенипе çыхăннă-мĕн, вăл тухăç традицисен пĕр юпи пулса тăрать иккен.

В.Г.Родионов çавра юрра уйрăм жанр тесе шутламасть. Çав çаврасем пурте юрăсен вăл е ку жанрне кĕреççĕ. Вăл çулпа кайсан, мĕнпур юрра икĕ ушкăна кăна уйăрма тивет: пĕр çавраллă юрă тата нумай çавраллă (сюжетлă) юрă. Ун шухăшĕпе, çак жанра хăш-пĕр тĕпчевçĕ тухăçра анлă сарăлнă рубаи жанра чăваш халăх сăмахлăхĕнче курасшăн пулнăран шухăшласа кăларнă. Халăхра «пĕр çавра юрлар-ха» тени нихăçан та кĕске, сюжетсăр юрă юрлас тенине пĕлтермен. «Пĕр авăк, пĕр кана юрлар-ха» тенипе тÿр килет çав шухăш. *Çавра* термина чăваш ăслăлăхне малтанласа *строфа* пĕлтерĕшпе Н.И.Иванов кĕртнĕччĕ. Сăмахăн чăн пĕлтерĕшĕ *строфа* ăнлавран анлăрах пулни пачах та иккĕлентермест. Авăк та, кана та текст калăпăшне мар,

юрланӑ вӑхӑта (юрласа ывӑниччен темиҫе строфа та юрлама пулать, ҫав шутра вӑрӑм сю-жетлисене те) пӗлтерет. Юрланӑ хыҫҫӑн пӗр хушӑ кан-са илнӗ (урӑх ӗҫ тунӑ е вылянӑ, калаҫса ларнӑ т. ыт. те). Унтан каллех тепӗр авӑк (кана, ҫавра, хушӑ) юрӑ шӑрантарнӑ пирӗн чӑваш.

Юррӑн тӗрлӗ жанр паллисене хӑй вӑхӑтӗнче И.Н.Юркин, Н.И.Ашмарин асӑрханӑ, ӑнлантарнӑ. Халӑхра юрра пӗччен е ушкӑнпа кӗвӗлесе юрлаҫҫӗ; вӑл сӑвӑллӑ та, сӑвӑсӑр та пулать. Сӑвӑлли вара – сюжетлӑ е сюжетсӑр, пӗр е темиҫе йӗркеллӗ, нумай сыпӑклӑ силлабика.

Юрӑсене ушкӑнлас ыйтӑва чӑваш фольклористикинче паянхи кунччenex татӑклӑн татса паман-ха. В.А.Сбоев юрӑсене туйӑма шута илсе палӑртнӑ терӗмӗр. Хӑш-пӗр фольклорист вӗсене йӑла-йӗркепе, ӗҫпе, социалла пурнӑҫ тапхӑрӗсемпе е йӑлисемпе ҫыхӑнтарнӑ (С.Михайлов, В.Магницкий, Н.Ашмарин, И.Никитин (Юркки), Г.Комиссаров). Совет тапхӑрӗнче те халӑх лирикине ӗҫпе, йӑла-йӗркепе, шухӑш-кӑмӑлпа, социаллӑ пурнӑҫ йӗркисемпе, камсем юрланине кура ушкӑнланӑ. Юлашки ҫулсенче фольклорҫӑсем чӑваш юррисене тематика енчен мар, кам юрланине тӗпе хурса классификацилерӗҫ. Вырӑс фольклорӗнче лирикӑлла юрӑсене икӗ ушкӑна кӗртеҫҫӗ: тӑсса юрламаллисем тата хӑвӑрт юрлаканнисем. Чӑвашсене ҫывӑх тӑракан хӑш-пӗр халӑхсен (тутарсен, пушкӑртсен) лирикине кунашкал мелпе ушкӑнлама пулать-тӗр, анчах чӑваш халӑхӗн юрри-сӑввин хӑйӗн уйрӑмлӑхӗсем пур: чи малтанах асӑннӑ 2 ушкӑнӑн чиккине тӗрӗс палӑртма йывӑр, тепӗр енчен, шухӑш-туйӑмлӑ юрӑсене чӑваш ҫынни йӑлапа ҫыхӑннӑ уявсенче, тепӗр чух ахаль те юрлама пултарнӑ. Ҫавна пула йӑла-йӗрке юррисене лирикӑлла юрӑсенчен уйӑрса илме питӗ кансӗр. Юрӑсене вӑрӑм тата кӗске тесе музыковедсем уйӑраҫҫӗ. Филологсем мала юрлакансен ӳсӗмне тӗпе хураҫҫӗ. Юрӑсене камсем, кам валли ирттернине шута илсе чӑваш халӑх лирикине 2 пысӑк пая ушкӑнлама сӑлтав пур:

1. Ҫамрӑксен лирики.
2. Ҫитӗннисен е аслӑ ӑрурисен (хресченсен) лирики.

*Çамрăксен лирики* яш-кĕрĕмĕн ĕлĕк-авалах пулса кайнă йăли-йĕркипе çыхăннă. Уйрăмлăхĕ – йăла пĕлтерĕшлĕ пулманни, пурнăç енĕсене философла, социалла тата историлле куçпа пăхса хакланинче. Кунашкал юрă-сăвăсен тĕп теми – çамрăксен шухăш-ĕмĕчĕ, кăмăл-сипечĕ, ăша капланса килнĕ туйăмĕсем.

Çамрăксен лирикине 2 ушкăна пайлама сĕнетпĕр: ушкăнпа юрланисем тата пĕччен юрланисем. Пĕрремĕшне, çапла майпа, салтак юррисем, хĕрсен юррисем, çамрăксен юррисем, иккĕмĕшне тăлăх юррисем е çамрăк юррисем, хĕр юррисем тата каччă юррисем кĕреççĕ.

Салтакпа тăлăх юррисене И.И.Одюков социалла танмарлăх юррисен шутне кĕртсе тишкернĕ. Ун пек жанр сăмахлăхра çук.

*Салтак юррисем* XVII-XVIII ĕм. çар службине (хĕсмечĕ) йĕркеленнипе аталаннă. Кам тата хăçан юрланине кура вĕсем 3 ушкăна пайланаççĕ: салтака каякансен (рекрутсен), салтакрисен, салтак арăмĕпе ачисен юррисем. Пур ушкăнри юрăсем те шухăшĕпе пĕр-пĕрне çывăх. Рекрут юррисенче «напур» халăхшăн «йывăр самана» пулни курăнать, салтака кайма чĕнекен «хура хут» ыр ачасен пуçне çиет, приюмсенче пуянсен ывăлĕсем вырăнне чухăнсене сутаççĕ, хресчен ĕçĕпе ĕçлес вăхăтра яш-кĕрĕм салтакра çӳрет. Салтак ачи тăвансемпе ял-йышран, тус-тантăшĕнчен вăхăтсăр уйрăлнишĕн кулянать, хăй тавраниччен ашшĕ-амăшĕн килçурчĕ саланасран шикленет. Вăл хăйне çăлса хăварма ыйтать, анчах ăна никам та çăлса хăвараймасть. Вăл «ăрагник вăййисене вылять», хула урамĕсенче «йĕрсе ларать», вут хыпнă хулана пырса кĕрет. Варшавăпа Порт-Артурта пулать, кĕпер çуккипе Висла урлă этем вилли хурса каçать. Пĕр юрăра та патша службине ырласа калани тĕл пулмасть: службăна кайиччен кашнисех хăрăк турат пулма хатĕр. Салтак ир те, каç та «папуй» çиет, вăрçа хатĕрленет, вута кĕрет, юн юхтарса чупать, йывăр аманать те аякри çĕр-шывра вилет, ĕмĕрĕ кĕске пулнăшăн патшана ылханать. Салтак

арăмĕпе ачисен юррисенче киле юлнă тăванĕсем хăйсен ашшĕсем, пиччĕш-шăллĕ е мăшăрĕсем вăрçăсенче çухалнăшăн хурланса куççуль тăкаççĕ.

*Хĕрсен юррисем* ытларах йăла-йĕркесенчен вăй илсе аталаннă. Малтанласа ăрăмлă пĕлтерĕшлĕ пулнăскерсем, каярахпа юрăсенче хĕрсен юрату кăмăлĕ, пулас пурнăç ĕмĕчĕ палăрать. Кунашкаллисем хĕр сăри ирттернĕ чух, улахсенче т. ыт. яш-кĕрĕм уявĕсенче юрланнă.

*Çамрăксен юррисем* – хĕрсемпе каччăсем хутшăнса е черетленсе юрланăскерсем. Вĕсем те яш-кĕрĕмĕн йăла уявĕсемпе çыхăннă пулнă. Вăхăт иртнĕçем аваллăх паллисем çухалса пыраççĕ, савăнăçпа тунсăх, юратупа туслăх кĕввисем мала тухаççĕ. Тĕслĕхрен, уявсенче юрату юррисем пысăк вырăн йышăннă. Çамрăксем чăн юратăва пысăка хурса хакласçĕ, хăйсен ĕмĕчĕсене пулас телейлĕ те савăнăçлă пурнăçпа çыхăнтараççĕ. Вăйă юррисене пысăк ушкăнпа та юрланă. Вĕсенчен чылайăшĕнче – каллех чăн юрату, унпа пĕрлех илемлĕ шӳтпе кулăш та пурри сисĕнет.

*Тăлăхсен юррисенче* ашшĕ-амăшĕсĕр ӳснĕ çамрăксен тӳсме çук йывăр пурнăçне витĕмлĕн кăтартса панă. Вĕсем ашшĕ-амăшĕ вăхăтсăр вилнĕшĕн, ăс-тăн паракан пулманшăн, амаçури амăшĕсем кӳрентернĕшĕн кулянаççĕ. «Самана йывăрри» вĕсен пурнăçне татах та йывăрлатать. Тăлăх ача улпут, тиек, пуян, пуп патĕнче усравра е тарçăра пурăнать, пур ĕçе те тăвать, çапах хуçине юраймасть: йӳç эрĕм пек тип çăкăрне шывпа сыпса çиет, патак айĕнчен тухаймасть, йытă илтмен сăмах илтет, тĕнче асапне тӳсет, ялтан тухса каять, ыйткаласа çӳрет, ирĕклĕ хусахсемпе пĕрлешет, пусмăр тĕнчине хирĕç тăрать.

Пĕччен юрлакан юрăсенчен – хĕрсен тата каччăсен юррисене асăнмалла. Вĕсем чи малтан пейĕтсем евĕр аталаннă пулас; каярах сюжетлăхне çухатса, юрлаканăн кăмăл-туйăмне палăртакан е сăнлакан юрăсем пек çӳреме пуçланă. Хĕрсем ытларах юратнă каччишĕн тунсăхлаççĕ, урăх хĕрпе çӳреме тытăннишĕн «йĕре-йĕре» хĕр шăпине «айăплаççĕ», хăйĕн çамрăк ĕмĕрне телейлĕ, ырлăхлă-сывлăхлă ирттерме, вăрăма тăсма ĕмĕтленет

хĕр, унпа савăнма сĕнет. Каччисем те çавнашкалах: кĕвĕçÿ туйăмĕсемпе пурăнаççĕ, юратнă е килĕштернĕ хĕрĕ юттипе çÿренине курсан е пĕлсен, «тем тума та» хатĕр вăл, тарăхнипе юратман хĕрпе «тус пулать», ĕлĕкхи савнине «курмăш пулать», вăйă-сенче те унпа «калаçмасть», «паллами пулать» т. ыт. те.

Çамрăксен юррисенче яш-кĕрĕм пурнăç илемĕпе киленет: уявсенче савăнма-кулма чĕнет; ун шухăшĕпе, пурнăç илемĕпе савăнăçĕ, кăмăлĕ çуллахи çут çанталăк илемĕпе пĕр кĕвĕллĕ, туртăмлă. Çут çанталăк илемĕ – çамрăк пурнăçăн илем палли, символĕ. Вăрманĕ-йывăçĕ, улăхĕ-чечекĕ, уй-хирĕпе тырри-пулли – пурте илемлĕ, пурте çут çанталăка илем кÿрет, этем кăмăлне çĕклет. Çамрăк выляни-кулни те илемлĕ, вăл пурнăçа илем кÿрет, савăнăç парать.

*Çитĕннисен лирики* хăйĕн аталанăвĕпе сĕм авалхи йăла-йĕркеллĕ юрă-сăвăпа пĕр тĕвĕллĕ, вĕсенчен пулса кайнă. Çавăнпа аслă ăрурисен юррисем малтанхисем пекех тÿрех ĕç е хуçалăх интересне пăхăнман. Вĕсем этемĕн ĕç тухăçĕпе, кун-çул юхăмĕпе çыхăннă савăнăçĕпе хурлăхне, кăмăлĕпе ĕмĕтне, обществăлла тĕнче курăмне, ĕçпе пурнăç опытне философла пĕтĕмлетсе сăнлакан шухăш-туйăм лирики пулса тăнă. Йĕркеленнĕ тапхăрĕпе вĕсем йăла-уяв юрри-кĕввирен çамрăкрах.

Аслă ăрурисен е хресченсен лирикине хăйсене 2 пысăк ушкăна уйăратпăр: ушкăнпа юрланисем тата пĕччен юрланисем. Пĕрремĕш ушкăнри юрăсене – ĕçкĕ-çикĕ юррисене – кам юрланине кура уйăрма йывăр, мĕншĕн тесен вĕсене арçыннисем те, хĕрарăмĕсем те пĕрле юрланă; иккĕмĕшсене – тематика енчен пайлама пулать, анчах фольклорăн пур жанрĕсене те пĕр принциппа ушкăнланине тĕпе хурсан, пĕччен юрлаканнисене çаплипех, ним пайламасăрах, пăхса тухăпăр. Тепĕр енчен, ун йышши юрăсем ытлах сарăлман та: хăна юррисене тата çĕнĕ çĕре куçакансен юррисене асăнма пулать. Çакна та палăртмалла: кунашкал сăвă-юрра, юрлаканнисен хисепне шута илес пулсан, пĕрремĕш ушкăна та кĕртме пулать.

*Ĕçкĕ-çикĕ юррисем* – чи йышлисем, шухăш-илемĕпе

пуяннисем. Вĕсене фольклористсем те ытларах пухнă, йăлапа пĕрле халăхра çав тери нумай упраннине асăнаççĕ.

Ĕçкĕ-çикĕ хуçалăхри ĕç (сунар, выльăх-чĕрлĕх, çĕр ĕç) тухăçлăхне, ăру ĕрчевне палăртса хăна-вĕрле пухса савăннипе çыхăнса йĕркеленнĕ. Ĕçкĕре тăван-пĕтенпе, хурăнташпа, ял-йышпа пухăнса хыпар-хăнар пĕлнĕ, пĕр-пĕрин пурнăç е ĕç опычĕпе паллашнă, шухăш-кăмăлне каланă. Çавăнпа юрăсенче халăх пурнăçа анлăн, философла хаклани курăнать.

Ĕçкĕ-çикĕ юррисени йышне кĕреке юррисем кĕреççĕ. Вĕсем авал ĕç юррисем пулнă, каярахпа çĕр ĕç тухăçлăхне хисеплекен ритуаллă юрăсем, пурнăçа философла пĕтĕмлетсе хаклакан гимнсем пулса кайнă. Вĕсене кĕрекере ваттисене асăннă хыççăн, ĕçкĕ-çикĕ уявĕ тытăниччен пуçласа юрланă. Ун хыççăн тин ватăсем халăха ĕçкĕ-çикĕ ĕçме, савăнма ирĕк панă, çав халалпа халăх юрланă-ташланă, калаçнă, киленнĕ.

Ĕçкĕри халăх савăнăçĕ кĕрекене ырласа юрланинчен пуçăнать. Кĕрекене, паллах, килти е ялти чи хисеплĕ, ĕçчен те кăмăллă ватăсене лартнă, вĕсенчен аслине кĕреке пуçĕ тунă. Юрăсенче чăваш кĕрекене ырă та хитре, хисеплĕ вырăн туса сăнлать. Кĕрекене хисеплени – ваттисене хисепленинех. Ватта хисеплесси – пурнăç норми, халăх сăпайлăхĕ, халăх этикин паллă енĕ, халăх моралĕ. Ку енсем чăвашăн ĕçкĕ-çикĕ юррисенче яр-уççăн палăрса тăраççĕ. Ку çеç мар: вĕсенче атте-аннене хисеп туни, ытти тăвансене, хурăнташсене мухтани тĕкĕр çинчи пек курăнать.

Чăваш юрăсенче те, пурнăçри пекех, чи çывăх тăванĕсене пур хурăнташран мала хурать, çав тăвансен пĕр-пĕринпе хутшăнса, пулăшса пурăнмалла тесе шутлать.

Ĕçкĕ – савăнăççăр, савăнăç юрăсăр пулмасть. Юрă ĕçкĕ-çике хăтлăх кӳрет («Тутлă сăра туса, хăмла ярса, юрламасăр ĕçни мĕн илем?»; «Юрламасăр ĕçкĕсем ĕçес мар, лайăх ĕçке сая ярас мар»). Ĕçкĕ-çикĕре ырă ятлă çын – хут купăс калакан, юрă пĕлекен.

*Хăна юррисем* – ĕçке-çике е урăх уява кăмăлласа,

хисеплесе те сума суса пынӑ хӑнасем кил хуҫисене мухтаса юрланӑ сӑвӑ-юрӑ, ӑна пӗччен те, ушкӑнпа та юрлама пултарнӑ.

Хӑна юррисенчи тӗп мотив – хӑна кил хуҫине тӑван пулнӑшӑн та, ӗҫкӗ-ҫикӗ пухнӑшӑн та, хисеплесе чӗннӗшӗн те савать, юрӑ юрласа тав сӑмахӗ калать. Хӑнисен чӗлхи пыл та ҫу, хуҫасене тӗрлӗ эрешлӗ сӑмахсемпе мухтать: вӗсем ырӑ та лайӑх ҫынсем, «пӗрле ӳснӗ тантӑшсем», аслӑ ятлӑ, чыслӑ та хисеплӗ ҫынсем («Ял ҫине тухсан, ай, ятӑр пур, килӗре те килсен, ай, чысӑр пур»). Ҫавӑнпа хӑна вӗсемпе «услам ҫуран хывнӑ чӗлхепе калаҫать», чӗннӗшӗн, тутлӑ апат-ҫимӗҫ ҫитернӗшӗн тав тӑвать.

Ку ҫеҫ те мар. Хӑна-вӗрле юрра хӑйӗншӗн кӑна мар, хуҫине, тӑванӗсене юрас, вӗсен кӑмӑлне ҫавӑрас тесе юрлать, ыттисене хӑйпе пӗрле юрлама чӗнет, мӗншӗн тесен юрӑ – кӑмӑл уҫҫи, хавхалану.

Ӗҫкӗ-ҫикӗ, хӑна-вӗрле юррисенче савӑнӑҫ-хурланупа пӗрле юнашар шӳт тӑрать. Шӳтлени – сӑмах хуҫни е ваклани ҫеҫ мар, вӑл – савӑнӑҫ, тӗртсе е систерсе калани, ӑс пани. Хӑна-вӗрле шӳтпе хуҫи кӑмӑлӗпе апат-ҫимӗҫне, хӑй пурнӑҫӗпе ӗмӗтне, тыткаларӑшне ӳкерет.

*Ҫӗнӗ ҫӗр юррисенче* чӑвашсем ҫӗнӗ ҫӗрсене (Ҫӗпӗре, Алтай е Урал тӑрӑхне, Турцие е урӑх ҫӗре) куҫса кайса гертленсе пурӑнни курӑнать. Юрӑсем 2 ушкӑнран тӑраҫҫӗ: ҫӗн ҫӗре куҫнӑ чух тата куҫса кайсан юрланисем. Икӗ ушкӑнӗнче те йывӑр шӑпа ҫинчен асӑнаҫҫӗ. Куҫса кайма тытӑннӑ чух юрланӑ юрӑсенче ҫӗнӗ ҫӗре куҫма чӗнеҫҫӗ, унти пурнӑҫа ырӑ та ҫӑмӑл пек туса сӑнлаҫҫӗ («Акмасӑр тырӑ пулать, тет, ҫапмасӑр авӑн ҫапӑнать, тет»). Анчах халӑх Ҫӗпӗрти пурнӑҫ ырлӑхӗ ҫинчен калани «ҫын сӑмахӗ ҫеҫ» пулнине те пӗлет. Ҫӗпӗре е Турцие кайсан та, вӑл «хуйхӑ ҫине» лекет, хӗн-хур тӳсет: аксан та – тырри пулмасть, вырсан та – кӗлти тулмасть, ешерен курӑк типсе ларать. Вӑл тырри-пуллине те хура куҫҫулӗпе шӑварать, арманне те хуйхӑ сывлӑшӗпе ҫавӑрать, тӑлӑха юлать, асапланать.

Чӑваш халӑхӗн *ӗҫ юррисене* сахал мар тӗпченӗ. Чи тӗплӗ те туллин хаклаканӗ – И.И.Одюков про-

фессор. Хăйĕн «Жанровые и идейно-художественные особенности чувашских трудовых песен» (1963) статйинче, «Чăваш халăх лирики (Авалхи юрăсем)» тата «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 3 том. Юрăсем» (1978) кĕнекисенче паллă фольклорист вĕсем пирки çапла çырать: «Ĕç юррисем, ытти халăхсен пекех, ĕçе хутшăннă çынсен вăй хусканăвĕсене йĕркелемелли меслет, ĕç юхăмне çăмăллатмалли, унăн тухăçлăхне çĕклемелли асамлă-ăрăмлă юрă-сăвă пулнă. Ĕç юхăмĕпе çыхăннă хăш-пĕр авалхи юрăсем (сăвай юрри) хăйсен ăрăмлăх паллисене каярахпа та çухатман («Сăвай, сăвай, тӳрех лар, çĕр тĕпнелле анах пар»). Ытларахăшĕ ăна пĕтĕмпех çухатнă, хресченĕн ĕç тухăçĕпе çыхăннă кăмăлĕпе шӳте палăртакан юрă пулса тăнă. Çавна пулах хăшĕсем ĕç юрри ушкăнĕнчен тухнă, кулленхи йăла (туй, вăйă, ĕçкĕ), ача-пăча юррисен шутне кĕнĕ»[31].

Ĕç юррисене, ĕç юхăмĕпе çыхăнни-çыхăнманнине кура, И.И.Одюков 4 ушкăна уйăрать: ĕç юхăмĕпе тачă çыхăннисем; тĕрлĕ ĕç йĕркине сăнлаканнисем; ĕçе йыхăраканнисем; ĕçе хисеплесе-хакласа юрланисем (гимнсем).

Çапла вара, пĕрремĕш ушкăна канат туртакансен юррисем, сăвай çапакансен юррисем, каска татакансен юррисем, катка-пичке тăвакансен юррисем, тимĕрçĕ юррисем т. ыт. те кĕреççĕ. Вĕсем пĕччен тата ушкăнпа юрлакан пайсенчен тăраççĕ. Ушкăнпа юрланисенче ĕçе хутшăннă çынсен вăй хусканăвне йĕркелеме тата ĕç тухăçлăхне çĕклеме ыйтсан, пĕччен юрламалли пайĕнче вара ĕçе хутшăнма çеç йыхăрнă е ĕçре пĕр пек вăй хума чĕннĕ, ĕçĕн пĕлтерĕшне палăртнă т. ыт. те.

Иккĕмĕш ушкăнрисен шутне çаксем кĕнĕ: авăн çапакансен юррисем, сӳс тыллакансен юррисем, сӳс шăртлакансен юррисем, йĕке çавăракансен юррисем, çăм тапакансен юррисем, пир çапакансен юррисем,

---

[31] Одюков И.И. Чăваш халăх лирики (Авалхи юрăсем): Вĕренӳ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1978. 15-16 с.

тăла пусакансен такмакĕсем, чăпта çапакансен юррисем т. ыт. те. Кунашкаллисем ĕç йĕрки мĕнле пулса иртнине, çав ĕçĕн пĕлтерĕшне ăнлантарнă.

Виççĕмĕш ушкăнрисем – ĕçе йыхăраканнисем – çынна, çемьене тăванĕсем е ял-йыш çурт çавăрнă е утă çулнă, тыр-пул пуçтарнă е вут-шанкă тирпейленĕ чух пулăшнипе çыхăннă. Вĕсен шутне ниме юррисене кĕртмелле.

Тăваттăмĕш ушкăна ака-суха юррисем кĕреççĕ. И.И.Одюков шухăшĕпе, вĕсем те «...ĕç юррисемех – ĕçĕн тухăçлăхĕпе пĕлтерĕшне халăх пурнăçĕпе çыхăнтарса хаклакан гимнсем – пулнă. Анчах ĕç хыççăн ирттернĕ ĕçкĕ-çикĕри кĕрекере юрланипе вĕсем «кĕреке юррисем» пулса тăнă». Тĕслĕх вырăнне С.Максимовăн «Ака-суха юррине» илĕпĕр. Ку юрă – халăх юрри пулнăскер. Хăй вăхăтĕнче асăннă юрра чăвашсен паллă фольклорисчĕ-музыковечĕ илемлетсе тата якатса хитрелетсе, çĕнĕ сĕм вĕрсе кĕртсе халăха каялла тавăрма пултарчĕ. Паян «Ака-суха юрри» кирек мĕнле уявра та, ĕçкĕ-çикĕре те чăваш халăхĕн гимнĕ пулса тăчĕ. Ăна çĕкленӳллĕ туйăмпа, мăнаçланса та пур кăмăлпа юрланине туйса тăратăн.

В.Г.Родионов калана тăрăх, «Ака-суха юрри» нихăçан та ĕç юрри пулман, вăл малтан юрласа витĕннĕ кĕлĕ-юрă пулнă. Çав юрă евĕрлĕ кĕлле чӳклемере çĕнĕ тырра киветнĕ май Турра–Пӳлĕхе тав туса юрланă, вĕсенчен ырлăх-сывлăх ыйтнă. Çав юрра кĕрекери ватăсем юрланă чух çамрăксем чĕркуçленсе тата пуçĕсене пĕксе итленĕ.

*Обществăри социаллă ушкăнсен юррисем* – халăх хушшинчи е обществăри тĕрлĕ социаллă ушкăнсен е сийсен шухăш-кăмăлне, пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлне сăнарлакан хайлавсем. Кунашкал юрăсенче ĕç халăхĕ феодализмпа капитализм тапхăрĕсенчи танмарлăхпа пусмăра хирĕçлени, çăмăллăх паракан пурнăç йĕркисемшĕн кĕрешни курăнать. Вĕсем йăла-йĕрке юррисемпе, вырăс халăхĕн революци юррисен традицийĕсемпе йĕркеленнĕ.

Чăваш шухăшĕпе, унăн хĕн-хурлă пурнăçĕ йывăр

саманаран, классен танмарлӑхӗнчен, пуянлӑхпа чухӑнлӑх пурринчен килнӗ имӗш.

И.И.Одюков ку ушкӑна ҫакнашкал юрӑсене кӗртнӗ: таркӑн-хусах юррисем, вӑрӑ-хурах юррисем, удел хресченӗсен юррисем, ямщӑк юррисем, бурлак юррисем, рабочи юррисем, тӗрмепе каторга тата ссылкӑпа революци юррисем.

*Таркӑн-хусах юррисем* темипе, шухӑшӗпе истори юррисене ҫывӑх. Вӗсем С.Разинпа Е.Пугачев ҫинчен хывнӑ юрӑсемпе пӗр вӑхӑтрах йӗркеленнӗ, анчах вӗсенче историри событисем уҫӑмсӑртарах. Таркӑн ҫынсенчен нумайӑшӗ Болотников, Разин, Пугачев вӑрҫисене хутшӑннӑ. Таркӑнсем – вӑрӑ-хурах мар, ирӗклӗ хусахсем: вӗсем чухӑнсене тивмеҫҫӗ, улпутпуянсене, воеводӑсене ҫаратаҫҫӗ, ирӗклӗхне алӑри хӗҫпӑшалпа хӳтӗлеҫҫӗ, пусмӑр тӳсекен ҫынсене хӑйсен йышне йыхӑраҫҫӗ. «Ан кашла, вӑрман» юрӑра таркӑн «купса-улпутсен пуҫне» касать, «Хусахра ҫич ҫул, ай, ҫӳрерӗм» юрӑри 15-ри тӑлӑх ача хусахсемпе «купса мулне нумай шутлать», «чухӑн ҫынна нихӑҫан» тивмест. Хӑйсене хӑйсем ирӗклӗ тесе шутлаҫҫӗ пулин те, таркӑнхусах пурнӑҫӗ йывӑр: вӗсене ялан хӑвалаҫҫӗ, тытаҫҫӗ, каторгӑна ӑсатаҫҫӗ. Савӑнма вӗсен кил-йышӗ те, ачипӑчи те ҫук.

*Вӑрӑ-хурах юррисем* темӑпа таркӑн-хусах юррисене питӗ ҫывӑх. Ку юрӑсенче вӑрӑсен хурахла ӗҫӗсем сӑнарланнӑ. Вӑрӑсем – класс туйӑмне ҫухатнӑ е ӑнланман ҫынсем. Вӗсене ҫапла пулма социаллӑ танмарлӑх та хистенӗ, ют ҫынсене те, ял ҫыннисемпе тӑванӗсене те, пуянсемпе чухӑнсене те ҫаратнӑ. Тарӑхнӑ халӑх кун пек чух вӑрӑсене хирӗҫ е пӗчченшерӗн, е ушкӑнпа кӗрешет.

*Удел хресченӗсен юррисем* 1797 ҫ. удел ведомствине тунипе, чӑваш хресченӗсене удел кантурне, крепостла йӗркесене пӑхӑнтарнипе, тертлентернипе ҫыхӑннӑ. Удел хресченӗсем 1797-1863 ҫҫ. патшана пӑхӑнса пурӑннӑ. Вӗсен шутне Чӗмпӗр кӗпӗрнинчи чылай чӑваш ялӗ кӗнӗ. Ку хресченсен пурнӑҫӗ уйрӑмах асаплӑ, хӗн-хурлӑ пулнӑ. Вӗсен пурнӑҫӗ те, ӗҫӗ-хӗлӗ те, пурлӑхӗ те удел кантурне пӑхӑнать; вӑрманӗ, улӑхӗ-ҫаранӗ удельни ал-

линче; удельнийӗн каттукне лайӑх лашасем туртаймаҫҫӗ; ялти ыр ҫынсем удельнийӗн канавне алтса пӗтеҫҫӗ; ҫамрӑксем удел ӗҫӗнчен хӑтӑлаймаҫҫӗ, вӗсене ялан удел тукмакки-нухайккисем «ҫунтараҫҫӗ». Халӑх юрӑсенче символсемпе усӑ курать: тырӑ вырнӑ чухнехи ҫил – халӑх сывлӑшӗ, ҫумӑр – халӑх куҫҫулӗ, кантура сӑрланӑ хӗрлӗ сӑр – халӑх юнӗ т. ыт. те.

*Ямшӑк юррисем* XVIII ӗм. пуҫламӑшӗнче аталанма тытӑннӑ. Ку тапхӑрта чӑвашсем ямшӑк ӗҫне хутшӑнма пуҫланӑ, почта ӗҫӗ йӗркеленсе кайнӑ. Ямшӑк ӗҫне мӑн ҫулсем иртекен ялсенчен нумайӑн хутшӑннӑ, чылай ял стансем пулса кайнӑ, ҫавӑнпа вӗсене юрӑсенче «ямшӑк ялӗ», ҫыннисене «ямшӑк ҫыннисем», «ямшӑк ачисем», «ямшӑк арӑмӗсем» тенӗ. Ямшӑкра ҫӳрекенсен мухтанасси те пулнӑ. Ҫапах та ямшӑк пурнӑҫӗ – ҫӑмӑл мар иккен: «ямшӑк юсти» йывӑр, лаши те «авкаланса-хуҫкаланса» ҫитӗнет, хӑй те тертре ӳсет. Ӑрӑсӗ те ӑсӗ пулманнипе вӑл ҫул ҫинче хур курать: ҫӑмӑлттай арӑмсемпе паллашать, пухнӑ пурлӑхне ҫухатать. Ҫав вӑхӑтрах чӑвашсен ямшӑк юррисенче социаллӑ пусмӑра вырӑссенни пек хирӗҫлени курӑнсах каймасть.

*Бурлак юррисем* XVII-XIX ӗм. йӗркеленнӗ. Вӑл юрӑсене бурлакра тертленсе ҫӳрекен хресченсем хывнӑ. «Хура хурлӑх хӑпса килчӗ» юрӑра, тӗслӗхрен, хресченӗн лаши ӳксе вилет, тырри пулмасть, выльӑхсене хысна туртса илет, кил-йышӗ вилсе пӗтет, ҫавӑнпа вӑл бурлака тухса каять, Атӑл тӑрӑх ҫӳрет. Бурлаксем ытларах Сӗнтӗрвӑрри, Шуртан, Энтри Пасар, Ҫӗрпӳ, Атӑл таврашӗнчен, Атӑлпа Ҫавал тӑрӑхӗнчен тухни курӑнать. Вӗсем ҫур каяҫҫӗ, кӗр таврӑнаҫҫӗ, пахиллккеллӗ ҫӑпатапа, сӳс кантраллӑ кутамккапа «пыйтӑ пухса» ҫӳреҫҫӗ. Бурлаксемпе пӗрле тӗрлӗрен таркӑнсем те ҫӳренӗ, ҫавӑнпа юрӑсенче вӗсем хӑйсен ятне те, тӑван кӗтесне те туррӗн пӗлтермен (Ухмах Йӑван ачисем, Антра Кӑшман ялӗсем). Бурлак юррисенче кӗрешӳ кӗввисем уҫҫӑнах янрамаҫҫӗ-ха.

*Рабочи юррисем* – Раҫҫейри промышленность ӗҫне хутшӑннӑ чӑваш-рабочисем хывнӑ хайлавсем. Чӑвашран обществӑн асӑннӑ ушкӑнӗн представителӗсем XVIII-XIX ӗм.

тухкаланӑ, хӑшӗ-пӗрисем Мускавпа Петербургра, Ҫӗпӗрпе Кавказ таврашӗсенче, Донбасра тата Прибалтикӑра ӗҫленӗ, вырӑс рабочийӗсемпе пӗрле тӑрӑшнӑ, вӗсен юрри-сӑввисене вӗреннӗ. 1861 ҫ. ҫӗр реформи хыҫҫӑн чӑваш хресченӗсем промышленность ӗҫне тата ытларах хутшӑнаҫҫӗ. Каярахри рабочи юррисенче пролетариат аталанӑвӗн пуҫламӑш тапхӑрӗ те аван сӑнланнӑ: вӗсем хуҫасене тарӑхаҫҫӗ, заводсене ҫӗмӗреҫҫӗ. Акӑ, чухӑнланса ҫитнӗ хресчен хӑй ывӑлне завод хуҫин аллине парать, хуҫа-нимӗҫ ӑна «сахӑр заводне» ӑсатать. Заводра ӗҫлесе, хресчен хӑйӗн «ҫамрӑк пуҫне» пӗтерет, уншӑн завода ылханать («И вутра ҫунтӑр сахӑр савӑчӗ»). Вӑл рабочисемпе хуҫасен пурнӑҫӗ пӗр маррине курать, анчах вӗсене хирӗҫ кӗрешеймест-ха. Телей шыраса хресчен-рабочи Чӗмпӗре ҫитет, Атӑл тӑрӑх пичев сӗтӗрет, Дон тӑрӑхӗнче ҫӗр кӑмрӑкӗ кӑларать – ниҫта та ҫӑмӑллӑх тупаймасть.

*Тӗрмепе каторга тата ссылкӑпа революци юррисем* XIX ӗм. вӗҫӗпе XX ӗм. пуҫламӑшӗнче вырӑс юррисем мелӗпе йӗркеленнӗ, вӑл вӑхӑтри кӗрешӳпе ҫыхӑннӑ.

Тӗрмене, каторгӑна е ссылкӑна лекекен хресченсенчен чылайӑшӗ революционер пулман, политика кӗрешӗвӗн ыйтӑвӗсене те ӑнланман. Тӗрмене хупнине е каторгӑна янине юрӑра айӑпсӑр ӗҫ тесе шутлаҫҫӗ, шӑпаран килнӗ пек кӑтартаҫҫӗ. Ӗлӗкхи юрӑсен мелӗсемпе хресчен ытларах тӗрмери асапа сӑнлать: Шупашкар, Чӗмпӗр тӗрминче е Ҫӗпӗрте виҫӗ, ҫичӗ, вунӑ ҫул асапланать, йӗпе улӑм ҫинче выртса тӑрать, тип ҫӑкӑр ҫиет, шыв ӗҫет, унӑн ӳтне-тирне тимӗр сӑнчӑр касать. Вӑл кил-йышне курма ӗмӗтленет, тӑванӗсен пурнӑҫӗ ҫинчен кайӑкран ыйтса пӗлет, тӗрмерен тухайманнипе йӑваран ӳкнӗ кайӑк чӗппи пек хурланса пурӑнать.

XX ӗм. пуҫламӑшӗнчи кӗрешӳ кӗввисем революци юррисенче туллинрех палӑраҫҫӗ. Вӗсенче халӑх хӑй вӑйне ӗненни сисӗнет. Акӑ, «Йӑлтӑр-йӑлтӑр кӗленче ту» юрӑра патша ҫырнӑ хурлӑха чӑтса пурӑнма май ҫукки ҫинчен каланӑ. Революцилле кӗрешӳ сарӑлса пынипе пӗрлех ӗҫ-халӑхӗн пусмӑрсӑр пурнӑҫпа пурӑнас ӗмӗчӗ ҫирӗпленсе пырать. «Атте-анне тӗлӗк курнӑ» юрӑра

патша та çук, буржуйсен хырăмĕсене те каснă, пупĕсене те çакнă, халăх «аслă уява пуханнă»; хресчен çав ирĕклĕхе тĕлĕкре мар, чăн пурнăçра курма ĕмĕтленет. Çав юрăсен авторĕсем пуррине, текстсем вариантсăр пулнине палăртмалла.

Чăвашсен тĕрме-каторга, кĕрешӳ юррисем вырăссен пек йышлă пулман. Çавăнпа чăваш çамрăкĕсем вырăссен революци юррисене вырăсла та, вĕсене чăвашла куçарса та юрланă.

*Такмак* ăнлав нумай пĕлтерĕшпе çӳрет. Паянхи тĕпчевçĕсем такмак тесе ытларах кĕске, ташă кĕввипе çыхăнтарса сăвăланнă юрăсене калаççĕ. Такмак, чăнах та, «кĕвĕллĕ, виçеллĕ сăвă çаврăмĕ; тытăмĕпе икĕ пайран тăрать; шухăш тĕлĕшĕнчен лирикăллă, кулăшла т. ыт. тургăмлă пулать». Такмаксем тăсса юрлакан юрăран ытларах тăватă йĕркерен тăнипе, кашни йĕркинче 7 е 8 сыпăк пулнипе уйрăлса тăраççĕ.

Чăваш çынни такмака юрăран ĕлĕкех уйăрнă. Çак терминпа тăсса юрламан, кĕске йĕркеллĕ, ритмлă-сăвăллă юрăсене каланă. Ку пĕлтерĕшпе вĕсем паянхи кун та çӳреççĕ, вырăссен «частушки» ăнлавĕпе тӳр килеççĕ.

Чăваш такмакĕсене тĕпчемен мар. Ку тĕлĕшпе Е.С.Сидорова фольклорист нумай ĕçлерĕ: ятарласа чăвашсем хушшинче такмаксем епле сарăлнине, пурнăçри вырăнне тата аталанăвне тишкерсе пысăк статья пичетлерĕ. Чăваш такмакĕсем çинчен И.И.Одюков, М.Я.Сироткин, В.Г.Родионов т. ыт. те çырчĕç, паллисемпе уйрăмлăхĕссне асăнчĕç.

Тĕпчевçĕсем пурте пĕр шухăшлă: ĕлĕкрех «такмак» ăнлавăн урăхла пĕлтерĕш пулнă. Малтан такмакласа виçеллĕ (ритмлă, размерпа) каланине пурне те такмак тенĕ пулмалла, мĕншĕн тесен çавăн пек калаçасси чăвашăн авалах пулнă, калаçура пысăк вырăн йышăннă. Ритмласа калаçасси яланхи калаçу чĕлхинчен сăмахлăха та (поэзие) кĕрсе çирĕпленнĕ, ăна аталанма пулăшнă. Поэзи хăйĕн йăла пĕлтерĕшне çухатса пынă май такмакласа калаçасси юрра кĕнĕ, хăйне уйрăм жанр – такмак – çуратнă. Çапла такмак юрăпа пĕрлех çуралса

çирĕпленнĕ, вăл этемĕн выляв кăмăлне палăртакан тăвать йĕркеллĕ, çичĕ сыпăклă, ритм-рифмăллă, çемĕллĕ сăвă пулса тăнă.

Н.И.Ашмарин хăйĕн словарĕнче «такмак» ăнлавăн нумай пĕлтерĕшне кăтартать. Вĕсене çапларах ушкăнларăмăр:

*Пĕрремĕш ушкăн.* 1) тиртен çĕлетнĕ михĕ; 2) сăран хутаç; 3) кучченеç хутаççи.

*Иккĕмĕш ушкăн.* 4) халăх сăввисем; 5) тутарсен сăвви майлă юрăсем; 6) хĕрсем туйра çаврăнса юрланисем (е хĕр çуммисем туйра каччине тăрăхланă сăвăсем); 7) ача-пăча ватăсенчен вĕреннĕ сăмахсем (е мăн кĕрӳ сăмахĕ).

*Виççĕмĕш ушкăн.* Çав вăхăтрах *такмакла* тени: 8) юрăсем (частушкисем) хывнине; 9) ташланă чух сăвăласа е виçелесе юрланине; 10) юмăç карчăк чĕлхе каланине пĕлтерет.

Малтанласа такмак йăласемпе çыхăннă жанрсене пĕлтернĕ. Вĕсем речитативлă сăвăсен ушкăнне кĕреççĕ. Такмаксен чи паллă уйрăмлăхĕсенчен çаксене асăнмалла: кĕскелĕхĕ; пĕр çавраллă тата 7 сыпăклă пулни; сыпăнуллă сăвăсен ретне кĕни т. ыт. те. Такмаксем авалхи пăлхар-тĕрĕк культури монгол тата индоиран ушкăнне кĕрекен йăхсемпе хутшăннипе пулса кайнă теме пулать. Çапла майпа 7 е 8 сыпăклă сăвă е юрă çаврăмĕсем чăвашсене пăлхар-сăварсенченех кĕрсе çирĕпленсе юлнă. Ахальтен мар пирĕн несĕлсем такмака тĕрлĕ вăхăтра, тĕрлĕ сăлтавпа каланă: яшсем хĕлле урамра çӳренĕ чух; çурхи вăйă-кулă уявĕсенче; хĕр туйĕнче хĕр çумсем çĕнĕ кĕрӳрен шӳтлесе юрланисем е сăвăласа каланисем; улахсенче ташланă чух каланă кĕвĕллĕ сăвăсем; ача-пăча сăввисем; мăн кĕрӳ такмакĕ; юмăçсем вĕрнĕ чух усă куракан сăмахсем т. ыт. те.

*Такмак* термин нумай пĕлтерĕшпе çӳренине шута илсе, тĕпчевçĕсем унпа паянхи кун халăхра анлă сарăлнă ташă сăвви-юррисене палăртма, вырăссен «частушки» ăнлавĕпе усă курма сĕнеççĕ (Е.С.Сидорова т. ыт. те). Е.С.Сидорова шухăшĕпе, такмаксем хăйне уйрăм жанр пек XX ĕм. пуçламăшĕнче çирĕпленсе çитнĕ, паянхи

кун та халăхра аталанаççĕ, вăхăт иртнĕçем çĕнĕрен те çĕнĕ пулăмсемпе тата витĕмсемпе йĕркеленеççĕ. Фольклорист паянхи такмаксен виçĕ ушкăнне асăнать: кулленхи такмаксем (ходовые); хор е ушкăн такмакĕсем (хоровые); ташă такмакĕсем (плясовые). Чăваш такмакĕсем вырăс частушкисен витĕмĕпе аталаннине палăртса, тĕпчевçĕ çапла çырать: «Такмаксем, – тет вăл, – авалхи чăвашсен традицилле халăх лирикипе ташă кĕввисем пĕрлешсе кайнипе тата вырăс частушкийĕсем витĕм кунипе пулса кайнă. Халăх традицийĕсем çинче çуралнăскерсем, хăйсен сăмахлăхпа поэтикăлла ĕретне профессилле музыкăпа илемлĕ çыруллă сăмахлăхĕн витĕмĕсене шута илтерсе пуянлатаççĕ»[32].

Юлашкинчен çакна калар: малтанах такмак çыннăн, ытларах çамрăкăн, кулленхи пурнăçĕпе, йăлипе çыхăннă туйăмне палăртнă, юрă пек социаллă шухăшĕмĕтне хускатман. Кунашкал темăсем совет тапхăрĕнче аталаннă такмаксенче çуралаççĕ, çак вăхăтри сăмахлăхра çеç тĕп вырăн йышăнаççĕ.

Чăваш сăвви-юрри шухăш пуянлăхĕпе çеç мар, эстетикăлла хитрелĕхĕпе, илемлĕ сăнарлăх мелĕсемпе ытти жанрсенчен чи илемли, чи пуянни. Илемлĕ сăнарлăх юрă тытăмĕн (композицин) мелĕсенче, строфа-куплет тĕрленчĕкĕнче, илемлĕ чĕлхе эрешĕнче, рифма-ритм пуянлăхĕнче, сасă янăравлăхĕнче курăнать, хитрелĕх тĕллевĕсемпе законĕсене пăхăнать.

Хальхи чăваш юрри-сăввисен сăнарлăх мелĕсем пĕр. Çав пĕрлĕх чăваш халăхĕ тĕрлĕ йăхсемпе пĕрлешсе пĕр халăх пулнипе, пĕр чĕлхе законĕсемпе, пĕрлĕхлĕ сăмахлăхăн традицийĕсемпе усă курнипе çыхăннă.

Чăваш сăвви тĕрлĕрен пулать. Халăх сăввинче 2 тĕрлĕ сăвă никĕсне куратпăр: калуллă сăвă тата юрă сăвви. Пĕрремĕшĕнче тĕпре калу е пуплев пулсан, иккĕмĕшĕнче – кĕвĕ. Çавна май сăвă пуплевĕ кĕвве пăхăнать, унпа çураçăнать. Калуллисем хăйсем тан сыпăклисем (тĕрлĕ витлев-сивлев, çухăру-йыхравсем, туп-

[32] Сидорова Е.С. Возникновение и развитие жанра частушек в чувашском фольклоре //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 139.

малли юмахсем) тата тан мар сыпăклисем (вĕрӳ-суру чĕлхисем, мăн кĕрӳ, кĕлĕ сăмахĕсем) пулаççĕ. Юрă сăвvisем, тĕпрен илсен, яланах тан сыпăклă. Çапах та вĕсен кĕввинче квантитативлăх (уйрăм сыпăксене тăсарах юрлани е калани) пур. Ку вăл картсен юлашки сыпăкĕсене, йĕрке е çуркам вĕçĕсене тăсарах юрланипе çыхăннă.

*Юрă тытăмĕ.* Тытăмĕпе юрăсем тĕрлĕрен пулаççĕ. Пур ушкăнсенче те тăватă е ытларах йĕркеллĕ, шухăш енĕпе пĕр-пĕринпе çыхăнман куплетсенчен (строфасенчен, çаврасенчен) тăракан юрăсем йышлă. Çавăн пек юрăсенче куплет-çаврасем традицие кĕрсе çирĕпленнĕ, çапах вĕсенче импровизаци пысăк вырăн йышăнать: юрлаканĕ, хăй кăмăлĕпе çыхăнтарса, юрă йĕркине е уйрăм сăмахĕсене яланах улăштарма пултарать. Кун пек юрăсенче çавра тытăмĕ пирки çеç калаçма тивет: вăл 2, 3, 4, 5, 6, 7, 8 е ытларах йĕркесенчен тăрать. Ытларах 4 йĕркеллисем тĕл пулаççĕ, ялан тенĕ пекех сăнарлă танлаштару мелĕпе (урăхла ăна психологилле параллельлĕх тетпĕр) йĕркеленеççĕ: этем пурнăçне çут çанталăк пулăмĕпе танлаштараççĕ. Çут çанталăк пулăмĕ малта, этем пурнăçĕ çинчен калани кайра тăрать, куплетри шухăш тупсăмне уçать:

Пĕчĕкçĕ те лаша, турă лаша,  
Чăмăртанса юртса çул илет.  
Пĕчĕкçĕ те пуçăм, çамрăк чунçăм,  
Шухăшла-шухăшла та ăс илет.

Танлаштару пайĕсем куплетсенче пĕр тан е пĕри тепринчен ансăр пулма пултараççĕ. Чи анлă сарăлнă тĕс вăл – тăватă йĕркеллĕ юрăра куплет пайĕсенчи танлаштарусем йĕрке шучĕпе тан пулни:

Атăл тăрăх тĕтре юхать,  
Кайăк вĕçни, ай, курăнмасть.  
Ир те пулать, ай, каç та пулать,  
Ĕмĕр иртни сисĕнмест.

Тепĕр чухне çут çанталăк пулăмне çав тери анлă, этем пурнăçне ансăр сăнлани тĕл пулать. Кун пек чухне асăннă меле çыннăн пурнăç-кăмăлне тарăнрах уçас тĕллевпе усă кураççĕ, ытларах – ирĕклĕ лирикăра (туй юррисенче, мăн кĕрӳ такмакĕсенче) т. ыт. те.

*Сăвă хывăм (метрика).* Юррăн сăвă метрики пирки нумай фольклорист çырнă. Чăваш юррин сăвă метрики, тĕпрен илсен, силлабика виçи. Тĕп вырăнта – йĕркере пусăмлă сыпăксем пусăмсăррисемпе ритмла черетленсе пыни мар, йĕркери сыпăксен шучĕ пĕр тан пулса пыни.

Юррăн жанр уйрăмлăхĕсене тишкернĕ чухне эпир сирĕнпе кăштах чăваш сăввин паллисене аса илнĕччĕ, ытларах вĕсем 7 е 8 сыпăклисем пулнине палăртнăччĕ. Йĕркисенче сăмах пусăмĕсем мар, сикчĕсем (цезурăсем) тĕп вырăна тухаççĕ, вĕсем сыпăксен ушкăнĕсене (слоговые группы) йĕркелеççĕ: 4+3, 4+4, 4+3+4 т. ыт. те.

*Юрă янравлăхĕ.* Юрă чĕлхи питĕ янăравлă. Унта сасă, кĕвĕ, виçе, янравлăх – уйрăлми çыхăнуллă. Юрă сăввин илемĕ уçă (ассонанс) е хупă (аллитераци) сасăсен янăравлăхĕпе, куплетри анафорăпа (пĕр евĕрлĕ пуçланни) эпифора (пĕр евĕрлĕ вĕçленни) пуррипе, сăмахсен вылявĕпе (парономази), сăвă йĕркисем тĕрлĕрен рифмăланнипе, йĕркери сăмахсене е сăмах çаврăнăшĕсене йĕркерен йĕркене куçарнипе (перенос) т. ыт. те палăрать.

*Юрă чĕлхи.* Юрă чĕлхин илемлĕ сăнарлăхĕ калаçу чĕлхин илемлĕх законĕсенченех тухать, юрăра пуянланать, традицие кĕрет. Япаласемпе пулăмсене, туйăма чĕлхе пуянлăхĕпе сăнарлă туса пыни этемĕн калас шухăшне çеç пĕлтермест, ытларах вăл япаласене мĕнле туйăмпа е кăмăлпа (ырласа е сивлесе) йышăннине, хакланине кăтартать.

Юрăри шухăша сăнарлă туса пĕлтерме халăх пĕтĕм наци чĕлхин сăмах пуянлăхĕпе, грамматика законĕсемпе усă курать. Юрă лексикинче çут çанталăк паллисен ячĕсем (çĕр, хĕвел, тинĕс); гидронимсем, топонимсем, географилле ятсем; йывăç-курăк, чĕр чун, кайăк-кĕшĕк; кил-çурт, ĕçпе ĕç хатĕрĕ, тумтир, апат-çимĕç; этемпе халăх, хурăнташлă хутшăну; ăшпа чĕре туйăмĕ, ăсхакăл; общество пурнăçĕпе йĕркин, культура паллисен ячĕсем туллиех тĕл пулаççĕ. Унта архаизмсемпе неологизмсем, диалектизмсем, урăх чĕлхерен кĕнисем, историзмсем, профессионализмсем нумай.

*Юрă лексикипе морфологийĕнче* илемлĕ сăнарлăх мелĕсенчен (тропсенчен) çаксем питĕ йышлă: метоними, метафора, синекдоха, ирони, ансăр е анлă танлаштару, оксюморон, перифраз, эвфемизм, олицетворени, символ, аллегори, гиперболăпа литота, эпитет.

Юрăсенче чăвашăн мифла шухăшлавĕпе тĕнче курăмĕ те анлă сăнарланнă: çут çанталăк пулăмĕсене чунлă (анимизм), чĕр чун (зооморфизм) е этем сăнарлă (антропоморфизм) туса сăнланинчен е этем хăй чĕр чун, ўсен-тăран, урăх япала пулма пултарать (превращение) тенинчен – олицетворенипе метафора пуçланнă; этем хăйне çут çанталăк пулăмĕсемпе танлаштарнинчен – танлаштару; пĕр япалапа пулăма унăн паллисемпе пайĕсем е урăх япала урлă палăртса каласинчен – синекдоха, метоними, перифраз; этем тĕрлĕ пулăмсемпе чĕр чунсене хăйĕнчен пысăклатса, хăйне вĕсенчен кая курса хакласинчен – гиперболăпа литота; чару-табусенчен – вăлтса каласси; çут çанталăк пулăмĕсемпе хăй пурнăçĕпе кăмăлĕн е пў-сийĕн паллисене пĕлтернинчен – символ пуçланса кайнă. Вĕсем каярахпа мифла пĕлтерĕшĕсене çухатнă, сăмах ўнерĕнче илемлĕ мел пĕлтерĕшне йышăннă, сăмахлăха кĕрсе çирĕпленнĕ. Юрă-сăвăсенче вĕсемпе халĕ те усă кураççĕ.

*Юрă синтаксисĕ* те питĕ пуян, вăл сăнлăхпа сăнара анлă, илемлĕ ўкерчĕклĕ тăвать, шухăша эрешлесе уçать. Сăнарлă синтаксисăн хăш-пĕр паллисем: хутсăр е хутлă предложенисен тĕрлĕ тĕсĕсемпе, инверсипе, подлежащипе сказуемăйăн тĕрлĕ çыхăну формисемпе, повторпа, пулăшу сăмахĕсемпе, çенĕçлĕхпе ачашлăх мелĕсемпе т. ыт. те усă курни.

Çакна каламалла: чăваш юррисенче халăх тăван чĕлхе пуянлăхĕпе пĕлсе те анлă усă курнă. Сăмахран, хутсăр предложенисен калуллă, анлă е ансăр, тулли е тулли мар, сăпатлă, ыйтуллă, кăшкăруллă формисемпе; хутлă предложенисен сыпăнуллă, пăхăнуллă, хутăш формисемпе.

Юрăсене илем кўрекен мелсен шутне тĕрлĕ пулăшу сăмахĕсем кĕреççĕ: уйăру татăкĕсем; ыйту татăкĕсем; экспресси тата çирĕплетў татăкĕсем; уйăракан е вăйла-

такан татăкпа обстоятельствăна пĕлтерекен, хутлавласа каланă сăмахсем; эмоци междометийĕсем; союзсем; евĕрлев сăмахĕсем т. ыт. те.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Халăх юрри – чун уççи, юррăн пурнăçри вырăнĕ.
2. Халăх юррисене пухса пичетлени, тишкерни.
3. Юрăсен жанр паллисем, ушкăнĕсем.
4. Çамрăксен лирики.
5. Çигĕннисен е аслă ăрурисен лирики.
6. Обществăри социаллă ушкăнсен юррисем.
7. Такмаксем тата вĕсен аталанăвĕ.
8. Чăваш халăх сăввин хăй евĕрлĕхĕ, юрă-сăввин поэтики.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА


1. *Иванов Н.И.* Чăваш сăвви. Шупашкар, 1977. 160 с.

2. *Кондратьев М.Г.* О ритме чувашской народной песни: К проблеме квантитативности в народной музыке. М.: Сов. композитор, 1990. 140 с.

3. *Кондратьев М.Г.* О чувашско-татарских параллелях в сюжетике народных песен //Национальное и народное в чувашском искусстве: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1993. С. 33-59.

4. *Кондратьев М.Г.* Чувашская *çавра юрă* и ее татарские параллели /ЧНА, ЧНИИ. Чебоксары, 1993. 80 с.

5. *Максимов С.М.* Чувашские народные песни. М.: Музыка, 1964. 399 с.

6. *Одюков И.И.* Жанровые и идейно-художественные особенности чувашских трудовых песен //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 26. Чебоксары, 1963. С. 152-168.

7. *Одюков И.И.* Чăваш халăх лирики (Авалхи юрăсем): Вĕренӳ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1978. 89 с.

8. *Одюков И.И.* Чăваш халăх лирики (Сăвă-юрă сăнарлăхĕ): Вĕренӳ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1983. 70 с.

9.*Одюков И.И.* Чăваш халăх юрри //Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 3 том. Юрăсем. Шупашкар, 1978. 5-28 с.

10.*Одюков И.И.* Чувашские народные песни социального протеста и революционной борьбы. Чебоксары, 1965. 200 с.

11.*Осипов А.А.* Свадебные напевы чувашей (К постановке проблемы диалектологии свадебных песен) //Чувашское народное творчество: Сб. ст. Чебоксары, 1985. С. 41-66.

12.*Павлов Ф.П.* Чуваши и их песенное и музыкальное творчество. Чебоксары, 1927. 66 с.

13.*Родионов В. Г.* Генезис и эволюция речевого стиха //Чувашская народная поэзия: Сб. статей /ЧНИИ. Чебоксары, 1990. С. 105-109.

14.*Родионов В.Г.* Чувашский стих: Проблемы становления и развития. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1992. 224 с.

15.*Родионов В.Г.* Чувашское и тюркское стихосложение: Учеб. пособие /Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1986. 80 с.

16.*Сидорова Е.С.* Возникновение и развитие жанра частушек в чувашском фольклоре //Исследования по чувашскому фольклору: Сб. ст. Чебоксары, 1984. С.119-141.

17.*Сироткин М.Я.* Чувашский фольклор: Очерк устно-поэтического народного творчества. Чебоксары, 1965. 132 с.

3 сыпăк

# СОВЕТ САМАНИНЧИ ХАЛĂХ СĂМАХЛĂХĔ

## 3.1. Совет саманинчи сăмахлăх паллисем. Асăннă тапхăрти фольклора пухакансем, тĕпчекенсем. Тута-çăвар литератури. Чăваш фольклорне аталанма пулăшакансем тата пропагандăлакансем. Фольклор ушкăнĕсем.

Совет саманинчи сăмахлăх класлăх теорине тĕпе хурса аталаннă. Вĕсенче авалхи сăмахлăх та, совет тапхăрĕнче аталанни те, профессилле искусствопа вырăс халăх сăмахлăхĕнчен кĕнĕ тĕслĕхсем те пĕрлешсе тăраççĕ, пĕр пуянлăх тăваççĕ. Сăмахран, кивĕ сăмахлăхăн хăш-пĕр тĕсĕсене пуçĕпех пăрахăçлаççĕ (кĕлĕсем, вĕрӳ-суру чĕлхисем т. ыт. те), пысăк пайĕ – этемĕн яланхи пурнăçĕпе, йăли-йĕркипе е кăмăлĕпе, хуйхи-суйхипе е савăнăçĕпе, ырă пурнăç ĕмĕчĕпе çыхăннисем – тĕллĕн-тĕллĕн улшăнсан та, çĕнĕ пурнăçра та активлă пурăнаççĕ, эстетика хăвачĕпе совет çыннин яланхи кăмăлне тивĕçтерсе пыраççĕ (юрăсемпе так-максем, ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахсем т. ыт. те). Вĕсен çĕнĕ пурнăçри социаллă функциййĕ те, педагогикăлла пĕлтерĕшĕ те чаксах каймасть. Наукăшăн авалхи сăмахлăх хăйĕн пĕлтерĕшне нихăçан та çухатмасть. Анчах çĕнĕ çын хăй кăмăлне иртнĕ пурнăç сăмахлăхĕпе çеç тивĕçтерме пултараймасть. Вăл хăй вăхăтĕнчи пурнăçа сăнлама çĕнĕ содержаниллĕ сăмахлăх хывать. Çĕнĕ фольклор традициллĕ сăмахлăх пуянлăхĕпе усă курса йĕркеленет. Сюжет çĕнĕлĕхĕ ытларах юмахсенче, юрăсемпе такмаксенче сисĕнет. «Революцичченхи сăмахлăхпа танлаштарсан, – тет И.И.Одюков фольклорист, – совет сăмахлăхĕ хăйĕн содержанийĕнче малти вырăна кулленхи йăла ыйтăвĕсемпе çыхăннă шухăш-кăмăла мар, социалла шухăш-туйăма кăларса пычĕ. Çакă революци хыççăн ĕç çынни пурнăç хуçи пулса тăнипе, унăн общество́лла активлăхĕ ӳснипе çыхăннă»[33].

---

[33] Одюков И.И. Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ: Студентсене вĕренмелли кĕнеке /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1975. 6 с.

В.Г.Родионов ку ыйтусем ҫине урӑхларах пӑхать. Унӑн шухӑшӗпе, чӑвашӑн традицилле сӑмахлӑхӗ йӑлайӗрке тӗрлӗ сӑлтавсене (техника цивилизацийӗ, совет влаҫӗ тӗнсемпе кӗрешни, коммунистсен класлӑ идеологийӗ т. ыт. те) пула арканнӑ май ерипен ҫухалса пырать, унӑн вырӑнне ҫырулла культура йышӑнать. Совет сӑмахлӑхне кӗртекен чылай текст халӑх хушшинче анлӑн сарӑлман, вӗсен авторӗсем те пур (анонимлӑ пулсан та). Ҫавӑнпа та ҫавӑн йышши текстсене В.Г.Родионов *тута-ҫӑвар литератури* (изустная литература) йышне кӗртет. Ҫыруллӑ тата ҫырусӑр сӑмахлӑх хушшинче тӑраканскер, тута-ҫӑвар литератури жанр тӗлӗшӗнчен ытларах чухне халӑхӑн традицилле сӑмахлӑхне, идейӑпа содержани тӗлӗшӗнчен илемлӗ литературӑна ҫывӑх. Культурӑн ҫак сийне чӑваш филологӗсем ку таранччен те уйрӑм пулӑм пек тӗпчемен-ха.

Чӑваш халӑх сӑмахлӑхне пухса тишкерес ӗҫ XX ӗм. 20-мӗш ҫулӗсенче анлӑ сарӑлнине палӑртмалла. Ку ӳсӗм 1920 ҫ. Чӑваш автономи облаҫне туса хунипе, 1921-1923 ҫҫ. Чӑваш краеведенийӗн тӗп музейне, Чӑваш Ене тӗпчекен обществӑпа кӗнеке издательствине, Чӑваш писателӗсемпе журналисчӗсен «Канаш» пӗрлешӗвне йӗркеленипе тӳрремӗнех ҫыхӑннӑ. Чӑваш фольклористикин 20-30-мӗш ҫҫ. аталанӑвне И.И. Одюков профессор «К истории собирания и публикации чувашского фольклора в 20-30-х гг.» статйинче анлӑн ҫутатрӗ.

Ҫӳлерех асӑннӑ организацисем тӑрӑшнипе тата ҫине тӑнипе ҫак тапхӑрта чӑваш фольклорне пухасси пӗтӗм халӑх ӗҫӗ пулса тӑрать: писательсемпе поэтсем, композиторсемпе фольклористсем, историксемпе этнографсем, ытти тӗпчевҫӗсемпе ӑсчахсем сӑмахлӑхӑн пур жанрӗсене те хӗрсех халӑхран ҫырса илеҫҫӗ, уйрӑм кӗнекен е текстсен пуххисем, наука статйисемпе мо-нографисем пичетленеҫҫӗ. «Канаш» союз 1927 ҫ. Пролетари писателӗсен чӑваш ассоциацине йӗркелет, ун ҫумӗнче ятарлӑ фольклор секцийӗ уҫӑлать. Ун тӗллевӗ – чӑвашсен ҫыруллӑ сӑмахлӑх ӑстисене халӑх еткерне пулас ӑрусем валли сыхласа хӑварассишӗн ӗҫлеттересси, тӗрлӗрен юмах-халапа, сюжетлӑ юрӑсемпе усӑ курса илемлӗ

хайлавсем çыртарасси. Ку пархатарлă пуçарăва чăваш тĕпчевçисем (Ф.П.Павлов, Н.Я.Золотов, К.В.Элле) çеç мар, илемлĕ сăмах ăстисем те (Н.И.Полоруссов-Шелепи, Н.В.Васильев-Шупуççынни, С.В.Эльгер) хастар хутшăнаççĕ. Ку хăйне май ўсĕм те, çĕнтерў те пулнă: çулсеренех юмахсемпе халапсен, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшсен, юрă-кĕвĕсен тата ытти жанрсен пуххисем, чăваш фольклорне çĕнĕлле тĕпчесе çырнă ĕçсем пичетленеççĕ. Уйрăмах Ф.Павлов («Ача-пăча сасси», 1921; «Сăрнай», 1924; «Чуваши и их песенное и музыкальное творчество», 1927), С.Максимов («Чăваш кĕввисем», 2 кĕнекепе – 1924, 1926; «Шкул юррисем», 1928), Н.Золотов («Чăваш сăмахлăхĕпе чăваш пултарăвĕ (происвотстви)», 1924; «Краткий очерк народной поэзии чуваш», 1928), Н.Романов («Чăваш юррисен техникипе форми çинчен», 1928 т. ыт. те) хастаррăн тăрăшнине палăртса хăварни вырăнлă.

Халăх сăмахлăхĕн çĕр пин тĕслĕхне пухмашкăн тĕрлĕ сăмах ăстисем – юрăçсемпе халапçăсем, педагогсемпе фольклора юратакансем нумайăн хутшăнаççĕ. Сăмахран, Самар тăрăхĕнчи А.И.Васильев учитель хăй çуралса ўснĕ тăрăхра, Ульяновск облаçĕнче тата Тутарстанра пурăнакан чăвашсенчен 8688 юрăпа 250 кĕввине, йăла-йĕркепе çыхăннă 118 сăмах-юмахне, фольклорăн ытти жанрĕсене 1500 ытла çырса илнĕ. Çĕрпў уесĕнчи тепĕр паллă педагог Т.П.Парамонов вара 500 ытла халăх юррине çырса илнĕ, вăл шутран Гаврил Федоровран та. Ун йышши ăстасен шутне С.М.Максимов музыкçа, Ф.Т.Тимофеев чĕлхеçе т. ыт. те кĕртме пулать.

Чăваш фольклористикин 30-40-мĕш çç. аталанăвне 1930 ç. Шупашкарта Комплекслă наукăпа тĕпчев институчĕ уçăлнипе çыхăнтармалла. Сăмахлăха пухса тĕпчес тата фольклор юхăмне аталантарас ĕçре асăннă института чăнниех ăслăлăх лаççи тесе хаклама пулать. Институт ку таранччен тĕрлĕ культура центрĕсемпе вĕренў заведенийĕсенче упранакан фольклор материалĕсене, тексчĕсене тата ал çырусене хăйĕн фондне пуçтарать. 1935 ç. тĕлне ЧНТИ Н.И.Ашмарин, Н.В.Никольский, И.Н.Юркин, К.В.Элле, А.И.Васильев, И.А.Патмар,

Н.Ф.Волков, М.И.Федоров, С.М.Михайлов тата ытти чăваш çыравçисен ал çырăвĕсене ахаль е сутăн илсе хăйĕн архивне пуянлатать.

Институт çулсерен халăх сăмахлăхĕпе пĕтĕмĕшле пултарулăхĕ, историйĕпе этнографийĕ, пурлăхпа ăс-тăн культури çинчен калакан тĕрлĕ материал пухас тĕллевпе комплекслă экспедицисемирттерет. Пухнă материалсем уйрăм сборниксенче е тĕпчев кĕнекисенче пичетленеççĕ. Кунта С.М.Максимовăн «Тури чăвашсен юррисем» (1932) тата «13 чувашских песен нового быта» (1934), Н.Я.Золотовăн «Чувашские народные сказки» (1933), Мĕтри Васлейĕн «Такмаксем» (1934), С.М.Максимовпа Ф.П.Павловăн тата В.П.Воробьевпа Т.П.Парамоновăн «Г.Федоров юрласа панă 146 юрă» (1934), Н.Ф.Даниловăн «Чувашские народные песни» (1935) тата «Чăваш халăх юмахĕсем» (1949), Н.В.Васильев-Шупуççыннин «Чувашские сказки» (1937), И.С.Тукташăн «Ача-пăча юмахĕсем» (1938) тата «Чăваш фольклорĕ» (1941, 1949) кĕнекисене асăнмалла. Çапла майпа чăваш халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсем те кун çути кураççĕ. Вĕсем пичетленни хăй вăхăчĕшĕн çеç мар, хальхи саманашăн та паха. Пичетленнĕ ĕçсем халăхăмăрăн сĕм авалтан упраннă юмах-халапĕ, юрри-сăввийĕ, ташши-кĕввийĕ, ытти сăмах-пуплевĕ çав тери пуяннипе хаклине те, чиперрипе кĕвĕллине те кăтартса парĕç.

Чăваш фольклористикин вăрçă хыççăнхи тапхăрĕ те хăйне майлă. Акă, 50-60 çç. сăмахлăха тишкересси малти вырăна тухать, сахал мар ăсчах хăйсен тĕпчевĕсенче фольклорăн тĕрлĕ жанрĕпе усă курчĕç. Сăмахран, П.В.Денисов, В.Д.Димитриев, В.Ф.Каховский историксем, А.И.Петрухин атеист чăваш халăхĕн историйĕпе кунçулне, тĕнĕпе йăли-йĕркисене, ăнĕпе шухăшлавне тишкернĕ май унăн мĕн авалтан упранса юлнă сăмахлăхне пысăка хурса хакларĕç. Чăннипе П.В.Денисовăн «Проблемы устного народного творчества и этнографии чуваш в произведениях Н.И.Ашмарина» (1954), «Религиозные верования чуваш» (1959), «Этнокультурные параллели дунайских болгар и чувашей» (1969), «Религия и атеизм чувашского народа» (1972), В.Д.Димитриевăн

«История Чувашии XVIII века» (1959), «Параллели в верованиях древних суваров и чувашей» (1962), «Фольклор в период феодализма» (1966), «Чувашские исторические предания» (1983), В.Ф.Каховскин «Тĕн пуçланса кайни» (1955), «Происхождение чувашского народа» (1965), А.И.Петрухинăн «Рост национальной культуры и устно-поэтическое творчество чуваш» (1965), «Мировоззрение и фольклор» тата «Народная поэзия о патриотизме советских людей в годы Великой Отечественной войны» (1971) монографийĕсемпе кĕнекисем, статйисемпе ĕçĕсем паян та хăйсен пĕлтерĕшне çухатман-ха, вĕсем тĕпчевçĕсемшĕн паха материал шутланаççĕ.

Асăннă тапхăрта чăваш фольклорисчĕсем, литературовечĕсемпе ўнерçисем теорилле тĕпчевсем те калăпларĕç, фольклористикăна тата çўлерех çĕкленме пулăшрĕç. Вĕсенчен чи хастаррисене асăнар: И.С.Тукташ – «Халăх юррисен поэтики» (1952); Н.В.Никольский – «О пословицах чувашского народа» (1958), «Юмахсем» (1960); Н.Р.Романов – «Чăваш юрă-сăввисен тытăмĕ çинчен» (1957), «О чувашских загадках» (1962); М.Я.Сироткин – «Очерки дореволюционной чувашской литературы» (1948, 1967), «Чувашский фольклор» (1965), «Чувашские народные сказки» (1969); В.Я.Канюков – «Ача-пăча сăмахлăхĕ. Сăвă-юрă, юмах-халап» (1964), «От фольклора к письменности» (1971); И.И.Одюков – «Халăх сăмахлăхĕ тĕне хирĕç» (1961), «Чувашские народные песни социального протеста и революционной борьбы» (1965), «Чувашские сказания об улыпах» (1973), «Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем» (1973, В.Я.Канюковпа пĕрле), «Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ» (1975), «Чăваш халăх лирики. (Авалхи юрăсем)» (1978) т. ыт. те.

Тĕпчевсем çеç мар, пысăк калăпăшлă сăмахлăх пуххисем те савăнтарчĕç вулакансене. Вăл шутра «Ваттисен сăмахĕсем. Каларăшсем. Сутмалли юмахсем» (Н.Р.Романов, 1960), «Сказки и предания чуваш» (Н.Ф.Данилов, 1963) кĕнекесем, ултă томпа кăларма палăртнă «Чăваш

халăх сăмахлăхĕ» ярăмăн пирвайхи 4 томĕ (1-2 тт. – юмахсем, 3-4 тт. – юрăсем) т. ыт. те.

Çапла вара, 80-мĕш ç. тĕлне чăваш фольклористики тепĕр хут ура çине тăрса çирĕппĕн аталанма пуçланать. Н.И.Ашмарин, Г.И.Комиссаров т. ыт. те фольклора тĕпчес ĕçре историлле танлаштару меслетне тĕпе хуни çĕнĕрен вăй илет, малти вырăна тухать. Чăваш фольклористикин çĕнĕ тапхăрĕ пуçланать.

***Павлов Федор Павлович*** (1892-1931) – чăвашсен паллă драматургĕ, поэчĕ, композиторĕ, халăх сăввиюррине пухаканĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Патăрьелте (халĕ – Çĕрпӳ р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Иккассинчи икĕ класлă училищĕре, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче тата тĕн семинаринче вĕреннĕ. Тĕрлĕ çĕрте вăй хунă вăл: Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче ачасене музыкăна вĕрентнĕ, Чăваш автономи облаçĕн халăха вĕрентес уйрăмĕнче, музыка техникумĕнче, Чăваш патшалăх музыка капеллинче ĕçленĕ.

Ф.П.Павлов – революци хыççăнах чăвашсен наци искусствине пуçарса яраканĕсенчен пĕри, чи хастарри. Çав вăхăтрах чăваш искусствин теоретикĕпе халăх музыкин классикĕ те. Унăн хитрелĕхе вĕрентни, эстетики пĕтĕм халăх шухăш-кăмăлĕне, мал туртăмĕсемпе пĕр килет. Вăл хайланă произведенисем халăх чун-чĕринчен шăранса тухнă. Вулакана пуян та çивĕч чĕлхепе, халăх сăмахлăхĕпе, йăли-йĕркипе тыткăнлаççĕ.

Тăван халăхăмăрăн йăли-уявĕсене, юрри-сăввисене, каларăшĕсене, ваттисен сăмахĕсене, ача-пăча сăмахлăхне аван пĕлни Ф.Павлова илемлĕ хайлавсем çырма, вĕсен сюжетпа композици пайĕсене анлăрах та уçăмлăрах тума пулăшать. Геройсен психологилле аталанăвне тата кăмăлне уçса памашкăн автор фольклорпа фон вырăнне пĕлсе усă курать. Ун пек чухне салтак, туй, вăйă юррисем, авалтан килекен йăла-йĕркесем çыравçа çав тери пысăк пулăшу параççĕ.

Ф.П.Павлов – халăх сăмахлăхне пухаканĕ, юррикĕввине илемлетекенĕ тата пропагандăлаканĕ. Халăхăн юрри-кĕвви çинчен çырнă ĕçĕсем – «Чарăннă сасă», «Чувашская музыка», «Чăваш кĕсли». Чи курăмли –

«Чуваши и их песенное и музыкальное творчество» брошюра. Асăннă кĕнекере Ф.Павлов халăх материалĕ тăрăх чăваш музыки пуçланса кайнине, унăн шалти тытăмне тишкерет, музыкăпа этнографи ĕçĕсене тĕпчевçĕ куçĕпе пăхса кĕскен хак парать, çав литературăна ятарлă пăхса тухать.

Çыравçă çав кĕнекери шухăшсене чи малтан «Чăваш музыки» ятпа 1923 çулхи чăваш календарĕнче пичетленĕ, унта вăл чăваш юррисемпе кĕввисене жанрсемпе ушкăнсем тĕлĕшĕнчен тĕплĕн те анлăн уйăрнă. Фольклор наукăна, профессиллĕ искусствăна аталантарнине тата çул уçнине пĕлсе, туйса тăнă вăл, халăх юррисене, сăмахлăх тĕсĕсене пухас ĕçе малти вырăна хунă. Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче вĕреннĕ çулсенчех симфони оркестрĕ тата квартет валли юрăсем хайлать, халăх юррисене илемлетсе сцена çине кăларать, вĕсене çĕнетсе хăйне май гармонизацилет. Фольклорист пухса кăларнă юрă пуххисем çаксем: «Хитрелетнĕ чăваш юррисем» (1919), «Ача-пăча сасси» (1921), «Сăрнай», «Чăваш юррисем» (1924) т. ыт. те. Вĕсем пурте чăваш юрри-кĕввин ылтăн çўпçинче юлчĕç. Ф.Павлов çырса илнĕ халăх юррисем 300 ытла, унсăр пуçне хор валли майласа якатнă юрăсем те сахал мар. Вĕсем илемлетнĕ хыççăн çĕнĕрен çуралнăн, илемлĕн янăраççĕ. Акă, «Пирĕн урам анаталла», «Шупашкар туйи», «Çырма хĕрне ансассăн» тата ытти юррисене илсе пăхар. Çак хайлавсенче эпир чăваш халăхĕн йăли-йĕркине, эстетикăлла шухăш-кăмăлне, чăваш çыннин чунĕ çĕкленсе тăнине туятпăр, асăрхатпăр. Ф.П.Павловăн чунри вăйĕ, шухăшĕ, ăнĕпе ĕмĕчĕ пĕтĕмĕшпех тăван халăхăмăрăн эстетикăлла шухăш-кăмăлĕпе пĕр килет, ăна малалла аталантарас шухăшлава мала хурать.

***Патмар Иван Анисимович*** (1915-1983) – паллă фольклорист, халăх сăмахлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухаканĕ тата пропагандăлаканĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уесĕнчи Яманакра (халĕ – Красноармейски р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Яманакри пĕр сыпăклă тата Кĕçĕн Шетмĕри колхоз çамрăкĕсен шкулĕсенче, Шупашкарти счетоводсен курсĕнче вĕреннĕ. Пĕр вăхăт счето-

водра ёçленӗ хыççӑн И.А.Патмар малтан Шупашкарти педагогика институтӗн хатӗрленӳ курсӗнче, унтан Мускаври Пӗтӗм Союзри юридици институтӗнче кӗретсӗр йӗркепе вӗренет. Тӑван çӗр-шывӑн Аслӑ вӑрçи пуçлансан Иван Анисимович çар тумне тӑхӑнать, 1945 ç. хӗлле тин тӑван ялне таврӑнать. Вӑрçӑра 3 хутчен аманать вӑл, хӑюлӑхпа паттӑрлӑхшӑн ӑна икӗ хутчен Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденӗпе, «Хастарлӑхшӑн» тата ытти медальсемпе чыслаççӗ. Вӑрçӑ хыççӑн паллӑ фольклорист районти тӗрлӗ яваплӑ вырӑнсенче тӑрӑшать, халӑх сӑмахлӑхне пухас ӗçе малалла тӑсать.

И.А.Патмар пуçтарнӑ сӑмахлӑх еткерӗ – иксӗлми пуянлӑх. Çур ӗмӗр хушши пухнӑ вӑл халӑхӑмӑрӑн юрри-сӑввине, халап-юмахне, ӑса вӗрентсе каланӑ сӑмахӗсене. Мӗн курни-илтнине пӗрчӗн-пӗрчӗн, васка-масӑр та тирпейлӗн хут çине куçарнӑ Иван Анисимович, пулас ӑрусем валли халӑхӑн ылтӑн та мерчен пуянлӑхне сыхласа хӑвармашкӑн ырми-канми тӑрӑшнӑ.

Тар тӑкни харама кайман. Паллӑ фольклорçӑн сӑмахлӑх çӳпçинче 150 пине яхӑн юрӑ çаври, 30 пин ытла ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшсем, 25 пин ытла чӑвашсен авалхи ячӗсем, 10 пин ытла тупмалли юмах, пин ытла юмах, çӗршер те çӗршер халапа легенда, ача-пӑча сӑмахлӑхӗн тӗсӗсем, йӑла-йӗркепе çыхӑннӑ поэзин жанрӗсем т. ыт. те.

И.А.Патмар пухнӑ фольклор тексчӗсем çӗр-шывӑн тӗрлӗ кӗтесӗсенче упранаççӗ. Ывӑлӗ – Эдисон Иванович Патмар, ашшӗ пекех сӑмахлӑха пухса тишкерекенскер – çав текстсен пӗр пайне кун çути кӑтартма пултарчӗ ӗнтӗ. Вӑл паллӑ фольклорист çинчен ятарласа 60 страницӑллӑ «Алтӑр çӑлтӑр çулӗ» тӗпчев ӗçӗ, И.А.Патмар пухнӑ материалсене 20 ытла кӗнекене вырнаçтарса 100 пин экземплярпа çапса кӑларчӗ. Акӑ вӗсенчен хӑшӗпӗри: «Пурнӑç илемӗ», «Халӑх мерченӗсем» (1993), «Кукаçин пурнӑç кӗнеки» (1996), «Истори чӑнлӑхӗ халӑх юрринче» (1998) т. ыт. те. Фольклорӑн уйрӑм жанрӗсем те уйрӑмшарӑн кун çути курчӗç: ваттисен сӑмахӗсемпе каларӑшӗсем «Халӑх ӑслӑлӑхӗ» ярӑмра 6 томпа, юмахӗсемпе халапӗсем «Патмар мучи юмахӗсем»

тата «Уртей мучин халап-юмахӗсем» кӑларӑмра 4 томпа, ача-пӑча юмахӗсем уйрӑм кӗнекен, юрри-такмакӗ, тупмалли юмахӗсем, вӗрӳ-суру чӗлхисем, кӗллисем, тӗлӗкӗсем, тарӑхса е ҫилленсе вӑрҫнӑ чух калакан сӑмахсемпе пуплевӗсем т. ыт. те. Пӗр сӑмахпа каласан, халӑхра сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен пур жанр тӗслӗхӗсем те пур И.А.Патмар архивӗнче, вӗсем пичетленессе шанатпӑр.

И.А.Патмар пухнӑ фольклор материалӗ тӗрлӗ кӗнекесемпе сборниксенче, вӗренӳ пособийӗсемпе тӗпчев ӗҫӗсенче пичетленнӗ, вӗсемпе нумай сӑмахлӑх ӑсти усӑ курнӑ. Чи паллӑраххисем ҫаксем: «Чувашские сказки» (1937), «Ача-пӑча юмахӗсем» (1938), «Чӑваш фольклорӗ» (1941, 1949), «Фашизма хирӗҫ фольклор» (1942), «Ача-пӑча вӑййи-юррисем» (1956), «Ваттисен сӑмахӗсем. Каларӑшсем. Тупмалли юмахсем» (1960), «Чӑваш халӑх юррисем» (1962).

Юлашки ҫулсенче Э.И.Патмар ашшӗн сӑмахлӑх мулне «Халӑх ӑс-хакӑлӗ» ятпа пичетлет. Хальлӗхе 14 кӑларӑм тухрӗ, малашлӑхра, тӗп редактор шухӑшӗпе, халӑх йӑли-йӗркисем ҫинчен ҫырнисем пичетленмелле. Вӑл каланӑ тӑрӑх, ҫак ӗҫсене пичетлесе кӑларни – И.А.Патмар ӗҫӗсен 10-15 пайӗ те ҫук, килти архивра вара «ҫӗре яхӑн том хӑйӗн шӑпине кӗтсе выртать».

***Золотов Николай Яковлевич*** (1898-1967) – чӑвашсен паллӑ литературовечӗ, публицисчӗ, фольклорисчӗ; Хусан кӗпӗрнин Етӗрне уесӗнчи Синерте (халӗ – Элӗк р-нӗ) вӑтам хресчен кил-йышӗнче ҫуралнӑ; Элӗкри икӗ класлӑ училищӗре, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче, аспирантурӑра вӗреннӗ. Н.Я.Золотов нумай ҫул хушши пичет органӗсенче вӑй хунӑ, тӗрлӗ шкулсенче ӗҫленӗ, граждан вӑрҫине хутшӑннӑ. 1937 ҫ. ӑна тӗрӗс мар айӑпласа репрессиленӗ, 1956 ҫ. унӑн таса ятне каялла тавӑрнӑ.

Унӑн фольклористикӑри чи паллӑрах ӗҫӗсем ҫаксем: «Чӑваш сӑмахлӑхӗпе чӑваш пултарӑвӗ (происвотстви)» (1924), «Краткий очерк народной поэзии чуваш» (1928), «История собирания и изучения чувашской народной сказки (о параллелизме в культуре вообще и в сказках в частности; о характере чувашских сказок)» (1930) т. ыт. те.

Хăйĕн пĕрремĕш ĕçĕнче автор XX ĕм. 20-мĕш çулĕсенче чăвашсен традицилле сăмахлăх тĕсĕсем идея тата тематика енчен улшăннине, урăх сĕм туяннине палăртать. Ун шухăшĕпе, çĕнĕ сăмахлăх хайлавĕсем ĕлĕкхисене хирĕçлесе хывнисем мар, чăвашăн шалти туйăмне палăртакан произведенисем. Халăх поэзийĕ халăх пурнăçĕпе, унăн ĕмĕчĕпе, шухăш-кăмăлĕпе тачă çыхăннине, çавăнпа ăна пухса тĕпчемеллине, унран вĕренмеллине палăртать вăл.

«Краткий очерк народной поэзии чуваш» кĕнеке – чăваш халăх юррисене тĕплĕн тишкерсе фольклорист куçĕпе хакланă тĕпчевсенчен чи пахи. Вăл 2 пайран тăрать: пĕрремĕшĕнче халăхăмăрăн çырусăр поэзине тĕплĕн сăнаса çырнă тата анлă тишкерӳ тунă, унăн уйрăмлăхĕсемпе тапхăрĕсене, техникипе формисене кăтартнă; иккĕмĕшĕнче вара – сăмахлăх тĕсĕсем, вăл шутра юрăсем, такмаксем. Текстсене чăвашла та, вырăсла куçарса та панă.

Тĕпчевĕн тепĕр паха енĕ – халăх юррисене жанрсем çине уйăрса ушкăнлани. Автор шухăшĕпе, кашни юррăн хăйĕн вырăнĕ, содержанийĕ пур. Н.Я.Золотов юрăсене çапларах пайлать: 1. Хăнара лармалли юрăсем. 2. Лармари юрăсем. 3. Салтак юррисем. 4. Уяв юррисем. 5. Юрату юррисем. 6. Такмаксем. 7. Ача юррисем.

Тĕпчевçĕ кашни ушкăнри юрăсене хакланă, унсăр пуçне ĕç вăхăтĕнче юрламалли, ташламалли, кулăшла тата лирикăлла юрăсем пуррине асăрханă. Çакăнтах туй юррисене те кĕртет вăл.

Н.Я.Золотов чăваш халăх юррисен сăвă хывăмне, вĕсенчи илемлĕх туртăмĕсемпе сăнарлăхсене палăртни те интереслĕ. Вăл халăх тĕрлĕ танлаштарусемпе, тропсемпе, ытти илемлĕх мелĕсемпе пĕлсе усă курнине асăрхать, фольклористсене çак уйрăмлăха шута илме чĕнсе калать.

***Элле Кузьма Васильевич*** (1896-1974) – чăвашсен паллă историкĕ, этнографĕ, педагогĕ тата фольклорисчĕ, истори наукисен кандидачĕ; Хусан кĕпĕрнин Çĕрпӳ уесĕнчи Кивĕ Шăхальте (халĕ – Вăрмар р-нĕ) хресчен

кил-йышӗнче ҫуралнӑ; малтан ялти земство шкулне, унтан Тӑвайри икӗ класлӑ училище тата Гурий святитель тӑванлӑхӗн пӗлӳ шкулне пӗтернӗ, Хусанти учительсен семинаринче, педагогика институтӗнче вӗреннӗ. 1917-1921 ҫҫ. – ҫар хӗсметӗнче: Чехипе Словаки пӑлхавне хирӗҫ пыракан ҫапӑҫусене хутшӑннӑ, Колчака хирӗҫ ҫапӑҫнӑ; 1922-1930 ҫҫ. К.В.Элле тӗрлӗ шкулсенче, педагогика техникумӗнче учительте ӗҫленӗ. Ун хыҫҫӑн виҫӗ ҫул хушши Ленинградра аспирантурӑра вӗренет. 1933-1935 ҫҫ. – Кузьма Васильевич Шупашкарти* наукӑпа тӗпчев институчӗн аслӑ наука сотрудникӗ, институт библиотекин пуҫлӑхӗ. Ӗҫленӗ хушӑрах чӑвашсен йӑли-йӗркисене, сӑмахлӑх тӗсӗсене тӗпчет, фольклорпа этнографи материалӗсене пухма йӗркеленӗ экспедицисене хастаррӑн хутшӑнать. 1942 ҫ. К.В.Элле кандидат диссертацине ӑнӑҫлӑ хӳтӗлет.

Паллӑ тӗпчевҫӗн кун-ҫулӗ ҫав тери синкерлӗ пулнӑ. Историн тӗрлӗ тапхӑрӗнчи сӑлтавсене пула чун-чӗре ыйтнӑ ӗҫӗпе ларайман вӑл, хӑй ҫуралса ӳснӗ тӑрӑхран, Чӑваш енрен нумай аякра пурӑнма тивнӗ унӑн. 1937 ҫ. пуҫласа мӗн виличчен К.В.Элле хамӑр ҫӗр-шыври тӗрлӗ вӗренӳ заведенийӗсенче – Одессӑри педагогика, Артемовскри учительсен, Гомельри педагогика институчӗсенче – аслӑ преподаватель, доцент, кафедра заведующийӗ пулса ӗҫленӗ. Вӑл Гомель хулинче вилнӗ, ӑна унтах пытарнӑ.

К.В.Элле – анлӑ тавра курӑмлӑ тата профильлӗ тӗпчевҫӗ, чӑваш аваллӑхӗпе питӗ интересленнӗ. Хӑй аса илнӗ тӑрӑх, чӑвашсен истори, археологипе этнографи ыйтӑвӗсемпе 50 ытла том пичетре тухнӑ материал пухнӑ вӑл, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче 28 томӗ тата 7 ал ҫырӑвӗ ҫухалнӑ.

Тӑван тавралӑха сӑнама пӗлни, халӑх историйӗпе тата йӑли-йӗркипе интересленни Кузьма Васильевича фольклор материалӗсем нумай пухма май панӑ. Вӑл ҫырнисенче 2005 ваттисен сӑмахӗпе каларӑш, 3000 тупмалли юмахпа 1010 ял хуҫалӑхне сӑнани, 1416 йӑла-йӗрке сӑнавӗ, 309 юмах, халӑх юррисен 9000 куплечӗ упранать. Паянхи кун К.В.Эллен пичетленмен пуян ар-

хивĕ Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче 100 яхăн уйрăм томпа тусан çăтса выртаççĕ.

Халăх сăмахлăхĕпе К.В.Элле 1922 çултанпа интересленме пуçланă, фольклор тĕсĕсене пухнă, 42 ĕç çырнă, нумайăшне тĕрлĕ журналсемпе сборниксенче пичетлеме пултарнă. Уйрăм кĕнекесем те пур унăн, сăмахран, Шупашкарта 1935 ç. тухнă «Акатуй. Историко-этнографические очерки» ятлă ĕçĕ. Кунта сăмах авалхи чăвашсем ял-йышпа çĕр ĕçĕсем пуçланас умĕн ирттернĕ уяв пирки сăмах пырать, урăхла ăна автор «ака уявĕ» тесе хаклать.

1944-1948 çç. К.В.Элле Чăваш республикинчи археологипе этнографи карттине туса хатĕрленĕ, унта вăл 4 пин ытла тĕрлĕрен палăка кĕртнĕ, карттăпа пĕрле алфавитлă каталог, справочник пур. Çав палăксенчен чылайăшĕ – чăвашсен чӳк вырăнĕсем, киремет вырăнĕсем тата ытти культсемпе çыхăннă лапамсемпе вырăнсем.

***Сироткин Михаил Яковлевич*** (1908-1970) – чăвашсен паллă литературовечĕ, критикĕ, фольклорисчĕ, филологи наукисен докторĕ, профессорĕ; Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Анаткасра (халĕ – Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти пуçламăш тата Сĕнтĕрвăрринчи иккĕмĕш сыпăклă шкулсенче, педагогика курсĕнче, Шупашкарти педагогика институтĕнче вĕреннĕ. М.Я.Сироткин – пултаруллă та нумай пĕлӳллĕ ăсчах. Ăçта кăна ĕçлеме тӳр килмен-ши унăн: Чăваш республикин çут ĕç халăх комиссариачĕн инспектор-методисчĕ, Шупашкарти педагогика училищин вĕрентекенĕ тата вĕренӳ пайĕн заведующийĕ, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн наука сотрудникĕ тата директор çумĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă пуçлансан Михаил Яковлевич алла пăшал тытать, тăшманпа çапăçать. Сталинград фронтĕнче те, Ленинград патĕнче те, кăнтăр енче те пулать вăл, 2 хут аманать. Хастарлăхпа паттăрлăх тата хăюлăх кăтартнăшăн ăна «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденпа, 4 медальпе наградăланă.

Вăрçă хыççăн М.Я.Сироткин наука ĕçне кӳлĕнет: вĕренӳ кĕнекисем, методика кăтартăвĕсем, тĕпчев ĕçĕсем, чăваш культурин тĕрлĕ ыйтăвĕсемпе статьясем çырать, шкулсем валли кĕнекесем пичетлесе кăларать, студентсене чăваш халăх сăмахлăхĕпе тата чăваш литературипе лекцисем вулать, практика занятийĕсем ирттерет. Унăн вĕренӳ кĕнекисемпе хрестоматийĕсем шкул ачисене халăх сăмахлăхĕн чи паха тĕслĕхĕсемпе паллаштараççĕ, фольклорăн пĕтĕм пуянлăхне, вăл çăл куç пек тапса тăрса илемлĕ литературăна хăват парса тăнине уçса параççĕ. Паллă ученăй нумай çул хушши Чăваш патшалăх пединститутĕнче тата Чăваш патшалăх университетĕнче чăваш чĕлхипе литература кафедрисене ертсе пырать, учительсемпе тĕпчевçĕсем хатĕрлессине пуçарса ярать. Унăн ятне Чăваш АССРĕн Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхĕн Хисеп Кĕнекине çырса хунă.

Михаил Яковлевич чăваш халăх сăмахлăхне çине тăрсах тĕпчет, 50 ытла наука ĕçĕ пичетлет, вĕсенчен 9-шĕ – монографисем. Вăл – тăван халăхăмăрăн сăмахлăх пуянлăхне туллин те пĕтĕмлетсе çыраканĕсенчен пĕри. Чăваш çыннин кулленхи пурнăçĕнче фольклор мĕнле вырăн йышăннине çак статьясенче çутатнă: «Фольклор тата литература» (1947); «Дописьменная культура чувашского народа» (1958); «Чувашские народные сказки» (1963); «Песни и сказы чувашей о Ленине» (1965) т. ыт. те.

Асăннă тĕпчевсемсĕр пуçне паллă ăсчахăн чăваш халăх еткерне халалланă ĕçĕсем тĕрлĕ кĕнекесенче, монографисенче, вĕренӳ пособийĕсемпе хрестоматисенче кун çути курчĕç. Сăмахран, «Устно-поэтическое творчество» тĕпчевĕ – «Чуваши. Этнографическое исследование. Ч. 2» кĕнекере (1970), «Устно-поэтическое творчество и песенно-музыкальное искусство» статйи – «История Чувашской АССР. В 2 т. Т. 1. С древнейших времен до Великой Октябрьской социалистической революции» (1966, 1983) монографире т. ыт. те. Чăваш халăх сăмахлăхĕн историри вырăнĕпе аталанăвне, жанрсен уйрăмлăхĕсене, илемлĕ литературăна вăй илтерсе пуянлатнине шкул ачисем валли хатĕрленĕ пособисенче

анлăн çырса кăтартрĕ. Акă, «Чăваш литератури. 8-мĕш класра вĕренмелли кĕнекере» унăн чăваш фольклорĕ пирки пĕтĕмĕшле статйи, жанрсенчен – юмахĕсем ваттисен сăмахĕсемпе тупмалли юмахĕсене халалланă тĕпчевĕсем пичетленчĕç; 5-мĕшпе 6-мĕш классенче вĕренекенсем валли хатĕрленĕ «Тăван литература» хрестоматийĕсене М.Я.Сироткин пухнă сăмахлăх тексчĕсем самаях пуянлатрĕç. Асăннă вĕренÿ пособийĕсем темиçе кăларăмпа та пичетленсе тухрĕç, вĕсемпе чăваш шкулĕсенче халĕ те усă кураççĕ.

Наукăлла тĕпчевсемсĕр пуçне, М.Я.Сироткин – чăваш фольклорĕпе çырнă ĕçсен тата текстсен пуххисен редакторĕ те. Вăл шутра Н.Ф.Даниловăн «Чăваш халăх юмахĕсем» (1949) тата П.П.Хусанкайăн «Юмахсем» (1953) кĕнекисем.

Чăваш фольклористикинче М.Я.Сироткинăн чи курăмлă та сумлă ĕçĕ вăл – 1965 ç. тухнă «Чувашский фольклор. Очерк устно-поэтического народного творчества» кĕнеки. Унта автор ĕлĕкхи йăла-йĕркесене çырса кăтартать; чăваш халăх сăмахлăхне тишкерет; жанрсем тăрăх пайласа тухать, вĕсене тĕплĕн пăхса тухса хак парать; чăваш халăхĕн юррисене, ăйăхисене, сăмахлăхне ытти халăхсен фольклорĕпе танлаштарать, уйрăмлăхĕсене палăртса хăварать. Кĕнекере паллă фольклорист халăх сăмахлăхĕн эстетикăна наукăри пĕлтерĕшĕ пирки çырать, малтанхи тапхăрти тĕпчев ĕçĕсене пĕтĕмлетет, паллă енĕсемпе çитменлĕхĕсене асăрхаттарать.

Çапла вара, чăвашсен паллă фольклорисчĕ тата литературовечĕ М.Я.Сироткин чăваш ăслăлăхĕшĕн нумай туса хăварма ĕлкĕрчĕ. Унăн кĕнекисемпе студентсем халĕ те вĕренеççĕ, шкулсенче анлăн усă кураççĕ.

***Семенов (Тукташ) Илья Семенович*** (1907-1957) – чăвашсен паллă фольклорисчĕ, поэчĕ, прозаикĕ тата куçаруçи; Хусан кĕпĕрнин Кăрмăш уесĕнчи Мăн Тукташра (халĕ – Элĕк р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; хăйсен ялĕнчи пуçламăш, Хĕрлĕ Чутайри 8 çул вĕренмелли шкулсенче, Шупашкарти совпартшкулта, Самарăри геологипе шырав институтĕнче вĕреннĕ.

Вăрçăччен И.Тукташ тĕрлĕ вырăнта ĕçленĕ: «Çамрăк хресчен» хаçатра, «Хатĕр пул» журналта, Самар хулинчи «Колхозник» хаçат редакцийĕн ответлă секретарĕнче, Чăваш кĕнеке издательствинче тата Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн наука сотрудникĕнче. 1942-1944 çç. Илья Семенович фронтри хаçатсенче çар корреспонденчĕ пулнă, çартан таврăнсан пуçĕпех литература ĕçне кӳлĕннĕ.

Хастар поэт-куçаруçă сăвăсем çырнисĕр пуçне хăйĕн вăй-халне чăваш халăх сăмахлăхне пухса пичетлес ĕçе çине тăрса туса пынă. Сахал мар юмах-халап, сăвă-юрă, ваттисен сăмахĕпе тупмалли юмах пуçтарнă вăл, пухнă материала уйрăм кĕнекен пичетлесе кăларнă, хăй те 12-рех сăвăсем çырнă.

Çамрăклах халăх ĕçĕнче тата сахал мар хурапашурра тӳснĕскер, И.Тукташа çак пиçĕхӳ пурнăçăн йывăр саманчĕсене çăмăллăн тӳссе ирттерме, шутланисене вĕçне çитерме пулăшать. Унсăр пуçне, халăха валли кĕнекесем кăларас, çырусăр сăмахлăхне тĕпчессине нихăçан та пуçран кăларман вăл: пурăннă çулсенче унăн 20 ытла кĕнеке тухнă. Малтанхи произведенийĕсем 1927-1928 çç. «Канаш» хаçатра, «Сунтал», «Хатĕр пул» журналсенче пичетленнĕ.

Чăн та тĕлĕнмелле: çур ĕмĕр пурăнсах Илья Тукташ халăх асĕнче пултаруллă прозаик, çепĕç лирик, чаплă куçаруçăпа драматург, паллă литературоведпа фольклорист тата, Ю.Сементер калашле, «чăваш сăмахĕн асамçи» пулса тăчĕ.

Кĕнеке издательствипе институтра вăй хунă çулсенче И.Тукташ чăваш фольклорне пухас тĕлĕшпе ырмиканми тăрăшрĕ. 1938 ç. халăх сăмахлăхĕн материалĕсемпе усă курса çырнă ача-пăча юмахĕсен кĕнеки, 1941 ç. чăваш фольклорĕн хрестоматийĕ «Чăваш фольклорĕ» ятпа çапăнса тухрĕç. Иккĕмĕш хут асăннă сборник 1949 ç. пичетленет.

Ку кĕнекере тĕпчевçĕ чăваш халăх сăмахлăхĕн историне йĕрлесе тухнă, фольклор тĕслĕхĕсене тишкернĕ. Вăл шутра, ĕç юррисене, уяв такмакĕсене, ĕçкĕ-çикĕ юррисене, легендисемпе халапĕсене, юмахĕсене пĕрин

хыççăн теприне иле-иле кăтартнă. Çакна та каламалла: асăннă хрестомати – Тукташ вăхăчĕшĕн çеç мар, паян та сăмахлăхпа ĕçлекенсемшĕн чи юратнă текстсен пуххи. Сăлтавĕ акă мĕнре: чăваш фольклористикинче унтанпа тăван халăхăмăрăн еткерне ятарласа пухса кăларни пулманччĕ-ха (М.Я.Сироткинăн вырăсла пичетленнĕ «Чувашский фольклор» кĕнекисĕр пуçне!). Çак сборникпа пĕрлех И.С.Тукташăн чăваш фольклорне тишкернĕ тĕпчевĕ пичетленнĕ. Унсăр пуçне унăн тепĕр статйине асăнмалла. Вăл «К вопросу об изучении чувашского фольклора» ятпа наукăпа тĕпчев институчĕ кăларса таракан «Ученые записки» сборникра 1941 ç. кун çути курнă. Унта вăл чăваш халăх сăмахлăхĕн пурнăçри вырăнĕпе аталанăвне, пуласлăхĕпе малашлăхĕ тавра пыракан ыйтусене çутатма тăрăшнă.

И.Тукташ фольклор материалĕсене пухса пичетленисĕр, тĕпченисĕр пуçне халăх хушшинче çӳрекен халап-юмаха, легендисемпе мифĕсен сюжечĕсемпе сăнарлăхĕсене хăйĕн хайлавĕсенче анлă усă курнă: 1948-1953 çç. халăх юмахĕсем тăрăх «Пирĕн телей» ятлă 4 пайлă 8 картинăллă сăвăллă пьеса çырнă. Унти сăнарсем этем пурнăçĕнчи ырăпа усал, тĕрĕслĕхпе суя хушшинчи ĕмĕртенхи кĕрешĕвне сăнлаççĕ. Е тата, илсе пăхар-ха халăхра анлă сарăлнă «Кам-ши, кам-ши?», «Тăван çĕршыв», «Сар каччă», «Çурхи хĕвел», «Шурă кăвакарчăн» тата ытти сăввисене. Асăннă лирикăлла сăвăсем чуна тыткăнлаççĕ, хумхантараççĕ. Ахальтен мар чăваш композиторĕсем çак сăвăсемпе хитре юрăсем кĕвĕленĕ. И.Тукташ сăввисенчи туйăм тасалăхĕ, ытарма çук çепĕç чĕлхийĕ, çĕнĕ сăнарĕсем, сăвă тытăмĕ – пурте халăх пултарулăхĕн сăвви-юррине çывăх. Çавăнпа И.С.Тукташ юррисем чăваш çыннипе яланах юнашар, пĕрле.

Талантлă çыравçă мĕн ĕмĕр тăрăшĕпех халăх хушшинче пулма, тăван халăхшăн ĕçлеме тăрăшнă. Унăн пултарулăхĕ, пархатарлă пурнăçĕпе ĕçĕсем пирĕн çамрăксемшĕн яланах ырă тĕслĕх пулса тăраççĕ, вĕсене хастар та хăюллă пулма, çутă малашлăхшăн вăя шеллемесĕр кĕрешме хавхалантараççĕ.

*Романов Никита Романович* (1905-1960) – чăвашсен этнологĕ, фольклорисчĕ, педагогĕ; Хусан кĕпĕрнин Етĕрне уссĕнчи Шарпашра (халĕ – Муркаш р-нĕ) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; тĕрлĕ шкулсенче – Турайра, Шăматра тата Выла Пасарта ăс пухнă, каярахпа Вăрнарти педагогика курсĕнче, Шупашкарти педагогика техникумĕнче, Мускав университечĕн этнологи факультетĕнче вĕреннĕ. 1930 ç. факультета хупнă пирки чăваш каччин каялла тăван ене таврăнма тивнĕ. Вăрçăччен Н.Р.Романов Шупашкарта тĕрлĕ вырăнта ĕçлет: Чăваш краевечĕсен обществипе краеведени музейĕ, педагогикăпа ял-хуçалăх институчĕсем, автодор рабфакĕпе учительсен курсĕ. 1941-1945 çç. вăл – Аслă Отечественнăй вăрçăра, 1945 ç. пуçласа мĕн виличчен – Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институчĕн наука сотрудникĕ. Никита Романович халăхăмăрăн историне, этнографипе сăмахлăхне, тăван тавралăхпа чăвашсен авалхи тĕнне тĕпчет, 50 ытла кĕнекепе брошюра хатĕрлет, вĕсене пичетлесе кăларать.

Чăваш фольклорне пухса йĕркелес, тĕпчес тата çырас ĕçе хăнăхса пыма Н.Р.Романов çамрăклах – 1922-1924 çç. Шупашкарта вĕреннĕ вăхăтра – пуçăнать. Вăл каникулсенче халăх юрри-сăввисене, юмаххалапĕсене çыра-çыра илет, йăли-йĕркисем çинчен калакан материалсем пухать, республикăра ирттернĕ археологипе этнографи экспедицийĕсене хастар хутшăнать. Аваллăх палăкĕсемпе тата чăваш халăхĕн иртнĕ кунçулĕне интересленни çамрăка тĕрлĕ хаçат-журналта пĕчĕк статьясемпе пĕрлех наука ĕçĕсем те пичетлеме хистет. Çапла 1924-1928 çç. унăн çине-çинех «Ваттисен сăмахĕсем», «Халăх сăмахлăхĕ», «Халăх юррисен техникипе формисем», «Хĕр сутнипе юнлă туй», «Хунькассипе хăйматлăх» т. ыт. тĕпчевĕсем кун çути кураççĕ.

Н.Р.Романов халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене юратса та кăсăкланса, çав тери пысăка хурса пухса пынине, хăйĕн ĕçне чунтан-вартан пур кăмăлпа тунине унпа пĕрле вăй хунă юлташĕсем аса илнинчен те асăрхатпăр. Ун çинчен паллă фольклорист Е.С.Сидорова çапларах çырать: «Вăл ман асăмра тĕлĕнмелле ăслă, ĕçе юрата-

кан, пĕрле ĕçлекенсене ырă сунса пулăшса пыракан çын сăнарĕпе палăрса юлчĕ. Ăслăлăх тĕпчевĕнче ĕçленĕ тапхăрта, эпĕ астăвасса, Никита Романович институтри пур пайри ĕçсемпе те интересленетчĕ, вĕсен ларăвĕсене хутшăнса доклад-пĕлтерӳсем тăватчĕ, ăслă канашсем, сĕнӳсем паратчĕ. Нумай вулатчĕ, нумай пĕлетчĕ вăл тĕрлĕ ыйтусемпе те. Ăна институтра ĕçлекенсем «ходячая энциклопедия» (нумай енлĕ пĕлӳллĕ çын) тетчĕç»[34].

Н.Р.Романов нумай профильлĕ ăста пулнине унăн халăх юрри-сăввин тытăмĕпе шухăш-тематикине («Чăваш юрă-сăввисен тытăмĕ çинчен», 1957; «Идейно-тематическое содержание дореволюционных чувашских народных песен», 1960), вак жанрĕсене («Сутмалли юмахсем çинчен», 1952; «О чувашских загадках», 1962), авалхи тĕнĕпе ыр-хаярĕсене («Культ киреметя у чувашей», 1957; «Киреметсем çинчен», 1958; «Тĕн пуçланса кайни çинчен», 1960), чăваш халăх календарьне («Чувашский народный календарь», 1962), календарлă йăли-йĕркисене («Уй-хир уявĕсемпе йăлисем», 1966) тата халăхăн ытти еткерне тĕплĕн тишкернĕ ĕçĕсем аван кăтартса параççĕ.

Чăваш халăх сăмахлăхĕн материалĕсене Н.Р.Романов 35 çул ытла пухса пынă. Паянхи кун ЧПГĂИ наука архивĕнче вăл çырнă тата пухнă ĕçсен 48 томĕ упранать. Унта паллă фольклорист халăхран çырса илнĕ юрри-сăвви, такмакĕ-шӳчĕ, юмахĕ-халапĕ, мифĕ-легенди, ача-пăча поэзийĕн тексчĕсем, вак жанрĕсем, йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăх тĕсĕсем те пур.

Чăваш фольклористикинче паремисене 1960 çулччен тĕпчемен мар. Çапах та Н.Р.Романовчен вак жанрсен пĕр пайне пур енлĕн те тарăннăн монографи шайĕнче тишкерменччĕ-ха. Чăвашсен ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене тата сутмалли юмахĕсене Никита Романович ăслăлăх тĕлĕшĕнчен системăласа, текстсене чăвашлавырăсла т. ыт. халăхсен тĕслĕхĕсемпе танлаштарса пĕр

---

[34] Сидорова Е.С. Чăвашсен паллă тĕпчевçи Н.Р.Романов (Опраньох) //Ялав. 1999. 2 №. 75 с.

кĕнекене калăпларĕ. Ăна Чăваш кĕнеке издательстви 1960 ç. «Ваттисен сăмахĕсем. Каларăшсем. Сутмалли юмахсем» ятпа пичетлесе кăларчĕ. Унта пурĕ 2500 яхăн ваттисен сăмахĕпе каларăш, 1700 тупмалли юмах кĕртнĕ. Асăннă сборник 2004 ç. иккĕмĕш кăларăмпа пичетленчĕ.

***Канюков Владимир Яковлевич*** (1926-1983) – чăвашсен паллă литературовечĕ, критикĕ, фольклорисчĕ тата педагогĕ, филологи наукисен кандидачĕ, доценчĕ; Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи Çĕнкас Юнтапара хресчен кил-йышĕнче çуралнă; тăван ялти пуçламăш, Юнтапари тулли мар вăтам шкулсенче, Калининăри педагогика училищинче вĕреннĕ. Училище пĕтернĕ çамрăка 1943 ç. Инçет Хĕвелтухăçне яппун самурайĕсемпе çапăçма илсе каяççĕ. 1946 çулччен Совет Çарĕнче пулать вăл, вăрçă хыççăн Мускаври библиотека тата Шупашкарти педагогика институчĕсенче вĕренет.

Ун хыççăнхи пурнăçĕ Владимир Яковлевичăн педагогикăпа тата тĕпчев ĕçĕпе тачă çыхăннă: Чăваш патшалăх педагогика институчĕн ассистенчĕ, преподавателĕ тата институт директорĕн заочно вĕренекенсене пулăшас тĕлĕшпе ĕçлекен заместителĕ; 1954 ç. В.Я.Канюков, кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕленĕскер, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институтне литературăпа искусство секторне куçать, çав вăхăтрах пединститутра чăваш литературине вĕрентет; 1967 ç. Чăваш патшалăх университечĕ уçăлсан, В.Я.Канюкова историпе филологи факультечĕн деканне лартаççĕ. Юлашки çулĕсенче паллă педагог-ăсчах чăваш литератури кафедрин заведующинче вăй хурать.

Владимир Яковлевич наукăра сумлă ят хăварма пултарчĕ. Унăн тĕрлĕ темăпа çырнă критикăлла статйисем, литературăпа фольклор çыхăнăвĕсене тата халăх сăмахлăхĕн нумай жанрĕсене ягарлăн тишкернĕ уйрăм кĕнекисемпе вĕренӳ пособийĕсем йышлă. Уйрăмах В.Я.Канюков халăх сăмахлăхне тишкерес енĕпе чылай тăрăшрĕ: чăваш фольклорĕн историне, авалхи вăхăтран пуçласа паянхи кунччен сыхланса юлнă «чĕрĕ» сăмахлăх формисене тата жанрĕсене – йăла сăмахĕсене, ха-

лапĕсене, халăх юррисене, легендисемпе мифĕсене – тĕпчерĕ; ача-пăча сăмахлăхне пухса сахал мар тишкерӳсем турĕ; çĕнĕ çырулăх литературинчи реализмпа фольклор çыхăнăвĕсене, халăхăн илемлĕх йăлисем литературăна епле кĕрсе пынине тĕплĕн пăхса тухса тивĕçлĕ хакларĕ.

Унăн халăх сăмахлăхĕ çинчен çырнă ĕçĕсенчен «Ача-пăча сăмахлăхĕ» (1964), «От фольклора к письменности» (1971), «Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем» (И.И.Одюковпа пĕрле, 1973), «Касрăм-касрăм пĕрене» (1976), «Реализм и фольклор» (1978), «Развитие литаратуры и народные художественные традиции» (1979) т. ыт. те асăнма пулать. Владимир Яковлевич – 6 томлă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» сборникăн авторĕ, ача-пăча поэзине пуханĕ тата тишкерекенĕ. Хăйĕн ĕçĕсенче автор, Н.Иванов критик калашле, «чăваш халăх сăмахлăхĕнчи авалтан пуçланса пыракан эстетика пуянлăхне, унăн илемлĕ литературăри вăйăмне, сăмах искусствин тĕрлĕ тапхăрсенчи çирĕп çыхăнăвĕсемпе çĕнĕ туртăмĕсене тарăннăн тишкерсе пăхса тухнă»[35].

«От фольклора к письменности» кĕнекере чăваш халăх сăмахлăхĕн аталану тапхăрсене халăх философийĕн сăнарлăхри вырăнне, чăваш фольклорĕ ытти халăхсен пултарулăхĕпе тачă çыхăнура тăнине, фольклорпа литература хушшинчи çыхăну аталанăвне тата улшăнăвне пăхса тухнă.

В.Я.Канюковăн фольклористикăри пысăк тӳпи вăл – ача-пăча сăмахлăхне тĕпчени. Маларах асăннă кĕнекесене автор ача-пăча поэзийĕн пуянлăхне, унăн пур жанрĕсене те суйласа илсе кĕртнĕ, кашнинех историпе чăнлăх, педагогика тата илемлĕх енчен тĕпчесе, тĕрĕслесе хакланă. Тĕслĕхрен, «Касрăм-касрăм пĕрене» кĕнеке – ĕç çинчен хывнă юрăсемпе ваттисен сăмахĕсен пуххи. Сборникăн тĕп тĕллевĕ – пĕчĕк ачасене хресчен ĕçне хисеплеме, юратма вĕрентесси, пĕчĕкренех ĕçе кӳлĕнме хăнăхтарасси, çут çанталăкпа туслă пулма, ăна

[35] Иванов Н. Чĕрĕ çăлкуç //Тăван Атăл. 1981. 3 №. 79 с.

кирек хăçан та пулăшу пама хăнăхтарасси т. ыт. те. Акă, ачасене вĕренгсе каланă йĕркесем:

Вĕрене çулçă кăларнă чух
Пуртă йăтса ан тухăр.
Кайăк чĕпĕ кăларнă чух
Йытă ертсе ан тухăр.
Ыраш шăркана ларнă чух
Çурла йăтса ан тухăр.

Ача-пăча сăмахлăхĕ – фольклорăн пĕр пысăк пайĕ. Вĕсем халăхра тахçанах çирĕп йĕркене кĕнĕ, хăйсене тивĕçлĕ вырăн шыраса тупнă. Хăшĕсене çитĕннисем ача-пăча валли малтан ятарласа хывнă, теприсене ача-сем çитĕннисенчен вĕреннĕ, виççĕмĕшĕсене ачасем хăй-сем хывнă. Çакăн çинчен каланă май автор ача-пăча сăмахлăхĕн жанрĕсем çинче те тĕплĕн чарăнса тăрать, витĕмлĕ тĕслĕхсем илсе кăтартать. Тĕпчевçĕ ача-пăча поэзине çулсене кура ушкăнлать, халăх вăййисене тиш-керет. Вăл ачасен художество интересĕсен эстетика тата пĕлӳ пĕлтерĕшне халăх пултарулăхĕ урлă уçса парать. Çакă, автор шухăшĕпе, фольклор традицийĕсем питĕ çирĕп пулнине, наци культурин системинче пысăк вы-рăн йышăннине кăтартса параççĕ. Кĕнеке хăйĕн пĕлтерĕшне паянхи кун та çухатман: кунта ученăй ача-пăча поэзийĕн илемлĕхĕпе поэтикине çеç мар, текстсене историллĕ пулăм енчен те, этнографипе йăла-йĕрке çыхăнăвĕнче те тишкернĕ.

***Одюков Иван Ильич*** (1923-1995) – чăвашсен паллă фольклорисчĕ, тĕпчевçи, методисчĕ тата педагогĕ, фило-логи наукисен кандидачĕ, профессорĕ; Чăваш Республи-кин Шупашкар районĕнчи Атăлъялта вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă; Ишлейри вăтам шкулта, Шупаш-карти Чăваш педагогика институтĕнче вĕреннĕ, анчах вĕренсе пĕтереймен. 1942-1946 çç. чăваш каччи Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçине хутшăнать, 4 хутчен аманать. И.И.Одюков 1946-1950 çç. – пединститут студенчĕ, 1951-1953 çç. – Канашри учительсем хатĕрлекен институт преподавателĕ, 1953-1967 çç. – ЧПИ аспиранчĕ, преподавателĕ, до-ценчĕ. 1966 ç. Иван Ильич Ленинградра кандидат дис-сертацине хӳтĕлет, 1967-1990 çç. И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чă-ваш патшалăх университетĕнче доцентра, декан çумĕнче,

чăваш литератури кафедрин пуçлăхĕнче вăй хурать, кĕнеке хыççăн кĕнеке, наука статйисем, студентсем валли тĕрлĕ методика кăтартăвĕсем хатĕрлет, фольклор материалĕсем пухас ĕçе çĕнĕрен чĕртсе ярать. Çав пархатарлă ĕçе шута илсе И.И.Одюкова 1987 ç. профессор званине парса чыслаççĕ. Тепĕр çултан вăл К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премине илме тивĕçет. Ку вăл – паллă тĕпчевçĕ-фольклориста сума суни, вăл халăх еткерне ырми-канми тăрăшса тĕпченине уйрăммăн палăртса хаклани пулчĕ-тĕр.

И.И.Одюков пултарулăхĕ нумай енлĕ. Вăл паллă педагог, литературовед-тĕпчевçĕ çеç мар, пултаруллă фольклорист та. Иван Ильич хăйĕн тĕпчевĕсенче чăваш халăх сăмахлăхĕ содержанийĕпе те, жанрлăхĕпе те питĕ пуяннине, вăл, летопись пек, тăван халăхăмăрăн ĕлĕкхи тата хальхи вăхăтри ăс-хакăлĕпе çыхăннине аван уçса кăтартрĕ, çитес ăрусем валли сахал мар паха еткерлĕх çырса хăварчĕ.

И.И.Одюкова фольклорçă тесе хаклачă чухне унăн пултарулăхĕнчи икĕ туртăма палăртса хăвармалла: пĕрремĕшĕ вăл – И.И.Одюков халăх сăмахлăхне тишкерсе хак параканĕ тата тĕпчекенĕ, иккĕмĕшĕ – И.И.Одюков халăх сăмахлăхĕн пуянлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пуçтараканĕ, пичетлесе кăлараканĕ. Вăл 70-80-мĕш çулсенче сăмахлăха историлле-танлаштару меслетне тĕпе хурса тишкерет, тĕрĕс те пĕлсе усă курать.

И.И.Одюков наукăна 50-60-мĕш çулсенче кĕнĕ ăсчах. Студент çулĕсенчех халăх сăмахлăхĕпе интересленнĕскер, аспирантурăра вĕреннĕ вăхăтра кандидат диссертацине чăвашсен историлле юррисемпе социалла танмарлăх юррисене тишкерме тĕллев лартать, кандидат диссертацине ăнăçлă хӳтĕлет, наукăна çирĕппĕн утса кĕрет.

И.И.Одюков çырса пичетленĕ ĕçсем паян пурĕ 100 яхăн. Тĕпчевсен ытларах пайĕ чăвашсен сăмах вĕççĕн çӳрекен хайлавĕсемпе çыхăннă. Çакна та палăртма кăмăллă: И.И.Одюков хăйĕн тĕпчевĕсенче чăваш фольклористикин нумай ыйтăвне çутатрĕ, татса пачĕ. Сăмахран, икĕ кĕнекерен тăракан «Чăваш халăх лирики»

тĕпчевĕнче халăх сăмахлăхĕн чи авал пуçланса кайнă тĕслĕхĕсене – юррисене, сăвă-юрă сăнарлăхне тишкерчĕ, вĕсене ушкăнласа тухрĕ, жанр енчен кашнинех хак парса уйрăмлăхĕсене кăтартрĕ.

Кирек мĕнле жанра илес пулсан та И.И.Одюковăн тӳпине асăрхатăн: авалхи чăвашсен мифологийĕ е улăп халапĕсем, чăвашсен космогонилле шухăшлавĕ е историлле халапĕсем. Пурне те тĕплĕн, çыпăçуллăн тата халăх пурнăçĕпе çыхăнтарса шĕкĕлченĕ. Сăмахран, «Халăх сăмахлăхĕ тĕне хирĕç» (1961), «Классикăлла чăваш литературинчи халăхлăхпа фольклор çыхăнăвĕсем. 1–мĕш пайĕ. Фольклорта халăх шухăшлавĕ йĕркеленни» (1973, В.Я.Канюковпа пĕрле), «Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ» (1975), «Чăваш халăх лирики» (2 кĕнеке, 1978; 1983), «Авалхи тата Атăлçи пăлхарсем çинчен калакан истори халапĕсем. I-XV ĕм.» (1984) тата ытти ĕçĕсем паянхи кун та хăйсен пĕлтерĕшне çухатман, фольклористсемшĕн паха та курăмлă тĕпчевсем пулса тăраççĕ.

И.И.Одюковăн чăваш фольклорĕнчи уйрăм жанрсене ятарласа тĕпченисĕр пуçне фольклористикăн пĕтĕмĕшле ыйтăвĕсене тишкернĕ наука статйисем те сахал мар. Чи паллăраххисем çаксем: «К истории собирания и публикации чувашского фольклора в 20-30-х гг.», «Н.И.Ашмарин – чăваш халăх сăмахлăхне пухса тĕпчекенĕ», «Сюжетно-образные параллели устных произведений типа «Синичка» у чувашского и калмыцкого народов» т. ыт. те. Асăннă статьясенче автор чăвашсен хушшинче сарăлнă фольклор тĕслĕхĕсене пухас ĕçре кам мĕнле тăрăшнине каласа тухать, вĕсем хатĕрленĕ юрăсен, юмахсен, вак жанрсен пуххисене тишкерсе хак парать, уйрăм тĕпчевçĕсен фольклористикăри вырăнне палăртса хăварать. Паллă фольклорçăсен шутне Н.В.Никольские, Н.И.Ашмарина, Н.Я.Золотова тата ытти ăсчахсене кĕртет, вĕсем пухнă текстсене хăйĕн тĕпчевĕсенче усă курать, вулакана паллаштарать.

И.И.Одюков халăхăн иксĕлми çăлкуçне ятарласа тĕпченисĕр пуçне çав пуянлăха илемлĕ çырулăх ăстисем усă курнине те нумай çырса хăварчĕ. Паллă фолькло-

рист çапла майпа К.В.Ивановăн юмахĕсене, Н.И.Полоруссов-Шелепин сăвăлла легендисемпе халапĕсене, М.Çеçпĕлпе Я.Г.Ухсайăн сăввисемпе поэмисене гараннăн тишкерчĕ, вĕсенче чăваш халăхĕн çырусăр палăк йĕрĕсене тупса палăртрĕ, сăмах ăстисем фольклорти сюжетсемпе сăнарсене калăпланине çирĕплетсе каларĕ. Акă, тĕслĕхрен, Н.И.Полоруссов-Шелепин хайлавĕсене пăхса тухнă май, И.И.Одюков ăста поэт ача чухне ялти ватăсенчен илтнĕ юмах-халапсене тĕве хурса хайланă произведенийĕсем чăваш халăхĕн историйĕпе тӳрремĕнех çыхăннине палăртать. Ун шухăшĕпе, «Эссепе» баллада тăван халăхăн аваллăх йĕркисене, «Константин хулине туни çинчен чăваш ваттисем калаçни» хайлав – чăваш аслашшĕсен пирĕн эрăн IV-V ĕмĕрсенче Çурçĕр Кавказра тата Дунай тă-рăхĕнче пурăннă чух Византи патшалăхĕпе хутшăннине, «Уксак Тимĕр Пӳлере илни çинчен» халап – монгол-тутарсем 1395 ç. Атăлçи Пăлхар патшалăхĕпе хулисене çĕмĕрнине, «Пӳлерти Валĕм хуçа çинчен» сăвăлла легенда – Атăлçи Пăлхар халăхĕн XIV-XV ĕмĕрсенчи пурнăç паллийĕсене сăнлаççĕ, иккен.

И.И.Одюковăн тепĕр пысăк пахалăхĕ вăл – халăх сăмахлăхне пухни, çак ĕçе çĕнĕрен чĕртсе ярса наука валли çырусăр сăмах ӳнерĕн пин-пин тĕслĕхне упраса хăварни. Кунта тӳрех вăл йĕркеленĕ «Халăх сăмахлăхне пухмалли программа» брошюрăна асăнмалла. Чăваш патшалăх университетĕнче ĕçленĕ çулсенче И.И.Одюков I курс студенчĕсене ялсем тăрăх сăмахлăх тĕслĕхĕсене пуçтарма хăй илсе çӳретчĕ. Вăл ертсе пынипе чăваш уйрăмĕнче вĕренекен студентсем хамăр республикăра кăна мар, тулашри чăваш ялĕсенче пулса мĕн чухлĕ паха материал пухмарĕç-ши? Вĕсем пурте тенĕ пекех И.И.Одюков тăрăшнипе Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука архивĕнче упранаççĕ. Тен, çулсем иртсен çак пуянлăха пирĕн несĕлсем хак парĕç.

И.И.Одюков халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсене те пухма тăрăшнă: кунта сĕм авалхи мифсемпе юрăсем те, улăп халапĕсемпе вак жанрсем те, сюжетлă юрăсемпе Совет саманинче анлă сарăлнă фольклор тĕсĕсем те çителĕклех. Вăл пухса хатĕрленĕ паллăрах сăмахлăх

пуххисем çаксем: «Ăслă сăмахсемпе юптарусем» (1960), «Улăп. Чăваш халăх халапĕсем» (1975), «Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ» (1975), «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. 6 томпа тухать. 3 том. Юрăсем (1978); 4 том. Юрăсем (1979); 6 том, 2-мĕш пайĕ. Мифсемпе халапсем (1987, Е.С.Сидорова тата Г.Ф.Юмартпа пĕрле).

Çакă та паха: автор хăй пухса йĕркеленĕ кĕнекери материалсене тĕпчевçĕ куçĕпе хакласа тухнă, жанр енчен ушкăнлама тăрăшнă – апла туни кĕнекен пахалăхне те ÿстерет, наука енчен тĕпчеме май туса парать. Çавăнпа И.И.Одюков хатĕрленĕ сăмахлăх пуххисем паянхи кунчен те тĕпчевçĕсемшĕн çав тери паха материал шутланаççĕ.

Чăваш фольклористикин 80-90-мĕш çулĕсем – пирĕн ăслăлăхшăн тухăçлă та курăмлă вăхăтсем. Тĕпчевçĕсем палăртнă тăрăх, ку тапхăр палли – фольклорти сюжетсемпе сăнарсене, фольклористикăн тĕрлĕ енлĕ ыйтăвĕсене ытти наукăсемпе пĕр тĕвĕрс те çыхăнура тата историллĕ-танлаштаруллă шайра татса пама тăрăшни. Асăннă çулсенче чылай çыравçăпа ÿнерçĕ, тĕпчевçĕпе ăсчах сăмахлăхăн пурнăçри вырăнĕпе пĕлтерĕшĕ çинчен нумай çырчĕç, тăван халăхăмăр хăйĕн историлле аталанăвĕнче фольклорăн тĕрлĕ сăнарлăхĕпе, пуянлăхĕпе тата илемлĕх тĕнчипе пĕлсе усă курнине палăртрĕç.

Халăх сăмахлăхĕнчен сĕткен илекенни литература çеç мар, фольклор темисемпе мотивĕсем балетпа оперăн, кинофильмпа живопись хайлавĕсен сюжечĕсене те йĕркелеме пулăшаççĕ. Çапла вара, фольклор, ÿнер тĕсĕпе аталану меслечĕ пулнăран, хамăр культурăн илемлĕхне пурнăça кĕртмелли мел тата халăхăн шалти пуянлăхне кăтартмалли форма шутланать. Çак паллăлăх – паянхи куншăн чи тĕппи. Асăннă енсене хальхи тапхăрти паллă педагогсем (Г.Н.Волков, Н.Г.Краснов), фольклорçăсем (Е.С.Сидорова, П.Н.Метин), литературоведсем (В.Г.Родионов, Г.Ф.Юмарт, Г.И.Федоров), чĕлхеçĕсем (Н.И.Егоров, В.И.Сергеев, А.П.Хузангай), этнографсем (А.К.Салмин, Н.П.Денисова), ÿнерçĕсем (А.А.Трофимов, И.А.Дмитриев), музыковедсем (М.Г.Кондратьев, А.А.Осипов) вăхăтра асăрхарĕç, хăйсен тĕпчевĕсене ку

мелсене шута илсе никĕслеме тăрăшрĕç. Чăваш фольклорисчĕсем халăх сăмахлăхĕн уйрăм жанрĕсемпе те ятарласа ĕçлерĕç. Сăмахран, Г.Н.Волков этнопедагогика наукине никĕслерĕ, халăхăн ытарлă та сăнарлă шухăшкăмăлĕ, ăс-хакăлĕ ача-пăчана пăхса ÿстерес тата шухăшласа калаçма вĕрентес енĕсене уçса пачĕ, Е.С.Сидорова – чăваш такмакĕсене, Г.Ф.Юмарт – историлле юррисемпе улăп халапĕсене, пейĕчĕсене, П.Н.Метин – ваттисен сăмахĕсемпе кăларăшĕсене, А.К.Салминпа Н.И.Егоров – чăваш халăхĕн авалхи йăли-уявĕсене, тĕнче курăмне, кивĕ тĕн йĕркисене тĕпчерĕç. Наукăпа вĕрентÿ заведенийĕсем тата уйрăм ученăйсем фольклора халалланă статьясен сборникĕсене («Чувашский фольклор: специфика жанров», 1982; «Исследования по чувашскому фольклору», 1984; «Чăваш халăх сăмахлăхĕ. Тĕпчевсемпе текстсем», 1989; «Сăмах: 1993», 1994), литература кăтартмăшĕсене («Библиографический указатель трудов НИИ ЯЛИЭ при СМ ЧАССР», 1980; «Чувашский фольклор: Библиографический указатель», 1986; «Археология и этнография Чувашской АССР: Библиографический указатель», 1986; «Чувашское литературоведение и критика: Библиографический указатель», 1993), текстсен пуххисене («Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ярăмран: V томне («Вак жанрсем», 1984), VI томăн 1-мĕшпе («Ача-пăча сăмахлăхĕ», 1985) 2-мĕш («Мифсемпе халапсем», 1987) кĕнекисене; «Халăх сăмахлăхĕ», 2003) тата ытти чылай ĕçсене хатĕрлесе пичетре кун çути кăтартрĕç, вулакана паллаштарчĕç.

Паянхи кун чăваш фольклорисчĕсем хĕрсе кайсах тăван халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене çĕнĕ кăларăмпа – 50 томпа – пичетлесшĕн. Фольклорăн кашни жанрĕ хăйне уйрăм кĕнекен пулмалла унта. Хайлавсемсĕр пуçне томра ăнлантарса пани, текстсене ăçта, кам тата хăçан çырса илни, жанрăн кĕске аталанăвĕпе çул-йĕрне тишкерни сумлă вырăн йышăнмалла. Палăртни пурнăçлансан, чăваш фольклористики пысăк утăм тăвĕ, нумай татса паман ыйтусене çутатĕ. Пуçламăшĕ пур: кăçал Чăваш кĕнеке издательстви асăннă кăларăмăн 2

томне «Мифсем, легендăсем, халапсем» тата «Халăх эпосĕ» ятпа пичетлесе кăларчĕ те ĕнтĕ.

***Волков Геннадий Никандрович (Кашкăр Хуначи)*** (1927) – чăвашсен паллă çыравçи, фольклор тĕпчевçи, куçаруçи, критикĕ тата вĕрентекенĕ, педагогика наукисен докторĕ, профессорĕ; Чăваш Республикин Елчĕк районĕнчи Аслă Елчĕкре учитель çемйинче çуралнă; ялти вăтам шкулта, Шупашкарти И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче, Хусанти педагогика институчĕ çумĕнчи аспирантурăра вĕреннĕ. Студент çулĕсенчех Теччĕпе Хусан шкулĕсенче физикăпа математикăна вĕрентет, тĕпчев ĕçĕсем çырать. Кандидат диссертацине хӳтĕлесен (1952), çамрăк тĕпчевçĕ Шупашкара куçса килет. Г.Н.Волков 20 çул хушши хăй вĕреннĕ институтра аслă преподаватель, доцент, каярахпа проректор пулса ĕçленĕ. 1967 ç. педагогика наукисен доктор диссертацине хӳтĕлет вăл, профессор ята тивĕçет. 1972 ç. пуçласа паянхи кунччен паллă педагог-тĕпчевçĕ Мускавра пурăнать. Малтан Раççейĕн вĕрентӳ министерстви çумĕнчи наци шкулĕсен наукăпа тĕпчев институчĕн пай пуçлăхĕнче, унтан Патшалăхăн çемьепе воспитани институчĕн лаборатори заведующийĕнче ĕçлет. Вăл – 500 ытла наука ĕçĕсен авторĕ, вĕсенчен вăтăра яхăн – вĕренӳ пособийĕсемпе монографисем.

Г.Н.Волков – педагогикăри çĕнĕ юхăма – этнопедагогикăна – пуçарса яраканĕ. Çур ĕмĕр каяллах чăваш тĕпчевçи тăван халăх чĕлхи, ăс-тăн пуянлăхĕ, йăли-йĕркисемпе сăмахлăхĕ çитĕнекен ăрăва вĕрентес ĕçре çав тери пулăшнине тата пысăк вырăн йышăннине хăюллăн калама пултарчĕ. Çапла майпа паллă ученăй ытти ăсчахсенчен чи малтан наукăна «этнопедагогика» сăмаха кĕртрĕ, вăл термин «халăх педагогики» ăнлавран уйрăлса тăнине уççăн çирĕплетрĕ.

Геннадий Никандрович тĕрлĕ çулсенче çырса пичетленĕ «Чувашская народная педагогика» (1958), «Этнопедагогика чувашского народа» (1966), «Педагогика жизни» (1989), «Этнопедагогика чувашей» (1997), «Судьба патриарха» (1998), «Этнопедагогика» (1999), ытти тĕпчевĕсем паянхи кун та çав тери курăмлă, ак-

туаллă тата вулавлă. Асăннă монографисенче Г.Н.Волков профессор чăвашсем ачасене пăхса çитĕнтерес енĕпе халăхра мĕн авалтан пыракан мелсемпе усă курнине çырса кăтартнă. Çакă ăна хăйне май этнопедагогика системине тума пулăшнă та ĕнтĕ. Сăмахран, «Этнопедагогика» кĕнекере автор тĕрлĕ халăхсен пурнăçĕнчи паллă тапхăрĕсемпе çыхăннă халапĕсемпе легендисене, сăвви-юррисемпе паремисене педагогика науки шайĕнче тĕпчет, Раççейри халăхсен пĕртăванлăхĕне туслăхне анлăн çутатать.

Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, этнопедагогика ăслăхĕ яланах халăх педагогикинчен сĕткен илсе тăнă, юлашкийĕ ун-шăн никĕс шутланнă. Унăн хăйĕн тĕллевĕсем пур. Пĕрремĕшĕ: этнопедагогика кивĕ йăласен хальхи вăхăтри педагогика пĕлтерĕшне, пурнăçа çĕнĕрен кĕрсе пыракан йăласен кирлĕлĕхне тĕпчет. Иккĕмĕшĕ: этнопедагогикăпа халăх педагогикин воспитани мелĕсем пĕрешкел: ашшĕ-амăшне çемьере воспитани шайне ӳстерме, çитĕнсе пыракан ăрăва çынлăх хакне туйма вĕрентесси.

Этнопедагогика проблемисен шутне Г.Н.Волков çаксене кĕртет: çемье вĕрентĕвĕ; ăс шайне ӳстерме пулăшакан тупмалли юмахсем; халăх шухăшлавĕн тӳпине çĕкленнĕ юмахсем; ачасемпе çамрăксене илеме туйма май паракан халăх юррисем; ачасем хăйсем тăвакан теттесем тата вĕсен пултарулăхĕ; йышри педагогика функцийĕсем (ушкăн вĕрентĕвĕ); тĕнчери халăхсен сăпка юррисем; амăшĕн шкулĕ т. ыт. те. Асăннă пысăк ушкăнсенче пуринче те халăх сăмахлăхĕн уйрăм жанрĕсем пысăк вырăнта; вĕсемех этнопедагогикăра паллă компонент пулса тăраççĕ. Фольклора тĕплĕн тишкерни, çырусăр сăмахлăх халăх педагогикинче мĕнле йĕр хăварнине хак пани – паллă сăмахçă-тĕпчевçĕне, вĕрентекенĕмĕре ырă та сумлă ят хушрĕ, тĕнче шайне хăпартрĕ.

Çӳлерех асăннă монографисемсĕр пуçне, Г.Н.Волковăн уйрăм жанрсене ятарласа тĕпченĕ ĕççем те сахал мар. Вĕсен шутне «Педагогические воззрения чувашского народа в поговорках и пословицах», «Ват-

тисем вĕрентсе калани», «Заметки о чувашской народной педагогике» наука статйисене кĕртме пулать. Халăх сăмахлăхĕн сахал мар тексчĕсене те пичетлесе каларчĕ вăл, вулакана паллаштарчĕ. Акă, «Асанне калавĕсем» (1957), «Шăллăмсемпе йăмăксене» (1967), «Юманпа хĕвел» (1975) кĕнекисенче вуншар халăх юмахĕсемпе халапĕсем, çĕршер ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсем, юррисăввисемпе тупмалли юмахĕсем кун çути курчĕç. Халăх хайлавĕсене ачасем чун-чĕререн вуласа савăнаççĕ, йăпанаççĕ, киленеççĕ. Апла пулсан, Г.Н.Волков ĕçĕсем яланах халăха, ачасене кирлĕ, усăллă, курăмлă.

***Сидорова Ефросиния Сергеевна*** (1930) – паллă фольклорист, тĕпчевçĕ, педагог, филологи наукисен кандидачĕ, доцент; Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тури Упакассире хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти 7 класлă, Шĕмшерти вăтам шкулсенче, Канашри учительсен институтĕнче вĕреннĕ. Е.С.Сидорова 7 çул хушши Патăрьел районĕнчи Еншикре вырăс чĕлхипе литературине вĕрентет, ĕçленĕ хушăрах заочно формăпа Чăваш патшалăх пединститучĕн вырăс чĕлхипе литератури уйрăмне пĕтерет, 10 çула яхăн тĕрлĕ вырăнта педагогра вăй хурать, 1967 ç. пуçласа педагог ĕçне наукăпа çыхăнтарать, чăваш халăх сăмахлăхне тĕпчемешкĕн тĕллев лартать.

Ефросиния Сергеевна çирĕм çула яхăн наукăпа тĕпчев институтĕнче вăй хунă: малтан архив, каярахпа литературăпа фольклор пайĕн заведующийĕ, институтра ĕçленĕ вăхăтра (1973) кандидат диссертацине хӳтĕлет. 1978 ç. вăл Чăваш патшалăх университетне куçать, чăваш фольклорĕпе çыхăннă дисциплинăсене студентсем умĕнче вулать, халăх сăмахлăхне пухма çулсерен экспедицисем йĕркелет, хăй те вĕсене хастар хутшăнать.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ 2000 ç., Е.С.Сидорова çуралнăранпа 70 çул çитнине паллă туса, «Фольклор тĕпчевçи Ефросиния Сидорова» ятлă статьясен пуххине пичетлерĕ. Сборникра Е.С.Сидорован пичетленнĕ ĕçĕсен списокĕ, вăл хутшăннă, ертсе пынă фольклор, диалектологипе фольклор, фольклорпа этнографи экспедицийĕсен тата ученăй ха-

лăхран çырса илнĕ материалсенчен илсе пичетленĕ текстсен кăтартмăшĕсем пур. Çак кĕнеке филологсемпе фольклористсемшĕн те, студентсемпе вĕрентекенсемшĕн те чăннипех паха.

Е.С.Сидорова фольклористикăна институтри наука архивĕн заведующийĕнче ĕçленĕ çулсенче кĕнĕ ăсчах. Архиври алçырусене системăласа ушкăнланă май, çамрăк педагог чăваш халăх сăмахлăхĕн иксĕлми пуянлăхне хăй куçĕпе курса, чĕрипе туйса илнĕ, унăн чунчĕринче çав еткерлĕхе çине тăрса пухас, тĕпчес тата çитес ăрусем валли упраса хăварас ĕмĕт çуралать. Маларах Ефросиния Сергеевна пĕчĕк статьясем, унтан пысăкрах наука ĕçĕсем калăплать. Чăваш фольклористикин аталану çул-йĕрне, сăмахран, «Научный архив Научно-исследовательского института при Совете Министров Чувашской АССР» (1969), «Современное устное творчество чувашей Поволжья» (1970), «Записи и публикации чувашских сказок в XIX - начале XX вв.» (1973), «Современное чувашское устное народное творчество» (1975) тата ытти статйисенче тĕплĕн çырса кăтартрĕ, пĕтĕмлетӳсем турĕ.

Е.С.Сидорова чăваш юмахĕсемпе нумай ĕçлерĕ: наука статйисем («Чувашские бытовые сказки», 1969; «Из наблюдений над современными чувашскими бытовыми сказками», 1972; «Поэтика и стиль чувашских бытовых сказок» тата «Сюжеты чувашских бытовых сказок», 1974), кандидат диссертацийĕ («Чувашские бытовые сказки», 1973), текстсен пуххисем («Чувашские легенды и сказки», 1979; «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» ярăмран «Юмахсем», 1-2 томсем, 1973, 1976) т. ыт. те çырчĕ, пухса хатĕрлерĕ.

Фольклорăн ытти жанрĕсене тĕпчес ĕçре те нумай тăрăшрĕ палла ăсчах. Паянхи кун вăл халăх юррисем, паремисем, мифсемпе халапĕсем, такмакĕсем çинчен çырнисем интереслĕ. Чăваш çыравçисем (Н.Шелепи, К.Иванов, П.Осипов т. ыт. те) хăйсен хайлавĕсенче фольклорти сюжетсемпе, сăнарсемпе усă курнине тупса палăртрĕ, сăмахлăха пухакансемпе тĕпчекенсен, халапçăсемпе юмахçăсен кун-çулĕпе пултарулăхĕ çинчен

çыра-çыра хăварчĕ. Уйрăмах фольклорист Н.В.Никольский, Н.И.Ашмарин, С.М.Михайлов, Кашкăр Микули, В.С.Разумов, Н.С.Ефремов ĕç-хĕлне хакларĕ, вĕсене çĕнĕ материалсемпе пуянлатрĕ.

Халăх сăмахлăхĕн тексчĕсене пухассине Е.С.Сидорова кирлĕ ĕç тесе шутланă. Çакна вăл шкулта вĕрентнĕ вăхăтра та, тĕпчев институчĕпе университетра вăй хунă чухне те чунтан юратса туса пычĕ, хăйĕн пуçарăвне паха сборниксемпе, хрестоматисемпе çирĕплетрĕ. Акă, 1969 ç. унăн «Ленин халăх чĕринче», 1979 ç. – «Чувашские легенды и сказки» кĕнекисем пичетленчĕç, фольклористикăра сумлă вырăн йышăнчĕç. Сăмахлăха пухас ĕçе Е.С.Сидорова пĕччен мар, пысăк йышпа – студентсемпе кал-кал туса пыма тăрăшрĕ, ятарласа республикăри районсемпе хуласене экспедицисем йĕркелерĕ. Çакăн пек экспедицисенче 25 хутчен пулчĕ, пиншер материал пухса тĕрлĕ архивсене пуянлатрĕ. Паянхи кун вĕсем хăйсен тĕпчевçисене кĕтсе выртаççĕ, тесен те йăнăш пулмĕ.

Наукăри тата педагогикăри пархатарлă ĕçсемшĕн Е.С.Сидоровăна 1988 ç. К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх премийĕпе чысланă, 1996 ç. Чăваш Республикин вĕрентӳн тава тивĕçлĕ ĕçченĕн хисеплĕ ятне панă.

***Трофимов Геннадий Федорович (Юмарт)*** (1938) – паллă сăвăçă, фольклорист, куçаруçă тата тĕпчевçĕ; Чăваш Республикин Красноармейски районĕнчи Кайри Карăкра хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти вăтам шкулта, И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институтĕнче вĕреннĕ. 1961-1965 çç. Г.Юмарт – Самар тăрăхĕнчи чăваш ялĕсенче чăваш тата вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекенĕ, 1965-1970 çç. – Чăваш кĕнеке издательствин корректорĕ тата редакторĕ, 1970-2000 çç. – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн литература пĕлĕвĕпе фольклористика пайĕн сотрудникĕ. Хальхи вăхăтра – И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш литературин кафедрин доценчĕ.

Г.Ф.Трофимов ячĕ Чăваш Енре те, ун тулашĕнче те паллă. Вăл сăвăçпа куçаруçă кăна мар, халăх сă-

махлăхне пĕрчĕн-пĕрчĕн пухаканĕ те, вĕсене тĕплĕн тишкерсе хак параканĕ те. Геннадий Федоровичăн наукăри пултарулăхĕ анлă та курăмлă. Вăл – чăваш фольклористикине 70-мĕш çулсенчен пуçласа паянхи кунччен аталанма пулăшаканĕсенчен пĕри: халăх сăмахлăхĕн тĕслĕхĕсене пухса ятарлă сборниксем пичетлесе кăларчĕ («Чăваш юмахĕсем», 1982; «Улăп халапĕсем», 1996; «Халăх сăмахлăхĕ», 2003), ача-пăча юмахĕсемпе юррисăввине чăвашла тата вырăсла хатĕрлерĕ («Шла синица в гости», 1978; «Керменкке», 1979; «Спокойной ночи», 1979; «Разговор с зайцем», 1982; «Мерекке», 1991), нумай çул хушши халăх эпосĕн материалĕсене пуçтарчĕ, вĕсене тишкерсе темиçе тĕпчев («Улăп халапĕсем», «Улăп халапĕсем – халăх эпосĕ», «Улăпсен хавалĕ», «Чувашская эпическая поэзия» т. ыт. те) калăпларĕ. Чăвашсен истори юррисене, вĕсен аталанăвне «Мерчен кайăк йĕрĕпе» (1984) тата «Некоторые особенности развития жанра чувашских исторических песен» (1984) тишкерĕвĕсенче сăнарĕ, халăхăмăрăн аваллăхĕ юрă-сăвăра сăнарланнине тĕпчерĕ.

Г.Юмарт 30 çула яхăн фольклор пуххисене редакцилерĕ, архивсенче ларса пичетленмен материалсене шыраса тупса пичете хатĕрлерĕ. Вăл – 7 кĕнекерен тăракан ултă томлă «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» сборникăн тĕп редакторĕ (1973-1987), Г.Тимофеевăн «Тăхăр ял» (1972), И.Тăхтин «Поэзи, проза, публицистика» (1979) кĕнекесен составителĕ.

Тĕпчевçĕ-фольклорçăн тепĕр курăмлă мулĕ вăл – тăван халăхăмăрăн мĕн авалхи кун-çулĕпе çыхăннă тĕрлĕ халăхсен çыруллă палăкĕсене чăвашла куçарса вулакана паллаштарасси. Паян эпир Геннадий Федоровича пула X-XII ĕмĕрсенчи араб çыравçисен ибн Фадлан, ибн Сина тата ал–Гарнати çырса хăварнă çул çӳрев очеркĕсене, 1882 ç. «Известия и ученые записки Императорского Казанского университета» кĕнекере вырăсла пичетленнĕ аваллăх халапĕсене хамăр чĕлхепе киленсе вулама, чăваш халăхĕн сткерĕпе пĕлсе усă курнă çыравçăсен – Чăваш Хвети, Çитăр Ехримĕ, Николай Шелепи, Михаил Çеçпĕл – хайлавĕсенчи фольклорлăхпа,

революцичченхи чăваш лирикин çул-йĕрĕпе, Атăлпа Урал тăрăхĕнчи халăхсен паянхи поэзийĕнчи фольклор традицийĕсен уйрăм паллисемпе паллашма пултаратпăр.

Г.Юмарт хăйĕн поэзийĕнче халăх сăмахлăхĕпе пĕлсе усă курни те ун пултарулăхне, чун-кăмăлне пĕлме май парать. Аваллăха сăнланă чух хайлавсене аваллăх сĕмĕ кўрет вăл, философилле поэзи тупсăмĕсене ĕмĕртен килекен кĕвĕсемпе пĕлтерĕшлĕрех туса кăтартма тăрăшать. Фольклор эстетикине ăнланни, халăх сăмахлăхĕнче упраннă ăслăхсене ăша илни паянхи кун çинчен тарăн шухăшлă, илемлĕх енчен çўлти пусăмра тăракан сăвăюрă кĕвĕлеме май парать.

Малтанласа сăвăç ытларах юмах сюжечĕсемпе усă курать, каярахпа хăйĕн сăввисене халăх юрринчи илемлĕх мелĕсемпе сăнарĕсене кĕртме пуçлать. Çапла туни, паллах, автор хăйĕн шухăшне авалтан килекен ăспа çирĕплетнине, сăввăн идейине сумлăрах тунине кăтартать.

Г.Юмарт халăх философийĕпе унăн чун-чĕре илемлĕхне паянхи пурнăç ситуацийĕсенче курма кăмăллани куç кĕретех. Çак темăсем унăн «Ку-ук!», «Вăрман амăшĕ», «Вутăшпи», «Хĕртсурт» сăввисенче яр уççăн курăнаççĕ.

Фольклор пуххисене кăларасси, куçару ĕçĕн ăсталăхĕ, халăх сăмахлăхĕпе литература çыхăнăвĕсем, чăваш поэзийĕ – çак темăсем Г.Юмартăн тĕпчев ĕçĕнче тĕп вырăн йышăнаççĕ. Паян паллă ученăй-поэт чăвашсен мăн аслашшĕсен VII-XVII ĕмĕрсенчи сăмахлăхне – фольклорпа çырулăх палăкĕсене – пухать, тĕпчесе статьясем çырать.

Чунне парса, ырми-канми, пĕр шухăш-кăмăлпа вăйхал хурса, вĕлле хурчĕ пекех тăрăшать вăл халăх еткерне сыхласа хăварассишĕн. Çакă унăн пурнăçĕнче тĕп тĕллев пулса тăчĕ. Акă мĕн калать вăл ун çинчен: «...халĕ кĕнекс кăларма питĕ йывăр. Ман тĕп ĕç сăвă çырса кĕнекесем хатĕрлесси мар ĕнтĕ. Кунпа эпĕ пушă вăхăтра çеç ĕçленетĕп. Тĕп ĕç вара – тĕпчев ĕçĕ, чăваш литературипе фольклорне тĕпчесси. Хам çырнисĕр пуçне чăвашсен тĕрлĕ çыравçисен кĕнекисем, фольклор хре-

стоматийĕсем, юрату лирикин пуххисем пур. Çавсене те кăларас килет».

Тĕпчевçĕ çине тăрсах чăвашсен мĕн авалтан пуçласа XX ĕмĕрчченхи çыравçисен биографийĕсене пухса справочник хатĕрлесшĕн. Хăй палăртнă тăрăх, асăннă кĕнекере XVIII-XX ĕмĕрсенчи çыравçăсем кăна мар, VII-X ĕмĕрсенчи хамăр мăн асаттесем каласа-çырса хăварнă тĕрлĕрен халапсем, çырусем тата ыттисем пулаççĕ. Ку материалсем чăвашла та, вырăсла та, тутарла та, эрменпе арабла та çырăннă-мĕн. Çавсене пухса «Чăваш халăх сăмахлăхĕ» курспа ятарлă сборник-кĕнеке «VII-XX ĕмĕрсенчи çыравçăсем» ятпа хатĕрлесшĕн, фольклорăн нумай томлăхне çĕнĕрен кăларасшăн вăл. Паллă тĕпчевçĕ «чăваш халăхĕн юрри, сăмаххи, тĕрри çав тери нумай, – тет. – Вĕсене 50 томпа пухса кăларсан та, ытти несĕлсем валли татах та юлĕ».

Чăваш халăхĕ паллă тĕпчевçĕмĕрс, куçаруçăмăра, фольклорçăмăра тата çыравçăмăра унăн паха ĕçĕсемшĕн пысăка хурса хакларĕ: вăл – Чăваш Республикин культурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ (1988), К.В.Иванов ячĕллĕ Чăваш патшалăх (1988), литературăмăрти Митта Ваçлейĕ ячĕллĕ (1987), Н.Янкас ячĕллĕ (1999), П.Хусанкай ячĕллĕ (2002) премисен лауреачĕ.

***Родионов Виталий Григорьевич (Эртиван)*** (1947) – паллă литературовед, фольклорист, этнолог, филологи наукисен докторĕ, профессор, Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ ăслăлăх ĕçченĕ; Чăваш Республикин Вăрнар районĕнчи Хураçырмара хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти пуçламăш шкулта, Свердловскри политехника институчĕн каçхи уйрăмĕнче, Çĕрпӳри культура училищинче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче, Мускаври Раççей ăслăх академийĕн Тĕнче литературин институчĕ çумĕнчи аспирантурăра вĕреннĕ. Виталий Григорьевич «Чăваш сăввин аталанăвĕн çулĕйĕрĕ» ятлă кандидат диссертацине 1980 ç., доктор ĕçне («Чăваш сăввин генезисĕпе эволюцийĕ») 1993 ç. ăнăçлă хӳтĕленĕ.

Паллă профессор пултарулăхĕ – нумай енлĕ. Ăна кăсăклантаракан ыйтусем: чăваш литературин XVIII-XIX

ĕмĕрсенчи историйĕ, чăваш халăхĕн сăмахлă культури, сăмах вĕççĕн çӳрекен пултарулăхĕ. Вĕсемсĕр пуçне халăх культурин типĕ еплерех тымарсемпе çыхăнни те, вăл мĕнле аталанса пыни те, халăх сăввин хăй евĕрлĕхĕ те интереслентерет ăна. Наука ĕçĕпе пĕрлех паллă тĕпчевçĕ педагогикăра вăй хурать – аслă вĕрентекен тата пултаруллă ертӳçĕ те. В.Г.Родионов Чăваш патшалăх университетĕнчи чăваш литератури кафедрине 1995 çултанпа, чăваш филологийĕпе культура факультечĕн деканĕнче 1998 çултанпа, диссертаци канашне 1995 çултанпа ертсе пырать. Унтах халĕ тĕрлĕ регионри специалистсем тухтăр тата кандидат ĕçĕсене хӳтĕлеççĕ.

В.Г.Родионов чăваш фольклорне халăх йăли-йĕркипе тачă çыхăнура тишкерет, вĕсене пурне те сăмахлă культура шайĕнче тĕпчет. Вăл çырнă тăрăх, чăвашăн сăмахлă культури мĕн авалтан килекен ăс-хакăла вырăна хунипе, ăна ăша илнипе, нимрен малтан сăмахăн сăнарлăхĕпе, витĕмлĕхĕпе тата яваплă пĕлтерĕшĕпе шăнăрланнă, тĕрекленнĕ.

Хăйĕн сумлă ĕçĕсемпе тĕпчевçĕ чăваш ăслăлăхне нумай çĕнĕлĕх кĕртрĕ. Вĕсенчен пĕри – фольклористикăра та, литературоведенире те, кирек мĕнле наукăна илес пулсан та, тĕпчемелли материала е текстсене пĕр тĕвĕлĕхре, пĕр системăра пăхса тухмаллине çирĕплетсе калани. Ун шухăшĕпе, тĕпчевçĕн çав меслетрен урăх еннелле пăрăнса каймалла мар, хăй суйланă методологине çирĕппĕн тытса пымалла-мĕн. Асăннă уйрăмлăх е паллăлăх В.Г.Родионова чăваш литературинче хăйне уйрăм юхăм палăртма пулăшрĕ. Ку вăл – историлле сăвă хывăм ăслăлăхĕ (стиховедении).

В.Г.Родионовăн тĕпчевĕсем чăваш ученăйĕсене хамăрăн тăван сăмахлăхăмăрăн историне VII-VIII ĕмĕрсенченех пуçласа тĕпчемелли çулсем уçса пачĕç. Вăлах сăмахăн тата чĕлхемĕрĕн сăнарлă пĕлтерĕшне, тĕрлĕ халап-юмах, сăвă-калав, ытти хайлавсен илемлĕхĕ мĕн ĕмĕртен тĕпре пулнине ĕнентерчĕ.

В.Г.Родионов çыруллă поэзи тăван халăхăмăрăн сăмахлăхĕнчен, унăн жанр тытăмĕнчен чăмăртанса тата тапса тухнине, унпа пĕр çыхăнура пулнине çырса кă-

тартрĕ. Чăваш фольклорĕн историне анлă тапхăрта палăртса, ученăй сăмахлăх жанрĕсене уйрăммăн тĕпчерĕ, шухăша яракан анлă статьясем («К образу лебедя в чувашском фольклоре», «Вопросы жанровой классификации чувашского фольклора», 1982; «Фольклор у чувашей», 1988; «Чĕлхе, кĕлĕ тата пил сăмахĕсем», 1989), чăваш халăхĕн сăвă-юррин кун-çулĕпе уйрăмлăхĕсене тишкернĕ монографисемпе вĕренӳ пособийĕсем («Чувашская народная поэзия», 1980; «Чувашское и тюркское стихосложение: Учебное пособие», 1986; «Чувашский стих: Проблемы становления и развития», 1992), авалхи тĕрĕк тата чăваш сăмахлăхĕн пуххисене («Революциччченхи чăваш литератури: Текстсем. 1 том (XX ĕмĕрччен)», 1984; «И.Иванов: Пултарулăх портречĕ, çырнисем», 2001; «Чăваш литератури: Хрестомати: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли», 2002; «Чăваш литератури: Вĕренӳ кĕнеки: Вăтам шкулăн 10-мĕш класĕ валли», 2003 т. ыт. те) пичетлерĕ. Асăннă ĕçсенче автор халăх поэзийĕн чи авалхи тĕсĕсене – кĕллисене, вĕрӳ-суру чĕлхисене, пилĕсене, ылханĕсемпе укĕчĕсене, мăн кĕрӳ такмакĕсене, тупмалли юмахĕсене – пăхса тухрĕ. Çакна культурăмăр аталанăвĕпе çыхăнтарчĕ, хамăрăн пуянлăха кӳршĕ халăхсеннипе танлаштарчĕ, пĕрпĕрне витĕм кӳнине палăртрĕ.

Тепĕр пысăк ĕç пуçарчĕ В.Г.Родионов профессор: паллă чăваш тĕпчевçисене тата чăваш халăх сăмахлăхĕпе йăли-йĕрки, ăс-хакăл культурипе пурнăçĕ çинчен çырнă ученăйсене халалланă «Сăмахлăх палăкĕсем» ярăма пичетре кăларассине йĕркелерĕ. Сăмахран, 2003 ç. Чăваш патшалăх университечĕ çак серирен Г.И.Комиссаров («О чувашах: Исследования. Воспоминания. Дневники, письма») тата Н.И.Ашмарин («Чувашская народная словесность: Исследования. Автобиография, воспоминания. Письма») çырнă, вĕсен пичетленнĕ тата пичетленмен ал çырăвĕсене кун çути кăтартрĕ. Малашне ку серире В.П.Вишневский, В.И.Лебедев, М.Я.Сироткин, В.Я.Канюков, И.И.Одюков тата ытти чăваш ăсчахĕсен еткерĕсем пичетленмелле.

Паллă литературовед-фольклорист халăх сăмахлăхĕн пулăмĕсене яланах нацилĕх, чăвашлăх текен ăнлав витĕр пăхма тăрăшать, çакă ăна хăй суйласа илнĕ темăран сапаланса кайма памасть. Вăл ăн (сознание) кашни халăхăн хăй евĕрлĕ пулни çинчен те çырчĕ, çыруллă сăмахлăха ăн аталанăвĕн контекстĕнче курма тăрăшать.

***Кондратьев Михаил Григорьевич*** (1948) – паллă музыковед, тĕпчевçĕ, фольклорист, музыка искусствин докторĕ, профессор; Владивосток хулинче служащи килйышĕнче çуралнă; Шупашкарти музыка училищине, Хусан тата Ленинградри Н.А.Римский-Корсаков ячĕллĕ патшалăх консерваторине, Раççей Федерацийĕн культура министерствин ӳнер пĕлĕвĕсен патшалăх институтне пĕтернĕ. Кандидат диссертацине 1984 ç., доктор ĕçне 1995 ç. хӳтĕленĕ.

Вăтăр çул ытла М.Г.Кондратьев пĕр вырăнта – Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнче чи малтан ӳнер ăслăлăхĕсен пайĕн аслă наука сотрудникĕ, юлашки вăхăтра – пай пуçлăхĕ пулса ĕçлет.

М.Г.Кондратьевăн фольклористикăри ĕçĕсем чăваш халăхĕн юрă-кĕввине, сăвă тытăмне, музыкăпа фольклор аталанăвне, чăваш музыкине ытти халăх кĕвви-çеммипе танлаштарса тишкернипе çыхăннă. Паянхи кун унăн асăннă проблемăсемпе çырнă 120 ытла наука ĕçĕ пичетленнĕ, вăл шутра – 4 монографи тата нумай сборниксем.

Михаил Григорьевич çирĕм çул ытла халăх юррикĕвви профессилле музыкăна аталанма пулăшнине, вĕсем хушшинчи çыхăнăва сăнарĕ, чăваш халăхĕн юррисем хăйне майлă кĕвĕллĕ тата квантитативлă систепăра пулнине асăрхарĕ. Тĕпчевçĕ асăннă шухăшĕсене «О ритме чувашской народной песни» монографире (1990), «О ритмической системе чувашской народной песни» (1982), «Метроритмическое строение чувашских народных песен, записанных от Гаврила Федорова» (1975) наука статйисенче çирĕплетсе каларĕ, пĕтĕмлетӳсем турĕ.

Чăвашсен музыка фольклористики епле аталаннине паллă музыковед-тĕпчевçĕ «О чувашской музыкальной

фольклористике» (1979), «Исследование венгерскими учеными чувашской народной песни» (1981) тата ытти ĕçĕсенче тишкерчĕ, хăй те çине-çинех юрă-кĕвĕсен пуххисене пичетлеме вăй-хал çитерчĕ. Паллăраххисен шутне «Песни низовых чувашей» (2 томпа: 1981, 1982), «Песни средненизовых чувашей» (1993) кĕртме пулать.

М.Г.Кондратьев халăх юррисен нумай жанрлăхĕ пирки те пысăк тĕпчевсем калăпларĕ. Тĕслĕхрен, чăвашсен çавра юррисене пичетре тухнă «Чувашская *çавра юрă* и ее татарские параллели» (1993), «Çĕр çавра юрă: Чăваш халăхĕн афоризмла поэзийĕнчен» (1998) монографисенче поэзин уйрăм жанрĕ пек пăхса тухса хак пачĕ. Автор шухăшĕпе, çавра юрăсем тесе халăхăн тăват йĕркеллĕ юррисене калаççĕ. Вĕсен шутĕнче – вăйă-уяв такмакĕсем, ваттисем ĕçкĕ-çикĕре юрланă юрăсем, халăх лирикин ытти тĕсĕсем. Тĕп шухăшĕ – çемьери атте-анне, ача-пăча тата тăван-пĕтен пĕрлĕхĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, чысĕпе шăпи, пурнăçри савăнăçĕпе хурлăхĕ, тăван халăхăн ĕнерхипе паянхи тавра курăмĕ. Михаил Григорьевич çавра юрăсене афоризмла поэзи шутне кĕртет, чăваш хушшинче тахçан авалах йĕркеленнине, вĕсенче сăнарлă параллелизм, христианлăха йышăнинченхи шухăш-кăмăл, ĕлĕкхи ăру хутшăнăвĕсен йĕрĕсене палăртать, çавра юрăсем хывассине чăвашсен Азире пурăннă тапхăрĕпе çыхăнтарать.

Пысăк та ăста тĕпчевçĕ пулнă май, М.Г.Кондратьев халăх хушшинче юрă-кĕвве сарма, пропагандăлама пултаракан энтузиастсене сăмахпа та, ĕçпе те пулăшса пырать. Вĕсен шутне тĕрлĕ профессилле тата фольклор ушкăнĕсем кĕреççĕ. Паллă музыковед асăннă коллективсен ĕçĕ-хĕлĕсене специалист куçĕпе тишкерет, кирлĕ чух е сĕнӳсемпе пулăшать, е тӳрлетсе юлташла асăрхаттарать. Сăмахран, Чăваш патшалăхĕн юрăпа ташă ансамблĕ çинчен хайланă монографие, «Уяв» халăх фольклор ушкăнĕ пирки çырнă статьясене коллективра хапăл туса йышăнчĕç, автора уншăн тав сăмахĕ каларĕç.

М.Г.Кондратьев хăйĕн статйисенче чăвашсен юррикĕвви ытти халăхсенпе пĕрешкеллине, юрăсенчи сăнар-

лăхпа сюжетсем чăваш авалăхĕпе, йăли-йĕркипе, сăмахлăхĕпе çыхăннине яр-уççăн тишкерсе уçса кăтартрĕ.

***Салмин Антон Кириллович*** (1949) – паллă этнолог, фольклорист, авалхи чăваш тĕнне тĕпчекенĕ, истори наукисен докторĕ, профессор; Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Кивĕ Ахпÿртре хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти пуçламăш, Туçари вăтам шкулсенче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче, СССР Наука академи çумĕнчи этнографи институчĕн Ленинградри филиалĕнче аспирантурăра тата Раççей наукисен академийĕн этнологипе антропологи институчĕ çумĕнчи докторантурăра вĕреннĕ. 1986 ç. кандидат («Чăвашсен паттăрсем çинчен хывнă халапĕсен этнографи çыхăнăвĕсен типологийĕ»), 1992 ç. доктор («Чăваш халăхĕн тĕн йăли-йĕркин системи») диссертацийĕсене хÿтĕленĕ. Вăл Чăваш патшалăх университетĕнче ассистентра, Патшалăх кĕнеке палатинче библиографра, республикăра тухса тăракан хаçатсенче куçаруçăра тăрăшнă, 1986 ç. пуçласа 2004 çулччен Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институтĕнчи тĕн лабораторийĕн пуçлăхĕнче пулнă. Çав вăхăтрах университетра студентсене «Чăваш халăхĕн ăс-тăнпа пурлăх культури» курса вĕрентрĕ, тăван халăхăмăрăн йăли-йĕркипе çыхăннă сăмахлăха, жанрсене пухма, тишкерÿсем тума хăнăхтарчĕ. Халĕ тĕпчевçĕ Петербургра пурăнать.

А.К.Салмин чăвашсен йăли-йĕркийĕ, авалхи тĕнĕ тата фольклорĕ çинчен 60 яхăн наука ĕçĕ çырнă, вĕсенчен 10 ытла монографи, кĕнекепе брошюра. Вĕсенчен хăшĕ-пĕри Америкăра, Германире, Турцире, ытти патшалăхсенче кун çути курнă. Илсе пăхар-ха унăн хăш-пĕр тĕпчевĕсене. Акă, 1975 ç. пичетленнĕ «Чăваш эпосне йĕркелеме май пур-и?» статьяра хускатнă ыйту чăваш фольклористикишĕн чăнах та çав тери çивĕч. Автор чăваш халăх эпосĕн пуянлăхне унăн халапĕсенче кăна мар, паттăрлăх юмахĕсенче те шырама кирлине асăрхаттарать; эпосла хайлавсен пĕтĕмĕшле тытăмне тĕслĕхсемпе çирĕплетет, паттăрлăх юмахĕ халăх эпосĕн «кĕçĕн форми е ун аталанăвĕн умĕнхи тапхăрĕ» гесе палăргать. Ун шухăшĕпе, Н.В.Никольский,

И.С.Тукташ, М.Я.Сироткин тата ытти чӑваш тӗпчевҫисем хӑй вӑхӑтӗнчех халӑхӑн «тап-таса эпосне» шырама кирлӗ маррине, эпос йӗрӗсене ытти жанрсенче йӗрлемеллине асӑрхаттарнӑ иккен. А.К.Салминӑн ҫак темӑпах ҫырнӑ тепӗр ӗҫӗ – «Героические традиции чувашского и калмыцкого сказочного эпоса» статйи – чӑваш эпосне калмӑксен «Джангарӗпе» танлаштарни. Тӗпчевҫӗ шухӑшӗпе, кунашкал танлаштару фольклор тӗпчевҫисене чӑваш халӑх пултарулӑхне ытти халӑхсен ӑсталӑхӗпе тӗплӗнрех танлаштарса ӗҫлеме хистет, вӑл тӑван эпос пуянлӑхне ӑнкарма ӑнӑҫлӑ мел пулса тӑрать.

Паллӑ этнолог-фольклористӑн чӑваш ыр-хаярӗсене тишкернӗ кӗнекисенче пирӗн мӑн асаттесен тӗн йӑли-йӗркине тӗплӗн пӑхса тухнӑ. Вӗсене автор хӑй пухнӑ материалсене тӗпе хурса тата танлаштарулӑ-историлле меслетпе, системӑлла хакласа тата аргументсене майлаштарса ҫырса кӑтартнӑ. Тӗслӗхрен, «Чӑваш халӑхӗн йӑли-йӗрки» монографире ялпа, кил-йышпа тата уйрӑм ҫынпа ҫыхӑннӑ йӑла-йӗркесене епле туса ирттерни ҫинчен сӑмах пырать. Автор халӑх сӑмахлӑхӗн уйрӑм тексчӗсене пӗлсе те анлӑн усӑ курать, тӗрӗс пӗтӗмлетӳсем тӑвать. Ку кӗнекере А.К.Салмин халӑх уявӗсене системӑлас ыйтӑва та, йӑлапа юмах жанр тӗлӗшӗнчен мӗнле ҫыхӑнура тӑнине те, ялпа кил йӑлисене те, чӑвашсен туррисене те, чирленӗ чухне усӑ курмалли йӑласене те анлӑн каласа панӑ. Кӗнекен паха енӗ – чӑваш халӑх сӑмахлӑхӗн жанрӗсем йӑласемпе мӗнле шайлашура тӑнине, вӗсем халӑхӑн чӑн пурнӑҫӗпе мӗнле ҫыхӑнура пулнине тишкерни. Тӗслӗх вырӑнне автор паттӑрлӑх юмахӗсене илет. Ку юмахсене системӑласа тӗпчесе тухнӑ май, вӗсем тӑван халӑхӑмӑрӑн эпос тӗпренчӗкӗ пулнине ҫирӗплетсе калать.

Тӗпчевҫӗ чӑвашсен ыр-хаярӗсене пӗтӗмӗшле уҫса хаклани, паянхи вулакана вӗсемпе ҫыхӑннӑ йӑлалӑхпа уявлӑха мӗн ӗмӗртенпех сыхласа упранин сӑлтавӗсемпе тӗплӗн паллаштарни асӑннӑ монографисен тата авторӑн ӑсталӑхне кӑтартать. Кӗнеке ячӗсенченех ученӑйӑн тӗпчес мелӗпе шухӑш-ӗмӗчӗ пӗр тытӑмра пулнине асӑр-

хатăн: «Жертвенные дары у чувашей» (1996), «Предводители обрядов у чувашей» (1997), «Семантика дома у чувашей» (1998), «Праздники и обряды чувашской деревни» (2001), «Колдуны и знахари» (2002), «Три чувашских божества» (2003), «Система верований чувашей» (2004) т. ыт. те.

Халăх сăмахлăхĕн жанрĕсенчен А.К.Салмин ытларах юмахсемпе ĕçлени паллă. Чăваш фольклористикишĕн унăн «К проблеме богатырской сказки в науке», «Два чувашских термина, обозначающих сказку», «Чудесное происхождение героя в чувашских сказках», «Типология чувашских сказок о богатырях» тата ытти статйисем те, «Сказка, обряд, действительность: Историко-типологическое изучение чувашского текста» монографийĕ те, «Чăвашсен паттăрсем çинчен хывнă халапĕсен этнографи çыхăнăвĕсен типологийĕ» кандидат ĕçĕ те паян хăйсен пĕлтерĕшне çухатман. Автор вĕсенче чăвашсен паттăрсем çинчен калакан юмахĕсене тишкерет, ытти халăхсен героикăлла юмахĕсемпе танлаштарать, пĕтĕмлетет. А.К.Салмин шухăшĕпе, чăвашсен паттăр юмахĕсем – халăхăмăрăн авалхи эпосĕн пĕр пайĕ. Ытти тĕрĕк халăхĕсен героикăлла эпосĕ ытларах сăвăласа е юрласа каланă формăпа тĕл пулсан, чăвашсен эпос йĕрĕсене паянхи кунччен сыхланса юлнă юмахсенче е прозăлла хайлавсенче шыраса тупма пулать. Çак шухăшсене автор нумай тĕслĕхсемпе çирĕплетет.

***Егоров Николай Иванович*** (1949) – паллă чĕлхеçĕ, тюрколог, фольклорист, филологи наукисен докторĕ, профессор; Чăваш Республикин Вăрмар районĕнчи Çӳлти Кинчерте хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти 8 çул вĕренмелли шкулта, Хусанти фармацевтика училищинче, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. Наукăн анлă çулĕ çине тăриччен пурнăç урапи çамрăк Микулая таçта та çитернĕ: малтанах вăл Арапуç аптекинче, Вăтакасри тата Вăрмарти культура керменĕсенче, Ульяновскри машинăсем тăвакан заводра ĕçленĕ, кайран Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн наука сотрудникĕнче, Чăваш патшалăх университечĕн тĕрĕк чĕлхисен кафедрин

пуçлăхĕнче вăй хунă. Хальхи вăхăтра Н.И.Егоров – ЧПГĂИĕн ертсе пыракан наука сотрудникĕ.

Н.И.Егоров – тĕрлĕ профильлĕ ăсчах. Вăл наукăра ĕçлекен проблемăсем: тĕрĕк тата чăваш чĕлхисен историйĕ, этимологийĕ, йăли-йĕркийĕ, этнографипе ӳнер ăсталăхĕ, чăваш тата тĕрĕк халăхĕсен историйĕпе фольклористики. Асăннă ыйтусемпе сахал мар статьясем çырать, тĕрлĕ конференцисенче тухса калаçать. 1992 ç. Алма-Атаран ăна хăйĕн мĕн пур пичетленнĕ ĕçĕсене шута илсе филологи наукисен докторĕн диссертацине хӳтĕленме йыхравлаççĕ. Хӳтĕлев ăнăçлă иртет.

Николай Иванович чĕлхе наукине тишкернисĕр пуçне, фольклористика ыйтăвĕсемпе сахал мар тăрмашрĕ. Унăн чăваш мифологийĕ, мешехисемпе уявĕсем, фольклорăн проза жанрĕсене ушкăнлас ыйтупа çырнă ĕçĕсем тĕпчевçĕсене çав тери кăсăклантараççĕ. Паянхи кун ăсчахăн 50 ытла наука ĕçĕ пичетленсе тухнă. Чăваш халăх сăмахлăхĕпе çырнă тĕпчевсен шутĕнче хаçат-журналсенче пичетленнĕ материалсем те («Чăваш халăх юрри-юмахĕсем венгрла», «Ваттисем калани вырăнлă», «Пĕлмесен – хам калăп», «Халăх барометрĕсем»), наука статйисем те («Чувашский саламалик», «По следам златорогого оленя»), вĕренӳ пособийĕн сыпăкĕсем те («Чувашская мифология», «Праздники и календарные обряды»), вĕрентӳпе методика кăтартăвĕсем тата программăсем те («Чувашские праздники и обряды») чылай. Вĕсенче автор чăваш фольклорĕнчи пăлан сăнарне, халăхăн эпикăлла жанрĕн упранса юлнă тĕслĕхне – мăн кĕрӳ сăмахне анлăн тишкернĕ, халăхăмăрăн авалхи мифологине, календарлă йăла-йĕркепе çыхăннă уявĕсемпе мешехисене, сăмахлăх тĕсĕсене пайăн-пайăн тĕшмĕртсе хакланă.

Юлашки вăхăтра пултаруллă сăмах ăсти фольклорти жанрсене ушкăнлас проблемăсемпе ĕçлеме кăмăл турĕ. Тĕрлĕ журналсемпе сборниксенче сахал мар теорилле статьясем калăпларĕ вăл. Сăмахран, «Халăх шкулĕн» 4-мĕш номерĕнче (2002) унăн «Чăваш фольклорĕн проза жанрĕсене ушкăнласси тата терминологи

ыйтăвĕсем» статйи кун çути курчĕ. Ку ĕçре фольклористсем валли кирлĕ, ăслă шухăшсем сахал мар.

Н.И.Егоров чăвашсен авалхи йăли-йĕркипе çыхăннă поэзине тишкернине те палăртмалла. Чăваш Республикин Наци библиотеки кăларса тăракан «Çулталăк кĕнекинче» 4 çул хушши вăл «Çулталăк çаврăнăшĕ» ятпа чăвашсен çулталăкри календарĕпе паллаштарчĕ. Халăхра кăрлач, нарăс, пуш, ака, çу, çĕртме, утă, çурла, авăн, юпа, чӳк, раштав уйăхĕсемпе çыхăннă авалхи йăла-йĕркесен, ĕненӳсен, ваттисен сăмахĕсен тата сăнавĕсен çĕнĕ тексчĕсене вулакан умне кăларчĕ.

Унăн фольклора тĕпченĕ паллă ăсчахсемпе вĕсен ĕçĕсене халалланă статйисем те шухăш енчен пуян. Сăмахран, Н.И.Ашмарин тата Н.И.Золотницкий кăларнă «Болгары и чуваши» тата «Корневой чувашско-русский словарь» кĕнекисем тухнăранпа 100-пе 150 çул çитнине халалласа «Халăх кун-çулне тĕпченĕ» тата «Паллă тĕпчевçĕн пархатарлă ĕçĕ» рецензисем çырса хаçат-журналта пичетлерĕ, çыруллă сăмахлăхри вырăнне палăртрĕ.

***Метин Петр Николаевич*** (1949) – паллă литературовед, тĕпчевçĕ, фольклорист, педагог, филологи наукисен докторĕ, профессор; Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Сăкăгра хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти вăтам шкулта, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университетĕнче вĕреннĕ. П.Н.Метин Çĕньялти 8 çул вĕренмелли тата Çĕрпӳ районĕн Тĕрерти 8 çул вĕренмелли шкулсенче учитель тата директор, Чăваш АССР Министрсен Совечĕ çумĕнчи наукăпа тĕпчев институтĕнче наука сотрудникĕ, Вĕрентӳ институчĕн чăваш чĕлхипе литератури кафедрин методисчĕ тата кабинет ертӳçи пулса ĕçленĕ. Хальхи вăхăтра – И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педуниверситечĕн профессорĕ, студентсене чăваш литературипе фольклорне вĕрентет.

Петр Николаевичăн наукăри ĕçĕсем тĕрлĕ: чăваш фольклорĕнчи кулăшпа питлев хăйне евĕрлĕхне сăнать, уйрăм çыравçăсен пултарулăхне тишкерет, чăваш литератури историйĕнче кулăшпа питлев жанрĕсем йĕркеленсе аталаннине тĕпчет, фольклорпа литература

вĕрентĕвĕн ыйтăвĕсемпе статьясем çырать. Çапах та ученăй, пурăна-киле, хăйĕн çырав пултарулăхĕ кулăш хайлавĕсене тĕпчессине çывăххине тата яланхи тĕллевĕ пулнине туйса илет, çакна çирĕплетсе парать: 1994 ç. «Чăваш сăмах пултарăвĕн жанрĕсенчи комизм» темăпа кандидат, 2002 ç. – доктор диссертацийĕсене хӳтĕлет.

Чăваш фольклорĕпе П.Н.Метин ятарласа интересленме наукăпа тĕпчев институтĕнче ĕçленĕ хушăра пикенет. 1978-1988 çç. унăн чăваш халăхĕн сатирипе юморĕ çинчен çырнă статйисем («Сатира и юмор в чувашских народных сказках», «Чувашские пословицы и поговорки (Вопросы комического)», «Комическое в чувашской народной поэзии», «Намек – иносказательный прием народной педагогики» т. ыт. те) институтăн сборникĕсенче тăтăшах пичетленеççĕ. Вĕсенче автор анлă сарăлнă кулăшпа питлев жанрĕсене халăх фольклорта епле усă курнине тата унпа тĕрлĕ ситуацисенче ушкăнлăхри пĕр-пĕр çыннăн е ĕçĕн япăх енне (е çитменлĕхне) кулăшла пафоспа сăнласа кăтартнине уçса парать. Тĕпчевçĕ шухăшĕпе, сатирăпа юмор халăх сăмахлăхĕн пур жанрĕсенче те сыхланса юлнă.

Чăваш фольклорĕн уйрăм жанрĕсемпе ыйтăвĕсене çутатнисĕр пуçне П.Н.Метин фольклористсем валли хатĕрленĕ уйрăм кĕнекесене аса илни те вырăнлă. 1980 ç. ЧНТИ ятарласа институт 50 çул хушшинче кăларнă тĕпчев ĕçĕсемпе кĕнекесен тата статьясен пуххисемпе брошюрăсен («Библиографический указатель трудов Научно-исследовательского института языка, литературы, истории и экономики при Совете Министров Чувашской АССР (1930-1979 гг.)», 1986 ç. «Чувашский фольклор: Библиографический указатель» кăтартмăшне пичетлесе кăларчĕ. Пĕрремĕш кĕнекери «Фольклористика» пайĕн, иккĕмĕш кăтартмăшăн авторĕ – П.Н.Метин. Юлашкинче чăваш фольклорĕне çырнă 1480 ĕç ячĕ. Шел пулин те, паянлăха ку указателе чăваш фольклорисчĕсем çĕнетеймерĕç-ха, хушса та кăлараймарĕç.

Наука ĕçĕсемпе пĕрле паллă тĕпчевçĕ вĕрентӳре вăй хурать: педуниверситетра студентсене «Литература тео-

рийě», «Литература пěлěвěн кӳртěмě», «Халăх сăмахлăхě» предметсене алла илме пулăшать, çырусăр сăмахлăха юратакансене курс тата диплом ěçěсем çыртарать. Унăн А.И.Мефодьев доцентпа пěрле пухса хатěрленě «Литературăпа халăх сăмахлăхěн ăнлавěсем» ятлă шкул словарě шкул ачисемшěн çеç мар, аслă вěренӳ заведенийěсенчи студентсемпе преподава-тельсемшěн те вěрентӳре питě кирлě пособи пулса тăчě.

*Фольклор ушкăнěсем.* Пěрчěн-пěрчěн пухнă фольклор произведенийěсене халăх умне ăнăçлă кăларма пěлни культура ěçченěсене чыс тăвать.

Халăх коллективě ята тивěçнě «Уяв» фольклор ушкăнě ахальтен мар ěнтě 20 çул хăйěн пултарулăхěпе савăнтарать. Ěлěкхи юрă-кěвве паянхи итлекен патне çитересси çăмăл ěç мар. Ансамбле йěркелекенě тата 20 çул ертсе пыраканě – Чăваш Республикин культурăн тава тивěçлě ěçченě Зинаида Алексеевна Козлова. Кунта профессиллě музыкантсем çеç мар, студентсем те, медицинăпа наука ěçченěсем те, педагогсемпе юристсем те, тата ытти профессипе çыхăннă çынсем каçсерен ěç хыççăн репетицине васкаççě. «Пурне те вěсене халăх юррине кăмăллани пěрлештерсе тăрать. Ансамбль репертуарě анатри, вăтам, тури чăвашсен хăна, туй, рекрут, хор, улах юррисемпе ташшисенчен пуян. Кунсăр пуçне такмаксем те шăрантараççě «Уяв» юрăçисем», – каласа парать ансамбль ертӳçи. Юрри-ташшипе пěрлех коллективра авалхи кěпе-тумтирне те, çи-пуçне те хăйсемех ăсталаççě, иккен. Çапла вара «Уяв» халăхăмăрăн пуян еткерне ялсемпе хуласем, тěрлě халăхсемпе çěршывсем тăрăх кăтартса çӳрет, палăртарать.

Чăваш патшалăх университечěн чăваш филологийěпе культура факультечě çумěнче 10 çул каялла йěркеленнě «Сипет» фольклор коллективě пирки те çакнах каламалла. Унăн ертӳçи – Чăваш Республикин тава тивěçлě учителě Земфира Кузьминична Яковлева каланă тăрăх, «ансамбле çӳрекенсем – пурте студентсем – чăваш халăх юрри-ташшине кăмăллакансем, хисеплекенсем, юратакансем. Пушă вăхăтра халăх хушшинче юрлани-ташлани вěсене вěренӳре те пулăшать, кулленхи

пурнăçра хавхалантарать, ăшă кăмăл-туйăм çуратать, илемлĕхе туйма, тăван халăхăмăрăн пуян еткерне упрама, сыхласа хăварма вĕрентет».

«Çавал» – Чăваш патшалăхĕн юрăпа ташă ансамблĕ. Вăл халăх юрри-ташшипе профессиллĕ шайра усă курать, вĕсене илемлетсе е урăхлатса халăх умне кăларать.

Халăх инструменчĕсен ансамблĕ «Эревет», ав, (ячĕнченех паллă), чăвашсем мĕн ĕлĕкренпе усă курнă музыка хатĕрĕсемпе репертуарта анлăн усă курма тăрăшать.

Асăннă ушкăнсемсĕр пуçне республикăри ялсемпе хуласенче художество пултарулăх коллективĕсем татах та пур. Вĕсен репертуарĕнче хăйсен тăрăхĕнчи юрăкĕвĕсем, йăла-йĕркепе çыхăннă поэзи тĕсĕсем сахал мар. Çак ырă традицие тата анлă сарса ярасчĕ, чăваш еткерĕ çине тимлĕрех те хăюллăрах пăхтарасчĕ.

Малалла сăмахлăх ăстисене пăхса тухăпăр.

***Федоров Гаврил Федорович*** (1878-1962) – чăваш халăх юрăçи, сăмахлăх тĕсĕсене пухаканĕ; Хусан кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Томакассинче (халĕ – Шупашкар р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă; çемьери йывăрлăхсене пăхмасăрах, 10 çула çитсен, чи малтан Толик Хураски ялĕнче тиечук патĕнче, унтан Шуркассири чиркӳ çумĕнчи прихут шкулĕнче 3 çул вĕреннĕ. Пулас юрăçă таçта та пулса курнă: Хусанта, Чикмере, Тĕрлемесре, Шупашкарта, тĕрлĕ вырăнсенче ĕçленĕ, бурлаксемпе пĕрле пичев туртнă, Ехрем купса заводĕнче хăма çурнă.

Çити-çитми пурнăçа пăхмасăрах пурнăç илемĕпе киленнĕ вăл, пушă вăхăтсенче яланах чăваш юррисене юрлама тăрăшнă. Унăн сасси илемлĕ, уçă пулнă, пуçра çĕршер те çĕршер юрă кĕввипе сăмахĕсене асра тытма пултарнă. Ахальтен мар Г.Федоровран каярахпа чăвашсен паллă композиторĕсем Ф.П.Павлов, С.М.Максимов, В.П.Воробьев, Т.П.Парамонов, В.М.Кривоносов, Ю.А.Илюхин, Г.Я.Хирбю т. ыт. те тĕрлĕ çулсенче нумай халăх юррисемпе кĕввисене çырса илнĕ, вĕсене вуншар кĕнекере пичетленĕ. Чи пирвайхи – «146 песен, запи-

санных от Гаврила Федорова С.Максимовым, Ф.Павловым, В.Воробьевым и Т.Парамоновым» ятпа Мускавра 1934 ç. çапăнса тухнă. 1949-1950 çç. С.Максимов унран тата 470 кěвě çырнă, хăйěн сборникěсенче усă курнă. Паллă юрăç вилсен Чăваш кěнеке издательстви Г.Федоровăн 620 юрă-кěввине «Чăваш халăх юррисем» кěнекепе (1969) пичетлесе кăларчě. Асăннă сборник халăх юррине юратакансемпе тěпчекенсемшěн çав тери паха: унта юрăçă пултарулăхне пăхса тухнисěр пуçне, юрă-кěвěсен сăмахěсемпе нотисене те çырса кăтартнă, кашни хайлавне камран, хăçан çырса илнине палăртнă; юрăсене ушкăнсем тăрăх вырнаçтарнă. Халăх юрăçин хăйне май ушкăнлав йěркине палăртмалла. Вăл вěсене тематикине кура («Кěреке юррисем», «Хресчен пурнăçě çинчен», «Ěç юррисем», «Салтак юррисем»), камран çырса илнине («Федор Анисимов юррисем», «Кантри Михали юрри») тата ăçта çырса илнине («Енькасси енче çырса илнě юрăсем», «Павел Великанов кантăк умěнче юрланă юрă»), çын туйăмне палăртнине («Лирикăлла юрăсем», «Шӳтлě юрăсем»), йăла-йěркепе çыхăнни («Туй юррисем», «Хăна юррисем»), çěнě саманапа çыхăнни («Колхоз юррисем) т. ыт. те шута илсе ушкăнлать.

Г.Федоров юрланă юрăсем пирěншěн паян та пысăк пуянлăх шутланаççě. Чăвашсен паллă музыковечě Ю.А.Илюхин ун пирки çапларах çырать: «Г.Федоровăн юррисем кěвě илемлěхěпе çав тери пуян пулнине, вěсем чăваш халăх музыкин нациллě уйрăмлăхěсене питě лайăх палăртнине пирěн композиторсем тахçанах туйса илнě. Ахальтен мар ěнтě унăн юррисене композиторсем хорпа е пěччен юрлама сахал мар илемлетнě, пысăк формăллă произведенисене – operăсемпе симфонисене кěртсе профессиллě музыкăна халăх пултарулăхěн сěткенěпе пуянлатнă»[36].

---

[36] Чăваш халăх юррисем: Гаврил Федоровран çырса илнě 620 юрă-кěвě /Сост. Ю.А.Илюхин. Шупашкар: Чăваш кěн. изд-ви, 1969. 320 с.

Çакă та паллă: Г.Федоров хăйĕн юррисене нумай чухне улăштарнă, тĕрлĕ вариантсем, çĕнĕлĕхсем хушнă. Тата унăн репертуарĕнче хăй хывнисем те сахал мар. Чăваш наци историйĕшĕн, культуришĕн халăх юрăçи пархатарлă ĕçсем туса хăварчĕ, Гаврил Федорович еткерĕ паян та тăван халăхăмăрăн музыка ӳнерĕшĕн паха çăлкуç шутланать.

*Волков Николай Григорьевич (Кашкăр Микули)* (1881-1946) – чăваш халăх юмахçи, çыравçи, сăмахлăх пухаканĕ; Чĕмпĕр кĕпĕрнин Пăва уесĕнчи Аслă Çĕрпӳре (халĕ – Комсомольски р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă; тĕрлĕ сăлтавсене пула унăн шкула çӳреме май килмен, 2 эрне çеç вĕреннĕ, çапах та пĕлӳ илес туртăмлă Микулай хăйне хăй вĕренсе икĕ çул хушшинче çырма, вулама хăнăхнă. Каярахри пурнăçĕ тĕрлĕ ĕçсемпе çыхăннă. Чиркӳ хуралçире, шахтăра, патша çарĕнче, пĕрремĕш тĕнче вăрçинче пулнă. 1918 ç. тăван ялне таврăнать те сельсовет секретарĕнче ĕçлеме пуçлать, выçлăх çулĕсенче Чернигов хулинче ача çуртĕнче, стройкăра, шкулта вăй хурать. 1934 ç. Кашкăр Микулин хăлхи сусăрланать, илтми пулать. Çакăн хыççăн вăл сăвăсем, юмахсем çырма, халăх сăмахлăхĕн произведенийĕсене пухма пикенет.

Паянхи кун Николай Григорьевичăн чылай юррисăвви, юмах-халапĕ пичетленнĕ. ЧПГĂИĕн архивĕнче пичетленмен 40 яхăн юмахĕ, 500-ре яхăн юррипе такмакĕ, 326 тупмалли юмахĕ тата шута илмен нумай фольклор тĕсĕсем упранаççĕ.

Н.Г.Волков хăй çырнă произведенисем «Фашизма хирĕç фольклор» сборникра (1941), «Илемлĕ литература» журналта (1944, 16-19 №), тĕрлĕрен хрестоматисенче, фольклор пуххисенче тата вĕренӳ пособийĕсенче кун çути курчĕç. Паллă юмахçăн хайлавĕсем хăй пурăннă вăхăтра ятарлăн пичетленмен, 1947 ç. çеç уйрăм кĕнекен «Кашкăр Микули. Сăвăсемпе юмахсем» ятпа çапăнса тухнă.

Кашкăр Микули Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче тухăçлă ĕçленине палăртмалла. 1941–1945 çç. çырăннă паллăрах хайлавĕсен шутне «Фюрерăн хӳри

таталнӑ», «Суккӑр пӑван», «Хӗвел ывӑлӗ», «Ваньккан пултарулӑхӗ», «Тӑлӑх Тимахви» юмахсем, «Ҫӗр ӗҫлекен Ехрем», «Армянпа вырӑс», «Ӳсӗр ҫын», «Наянпа кахал» анекдотсем, «Тӗп пултӑр фашист!», «Ҫӗнӗ гимн», «Атӑл», «Ҫӗнтерӳ юррисем», «Пирӗн ҫӗнтерӳ» сӑвӑсемпе юрӑсем, вуншар-ҫӗршер вак жанрсен тӗслӗхӗсем кӗреҫҫӗ.

Асӑннӑ хайлавсенче юмахҫӑ фольклорти сӑнарсене, сюжетсене тата мотивсене пӗлсе усӑ курнӑ. Сӑмахран, «Фюрерӑн хӳри таталнӑ» хайлавра вырӑс халӑхӗн «Вакӑ умӗнчи кашкӑр» (Андр., 2) юмах сюжечӗ тӗп вырӑнта. Кашкӑр Микулин юмахӗнчи «тискер те сӗлекеллӗ чӗр чунӗ» – Гитлера, фюрер пӑрлӑ шывра хӳре татни – нимӗҫсен ҫарне Сталинград патӗнче ҫӗнтернине сӑнарлаҫҫӗ. «Ваньккан пултарулӑхӗ» юмахра, ав, кӑтартмӑшри тӗрлӗ сюжет ӳкерӗннӗ: чее ӑслӑлӑх (Андр., 325), чӗр чунсен чӗлхи (Андр., 670), Вилӗмсӗр Кащей (Андр., 302), паллаштарман тӗлӗк (Андр., 725). Вӗсен ҫумне автор хӑй шутласа кӑларнӑ мотивсене хушать: сӑмах-юмах совет тапхӑрӗнче ҫуралса ҫирӗпленнӗ ӗҫ-пулӑмсене сӑнарлать; тӗп герой университетра пӗлӳ илет; революци пулса иртет; Ванькка тӗрлӗ техникӑпа ӗҫлеме вӗренет; тӑван ҫӗрне пур тӑшманран маттуррӑн сыхлать. Ахальтен мар, юмахҫӑ хайлавне «Хӗрлӗ Ҫара каймалла пулсан, манӑн та Ванькка пек паттӑр пуласчӗ», – тесе вӗҫлет.

Указательте ҫырӑнман сюжетсене те шутласа кӑларать юмахҫӑ. Тӗслӗхрен, «Хӗвел ывӑлӗ» юмах. Кунти тӗп герой – Алмаз паттӑр. Вӑл – Хӗвел амӑшӗн иккӗмӗш ывӑлӗ; ӑна Ҫӗр ҫинчи Хӗвел пулмашкӑн ҫуратнӑ, анчах тӗрлӗ ҫӗлен-калтасем Хӗвел амӑшне чирлеттерсе ачине вӑхӑтсӑрах ҫураттараҫҫӗ; ҫавна пула пулас иккӗмӗш Хӗвел ҫуралсанах ҫӗре ӳкет, ҫын сӑнарне илет: хӑвӑрт ӳсет, паттӑрла ӗҫсем тӑвать, нумай пуҫлӑ ҫӗленсемпе ҫапӑҫать, халӑха тӑшмансенчен сыхлать; ӑна ҫӗнӗ патшалӑхӑн ертӳҫине суйлаҫҫӗ; ҫапла майпа, Хӗвел сӑнарлӑ пулса, пур халӑха та ӑшӑтса, ҫутатса тӑма пуҫлать.

***Вдовина Ираида Григорьевна (Петрова)*** (1913-1985) – чӑваш халӑх юрӑҫи, юрӑ-кӗвӗ пухаканӗ, педагогӗ; Хусан

кĕпĕрнин Шупашкар уесĕнчи Кĕчкейре (халĕ – Сĕнтĕрвăрри р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă; тăван ялти 7 çул вĕренмелли шкулта, Шупашкарти педагогика техникумĕнче вĕреннĕ. Малтан Çĕрпӳри ача çуртĕнче, 1937–1969 çç. Çĕрпӳ районне кĕрекен Чăрăш Туçари вăтам шкулта учительте ĕçленĕ.

А.А.Осипов музыковед палăртнă тăрăх, «Ираида Григорьевна пурнăçĕ чăваш музыкишĕн уйрăмах халăх юррисене нумай пухнипе, вĕсене пропагандăланипе палăрса тăрать»[37]. Пулас юрăçă мĕн пĕчĕкрен халăх юрри-кĕввине итлесе çитĕннĕ. Сăмахран, унăн кукашшĕ ялта чи чаплă кĕслеçĕ пулнă, амăшĕ те ыттисенчен хитре сассипе уйрăлса тăнă. Паллах, пĕчĕк Иринăна çывăх çыннисем халăх юррине ăнланма, туйма тата ăнкарма мĕн ачаран хăнăхтарнă-тăр.

Ираида Григорьевна хăй юрăçă пулнине уйрăмах педтехникумра вĕреннĕ çулсенче аван туйса илет, кайран, шкулта ĕçленĕ çулсенче, пурăнакан тăрăхри юрăсăвăсене пухма тытăнать, концертсем йĕркелет, çак пархатарлă пуçарăва ача-пăчасемпе пĕрле яш-кĕрĕме те, ваттисене те явăçтарать.

И.Г.Вдовина пухнă, юрланă, хывнă юрăсем «Мелодия» фирма кăларнă виçĕ пластинкăра (1972-1973), «Юрă – чун уççи» юрăсен пуххинче (1970), «Ираида Вдовина юрлакан чăваш халăх юррисем» кĕнекере (1985) пичетленнĕ. Паянхи фольклористсемшĕн юрăçăн юлашки ĕçĕ пуринчен те пахараххи, мĕншĕн тесен сборника чи малтанах халăх йăли-йĕркипе çыхăннă тĕслĕхсене нумай кĕртнĕ.

Паллă юрăçă-педагог туй, вăйă, çăварни, сăпка, ача-пăча, салтак, хăна-ĕçкĕ, улах, сюжетлă юрăсене, ташă такмакĕсене уйрăммăн палăртать, кашнинех пĕчĕкрех ушкăнсем çине пайлать. Туй юррисен шутне кам юрланине кура, хĕр çумсен, пуса каччисен юррисене, хĕр йĕррисене тата ыттисен юррисене кĕртет; ача-

---

[37] Ираида Вдовина юрлакан чăваш халăх юррисем /А.А.Осипов пухса хатĕрленĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1985. 7 с.

пăча поэзинче вăйă вылякан йăла-йĕркепе ҫыхăннисене, вăйă выляс умĕн шăпа ярса каланисене е ахаль чухне пĕр-пĕрне шутламалла вылянă вăйă сăввисене, сутмалли юррисене т. ыт. те уйăрать. Сборникăн тепĕр пысăк, паха енĕ – автор хăй шухăшласа кăларнă е хывнă юрăсене уйрăммăн пичетлени. Вĕсем хăйсем те паянхи кун халăхра анлă сарăлчĕҫ, чăн-чăн халăх юрри пулса тăчĕҫ. Ҫакă юрăҫă чăннипех халăх юррисене чунтан юратнине, «чăн чăвашла» шухăшлани-ĕмĕтленнине, юрăсен илемлĕхĕпе уйрăмлăхĕсене аван пĕлнине, ăстаҫă-импровизатор пулнине кăтартса пачĕ. 2003 ҫ. хамăр республикăра И.Г.Вдовина ячĕпе юрăҫсен конкурсне ирттерме пуҫлани шăпах паллă фольклорҫă-юрăҫă пултарулăхне сума суни, хисеплени пулать те ĕнтĕ.

***Федоров Симеон Федорович (Ҫуйăн Хĕветĕрĕ)*** (1913-2002) – чăваш халăх сăмахлăхне пухаканĕ, чăваш эпосне йĕркелекенĕ; Хусан кĕпĕрнин Ҫĕрпӳ уесĕнчи Актайра (халĕ – Ҫĕрпӳ р-нĕ) чухăн хресчен кил-йышĕнче ҫуралнă; Патăрьелти пуҫламăш, Виҫикассинчи вăтам, Ҫĕрпӳри икĕ сыпăклă шкулсенче вĕреннĕ. Кунта «Тăхăръял» кĕнеке авторĕпе Г.Т.Тимофеевпа пĕр хваттерте пурăннă.

Ҫĕрпӳри паллашу, халăх сăмахлăхĕ ҫинчен кунсерен калаҫни Ҫуйăн Хĕветĕрне халăхăмăрăн халапĕсемпе юмахĕсене, тĕрлĕ сăвви-сăмахĕсене ҫырса илме хавхалантараҫҫĕ, амăшĕ каланă Улăпа шыраса тупма, вĕренсе ăс пухмашкăн ырă ĕмĕт ҫуратаҫҫĕ. Ҫапла С.Ф.Федоров Самарти планпа экономика институтне вĕренме кĕрет. Аслă пĕлӳ илнĕ хыҫҫăн Оренбург тăрăхĕнче, Чăваш Енре тĕрлĕ планпа финанс органĕсенче вăй хурать. 1941-1943 ҫҫ. Тăван ҫĕр-шывăн Аслă вăрҫине хутшăнать, йывăр аманать, хăлхасăр юлать, 2-мĕш ушкăнри инвалид пулса тăрать. Ăна ҫапăҫусенчи паттăрлăхшăн Хĕрлĕ Ҫăлтăр, Отечественнăй вăрҫăн I степеньлĕ орденсем, тĕрлĕрен медальсем панă.

Темле йывăр пулсан та Ҫуйăн Хĕветĕрĕ хăй шутланă ĕмĕтне пăрахăҫламан, мĕн виличчен чăвашсен Улăпĕ пирки сăмах вĕҫҫĕн ҫӳрекен халапсене пĕрчĕн-пĕрчĕн пухать, хăҫан та пулин халăхăмăрăн эпосĕ сăвăлла хайлавра пичетленессе шанса тăрать.

Шанăçне тӳрре кăларчĕ вăл. Чăваш эпосне 67 çул хушши пĕтĕм вăй-халне шеллемесĕр, ырми-канми пухса 1996 ç. сăвăлла хайлав парнелерĕ вулакансене. Çăмăл пулмарĕ уншăн çак çитĕнӳ: 1929 ç. пуçласа Улăп халапĕсене республикăри ялсемпе хуласенче çеç мар, Самарăпа Саратов, Пензăпа Оренбург облаçĕсенчи, Тутар тата Пушкăрт республикисенчи, Çĕпĕрти чăвашсем патĕнче пулса 100 яхăн çырса илчĕ, вĕсенчен 67 – Улăп, 15 – унăн ашшĕпе амăшĕ, 15 – Çĕрпӳ тата Сикпăрçа паттăрсем çинчен.

Ĕмĕрсем хушши, пĕр ламран теприне куçса пынă несĕлĕмĕрсен ахах-мерченĕпе танлаштарас килет Çуйăн Хĕветĕрĕн «Улăпне». Ăна пула паян кашни чăваш хăйĕн эпосне – «Улăпа» – алла тытса вулама пултарать. Хăй каланă тăрăх, «Улăп çинчен калакан халапюмахсене, вĕсем питĕ сахал упранса юлнă пулсан та, пуянлатса, çичĕ тăрăхлă сăрт пек капмарлатса, эпос шайне çитерсе халăх хушшине тепĕр хут сарасси» уншăн пурнăç шăнăрĕ пулнă. Çавăнпах пуль çак ĕмĕте пурнăçлама чăтăмлăхне те, сывлăхне те, вăй-хăватне те, тен, Турă панă Çуйăн Хĕветĕрне, пулăшса пынă-тăр.

Улăп халапĕсен пуххине 9 вариантпа çырать автор, анчах пĕри те хăйне тивĕçтерейменнине чĕрипе туйса тăрать. «Улăпăн» хăш-пĕр юррисем малтанхи хут 1947 ç. «Тăван Атăл» альманахра, кĕскетнĕ варианчĕ 1980 ç., туллин – 1996 ç. кун çути курчĕç. Юлашки кăларăм – улăпсем çинчен илемлетсе те сăвăласа калакан хайлавсенчен чи сумли те курăмли, тăван сăмахлăхăн пысăк пулăмĕ.

«Улăп. Чăваш эпосĕ» – халăх паттăрлăхне мухтакан 600-е яхăн страницăллă кĕнеке, 40 юрăран тăрать. Вĕсенче Улăпăн паттăрла ĕçĕсене, шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсене тĕрлĕ енчен çутатнă. Икĕ хире-хирĕçле вăйсен кĕрешĕвĕ илемлĕн, героикăлла пафоспа туллин сăнарланнă. Автор шухăшĕпе, эпосри ырăсем – Улăп паттăр, Çĕрпӳ паттăр, Сикпăрçа паттăр, Чĕкеç, Сарине, Мерчен-пике, турăсем, ыр-хăватсем, юлташĕсем, Çилçунат урхамахĕ т. ыт. те, усаллисем – Патти хун, Супетей хун, Супарпа усал вăйсем: Алтăркуç, Шăпатан, Алша-

сти, Кирĕшмет, Эсремет, ытти усал-тĕселсем, тăшманĕсем.

Кĕнеке пуçламăшĕнче вулакан Улăпăн кун-çулĕпе паллашать: унăн ачалăхĕ, яшлăхĕ, ӳссе çитсен тунă ĕçĕ-хĕлĕ, вилĕмĕ. Вăл паттăрла ĕçсем тăвать, тăван халăха тĕрлĕ инкек-синкекрен хăтарать, тăшманĕсемпе çапăçать. Апла пулсан, Улăп-паттăр – тăван халăха хӳтĕлекен, унăн ирĕклĕхĕшĕн кĕрешекен, ăна юратма чĕнсе калакан сăнар. Эпосра Улăп-паттăрпа Саринен таса юратăвĕ те пире хумхантарать, тарăн шухăша ярать.

Çуйăн Хĕветĕрĕн «Улăпĕ» – чăннипех улăпла кĕнеке. Вăл чăвашлăха юратма вĕрентес ĕçре пысăк вырăн йышăнасса шанас килет.

***Козлова Зинаида Алексеевна*** (1946) – паллă музыкант, фольклорист, педагог, халăх юрри-кĕввисене пухаканĕ тата пропагандăлаканĕ, доцент; Чăваш Республикин Патăрьел районĕнчи Патăрьелте служащи киллйышĕнче çуралнă. Пĕчĕк Çинукăн ачалăхĕ Комсомольски районĕнчи Аслă Çĕрпӳелте иртнĕ. Çемьере 8 ывăл та 4 хĕр çитĕннĕ. Зинаида Алексеевна ашшĕ хăй вăхăтĕнче паллă çын пулнă: вăрçăччен вăл – священник, Хĕрлĕ Çарта – командир, вăрçă хыççăн – районти тĕрлĕ вырăнсенче яваплă работник. Çавăнпа хуçалăхри пĕтĕм ĕç амăшĕ – Александра Григорьевна çине тиенет.

Çăмăл пулман вăрçă хыççăнхи нушаллă вăхăтра кун пек пысăк йыша ура çине тăратма. З.А.Козлова калашле, пурте тăрăшнă, пуçа усман. Выльăх-чĕрлĕх тытнă, кайăк-кĕшĕк усранă. Тепле йывăр пулсан та хулпуççи урлă хутаç çакса ыйткалама тухса кайман.

Мĕн ачаран Зинăпа Роза (йĕкĕрешсем) чунĕсем юрăпа ташша кăмăлланă. Ахăртнех, хитре те уçă сасăллă ашшĕпе амăшĕ хĕрĕсене юрăç пулмах çуратнă, тейĕн. Тен. Турă пӳрниех çакă: Роза Алексеевна та, Россия Федерацийĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, паян Камчаткăра вырăс фольклорĕн ушкăнне ертсе пырать.

Зинаида Алексеевна тăван ялти шкулта, Çĕрпӳри культурăпа çут ĕç тата Шупашкарти музыка училищисенче, Мускаври Гнесинсен училищин фольклор уй-

рамёнче, Саратоври консерваторире вёреннӗ, пӗр вӑхӑтрах тӗрлӗ выранта ӗҫлеме тивнӗ: халӑх хорӗсенче, Мускаври стройкӑсенче, метро тунӑ ҫӗрте. Чӑваш фольклорне пухма та, тӗпчеме те вӑхӑтне тупать, культура институтӗнче вӗренекен йӗкӗреш-йӑмӑкне пулӑшма та манмасть вӗри чӗреллӗ чӑваш пики.

Нумай вӗренни, тӗрлӗ професси алла илни пулас фольклориста, юрӑҫ-педагога тата культура ӗҫченне малашлӑхра усӑллӑ пулассине каламасӑрах ӑнкармалла. Нумай-и, сахал-и, шӑпа З.А.Козловӑна Чӑваш Ене каялла таврӑнтарать. Халӗ вӑл, пурнӑҫ тути-масине астивсе курнӑ ҫамрӑк хӗрарӑм, чӑн-чӑн профессилле артист та. Ҫирӗм ҫул, йывӑрлӑхсене пӑхмасӑр, хӑй пуҫарнӑ, юратнӑ ӗҫне кунсерен туса пырать. Педагог-музыкҫӑ йӗркеленӗ фольклор ушкӑнӗсем – Г.Лебедев ячӗллӗ лицейри ача-пӑчасен «Пилешӗ», педуниверситетри студентсен «Юрайӗ», ҫитӗннисен «Уявӗ» – хӑйсен чи ҫепӗҫ те ахах пӗрчиллӗ юррисемпе, вӗтӗр-вӗтӗр тӑпӑлкка ташшисемпе пур халӑха та тыткӑнлаҫҫӗ, ырӑ туйӑм ҫуратаҫҫӗ. Пур ушкӑнрисене те халӑх юррине кӑмӑллани пӗрлештерсе тӑрать. Паллах, асӑннӑ фольклор коллективӗсене пӗрлештерсе тата пӗтӗҫтерсе тӑраканӗ – вӗсен ертӳҫи З.А.Козлова. Ансамбльсен репертуарӗнче – ача-пӑча поэзийӗн юрри-сӑвви, анатри, анат енчи, тури чӑвашсен хӑна-вӗрле, туй, рекрут-салтак, хӗр йӗрри, улах юррисемпе ташшисем, такмакӗсем. Кунтах Пушкӑрт, Самарпа Чӗмпӗр тӑрӑхӗсенчи юрӑсемпе ташӑсем. Сӑмах май, «Уяв» – хамӑр республикӑра ҫеҫ мар, ун тулашӗнче те, ют ҫӗр-шывра та палӑрнӑ ансамбль. Вӑл Чӑваш Республикин Ҫеҫпӗл Мишши ячӗллӗ ҫамрӑксен премийӗн лауреачӗ (1991), тӗрлӗ халӑхсен фольклор фестивалӗн дипломанчӗ (1988), Францире ирттернӗ Пӗтӗм тӗнчери XXII фольклор фестивалӗн ҫӗнтерӳҫи (1995) т. ыт. те. Ку ҫӗнтерӳсем, паллах, ӗҫлемесӗр, вӑй хумасӑр пулман, пулма та пултарайман.

Чӑн та, халӑх юррине сцена ҫине кӑларасси ҫӑмӑл мар. Чи малтанах, вӗсене ҫырса илмелле, каярахпа нотӑсем ҫине куҫармалла, юлашкинчен коллективра «ҫичӗ пӑт» тар кӑларса пӗчӗккӗн «вӗренмелле, вӗренмелле та-

тах та вĕренмелле», кашни саспаллине, нотине, кĕввине чĕре патне çитермелле. Çапла тусан çеç халăх юрри каялла халăх патне çитме пултарать, чуна вырнаçать.

Зинаида Алексеевна тăрăшнипе çĕршер чăваш юрри тепĕр хут чĕрĕлчĕ. «Чăваштелерадио» компани темиçе аудиокассетăпа компакт-диск та кăларчĕ, «Уяв» юррисене тăтăшах радиопа та, телевизорпа та итлеме-курма пулать. Коллектива республикăпа ун тулашĕнчи ялсемпе хуласенче яланах тараватт, ун концерчĕсене чăвашĕ те, вырăсĕ те, нагышĕ те, французĕ те кăмăллать, чăтăмсăррăн кĕтет.

Тата çакă паха: З.А.Козлова 1983 ç. фольклор юхăмне çĕнĕлле чĕртсе яни харама каймарĕ. Паян республикипе фольклор ушкăнĕсен хисепĕ çĕртен иртет. Вĕсем чăвашсен йăлисене сценăсем çинче кăтартас, халăх юрри-кĕввисене юрлассине çирĕп тытса пыраççĕ. Ку ĕçре пысăк ăсталăх кăтартнăшăн 32-шĕ «халăх фольклор ушкăнĕ» хисеплĕ ята тивĕçнĕ. Унсăр пуçне, Зинаида Алексеевна тăрăшнипе Шупашкарти Ф.П.Павлов ячĕллĕ музыка училищинче 1989 ç. фольклор уйрăмĕ уçăлчĕ. Юлашки çулсенче фольклор коллективĕсен ертӳçисене И.Я.Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика университетĕнче те хатĕрлеççĕ. Кăна та З.А.Козлова доцент çине тăрса йĕркелеме пултарчĕ. Вăл тулашри чăваш фольклор коллективĕсене те сахал мар пулăшать, çавăнпа пур çĕрте те – кĕтнĕ хăна, çывăх юлташ, ăслă педагог, паллă фольклорист. Ахальтен мар ăна 1992 ç. «Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ» ятпа чысланă. Ырă ĕç хисепе тивĕç, тет чăваш. З.А.Козлова чăваш халăхĕшĕн, унăн культуришĕн тунă ĕçĕсем – чăннипех пысăк та сумлă хисепе тивĕç. Кăштах асăрхама, хаклама, тав сăмахĕ калама манас марччĕ çеç.

***Наумов Никифор Егорович (Якуркка Микихверĕ)*** (1936) – чăвашсен йăли-йĕркине тытса пыраканĕ, ăрăмçи, сăмахлăха тĕпчекенĕ тата фольклорçи; Чăваш Республикин Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Тимĕрчкассинче (халĕ – Çатракассипе пĕрлешсе кайнă) хресчен кил-йышĕнче çуралнă; ялти 7 класс вĕренмелли шкулта, Йошкар-

Олари вăрман тата Хусанти строительство институчĕсенче вĕреннĕ. Тĕрлĕ тапхăрта республикăри вăрман хуçалăхĕпе строительство организацийĕсенче, Шупашкарти проектсем хатĕрлекен институтра, Чăваш наци тата Сăра музейĕсенче ĕçленĕ.

Якуркка Микихверне хамăр республикăра çеç мар, ун тулашĕнче те аван пĕлеççĕ. Мĕн пĕчĕкрен гăван халăхăмăрăн аваллăхĕпе интересленнĕскер, чăвашсен йăлийĕркине, авалхи тĕн пĕлĕвĕсене, ыр-хаярĕсене, пурлăхпа ăс-тăн культурине, фольклор материалĕсене ятарласа пуçтарать, халăх хушшинче сарма тăрăшать. Вăл пичетлесе кăларнă «Чăваш тĕнĕ. Тĕнче курăм. Ырхаярсем» (1992), «Чăвашăн тĕнче, пĕлĕтпе çĕр, пĕлĕт çинчи çăлтăрсем çинчен вĕрентсе каланă авалхи пĕлĕвĕ» (1995), «Чăваш халăхĕн ăс-тăн тытăмĕ» (1996), «Кулленхи пĕлӳ кĕнеки. Çын пурăнакан таврашри вырăнсем, хушăхӳтлĕхсем, çул-йĕрсем, килти, ĕçри савăт-сапасем» (2002) кĕнекисем чăвашлăха юратакансемшĕн çеç мар, тĕпчевçĕсемшĕн те паха материал пулчĕç. Унсăр пуçне Н.Е.Наумов ятарласа чăваш сăрине (хĕр сăри, хăмла сăри, хупах сăри, завод сăри), апат-çимĕçне тишкерчĕ, пысăк статьясем пичетлерĕ.

2002 ç. ЧПГĂИ кăларнă «Кулленхи пĕлӳ кĕнеки» тĕпчевре автор мĕн авалтан пуçласа паянхи кунччен упранса юлнă сăмахлăхăн çĕр-çĕр тексчĕпе усă курать, калас шухăшĕсене вĕсемпе çирĕплетет, пĕтĕмлетӳсем тăвать.

Никифор Егоровича халăхра чăвашсен хисеплĕ мăчаварĕпе авалхи йăла-йĕркене тытса пыраканĕ ятпа хисеплеççĕ. Вăл пуçарнипе тата çине тăнипе юлашки çулсенче хамăрăн тĕп хуламăрта çеç мар, республикăри чылай вырăнсенче чăвашсен йăли-йĕркипе çыхăннă тĕрлĕ кĕлĕ вырăнĕсене, киремет лапамĕсене йĕркелерĕç, ĕлĕк чăвашсем çулталăкри уявĕсенче е ваттисене асăннă йăласенче каланă сăмах-кĕллисене тытса пыма пуçларĕç. Сăмахран, 1992 ç. çĕртме уйăхĕнче Етĕрне районĕнчи Тури Ачакра пысăк акатуй пулса иртрĕ. Пур таврари ялсем те хутшăнчĕç унта, мĕн авалтанпа пыракан акапа çыхăннă йăлана тепĕр хут аса илчĕç уява хутшăн-

нисем. Акатуй умĕн Якуркка Микихверĕ вăрман киреметĕнчи кĕлле ирттерчĕ, ыр-хăватсенчен пур халăха та тулăх пурнăç, телейпе савăнăç, килĕшӳлĕхпе татулăх, усал-тĕселрен сыхлама ыйтрĕ.

Каярахпа «Шупашкар 500 çулта» паркра авалхи ватă элчĕсен ячĕпе уçнă «Асăну юпи» те, Атăл леш енчи «Чувашия» санатори лапамĕнче ыр-хăватсене калăпласа лартнă юпасен кĕлĕ вырăнĕ те, ытти тăрăхсенче чӳк йĕркине ирттерни те – çаксем пурте пирĕн тăхăмсен ĕлĕк-авал тытса пынă йĕркелĕхе тепĕр хут аса илтерекен, малашне те вĕсене хисеплемелли палăксем пулса тăчĕç. Çакăншăн Чăваш Республикин культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченне Никифор Егорович Наумова – Якуркка Микихверне – чăннипех пысăк тав сăмахĕ каламалла, вăл пуçарнă ĕçсене малашне те пĕтерес марччĕ, йĕркелесе пырасчĕ.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Совет саманинчи халăх сăмахлăхĕн паллисем. Мĕн вăл тута-çăвар литератури?
2. Совет тапхăрĕн 20-70-мĕш çç. чăваш фольклорне пухакансемпе тĕпчекенсем.
3. XX ĕм. 80-мĕш ç. – паянхи кун халăх сăмахлăхне тĕпчекен фольклористсем, вĕсен ĕçĕсем.
4. XX ĕм. чăваш фольклорне аталанма пулăшакансем тата пропагандăлакансем.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1.*Викторов О.Н., Абрамов В.А.* Ĕçтешсем: Биобиблиографи кăтартмăшĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 2000. 56 с.

2.*Дмитриева Ю., Адягаши К.* Hungaro-Tschuwschica. Аннотированный библиограф. указатель исследований венгерских ученых XIX-XX вв. /ЧГИГН. Чебоксары, 2001. 240 с.

3.*Золотов В.* Тяжек путь на Олимп (Штрихи к портрету педагога-музыканта Зинаиды Козловой) //Халăх шкулĕ. 1998. 3 №. 30-39 с.

4.*Иванов И.И.* Литературоведение и фольклористика в Чувашской АССР. Вып. 100: Развитие общественных наук в Чувашии за годы Советской власти /Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1980. С. 99-111.

5.*Исследователи* Чувашского края: Биобиблиограф. указатель /Сост.: Э.Г.Николаева, Н.Д.Никитина. Чуваш. ун-т. Чебоксары, 2002. 256 с.

6.*Исследователи* чувашской культуры и истории /Сост. А.А.Кондратьев. Уфа: Изд-во «Экология», 1998. 278 с.

7.*Краткая* чувашская энциклопедия. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. 526 с.

8.*Кто* есть кто. Ученые Чувашского государственного университета имени И.Н.Ульянова (Опыт справочника). Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 1999. 123 с.

9.*Одюков И.И.* К истории собирания и публикации чувашского фольклора в 20-30-х гг. //Вопросы чувашского языка, литературы и искусства: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1960. С. 94-113.

10.*Одюков И.И.* Халăх сăмахлăхĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 46. Филология. Чебоксары, 1970. С. 87-105.

11.*Одюков И.И.* Чăваш халăх лирики (Сăвă-юрă сăнарлăхĕ): Вĕренÿ пособийĕ /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1983. 25-35 с.

12.*Патмар Э.* Алтăр çăлтăр çулĕ: Иван Патмар – фольклорист, çыравçă, поэт. Шупашкар, 2003. 60 с.

13.*Петрухин А.И.* Рост национальной культуры и устно-поэтическое творчество чуваш. Чебоксары, 1965. С. 43-119.

14.*Родионов В.Г.* К вопросу об уровне и характере бытования чувашского фольклора //Статистико-этнографические исследования в Чувашской АССР: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 118-122.

15. *Родионов В.Г.* Фольклор у чувашей //Чуваши: Современные этнокультурные процессы. М.: Наука, 1988. С. 140-154.

16. *Родионов В.Г.* (Эртиван): Библиографический указатель /Чуваш. ун-т. Чебоксары, 2000. 20 с.

17. *Сидорова Е.С.* Современное устное творчество чувашей Поволжья (по материалам экспедиции) //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 49. Филология. Чебоксары, 1970. С. 91-105.

18. *Сидорова Е.С.* Чувашский фольклор периода Великой Отечественной войны. Вып. 59. Чувашский язык и литература //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1975. С.185-198.

19. *Тукташ И.С.* Совет саманинчи чăваш фольклорĕ //Илемлĕ литература. 1941. 5 №. 116-140 с.; 6 №. 129-142 с.

20. *Федотов М.Р.* Исследователи чувашского языка. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 1987. 84 с.

21. *Фольклорист* Е.С.Сидорова: к 70-летию со дня рождения: Biобиблиограф. справочник /ЧГИГН. Чебоксары, 2000. 88 с.

22. *Ученые* Чувашского университета (1967-1992) /Сост. Г.Ф.Трифонов, Л.А.Мишина /Чуваш. ун-т. Чебоксары, 1992. 200 с.

23. *Хрестоматия* по культуре Чувашского края: дореволюционный период /Под ред. М.И.Скворцова. Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2001. 255 с.

24. *Юрьев М.Н.* Чăваш писателĕсем: Библиографи справочникĕ. Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 1966. 371 с.

## 3.2. Халăх сăмахлăхĕнче Совет саманин тĕрлĕ тапхăрĕсем сăнарланни. Чăваш месекĕсем. Юлашки вăхăтри сăмахлăх тĕсĕсем.

Совет саманинчи сăмахлăх тĕсĕсене тапхăрсерен пăхса тухăпăр:

1. Çĕнĕ пурнăçра политикăлла правасем илни çинчен хывнă сăмахлăх (1920-1929 çç.).

Çĕнĕ сăмахлăх революци хыççăн социаллă пĕлтерĕшлĕ такмакран тытăннă. Революцичченхи такмак

кулленхи пурнăçри кăмăла çеç палăртнă. Ăна гашă вăхăтĕнче, туйра, ĕçкĕ-çикĕре, хĕр сăринче, улахра, çурхи вăйăсенче каланă, ытларах юрату-килĕштерÿ кăмăлĕпе çыхăнтарнă. Ку йышши такмак çĕнĕ тапхăрта та юлнă. Ун чухне общество пурнăçĕпе, социалла ыйтусемпе, классен революцилле кĕрешĕвĕпе, Совет влаçне çирĕплетессипе çыхăннă шухăш-туйăма палăртакан такмаксем çуралаççĕ, çĕнелнĕ е пачах çĕнĕ пĕлтерĕшлĕ юрăсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем, йăла юмахĕсем 20-мĕш çулсенче йышлăн тĕл пула пуçлаççĕ.

Содержани енчен пăхсан, 20-мĕш çулсенчи сăмахлăх граждан вăрçи тапхăрне тата хуçалăха ура çине тăратса социализм никĕсне хывнă вăхăта сăнланипе уйрăлса тăрать. Граждан вăрçи такмакĕсем ĕç-халăхĕн çамрăк Совет влаçне хÿтĕлесе хăварас кăмăл-туйăмне ÿкерчĕклесе кăтартаççĕ. Такмаксен тĕллевĕ – Совет влаçĕ çине тапăннă шурă вăйсемпе империалистсене питлесси, халăхăн çĕнтерÿ шанчăкне çĕклесси. Шурă çарсен, интервентсен вăйĕсенчен халăх сăмахлăхĕ мăшкăллать, сатира вăйĕпе питлет. Колчак, Деникин т. ыт. пирки «Колчак çарĕ пăнтăхнă», «Юденич – пуç касакан, Эстоние таракан», «Вильсон ларать мăртăхса» тенĕ йĕркесем çак шухăша çирĕплетеççĕ. Халăх Хĕрлĕ Çара ырласа мухтать («Совет Хĕрлĕ Çарне тĕнчипе мухтаççĕ»); хĕрсем тусĕсем Хĕрлĕ Çара тивĕçлĕ пулнишĕн савăнаççĕ; каччăсем хăйсен ирĕкĕпе унăн ретне тăраççĕ («Шурă çарпа çапăçма пире анне çуратнă»).

Юрăсем ку тапхăрта сахал йĕркеленнĕ. Сăмахран, «Улпучĕсем турта та хатĕрлеççĕ» юрăра улпутсемпе пуянсем Колчак пек шурă вăйсем килессе кĕтсе, вĕсене пулăшма хатĕрленсе пурăнни çинчен каланă. Юррăн тĕллевĕ – Совет влаçĕ гăшмансене çĕнтерессине çирĕплетсе каласси.

Çакă паллă: çĕнĕ содержанилле сăмахлăх 20-мĕш çулсен иккĕмĕш çурринче ытларах çуралать. Вĕсене И.И.Одюков 8 ушкăна пайлать:

1) В.И.Ленин – ĕç халăхĕн вĕрентекенĕ, вăл вĕрентни тĕрĕс, халăха кăмăллă;

2) коммунистсен партийĕ – çĕнĕ пурнăç çулĕпе телейлĕх патне ертсе пыракан вăй, халăх ăна ырлать;

3) Совет влаçĕ – ĕç халăх влаçĕ, вăл ăна социалла ирĕклĕх прависем пачĕ, ирĕклĕ пурнăç тума пулăшать, çавăнпа ăна пулăшмалла, унпа пĕр пулмалла;

4) комсомолпа совет çамрăкĕ çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçре малта пырать, тăрăшать, çавăнпа унăн кĕрешĕвĕ халăха килĕшӳллĕ;

5) чăваш халăхĕ Совет влаçне пула ытти халăхсемпе пĕр тан пулчĕ;

6) чăваш ĕç хĕр арăмĕ социалла правасем илчĕ, обществăра, йăлапа кил-йышра та, пурнăçра та ар çынпа пĕр тан праваллă этем пулчĕ, çĕнĕ общество ĕçне анлăн явăçрĕ;

7) ĕç çыннисен пурнăçĕ лайăхланать, çăмăлланать;

8) совет халăх культури ӳсет, ĕç çынни социализмла идеологие йышăнать.

20-мĕш çулсенчи сăмахлăх ирĕке тухнă çĕнĕ пурнăç çыннин сăнарне ĕç-хĕл, кĕрешӳ, шухăш енĕпе ӳкерет. Вĕсенче, граждан вăрçи тапхăрĕнчи сăмахлăхри пекех, икĕ тĕнче çыннисене хирĕçлесе танлаштарни юлать. Кивĕ пурнăç çыннисене – пуянсене – юрлакансем киревсĕрлĕхе кăтартакан сăмахсемпе ӳкереççĕ, çĕнĕ пурнăç çыннисене – хитре сăмахсемпе. Хирĕçле танлаштару пуянсемпе чухăнсен пурнăçне сăнланинче курăнать.

2. Колхозлă ял пурнăçĕ çинчен хывнă сăмахлăх (1930-1940 çç.).

20-мĕш çулсенче социаллă такмак тĕп вырăн йышăннă пулсан, 30-мĕш çулсенче малти вырăна йышĕпе те, пурнăçа анлăн сăнлассипе те социалла туйăмлă сăмахлăх жанрĕсем тухаççĕ. Тăван çĕр-шыв теми, çĕнĕ сăмахлăх çуралсанах, интернационалла пĕл-терĕшпе палăрса пычĕ: граждан вăрçи сăмахлăхĕнче – Совет влаçĕ; 20-мĕш çулсенчи сăмахлăхра – ĕç халăхне социалла тата политикăлла правасем паракан, хуçалăхпа культурине ӳстерме пулăшакан Совет çĕр-шывĕ; 30-мĕш çулсенче социализм пурнăç йĕрки пур енĕпе те çĕнтерет; Тăван çĕр-шыв «Совет Союзĕ» пулса тăрать; юрлакансем ăна «Тăван çĕр-шыв–анне» тесе хисеплеççĕ.

Ку тапхăрта сыхлăх теми пысăк вырăн йышăнать. Чăваш çынни патриотла туйăмпа Тăван çĕр-шыва хÿтĕлемеллине палăртать. Çамрăксем Хĕрлĕ Çар ретне хăйсен ирĕкĕпе тăраççĕ, мĕн ачаранах çара кайма хатĕрленсе ÿсеççĕ.

30-мĕш çулсенче казарма социализмĕ я́лта та çĕнтерет, ял халăхĕшĕн колхоз тени телейлĕ пурнăçпа пĕр килет. Ку темăпа çыхăннă сăмахлăх тĕслĕхĕсем питĕ йышлă, шухăшĕпе пуян. Ушкăнла хуçалăхăн социализмла пĕлтерĕшне ÿкерчĕклесе кăтартакан юрăсенче колхозпа уйрăм хуçалăхлă пурнăçа танлаштараççĕ. Колхоз вăл – ĕмĕр халăхпа пĕрле пурăнмалли, ĕçлемелли йĕрке, вăл чухăнлăхран хăтарать. Уйрăм хуçалăх юрăра – «инхоз», кая хăваракан, чухăнлăхран тухма чаракан йĕрке. Колхоз çынни пур халăха колхоза кĕме, халăхпа пурăнма чĕнет («Атя, инхоз, колхоза пирĕнпе пĕрле пурăнма»). Çĕнĕ мораль çуралать. Халăх колхоза кĕнĕ пулсан, уйрăм çыннăн та кĕмелле, çĕнĕ йĕркене килĕштермелле, пăхăнмалла. Халăхшăн ĕçлекенсем юрăра яланах «паттăр» («Паттăр колхоз тумашкăн паттăр çынсем кирлĕ-мĕн»).

1935 ç. çĕр-шывра стахановла юхăм çĕкленет. Çĕнĕ пурнăçа хăвăртрах тăвас, ĕç тухăçлăхне ÿстерес тесе, çынпа çын, звенопа звено, бригадăпа бригада, колхозпа колхоз, республикăпа республика ăмăртаççĕ. Халăхăн пурнăçри, ĕçри, юрăри кăмăлĕ пĕр:

Пултăр колхоз пулмалла –
Чап та большевикла.
Хамăр пурнар çĕнĕлле –
Пуян та культурăллă.

Паллах, çакăн йышши текстсем халăх хушшинче анлă сарăлман, вĕсен авторĕсем те паллă. Вĕсене тутаçăвар литератури йышне кĕртмелле.

30-мĕш çулсем – тăван халăх культурăпа техника цивилизацийĕн анлă çулĕ çине тухнă вăхăт. Халăх хутла пĕлесси ÿссе пырать, художествăлла пултарулăх ĕçĕ вăйланать, аслă шкулсем, театрсем, клубсем уçăлаççĕ, физкультурăпа спорт аталанать. Культура ÿсĕмĕ çинчен калакан сăмахлăх йышланать, ваттисен сăмахĕсемпе

тупмалли юмахсем ҫӗнӗ содержанипе пуянланаҫҫӗ («Шăтăклă шкапра шăнкăрч юрлать. Радио») т. ыт. те.

Пурнăҫ улшăнăвне кура ҫӗнӗ асамлă (паттăр) юмахсемпе йăла юмахӗсем ҫуралаҫҫӗ. Асамлă юмахсенче халăх паттăрсен ӗҫӗ-хӗлӗ ҫинчен калакан авалхи юмахсен традицийӗсемпе усă курать, йăла юмахӗсенче – пуянсемпе чухăнсем ҫинчен калакан сюжет юхăмӗпе.

Паттăр юмахӗсем 2 мелпе аталанаҫҫӗ: кивӗ юмахсен вӗҫӗсене улăштарнипе («Ҫил ачисем») тата кивӗ юмахсен сюжет кӗввисем тăрăх ҫӗнӗ юмахсем хывнипе («Телей ҫулӗ», «Хӗвел»). Тӗрӗссипе кунта традицилле юмахсем трансформациленнин тӗслӗхӗсене куратпăр.

Йăла юмахӗсем йышӗпе паттăр юмахӗсенчен сахалрах. Вӗсем те Ленин ертсе пынипе революци туни, колхозра телей тупни, ҫутта тухни ҫинчен калаҫҫӗ. Сăмахран, «Ленин тӗрӗслӗхӗ» юмахра икӗ тăван телей шыраҫҫӗ. Вӗсем ăна тупма пупран, улпутран, пуянран ыйтаҫҫӗ, лешсем суяҫҫӗ. Вара хресченсенчен пӗри рабочисем урлă Ленинпа паллашать, тӗрӗслӗх тупать. Кунта традицилле сюжета большевиксен идеологийӗпе ҫураҫтарма тăрăшни курăнать.

3. Тăван ҫӗр-шывăн Аслă вăрҫи ҫинчен хывнă фольклор.

Тăван ҫӗр-шывăн Аслă вăрҫинчи совет халăхӗн ҫӗнтерӗвӗ патшалăхăн тӗреклӗхне, совет халăхӗн туслăхӗпе хăватне кăтартрӗ. Вăрҫăра чăваш халăхӗ те пысăк паттăрлăхпа кӗрешрӗ, ҫӗнтерӳ пуласса шанса-ӗненсе, юрă-такмаксем, ваттисен сăмахӗсем, юмах-халапсем хыврӗ.

Ҫăмăл пулман ҫак ҫӗнтерӳ: 1418 куна пынă хаяр вăрҫă 30 миллиона яхăн совет ҫыннин пурнăҫне татнă. Анчах темле йывăр пулсан та совет халăхӗ тăшман умӗнче хăраса ӳкмен, вăл юмахри паттăр пек «асамлă хӗҫпе» «хура ҫӗленӗн» пуҫне касса татрӗ, кӳлепине вакласа-тураса ӗмӗрлӗхех йывăр чул айне хучӗ. «Асамлă хӗҫ» – совет ҫӗр-шывӗнче пурăнакан халăхсен туслăхӗ, пӗрлӗхӗ, пӗр тӗллевлӗхӗ, «хура ҫӗлен» – фашизм.

Пулас ҫӗнтерӗве ҫывхартас тӗллевпе ял ӗҫченӗ те, рабочи те, интеллигенци те нумай вăй хучӗҫ: рабочи

аллисем Хӗрлӗ Ҫар валли хӗҫ-пӑшал хатӗрлерӗҫ; ялти ҫӗр ӗҫченӗ ҫӑкӑр-тӑварпа, кӗпе-тумтирпе пулӑшрӗ; литературӑпа искусство ҫыннисем фашизма питлекен нумай калавсем, повеҫсем, хайлавсем ҫырчӗҫ, сахал мар кӗнеке кӑларчӗҫ; Н.Волков, Г.Федоров пек юмахҫӑ-юрӑҫӑсем вӑрҫа хирӗҫ ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ юмах-халап, сӑвӑ-такмак ӑсталарӗҫ. Вӗсенчен нумайӑшӗ халӑхра кӗске вӑхӑтрах анлӑ сарӑлчӗ, халӑх произведенийӗ пек пулса ҫирӗпленчӗ.

Фольклор произведенийӗсен тӗп теми – совет халӑхӗн паттӑрлӑхӗ, нимӗҫ фашисчӗсен тискерлӗхӗпе усал ӗҫӗсене питлени. Унта чӑваш халӑхӗ фюрерпа «унӑн хӳрешкисенчен» гӑрӑхласа кулчӗ, фашистсене «намӑс юпи» ҫумне пӑталарӗ, вӑрҫа хирӗҫ тӑма, мирлӗ пурнӑҫшӑн кӗрешме чӗнсе каларӗ.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче чи анлӑ сарӑлнӑ жанрсенчен пӗри вӑл – такмак. Вӑрҫӑн пуҫламӑш кунӗсенчех маларах аталаннӑ такмак тӗсӗсем ҫӗнӗ сӗм илсе, халӑх хушшинче питӗ хӑвӑрт сарӑлма ӗлкӗрчӗҫ (сӑмахран, 30-мӗш ҫулсенче вӑрҫӑ, сыхлӑх темипе юрланӑ юрӑ-такмаксем – «Кайӑк-хурсем каяҫҫӗ малалла», «Анне, маншӑн ан макӑр», «Улма-йывӑҫ авӑнать» т. ыт. те). Вӗсенче Тӑван ҫӗр-шыва «куҫ пек сыхлама», тӑшмана «ирӗк совет ҫӗрӗнчен хуса яма», «ҫапса аркатма» чӗнсе каланисем, Хӗрлӗ Ҫарӑн вӑйне, совет халӑхӗн паттӑрлӑхне, мӗн пур совет ҫынни ҫак тан мар кӗрешӗве хутшӑнасса шанни палӑрса тӑрать.

Ҫамрӑксем хӑйсен ирӗкӗпе вӑрҫӑ хирне ӑсанаҫҫӗ:

> «Атьӑр, тантӑшсем, каятпӑр ҫапӑҫу хирне
> Аслӑ Лениншӑн, ҫӗр-шывшӑн, чысшӑн ҫапӑҫар», –

теҫҫӗ вӗсем, ялтан тухас умӗн.

Такмаксенче чӑваш халӑхӗ фашистсене «ҫӗленкалтапа», «тилӗпе», «кашкӑрпа», «ҫӑханпа» е «йытӑпа» танлаштарать, вӗсене «хӗҫпе ваклама», «чукмарпа ватма» чӗнсе калать.

Чӑваш салтакӗ фашизма хӑвӑртрах тӗп туса каялла киле килме ӗмӗтленет, мирлӗ ӗҫе кӳлӗнме шухӑшлать.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенчи такмаксемпе юрӑсен теми анлӑ. Унта тылри совет ҫыннисен ӗҫри паттӑрлӑхӗ, Хӗрлӗ

Çара пулăшни, çамрăксен кăмăл-туйăмĕ, шухăш-ĕмĕчĕ сăнарланчĕ. Çĕр çынни те «стахановла ĕçлет», «тыр-пул пухать», салтаксем валли «шур перчетке çыхать», çамрăксем хăйсен савнисене «чăтăмсăррăн кĕтеççĕ», фашистсене тĕппипех çĕнтерме вăй-хал сунаççĕ.

Каярахри тапхăрта Хĕрлĕ Çара, совет халăхĕн паттăрлăхне мухтакан такмак анлă сарăлчĕ. Кунти герой лирикăллăрах. Фашизма çĕнтерессе вăл пĕтĕм чун-чĕрепе туйса тăрать, унăн ĕмĕчĕ вăрçă хыççăнхи ĕç-пулăмпа çыхăннă: яла ырă-сывă таврăнса хуçалăха, çĕр-шыва ура çине тăратмалли çинчен шухăшлать. Çак вăрçа пуçланă Гитлерпа унăн «йытă-тусĕсене» йĕплĕ сăмахсемпе çунтарать, тăшмансене «вĕри çатма çулаттарать».

Юрă-такмаксемпе пĕрле халăхра юмах-халапсем, ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсем аталанчĕç. Вĕсенчен нумайăшĕ авалхи сăмахлăхран йĕркеленнĕ. Сăмахран, «Турра шаннă – выçă юлнă» – «Гитлере шаннă – пуççăр юлнă», «Нимĕç куçĕ – выçă куç» (ĕлĕкхи: «Пуп куçĕ – выçă куç»).

Тупмалли юмахсенче чăваш çынни халăх поэзийĕн ăсталăх мелĕсемпе усă курать. Совет çыннисене, салтакĕсене, Хĕрлĕ Çара сăнлама халăх чи ытарлă та илемлĕ меслетсем шырать, тăшмансене палăртма – халăх сăмахлăхĕнчи усал сăнарсемпе усă курать (фашист вăл – «çĕлен», «упа», «кашкăр» т. ыт. те).

Вăрçă çулĕсенче юрăçсем, юмахçăсем, такмакçăсем халăх юрри-юмахне юрласа-каласа çеç мар, хăйсем çĕнĕ хайлавсем çырса фольклор пўлмине пуянлатрĕç, халăх еткерне анлăлатрĕç. Сăмахран, Кашкăр Микули «Фюрерăн хўри татăлнă», «Хĕвел ывăлĕ», «Ванькка пултарулăхĕ», «Тăлăх Тимахви», «Суккăр пăван» юмахсем çырчĕ; Мария Васильева çĕнĕ такмаксем хыврĕ (чи паллли – «Чăт-чăт, куккук», ĕлĕкхи «Вĕç-вĕç, куккук» хăна юррин варианчĕ); Гаврил Федоров нумай юрă ăсталарĕ. Чăваш писателĕсемпе поэчĕсем те, халăх сăмахлăхĕн сюжечĕсене тата сăнарĕсемпе идейисене анлă усă курса, сахал мар илемлĕ хайлав пичетлесе кăларчĕç (Н.Шелепин «Тăршшĕ ик метр, урлăш пĕрре – территори кирлĕ Гитлере» сăвви, И.Мучин «Тавăрпи» юмахĕ

т. ыт. те). Çав хайлавсене пурне те тута-çăвар литературин йышне кĕртмелле.

Асăннă ăстасен хайлавĕсем чăннипех те халăх хушшинче шăранса тухнă еткер пек. Чĕлхипе те, кĕвĕлĕхĕпе те, сăнарлăхĕпе те, произведени тытăмĕпе те асаттесем пехиллесе хăварнă хаклă мула, ăруран ăрăва килекен иксĕлми ăс-хакăла çывăх. Çапах та вĕсем вариантсăр тата текстсен авторĕсем пур.

Юрă-такмак паттăрлăхпа çĕнтерÿ çинчен çеç каласа памасть. Вĕсенче пессимизмла шухăш мар, тарăху палăрать: вăрçа пула хĕр «юратнă тусĕнчен» уйрăлать; çамрăк арăм тăлăха тăрса юлать, упăшкине «çухатать»; çавăншăн вĕсем Гитлера ылханаççĕ; тăван ывăлĕ, пиччĕшĕ, упăшки е тусĕ вăрçăра пуçне хурасран шикленеççĕ, вĕсен «вилнĕ хучĕ» килсен, хурланаççĕ, кĕтес шанчăкне çав-çавах çухатмаççĕ т. ыт. те.

Вăрçă çулĕсенче асăннă сăмахлăх тĕсĕсемсĕр пуçне ĕлĕкхи сюжетлă юрăсем (пейĕтсем) тата салтак юррисем те халăхра çĕнĕлле янăрарĕç. Вĕсенче Гитлера пула сиксе тухнă йывăрлăхсем, инкек-синкексем, хĕн-асапсем сăнланчĕç, тем пек кансĕр пулсан та, совет салтакĕ, ял çыннипе хулари рабочи ырă усала çĕнтерессе шанса тăчĕç, пуласлăха тулăх пурнăçпа çыхăнтарчĕç.

Сăмахлăхра фронтпа тыл пĕрлĕхĕн сăлтавĕсемпе тĕллевĕсем, совет халăхĕн фронтри тата тылри паттăр кĕрешĕвĕ туллин палăрчĕ. Вĕсене кăтартма халăх тĕрлĕ илемлĕх мелĕсемпе, ытларах танлаштарусемпе усă курчĕ. Тĕслĕхрен, «Колхоз сачĕ» юрăра Совет çĕр-шывне шăпчăк юрлакан колхоз сачĕпе, Германи çĕрне çĕлен-калта йăшăлтатакан нимĕç сачĕпе танлаштарнă:

Колхоз сачĕ – йывăçлăх, йывăçлăх,
Йывăçлăхра – улмалăх, улмалăх.
Ир-каç шăпчăк юр юрлать,
Улма йывăç ал çупать.

Нимĕç сачĕ – ăвăслăх, ăвăслăх,
Ăвăслăхра – çĕленлĕх, çĕленлĕх.
Ир те, каç та чаш! тăвать,
Хыпса çăтма хапсăнать.

4. Совет тапхăрĕн вăрçă хыççăнхи сăмахлăхĕ.

Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çĕнтерÿпе вĕçленнĕ хыççăн совет халăхĕ вăрçа пула юхăннă хуçалăха хă-

вăртрах ура çине тăратас тĕллев лартрĕ, чунне парса ĕçлерĕ, пысăк çитĕнӳсем турĕ. Çакăнта чăваш халăхĕ те паттăрлăх кăтартрĕ, ăна сăмахлăхра палăртрĕ. Вăрçă хыççăнхипе хальхи пурнăç паллисене, ку тапхăрти этемĕн туйăмне туллин ӳкерекен сăмахлăх тĕслĕхĕсем юрă, такмак, шӳт пулчĕç. Вĕсен содержанийĕсенче малтанхи тапхăрсенчех вырăн йышăннă темăсем çĕнĕ пĕлтерĕшпе палăрчĕç. И.И.Одюков асăннă тапхăрти сăмахлăха çак темăсене тĕп вырăна хурса палăртать:

1) В.И.Ленин вĕрентни туллин пурнăçланса пыни;

2) коммунистсен партийĕ – совет халăхне коммунизм патне ертсе пыракан вăй пулни;

3) миршĕн, вăрçа хирĕç кĕрешни;

4) Совет çарĕ Тăван çĕр-шыва, мире хӳтĕлени, коммунизм тума пулăшни;

5) тĕнче уçлăхне тухни;

6) коммунизмла мораль тата культура;

7) коммунизмла ĕç.

Пур темăсем те пĕр-пĕринпе тачă çыхăннă, пĕр-пĕрне куçса пынă. Паллах, çак ушкăнлура идеологилĕх сисĕнет. Вăрçă хыççăнхи сăмахлăха «миршĕн, вăрçа хирĕç» тема кĕрсе çирĕпленнĕ. Мир кĕрешĕвĕ – пурнăçшăн пыракан пысăк кĕрешӳ. Çакна халăх лайăх ăнланать, сăмахлăхĕпе вăрçа чĕртекенĕсене питлет, мире пĕрлешсе хӳтĕлеме («Тавай, пулар, пĕр пулар, пĕри пуриншĕн пулар: вăрçа тухма шутлакана çăварлăхласа хурар», «Пĕр шухăшлă пулсассăн, мире сыхлама пулать») чĕнет.

Вăрçă пуçлама хатĕрленекенсене питлеме халăх сатирăллă танлаштарусемпе, эпитетсемпе усă курать: «сăмси кукăр шĕшлĕ пек», хăй вăл – «çĕр чавакан сысна пек», анчах сысна теме те, йытă теме те, этем теме те çук. Çак танлаштарусемпе Трумэна хак панă. Сăмахлăх Совет Союзне вăйлă патшалăх туса сăнлать: «Мĕн чул тăшман тапăнсан та, Совет влаçне çĕнес çук».

Мирлĕ пурнăç вăхăтĕнче совет çыннин пурнăçĕпе йăлинчи, ĕç-хĕлĕнчи, кăмăлĕнчи çитменлĕхсене, этем ăстăнĕнчи кивĕ пурнăç юлашкисене пĕтерессипе, çынна çĕнĕлле пăхса ӳстерессипе малти вырăна тухать. Пĕтĕм

халăхăн пурнăç принципĕсемпе, ĕçĕ-хĕлĕпе, йăли-йĕркипе, шухăш-кăмăлĕпе, ăс-тăнĕпе, чĕлхи-çăварĕпе, сăн-сăпачĕпе, тумĕ-йĕрĕпе тирпейлĕ, хитре, обществăна килĕшӳллĕ пулмалла. Ку вăл – çĕнĕ пурнăç тăвакан çыннăн илем (эстетика) ăнлавĕ, норми. Сăмахлăхра çакна политикăлла литературăри пек тӳреммĕн мар, уйрăм этемĕн пурнăçри, ĕç-хĕлти, кăмăлти çитменлĕхсене сивлени урлă каланă. Сăпайлăха вĕренеймен е çухатнă каччăсене хĕр упраç хăйĕн кулăш-тăрăхлав енчĕкĕнчен йĕплĕ сăмахсем кăларса тивертет. Йĕплĕ хулă вара «шурă воротник айĕнчен хура мăйĕ курăнакан», «фуфайка» хывса, «костюм» тăхăнса, мăнланса çӳрекен, «рукомойник çук пирки» «лахханранах çăвăнакан», кино курма кайсан, хĕрне билет илтерекен, вăрăм çӳçпе сухал ӳстерекен çамрăксене, нумай каччăпа е хĕрпе çӳрекенсене вăйлă тивет. Халăх ĕçкĕ-çикĕпе иртĕхсе, ĕçрен пăрăнса çӳрекенсене тиркет: вĕсем «ханша пички тĕлне çитсен парашютсăр сикеççĕ», иккен. Колхозăнне вăрласа пуянсене, йăлапа культура ĕçĕнчи çитменлĕхсене пĕтересси пирки сăвă-юрăра час-часах хускатаççĕ.

Ку тапхăрта та «Совет Çарĕ» тема сăмахлăхра пысăк вырăн йышăнчĕ. «Çĕр-шыва сыхла эс çирĕпреххĕн: ан çулăхтăр вăрçăпа тăшман», – тесе вĕрентет çар ретне тăракан салтака халăх сăмахлăхĕ. Çар çинчен калакан сăмахлăхра паттăрлăх темине пĕрле йăла ыйтăвĕ мала тухать. Хĕрсем тусĕсем патне янă çырусенче «юратни» çинчен пĕлтереççĕ, кĕтме пулаççĕ. Юрăра шӳт те, тарăху та пур. Çарти каччисем «кăтра пуçлă майра хĕрне» юратсан, хĕрсем тарăхаççĕ, киле таврăнса, хăйне мăнна хурса çӳрекенсенчен, тусĕсене пăрахакансенчен шӳтлесе е мăшкăлласа кулаççĕ.

Вăрçă хыççăн наукăпа техника вăйлă аталанать. Совет çынни тĕнче уçлăхне тухать («Гагарин пек пулар-и, тĕнче уçлăхне тухар-и?»); А.Николаев паттăрлăхне халăх чылай юрă-такмакра палăртать («Çăлтăрсем таран вĕçе-вĕçе иртсе, чапа кăларчĕ чăваш халăхне»). Андриянпа Валентина пĕр мăшăр пулнине ырласа çамрăксем космоса вĕçсе тухма ĕмĕтленеççĕ, «космос туйне» тума шутлаççĕ.

Ку тапхăрти халăх сăмахлăхĕн сăнарĕ – миршĕн кĕрешекен, çĕнĕ пурнăç тăвакан, çĕнĕ мораль принципĕсене пурнăçлакан паттăр совет çынни. Халăх идеалĕ – пĕр танлăхлă пурнăç, идиллилле коммунизм самани.

*Чăваш месекĕсем.*

Чăваш халăхĕ – мирлĕ халăх. Вăл хирĕçме, тавăрма юратмасть. Вăл пурнăçри çитменлĕхсенчен, кăлтăксенчен, хирĕçӳсенчен тăрăхласа, йĕплесе кулать. Кулăш вара чăннипех халăх пурнăçĕн тĕкĕрĕ пулса тăрать. Юлашки çулсенче анлă сарăлса пыракан сăмахлăх жанрĕ вăл – пуриншĕн те паллă, кăмăла çĕклентерекен анекдот. Мĕнрен кăна тăрăхласа кулмасть пуль çак жанрпа усă курса халăх: айван кин, упăшкине улталакан хĕрарăм, пĕр-пĕрин чĕлхине ăнланман вырăс, чăваш, тутар т. ыт. те. Анекдотпа халăх çыннăн шалти кăмăл-туйăмне, шухăшлавне, ăс-тăнне, кăмăл-сипет палăрăмĕсене çиеле кăларса култарассине тĕпе хурать. Кулăш теорине тĕпчекенсем анекдот сăмах пĕлтерĕшне çапларах ăнлантараççĕ. Анекдот тесе кулленхи пурнăçран илнĕ е шухăшласа кăларнă пулăма схема шайĕнче якатса йĕркеленĕ мыскараллă кĕске калава е халапа калаççĕ. Чăваш фольклористикинче Н.И.Егоров ăна «месек» ăнлавпа палăртма сĕнет. Месекре ăнсăртлăх тата кĕтмен тавçăруллă хурав витĕмлĕ. Анекдотри хĕрсе çитнĕ саманчĕ ялан тенĕ пекех кĕтмен çĕртен тата час-часах тĕрĕс те çивĕч каланă сăмахпа вĕçленет. Пирĕнпе хурăнташ чĕлхеллĕ халăхсем (тутарсем, пушкăртсем т. ыт. те) ку терминпа тахçантанпах туллин усă кураççĕ.

Месексенче ытларах геройсем калаçаççĕ, вĕсемех пулса иртнĕ пулăмсем çинчен каласа параççĕ. Анекдотсенче халăх тăрăхлавĕ, йĕплĕ кулли пысăк пĕлтерĕшлĕ. Çитменлĕхсем пĕтчĕр, лайăххи çиеле тухтăр текен принцип вĕсенче тĕп вырăн йышăнать. Анекдотсенчи кулăшла самантсем пĕтĕмпех çыннăн психологийĕнчен, характерĕнчен, тĕрлĕ çыхăнусемпе хутшăнусенчен тухса тăраççĕ. Урăхла вăл халăх хутшăнăвне çăмăллатмалли, хаваслантармалли хатĕр. Ăна итлеме юратман çын çук

та пулĕ. Унпа çула тухсан çул кĕскелет, ĕçлесе ывăннă хыççăн ĕшенни иртсе каять, кăмăл уçăлать. Анекдот хаваслантарать, тĕрлĕ тĕслĕ кулă çуратать. Анекдотри кулăш тĕсĕ камран е мĕнрен кулма палăртса хунине кура хăйне евĕр хаклакан пулăм шутланать. Месекре кулăш пĕлтерĕшĕ тĕрлĕрен пулать: е вăл ытарлă, е вăл тăрăхлавлă, тепĕр чухне – вĕрентӳллĕ, хăш чухне намăслантаракан пĕлтерĕшлĕ.

Чăваш месекĕ çинчен тĕплĕнрех çыракансенчен пĕри – Петр Метин. Çак пултаруллă ăсчах, анекдот халăх хушшинче мĕнле пĕлтерĕшлĕ пулнине тĕпченĕскер, çапла çырать: анекдот вăл «пĕрре ăш каниччен култарса çут тĕнчере мĕн япăххи пуррине мантарать, савăнтарать; иккĕмĕшĕнчен, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен килĕшӳллĕ мар е киревсĕр пулăмсене тиркесе те питлесе сатира шайне çитерет, хăйĕн ытарлăхĕпе воспитани пĕлтерĕшне те вăйлатма пултарать»[38]. Анекдот кулленхи пурнăçăн тĕрлĕ енĕсене халăх сăмахлăхĕн ытти жанрĕсенчен анлăрах илет. Кунта çынсем пĕр-пĕрин ĕçне, калаçăвне, шухăшне сăнаççĕ, юратупа савăшăвăн вăрттăн енĕсене уçса параççĕ. Халăх сăмахлăхĕн ытти жанрĕсенче калама юраман кĕтнĕ «уççăнлăх», паллах, пурнăçа чĕррĕн, ӳкерчĕклĕ курма май парать. Месексем тĕрлĕ халăх чĕлхинчен кĕрсе хăвăрт сарăлма пултараççĕ. Тĕнчере сарăлнă темĕн тĕрлĕ шӳте те вырăнти халăх пурнăçне çывăх ăнланмалла чĕлхепе каласа пама пултарать. Çӳлерех асăннă тĕпчевçĕ шухăшĕпе, «çак ансатлăх анекдотшăн вăхăтпа талккăшра питĕ хăвăрт тата анлă сарăлмалли, пурăнмалли тата витĕм кӳмелли мел пулса тăрать».

Анекдот ăнлав юлашки çулсенче халăх хушшинче, хаçат-журналта, радио-телевиденире, наукăра тымар ярса пычĕ. Фольклор тĕслĕхĕсене пухакансемпе тĕпчевçĕсем кун йышшисен шутне кулăшла калавсемпе халапсене кĕртнĕ, вĕсене шӳтсем тесе палăртнă. Паянхи кунччен месексене чăваш фольклорисчĕсем çав тери тĕшлĕ тишкермен. Вĕсен уйрăмлăхĕсене XIX ĕм. çурринчех

[38] Метин П.Н. Чăваш анекдочĕ //Ялав. 1999. 5 №. 105 с.

С.Михайлов асăрханă: 1854 ç. вăл «Легенды про вятчан» ятлă анекдотсен пуххине хатĕрлет. И.Я.Яковлев та «Чăваш кĕнекинче» темиçе шӳтлĕ кĕске калав пичетлет. Асăннă хайлавсем анекдотри пекех шӳтлĕ калаçу тĕслĕхĕсемпе йĕркеленнĕ.

XX ĕм. пуçламăшĕнче И.Н.Юркин халăх шӳчĕсене пухать, 1907 ç. Хусанта «Шӳтсем» ятлă пĕчĕк кĕнеке пичетлесе кăларать. Шутсен тематики анлă, сюжечĕсем çивĕч. 1928 ç. Г.И.Комиссаров (Вантер) «Утăм» журналта «Чăвашсем хушшинче çӳрекен кулăшла халапсем» ятпа темиçе анекдот пичетлет. «Вантер пуçтарнă текстсем, тĕпрен илсен, сăмахсен нумай пĕлтерĕшне тĕпе хурса йĕркеленипе уйрăлса тăраççĕ», – тесе палăртать ун пирки П.Метин тĕпчевçĕ. Ун шучĕпе, ĕлĕкрех халăх шӳчĕсене фольклористсем юмахсен ушкăнне кĕртнĕ-мĕн. Çакна вăл чăваш халăхĕн йăла юмахĕсен пуххисенче ялан тенĕ пекех 3-4 шӳт пулнине кура шута илсе çирĕплетет.

Хальлĕхе чăваш анекдочĕсене пухса системăласси те кая юлса пырать. П.Метин тĕпчевçĕ месексене çакăн пек ушкăнсем çине пайлать:

1. Чăваш халăхĕн кулленхи пурнăçĕн, калаçăвĕн, йăли-йĕрки никĕсĕ çинче йĕркеленнĕ чăн чăвашла шӳтсем.

2. Ытти халăх шӳчĕсенчен илнĕ, анчах ăна чăвашлатнă шӳтсем.

3. Пур халăхшăн та типлă, пĕр евĕрлĕ шӳтсем.

Фольклорист анекдотсене темăсем çине ушкăнлать:

1) уйрăм çын пурнăçĕн кулăш енĕсем;

2) социаллă пĕлтерĕшлисем;

3) политика пĕлтерĕшлисем;

4) эротика пĕлтерĕшлисем т. ыт. те.

Мĕншĕн юратса йышăнать чăваш анекдотсене? Мĕнре-ши çак вăрттăнлăх? Çак ыйтусем çине те хурав парать тĕпчевçĕ. «Чăвашăн чи анлă сарăлнă тата килĕштернĕ, юратнă анекдочĕсем вĕсем ахаль калаçу лексикинчи сăмахсене тĕпе хурса йĕркеленинчен; синонимлă сăмахсенчен эмоцие тулли палăртакан шухăша çивĕчрех тума май параканнисене суйласа илнинчен; сасăсем енчен пĕр пек, анчах пĕлтерĕшĕ тĕлĕшĕнчен

урăхла ăнлава палăртакан (омонимлă) сăмахсемпе çавăн пекех пĕлтерĕшĕ енчен тĕрлĕ, анчах сасăсем енчен пĕрешкел илтĕнекен сăмахсемпе (паронимсемпе) анлă усă курса йĕркеленине палăртмалла», – тет вăл çак вăрттăнлăхăн пĕр енне чĕлхере шыраса.

Месек хăвăрт, самантра çуралса халăх хушшинче çиçĕм пек сарăлать. Вĕсене пухса ятарлă кĕнекен кăларма та вăхăт ĕнтĕ, тĕпчевçĕсен те тĕпчемелли, тишкермелли пайтах.

Сăмахлăх та пурнăçпа улшăнса çĕнелет. Паянхи куна илсен, халăх ытларах юрă-такмак, шӳтсемпе месексем шутласа кăларать. Содержанипе вĕсем хальхи пурнăçа сăнлаççĕ. Тӳрех палăртмалла: паянхи обществăпа этемĕн кăмăл-туртăмне палăртма е сăнлама пултаракан сăмахлăх жанрĕсем çеç тытăнса тата аталанса пыраççĕ. Çӳлерех асăннă тĕслĕхсемсĕр пуçне ваттисен сăмахĕсем, тупмалли юмахсемпе йăла юмахĕсем халăхра чĕрĕлсе тăнине каламалла. Тепĕр паха ен вăл – чăваш çынни ĕлĕкрен килекен йăла-йĕркесене тытса пыни, тепĕр хут вĕсене чĕртни. Ку тĕлĕшпе районсемпе хуласенчи культура учрежденийĕсем нумай вăй хураççĕ, халăхра фольклор традицийĕсене аталантарма ырми-канми тăрăшаççĕ, çавна пулах авалхи уявсемпе йăласем те, тĕрлĕ йышши юрă-кĕвĕ те, ташă-сăвă та амаланчĕ. Республикăра çеç мар, тулай чăвашĕсем патĕнче çак юхăм çулран-çул вăй илсе пырать, чуна савăнтарать.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçичченхи халăх сăмахлăхĕ.
2. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен хывнă фольклор.
3. Совет тапхăрĕн вăрçă хыççăнхи сăмахлăхĕ.
4. Чăваш месекĕсем.
5. Юлашки вăхăтри сăмахлăх тĕсĕсем, уйрăмлăхĕсем.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1. *Ендеров В.А.* Творчество чувашских народных сказителей в годы Великой Отечественной войны //Тра-

диции и новаторство в чувашской литературе: Сб. ст. Чебоксары, 1986. С. 96-114.

2.*Ендеров В.А.* Пере пĕлмен – алтуйи //Хатĕр пул. 1985. 12 №. 20 с.

3.*Ленин* халăх чĕринче /Е.С.Сидорова пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1969. 151 с.

4.*Метин П.Н.* Чăваш анекдочĕ //Ялав. 1999. 5 №. 105-108 с.

5.*Одюков И.И.* К истории собирания и публикации чувашского фольклора в 20-30-х гг. //Вопросы чувашского языка, литературы и искусства: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1960. С. 94-113.

6.*Одюков И.И.* Ленин сăнарĕ чăваш халăх сăмахлăхĕнче //Ялав. 1959. 4 №. 29-30 с.

7.*Одюков И.И.* Совет саманинчи чăваш халăх сăмахлăхĕ: Студентсене вĕренмелли кĕнеке /Чăваш ун-чĕ. Шупашкар, 1975. 240 с.

8.*Одюков И.И.* Халăх сăмахлăхĕ Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи çинчен //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 46. Филология. Чебоксары, 1970. С. 87-105.

9.*Петрухин А.И.* Мировоззрение и советский фольклор. Чебоксары, 1983. 176 с.

10.*Родионов В.Г.* К вопросу об уровне и характере бытования чувашского фольклора //Статистико-этнографические исследования в Чувашской АССР: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1984. С. 118-122.

11.*Родионов В.Г.* Фольклор у чувашей //Чуваши: Современные этнокультурные процессы. М.: Наука, 1988. С. 140-154.

12.*Сидорова Е.С.* Современное устное творчество чувашей Поволжья (по материалам экспедиции) //Учен. зап. /ЧНИИ. Вып. 49. Филология. Чебоксары, 1970. С. 91-105.

13.*Сидорова Е.С.* Чувашский фольклор периода Великой Отечественной войны. Вып. 59: Чувашский язык, литература //Тр. /ЧНИИ. Чебоксары, 1975. С.185-197.

14.*Тукташ И.С.* Совет саманинчи чăваш фольклорĕ //Илемлĕ литература. 1941. 5 №. 116-140 с.; 6 №. 129-142 с.

4 сыпӑк

# ЧӐВАШ ХАЛӐХ ДРАМИ

**Чӑваш халӑх драми пур-ши е ҫук? Кӗске историйӗ. Фольклорта драма элеменчӗсем сӑнарланни.**

Кашни халӑхӑн ӑс-хакӑл культури, йӑли-йӗркийӗ, илемлӗ пултарулӑхӗ пур. Ҫаксем пурте пӗрле профессилле ӳнере аталанма, вӑй илме пулӑшнӑ. XX ӗм. хӑш-пӗр тӗпчевҫӗсем 20-30-мӗш ҫҫ. чӑваш халӑхӗн илемлӗх традицисем пулман, литературӑпа искусство «ним ҫук ҫӗрте ҫуралнӑ» тесе ҫирӗплетнӗ. Ку шухӑша хирӗҫлесе вырӑссен паллӑ ҫыравҫи К.Горбунов ҫапларах калать: «Чӑваш енре, – тет вӑл, – халӑх пултарулӑхӗ ҫав тери тӗлӗнмелле пуян. Кунта юрӑсем, юмахсем, халапсем аваллӑха ҫеҫ мар, революци хыҫҫӑнхи вӑхӑта та нумай енлӗн ҫутатаҫҫӗ. Каларӑшсем, танлаштарусем, такмаксемпе юптарса каланисем куллен пулса иртекен ӗҫсене те яр-уҫҫӑн илемлетсе каласа параҫҫӗ»[39].

Чӑвашӑн йӑли-йӗрки, вӑйӑ картисем, ҫамрӑксем лармана е улаха ҫӳренисем, туй мешехисем т. ыт. те – халӑх шухӑшласа кӑларнӑ илемлӗ ӑс-хакӑл, унӑн иксӗлми еткерӗ тата ҫӑлкуҫӗ.

Юрӑ-кӗвӗсене, сӑмахлӑхӑн ытти жанрӗсене каласа панисӗр пуҫне, пит-куҫа вылятса та, ал-урапа ӳт-пӗве хускатса та палӑртнӑ ӑстасем. Унашкал туни текста ытларах ӑнланма пулӑшнӑ. Еткерлӗх, ҫапла майпа, кун пек чухне курӑм пӗлтерӗшпе ҫеҫ ҫӳремен. Ҫав вӑхӑтра сӑнарлӑха палӑртаканнисем, вӗсене кураканнисем хӑйсем те вылянӑва хутшӑнакансем пек пулма пултарнине палӑртнӑ, ун пек пулма хистенӗ. Ҫакнашкал ушкӑнсене хутшӑнакансем сӑмах ӑстисен мелӗсемпех усӑ кураҫҫӗ (традицилӗх, импровизаци, вариантлӑх т. ыт. те).

Чӑваш халӑхӗн сӑмах вӗҫҫӗн ҫӳрекен поэзийӗнче халӑх драми валли материал иксӗлми.

---

[39] Ванюшкин К.И. Народные истоки в самодеятельном искусстве //Чувашское народное творчество: Сб. ст. /ЧНИИ. Чебоксары, 1985. С. 88.

Халăх тытса пыракан йăла-йĕркесене театровед куçĕпе пăхасси вырăс наукинче XIX ĕм. пуçланнă. Сăмахран, В.Н.Всеволодский, Н.И.Савушкина, В.Е.Гусева тĕпчевçĕсем йăла-йĕркесене театр пуçламăшĕ тесе хаклаççĕ. Вĕсен шухăшĕпе, театр историне йăла-йĕрке ирттернĕ çĕрте шырамалла-мĕн.

Чăваш йăли-йĕркисем пирки И.Дмитриев фольклорист-театровед та çак шухăшах çирĕплетет. Вăл каланă тăрăх, профессилле театрпа халăх драмин (театрĕн) кун-çулĕсем пĕрешкелех иккен: иккĕшĕ те йăла-йĕркесенче нумай вăхăт хушши аталанса йĕркеленнĕ, вĕсен тĕшшине йăла-йĕрке поэзийĕнче шырамалла пулать.

Халăх драмине тишкерме пуçличчен, пĕр-ик сăмах çыруллă сăмахлăхри драма çинчен аса илер. Пурте пĕлетпĕр, литературăн 3 несĕлĕ (речĕ) пур: эпос, лирика тата драма. Чăваш драматургийĕ XIX ĕм. варринче йĕркеленме пуçлать те XX ĕм. пуçламăшĕнче хăйне уйрăм несĕл пек аталанса çитет. Вăл чи малтанах халăхăн йăли-йĕрки çинче вăй илсе çуралнă, çавăнпа чăвашăн кулленхи ĕçне-хĕлне, унăн шалти тата тулашри пурнăçне йăла-йĕркери ĕç-пуç урлă кăтартать.

Мĕн вăл драма? Тĕпчевçĕсен шухăшĕпе, драма вăл – литературăра актерсене сцена çинче выляса кăтартма диалог формипе çырнă хайлав. Вĕсен авторĕ пур. Артистсем сцена çинче пĕр-пĕр драмăна выляса кăтартаççĕ, куракансем çак вăййа хутшăнмаççĕ, сцена çинче пулса иртекен ĕçсене шухăшпа хăйсен чунĕ-чĕри витĕр кăлараççĕ.

XIX ĕм. çурриччен чăваш драми пулнă-и? Ку ыйту çине пире халăхăмăрăн иксĕлми пуянлăхĕ – сăмах вĕççĕн çурекен пултарулăхĕ хуравлĕ.

Чăваш халăх юррисене, туй йăли-йĕркисене, ача-пăча вăййисене илсе пăхар-ха. Кунта чăн-чăн спектакль пырать тейĕн. Драма элеменчĕсем куç умне яр-уççăн тухса тăраççĕ. В.П.Станъял халăх драмине «халăх вăййишилĕкĕ» ăнлавпа палăртать. Ун шухăшĕпе, тĕрлĕ çĕрте – хурал пӳртĕнче, хĕр сăринче, вирĕмре, вăйăра, пухутапăра, ака туйĕнче, сĕренре, выртмара, чуччу патĕнче,

юмах-халап каçӗнче е ӗç хыççӑн каннӑ чухне выляса кӑтартнисене те, туйсемпе чӳклемесенче выляна тата пӗтӗмӗшле е пайӑн-пайӑн юрланӑ мешехесен тӗсӗсене те халӑх вӑййи-шилӗкӗн тӗслӗхӗ теме пулать[40]. Халӑх вӑййи-куллине чиркӳ çыннисем сивленӗ. Халӑх мыскараçисене вырӑс тӗнӗ яланах хирӗç тӑнӑ, хӗстерме тӑрӑшнӑ. Çавӑнпа чӑваш камичӗсене кивӗ çырулӑх вӑхӑтӗнче çырса илмен, ӑçта та пулсан вылянисене асӑрхасанах хӑваласа янӑ, выляттарман.

Апла пулин те, халӑх драми пысӑк уявсемпе мешехесен картине кӗрсе юлнӑ. Асӑрхӑр: чӑваш уявӗсем ӗмӗртенпех камит-кулӑшпа, драмӑсемпе çав тери пуян. Выляну пурнӑçри ӗçсем тавра пулса иртнӗ. Кулӑшла пуплевсем, ача-пӑча айкашни, чухӑн пуяна улталани, килти-йышри пӑтӑрмах тата хӗрпе каччӑн юрату хӑтланкаларӑшӗсем выляса кӑтартма меллӗ пулнӑ. Тӗслӗх вырӑнне В.П.Станьял Самар облаçӗн Клевлӗ районӗнчи Хурашыв ялӗнче çырса илнӗ «Тунката хӑвӑлӗ» драмине тата «Хӗр килӗшни» камитне илсе кӑтартать. Асӑннӑ хайлавсене, чӑвашсен ку таранччен те ун йышши драма-камитсем сыхланса юлманнине шута илсен, вырӑс халӑх драминчен кӗрсе юлнӑ тесе хаклама май пур. Кун пек сюжетсем ытларах вырӑс халӑх драминче питӗ нумай.

Вӑйӑра, выртмара, туйра, ака туйсенче кулӑшла е хӑрушла ӳкерчӗк туса кӑтартасси чӑвашсен ӗмӗртенпех пулса пынӑ. Сӑмахран, чӑваш çыннин ятарласа «выляв эрни» пулни те историре ӳкерӗнсе юлнӑ (чиркӳçӗсем ӑна «шуйттан эрни» тенӗ). Асӑннӑ йӑла виръял тӑрӑхӗнче сарӑлнӑ. Ӑна яш-кӗрӗм раштавра, сурхурипе вирӗм вӑхӑтӗнче irттернӗ, çветке çӳрени тенӗ. Çветке ушкӑнӗ палламалла мар тум тӑхӑннӑ та (упа, кашкӑр, таркӑн т. ыт. тем те пӗр сӑнарсем) килӗрсен киле юрласа-ташласа-выляса çӳренӗ. Пӳрте кӗрсенех кил хуçине, ватти-вӗттине пуç тайнӑ, усал-тӗселе вӗтсе кӑларма ирӗк

---

[40] Никитин (Станъял) В.П. Халӑх вӑййи-шилӗкӗ //Чӑваш сӑмахлӑхӗ: X класӑн вӗренупе вулав кӗнеки. 1-мӗш пайӗ /Н.Г.Ивановӑпа В.П.Никитин пухса хатӗрленӗ. Шупашкар, 1993. 162 с.

ыйтнă. Тумтире, сĕтел-пукана, пĕрене-алăка пушăпа çапса илнĕ, сăмахсем каланă: «Чир-чĕр, усал-тĕсел, тусан-пусан тасалтăр, пӳрен-суран юсантăр!» т. ыт. те. Çветке кăтартнă хыççăн килти тумтире урама тухса силлесе кĕмелле, урайне вĕлтрен е эрĕм шăпăрпа шăлса каймалла пулнă. Вырăнĕ-вырăнĕпе çак йăла халĕ те пур.

Халăх драмине выляса кăтартнă чухне театрти пек чаршавсемпе, декорацисемпе усă курман. Куракансемпе вылякансем час-часах пĕр-пĕрин рольне кĕрсе кайма пултарнă. Акă, çӳлерех асăннă çветкенех илер. Кунта йăлана хутшăнакансем кил хуçисене те ташлаттараççĕ, калаçăва хутшăнтараççĕ, юрлаттараççĕ т. ыт. те. Унсăр пуçне, выляну «артисчĕсем» тĕрлĕ тумсемпе, маскăсемпе пулни нумай пĕлтерĕшлĕ. Пĕр енчен, çакă хăйне ыттисене паллаттарасшăн мар пулнине кăтартать, тепĕр енчен, маскă айĕнче çын хăйне ирĕклĕ тытать, ахаль чухне именсе тăнă пулсан, кунта хăйне тӳрккесрех тытнине те çынсем каçарасса шанать.

Тин çеç илсе кăтартнă тĕслĕх чăваш культурине ытти халăхран, уйрăмах вырăссенчен кĕнĕ пулас. И.А.Дмитриев, акă, чăвашсен ятарласа халăх умĕнче выляса кăтартмалли халăх драми пулса е аталанса çитейменнине палăртать. Ун шухăшĕпе, вăйă культурипе искусстви театр пуçланас тапхăра çитсе ун шайĕнче çеç чарăнса тăнă. Паллă театровед халăх драмин элеменчĕсене халăхăн вăйă искусствинче – тĕрлĕ йăла-йĕрке формисенче, уявсенче, ачасемпе çамрăксен вăййисенче, ăрупа йăх тата ял-йыш туррисене асăнса ирттернĕ кĕлĕсенче асăрхать. Кунта тĕрлĕрен диалогсем, пиг-куç е алă-ура хусканăвĕсем, улăштару тумтирсемпе маскăсем йышлă пулни, вĕсемпе пĕлсе усă курни çавнашкал пĕтĕмлетӳсем тума май парать автора. Ученăй вăйăлла пулăм формипе унăн содержанине пĕрпĕринчен уйăрмасăр, çак формăсене халăхăн вăйă ӳнерĕпе курăмлă культура тексчĕсем тесе çирĕплетет[41].

---

[41] Дмитриев И.А. Этнотеатральные формы в чувашском обряде /ЧГИГН. Чебоксары, 1998. С. 8.

Çапла вара, йăла-йĕркесем, майĕпен хăйĕн малтанхи асамлăхĕпе мифла содержанин пĕлтерĕшне çухатса, вăйă вырăнне çеç тăрса юлаççĕ, вăхăт иртнĕçемĕн халăха савăнтармалли курăмлă театр пĕлтерĕшĕпе çÿреме пикенеççĕ.

И.А.Дмитриев чăваш халăх драмин уйрăмлăхĕсене ача вăййисенче, çамрăксен вăййи-куллисенче, йăла-йĕрке хутшăнăвĕсенче, йăлапа çыхăннă уявсенче тата ăру-йăх кĕллисенче, вĕсен ытти сыпăкĕсенче (фрагменчĕсенче) асăрхать, тĕплĕн тишкерсе хак парать, халăх драми профессилле театра аталанса вăй илме пулăшнине кăтартать.

Чăваш халăх драми çинчен çырнă ĕçсем сахал: 1925 ç. «Сунталăн» 11 №-че «Халăх театрĕн пуçламăшĕ» ятпа паллă мар тĕпчевçĕ (Иллариус) пĕчĕк кăна статья пичетленĕ, 50-мĕш çулсенче Н.С.Павлов «Драматические элементы поэмы «Нарспи» К.В.Иванова» тата «Зарождение драмы в чувашской народной поэзии» пысăк наука ĕçĕсем, 1998 ç. И.А.Дмитриев «Этнотеатральные формы в чувашском обряде» кĕнеке пичетлерĕç. Унсăр пуçне В.П.Никитин (Станъял) халăх драмине çиелтен тишкерчĕ, «Халăх сăмахлăхĕ: 10 класăн вĕренÿпе вулав кĕнеки» вĕренÿ пособийĕнче халăх драмин 2 тĕслĕхне кун çути кăтартрĕ. Ку, паллах, çителĕксĕр. Чăваш халăх драми çинчен тĕпчемелли пайтах, çырмалли те çителĕклех.

Драмăна каласупа выляну пĕрлĕхĕ тесе пăхсан, халăх сăмахлăхĕн нумай жанрĕсенче драма элеменчĕсене йышлăн тĕл пулатпăр.

Халăх поэзийĕнче тĕл пулакан драма элеменчĕсемпе паллашăпăр. Чи авалхи драма формисем вĕртернисенче тата тупа сăмахĕсемпе чĕлхесенче яр-уççăн палăраççĕ. Вĕсенчи жанр уйрăмлăхĕ – калаçу: яланах пĕр-пĕр ĕçпе çыхăннă, кунта калаçупа выляну пĕрлĕхĕ (драма элеменчĕсем) çителĕклех. Тĕслĕхрен, «ырă-хаяр сарăлтăр» тесе, пĕр-пĕр пысăк ĕçпе тухса кайнă чух каланă, çăкăр татăкĕ е ытти апат-çимĕç ывăтнă. Виле пытарнă чухне те шăтăка тăпра сапнă чухне (ку хăех действо пулать) сăмахсем каланă (сăмахран, «йывăр тăпру

çăмăл пултăр!»). Апла пулсан, хусканусемпе сăмах каланисем пĕрле çеç пĕтĕмĕшле действо пулса тăраççĕ, халăх драмине аса илтереççĕ.

Вĕрӳçĕсемпе суруçăсем тĕрлĕ чир-чĕртен чĕлхесем вĕрнĕ чух монологсен пусăмĕ (ролĕ) татах та вăйланни сисĕнет. Çӳлте асăннă ансат формулăсемпе танлаштарсан, кунти монолог хăйĕн тĕллевне сăмах вăйĕпе пурнăçлама тăрăшать. Кунта чĕлхе илемлĕхĕн элеменчĕсемпе – психологилле параллелизмсемпе анлă усă кураççĕ. Сăмахран, «Ахăрса килекен аслатие хăçан та хăçан хаяр ӳкет, çавăн чухне тин хаяр ӳктĕр çак çын çине» тĕслĕхре чĕлхе те, выляну та йывăрланса пыни куç кĕретех. Вĕсемпе пĕрле пит-куç хусканăвĕ те, тĕрлĕрен япаласем те хăйсен вырăнĕнче пулнине çирĕплетсе параççĕ. Чир ернисем вĕрӳçĕсем усă куракан çĕçĕ е хурăн турачĕ, йывăç е тимĕртен тунă япала, шыв тултарнă савăтсен асамлă вăйне чăннипех ĕненеççĕ.

Драма элеменчĕсем юрăсенче йышлă. Сăмах вĕççĕн çӳрекен ытти жанрсем пекех юрăсенче те халăх философийĕ, моралĕ, синкретикăллă асамлăх вăйĕсене ĕненни палăрать. Апла пулсан, юррăн функцийĕсем те вĕрӳсуру чĕлхисенчи пекех. Кунта тĕл пулакан драма формисем, вылянусем пирĕншĕн ăнланмалла пулса тухаççĕ. Ытти халăхсен пекех, чăвашсем те авалхи ĕç юррисенче асамлă вăя шаннă, ĕненнĕ. Юрăсенче япалана чĕррĕн кăтартни, вĕсене хистесе калани пур:

Сăвай çапма пире чĕнчĕç,
Кĕпер тума пире хушрĕç.
Сăвай, сăвай турех лар.
Çĕр тĕпнелле анах пар!
Пире тукмак нимех мар,
Пĕр йăтар та пĕр çапар!
Ай-пĕрре,
Хай-иккĕ,
Ай-виççĕ,
Хай-тăваттă!

Юрăсене чи малтан асамлă вăй-хăватпа çыхăнтарса юрланă. Вăхăт иртнĕçем асамлăх çухалса пынă. Вĕсенче драма элеменчĕсем – монолог та, диалог та – пур. Юрра юрланă чух содержанине кура выляса кăтартма меллĕ. Ĕç юррисен тĕп уйрăмлăхĕ – асамлăха çухатнă

хыççăн ĕç ритмне тĕпе хуни. Драма элеменчĕсем кунта хресченпе ĕç объекчĕсем хушшинче пулса иртекен пулăмсене драмăна тŷр килекен элементсем урлă (сăнартан сăнара куçни, вылянусем, диалогсемпе вĕсен калаçу формисем, ŷт-пŷ, пит-куç хусканăвĕ, тумтирсем) палăртаççĕ.

Йăла-йĕрке поэзийĕ ăрури, йăхри, ушкăнри, ялйышри (обществăри) хутшăнусемпе йăлисене çутатать. Çапла вара, йăла-йĕркене хутшăнакансен йышĕ те нысăк. Йыша пула драмăн нумай мелĕсене усă курма май пур. Пĕрремĕшĕ, ушкăнпа юрласа пĕр-пĕринпе çывăххăн хутшăнма май пурри; иккĕмĕшĕ, йăлайĕркесене ирттернĕ чух вылянусем, театрти пекех, сцена çинчи евĕр çывăхра йĕркеленеççĕ, драма элеменчĕсемпе усă кураççĕ.

Чăваш мешехисенче драмăн тĕп элеменчĕ – диалог – малти вырăнта. Унпа мăн кĕрŷ туллин усă курать: туя ертсе пырать; саламалик калать; туй халăхĕпе, хĕрпе каччăн ашшĕ-амăшĕсемпе сăмахлать; туй йĕркине çирĕппĕн тытса пырать.

Туй ирттернĕ чух диалогсăр пуçне драматизацин ытти формисемпе пĕлсе усă курни паллă. Сăмахран, пулас кĕрĕве йĕкĕлтесе-тăрăхласа кулнă чух юрă-сăвă калани. Çак юрра хĕр çуммисем, хĕрĕн ашшĕ-амăш килĕнче пŷрте кĕриччен юрланă. Ташлаканĕсем картиш варрине сăра витри, çăкăрпа чăкăт, каччă валли кĕпе, пулас кин валли сурпанпа тутăр хунă, ун йĕри-тавра карталанса ташланă. Çапла сăмахсемпе такмакланă:

Ах, аппаçăм, аппаçăм!
Виçĕ пĕрчĕ йĕтĕнрен
Кĕрŷ кĕпи кăларчĕ,
Вăл та пулин шăтăклă.
Ана йăранĕ куккăр,
Пирĕн йысна суккăр!

Çак асăннă сценка диалог формипе вĕçленет: хĕр çуммисемпе каччă енчисем хаваслăн та шавлăн тавлашаççĕ, пĕр-пĕринпе сăмахласа-юрласа ăмăртаççĕ, илемлĕн те хитрен кĕрŷшпе (йыснăшпе) пулас кинĕнчен (инкĕшне) тăрăхласа шŷтлеççĕ.

Халăх драмин чи аталаннă тĕсĕ шутне чăвашсен вăййисене, уявĕсене кĕртмелле. Уяв – чăваш çамрăкĕсен çуркуннехи савăк йăпанăвĕ, чи илемлĕ те юратнă вăхăчĕ. Вăййасене темиçе ялти çамрăк хутшăннă, ĕлĕкренпех пыракан традицисене тытса пырса, яш-кĕрĕм асăннă уявсенче çамрăклăхăн ыйтăвĕсене тĕрлĕ сценкăсем, вылянусемпе хусканусем, диалогсемпе монологсем урлă кăтартма тăрăшнă. Акă, хĕрсем урам тăрăх карталанса ытти каччăсемпе хĕрсене уява чĕнсе йыхăраççĕ:

Атьăр, хĕрсем, сăв калар,
Атьăр, хĕрсем, сăв калар,
И, вăйăçăм!
Савнисене йăпатар.
Савни, эсĕ вăййа тух,
Савни, эсĕ вăййа тух,
И, вăйăçăм!
Çума-çумăн сăв калар.

Пурте пуçтарăнса çитеççĕ. Малалла ĕç театрти пек аталанать: вăййа хутшăнакансем икĕ ушкăна пайланаççĕ; карталанса е хире-хирĕç юрласа утаççĕ е каялла чакаççĕ; кашни ушкăн пĕр-пĕр каччăна (е хĕре) суйлать; каччи хĕрне ушкăнран уйăрса илейсен, вăл унпа уçăлса çӳрет; вара вăййа çĕнĕ мăшăр хутшăнать т. ыт. тс. Çак сцена юрланă хушăрах пулса иртет. Пĕтессе те вăйă карти драматизациленĕ юрăпа вĕçленет:

Атьăр, киле каяр-и?
Кил сăввине калар-и?
Çулçă вĕçет çиле май,
Атьăр, хĕрсем, киле май!

Чăваш халăх драмин тĕсĕсем сюжетлă юрату юррисенче аван курăнаççĕ. Ун йышшисен шутне Етĕрне районĕнче çырса илнĕ «Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?» евĕр юрăсем кĕреççĕ. Кунта сюжет диалог формăллă, ашшĕ-амăшĕ тата хĕрĕ хушшинче пулса иртет. Ку вырăссен сатирăллă «Мнимый барин» юррине çывăх, тематикипе йăла юррисен ушкăнне кĕрет. Хайлаври тĕп шухăш (тема) – хĕрĕ мĕншĕн йăлăнтарнин сăлтавне ăнланман, тĕшмĕртеймен ашшĕ-амăшĕнчен тăрăхласа кулни:

– Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Икĕ картам ыр ут пур,

Пĕри сана пултăр-и?
– Ай, апай, ай, аттей,
Сула пулса вилччĕр-и!

Темиçе хутчен мĕн кирлине ыйтать ашшĕ-амăшĕ хĕрĕнчен – хуравне кĕтсе илеймест. Юлашкинчен хитре яш çинчен сăмах пуçараççĕ. Хĕрне çакă çеç кирлĕ-мĕн: унăн кăмăлĕ çĕкленсе каять, ашшĕпе амăшне тав сăмахĕ калать:

– Хĕрĕм, сана мĕн кирлĕ?
Ик ял çинче сар ача,
Пĕри сана халаллă.
– Ай, апай, ай, аттей,
Паçрах çавна калас мĕн!

Çапла вара, чăвашсен йăла-йĕрке поэзийĕнче, ытти жанрсемпе танлаштарсан, халăх драмин элеменчĕсем çав тери йышлă сыхланса юлнă. Ку вăл нумай сăлтавран килнĕ-тĕр. Пĕрремĕшĕ, йăла-йĕркесенче тĕп выраňта – яланах йыш, ушкăн; иккĕмĕшĕ, вĕсен хутшăнăвĕсемпе ĕçĕ-хĕлĕ кулленхи калаçура, диалогра, пĕр-пĕринпе хутшăннинче яр-уççăн палăрать. Малтанласа çак йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăх чăвашăн тĕнче курăмĕпе ăсхакăлне мифла шухăшлаттарать пулсан, каярахпа вăл илемлĕх тата сăнарлăх меслетне çеç кусса пырать. Виççĕмĕшĕ, нумай йăла-йĕркере ĕç халăхĕн пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне тата шухăш-кăмăлне сцена искусствин саккунĕсене пăхăнса сăнарласси, драмăпа театр меслечĕсемпе мелĕсене тĕпе хурса кăтартасси уçăмлăн ўкерĕннĕ.

## ЫЙТУСЕМПЕ ĔÇСЕМ

1. Чăваш халăх драмин кĕске историйĕ.
2. Йăла-йĕркере сăнарланнă драма элеменчĕсем.

## УСĂ КУРМАЛЛИ ЛИТЕРАТУРА

1. *Богатырев П.Г.* Вопросы теории народного искусства. М.: Искусство, 1971. 544 с.

2. *Ванюшкин К.И.* Народные истоки в самодеятельном искусстве //Чувашское народное творчество: Сб. ст. Чебоксары, 1985. С. 87-97.

3. *Дмитриев И.А.* Этнотеатральные формы в чувашском обряде /ЧГИГН. Чебоксары, 1998. 280 с.

4. *Ивлева Л.М.* Два методологических аспекта в театроведческом изучении обрядово-игрового фольклора //Методы изучения фольклора: Сб. науч. тр. Л., 1983. С. 108-117.

5. *Никитин (Станьял) В.П.* Халăх вăййи-шилĕкĕ //Чăваш сăмахлăхĕ: X класăн вĕренӳпе вулав кĕнеки. 1 пай. /Н.Г.Иванова В.П.Никитин пухса хатĕрленĕ. Шупашкар, 1993. С. 162-176.

6. *Павлов Н.С.* Зарождение драмы в чувашской народной поэзии //Учен. зап. ЧГПИ. Вып. 6. (Сер. филол.) Чебоксары: Чувашгосиздат, 1958. С. 3-40.

7. *Савушкина Н.И.* Русский народный театр /Н.И.Савушкина; АН СССР. М.: Наука, 1976. 151 с.

## ТУПМАЛЛИ

Авторсенчен ....................................................................3

**1 сыпăк. Фольклор – халăх ӳнерĕ, кун-çулĕ, пурнăç тĕкĕрĕ**

1.1. Халăх сăмахлăхĕ. Унăн паллисемпе этем аталанăвĕнчи вырăнĕ. Фольклорпа литература çыхăнăвĕсем ....................................................................5

1.2. Чăваш фольклористики аталанни. Сăмахлăха тĕпчекен наука ум историйĕ, çăлкуçĕсем. Каярахри тапхăрсенче чăваш фольклорне пухса тĕпчени. Венгр, финн тĕпчевçисем чăваш халăх сăмахлăхне пухни, тишкерни ....................................................................17

**2 сыпăк. Чăваш халăх сăмахлăхĕн жанр пуянлăхĕ**

2.1. Фольклор жанрĕсене ушкăнлас ыйтусем. Чăвашсен эпикăлла поэзийĕ. Пейĕтсем ......................58

2.2. Халăх прози. Чăвашсен мифĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Мифологи науки аталанни. Халăх демонологийĕ. Чăвашсен халапĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Чăвашсен юмахĕсем, вĕсен ушкăнĕсем. Юмахсенчи усал-тĕселсем. Юмахсен поэтики. Вак жанрсем, вĕсен ушкăнĕсем. Паремисен поэтики ......................72

2.3. Йăла-йĕркепе çыхăннă сăмахлăх. Ача-пăча поэзийĕ. Çамрăксен поэзийĕ. Ваттисен йăла-йĕрке поэзийĕ. Чĕлхесем. Сăмахсем, вĕсен поэтики ...........140

2.4. Чăваш халăх юрри. Юрăсене пухса пичетлени, вĕсен ушкăнĕсем. Такмаксем. Халăх сăввин хăй евĕрлĕхĕ. Сăвă-юрă поэтики .................. 182

**3 сыпăк. Совет саманинчи халăх сăмахлăхĕ**

3.1. Совет саманинчи сăмахлăх паллисем. Асăннă тапхăрти фольклора пухакансем, тĕпчекенсем. Тута-çăвар литератури. Чăваш фольклорне аталанма пулăшакансем тата пропагандăлакансем. Фольклор ушкăнĕсем ....................................................................209

3.2. Халăх сăмахлăхĕнче Совет саманин тĕрлĕ тапхăрĕсем сăнарланни. Чăваш месекĕсем. Юлашки вăхăтри сăмахлăх тĕсĕсем ................................ 267

**4 сыпăк. Чăваш халăх драми**
Чăваш халăх драми пур-ши е çук? Кĕске историйĕ. Фольклорта драма элеменчĕсем сăнарланни ......................................................................282

*Учебное издание*

**РОДИОНОВ ВИТАЛИЙ ГРИГОРЬЕВИЧ**
**ЕНДЕРОВ ВЯЧЕСЛАВ АЛЕКСАНДРОВИЧ**

**ЧУВАШСКОЕ УСТНОЕ НАРОДНОЕ ТВОРЧЕСТВО**

Курс лекций

Редактор О.М.Садовникова

Подписано в печать 29.10.04. Формат 60×84/16. Бумага газетная. Печать оперативная. Гарнитура Таймс.
Уч.-изд.л. 14,04. Усл. печ. л. 17,08
Тираж 500 экз. Заказ № 610.

Издательство Чувашского университета
Типография университета
428015 Чебоксары, Московский просп., 15

45=00